К 83.39(=Чув)6
А86
4-43952

Ю.М. АРТЕМЬЕВ

# Чăн тӳпере çич çăлтăр



Константин Иванов
Çеçпĕл Мишши
Федор Павлов
Илле Тăхти
Петĕр Хусанкай
Хветĕр Уяр
Юрий Скворцов

Национальная библиотека ЧР
4-043952

К83.3Ч(Чув)6
А86

Ю.М. АРТЕМЬЕВ

# Чăн тӳпере çич çăлтăр

Критикăллă статьясем

Шупашкар
Чăваш кĕнеке издательстви
2010

УДК 821.512.111.0
ББК 83.3 (2Рос=Чув)6;025
А 86

**Артемьев Ю.М.**
А 86 Чăн тӳпере çич çăлтăр: Критикăллă статьясем / Ю.М. Артемьев. — Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2010. — 255 с.
ISBN 978-5-7670-1782-9

Кĕнекере автор хамăр литература классикин «тутăх тивми» пахалăхĕсене çĕнĕрен вуласа тухса тишкерет, вĕсене тиркевлĕ куçпа тарăнрах та тĕрлĕ енлĕрех хаклать, çавна май тавлашуллă ыйтусенчен те пăрăнса иртмест. Статьясен пуххине кĕртнĕ тĕпчев-шухăшлав ĕçĕсемпе вăтам тата аслă шкулсенче вĕренекенсем çеç мар, вĕрентекенсемпе ăслăлăх ĕçченĕсем те туллин усă курма пултарĕç.

**УДК 821.512.111.0**
**ББК 83.3 (2Рос=Чув)**

И-43952

**ISBN 978-5-7670-1782-9**

© Артемьев Ю.М., 2010
© Чăваш кĕнеке издательстви, 2010

Проверено 21 МАР 2017

# Çăлтăр чунлисем

Чăн тӳпере çич çăлтăр,
Çиччĕ сăвап — сăвап пултăр.

Мĕншĕн çичĕ ят тата ма-ха урăххисене мар, шăп та лăп çаксене кĕртнĕ кĕнеке авторĕ чăн тӳпери çăлтăрсен ушкăнне текен ыйту лартма пултарать тимлесе вулакан. Кĕнеке ячĕ хăех хуравлать пулĕ тетĕп эпĕ ку ыйтăва: чăн тӳпере çич çăлтăр. Чăн та ĕнтĕ, тӳпери çăлтăрсен хисепне суса тухма çук; кунсăр пуçне çав çăлтăр «кĕтĕвĕнчен» мĕншĕн çиччĕшне уйăрса илнине те ăнлантарса парасси çăмăл мар, тĕрлĕ сăлтава пула. Тăван чĕлхепе культурăмăрăн тӳпинче куçа шартармасăр, ынатлăн йăл-йăл туса çутă сапалакан пысăках мар ушкăн çăлтăр пирки пырать сăмахăмăр. Ыттисенчен **çӳлерех** вырнаçнăн курăнаççĕ вĕсем манăн куçа: Тӳрĕлĕхшĕн çине тăма хăюлăх çитернипе, хăйсем пултарнă Илем тĕнчипе, Чун шалпарлăхĕпе...

Тавлашмăпăр, тепри, тен, çиччĕшĕпех çак ятсене пĕр ушкăнра курасшăн пулмĕ е, сăмахран, И-пе У хушаматсене мĕншĕн кĕртмен тейĕ. Ку ĕçре чуххăмрах утăм тăвасси те аякра мар пулĕ, çавăнпа та тиркевçĕсем валли ĕç тупăнмалла пек кунта. Тепĕр тесен, ку пирвайхи утăм, Хветĕр Уяр экспериментне шутламасан (Ю. Скворцов пирки çырнине вулăр) çав тери кирлĕ ĕçĕн пуçламăшĕ çеç-ха, ай, пĕр вăтăр-хĕрĕх çул маларах тунă пулсан ăна! Пĕр тĕслĕх çеç илсе кăтартасшăн. Илемлĕ çырулăх историйĕн кĕнекисенче тĕрлĕрен очерксемпе статьясенче Константин Ивановпа Николай Шупуççынни ячĕсем уйрăлми юнашар тăраççĕ. Тантăшсем Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче пĕрле вĕреннĕ, кăштах ĕçленĕ те. Анчах та çырнисене илем-пахалăх тĕлĕшĕпе танлаштарса пăхсан вĕсене йăла-йĕркепе кулленхи пурнăçри çыхăну-хутшăнусем çеç «юнашарлатни» курăнса каять, вара Шупуççыннинчен çав виçепех ыйтма май килменни, вăл иккĕмĕшле пĕлтерĕшлĕ литератор пулни те уçăмлăрах курăнать. «Нарспи» авторĕн вырăнĕ Олимп çинче пулни те... Апла пулин те «никĕс хывакансем», «классиксем» тетпĕр çак икĕ ят çумне татах та нумай çыравçă ятне хушса.

Тĕслĕхсене урăххисене те илсе кăтартма пулĕччĕ, анчах ĕçĕ унта тăмасть. Писательсен ячĕсене ушкăнласси, вĕсене ретлесе хисеплесси литература тĕпчевĕн майĕ-мелĕсемпе те çыхăннă ĕнтĕ, ушкăнласа тухсан — ансатрах. Анчах та кун пек чух хаклăх критерийĕсем пачах та «ĕçлемеççĕ», хăшпĕр чухне çыравçăсене алфавита тĕпе хурса ушкăнлани те пулать. Пĕр енчен, тĕрĕсех-ха унашкал ăслайлани те, мĕншĕн тесен çав çĕр-çĕр çыравçăран кашниех тăван культурăшăн, чăваш чĕлхине чĕрĕ вăй хушас, аталантарас тĕллевпе усăллă ĕç сахал мар тунă. Çавăнпа та ĕнтĕ çак кĕнекене кĕртнĕ çичĕ ята ыттисенчен «уйăрса» хаклани, вĕсен çӳл енри вырăнне чăн тӳпере курни нихăш çыравçа та пĕчĕклетнине е хакне чакарнине пĕлтермест паллах. Нацилле яваплăх шăнăрлăрах пуласси культура ĕçченĕсен, тĕрлĕ ӳнер ăстисен пысăк йышĕнче кам-кам иккенне, вĕсен чăн хакне кашни чăваш тĕрĕс пĕлсе тăнинчен нумай килет. Тен, «Нарспи» поэмăна вулаканшăн литература тĕпчевĕн чăтлăхне кĕрсе аташса çӳрени ним тума та кирлĕ мар, вуланă май чунне вĕрилентернине, саманчĕпе ăшĕ вăркама пуçланине вăл капла та туять. Чăн-чăн Илеме вăл халăх ăсĕ ĕмĕртен пуçтарса пынă пахалăхсенче курать. Çак ушкăнри ытти ултă çыравçă хайлавĕсем пирки те çавнах каламалла. Çавăнпа та эпĕ кĕске ум сăмахра сисмесĕрех хаклав-ăнлантару сулăмне лекесрен асăрханатăп: чăн-чăн паха тавара нихçан та çĕлĕк çавăрса сутмаççĕ.

Çакна çеç хушса хурасшăн. Илемлĕ хайлава хакланă е ун шалашĕпе тулаш пахалăхĕсене уçса палăртнă чух сирĕн алăри кĕнеке авторĕ Чăнлăхпа Илеме мала лартса тĕпе хурать. Çак çичĕ çыравçа Ырăпа Усал сăн-сăпатне тарăнрах уçса кăтартас туртăм çывăхлатать. Усал икĕ питлĕ те, хитре тумпа та, çепĕç сăмахсемпе те тухма кăмăллать çын куçĕ умне, тата вăл ытларах чухне хăйне тĕттĕмрех е ĕмĕлкеллĕрех вырăнта хăтлă туять. Писатель таланчĕ çав тĕксĕм чун кукрашкисене шалти куç çутипе çутатнă чух уйрăмах лайăх палăрать. Кунта автор позицийĕ пирки сăмах пырать. Пирĕн классикăн чи паха тĕслĕхĕсем çакăнта палăрса тăраççĕ те. Писатель позицийĕ палăрмалла мар текенсем те пур, анчах та асăннă туртăм чăн тӳпери ушкăн çăлтăр картине пырса тивеймест.

Чун çутипе ыратăвĕ пур çĕрте вĕсем тымар ярайматççĕ.

Чăваш чунне тупасшăн пулнă
Поэт сăпайлă Сенттире.

*Петĕр Хусанкай*



## АСЛĂ СИЛПИ ЯЛĔНЧЕ

Кама мĕнле-тĕр, мана хама «Нарспи» поэмăра сăнласа кăтартнă аслă Силпи ялĕ пĕтĕм Чăваш çĕршывĕ, чăваш тĕнчи пек туйăнать, ял çыннисен пурнăçĕнче вара пĕтĕм чăваш халăхĕн аваллăхĕпе пуласлăхĕ тарăн сăнланнăн туйăнса тăрать. Уйрăмах пуласлăхĕ енне шухăш йĕрĕ ӳксен чун çӳçенсе илет — Константин Иванов поэмисенче ырă вăйсен пуласлăхĕ çук. Мĕн каласшăн пулнă вун çиччĕри гений çынсен çакăн пек хăрушла трагеди вут-çулăмĕнче (аçа çапнă пек) çунса кайса кĕлленнĕ шăписем урлă? Пророкла, чăваш тĕнчи пĕтесси çывхарса килчĕ тенипе çырлахман-çке-ха вăл. Ку ытла та пĕчĕк чăнлăх виçесĕр пысăк чун хаваллă поэтшăн.

Çапах та темскер асăрхаттармасть-ши, çывхарса килекен хăрушлăха систермест-ши автор текен шухăш чун çумĕнче йăва çавăрнине чылайранпа туятăп эпĕ. Чăнах та, пĕчĕк Сенттисĕр пуçне геройсем пурте инкеклĕн те сарăмсăррăн çĕре кĕреççĕ. «Нарспире» çеç-и, ытти поэмăсенче те çавах ку. Выçлăх вăхăчĕ мар, пĕр-пĕр чир çави çулнипе те мар... Хрестоматисенче ăнлантарнă пек, чухăнсемпе пуянсен кĕрешĕвĕпе те çыхăнман поэмăри трагедиллĕ ĕçпуç. Апла пулсан мĕнре-ши сăлтавĕ?

Мĕнрен тивсе-амаланса каять-ха, сăмахран, Нарспи чунĕнчи хаяр трагеди вут-çулăмĕ? Кун пирки малтан К. Иванов, нимех те пулман пек, сăмах майăн çеç хушса хурать тейĕн: «Ашшĕ çирĕ хăй хĕрнех, тăван çирĕ тăванах». Кунта

Нарспие хăйĕн савнинчен уйăрса Тăхтамана ирĕксĕр качча пани çинчен калать автор. Анчах та пурнăç йĕрки мĕн авалтан çапла пулман-и вара: пĕве кĕрсе арлă-арăмлă пулакан ашшĕ-амăшĕн ирĕкне пăхăннă-çке, вĕсен сăмахĕнчен иртеймен. «Турă çырни, ахăрах, çапла-тăр çав самани», — тет автор хăй те Нарспие Хушăлкана лартса кайсанах. Кунта çав «Турă çырни» тенин пĕлтерĕшне кăшт каярахпа тĕплĕнрех шĕкĕлчесе пăхăпăр. Тĕнчере çĕр тĕрлĕ кĕнчеле тенешкел, юратман çынпа ĕмĕрне ĕмĕрлекенсем те, кӳршĕ-аршăран намăсланса чашăк-тирĕк шăкăртатнине ял çине кăларманнисем те, яш ӳсĕмрех хĕне кайса вилнисем те пинĕ-пинĕпе пулнă ĕнтĕ. Апла тăк кунашкал «тĕрĕсмарлăх» ĕнер пĕр ялта, паян теппринче тенĕ пек тăтăшах пулса пынă. Акă мĕншĕн Нарспи, хăрхăм пулма килĕшмесĕр, самана йĕркисене хирĕç хăюллăн çĕкленнинче эпир чăн-чăн хăватлă трагеди коллизийĕ курма тивĕç. Чăн та, поэма еккипе мар, трагеди шайĕпе аталанса пырать «Нарспири» ĕç-пуç. Уйрăмах Нарспи сăнарĕ, французсен художникĕ Э. Делакруа «Баррикадăсем çинчи ирĕклĕх» картинăри паттăр хĕрарăм сăнарĕ пек, кашни чăваш асĕнче вилĕмсĕррĕн пурăнать. Çĕр питĕнчен чăваш çухаличченех çапла пулĕ ку.

1987 çулта пичетленнĕ хамăн пĕр статьяра («Художественный образ в чувашской литературе и искусстве» кĕнеке, Шупашкар, 1987) эпĕ «Нарспи» поэмăра мифологи «сийĕсем» чылай палăртнăччĕ. Унтанпа самаях вăхăт иртрĕ ĕнтĕ, апла пулин те поэмăна çак таранччченех критикăллă реализм «картине» хупакан литературоведсем хирĕçле аргументсем кăларса тăратаймарĕç.

Халь çыракан статьяра унччченхинче тезис хальлĕн анчах каланă шухăшсене анлăрах уçса парасшăн. «Нарспире» «миф» курма сăлтав çителĕклĕ пулсан аслă поэтăмăрăн ытти поэмисем пирки калама та кирлĕ мар — вĕсене мифологи йĕрĕ-тĕсĕсем тĕпренех витернĕ. Ку статьяра эпĕ темиçе ыйтăва çеç кĕскен пăхса тухасшăн. Пĕрремĕшĕ — поэмăсенчи конфликтăн шалти-тулашри паллисем; иккĕмĕшĕ — поэтăн илемлĕ шухăшлавĕнчи мифологилле сийсем тата вĕсен çăлкуçĕ. Тарăнрах, тĕплĕнрех тишкермелли ыйтусем поэт пултарулăхĕнче татах та нумай. Сăмахран, поэтăн пултарулăх меслечĕ, унăн тĕпри принципĕсенчен пĕри — историзм, поэтикипе стилĕ т. ыт. те.

К. Иванов поэзине тӗпчес ӗҫ Октябрьти революци хыҫҫӑнах пуҫланса паян кунччченех пӗр чарӑнми пултарӑнса пырать темелле. Ҫак енӗпе ку таранччен ҫырнӑ кӗнекесемпе уйрӑм статьясен ырӑ та пархатарлӑ пӗлтерӗшне ним чухлӗ те пӗчӗклетмесӗр ҫакна палӑртасах пулать. Идеологи пресӗ хытӑ пусса тӑнипе иванововедени яланах пӗр енлӗн аталанса пынӑ: тӗпчев ӗҫӗсенче К. Иванов самодержави никӗсӗпе буржуалла йӗркесене уҫҫӑн тиркенине, вӑл атеист пулнине, унӑн критикӑллӑ реализмне палӑртмалла пулнӑ, фактсем ҫитеймен чухне вӗсене пӑсса е пач хирӗҫле пӗлтерӗшлӗ туса та пулин (тӳнтерлетсе) ҫав схемӑлла калӑп патне сӗтӗрме тивнӗ. Ҫак хӑрах енлӗ сулӑм никӗсӗнчи тӗп тӗревсем — хамӑр литературӑна тӗпчес ӗҫри сумлӑ ятсемехчӗ. Ҫав идеологи пресӗ ҫивӗч шухӑшлӑ, тӑнлӑ-пуҫлӑ тӗпчевҫӗсене те амантса хӑварнӑ пуль тетӗп эпӗ, вӗсене калас сӑмахне, хӗв шухӑшне калама паман. Хресченпе упа ҫинчен ҫӳрекен юмаха кашни чӑваш пӗлет ӗнтӗ. Тулӑ акнӑ чух упа тымарне тӑпӑлтарать, ҫарӑк аксан — тӑррипе йӳнеҫет. Шел те, иванововеденире те ҫавӑн евӗрлӗрех-ха пирӗн паян кунччченех, поэт пултарулӑхӗн тӗпри ыйтӑвӗсене ҫителӗклӗ ҫутатайман; тӗпчев анинче ӗҫлекенсем пире ытларах ҫарӑк ҫулҫипе тӑрантарнӑ. Ҫавӑнпа та К. Иванов поэзине тӗпчес ӗҫе наукӑн хальхи шайри ҫирӗп никӗсӗ ҫине лартасси — пурсӑмӑрӑн тивӗҫӗмӗр те. Ытарлӑ калас тӑк — ҫарӑк ҫулҫипе текех ҫырлахмасӑр, ун сӗтеклӗ ҫимӗҫӗ тымарта пулнине ӑнланса ӗҫлеме тытӑнасчӗ.

Эппин, статьяра хамӑр ума лартакан пӗрремӗш ыйту патне таврӑнар-ха. Поэмӑсенчи конфликт хӑйне евӗрлӗхӗ тенӗччӗ эпир ӑна. Шкул учебникӗсемпе тӗрлӗ тӗпчевсенче ҫырса кӑтартнине ӑша илсе ҫитӗннӗ ҫынсем, эпир халь пурте пӑхмасӑр тенӗ пек пӗлетпӗр: «Нарспире», сӑмахран, пуянсемпе чухӑнсем хушшинче класс кӗрешӗвӗ тӑвӑл пек пырать, автор ялӑн социаллӑ-экономикӑлла пурнӑҫне «ҫавӑрса илме» пуҫланӑ буржуалла хутшӑнусене сивлет имӗш, пурнӑҫ ҫине класс позицийӗнчен пӑхать, тӗн-тӗшмӗшне вирлӗн питлет т. ыт. те. Хусан университетӗнче вӗреннӗ тапхӑртах ҫырлахма пӑрахнӑччӗ эп поэт пултарулӑхне ҫапла хакланипе. Ӑҫта-ха кунта классен кӗрешӗвӗ-хирӗҫӗвӗ, камха ӑсласа кӑларнӑ чӑн малтан чухӑнсемпе пуянсем хушшинчи конфликт ҫинчен калакан юмаха тесе ун чухнех

поэт пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ çинчен мĕн çырнине пĕтĕмпех тишкерсе тухнăччĕ. Диплом ĕçне поэт пултарулăхĕнчи романтизма тĕпчесе çыртăм. Кели Кĕркурийĕ «Нарспи» поэмăра кулаксене мухтанă тенине е Д. Данилов поэма авторĕ çумне «буржуалла идеолог» текен ярлăк çакнине вуласа пĕлсен тĕлĕннĕччĕ ĕнтĕ чăн та, анчах та Ухсай Яккăвĕ Силпи чăвашĕсене Çĕнĕ Гвинея утравĕ çинче пурăнакан тискер кайăк евĕрлĕ папуассемпе танлаштарнине вара ăнланма та, йышăнма та пултараймарăм. Кăна Ухсай сывмартарах чух е шӳтлесе çеç каланă-тăр тесе чылай вăхăт хушши шухăшласа çӳрерĕм.

К. Ивановăн лиро-эпикăллă хайлавĕсене тимлĕн вуласа тухсан пĕр япала куç тĕлне пулатех: кирек хăш поэмăра та тăван тăванне кăшлать, чунне илет е пуçне çиет. «Икĕ хĕр» ятлă притчăра ашшĕ аслă хĕрне йăпăлтатса каланă суя сăмахшăн çур мулне парать, çав вăхăтрах тӳрĕ чунлă кĕçĕн хĕрне чăн сăмахшăн (тăванне юрайман!) килĕнчен хăваласа кăларса ярать. «Тимĕр тылăра» тухатмăш карчăкăн кĕçĕн кинĕн, Чĕкеçĕн, кун-çулĕ трагедилле вĕçленет. Хăй тăванĕсем патне хăнана кайма çĕр хута тухнăскере тухатмăш тылли хăваласа çитсе пуçне çиет. Сисĕмлĕ чун, усала хирĕç юсмансем пĕçерсе тухнăччĕ вăл, анчах та пурпĕр хăтăлаймарĕ: темле йăлăнсан та пиччĕшĕпе икĕ аппăшĕ алăк уçса кĕртмерĕç мĕскĕне «çĕрле çӳрен хăнам çук» тесе. Каллех тăван тăвана пĕтерни куç умĕнче. «Шуйттан чури» трагедире те çавах, кунта та пиччĕшĕ шăллĕне ылтăн хутаççишĕн сăнăпа тирсе вĕлерет, хăй ухмаха тухать. Ялан тенĕ пек кĕçĕннин шăпи инкеклĕ, иçмасса.

«Нарспи» поэмăра конфликт укçа-тенкĕпе (ылтăнпа) е класс кĕрешĕвĕпе çыхăнманнине çӳлерех палăртрăмăр ĕнтĕ. Кунта та ашшĕпе хĕрĕн «пĕрлĕхлĕ» чун хавалĕ, пуленкерен хăйă чĕлĕннĕ пек чĕлĕнсе, икĕ хире-хирĕçле, пĕр-пĕрне курайман вăй пулса тăниех терĕмĕр. Кун пирки Гегелĕн шутсăр витĕмлĕ каланă шухăшне илсе пăхма пулать: «Для того, чтобы дух мог достигнуть целостности и свободы, он должен отделиться от самого себя и противопоставить себя в форме ограниченного природного и духовного бытия самому же себе как бесконечному в себе. И наоборот, с этим разрывом связана необходимость выйти из той разорванности с самим собой, внутри которой сфера ко-

нечного и природного, непосредственность наличного бытия, естественные чувства определены как отрицательное, дурное и злое; лишь путем преодоления этого недействительного бытия можно вступить в царство истины и удовлетворения» (Эстетика. В 4 т. Т. 2. 1968. 236 с.). Кунта философ романтизмла искусствăшăн типлă конфликт хăй евĕрлĕхне тарăн уçса парать. Пĕр пĕтĕмĕшле чун хирĕçӳллĕ икĕ чуна «пайланса» кайрĕ пулсан кунта усалпа ырă вăйсене курмаваскамалла мар-ха. Иккĕшĕн енче те хăйне майлă чăнлăх пур, иккĕшĕ те вĕсем хăйсенчен çӳлте тăракан вăя пăхăнаççĕ, ун ирĕкĕнчен тухаймаççĕ. Татсах каламалла, сăмах, автор каланă тăрăх, Турă çырни е аслă пӳлĕхçĕ ирĕкĕ пирки пырать. Кун çинчен эпир çӳлерех асăннă хамăр статьяра татăклăнах каланăччĕ. Уйрăмах Сетнер вилĕмĕ Турă çырнинчен тухнине юмăç систерсе калани трагеди саккунне пăхăннине палăртнăччĕ.

«Çарăк çулçипе» çырлахакан тĕпчевçĕсем К. Иванов поэмисен конфликтне вырăссен пĕрремĕш революцийĕ тапхăрĕнчи конкретлă ĕç-пулăмсемпе, политикăлла лару-тăрусемпе çыхăнтарма тăрăшса вĕсенче саманан пайăр паллисене шыранă, поэт пултарулăхĕн тĕп пĕлтерĕшне класс кĕрешĕвĕн сывлăшне мĕн таран палăртнипе хакланă. Анчах та çав политикăлла атмосфера поэт çырнисене сăрхăнса кĕреймен. Мĕншĕнни те паллă: К. Иванов паянхи кунпа (çаксамантлăхпа) пурăннă е «актуаллă темăпа» (хальхилле каласан) хавхаланса ĕçленĕ поэт мар. Çавăнпа та «çарăк тымарне» шырама пикенсен эпир ирĕксĕрех ĕмĕрхи темăсем патне таврăнма, халăх ăс-тăнĕнче упранакан авалхи мифсен тарăнăшне кĕме тивĕçлĕ. Ырăпа усал кĕрешĕвĕ поэтăн трагизмла тĕнче туйăмĕпе тачă çыхăннă. Çук, ун поэмисен никĕсĕнче революци çуратнă, унăн хумĕпе сулăм илнĕ конфликтсем мар, вĕсем ĕмĕрсем тĕпĕнченех тухнă, халăх асĕнче пин çул упранакан мифсенче вĕсен çăлкуçĕ. Константин Иванов хăй халăхĕн философилле ăсĕпе историлле чăнлăхне чунĕ витĕр сăрăхтарса çырса çеç пынă теме те пулать. Паллах, поэт чăвашăн ĕмĕрсен алипе алланса пухăннă ăсне çеç мар, тĕн-тĕшмĕшне те ăша илнĕ. Çавсене вăл пĕтĕмпех эстетика вучахĕнче шăратнă. Гений пултарулăхĕ — чăннипех халăх сасси, ун иксĕлми хевтин палăрăмĕ.

Ку шухăша аксиома теме пулĕ, анчах та ăна констатацилени çителĕксĕр-çке. Сăмахран, поэт пултарулăхĕ, ун таланчĕ фольклор кăкăрĕнчен тăранса кĕрнекленнĕ тейĕпĕр. Ку пĕрре. Çав вăхăтрах К. Иванов тĕнче литературипе искусствине те вăйлă тĕпчесе пĕлни витĕр курăнать. Библипе Евангели тексчĕсенчи ĕмĕрхи чăнлăха ăша илнĕ вăл. Çавăнпа та ун поэмисенче çав хăватлă «çăлкуçсенчен» сăрхăнса кĕнĕ «сийсене» асăрхама йывăрах та мар, анчах та кашни пайăр пулăм аталанăвĕн çулне йĕрлесе тухма, ун тымарĕсем ăçталла кайнине ăнлантарма çăмăл мар.

Акă пĕр тĕслĕх. К. Иванов поэмисенче трагедилле конфликт вут-кăварĕ яланах çывăх тăвансем хушшинчен амаланса каять терĕмĕр. Кунашкал хирĕçӳсем, тĕпчевçĕсем каланă пек, буржуази пуç çĕкленипе те, революципе те çыхăнман. Вĕсем икĕ пин çул ĕлĕкрехех çырулла литературăра палăрнă иккен. Акă Библире Михей пророк каланă пĕр вырăна вуласа пăхар-ха. «Ĕнтĕ ывăлĕ ашшĕне намăслантарать, хĕрĕ амăшне хирĕç тăрать, кинĕ — хунямăшне; этем тăшманĕ — ун кил-йышĕ» (7-мĕш глава, 6-мĕш стих). Кунта тăшманĕ тени хытă шухăшлаттарать, тăшман — хаяр та хĕрхенӳсĕр. Иванов лексикинче çак сăмах ырă сăнар антиподне палăртать. «Тăшман пуçне пĕтерме вĕри вут пек çилли пур» (Сетнер пирки), — тет автор. Нарспишĕн хăйне çураçса хунă Тăхтаман хаяр тăшман иккен. Романтизмла контраст мелĕ геройсен сăнарне антиподсем пек калăплама май парать.

Эпир вун çичĕ çулхи чăваш поэчĕ кунашкал пин çулхи чăнлăх патне епле майпа пырса тухнине тӳрех татса калаймăпăр. Çапах та пирĕншĕн çак хаклă: К. Иванова ĕмĕрхи ыйтусем, пĕтĕм этемлĕхшĕн пĕлтерĕшлĕ хаклăх-пахалăхсем канăçсăрлантарнă, çавсен тупсăмне ăнкарма тăрăшнă май вăл час-часах трагизмла пĕтĕмлетӳсемпе эсхатологи проблемисем патне пырса тухать. Мĕншĕн-ха Чĕкеç, Нарспи, Сетнер пек «кайăк чунлă» сăнарсен шăпи синкерлĕ? Е ку ырăпа усал хушшинчи кĕрешĕвĕн ĕмĕрхи саккунĕнчен тухать-ши? Çакна май, хăй чунне çывăх геройсем пекех, хăйне те вăхăтсăр çĕре кĕме пӳрнине К. Иванов малтанах туйса тăнă пуль тетĕп эпĕ. Тен, шăпах çакăнта поэт шухăшлавĕпе тĕнчетуйăмне тĕпренех витернĕ синкерлĕх çăлкуçĕ, урăхла каласан, трагизм?

Поэт çырнисенче мифологилле сийсем çиелтенех курăнса тăраççĕ терĕмĕр çӳлерех. Чăн малтан, çакна май, илемлĕхпе сăнарлăхăн тĕрлĕ майĕ-мелĕсен системине (поэтика) ятарласа тĕпчени кирлĕ. Паллах, критикăллă реализм установкине пăрахăçламалла малтан. Тата çакна та шута илмелле. Поэтика майĕ-мелĕсем вĕсем пĕр-пĕр илемлĕх идейине (концепци) уçса памалли «хатĕрсем» çеç-çке-ха. Çавăнпа та чăн малтан поэт сăнлакан илемлĕх тĕнчин пĕтĕмĕшле атмосферине, вăхăтпа тавралăх-вырăн паллисене сăнаса пăхни пысăк пĕлтерĕшлĕ. Сăмахран, хронотопа (Бахтин ăнлавĕ) илсен, мĕнре ун хăйне евĕрлĕхĕ К. Иванов хайлавĕсенче? Урăхла каласан, ăçта тата хăш вăхăтра пулса иртет поэмăсенче кăтартнă ĕç-пуç? Автор вăхăт шăвăмне мĕнлерех палăртать?

Кунта ĕнтĕ историзм принципĕ пирки те пырать сăмах. Çакна май Г. Хлебников пĕр статйинче «Нарспи» авторĕ «историллĕ реализм принципĕсене алла илеймен» тесе çырнăччĕ. Е. Владимиров çав шухăшах кăшт урăхларах çавăрса калать: «Поэмăра чăваш халăхĕн авалхи пурнăçĕ ӳкерĕннĕ». Чăнах та, «Нарспире» те, «Тимĕр тылăпа» «Тăлăх арăмра» та, «Шуйттан чуринче» те нимĕнле историлле событисен йĕрĕсем те, конкретлă самана паллисем те асăрхамастпăр эпир. Вĕсенчи лару-тăрупа ĕç-пуçа нимĕнле «вунăçуллăх» çумне те çыхса хума май килмест, Раççейри революцилле хускалăвăн нихăш тапхăрĕпе те çыхăнман вĕсенчи конфликт тĕввисем. Апла тăк автор мĕнле саманана сăнлать-ха? Ман шутпа, эпир поэтăн «Хальхи самана» поэминче конкретлă вăхăт паллисене (Чĕмпĕр шкулĕн историйĕпе И.Я. Яковлев ĕçĕ-хĕлĕ) курма пултарăттăмăр. Кунта чăнах та критикăллă реалистсем шыракан «историзм» пулмаллах. Ытти поэмăсенче автор, XX ĕмĕр пуçламăшĕнче, революци тăвăлĕ хускалнă саманара пурăннă çын, çав кунсен тискерлĕхне (пĕтĕмĕшле илсен, цивилизаци илсе килнĕ «çимĕçсене» те) йышăнманран хăй идеалне иртсе кайнă аваллăх кунĕсенче (е пуласлăхра?) шырамасть-ши? Тен, çавна пула поэт хайлавĕсенче вăхăт шăвăмĕ мифологи саккунĕпе йĕркеленет, пурнăç юхăмĕ вара, çĕрпе пĕлĕт хушшинче иртнĕ пек, пин çулхи аваллăх сĕмĕпе витĕнет. Вăхăтăн историлле конкретлăхĕ çухалса поэт фантазийĕ çуратнă мифологилле реальноçа куçать. Чăнах та, акă «Шуй-

ттан чури» трагедире вăрçă хирĕнче икĕ пĕртăван вилесене ухтарса-çаратса çӳренине куратпăр эпир. Анчах та миçемĕш ĕмĕрте, миçе тинĕс леш енче пулнă кунашкал тискер ĕçсем? Куна пĕлейместпĕр. Сăнни чăвашăн тейĕпĕр, ыттине пĕтĕмпех абстрактлă типизаци мелĕпе сăнланă. Ман шутпа, ку поэта çитнĕ те, мĕншĕн тесен унăн творчество установки çапларах. Чи кирли — пурнăçри пулăмсемпе ларутăрусен философиллĕ тĕшшине «шĕкĕлчесе» илесси. Философиллĕ чăнлăх поэтшăн этем чунĕнче, ырăпа усал кĕрешĕвĕнче; социалла-историлле фон çакна çеç пăхăнать, вăл иккĕмĕш планра. Хайхи «Нарспире» «укçапала эрехех çынна ăсран кăларать» тени тĕрĕсех-мĕн. Çăткăн этем ылтăншăн чунне шуйттана сутать. Романтизмла трагеди форми автора философи ыйтăвĕсем (ырăпа усал, пурнăçпа вилĕм) тавра шухăш çавăрма май парать, индивидуализмла сознанин чикĕсĕр хăватне, ун мал ĕмĕтлĕ туртăмĕсене шалтан кăтартма пулăшать. Çапла вара, пурнăç чăнлăхне реализм çеç мар, ытти художествăлла формăсемпе усă курса та уçса пама май килнине куратпăр эпир.

Чăн та, романтизмла трагедире, ун формине кура, пурнăçăн мифологизациленĕ моделĕ тĕпре пулма та пултарать. Калăпăр, шуйттан, пирĕшти илемлĕ сăнар пулса çынсен кулленхи хутшăнăвне кĕреççĕ, вĕсем ырăпа усал хушшинчи кĕрешĕве çивĕчлетеççĕ, магилле колорита вăйлатаççĕ. Çавăнпа-тăр тĕп кĕрешӳ çынсем хушшинче мар, çӳлте Турăпа шуйттан хушшинче (этем чунĕшĕн) пынăн туйăнать. Тытăçу час-часах усал (тĕрĕсмарлăх) çĕнтернипе вĕçленет. Анчах та халăхăн мифологилле сознанийĕнче те çирĕп тымар янă-çке вăл çав кайран леш тĕнчере тĕрĕслĕх çиеле тухасса шанса тăни, ку тĕнчере тунă усал ĕçсемшĕн вилсен явап тытма тивессе ĕненни. Кунта чăвашсен авалхи тĕнĕпе пĕрлех зороастризмпа буддизм витĕмĕ те çук мартăр. «Шуйттан чуринче» мул пуçтарма вăрçă хирне тухса кайнă пĕртăвансен пуçĕ çине амăшĕн хаяр ылханĕ ӳкет. Астăватăр-и: Нарспипе Сетнере Михетерпе карчăкĕ мĕнле хаяррăн ылханса тухса каяççĕ хура пӳртрен:

Пĕтĕр, типĕр çакăнта,
Типĕр хăрăк турат пек!
Шăммăр-шаккăр çĕриччен
Асапланăр йытă пек!

Кунта ылханакана (айăпсăртан) пуçне пулнă тени те пур-тăр-ха. Çапах та Нарспипе Сетнер пуçĕ çине ӳксе çав ылхан вĕсен шăпине те витĕм кӳмерĕ-ши? Авторăн илемлĕх концепцийĕнче çак шухăш пурри иккĕлентермест. Кунтан хăрушăрах ылхан çук та пуль. Анчах та çакна каламалла: К. Иванов хăй пурăннă саманара чăваш халăхĕн ăс-кăмăл пурнăçĕнче тĕн-тĕшмĕшпе ĕненӳ пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине витĕр курнă. Пин çул хушши йĕрке çапла пулнă-çке: ашшĕ-амăшĕн, ваттисен пилне тивĕçлĕ ача-пăча этем ретлĕ, пархатарлă çын шутĕнче тăнă, пил-пехил мал ĕмĕт, тĕрекшанчăк панă. Ылханлă этем «çамки» çинче инкек паллисене шыранă. К. Иванов хайлавĕсенче ылхан е пил пĕлтерĕшĕ яланах халăх педагогикинчи пĕлтерĕшпе тӳрĕ килет тата геройсен шăпине витĕм кӳрет. Паллах, ку çынсем йăлапа çыхăннă маги хăватне ĕненнинчен килет, çавна пула К. Иванов хăй хайлавĕсен психологизмне вăйлатать. Çавăнпах мар-и-ха каçа хирĕç тухатмăш карчăк ылханса çула кăларса янă Чĕкеçе хăрушă инкек кĕтессе пирĕн чун туйсах тăрать. Çакна май акă мĕне палăртса хăварасшăн: «Тимĕр тылă» та, «Тăлăх арăм» та, жанр тĕлĕшĕнчен пăхсан, чăн-чăн поэмăна çывăххи куç кĕретех. Юмах-халап мар вĕсен никĕсĕнче, ку вăл — чăн пурнăç. Мĕншĕн тесен Силпи чăвашĕсем те, ытти поэмăсенчи чăваш çыннисем те çурма мифологилле тĕнчере, тĕн-тĕшмĕш «танатинче» пурăнаççĕ-ха. Чăвашсем обществăлла сознанипе политика, правăпа вырăс тĕнĕ вăйлă витĕм кӳме пуçлас умĕнхи тапхăрта пурăнаççĕ-ха. Каларăмăр ĕнтĕ, мифологи те хăйне майлă реальноçах, анчах ун тымарĕсем сĕм аваллăх еннелле каяççĕ. Пурнăç çиппи пин çул каяллахипе хальхине çыхăнтарать, паянхи ĕмĕрлĕх çăлкуçĕнчен сĕткен илет.

Тĕн-тĕшмĕшпе, чăвашăн кивĕ ĕненĕвĕсемпе, йăли-йĕркипе çыхăннă япаласем «Нарспире» те сахал мар. Вĕсене авторăн пĕтĕмĕшле концепцийĕнчен уйăрса илсе хаклама юрамасть. Сăмахран, юмăç пăхни, чӳк туни, вĕрӳ-суру чĕлхин тĕсĕсем, ылхан, пехил, хура кайăк — усал-тĕсел палли т.ыт.те. Пирĕн ку таранччен иванововедсем пурте хастар атеистсем пулнăран поэма авторне е тĕшмĕшлĕ этем тесе ятланă, е Ивановран, хăйсем пекех, атеист туса хума хăтланса пăхнă. Шел, поэт хăй саманин тата хăй халăхĕн ывăлĕ пулнине асран вĕçертнĕ. Автор хăш вăхăта сăнласа

кӑтартнӑ «Нарспи» поэмӑра текен ыйту лартнӑччӗ эпир ҫӳлерех. Халь эпӗ ҫапла хуравлама хӑюлӑх ҫитерне пулӑттӑм: поэмӑн пӗтӗм ӑш-чикӗ мифологилле сывлӑшпа сывлать. Турӑ тӗнчене ултӑ кун хушшинче пултарнӑ май мӗнле материалпа усӑ курнӑ? Ҫавӑн майлах К. Иванов та хӑй поэмин «керменне» мифологи никӗсӗ ҫине лартнӑ. Пурнӑҫ материалне вӑл пирӗн ӗмӗр пуҫламӑшӗнчи историлле реальноҫран илмен, унӑн кӗрлевлӗ те пӑлхавӑрлӑ событийӗсене асӑрхаман та тейӗн. Философи критерийӗсемпе виҫсен Силпи ялӗн сӑнарӗнче (ирхи сывлӑм пӗрчинче ҫӗр чӑмӑрӗ тӗкӗрленнӗ пек) пӗтӗм чӑваш тӗнчи ӳкерӗннине асӑрхатӑн. Вӑхӑт шӑвӑмӗ-куҫӑмӗ кунта миф саккунӗсене пӑхӑнать. Силпи ҫыннисен пурнӑҫӗн, ҫавра юрӑ майлӑ, пӗр тапхӑрне сӑнлать автор. Силписен кулленхи пурнӑҫӗ ҫут ҫанталӑк чӗрӗлӗвӗ-улшӑнӑвӗпе «юн тымарӗнченех» ҫыхӑннӑ. Мифологилле вӑхӑт хӑйне майлӑ циклран тӑрать: ҫуркунне, ҫулла, кӗркунне, хӗлле. Ҫак цикл тӑсӑмӗнче ҫут ҫанталӑк чӗрӗлет е ешерсе «ҫимӗҫ кӳрет», вилет. Ҫапла вара, пӗр ҫавра цикл теприпе улшӑнса пынӑ май вӑхӑт та шӑвать. Анчах та ку хронологие пӑхӑнакан историлле вӑхӑт мар. Чӑваш сознанийӗнче ял хуҫалӑх календарӗн принципӗсем хуҫаланаҫҫӗ-ха. Ҫакна Т.С. Пассек та палӑртать. Чӑваш халӑхӗн мифологилле астӑвӑмӗнче чӑваш ӑс-тӑнӗн таҫти шалти, вӑрани-вӑранми тӗлӗрекен «кӗтесӗнче» (подсознани) ҫын ватлӑхӗпе хӗллехи ҫут ҫанталӑк вилӗмне ҫыхӑнтарас ӑнлав упраннине асӑнать вӑл (Т.С. Пассек. Круг чувашских праздников / Академику Н.Я. Марру. М.; Л., 1935. 465 с.).

Эппин, поэмӑри мифологилле вӑхӑт паллисене пӑхарха. Реализмла хайлавсенче, сӑмахран, эпир пӗрре анчах мар ҫакӑн евӗр пуҫламӑша курнӑ: 18... ҫулӑн ҫав-ҫав уйӑхӗпе кунӗнче ҫав-ҫав хулара ҫавӑн пек ӗҫ пулса иртнӗ. Ку ӗнтӗ историлле конкретлӑх. «Нарспи» поэмӑра ӳкерсе кӑтартнӑ пурнӑҫӑн «аслӑ юхан шывӗ» пуш уйӑхӗн вӗҫӗнчен йӑл илсе, сарӑлса каять. Ҫуркунне, хӗвел ӑшӑтать тӗнчене, ҫут ҫанталӑк чӗрӗлет, ешерме пикенет. Халӑхла каласан, «хӗл ӑйхинчен вӑраннӑ» тӗнчере ҫутӑ ташлать. Кунта тӗнчене тытса тӑракан Хӗвел пӗлтерӗшӗ шутсӑр пысӑк, унӑн мифологилле пӗлтерӗшӗ ҫухалман-ха. Автор хӗвеле хӗрӗх хутчен асӑнать, унра магилле хӑват пуррине палӑртать. Ку ӗнтӗ

халăх ĕненĕвĕпе çыхăннă, чăвашсем, хăйсен йăлипе, çур-куннесерен хĕвеле кучченеçпе кĕтсе илнĕ, «уй-хирсене юр-пăртан хăвăртрах тасатма ыйтнă» (П.В. Денисов. Тĕн пуç-ланса кайни. Шупашкар, 1962. 89 с.).

Малалла пирĕн куç умне илемлĕн те мăнаçлăн сарăлса ларакан Силпи ялĕ тухать. Пуян ял ку, «хула тейĕн инçет-рен». Сăмах май, тĕпчевçĕсем çак вырăн пирки пур вăхăтра та хытах иккĕленнĕ: ай, чăнах та пулма пултарнă-ши вара чăвашсен те пуян ялсем? Çук, капла калани вăл эпитет çеç тесе нумайăшĕ, К. Иванов шурă хут çине хурапа çырса хунине ĕненмесĕр, каллех хăйсемле çаптарма тытăннă: Сил-пире Михетерсĕр пуçне ыттисем ыйткалакан пек чухăн пул-сан та аслă урамра çеç пулĕç пуянсем, ытти урамсенче шăкăрин выçă лараççĕ, унта пуянсем чухăнсене ĕçлеттерсе чунĕсене илеççĕ т.ыт.те, т.ыт.те. Хăй кĕтĕвĕ патĕнче шăхлич калакан ача, хырăмĕ выçнипе, Силпи еннелле пăхнине халăх чухăн пурăннипе çыхăнтарнине (литературоведсен хырăмĕ выçмасть тейĕн) тата миçе тĕпчев ĕçĕнче кур-марăмăр-ши? Ку ĕнтĕ историксен тимĕр-бетонланă кон-цепцийĕпе тĕревленĕ «чăнлăх»: класлăх принципĕ пур çĕр-те те малта пулма тивĕç-çке! Шел, çакăн пек установка çамрăк тĕпчевçĕсене те хăйсем тĕллĕн шухăшлама чăрман-тарать-ха. Вĕсем хушшинче те тĕл пулаççĕ-ха Силпи ялĕ пуян пек курăнни вăл психологилле эффект е иллюзи çеç текенсем. Çапах та эпир вĕсем хыççăн каяр мар-ха, ку вăл шуçлак, суя çул, Силпин ытарайми илемĕпе пуянлăхĕ ав-торăн илемлĕх концепцийĕпе тӳрремĕнех çыхăннă. Çăкăр-тăвар, укçа-тенкĕ, кил-çурт тĕлĕшĕнчен илсен кунти чăваш-сенчен ытларахăшĕ чăнах та начар пурăнмасть пулас («мулĕ пур-тăр çав вĕсен»). Çапах та ăс-кăмăл, чун пурнăçĕ епле-рех-ши вĕсен? Мĕн хаклăрах вĕсемшĕн: мул е чун пуянлăхĕ? Кун пирки Михетер иккĕленмен нихçан та: мул пулсан чуна сутăн илме те (е сутма та!) пулать. Нарспишĕн вара «пуянлăхра анчах мар, ыр курасси çыннинче». Акă вăл тĕп конфликт шăнăрĕ: мулпа чунлăха икĕ тĕрлĕ курса хакла-ни, кашниех хăйĕн тĕрĕслĕхне вĕçне çитиччен хӳтĕлени. Çапла вара, К. Иванов поэзийĕн вилĕмсĕрлĕхĕ çакăнта та лайăх курăнать: чăваш тăванăмсем, çитет пулĕ кил-тĕрĕшре, йăла-йĕрке картинче хупăнса, хырăм нушипе çеç сапăр-ланса пурăнма; чун, ăс-кăмăл ыйтнине те тивĕçтересчĕ,

историн магистральлĕ çулĕ енне туртăнар, гуманизм ялавне çӳлерех çĕклер! Ку ĕнтĕ поэта канăçсăрлантарнă вунвун ыйтуран пĕри çеç-ха, паллах.

Поэма пуçламăшне таврăнар-ха. Çут çанталăк чĕрĕлсе ешерчĕ, калăм та иртрĕ. Чăваш акана тухма хатĕрленет. Çакăн пек илемлĕ тапхăрта Силпире ытарайми хитре Нарспи ӳссе çитĕннине пĕлтерет пире автор. Ашшĕ ăна çураçса та хунă иккен. Çут çанталăкпа силписен пурнăçĕ пĕр кĕвĕпе «ташлаççĕ» тейĕн, çак параллельлĕхе вĕçне çитиччен йĕрлеме пулĕччĕ: «пиçсе çитнĕ» Нарспи мăшăрланать, йĕркипе ача та çуратмаллаччĕ ĕнтĕ унăн... Çавăн пекех çут çанталăк та, уй-хир те хăйĕн «туйне» тăвать: силписем суха туса тырă акаççĕ, çĕр пĕтĕленет, çуратма хатĕрленет. Çĕр хĕсĕр мар, анчах Нарспи çут çанталăк панă тивĕçне пурнăçлаймарĕ — ăна ирĕксĕрлерĕç. Акă мĕнре трагеди.

Поэмăра çут çанталăк хăйĕн ĕмĕрхи саккунĕпе пурăнать. Чăваш тĕнче туйăмĕ этемпе çут çанталăк хушшинчи аслă çыхăнăвăн пин-пин «çиппине» сисĕмлĕн туять. Чăваш — хăй те çут çанталăк ачи, ăна пăхăнтарас, унпа хуçаланас туйăм уншăн ют-ха. Çавăнпа хура вăрманран хӳтлĕх кĕтеççĕ час-часах поэма геройĕсем, ун ытамĕнче чунĕсене сиплеççĕ. Кунта мифологилле сознани ĕлĕкхиллех, кирĕк тивмиех «тасан» упранать-ха.

«Çăтмах пекех туйăнать Силпи чăваш ялĕнче», — тет автор. Эпир ĕненетпĕр. Пин çул упранакан йăласемпе вăйăуявра мĕн чухлĕ поэзи! «Çĕр çĕмĕрсе каччăсем ташлаççĕ», калăм эрнинче ĕçкĕ-çикĕ туса савăнаççĕ чăвашсем, тăван тăвана, ратне-хурăнташа хăналать. Ак çак «кодексра» хресчен чунĕ яриех уçăлмасть-и вара:

Нумай ĕçле, нумай çи,
Хытă тарла, хытă ĕç!

Çĕр ĕçченĕн нушине ăнланакан çын кунашкал морале сивлеместех. Акана тухнă хресчен Турра кĕлтăвать: «Эй Турăçăм, сывлăх пар, акнă тыррăма ăнтар!» Поэмăра авалхи чăваш йăлисенчен нумайăшĕ йăлтăркка енĕпе тухать вулакан куçĕ умне. Анчах та акă мĕн: автор пĕрре те этнографизм енне сулăнмасть, икĕ-виçĕ сăмахпа, сăрсене перекетлесе ӳкерет вăл йăла-уявпа çыхăннă самантсене.

Этнографшăн çителĕксĕр пулĕччĕç çав тулли мар ӳкерчĕксем, вăл пĕтĕм процеса мĕн пуçласа вĕçне çитиччен курас тейĕ. Эстетика виçипе, пĕр-пĕр йăла пулăмĕн эстетикăлла енĕпе философилле пĕлтерĕшĕ тĕпре. Константин Иванов поэт та, художник та пулнă май, искусствăн чи шалти вăрттăнлăхĕсене уçма вăй çитернĕ: вăл икĕ-виçĕ йĕрпе халь-халь çурăлас «папкасем» çеç ӳкерсе хурать. Вĕсем вара, пирĕн чуна сĕртĕнсе, çурăлаççĕ пĕтĕм илемĕпе, сарăлаççĕ. Ку ĕнтĕ вулакан чунĕ мĕн тари çунатлă пулнинчен нумай килет.

Çакна май поэтăн типлăх ăсталăхĕ пирки кĕскен каласа хăварасшăн. К. Иванов поэмисенче реализмла типизаци принципĕсем пачах тĕл пулмаççĕ. Уйрăмах индивидуализаци принципĕ поэт палитринче çукки куçа тирĕнет. Ăна ширани те усси çук кунта. Ф. Энгельс Минна Каутская патне янă çырăвĕнче реализмла типизаци принципĕсене акă мĕнле ăнлантарать: «Характеры той и другой среды обрисованы, по-моему, с обычной для Вас четкой индивидуализацией: каждое лицо — тип, но вместе с тем и вполне определенная личность, «этот», как выражается старик Гегель, да так оно и должно быть». К. Ивановăн типлăх принципĕсем пачах урăхла. Унăн шăпах çав «каждое лицо — тип» тени тĕл пулмасть. «Нарспире» ӳкернĕ сăнарсем икĕ ушкăна пайланаççĕ: пĕрисем этем ирĕкĕшĕн тăраççĕ, теприсем ĕмĕрхи йăлапа пурăнасшăн. Çак икĕ ушкăн вăл ырăпа усалăн абстрактлă символланă палăрăмĕ те. Варринче тăрас текен тĕрек тупаймĕ кунта. Типсем вырăнне символсем пирĕн умра. Икĕ ушкăнне те контраст мелĕпе хире-хирĕçлетнĕ. Семиотика меслечĕпе тишкерме ытла та меллĕ пулмалла «Нарспири» сăнарсен системине. Семиотиксем хайлавăн пĕтĕм ăш-чикĕпе формине хăйне майлă «паллăсен» чĕлхине куçараççĕ. Çавăн пек паллăсем поэмăра çиелтенех курăнаççĕ: сăмахран, Нарспи — хитре, Сетнер — чухăн, йăваш, Михетер — пуян, Тăхтаман — хаяр та нĕрсĕр. Поэт çурма тонсене кăмăлламасть.

Кунта эпир тĕп «паллăсене» çеç кăтартрăмăр. Вĕсем пĕрите улшăнмаççĕ, сюжет аталаннă май вĕсен тĕрлĕ комбинацийĕсене çеç сăнама пултаратпăр. Реализмла искусствăри пек, характерсен аталанăвĕ-улшăнăвĕ пулма тивĕç мар кунта. Пĕр сăмахпа, К. Иванов романтизм типизацийĕн майĕ-


И-43952

мелĕсемпе усă курать. Трагеди жанрĕнче вара ку вырăнлă та (жанр ыйтăвĕсене эпир кунта хускатмăпăр).

Çапла вара эпир çак шухăш патне пырса тухатпăр: поэма авторĕ ĕмĕртенех килекен чăваш пурнăçĕн тĕп енĕсене, чăваш тĕнчине масштаблăн пĕтĕмлетсе сăнлать, халăх чунне (чăваш чунĕ — кайăк чунĕ) уçса пама тăрăшать. Акă текста тепĕр хут пăхса илер эппин, «чăваш» сăмах «халăх» синонимĕ иккенни тӳрех курăнать унта: «Силпи чăваш ялĕнче», «ахăр кунти чăвашсен», «мĕнле чăваш ĕçменши?!», «выртать чăваш улпут пек», «чăваш часах урăлмасть», «чăваш çынни çывăрать», «пĕтрĕ чăваш ĕмĕрĕ», «чăваш кĕпи улача», «ĕçчен чăваш вăкăр пек», «чăваш хире тухмарĕ», «чăваш ларать мунчинче»...

XVIII—XIX ĕмĕрсен чиккинче нимĕç романтикĕсем поэзипе философие «пĕтĕçтерсе» çĕнĕ мифологи пултарас ыйтăва лартаççĕ. Вĕсен шухăшĕпе, часах поэзин «ылтăн ĕмĕрĕ» килсе çитмелле. Вĕсем «мифологилле реальноçран» культ туса хураççĕ. Эпир хальлĕхе конкретлă фактсем çине таянаймастпăр пулин те, К. Иванов нимĕç романтикĕсен программипе паллашма пултарни пирки иккĕленместпĕр. «Нарспи» — чăннипех те çĕнĕ вăхăтри «мифологи». Эпир çӳлерех асăннăччĕ ĕнтĕ поэт философилле чăнлăха çĕнĕ самана (революци тапхăрĕ) çыннин класла-политикăлла тавракурăмĕнче шырамасть тесе. Автор хамăрăн авалхи несĕлĕмĕрсемпе йăх пуçĕсем пурнăçа мĕнле йĕркелесе пынине, тăван чĕлхепе чăваш чунне епле упраса паянхи куна çитернине ăнкарма тăрăшать темелле. Чăваш вырăспа е ытти халăхсемпе хутшăнма та пикенмен-ха — поэмăра ют чĕлхерен илсе усă курнă пĕр сăмах та çук. Тап-таса та шăнкăрти чăваш чĕлхипе çыракан поэт тăван сăмах хевтине туйтарать. Тĕнĕ те чăвашсен хăйсен-ха, вăл — чи авалхи асаттесем куç пек упраса, тирпейлĕн тытса пынă пуянлăх. Вырăс тĕнĕн шăрши те сисĕнмест Силпире, апла тăк колонизаци хĕçĕ çитеймен. Çеçпĕл калашле, «авалхи ĕмĕрсен ĕмĕлки хыçĕнче чăваш çĕрĕ» поэта курăнать. Нумай сăн-пулăм кунта каç сĕмĕ-чаршавĕпе витĕннĕ ĕнтĕ, мĕн чухлĕ «шаларах» кĕретĕн, çавăн чухлĕ мифологи тĕнчи уçăмларах палăратьçке-ха, тĕрлĕ маги хăвачĕ чĕрĕлет. Турăпа Хĕвел чăвашăн пурнăçне сăнаса, «витĕм парса» тăни куç умĕнчех. Çавăнпа та «Турă çырни», пӳлĕхçĕ ирĕкĕ çынсене пăхăнтаракан хăват

тата тĕшмĕше ĕненме хистекен пулăмсем шутланаççĕ. Ваттисене асăнасси — сăваплă йăла; силписем чӳк тăваççĕ, ырра-усала çырлахтарма тăрăшаççĕ, унсăрăн инкек пулать.

Акă пĕр эпизода тĕсесерех пăхар-ха. Трагедилле ĕç-пуç хускалса кайсан Сетнер амăшĕ юмăç патне утать. Çак сыпăкра К. Иванов ăсталăхĕ, авалхи грексен трагикĕсенни пек, чăнчăн классикăлла трагеди шайне çĕкленет. Ватă юмăç хăй ĕçĕн ритуалне сумлăн тăвать, хăйĕн вăрттăнлăхĕнче темле асамлăх пуррине туйтарать. Грексен ку ĕçе оракулсемпе жрецсем туса пынă. «Шурă старик» хура пӳртре çăпатине сапласа ларать. Шалта тĕттĕм, тĕнĕ пек çеç чӳрече. Пӳртре магилле сывлăш хуçаланать. Юмăç — Сетнере усал-тĕсел ернин сăлтавне ăнкарма пултаракан çын. Вăл пӳлĕхçĕ çырнине вулать. Кунта кашни деталь пĕлтерĕшлĕ. Акă тĕнĕрен хĕвел çути кĕрсе юмăçăн кăвак çӳçĕ çине ӳкрĕ, ăна çутатрĕ. Çак асамлă сыхăну Сетнер синкерне тĕшмĕртме пулăшать те — Хĕвел хăй хурать тейĕн ваттин чĕлхи çине çак сăмахсене:

Çамки шăтăк — хупăнмĕ,
Чĕри татăк — сыпăнмĕ.

Турри çапла çырнă иккен. Трагедире çакăн евĕр пĕлтерни вăхăт çитсен яланах пурнăçланать, унтан иртме те, пăрăнса юлма та çук. Çак чăнлăха Сетнер вилĕмĕ çирĕплетсе парать вĕçĕнче. Геройăн урхамах пек учĕпе икĕ вăйлă алли пур, анчах та вĕсем ăна пулăшаймаççĕ — шăпи («усал тĕнче») унран вăйлăрах. Автор сăмахĕнче Сетнер пирки «мĕскĕн» тени пур, каярахпа «чирлĕ Сетнер» те тенĕ. Ку — кĕрешӳçĕ мар. Чысĕпе ăраскалне хӳтĕлеме паттăррăн çĕкленнĕ Нарспин хăй çинех шанма тивет, айккинчен пулăшу кĕтме çук. Çапла вара, «Нарспири» юмăç сăнарĕнче чăнчăн мифологилле магилĕх пуррине куратпăр, унăн психологилле функцийĕ — трагизма тарăнлатассинче.

Е тата Нарспи «вилĕм яшки» пĕçернине илсен, кунта та çынсен ăс-кăмăлĕ мифологи тĕнчин ырă-усал вăйĕсемпе тарăнăшранах çыхăннине, вĕсен мăн хавалне туйса тăнине асăрхама пулать. Наркăмăшăн хаяр хăвачĕ чăннипех хăй ĕçне тутăр тесе Нарспи яшка вĕретнĕ май вĕрӳ-суру чĕлхипе усă курать. Унщăн ку вăйă мар, вăл çын вĕлерме хатĕрленет. Апла пулсан магилле вăй-хăватсене çураçтарса вĕсенче пулăшу шырамалла ун. Кунта каллех трагеди психологизмĕ

чи ҫӳлти шая ҫӗкленет — Нарспи ҫур утăм тусанах тӗпсӗр шырлана чăмас пек туять хăйне, пӗтсен пӗтем, урăхла май ҫук тет. Тăхтамана наркăмăшлă яшка пӗтерчӗ, анчах та Нарспи пурпӗр ун «тыткăнӗнчен» хăтăлаймасть-ха: тухса тарнăскерпе юнашарах «вăрман ăшӗнче хура кайăк чайлатать», Тăхтаман чунӗ арăмне шыранăнах туйăнать. Мифологилле сознанишӗн вилнӗ ҫын чунӗ ӳтӗнчен уйрăлса хăй тӗллӗн ҫӳрени — чăн пурнăҫах.

К. Иванов ҫырнисенче мифологипе тӗпрен ҫыхăннă магилле пулăмсем татах та нумай тӗл пулаҫҫӗ. Статьяра вӗсем ҫинче тӗплӗн чарăнса тăраймăпăр. Юлашкинчен чӳк пирки ҫеҫ кӗскен каласа хăварасшăн. Поэтăн «Ҫырнисен пуххинче» (1957) чӳк йăлипе ҫыхăннă пуян материал пур. Ăна вăл хăй ҫуралса ӳснӗ тăрăхри чăвашсем хушшинче ҫырса илнӗ. Вăл вăхăтра ку йăлана чăваш ҫирӗп тытса пынă-ха. «Шуйттан чури» трагеди, «Тăлăх арăм» поэма, сăмахран, чӳкпе вӗҫленеҫҫӗ. «Нарспире те, ман шутпа, ӗҫ-пуҫ чӳкленипе вӗҫленет. Анчах та кунта лаша выльăх мар, ҫынсем чӳкленеҫҫӗ. Ҫакăнта ку таранччен асăрхаман вăрттăнлăх пурах пек. Авторăн философиллӗ тарăн шухăш тӗкӗрӗнче чăваш халăхӗн историлле шăпипе кун-ҫулӗ сăнланман-ши? Епле пулсан та гений калас тени — пӗр кунлăх чăнлăх мар. Геройсен вилӗмӗ (пиллӗк таран) чăваш халăхӗ пӗтессипе ҫыхăннă тесех ҫирӗплетмӗпӗр. Ҫапах та ҫакăн пек йышпа чӳклени пӗчӗк Сентти (хамăр наци пуласлăхӗ) телейӗшӗн пулмарӗ-ши вăл? Аслă ăру — Михетер, карчăкӗ, Тăхтаман — суя турра (мул-пуянлăха) пуҫҫапса пӳлӗхҫӗ кăмăлне юраймарӗҫ паллах. Нарспипе Сетнер (тепӗр ăру) ваттисенчен килекен чуралăх йӗркине сивленипе ҫеҫ ăна улăштарма ҫуккине ăнланчӗҫ. Ирӗксӗрленине тӳсейменскерсем, урăхла хӗҫ-пăшал ҫукран, хăйсем ирӗкӗпе чӳкленчӗҫ. Сетнер ҫамки ҫине картни те ҫакăнтах кӗрет. Этем хăйне хăй чӳклени — паттăрлăх-ҫке вăл, уйрăмах ун тӗслӗхӗ килес ăрусемшӗн кирлӗ. Камăн та пулсан ҫӗкленмеллех-ҫке чуралăх йӗркисене хирӗҫ. Чӳкленес пулать.

Кам татса калӗ: мӗн чухлӗ чӗрӗ вăй, шанчăк, хавхалану хавалӗ панă Нарспипе Сетнер чăваш тăван пулса ҫӗр ҫине килнӗ ăрусене?!

*1989, 2001*

## ÇУТ ÇАНТАЛĂК КИЛТЕРĔШЛĔХ

*(«Нарспи» поэмăн 100 çулне халалланă пухура каланă сăмах)*

Гений тарăнлăхне тĕпрен ăнкарса илес, ăна уçса парас тесен, паллах, вулаканăн та гений пулмалла. Анчах та хальлĕхе ку ĕмĕт çеç-ха: тен, килĕ малашне ун пек тĕпчевçĕ. Паянхи кун «Нарспи» авторне «гений» тесе хаклани илтĕнкелеме пуçларĕ. Анчах та ку хальлĕхе сĕмленӳ е пĕтĕмĕшле хак шайĕнче çеç-ха. Чăннипе поэтăн генилĕхне уçса кăтартма çав тери йывăр, мĕншĕн тесессĕн çав тери ерипен çывхарса пыратпăр «Нарспи» поэмăн шалашĕ патне. Утăм хыççăн утăм. Гений шăпи яланах çавăн пек — ăна хăй пурăннă (чĕрĕ) чухне çынсем «палламаççĕ» тейĕн, ун чăн пĕлтерĕшне ăнкарса илеймеççĕ. Этемлĕх аталанăвĕн саккунĕ мар-ши ку?! Мĕншĕн çапла пулать-ха? Чăн малтан, гений пек шухăшлани, тĕнчене курни — хăнăхнă (нимпех те палăрса тăман мĕльюншар çыннăнни пек) виçе картне лармасть, «нормăран» тухать тейĕпĕр. Эпир пурте виçене пăхăнатпăр, шухăштуйăмсем яланхи сулăма туртăнаççĕ — хăнăхнă йĕркесем, чарусем, пуçлăхсем т. ыт. те. Гений вара уçлăх орбитине талпăнса тухма хăват çитерекен сывлăш карапĕ пек, çав ашăм аштарăвĕн пĕр вĕçĕмсĕр ункăллă хусканăвĕнчен (сăнчăр татнă пек) «тухса ӳкет»; Турă пӳрни ку. Çавăнпа та ун тарăнăшне пин-пин (ахаль) çын кĕреймест, ун пултарăвне тивĕçлĕ хаклама та ăс çитереймест. Унсăр пуçне, унри вăрттăнлăх (илеме курни-туйни, хăйне майлă шухăшлани, хăй пĕр уйрăм тĕнче пулни, хупăнчăклăх т. ыт. те) кăштах «кансĕрлет» те, ютшăнтарать те таврари çынсене (çӳрет кунта ăсла персе! Çитеймест пулмалла кăштах!). Хутшăнма çăмăл мар унпа (йĕпписемпе тирет тейĕн!), чун алăкне хупă тытать — пылчăклă урапах кĕме хăтланакан сахал мар-çке-ха.

Обывательпе танлаштарсан тепĕр йышши типсем гений пĕлтерĕшне пĕверпе туйса тăраççĕ. Чылайăшĕ вĕсенчен талантсăр мар, анчах та Турă пани сахалтарах. Ку ĕнтĕ Моцартпа Сальери проблеми. Кĕвĕçӳ — çав тери хăрушă чир, вăл этем юнне пăсать, курайманлăх туйăмĕ куçне хура тĕтре карать...

Çĕр çинчи пурнăçне пурăнса ирттерсен, тепĕрер çур ĕмĕр иртсен гение «аса илеççĕ». Халь ĕнтĕ вăл хăрушă мар

никамшăн та: чи çывăхра пурăннă, анчах та пуринчен те ытларах кĕвĕçнĕ, курайман ĕçтешĕсем те çĕре кĕнĕ, общество пурнăçĕ (культура аталанăвĕ) çӳллĕрех шая çĕкленнĕ; вара генин чăн-чăн, ĕмĕрлĕх, пурнăçĕ тинех пуçланать, ун вăхăчĕ çитнĕ теççĕ.

К. Иванов пултарулăхне тĕрлĕ енчен тĕпченĕ çак иртнĕ çĕр çул хушшинче. Ман шутпа, паян илемлĕ çырулăх тĕпчевĕн тĕпри тĕллевĕ — «Нарспи» авторĕн масштабне пур енлĕн ăнкарса илсе тĕнче культурин контекстĕнче курасси. Эпир ăна унта лартайман-ха, çак ĕçе тума кирлине тахçанах туйса тăратпăр пулин те. Çавăнта ларма вăл тивĕçлĕ, анчах ку калама çук пысăк та сăваплă ĕç. Халăхри чи çивĕч те тарăн ăссен тивĕçĕ, çавсен хевте тупмалла, хăй тĕллĕн пулаймасть çак ĕç. Ниме тунипе çавăрса хураймăн ăна, Турă «чуптунă» çыншăн çеç вăй çемми ку.

«Нарспи» трагикăллă сывлăшпа тулса тапса тăрать — мĕн пуçламăшĕнчен вĕçне çитиччен. Çак трагикăллă туртăмсулăм вăйăмĕ вулакан чунĕнче амаланса унта хуçаланма пикенет — çутă та таса ĕмĕтсем хура-хаяр сĕмлĕхĕпе черетленсе улшăнса пыраççĕ, шанчăк çути йăлтăртатать, сӳнет, каллех йăлкăшса илет, курайманлăхпа ултав чĕр кĕмĕл пек таса туйăмсене таптаççĕ... Чун диалектикине çавăрса илме, çав хатĕрĕн пулăхлă енĕсене (чăвашла вариант!) хальччен пулман тарăнăша кĕрсе гений аллипе ĕçе кӳлĕннĕ автор. Йăлт чăвашла, халăх хевти кăвак хуппи пек уçăлать тейĕн. Çав вăхăтрах гений мускулĕ, шăнăрлă хевти Софокл, Эсхил, Еврипид орбитине талпăнса çĕкленет. Авалхи грексен трагикăлăхĕ тепĕр çунат хушать. Çавна пула чăваш генийĕн музи поэма пуçламăшĕнчех мăшăр çунатлă — Софокл чунне кăшланă синкерлĕх çамрăк чăваш генийĕн чунне хĕлхем ӳкерет. Акă вăл ирĕклĕ шухăшсен диалогĕ, анчах та икĕ пин çул каяллине тепĕр хут калани мар.

Çакă çутă тĕнчере
Вăйли çук та этемрен:
Шывсем çинче, çĕр çинче
Хуçа пулса вăл тăрать.

Анчах вăйлă этем те
Хăй тĕнчине пăхăнать.
Укçапала эрехех
Çынна ăсран кăларать.

Çак синкерлĕ шухăш (укçапа эрех ĕмĕлки-витĕмĕ) поэма фабулине витĕр шăнăрлать; çав вăхăтрах вăл илемлĕх тĕнчине кĕме май паракан çăра уççи те. Чăнах та иккен этеме укçапа эрех ăсран кăларать: Михетерпе карчăкĕн,

Тăхтаманăн синкерлĕ шăписем укçапа тӳрремĕн çыхăннă. Пĕтĕм ырă, çутă пулăм-вăйăма хуплать, шар кăтартать. Çав шутрах хăш-пĕр мĕлт-мĕлт çеç курăнса илекен çынсене те ăсран кăларать. Сăмахран, «пĕчĕк Яго» сăнарĕ поэмăра пысăк пĕлтерĕшлĕ. Çич-сакăр йĕркене хĕссе кĕртнĕ автор çак сăнара:

Пĕрре пĕр çын килчĕ те,
Тăхтаманпа калаçрĕç,
Нарспи пӳртре çук чухне
Пăшăл-пăшăл калаçрĕç.

Тĕнче шайĕнчи «Отелло» калăпăшпе картнă идея ку, анчах К. Иванов сăмаха питĕ кĕскен, Чехов пек пĕрсе çырма пултарать. Гений палли çавăнта та сисĕнет. Хыпарçă тухса кайсан кĕвĕçӳ туйăмĕ каллех вут-çулăм пек хĕмленсе каять — çамрăк арăм ӳт-кĕлеткине саламат кастарать. «Хĕне, хĕне, Тăхтаман», — çине-çинех илтĕнет текст тарăнăшĕнче калавлакан сасси. Психологизм хĕрӳлĕхĕ ӳсет кунта. Садистла тискерлĕхе, хĕнени-асаплантарнине сывă тăн-пуçлă вулакан хăйне те ирĕксĕрленĕ пек йышăнать. Ирĕклĕхне таптани Нарспи чунĕнче хăрушă шухăш тĕвĕлет, çав пĕчĕк хĕлхемрен часах чарса чарайми араслă «пушар» сиксе тухать. Автор Нарспи ĕçне малалла кӳтсе çитнĕ чунпа, шеллесе сăнать: лару-тăрупа ĕç-пулăмсен ыткăнуллă аталанăвĕ ун аллинчен вĕçерĕннĕ тейĕн, вĕсем хăй еккипе пыраççĕ ĕнтĕ. Кăшт каярахпа Сетнер те çав хаяр ĕçе тума хатĕрленет, анчах та Нарспи ĕлкĕрнĕ иккен. Çавăнпа вара автор икĕ хутчен «вĕлерттерет» Тăхтамана. Автор сасси пĕтĕмлетекен приговор пек илтĕнет:

Пĕтрĕ пĕр чун тĕнчере,
Ĕçĕсемшĕн хупланчĕ.

Чăн та ĕнтĕ, Сетнер шухăшпа çеç тăвать çак ĕçе. Апла пулин те сисĕмлĕ вулакан йăлтах ăнланать: автор (тĕп Тӳре!) çамрăксен ăраскалсăр шăпине чун çывăхне илет, анчах Турă çырнинчен иртме çук. Эпир, вулакансем, шухăшлатпăр та — кунта шухăшламалли вĕçĕ-хĕррисĕр. Тепĕр чухне сăнарсен ĕçĕ-хĕлĕ, вĕсен ĕмĕчĕ-тĕллевĕ тавлашу та çуратма пултарать, пĕри пĕрне, тепри тепĕрне кăмăллать. «Тĕрĕс тунăши Нарспи?» — текенсем те пур. Е айăплаççĕ ăна теприсем. Эпир чылай чухне тĕплĕн шухăшласа çитерейместĕр,

автор шухăшне тарăннăн ăнкарса илмесĕр ăна тӳрлетме пăхатпăр. Паллах, кунта Илеме туйманни çеç мар, этика кăлтăкĕ хытă сарăплать теприне. Гений çырнине хак панă чух уйрăмах асăрханулла пулмалла-çке-ха, теприншĕн ку вара ним те мар. Гений тарăнăшне кĕресси пин-пин çынтан пĕрин пулсан та аванччĕ. Çапах та тапаланатпăр, хăтланатпăр. Çав тӳсĕмсĕрлĕх, «мĕнех вара, «Нарспи» авторĕ те пирĕн пек çынах пулнă» тени юлашки çулсенче иванововеденире шухăшламасăр, тишкермесĕр тиркешес туртăм палăрăмĕсем çуратрĕ. Паллах, кунта никама та чару çук — хут вараланипе гений сăнĕ шупкалмĕ. Паян, «Нарспи» кун çути курнăранпа çĕр çул иртнĕ хыççăн, çак йăшăлтату хытăрах йăл илсе пынăн туйăнать. Унта-кунта илемлĕ литературăна вĕрентекенсем те Нарспи сăнарне тиркесерех (упăшкине вĕлерекен!) хаклани, ачасене çапла вĕрентни палăрать. Тĕрлĕ шухăшлăх кирлĕ вăл. Эпĕ ун пирки мар: гений мĕне пула вилĕмсĕр пулнине ăнланса илес пулать малтан тата унăн эткерĕ пĕтĕм этемлĕхшĕн пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине. Хурал пӳртĕнчи калаçу шайĕпе сапăрланса пурăнма намăс пире.

Эстетика пахалăхĕ çук пулсан хайлавра вăхăт иртнĕçемĕн вăл çуках пулса юлать, пурринче вара тарăнланса, çĕнĕ енĕсемпе уçăлса пырать. «Нарспири» трагикăлăх е синкерлĕх авалхи грексен трагедийĕсенчи пек терĕмĕр. Тепĕр хут каламалла, «укçапала эрехех çынна ăсран кăларать» тени чăн та вăл çăра уççи пек. Шухăшласа вулакана автор пирвайхи йĕркесенчех çакна туйтарать: Михетершĕн хĕрĕн телейĕ — пуян упăшкара. Вăл хăй те çĕрме пуян, çавăнпа та пулас кĕрӳшĕн пуянлăхĕпе хĕрĕ телейлĕ пулĕ тесе шутлать. «Хĕр телейшĕн тăрăшса пуян каччă шырарăм», «Ӳсрĕ çитрĕ, пулчĕ хĕр — пуян упăшка кирлĕ», — тет Михетер, ĕмĕтленет. Паянхи бизнес çыннисен е хуçасен куçĕпе пăхсан çакăнта ним япăххи те çук пек. Анчах та К. Иванов ăс-хакăл, чун-кăмăл пахалăхĕпе укçа-тенкĕ (мул) хушшинчи хирĕçĕве çивĕчлетсе парать. Темле пуян пулсассăн та çыннăн пуянлăхĕ енчĕкре мар иккен — чунра; чун пуянлăхĕ кирлĕ, ăс-хакăл пуянлăхĕ кирлĕ.

К. Иванов çав пуянлăх шутне юрату туйăмне, этемĕн чысне, çынлăхне кĕртет. Çавна хӳтĕлеççĕ кĕрешӳçĕсем. Чăн малтан — Нарспи. Сетнере кăштах хăюлăх çитмест пек ку-

ранать. Нарспи хастартарах. Тен, чăваш хĕрарăмĕн пурнăçри вырăнĕ çавăн пекрех пулнă — нушаллăрах; çав, тен, хистет хăюллăрах, хастартарах пулма. Е акă тата укçа-тенкĕ пирки. Нарспи уçă текстпа палăртать шухăшне:

Ӳстертĕр те укçашăн
Сутса ярса пĕтертĕр.

Каллех Нарспи пуянлăха епле хаклани кунта, тăршшĕпех çавăн пек.

Трагедилĕх пирки тепĕр сăнав. Юмăç патне кайнине тепĕр хут вуласа тухас пулать пирĕн. 1960-мĕш çулсем таранах, 70-мĕш çулсенче те илтĕнетчĕ-ха çапла çырни: «Юмăç патне кайни вăл, критикăллă реализм меслетне шута илсессĕн, юмăç суйине тăрă шыв çине кăларни», — тетчĕç, çавăн пек ăнлантарса паратчĕç. Суя пурнăç. Чăваш пурнăçĕнче юмăçсем вĕсем халăха пусмăрлакансем, ултавçăсем пулнă тетчĕç. Анчах кунта каллех авалхи грексенни пек тарăн лартать ыйтăва К. Иванов. Грексен çавăн пек жрецсем, оракулсем малтанах систерсе каланă пулнă. Сăмахран, Эдип шăпине каласа параççĕ: «Эдип патша, сана хăвăн ывăлу вĕлерет, çуралман ывăлу вĕлерет» т. ыт. те, т. ыт. те. Чăн та çавăн пек пулса тухать кайран. Шăпа кĕнекинче çырни пирки сăмах пырать кунта. Ăнсăртран пулакан япала мар вăл. Суя мар кунта вăл юмăç. Турăсем иккен хирĕç тăраççĕ, турăсем палăртнă. Çавăн пек чухне авалхи грексен туррисем мĕнле калаççĕ, унтан çын иртеймест. Эдип та çавăн пекех, Ясон та çавăн пекех, ытти геройсене те илме пулать; Софокл, Эсхил, Еврипид геройĕсене: вĕсем шăпа, Турă çырнинчен иртеймеççĕ. Кунта шăп çав йĕрпе пырать ĕç-пуç. Пăхатпăр та, шурă пуçлă старик тĕрĕс сăмах калать иккен. Малаллахи ĕç-пуç çавна çирĕплетсе парать. Нимле суя сăмах та çук кунта. Çывхаракан хăрушлăха çав япалана туйса вулакан ун чухнех чун сĕмленĕвĕпе сиссе илет. Суя мар вăл. Юлашкинчен çавăн пек пулса тухать те. Константин Иванов каллех ăнсăртран нимĕн те каламасть иккен, кĕскен, пĕрсе çырнă, кунпа пĕрлех генилле тарăн. Вуланă чухне пирĕн çав «вăйă йĕркине» пăхăнса («вылямалла») вуламалла. Иванов сĕнекен «вăйă йĕркине». Унсăр эпир йăнăшма пултаратпăр. Тарăн интуициллĕ старик чĕрипе туять:

Мĕнле вара ку паян?
Чĕре чăнах пĕлчĕ-шим?
Суйса парас тенĕччĕ —
Ак тамаша! Тĕрĕс-шим?

Суя мар иккен ку, грексен трагедийĕнчи пек чăнлăх. Çав рок, шăпа кĕнеки каллех тĕнче литературин чи пысăк шайĕнчи контекстра палăрать. Уйрăм мел вăл питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ. Пушă илем мар, ĕçлекен мел тейĕпĕр.

Чăваш генийĕн, калăпăр, тепĕр черченкĕлĕхĕ пирки сăмах пырать поэмăра:

Çав тер ырă ачана
Турă чунне панă çав,
Кулса сиксе выляма
Кайăк чунĕ янă çав.
Çичĕ çулхи ачара
Чăваш чунĕ ларать çав.

Чăваш характерне Сентти сăнарĕ питĕ лайăх палăртать. Ача çеç темелле, анчах та çитĕннĕ чăваш чунĕ те палăрать çакăнта. Чăваш чунĕн черченлĕхĕ, эпĕ анлăлатса каласшăн, чăваш генийĕн черченкĕлĕхĕ.

Унсăр пуçне К. Иванова çакăн урлă та тĕнче литературин контекстĕнче курма пултаратпăр: «Нарспире» пулса иртекен трагедиллĕ ĕçсем мĕн пуçламăшĕнчен вĕçне çитиччен вуласа тухнă хыççăн пирĕн чуна кисретсе куççульпе çуса тасатаççĕ. Катарсис тет ун пирки Аристотель, синкер пулăм витĕмĕ ĕнтĕ вăл. К. Иванов çавăн пек пурăнăр тесе ăса вĕрентмест. Литературăпа искусствăн пĕр функцийĕ — воспитани парасси; кунсăр пуçне тепĕр çирĕме яхăн функци. Литературăпа искусство мĕн тума кирлĕ тетпĕр? Тем те параççĕ вĕсем. Анчах та чи кирлисен, тĕприсен шутĕнче — катарсис. Чи витĕмли. Нарспин телейсĕр шăпи, инкеклĕ е трагедиллĕ кун-çулĕ тейĕпĕр, пин-пин вулакан чĕрине кисретет, хускатать çеç мар. Çавна пула эпир пăшăрханатпăр — вулакансем, пин-пин вулакан. Хамăр чун витĕр кăларатпăр унăн шăпине, унăн кун-çулне, хамăра ун вырăнне лартатпăр, çавна пула эпир çĕнелетпĕр чунпа, акă мĕнре ун вăйĕ! Кун пек произведени чăваш литературинче каллех çук. Катарсис. Çавăн пек хăватлă, тасатакан вăйлă произведени, çавăнпа чăваш хăй чунне пĕр ĕмĕр тăршшĕ, шăп та лăп 100 çул ĕнтĕ, «Нарспие» вуласа çăвать, тасатать, çутатать...

Нарспин ăраскалсăрлăхĕ чуна макăртать, куççуль кăларать. Ашшĕ чунне ним те витеймерĕ, вăл çаплах ăнланаймасть: «Мĕншĕн, хĕрĕм, мĕн пуртан юрататăн Сетнере?» — тет. Вĕсем, ашшĕпе амăшĕ, илме пынă Нарспие. Синкерлĕ ĕç-пуç, пулăмсен тĕвви салтăнса пырать ĕнтĕ. Кунта Нарспи Сетнерпе пехиллесессĕн ашшĕпе-амăшĕпе пыма килĕшетчĕ, анчах пăхăр-ха — пăрпа вут пек: вĕсем хушшинче нимĕнле килĕшӳ те пулма пултараймасть иккен. «Тепрер каччă тупăпăр», — тет ашшĕ. Кунта килĕшӳлĕх, гармони тени, çураçулăх пулма та пултараймасть; вĕсем каснă улма пек иккен, вĕçне çитиччен пĕрлешеймеççĕ икĕ татăк, пĕр улман икĕ пайĕ. Çĕнĕрен тĕвĕленеймест. Трагеди çӳлтен килет каллех, çĕр çинчи ахаль çынсенчен мар, турăсенчен. Нарспи: «Апла пулсан килĕшместĕп», — тет, Сетнерпе юлать. Вара ватăсем ылханса тухса каяççĕ. Авалхи грексен ылханлă йăхĕсем çич-сакăр сыпăк таран инкек кураççĕ. Хăрушă ылхан. Ылхан вĕсен пуçĕ çине ӳкет, ылханакана тата хытăрах лекет вăл яланах — çӳлтен килекен йĕрки çавăн пек.

Пĕтĕр, типĕр çакăнта,<br>
Типĕр хăрăк турат пек!<br>
Шăммăр-шаккăр çĕриччен<br>
Асапланăр, йытă пек! —

тет амăшĕ. Юлашкинчен ним тăвайман енне тухса каймалли çеç юлать.

Нарспи вилĕм витĕр вилĕмсĕрлĕхе ĕмĕрлĕхе куçать. Каллех чăваш литературинче пулман кун пекки. Çавăн пек каланă ăслă сăмах пур: «Эпир вилмен пулсан вилсе пĕтнĕ пулăттăмăр». Шухăшласа пăхăр эсир: çакăн пек вилекенсем кирлĕ иккен çĕр питĕнчен йĕрсĕр-мĕнсĕр çухалас мар тесен. Хăй ирĕкĕпе вĕсем вилеççĕ, хăйсене хăйсем парне кӳнĕ пек. Чысшăн, ят-ратне хисепĕшĕн вилме кирлине ăнланса илесси — пăхсан çĕлĕк ӳкмелли çӳллĕ шайра вăл. Кашни тăваймасть ку ĕçе. Нарспипе Сетнер чун хавалĕ çитернĕ. Çав иксĕлми хăват çăлкуçĕ чăваша ĕмĕр-ĕмĕр вăй парса тăрĕ. Çав çăлкуçа варалас пулмасть пирĕн.

*2008*

Кирек мĕнле наци культуринче те халăх чунне шалтан уçса сăнлакан хайлавсем пур. Иртнĕ ĕмĕрти тăван çырулăх аталанăвĕн çул-йĕрне илсе пăхсан унта çакна асăрхатпăрах: хăш-пĕр çыравçăсем калăпланă сăнарсен характерĕнче (вăхăт иртнĕçемĕн) чăваш çыннин чунне палăртакан енсем уçăмланса та витĕмлĕнрех курăнса пыраççĕ. Çеçпĕл лирикин геройне е Хусанкайăн Тиллине илер, калăпăр. Е Тăхтин Ярмушĕпе Уярăн Палюкне. Ятсене тепĕр теçеткене яхăн та асăнма пулĕччĕ кунта. Наци колоричĕ е наци характерĕ текен ăнлавсем илемлĕ çырулăх аталанăвĕн шайне кăтартаççĕ. Чăн та, кун пек хак авалтан килекен хаклăх-пахалăхсемпе йăли-йĕркисене куç пек упрама тăрăшакан литературăсемшĕн пысăк пĕлтерĕшлĕ. Урăхла каласан, ĕмĕрсем хушши пуçтарса, çырулăх никĕсне хывса пынă традицисем пирки сăмах пырать ĕнтĕ. Паллах, эпир кунта килелсе пăрахăçа тухнă (вилĕ) традицисем пирки сăмах вакламастпăр. Р. Генон ятарлă тĕпчевĕнче çырнă тăрăх, «традици» ăнлавăн тӳрĕ пĕлтерĕшĕ Мал ен (Тухăç) культурисенче çеç упранса юлнă; Кай енре (Анăçра) культурăсем нацилле сăн-сăпатне обществăпа политика тата социаллă-экономикăлла прогресс арманĕпе авăртăнса çухатнă, пĕрешкелленнĕ. Çавна пула мăн кăмăллă Анăç Тухăç еннелле европоцентризмла куçпа пăхса ăна кая тăрса юлнă тесе ĕнентерет. Чăн та, паян Европăра та нумай ку суя пулнине витĕр куракансем.

Паллах, традицирен культ туса хума юрамасть, вăл илемлĕ литература тĕнчине «тĕрĕллĕ» (хăйнешкел) сăн-сăпат кӳмелле, сывлăш пек сăрхăнса кĕмелле унта, вулакансем вара унпа сывланине хăйсем туймасан та пултараççĕ. Анчах та час-часах çакăн пек тĕслĕхсене те курма пулать. Темиçе томлă роман авторĕ истори темипе çырма пикенет, вара авалхи самана сăн-сăпатне колорит хушас тесе ун «фасачĕ» çине Шелепи «Çĕрпӳ пасарĕ» поэминче сăнласа кăтартнă кивĕ ăпăр-тапăрпа савăт-сапана (чăваш хĕрарăмĕ çатан хӳме çине тумтир типĕтме кăларса çакнă пек) чыхса тултарать е çине-çинех Ашмарин словарĕнчи манăçа тухнă сăмахсемпе çăтăлтарать. Ваттисен сăмахĕсем те («тĕнчере тĕрлĕрен кĕнчеле» йышшисем) кашни хут

енрех тӗл пулаççӗ темелле. Мӗтри Юманпа Илле Тăхтие, Хветӗр Уярпа Илпек Микулайне ытла тӳртӗн евӗрленӗрен, тӳррипе каласан çут çанталăк талант паманран, пирӗн тухăçлă ӗçлекен çыравçăн кирпӗч-романӗсем вилӗ çуралнине вăхăт кăтартса пачӗ. Анчах та сăмахăм урăххи пиркиччӗ-ха.

Чăваш çыннин характерӗ пирки шухăшланă май унра сайрарах тӗл пулакан темиçе «типаж» пирки каласа хăварасшăн. Çак пулăма, ман шутпа, вулакансем ку таранччен асăрхамасăр тăма пултарайман. Мӗнлерех-ха вăл «вăтам» чăвашăн менталитечӗ, характерӗ, шалти сăн-сăпачӗ? Паллах, кунта пӗр-пӗр ӗмӗрлӗхе улшăнми хытса ларнă «типаж» пирки сăмах пыма пултараймасть. Ăс-хакăлпа кăмăлсипет тӗлӗшпе илсен, чăваш хушшинче мӗнле кăна çын курмастăн: çармăс, вырăс, тутар, ирçе-мăкшă çыннисемпе этно-историлле çыхăну-хутшăнусем тăтăш пулса пыни те чăваш сăн-сăпатӗнче палăрмалла йӗрсем хăварнă, калăпăр, тутарпа кӳршӗллӗ халăхсем т.ыт.те. Леонид Сергеев профессор хамăр чӗлхе диалекчӗсен карттине тунă пек, халăхăн психологилле карттине те кам та пулсан тăвас тăк ан тӗлӗнӗр, унта пӗр-пӗринчен пачах уйрăлса тăракан «типсем» палăрса тухма пултарӗччӗç. Сăмахран, район администрацийӗн чиккине пăхăнмасăр çурçӗр-хӗвел анăçӗнчен кăнтăр-хӗвел тухăçне çитиччен чăваш ялӗсене кӗре-кӗре тухса психологилле типсене уçса палăртсан?! Пачах та пӗлмен çын «çурçӗртипе» «кăнтăрти» хушшинчи контраста асăрхаса тӗрлӗ халăхсен çыннисем мар-ши кусем теме те пултарӗччӗ. (Сăмах май, чăвашпа чăваш пӗр-пӗрне ăнланайманни, кӗвӗçӳ чирӗ çакăнтан та килмест-ши?!) Асăрхама асăрхӗччӗ-ха расналăха, анчах та хăш енчисене «тӗп чăвашсем» тесен вырăнлăрах пулӗччӗ-ши? Ку ыйту кăткăссинчен те кăткăсраххи пулӗ, мӗнле чăваш хăй пирки тутар тесе калатăр-ха, ан тив, сăнӗпе те, тыткаларăшӗпе те унпа пӗр калăп пултăр. Эпир, чăвашсем, — интернационалистсем, пур халăхпа та туслă, килӗштерсе пурăнма тăрăшатпăр, калăпăр, пӗр поэт паспортӗнче хăйне еврей тесе çыртарни пире халь тӗлӗнтермест: рынок саманинче ят та тавар.

Çапах та тӗп ыйтуран пăрăнар мар-ха. «Тӗп чăваш» тенӗрен, çав шута Константин Иванова е Çеçпӗл Мишшине кӗртме пулать-ши? Пӗр иккӗленмесӗр кӗртмелле. Мӗншӗн тесен вӗсем чăваш культурин символӗсем е, Митта

Вaçлейĕ каларăш, ун никĕсĕн вăта çĕрти кĕреш юписем. Вĕсен чĕлхине эталон вырăнне шутламалла тата илемлетсе калăпланă сăнарĕсен характерĕпе чун-кăмăл пахалăхĕсем пирки те çавнах каламалла: вĕсем чăваш менталитетне туллинрех те тарăнрах уçса палăртаççĕ. Мĕнле майпа-ха? «Кĕрешӳçĕ» е «тӳрĕлĕх салтакĕ» тетпĕр эпир пĕр-пĕр паллă çын пирки. Урăхла каласан, ырра е тĕрĕслĕхе хӳтĕлени, пĕр утăм та чакманни. Кĕрешӳ тĕллевĕсемпе майĕ-мелĕсем тĕрлĕрен пулаççĕ-çке-ха. Çеçпĕл Мишши мĕншĕн тата кампа кĕрешсе çирĕм иккĕре çĕре кĕнине пурте пĕлетпĕр. Тĕрĕслĕх ялавне мĕн вĕçне çитиччен алран вĕçертмен аслă поэтăмăр. Ĕмĕр тăршшĕпех танлă пурнăç йĕркисене ĕмĕтленекен халăхăмăршăн, унăн чĕрĕлекен культурипе чĕлхишĕн çунса кăмрăкланнă сăвăç чĕри. Ирĕклĕхпе танлăха курайман бюрократи пулнă унăн чи пысăк тăшманĕ. Çеçпĕл тĕслĕхĕнче мăнаçлă пĕлтерĕш пур. Тен, эпĕ йăнăшатăп, чăваш менталитечĕн шăнăрĕ мана тĕрĕслĕх тĕлĕшпе уйрăмах сисĕм-туйăмлă пулнипе çыхăннăн туйăнать. Чăваш çынни, сĕтĕрекен вăкăр пек, çав тĕрĕслĕх туйăмне таптанине сиссен нимле чăрмав-хăрушлăха пăхмасăр вĕçне çитиччен каять, мĕн пулать те мĕн килет, каялла çул çук тенĕ пек. Тӳрĕрен калакан тăванне юрайман тени çавна ăнкарса илме кăштах пулăшать. Ку вăл — çеçпĕллĕх, тĕрĕслĕх туйăмне нимрен çӳле лартни, компромисса сивлени. Тен, ăна, таланта, Турă чуптунин палли теме пулĕ. Анчах çакна татса калама пулать: тĕрĕслĕх туйăмĕсĕр çын (конформист) ĕмĕрлĕх пахалăхсем пултараймастех. Çеçпĕл Мишшин тăван ялĕ, Касаккасси, Шăхран тăрăхĕнче (хальхи Канаш) вырнаçнă, Чăваш çĕрĕн варринче, эппин.

Тĕрлĕ енчи чăвашсен менталитетĕнче уйрăмлăхсем пурри иккĕлентермест, эпир вулаканпа пĕрле çавсем пирки шухăшласа пăхасшăн. Хак парасси — пирĕн ĕç мар.

Çеçпĕл çуралнă вырăнтан кăнтăралла куçса пынă май Каçал е Елчĕк витĕр тухатăн, унтан тутарсемпе кӳршĕллĕ Патăрьел районне пырса çитетĕн. Мĕн тери ĕçчен кунти чăвашсем, хăна-вĕрлене тарават, çăкăр-тăварлă, ялĕсенче çĕнĕ капмар çуртсем тавралăха илем кӳрсе лараççĕ — «хула тейĕн инçетрен». Литературăпа ӳнер е ăслăлăхра палăрнă хисеплĕ ятсене шутласа кăларма та çăмăл мар. Çут çантали пушăлăха юратмасть иккен, кашни тăрăхранах чăваш

менталитетне, пĕр хӳхĕм чечек çыххине çĕнĕ тĕспе пуянлатакан çеçке туни хушнă пек, çĕнĕ енсемпе тĕрĕлет. Анчах та тепĕр енĕсĕр пулмастех, хура курак ушкăнне шурри те лекет. Калăпăр, Митта Ваçлейĕн йăлттам талантĕнче, çынлăхĕнче, çырлахуллă кăмăлĕнче, лăпкăлăхĕпе сăпайлăхĕнче мĕн тери туллин (тулли курка пек) палăрнă ку енчи чăваш менталитечĕ. Çак пирĕшти пек таса та сăваплă ят çумĕнче мĕн тери илемсĕррĕн курăнса кайма пултарать пĕр икĕ-виçĕ çыннăн сĕмсĕрлĕхĕ («шакурлăхĕ» сăмах та чĕлхе вĕçĕнчех тăрать), чавсапа хирсе, шăлпа çыртса тĕрлĕ званисем тивĕççĕр илсе вĕсен хакне хисепрен кăларни, йӳнетни, наградăсемшĕн çунни. Хăйсем тавра пропаганда хывăхĕпе тусанĕ пĕр чарăнми тĕрĕлтетнĕрен чăн-чăн сăнне те, чунне те курма çук, хăйсем вĕсем вĕçĕмсĕр ӳсеççĕ, çĕкленеççĕ, творчествăлла «çитĕнӳсем» тăваççĕ, рынок хӳттипе орден е преми туянаççĕ. Вăрçă хирĕнчи мародер пек: çар званине тупса миххине чикме хатĕр. Мана чăваш хама ăнланни, чун-чĕрипе йышăнни ним тума та кирлĕ мар, эп хам пирки Европăна калаçтаратăп тени тата. Е психика пăсăлас тарана çитиех влаçшăн вĕтеленсе çунни (манипе аптрани). Тепри ют чĕлхене куçарнă кĕнекисемпе мухтанать, шучĕпе вăл Çеçпĕлпе К. Ивановран çĕр хут ытларах çырса пичетленĕ, анчах та икĕ классик эткерĕ вăл çырнă макулатурăран çĕрпе пĕлĕт пек уйрăлса тăрать.

Хисеплĕ вулаканăм, Турă пур, ячĕсене асăнни ним тума та кирлĕ мар кунта. Илемлĕ литература кун-çулĕпе кăсăкланакан, ун сăваплă тивĕçне е ăслăлăха пуç таякан çын çав ятсене курмасăр тăма пултараймасть. Эпĕ кунта унашкал пулăмсем те тĕл пулаççĕ тесе пĕтĕмлетсе каларăм. Енчен те эпир çав япаласене асăрхаман пулсан вĕсене çук тесе те шутлама пултаратпăр. Тен, эпĕ йăшăшнă эппин. Ку темех мар. Енчен те (çапах та) унашкал типсем те пуррине йышăнатăр пулсан «çеçпĕллĕхпе» «шакурлăх» (Шакур — паллă лаша вăрри) хушшинчи уйрăмлăха эсир, хисеплĕ вулаканăм, питĕ лайăх куратăр тата çак икĕ хире-хирĕç сулăмран пĕрне çеç чунăрпа хапăллатăр паллах. Çапла вара «çеçпĕллĕх» вăл илемлĕ сăмахăн хăватлă ăсти çеç мар, чăн-чăн çынлăхăн таланчĕ те.

Константин Иванов çырнисене те вăхăтран вăхăта вуласах тăни пире хамăрта çынлăх туйăмне мăкатасран асăр-

ханма пулăшать. Поэтăн мăн аслашшĕсем XVIII ĕмĕрте Чăваш çĕршывĕн вăта çĕрти тăрăхĕнчен (Çеçпĕл ялĕнчен инçе мар теме пулать) куçса кайнă-тăр. Икĕ поэтăн чĕлхи ытла та çывăх пĕр-пĕрне, психологи хăйнешкеллĕхĕ пирки те çавнах каламалла. Поэт каларăш, этемĕн çынлăхĕ вактĕвекре те палăрать. Илемлĕ литература хайлавĕ хаçат текстĕнчен (е протоколран тейĕпĕр) хăйĕн илемлетнĕ формипе (тумтирĕпе) уйрăлса тăрать. Шухăшласа кăларнă фабула, Нарспипе Сетнер пек, кăштах пурнăçринчен илемлетсерех ӳкернĕ сăнарсем, ырăпа усал вăйсен тытăçăвне май пур таран хиврелетсе трагеди шайне çĕклени тата ытти нумай-нумай енпе пулăм илемлĕ çырулăхăн чĕрĕ сĕткенĕ кулленхи пурнăç тымарĕнче пулнине ĕнентереççĕ. Çакна уйрăмах «Нарспи» поэмăра сăнласа кăтартнă чăваш тĕнчин шал енĕсемпе тулашне тĕсесерех тимлесен тепĕр хут туйса илетĕн. Поэма авторĕ витĕр куçлă ӳнерçĕ пулни паллă, çакă вăл кашни сăн-пулăма ӳкерчĕклесе кăтартас туртăмра сисĕнсе тăрать. Çав вăхăтрах вăл ырăпа усал тытăçăвне хăй чĕри витĕр кăларса вĕсенчен кашнине тивĕçлĕ «хак парать», анчах ăса вĕрентессинчен асăрханать. Чылай чухне тепĕр автор позицийĕ ытла та çиелтен палăрса тăрать; паллах, ырă вăйсене хӳтĕлет вăл, усала уççăн сивлет, анчах та искусство вăрттăнлăхĕ хайлавра çук, çавă-çке-ха чи кирли. «Тимĕр тылă» балладăра çынсене мĕн хирĕçтерет-ха? Мĕнрен тĕвĕленет-ха конфликт, урăхла каласан. Константин Иванов хайлавĕсенчен кашнийĕнчех, ан тив, вăл пĕчĕк калăплăскер çеç пултăр, чăваш пурнăçĕн тулли енлĕ проекцийĕ тĕпре, автор хăй те ырăпа усал кĕрешĕвĕн-хирĕçĕвĕн сăлтавĕсене шырать-и тен? Уншăн ывăç тупанĕ çине хурса сĕнекен чăнлăх — шухăшлакан ăс-пуçа çырлахтаракан хурав мар. Тен, ырăпа усал хирĕçĕвĕн саккунĕсем те пĕр вырăнта хытса ларман, тĕрлĕ лару-тăрура çĕнĕлле палăраççĕ.

«Тимĕр тылăри» Чĕкеç сăнарĕ автор идеалне питĕ çывăх. Тухатмăш карчăкăн икĕ тăлăх кинĕнчен пĕри ку. Баллада пуçламăшĕнче автор халăхра çӳрекен сăмах-юмаха аса илет, чăваш хĕрарăмĕ мĕншĕн тимĕр тылăран шикленнине асăрхаттарать. Вулакан тавçăрчĕ: суккăр карчăк та, тимĕр тылă хуçи, таврара паллă тухатмăш иккен. Анчах мĕншĕн вăл уйрăмах кĕçĕн кинне юратмасть-ха?

Кĕçĕн кинин, каласан,
Ячĕ унăн Чĕкеçчĕ,
Хăй те чĕкеç пекехчĕ,
Ытарма çук аванччĕ,
Алли çăмăл ĕç тума,
Тути çӳхе чуптума.
Чĕкеç кинне карчăкĕ
Темшĕн ытла юратмасть,
Хăвăр тупăр мĕншĕнне
Ăна чĕлхем калаймасть.

«Темшĕн ытла юратмасть», «хăвăр тупăр мĕншĕнне» тени кунта автор диалог валли текста пĕтĕм тарăнăшпе ăнланса шухăшласа вулакана асра тытнине пĕлтерет. Кил хуçи тухатмăш пулсан пĕтĕм кил-йыша çăмăл-ши унпа юнашар пурăнма?! Е тухатмăш кăмăлне кайма пултарчĕ тĕк кинĕ, таса-ши унăн чун-чĕрийĕ? Е вăл икĕпитленсе, чееленсе çеç хисепленĕ пек тăвать. Автор ырăпа усал ăш-чикне шалтан тĕпчет, философиллĕ шухăш çавăрма тăрăшать, çав икĕ пулăмăн ĕмĕрхи хирĕç тăрăвĕн саккунне чăн чăвашла тĕплет. Кунта килĕшӳ-çураçу ниепле те пулма пултараймасть. Сăмах май, тӳрĕрен калакан тăванне юрайман тенине каллех аса илме тивет. Кунта ытла та çемçен каланă-ха, «юрайманни», тен, ун пекех хăрушă мар пуль-ха, чылай чухне ырри, тӳрĕ чунли вилет, усал вăй айне пулать, хăй çине ала хурать. Сенттинни пек çепĕç те черченкĕ «кайăк чунĕ»-ши вăл чăваша пӳрнĕ чĕм хавалĕ?! Тен, Чĕкеçĕн тарăн çăлкуç пек куçĕсенче (тĕкĕрти пек) хăйĕн шалти сăнсăрлăхĕ курăнса кайнине çынсем асăрхасран шикленет тухатмăш карчăк? Çапла вара автор икĕ хире-хирĕçле полюс паллисене сăнарласа ӳкерет: тухатмăш — усал тĕнчин символĕ, Чĕкеç — этем пархатарне пур енлĕн палăртать. Анчах та ку вăл ырăпа усалăн абстрактлă символĕсене уйăрни çеç-ха. Кулленхи пурнăçра, çынсен хутшăнăвĕсемпе çыхăнăвĕсенче çак символсен куçа курăнакан пайăр енĕсем курайманлăхпа чунсăрлăх, тараватлăхпа çынлăх тата ытти нумай-нумай чун пахалăхĕ урлă палăрса тухаççĕ. Çынсен татăклă ĕçĕсенче, пĕрне-пĕри ырă ĕçпе пулăшнинче е ура хунинче, кĕвĕçӳ урлă... «Тимĕр тылăрах» акă автор калас тенĕ философиллĕ шухăш тем тарăнăшне пытаннă. Тухатмăшпа тимĕр тылăран çеç килчĕ-ши Чĕкеçĕн инкекĕ? К. Иванов кунта йăлайĕркепе кулленхи пурнăçри вак-тĕвексен шайĕнче çеç шухăшламасть, ăна пĕтĕмĕшле чăваш тĕнчин пуянлăхĕпе пĕрлех хăш-пĕр илемсĕр енĕсем те канăçсăрлантарççĕ. Çĕрлехи Акăр çулĕпе йĕре-йĕре юрласа пыракан Чĕкеç виççĕмĕш юсманне пăрахса хăварса тимĕр тылла хăратса каялла

тартнă хыççăн тинех «çитес çĕре çитнĕччĕ» ĕнтĕ. Çук, кĕртмерĕç ăна икĕ аппăшĕпе пиччĕшĕ, вĕсем пурте, хальхи чĕлхепе каласан, автоответчик пек хуравларĕç: «Çĕрле çӳрес хăнам çук, утах хăвăн çулупа!». Тен, кӳршĕсем патне пырса алăка шаккаса пăхмаллаччĕ Чĕкеç кинĕн? Хăш вăхăтра йăва çавăрнă çавнашкал чунсăрлăх Чĕкеçшĕн такамран та хаклă тăванĕсенче? Çавăн пек çуралнă-и вĕсем е пурнăç лутăрканин палли-ши ку?

К. Иванов стилĕ е илемлĕ шухăшлавĕ сахал сăмахпа çав тери нумай калама пултарнинче уйрăмах палăрать. Тен, кунта та вăл сусăрланнă чунпа пурăнакан пĕртăвансен кунçулĕ пирки çеç мар, хамăр тăван халăхăмăрăн пĕрлĕхсĕр сапаланчăк йышĕ пирки чунне ыраттарать? Халăх хевтипе ун тĕп хысаккине уйрăм чăваш çыннисем пĕрлешсе чăмăртаççĕ-çке-ха. Пурнăç тытăмĕ, никĕсĕ çемье пĕрлĕхĕнчен (тăванлăх туйăмĕн çирĕплĕхĕнчен) ытларах килет. Чĕкеç вилĕмĕн тĕп сăлтавĕ — тимĕр тылăра мар, аппăшсемпе пиччĕш çирĕç ун пуçне. Акă ăçта чи хăрушă трагеди çăлкуçĕ. Эпĕ ăнланнă тăрăх, çак «хăлхасăр» чунсем макăрса, йăлăнса ыйтакан мĕскĕне уçса кĕртменнинче çав тери анлă пĕтĕмлетӳ пур. Тĕшмĕше те ĕненеççĕ пуль-ха Чĕкеçĕн хăравçă тăванĕсем, тен, йăмăкĕн сассипе çур çĕр тĕлĕнче усал калаçать тесе шутлаççĕ. Анчах та кашниех вĕсенчен харпăр хăйшĕн тăрăшать. Чĕкеç вара усалтан çăлас темен тăванĕсене ӳпкелешмесĕр (чăн чăвашла!) «сыв пул эппин, аппаçăм!», «сыв пул эппин, пиччеçĕм!» тесе çеç уйрăлать. Чунĕпе паçăрах сисет вăл: часах тимĕр тылă ун пуçне çиетех. Улăм ăшне хăпарса пытанни çăлаймĕ. Ирхине выльăхне апат пама аслăк çине хăпарнă пиччĕшĕ тупать ун виллине, анчах кулянать-ши вăл? Кун пирки автор пĕр сăмах та асăнмасть. Çакнашкал сăмаха «çăтса ярса» ăсталанă фигурăсем поэт çырнисенче питĕ тарăн пĕлтерĕшлĕ. Чылай чухне, ман шутпа, вĕсене автор вулакана адреслет. Эпир (пин-пин вулакан) пурте явапла та, айăплă та тесшĕн вăл.

Çапла вара Чĕкеç ырă Турă (юсман) пулăшнипе усалран тарса хăтăлма, ăна хăратма та пултарчĕ. Анчах та ытларах чухне этем шăпи (телей-инкекĕ) çынсенчен хăйсенчен килет, чунсăрлăх-и, хăравçăлăх-и е ăс-тăн вăрахчен тĕлĕрни-и вăл — ку пурпĕрех. Ăса вĕрентмесĕр систерсе çеç каланинче халăхăн трагедиллĕ малашĕ пирки калани пу-

рах: тăванлăхпа йыш туйăмĕ хавшани, чун сассине илтменни, пĕчченлĕх туртăмĕ, йывăр лару-тăруран кашни хăй тĕллĕн (тамăк çинчен калакан анекдотри пек) тапаланса тухма хăтланни — çак чир паллисем чăваш менталитетне шĕкĕ пек çиме пуçланă. Ырăпа усал кĕрешĕвĕ çынсен чунчĕринче тарăн «суха йĕрри» хăварать: тăван тăванне шанмасть, тӳрĕрен калакан тăванне юраймасть пулсан инçех каятпăр-ши эпир тесшĕн вун çичĕ çулхи поэт. Йăлтах ăнкарнă витĕр куçлă гений, чун куçĕпе курнă: çав икĕ хире-хирĕçле вăй хушшинчи кĕрешӳ йăла-йĕркери вак-тĕвексенчен йăл илсе пурнăçпа вилĕм тытăçăвĕ таран арасланма пултарать.

К. Ивановăн кашни хайлавĕнче куратпăр эпир ырăпа усал, пурнăçпа вилĕм, чăн-чăн çынлăхпа хаярлăх кĕрешнине. Таса, çутă чунлă, тĕрĕслĕх енне туртăнакан геройсем çак кĕрешӳре шелсĕррĕн хур кураççĕ, теприсем усалпа çыхланиччен Турă тӳсĕмлĕх патăр тесе пăрăнаççĕ, курмăш пулаççĕ е пурнăçне те шеллемеççĕ. Çакнашкал хĕвел çутине хуплакан хура-хаяр «пĕлĕт лаптăкĕсене» К. Иванов кулленкунхи чăваш пурнăçĕн тӳнтерлĕхĕсемпе (халăх психологийĕ), аманчăклăхĕпе пĕр çыхăнура курнăн туйăнать. Ытла та çине-çинех куç умне тухать поэт çырнисенче ырăпа усал куçа-куçăн тăни, вĕсен сăн-сăпатне вăл яриех уçăмлатса ӳкерет — кам мĕнлерех çын-ши кунта тесе пуç ватма кирлĕ мар. Тен, гротеск мелĕ те сисĕнет поэт палитринче, тĕслĕхрен «Нарспире».

Эпир çӳлерех ырăпа усал кĕрешĕвĕ çинчен каларăмăр, анчах та çак кĕрешӳ пур чухне те уççăн палăрмасть е ăшри туйăмпа ырă мара сивлени, йышăнманни пек çеç сисĕнет вăл. Чăвашăн йăла-йĕркери (килти) е социалла-обществăлла (халăх çинчи) пурнăçне тĕплĕн те пур енлĕн сăнласа кăтартас вырăнне К. Иванов (хăйма сĕрнĕ пек) унăн философилле тата этикăлла (кăмăл-сипет) тĕшшине катма тăрăшать, акă ăçтан килет вăл хайлавсен хивре тĕвĕленнĕ композицийĕ. Тĕпчев ĕçĕсенче ытларах «Нарспи» поэмăри сăнарсене тишкерни-хаклани куçа курăнать. «Тимĕр тылăпа» «Тăлăх арăм» балладăсем е «Икĕ хĕр» притча (хайла) тĕпчевçĕсен куçĕ тĕлне пуласшăнах мар пек туйăнать. Пĕрешкел конфликт çывăхлатать çак тăватă хайлава. Трагизмлă (синкерлĕ) кĕвĕпе ĕнерĕннĕ вĕсем, çавна пула автор тĕрĕслĕхшĕн çине тăракан чăваш чунĕ хăш таран тата мĕнле майпа

усала хирĕç тăма пултарнине сăнать. Юлашкинчен тĕрĕсмарлăх çиеле тухнă самантра (ку яланах çапла) мĕне пула-ха кашнинчех К. Иванов пире куçран пăхса лăпкăн çапла каланăн туйăнать: акă вăл чăваш пурнăçĕн екки-тăтăрхи е ĕмĕр улшăнми саккунĕ. Автор чăн-чăн пысăк искусство вăрттăнлăхĕсене уçнă, сăмаха перекетлет, ăса вĕрентсе пушă сăмах шерепелес тени уншăн ют. Унăн идеала çывăх геройĕсем çынпа çын хутшăнăвĕнчи компромиса сивлеççĕ. Ăшăнкисĕр тĕнчен илемсĕр енĕсемпе пулăмĕсем çынсен ирĕкĕпех чăн-чăн таса юратăва, чун пахалăхĕсене ним уямасăр таптаççĕ, укçа-тенкĕпе пурлăх — вĕсен турри. Ман шутпа, К. Иванов чун-чĕре пурнăçне тишкерсе сăнлассине ытти чăваш çыравçисенчен маларах литература ĕçĕн тĕпелне кăларать. Юратупа тăванлăх туйăмĕ аталаннине сăнланă май вăл этнографилле колоритшăн хыпăнмасть, чăваш пурнăçĕн экзотикăллă енĕсене те пачах тимлемест. Романтизмла мелсемпе типланă лару-тăрура ялан тенĕ пекех вулакан куçĕ умне пĕр тĕвĕпе тĕвĕленнĕ «мăшăр» тухать: «идеаллă» герой тата унăн «тăшманĕ». Çавнашкал ĕç-пуç «Тимĕр тылăра» та («Усал тăшман хăвалать»), «Тăлăх арăмра» та («Ырă чăваш тăвансем, пĕтчĕр сирĕн тăшмансем!»), «Нарспире» те («Çук, пуçăма çийиччен тăшманăма пĕтерем») т.ыт.те çине-çинех тĕл пулать. Анчах та хирĕçӳ тĕрлĕ сулăмпа аталанса пырать тата тепĕр чух уйрăм çынсен хивре хутшăнăвĕсен чиккинчен те иртет; усал тĕнчен саккунĕсене йышăнман герой вĕсене пăхăнса пурăнма килĕшменрен хăй пурнăçне хăех татать. «Тăлăх арăм» балладăри çичĕ кинрен чи кĕçĕннин шăпи çавнашкал синкерлĕ çаврăнса килет. Кам ирĕкĕ хуçаланать тĕнчере, пурнăç йĕрки кама пăхăнса тăрать? Мĕне пула «Тимĕр тылăпа» «Тăлăх арăмра» кĕçĕн кинсем ăраскалсăр; çичĕ пĕртăванран кĕçĕнни каллех çапăçура пиччĕшĕсенчен маларах пуçне хурать? Камран килет çак «тĕрĕсмарлăх» — кĕçĕннин пурăнса ыттисенчен ирттермелле пек-çке-ха çут çанталăк саккунĕ тăрăх?! Тен, ăнсăртран килсе тухаççĕ синкерлĕ лару-тăрусем кĕçĕннисен пуçĕ тĕлне? Авалхи грексен трагедийĕсенче те час-часах тĕл пулать-ха кĕçĕнни ним айăпсăр пуçне хуни. Ман шутпа, К. Иванов кукăр чĕлĕм пек фабула кăтралатса явас е шаймăклăх сукмакĕпе тилĕ пек юртас кăмăл-туйăмпа ĕçлемен. Вăл сивĕ тĕнчене чун-чĕре кăварĕпе, кăмăл-туйăм тасалăхĕпе, çепĕç-

лĕхĕпе ăшăтма тăрăшакан çынсен шăпи ялан тенĕ пекех инкеклĕ пулнине кăтартма хăю çитерет. Вулакан чĕри патне кĕске çул шырать, нумай сăмах вакламасăр çынсен чунĕсен тĕксĕм кĕтессине çутă пайăркипе шалтан çутатать, куракан куç кунта тем тĕрлĕ чир паллисене те асăрхама пултарать. Анчах та нихăш тĕлте те калавлакан вулакана ăса вĕрентни çук; усала уççăн сивлессинчен те шутсăр асăрханать вăл. Тен, çакă вăл поэт пултарулăхĕн чи пысăк вăрттăнлăхĕпе çыхăннă. Кунсăр пуçне çак шухăшсем патне çынсем ватлăхра çеç пырса тухаççĕ.

«Икĕ хĕр» хайлавра (притчăра) пурĕ те вăтăр икĕ йĕрке. Анчах та вăл хăйĕн тытăмĕпе те, тĕп шухăшĕпе те Тухăç поэзийĕн шедеврĕсен шайĕнче. Е тепĕр май каласан, «Нарспи» поэмăна çырма пикенес умĕн алла хăнăхтармалла хăртаса пăрахнă пĕчĕк çеç сюжет пекки. Чăн сăмахшăн е тĕрĕслĕхшĕн инкек куракан кĕçĕн хĕрĕн ашшĕ Михетер сукмакĕпех утать. Аслă хĕрĕ ашшĕ-амăшĕ вĕрентнинчен, вĕсем ăс парса çитĕнтернинчен çур шит те пăрăнмасть, çавна пула патриархаллă пурнăç йĕркисене хăрхăм пек пăхăнать. Хăш-пĕр вулакансем çакăнта чăваш пурнăçĕнчи авалтан килекен йăла-йĕрке тăтăрхине кураççĕ, вĕсен идеалĕ аслă хĕрĕн улшăнми «хытса ларнă» принципĕсене çывăх. Тĕрĕсех калать-ши вăл ашшĕ килĕнчи «кăвак лашапа» «вĕллери пыла», унтан «тӳшек-минтере» мухтаса?! Кун пек чухне традици тĕревçисем ваттисен сăмахĕпе витĕнеççĕ: çĕнĕ йăласем шухăшласа кăлармастпăр, киввине пăрахмастпăр. Универсаллă максима вырăнне усă курма пулать-ши çак каларăшпа?! Хăш вăхăтра тата ăçти чăвашсем калана-ши ăна пуçласа? Паллах, вăл ĕмĕрсен тĕпĕнче, пин çул каялла, чăваш кил-йышне те, этноушкăнне те чăмăртанма-аталанма пулăшнă. Анчах та XX ĕмĕр пуçламăшĕнче (автор хайлана 1907 çулпа палăртнă), пĕтĕм Раççейри пекех, чăваш хутлăхне те урăхларах хаклăх-пахалăх тытăмĕн палăрăмĕсем те вăйлă витĕм пама пуçлаççĕ. Аслă хĕрĕ ашшĕн чĕрине «çу сĕрекен» сăмахсемпе çемĕçтерчĕ, юрама пĕлчĕ. Кĕçĕнни вара мĕнпе айăпа кĕчĕ-ха? Тĕрĕс хуравларĕ-и вăл, çук-и — хăй мĕн шухăшланине, чăн-чăн пахалăха мĕнре курнине пĕр хăрамасăр куçран каларĕ: «çут тĕнчере çĕр мăнтăр»; «ыйхă тутлă тĕнчере»; «алă çемçе тĕнчере». Вăл хăйĕн ашшĕ кăра çилĕллĕ пулнине, чунран тухакан сăмахшăн пуçран

шăлманнине (Михетерпе Нарспи хирĕç тăрăвĕ!) лайăх пĕлсе тăрать, çапах та урăхла хуравлаймасть. Тен, авторшăн чи кирли — тĕрĕс каланипе суялăхра мар, çынра хăйлĕх пурри, творчествăлла шăнăр (креативлăх теççĕ халь), хăюлăх хаклăрах. Апла тăк, автор пире, вулакансене, паян кунч-ченех тĕрĕслĕх тупсăмне шыраттарать пулсан, вăл хăйĕн мăн тĕллевне пурнăçланă. Хăй вăл яланхи пекех май пур таран сăмаха перекетлесе, шухăшне пĕрсе-варса калать, ыйтусем патне çитерсе вулакана хуравне памасăр хăй тĕл-лĕн шухăшлама сĕнет.

Эпĕ пĕртте иккĕленместĕп: вулакансем йышĕнче паян кун та пĕр-пĕринпе пачах килĕшмен çынсем нумай. Пĕри-сем аслă хĕрĕн хуравне тӳрре кăлараççĕ, теприсем пач хи-рĕçле шухăшлаççĕ. Анчах та пирвайхи йыш авторитарлă шу-хăшлав енне сулăнни, воспитани урлă (чăмлак пек) ăша хывнă догмăсене, ашшĕ сăмахĕнчен иртменнине нимрен ытла хаклани уççăнах курăнать кунта. Тепĕр тесен, аслă хĕрĕ йăпăлтатса ашшĕне епле те пулсан юрас тесе çеç çапла хуравламарĕ-ши? Ан тив, кĕçĕн хĕрĕ айванлăхне е шухăшĕ çирĕпленсе çитейменнине пула тĕрĕсех мар карарĕ пултăр. Çавăншăн ăна хăваласа ямаллаччĕ-и?! Тен, ăна чăн-чăн ашшĕ пулса ăса вĕрентмеллеччĕ? Е вĕсем иккĕш те кĕске турталлăрах, хĕрĕнче те ашшĕ юнĕ чупать-çке-ха. Каллех Михетерпе Нарспин хивре хутшăнăвĕсем куç умне тухаççĕ.

Ыйту хыççăн ыйту тăрататать К. Иванов: çынсем мĕншĕн пĕр-пĕринчен ютшăнаççĕ, мĕншĕн, чăнах та, тӳрĕрен ка-лакан тăванне юраймасть, мĕнрен чăмăртанать чăн-чăн тă-ванлăх туйăмĕ т.ыт.те. Кашни хайлавĕнчех поэт сăмах ӳнер-çи пек хирĕçӳллĕ лару-тăрусене, çын ăс-кăмăлĕнчи паха-лăхсемпе илемсĕр енсене сăнарласа ӳкерет. Ку ĕнтĕ каллех менталитет тени. Чăваш психологийĕ, шапа хуранĕ пек, хупăнчăк, ун шалти вăрттăн хусканăвĕсене поэт ырăпа усала «çапăнтарса» сăнать е çав тытăçăва айккинчен сăнаса тăра-кансен тыткаларăшĕнче шырать. Витĕр куç теме те курать. Сăмахран, «Тимĕр тылăри» Чĕкеçĕн аппăшĕсемпе пиччĕшĕ е хăй шухăшне пытармасăр калакан «кĕçĕн хĕрĕн» ашшĕне илсен, мĕн шутлаççĕ-ши вĕсем пирки кӳрши-арши, тăва-нĕсемпе çывăх çыннисем? Ялти хисеплĕ çынсем шутĕнчех-ши вĕсем киревсĕр ĕç тунине пăхмасăр? Анчах та автор кам айăпне пула çав синкер ĕçсем сиксе тухнине нихăш

тĕлте те каламасть. Апла хăтланни этеме çынлăхран кăларать тени те, усала уççăн сивлени те çук. Айккинчен «сăнакан» çынсен те айăпĕ пуррине автор питĕ лайăх ăнланнă пулнă.

Нарспипе Сетнерĕн ăраскалсăр кун-çулĕ, вĕсен кăвак хуппи уçăлса илнĕ саманта аса илтерекен кĕске ĕмĕрĕ Силпипе Хушăлка ялĕсен çыннисен куçĕ умĕнче иртет. Тӳррипе каласан, тен, кунашкал романтизмла идеалпа шайлаштарса таса юрату ячĕпе хывнă гимна чун-чĕрепе йышăнма хура халăхăн «ахаль çынсенчен» тăракан пайĕ пачах хатĕр мар. Кулленхи пурнăçра курма хăнăхман юрату туйăмĕнче, пĕр-пĕрне чĕререн савнинче хăйсен телейне куракан яш чунсен хуйхи-суйхи, вĕсен тĕллевĕсемпе ĕмĕчĕсем — тен, мăнтăрпа иртĕхни е айванлăх çеç вĕсемшĕн. Çавна пула Нарспипе Сетнер ăс-тăнпа виçсе мар, чĕре сассине тăнласа тахçанах çирĕпленсе «хытса ларнă» йăла-йĕркене хирĕç çĕкленнин сăлтавне ăнланакан, уйрăмах тӳрре кăларакан çынсем поэмăра çук темелле. Нумайăшĕ çамрăксен хастарлăхĕнче чăваш пурнăçĕн ĕмĕрхи никĕсĕпе тăтăрхине хавшатакан, яш-кĕрĕме «усала вĕрентекен» тĕслĕх çеç курмасть-ши?! Апла тăк Нарспипе Сетнер мĕн авалтан килекен йăлайĕркене, шăла çыртма, чĕнмесĕр тăма, ăçталла хăвалаççĕ çавăнталла (е, тавар пек, сутаççĕ) кайма хушакан саккуна (халăхра хуçаланаканскере) пăхăнасшăн пулмарĕç-çке. Хĕрĕн ашшĕпе амăшĕшĕн, Тăхтаманшăн ку йĕркесем çирĕп хӳтлĕх пулса тăраççĕ, çав «стенана» ишес текенсем ун айне пулса вилеççĕ. Çавăнпа та (объективлă пăхсан) кĕрешӳçĕсен обыватель шухăшĕ-ăнланăвне те хирĕç тăма тивет, ан тив, çав «стенан» (пусмăр) мал пичĕ уççăн курăнмасть пулин те. Пĕр-икĕ тĕслĕх çеç илер. Чĕрине çунтарса кулянакан Нарспи валли шыв ăсма анакан хĕрарăм ăш пиллĕ сăмах тупаймасть:

Мĕншĕн, Нарспи, хуйхăран?
Каччу ытла ватă-им?
Парнӳ ытла сахал-им?

Тĕрĕссипе, вăл шырамасть те, тен, вĕчĕх чун çын хуйхипе чунне йăпатать? Туй курма пуçтарăннă ял çыннисем вăрмантан тытса килнĕ таркăн Сетнере Михетер чĕн саламатпа хĕненине «чĕлхисене тӳлесе» шеллесе пăхса тăраççĕ. Е хирелле утакан (çакăнса вилме) Нарспие «ялти çынсем шеллесе пăхса юлчĕç хыçĕнчен, паян пулнă ĕç çинчен па-

кăлтатрĕç темĕнччен». Калавлакан шалти кăмăлсăрлăхпа систерсе каланă пек, «пакăлтатнисĕр» пуçне силписем урăх ним тума та хăват е хăюлăх çитерейменçĕ. Пуçарулла утăм е мĕнле те пулин çĕнĕлĕх кунта тымар яма пултараймасть. Тепĕр тĕслĕх. Нарспи ĕçĕ çинчен часах хыпар Силпие те çитет:

Михетертен шикленсе
Вăрттăн çĕрте сăмахсем;
Пуçне чиксе шеллесе
Аптăраççĕ чăвашсем.

Объективлă пăхсан никам та вакуумра пурăнмасть, «чысхисепри» çынсем (пурнăç хуçисем) кирек мĕн тусан та ялйыш хăйсене хирĕç кайманнине, усал ĕçе чĕмсĕррĕн «тӳрре кăларасса» шанса тăраççĕ. Çак фактора шута илсен «Нарспири» синкерлĕх çăлкуçĕн таппине уçăмлăнрах ăнкарса илетĕн. Ытла та тăр пĕччен, çара алăпа «пăлхав çĕкленĕ» яш чĕресем.

Кашнинчех поэмăн шалти тĕнчине кĕрсе пĕр-икĕ утăм тусанах эпир хамăр та сисместпĕр — Силпи чăваш тăванăмăрсен пурнăçĕпе пурăнма тытăнатпăр: савăнăç-куляну, чунăмăра хĕртсе куççуль кăларакан самантсем, хам пулсан герой вырăнче мĕн тунă пулăттăм-ши тени — пурте чăн пурнăçри пек çывăх, чĕре витĕр сăрхăнса иртет. Çав вăхăтрах поэмăн асамлă хавалĕ пире самантлăха чăн пурнăçа «мантарса», шухăшласа кăларса гений ăсталанă илемлĕ тĕнчере пурăнса пăхма май парать. Çапах та епле пулсан та, чăн пурнăçпа илемлĕ литература (е ӳнер) хушшинчи уйрăмлăха манма е курмăш пулма юрамастех, кусем пачах расна тĕнчесем; чăн та, вĕсен пĕрпеклĕхĕ те, уйрăмлăхĕ те питĕ нумай.

Гений ӳнер саккунĕсене пăхăнса сăнланă пурнăç юхăматаланăвне пайăррăн суйласа илсе типланă, натурализм çӳпçапне тасатса алланă, сăвăрнă. «Нарспи» авторĕ пуррине ӳкерчĕклесе, чун куçĕпе мĕнле пулмаллине (идеал) тинкерет, çак икĕ тĕнче çураçайманни трагеди çуратать. Тĕп сăнарсен характерĕсене, вĕсен чун-кăмăлĕн тĕрлĕ енĕсене автор кăштах пусăмлатса (ӳстерсерех) е илемлетсе (идеализацилесе) ӳкернĕ. Ку уйрăмах ырăпа усала сăнламалли сăрăсен контрастлăхĕнче вăйлă сисĕнет. Хире-хирĕçлетсе ӳкернĕ хушăрах автор чăваш çынни чăн-чăн илеме мĕнле

курма-ăнланма хăнăхнине асра тытать, çакăнта-çке-ха наци характерĕн çăлкуçĕ. Нарспи йăрăс пĕвĕ-сийĕпе те, хӳхĕм сăн-пичĕпе те, виçеллĕ тыткаларăшĕпе те, чун хавалĕн шалти çыпăçулăхĕпе те чăваш хĕрарăмĕн пур енчен те калăпа ларнă идеалĕ пек курăнать поэмăра. Сетнер, пĕрре пăхсан, хыçалти планри герой пек çеç палăрать. Анчах та, хĕвел çути уйăха çутатнă пек, каччă сăнарне ытармалла мар илемлĕ Нарспи туллилетмест-ши? Çакăнта искусствăн куçа курăнман вăрттăнлăхĕ пур (каласа çитерменни), тата ăна гений хăйшĕн уçнă — апла пулсан Сетнер Нарспие (идеала) тивĕçлĕ каччă вăл. Чăн та, автор унăн чăн-чăн арçынра курăнса тăракан енĕсене темиçе йĕрĕмпе çеç палăртать: «Чипер ача Сетнерĕн пĕр урхамах лаши пур», «вĕри юнлă чĕри пур, икĕ вăйлă алли пур, тăшман пуçне пĕтерме вĕри вут пек çилли пур». Кунсăр пуçне ырă чун паллисене Сетнер амăшĕпе Сентти сăнарĕнче куратпăр эпир.

Тĕпрен илсен, Нарспипе Сетнер юратăвĕ кулленхи виçери туйăм мар, ахальтен мар вĕри чĕресене пуçри шухăшĕ çăварлăхлаймасть. Ромеопа Джульетта пек, е Меджнунпа Лейла пек, юратупа вилĕм çыранĕсĕр вĕсем урăх ниме те йышăнмаççĕ. Акă мĕншĕн поэма пуçламăшĕнчех хăйĕн упăшкине тĕлĕкре те курман Нарспи çапла калать: «Тăшман ытла хаяр тет, епле унтан хăтăлас?». Кунта ĕнтĕ пуçласа поэма фабули трагеди саккунĕсемпе аталанас йĕр çине ӳкни, автор тĕнче искусствин контекстне тарăн туйни сисĕне пуçлать. Нарспи çулĕ çинчи чăрмавсем унăн туйăмĕсен хĕрӳлĕхне ним чухлĕ те чакараймарĕç, юрату чысĕшĕн пыракан хирĕç тăру хĕр чĕринче асар-писер пушар чĕртсе ярать, тахăш самантра вăл Горький хайлавĕнчи «паттăр ăссăрсен» сукмакĕпе утма тытăнать. Ун туйăмĕсене никам та, нимле лару-тăру та хавшатаймасть, вăл Сетнерсĕр пурнăç çуккине ăнланса кĕрешет. Трагедиллĕ ĕçсен кульминацийĕ Тăхтамана наркăмăш панипе тӳремĕн çыхăннă. Кунашкал поэма фабули Тухăç литературинче анлă сарăлнă; Анăç культурин виçипе пăхсан вăл трагедие çывăх.

Çӳхе пăр пичĕ тăрăх та лап-лап пусса çӳреме хăнăхнă вулакансем поэт ăсталанă илем тĕнчипе чăн пурнăç хушшинчи уйрăмлăха йышăнасшăн мар. Калăпăр, пĕри апатçимĕç хатĕрлеме вĕрентекен кĕнекерен рецепт илсе украинсен борщне пĕçерме ăсталанать (мĕнле-мĕнле продукт, мĕн

хыççăн мĕн хурана ярасси, мĕн чухлĕ вĕретесси т.ыт.те). Тепри вара шăп та лăп (тавракурăмăн ансăрлăхне пула) илемлĕ литература хайлавне пурăнма вĕрентекен инструкци вырăнне картать, чăн та ĕнтĕ, ку совет саманинчи идеологи роман-поэмăн воспитани паракан функцине вульгарлă ăнлантарнин юлашки те пулма пултарать. Ăнсăртран мар-тăр совет саманинче çитĕннĕ тĕпчевçĕсем хушшинче уйрăмах сыххисем пурччĕ: асăрханăр, кĕнекере ӳкерсе кăтартнă ĕçкĕç тĕслĕхĕ вулакансемшĕн сиенлĕ ан пултăр — вĕсем унтан курмалла хупаха ан иленччĕр! Е Нарспи ĕçĕ мĕнле статья шайне ларнине, ăна уншăн миçе çула тĕрмене лартмаллине тĕплĕн пĕлекенсене илер. Уголовлă кодекс йăтса поэт сăнланă хӳхĕм тĕнчене кĕрсе йĕрлесе-вараласа çӳрекенсем пирĕн литература тавраш ĕнчи сĕркеленчĕксем хушшинче те çук мар. Паллах, вĕсем, хăйсенчен килес пулсан, Шекспира та, Лескова та, авалхи грексен трагигĕсене те пичетлеме чарнă пулĕччĕç; вĕсем çырнисенчи ырăпа усал кĕрешĕвĕнче çавнашкал «тавçăруллă ăс» преступлени курать. Нарспи ĕçĕнче те çавах. Анчах та К. Иванов вулакана кунашкал примитивлă меслетпе вĕрентмест, тĕллевĕ те кăшт урăхларах унăн. Поэт идеалĕ пăхсан çĕлĕк ӳкмелле çӳллĕ шайра, унта обывателĕн çунатсăр шухăшĕ çĕкленеймест. Апла пулин те чи пысăк хăрушлăх уйрăм литературоведсен ăнланулăх çитейменнинче мар, мана урăххи шухăшлаттарать: енчен те çак уйрăмлăха шкул вĕрентекенĕсем те курмаççĕ пулсан?! Вара çĕр-çĕр вĕренекенĕн чун-кăмăлĕпе ăс-хакăлне çак чир вирусĕ хавшатма тытăнасса кĕтсех тăр. Çирĕпленсе çитеймен ăс-хакăл губка пек сăрхăнтарать вĕрентекен сăмахне.

Этем пурнăçĕн кашни саманчĕ ырăпа усал хушшинче иртет, кашни хăй суйласа илнĕ сукмакпа утать. Нарспи те савниййĕпе пĕрлешсе телейлĕ пулма ĕмĕтленетчĕ, вăл тĕнче çине тин çурăлакан папка куçĕпе тасан пăхатчĕ. Çавăнпа чăн малтан К. Иванов идеалне ăнланса илес пулать. Поэт пысăк сас паллипе çырăнма тивĕçлĕ чăн-чăн таса юратăва аслăлать, ун ячĕпе гимн хывать. Нарспипе Сетнер юратăвĕ вăл — сăваплă, çӳллĕ шайри тĕслĕх, укçалла туянакан юратăва сивлекен, чун сассине хуплама килĕшмен çынсене поэт чăваш хутлăхĕнче курнă, хăй вара вĕсен «ваккачĕ пулса» вилĕм урлă вилĕмсĕрлĕхе тухакан икĕ çамрăк чунăн

тĕслĕхне тĕнче умне кăларнă. Нарспипе Сетнер чун-чĕринчи чыс туйăмĕ тĕнче литературин чи сумлă та пархатарлă тĕслĕхĕсемпе пĕр шайра. Тепĕр хут калатпăр, «Нарспи» авторĕ рецепт сĕнмест, ун тĕллевĕ пачах тепĕр майлă: вăл хытнă чунсене çемçетесшĕн («ватă чун та хытă чун, хытса кайнă кĕççе çав»), чунсăрлăх, çамрăксен кăмăлне таптаса хуçни, ирĕксĕрлени мĕнле хăрушă инкек патне çитерме пултарассине витерӳллĕ сăнласа ӳкерет. Çакăнта ĕнтĕ трагедилле ӳнер вăй-хăвачĕн пĕçерттерекен сывлăшĕпе кăварĕ, унпа пĕрлех чуна тасатакан сипечĕ.

Яш чĕресен инкекĕ çынсенчен çеç килмест текен шухăш та пулнăн туйăнать тарăн философиллĕ поэма тытăмĕнче. Çук-ха, епле пулсан та таса та сывă туйăмсене хуплакансем чăн малтан хĕрĕн ашшĕ-амăшĕ тата хăлăхсăр Тăхтаман пулчĕç. Мĕншĕн хăлăхсăр? Ма тесессĕн хулăм укçипе хĕр ашшĕне çырлахтарнă, йăлана та пăсмасть вăл, ытти пĕтĕмпех вак-тĕвек уншăн. Юрату хытнă чунсемшĕн — мираж çеç, тута çинче амăш сĕчĕ типменни. Хăйсем вĕсем пурнăçĕнче юратса курман, çав туйăм мĕн иккенне пĕлмеççĕ. Автор пуçласа уйрăм çын яваплăхĕпе тивĕçĕ пирки ыйтăва çав тери тарăннăн лартать: пĕччен çын енче тĕрĕслĕх пулма пултарать-и? Нарспи пăхăнманлăхĕ (е йăла-йĕрке пусмăрĕ!), пĕр сăмахпа, пилĕк виле патне илсе çитерет. Трагедилле роле «вылякансенчен» пĕри те хăйне хăй айăплă тесе шутламасть. Чун-чĕре алăкĕсене шаккаса уçтарайман поэт синкерлĕ лару-тăрусен сăлтавне ӳнерçĕ куçĕпе тимлесе тишкерет, паллах, пире те, вулакансене, диалога хутшăнма йыхăрать. Е вара çавнашкал хăрушла ĕç-пуçсен хура çумăрĕ поэма геройĕсен пуçĕ çине çумасан пултараймастчĕ? Мĕнле çил-тăвăл хăваласа килчĕ унăн хура хаяр пĕлĕчĕсене? Нарспи «пĕтĕм тĕнче хушшинче эпĕ пултăм ытлашши» тет. Пурин валли те çитмелле пек-çке хĕвел ăшши, çут çанталăк ынатлăхĕ, ăраскал. Тахçанах тымарланса хытнă пусмăрла йăла-йĕркесем (кил-йышри авторитарлă пăхăнтару стилĕ) хĕр чĕрине ăшă сăмахпа ӳкĕтлесе, хисепе хурса çавăрас майсене пач шута илмеççĕ е мăн кăмăллăн сивлеççĕ. Калавлакан кил-йышра ăш пиллĕхпе татулăх вырăнне ирĕксĕрлӳ тĕпре пулнине систерет: «куллен-кунах саламат анать-ĕçке пăтаран»; «ăна ватă упăшки йытă вырăнне хурать» т.ыт.те. Тăхтаман çамрăк арăмĕшĕн — мĕн пуçласа

вěçне çитичченех тăшман, курайманлăх туйăмне вăл хă-ех каплантарса пычě, усаллăхěпех çěре кěчě тейěпěр. Анчах та Михетер хăй чунěн пěрчине, пěртен-пěр юратнă хěрне, мěншěн ăнланмарě-ха? Вăл та Нарспие телейлě тăвасшăн ним те шеллемерěм тесе шухăшлать. Ашшěпе хěрě телей пěлтерěшне пěр пек ăнланмаççě. «Эсě çапла пулнипе ырă кунăм пăсăлчě», — тет ашшě упăшкине вěлерсе Сетнер патне тарса килнě Нарспие. «Хěрěм çирě пуçăма» тесе ěненсе тăрсах çěре кěрет вăл. Çапла вара, поэмăра кашни персонаж хăй чăнлăхěн туррине пуççапать. «Укçапала эрехех çынна ăсран кăларать» текен тезиса автор калама çук тарăн пěлтерěшлě шухăш хывнă. Кунпа пěрлех вăл этем шăпи Турă çырнинчен килет тенине халăх ěненěвěпе çыхăнтарать.

«Нарспи» поэмăри пěтěмěшле (тěп) конфликт тěввинче трагедилле сулмаклăх уççăн палăрса тăрать. Трагедилле шухăшлав витěмě уйрăмах «Шуйттан чури» хайлавра пур енлě те тарăн. Кунта ěнтě поэт ырă тата усал ěçěсемшěн харпăр хăй явапллă пулнине çеç мар, этем пурнăçěн кашни саманчě пěр-пěринпе кěрешекен Турăпа шуйттан хушшинче иртсе пырать текен шухăша та пусăмлатса каланă. Романтизм виçипе (масштабěпе) калăпланă сăнарсем (пирěшти, шуйттан), çӳлти вăй-хăватсем, çěр çинчи пурнăçа тěрлě енлěн те тарăнрах, контрастлăн пысăклатса сăнлама май параççě. «Шуйттан чури» — тап-таса романтизмла хайлав. Романтизм «фасачě» çинче çăткăнлăхне пула шуйттан чури пулса тăнă аслă пиччěшěн, хăй шăллěне вěлерекенěн, пысăккăн ӳкернě сăнарě, ун хыçěнче автора канăç паман философилле тарăн тымарлă шухăш — мěне пула чăвашсем тăванлăх, пěрлěх туйăмне уямаççě.

Романтизм сăррисемпе майě-мелěсем «Нарспире» те пысăк пěлтерěшлě, анчах та тěпри туртăм кунта — реализм. Шухăш тарăнлăхěпе те, ӳнерçě ăсталăхěпе те, психологизмла витěмлěхěпе те ку хайлав — автор пултарулăхěн чи çӳлти шайěнчи ăстăвăмě. К. Иванов чěрěлсе-çěкленсе пыракан чăваш культуришěн тěнче литературин тěслěхěсем, унăн ěмěрсем тăршшěнче пуçтарăннă пуянлăхě чěрě хăват çăлкуçě пулнине пуринчен те маларах кăтартса парать. Вун ултă-вун çичě çулхи генилле поэт трагеди жанрěн чи пысăк ăстисен пултарулăхне тишкерӳллě ăспа тěпчесе ăша илнě. Поэмăна тěпчевлě куçпа вуланă май автор Софокл, Эс-

хил, Шекспир трагедийĕсене тарăн пĕлнине тӳрех асăрхатăн. Ăнсăртран мар шурă пуçлă ватă чăваш юмăçĕ, шăпа кĕнекине вуланă пек, Сетнерĕн хăрушă пуласлăхне тĕптĕрĕс каласа парать. Тарăн интуицийлĕ каччă çывхарса килекен инкеке хăй те чун куçĕпе курать: «Усал тăшман пĕтĕччĕ, Турă çырни курăнчĕ», — тет.

Çыравçăсем творчество ĕçĕн пĕлтерĕшĕпе тĕллевĕсем çине тĕрлĕ куçпа пăхаççĕ, пĕрисен çырнинче шухăш тарăнлăхĕ, философилле туртăм тĕпре. Ӳнерçĕсем, моралистсем, беллетристсем пур литераторсем хушшинче. «Нарспи» авторĕ пĕр вăхăтрах философ-шухăшлавçă та, сайра тĕл пулакан палитрăллă ӳнерçĕ те. Ку вăл — Турă панă пултару, поэт пурнăçăн тĕрлĕ енлĕ пулăмĕсене ăс-тăн (е чун) куçĕпе тишкерет. Çынсен шалти тĕнчи çутă пайăркипе çуталнăн вулакан куçĕ умне тухать, темле асамлă вăй уçать тейĕн чун алăкĕсене. Мĕне пула-ха поэт пурнăçăн тулли юхăмне «экран» çине кăларнипе çырлахать, моралист ĕçĕнчен шутсăр асăрханать? Ман шутпа, кунта генин пĕр вăрттăнлăхĕ пытанса тăрать. Вăл йĕрке хушшинчи пытарăнчăк шухăша уçма пултаракан çынпа (чăмлак кĕтекенпе мар!) куçа-куçăн калаçасшăн, хăй каласах пĕтерменнине тавçăрасса шанать. К. Иванов пур çĕрте те тенĕ пек пĕр шухăша пусăмлатса калать: чăваш пурнăçĕн инкекĕсемпе синкерлĕхĕсем пĕчченлĕхрен, психологилле хупăнчăклăхран, тăванлăх-туслăх туртăмĕпе туйăмĕ хавшак пулнинчен, кашнийĕн тивĕçĕпе чысне хисепе хума кирлине асра тытманнинчен килеççĕ. Чĕкеç, Нарспи йышши çутă чунсен талпăнăвне кил-йышри пусмăр йĕркисем хупласçĕ. Пĕр-пĕрне ăнланни, хута кĕни, чун макăрнине туйни пачах çук, кӳршĕаршă йывăр лару-тăрури çынна шелленисĕр пуçне урăхла майпа пулăшни курăнмасть. Шеллени те çынлăх палли-ха вăл, анчах та поэт урăхларах этем «чустине» (материалне) шырать чăваш хутлăхĕнче. Шел те, çав тери йывăр пулнăн туйăнать ăна çавнашкал ирĕклĕ, хăйсене танлă туякан çынсене тупма. Генилле поэтăн пĕтĕм çырни-пултарни пысăк, таса чунлă, хастар çынсене шыранипе çыхăннă тата çавсен шăпи, кун-çулĕ яланах инкеклĕ пулнине çине-çинех астутарнипе. Чăваш поэчĕн чун ыратăвĕ Сократа аса илтерет. Вилĕмсĕр философ тăр кăнтăрла Афинăн тăкăрлăкĕсем тăрăх хунар çутса çӳренĕ теççĕ. «Кама шыратăн, Сократ», —

тесе ыйтсан: «Чӑн-чӑн Этеме курасчӗ тетӗп», — тесе хуравланӑ имӗш. Ҫавӑн пекех чӑваш генийӗ те ҫынсен хутшӑнӑвӗнче ҫут ҫанталӑк килтерӗшлӗхе курма ӗмӗтленнӗ, чӑваш тӗнчин тӗрекне ҫынлӑхпа чун тасалӑхӗнче курнӑ.

К. Иванов хайлавӗсенче калавлаканӑн шухӑшӗ-хакӗ ҫиелтен палӑрса тӑмасть терӗмӗр ҫӳлерех. Автор каласа парас вырӑнне яланах ӳкерсе-сӑнласа кӑтартать, ҫавна пула кашни фабула аталанӑвӗ сцена искусствин майӗ-мелӗсемпе шутсӑр ҫураҫуллӑ. Автор (калавлакан) хӑй сассине ҫав тери шала пытарнӑран «сцена ҫинчи» лару-тӑрупа ӗҫ-пуҫ хӑйсен еккипе ирӗккӗн пулса пынӑн туйӑнать. Чӑн та, сайра пӗрре илтӗнкелет унӑн кӗске «реплики» е чунӗ кӳтнӗрен каласа янӑ сӑмахӗ: «Пӗтрӗ пӗр чун тӗнчере, ӗҫӗсемшӗн хупланчӗ»; «Ҫав вӑрмана кӗнӗ ҫын пирӗн тӑван Сетнерччӗ»; «Аттеанне ирӗкӗ ҫирӗ сарӑ хӗр пуҫне» т.ыт.те. Ҫапах та тепӗр хут калатпӑр, кунашкал татӑклӑн хак панисем питех те сайра тӗл пулаҫҫӗ фабула тытӑмӗнче. Ҫакӑн йышши искусствӑра вулаканӑн ӑс-хакӑлӗпе культурин шайӗ калама ҫук пысӑк пӗлтерӗшлӗ. Асамлӑ сӑмах ӑсти, генилле поэт «Нарспи» поэмӑн ахӑр самана пек арасланса кайнӑ трагеди тӑвӑлне пысӑк чунлӑ вулакан чӗри витӗр кӑларать, ӑна тӗпӗ-йӗрӗпе хускатакан психологи мелӗсем тупать. Акӑ аса илӗр-ха поэма вӗҫне тепӗр хут. Силпипе Хушӑлка тӑрӑхӗнче асар-писер ҫил-тӑвӑлсем ҫавӑрттарса-кӗрлесе иртсе кайрӗҫ, тӳлек ҫанталӑк шӑплӑхӗпе ҫӳҫентерет. Поэма геройӗсем, кашни хӑй ӑнланма пултарнӑ таран, харпӑр хӑй тӗрӗслӗхӗшӗн (телейӗшӗн) ҫине тӑрса ушкӑнпа ҫӗре кӗчӗҫ. Анчах та кам айӑпне пула пулса иртрӗҫ ҫак синкер ӗҫсем? Ку ыйтӑва, ман шутпа, автор Михетер кил-ҫуртне сутас тӗллевпе канашлакан ял ҫыннисене те, пире те, вулакансене, адреслет. Ҫамрӑк чунсен ӑраскалсӑрлӑхӗ чӗремӗрсене витернӗрен эпир те хамӑра виле ҫинче ларнӑн туймастпӑр-и вара?! Ҫавӑнпа та, автор концепцийӗпе килӗшӳллӗн, поэмӑра чи ҫӳллӗ инстанцири тӳре — вулакан. Таса юратупа чӑн-чӑн ҫынлӑхшӑн кӗрешсе ҫӗре кӗнисене чыс та мухтав, ҫылӑха кӗнисене, айӑплисене Турӑ каҫартӑр. Ман шутпа, гений интуицийӗ инҫет малаша тинкерет; пулса иртни — пӗрре, анчах та Силпипе Хушӑлка (е пӗтӗм чӑваш) пурнӑҫӗнче ыран е тепӗр кун ирӗксӗрлӗхпе танмарлӑх (усал вӑй!) пуҫне ҫӗклесрен кам ҫӑлӗ?! Поэт пире хамӑрта иммунитет чакса

кайни пирки астутармасть-ши? «Вăрттăн çĕрте» пăшăлтатса, хăй калараш, «шеллесе» «Турăçăм, усал çынпа çыхланма ан пар» текен чĕлхе çинчи сыхлăх кĕлли пирки калать-тĕр вăл. Тен, вăл витĕр курса тăнă çакăн пек ларутăру чăваш хутлăхĕнче диктатор (пуç касакан) çитĕнтерме ытла та меллĕ пулнине. Тен, сăмахсăр ӳпкев те çук мар гений халалĕнче: суйлăр, кам сирĕн чун-кăмăлăра çывăхрах та тăванрах, Нарспипе Сетнер е Михетерпе Тăхтаман йышши çынсем; икĕ хире-хирĕçле ушкăнра вĕсем:

Ватă чун та хытнă чун,
Хытса кайнă кĕççе çав.
Çамрăк чун та пĕчĕк чун,
Чунĕ ытла çемçе çав.

К. Иванов урокĕсенче ăша илмелли вĕçĕ-хĕррисĕр пуянлăхпа ăс-кăмăл пахалăхĕсем тепĕр япала пирки те шухăша яраççĕ. Эпир çӳлерех асăннăччĕ, ырăпа усал тытăçăвне-хутшăнăвне сăнланă чух автор драматурги жанрĕн майĕ-мелĕсене мала кăларать. Калавлакан (пулса иртекен ĕç-пуçа каласа кăтартакан) позицийĕнче моралист е дидактик сасси валли пачах вырăн çук. Поэт Михетерсемпе Тăхтамансем пирки çеç каламасть, вăл чăваш тĕнчине (унăн тĕп йĕркисемпе никĕсне) анлăн илсе ырă, таса чунлă Нарспisемпе Чĕкеçсен ĕмĕт-хавалне тискеррĕн хуплакан пулăмсене, халăх пурнăçĕ хӳтлĕхсĕр те хупăнчăк пулнине вулакан чĕрине витермелле куç умне кăларать. Тĕрĕсмарлăх çĕнтерни, усал вăйсен сĕмсĕрлĕхĕ, паллах, поэта хăйне те йывăр шухăшсенчен хăтăлма паман. Анчах та вăл усала айăплассинчен, ăна суд тăвассинчен е ун пирки хакласа калаçассинчен пăрăнать. Тен, хăй пирки те çак сăмахсемпе калани унăн питĕ вырăнлă:

Чăтаççĕ-ха чăвашсем,
Вĕçнех çитмен-ха вĕсем.
Ĕçкĕ-çикĕ тунă чух,
Ĕçсе-çисе ларнă чух
Юррисене юрлаççĕ,
Куççулĕпе кулаççĕ.

Чăваш! Сана ун чухне,
Чуну çĕкленнĕ чухне,
Мĕн пит асна килет-ши?
Мĕн пит чунна хĕсет-ши?
Савăнăç-и, куççуль-и
Сан куçăнта куç тулли?

Çав нумайранпа чун кӳтнине, шалта капланса тулнине, тĕнче илемне варалакан пулăмсене публицистла хĕрӳлĕхпе, тӳррĕн хак парса айăплас, намăслантарас тени çук поэтăн. Çакăнта, ман шутпа, унăн тепĕр пытарăнчăк палăрăмĕ. Ăшра усранă вăл чунне ыраттаракан шухăш-

туйăмĕсене, ӳпкевсĕр, кӳренӳсĕр, çырлахуллă та каçаруллă кăмăлпа, тарăн ăнланса хакланă тăван чăваш çыннин кăмăлĕпе менталитетне. Пуриншĕн те чăн малтан хăйне айăплă туйнă. Каçарттараканăн çылăхне ăша илекен пачăшкă психологине аса илтерет ку. Урăхла каласан, тĕнче илемсĕрлĕхĕпе усал-тĕселĕшĕн хăй чунĕнче экзистенциалла айăп пуррине туйса тăнă. Сублимацисĕр, тулаша кăларса ямасăр, çынсен çутă ĕмĕчĕсемпе ăнтăлăвĕсене çунат сармалли майсем çуккишĕн хăйне вĕçĕмсĕр явапллă туйни поэт чĕрине кунран-кун кăшланă, паллах, ĕмĕрне те кĕскетнĕ. Вун сакăр çулта унăн трагизмла тĕнчетуйăмĕ кăвак хуппилле çуталса илнĕ те вилĕмсĕр «Нарспи» кун çути курнă.

Ман шутпа, ырăпа усала трагедилле сисĕмлĕхпе туйса тăракан прибор пек пулнă поэтăн чун-чĕри.

*2010*

## ЮРАТĂВĂН ВИЛĔМСĔР ХĂВАЧĔ

Этемлĕх культурин тутăх тивми пахалăхĕсен «çӳпçине» чăваш тӳпи пулса кĕнĕ тĕслĕхсем нумаях та мар пулин те, вун саккăрти Константин Иванов пултарма мехел çитернĕ «Нарспи» поэма тĕнче литературин чи чаплă шедеврĕсемпе пĕр ретре тăрать. Уйрăмах çакна хамăр хутлăх чиккинчен каçса ытти халăхсен яр çутă тĕслĕхĕсемпе танлаштарса пăхсан тарăнрах ăнкарса илетĕн. Чăваш çырулăхĕнче хăйне майлă «юрăсен юрри» пек палăрса тăрать синкерлĕ, чăнчăн таса юратăва аслăлакан «Нарспи» поэма. Чи тарăн та сулмаклă ыйтусен тĕввине салтма ăнтăлнă йĕкĕт çулне тин çеç кĕрекен шухăшлавçă поэт. Чăннипех те ырăпа усал, пурнăçпа вилĕм, юратупа курайманлăх, телей тупсăмĕ, ăраскалсăрлăх тата ытти те шутсăр салтма йывăр, хивре тĕвĕпе тĕвĕленнĕ çак кĕтрет çутийĕн ялтăракан хайлавра. Шухăшлама, пурнăç тупсăмне шырама хăнăхтарать пире çак тĕлĕнтермĕш пулăм, кĕçĕн çултисене те, чĕрисенче юрату çимĕçĕ пиçнĕ тапхăртисене те, ватăларах панисене те.

Юрату — поэмăра уйрăм тема, пусăм туса каланă автор ун тавра çуралакан шухăш-туйăма, çавна май вулакан чунне, ăс-кăмăлне вут хыптармалли май-мелсем ăсласа кăларма мехел çитернĕ. Ман шутпа, Нарспипе Сетнер ӳсĕмĕнчи яшкĕрĕмшĕн ăнланмалларах пек поэма авторĕ çивĕчлетсе ларт-

нӑ ыйтусем. Чӑвашла вулакан П. Хусанкай сӑмахӗсене питӗ лайӑх ӑнланма тивӗҫлӗ: «Ун чух кашни пӑртак Сетнерччӗ, кашни пӑртак Нарспиччӗ эпӗр». Чӑннипе каласан, К. Ивановчен ку ыйтӑва ҫакнашкал ҫивӗчлетсе лартнине чӑваш ҫырулӑхӗнче курмастпӑр эпир: ҫут ҫанталӑк килтерӗшлӗ таса юратӑва куҫ пек упракан, уншӑн пуҫне хума хатӗр ҫын е хӑй кун-ҫулне (кама качча тухмаллине!) ашшӗ-амӑшӗпе тӑван-пӗтенӗ татса панине чӗмсӗррӗн йышӑнакан хӗр упраҫ телейлӗ? Нарспи сӑнарӗ автор идеалӗ пулнӑран ку ыйтупа дискусси пуҫарни вырӑнсӑр.

Пире паянхи кун урӑхларах ыйтусен тӗввине салтасси шухӑша ярать. Калӑпӑшӗпе е чун ҫӳллӗшӗпе виҫсе пӑхсан чӑваш сӑвӑҫӗ калӑпланӑ сӑнарсем авалхи грексен синкерлӗх хайлавӗсенчи (Софокл, Эсхил) е Шекспир ӑсталанӑ сӑнарсене шутсӑр ҫывӑх пулни курӑнать. Тен, тӗплӗнех паллашнӑ пулӗ чӑваш генийӗ тӗнче ҫырулӑхӗн вилӗмсӗр шедеврӗсемпе, вӗсен витӗмӗ палӑрать те-и, тен, вӑл ҫырнисенче. Ун пирки марччӗ-ха сӑмахӑм хальхинче. Аслӑ вӗрентекенсен паха тӗслӗхӗсене ӑша илсе хӑй ҫулне шыранӑ чӑваш сӑвӑҫӗ, пирвайхи хут чӑваш ҫыннин сӑн-сӑпачӗпе ӑс-пурнӑҫне тӗнчери халӑхсен куҫне курӑнмалла калӑплӑн та мӑнаҫлӑн ӳкерсе сӑнарланӑ. Кунта таҫти тулашри витӗм-вӑйӑм е ютран ӳкерсе илнӗ сӑн-пулӑмсемпе «вӑрланӑ» шухӑшсем пирки мар пырать сӑмах. Чӑн чӑвашла, халӑхӑмӑрӑн вӗҫӗхӗррисӗр хевтинчен вилӗмсӗр вӑй сӑрхӑнтарса илсе, К. Иванов тӗнче классикин шайне ҫӗкленме пултарнӑ. Ҫакна ҫирӗплетекен тӗслӗхсем сахал мар. Нарспи хӑйӗн хастарлӑхӗпе, чӑн чӑвашла сӑн-сӑпачӗпе, кивӗ йӑла-йӗркесене хирӗҫлеме хӑюлӑх ҫитернипе Тухӑҫ литературинче «телейсӗр» юратӑва аслӑлакан поэмӑсенче ӳкерсе кӑтартнӑ хӗр-хӗрарӑм сӑнарӗсене ҫав тери ҫывӑх. Кунпа пӗрлех, сӑмахран, французсен ҫырулӑхне илес пулсан, унта ӑраскалсӑр юратупа ҫыхӑннӑ сюжет вӑтам ӗмӗрсенчех нумай-нумай поэт пултарулӑхӗнче тӗл пулать. Пьер Абельярпа Элоизӑн е Тристанпа Изольдӑн тасаран та таса, ҫав вӑхӑтрах синкерлӗ юратӑвне чыслакан сюжетсем, ӗмӗрсен тусанӗпе хупланманскерсем, паян кунччченех вулакан чун-кӑмӑлне тыткӑнлаҫҫӗ. Ҫунтаракан туйӑмпа савакан ҫын юратӑва пула тӗпсӗр шырлан хӗрне ҫитсе тухать, тепӗр чух унта хӑй (е ҫын) ирӗкӗпе пӗр шиксӗр чӑмать. Час-часах ҫавнашкал юратакан

çын пирки ăсран тайăлнă, ухмаха тухнă текен сăмах сарăлать.

Нарспипе Сетнерĕн кĕске ĕмĕрĕ тин çурăлнă чечеке тăм тивнĕ пек вĕçленмен пулсан (татсах калама пулать) вĕсен пурнăçĕ çынсен асĕнче çĕнĕрен чĕрĕлсе, «туллиленсе», гуманизмла содержанипе пуянланса малалла тăсăлайман пулĕччĕ. Хăрхăм пулса пурăнма килĕшмен Нарспи, чун ирĕкĕн хакне ăнланаканскер, юратнă Сетнерĕ çĕрлехи вăрă-хурах тĕлне пулса вилнĕ хыççăн хăй çине алă хурать. Çынлăх, чыс, хисеп, пархатарлăх, ăш пиллĕх тата этемĕн ытти хăш-пĕр пахалăхĕсем нимле наци, тĕн, раса чиккисене те пăхăнмаççĕ иккен. Çак сăмаха тӳрре кăларакан тĕслĕх илсе кăтартас килет.

Французсен илемлĕ çырулăхĕн историйĕ пин çул чиккинчен те тухать, калăпăр, трубадурсен XI—XIII ĕмĕрсенче вăйлă аталаннă поэзийĕ хăех мĕне тăрать: рыцарьсем хĕрарăма чысласа сăвă-поэма ăсталаççĕ, куртуазлă лирикăн чаплă тĕслĕхĕсене пултараççĕ. Çавнашкал трубадурсенчен пĕри, Гильем де Кабестан, французсен XIII ĕмĕрти поэзинче паллă йĕр хăварнă. Çичĕ-сакăр шансон юлни паллă ун хыççăн, тата унăн биографийĕпе тӳрремĕнех çыхăннă çав тери илемлĕ те хурлăхлă легенда упранать.

Ытти нумай-нумай трубадур пекех, Кабестан ылтăнпа мар, чун пурлăхĕпе, юрăпа, пуян пулнă. Пурнăç йывăрлăхĕсенчен хăтăлас тĕллевлĕ трубадурсем ун чухне пĕр-пĕр пуян феодал е граф таврашĕ çумĕнче хӳтлĕх шыранă. Кабестана та çавнашкал пуян сеньорсенчен пĕри Раймонд де Кастел-Руссийон хăй хӳттине илет. Çав тери кăра çилĕллĕ те хаяр, кăмăл-туйăмне çăварлăхлайман этем пулнă Раймонд граф. Унăн арăмĕ, Маргарита, калама çук хитре те çивĕч ăслă хĕрарăм, самантрах çамрăк трубадур хăй çине савакан куçпа пăхнине туйса илет. Çепĕç чунлă Маргаритăна Турă пĕр юратушăн çуратнă тейĕн, юратма та, хăйне юраттарма та пĕлнĕ вăл. Юрату авăрне, ун тĕпсĕр тарăнăшне пăхмасăрах, пуçĕпе чăмнă юрăçă хăйĕн поэмисенче юратнă хĕрарăмĕн илемĕпе çепĕç кăмăлне чыслать, унпа никама танлаштарма çуккине палăртать. Паллах, çак юрăсен ахрăмĕ кĕске вăхăт хушшинчех Раймонд граф хăлхине те пырса кĕрсе ун чунĕн хивре хĕлĕхĕсене хускатать. Пĕр сăмахпа, кĕвĕç пыйти çыртать сеньора. Легенда сюжетне вулакана кĕскен каласа парас тесен (эпĕ француз чĕлхипе пичет-

леннĕ текст тăрăх калатăп) кăсăклăрах вырăнсене çеç кусарса палăртмалла. Пĕррехинче, Кабестан замок çывăхĕнче сунарта çӳренĕ хушăра, ун умне (пачах ăнсăртран имĕш!) граф хăй сиксе тухать. Вăл тӳрех трубадурăн çепĕç те янравлă юррисене мухтама пуçлать, унтан, сăмах май тенĕ пек кам-ши вăл Кабестан мухтаса юрлакан хитререн те хитре Дама тесе ыйтать. Кунашкал каварлă ыйтăва кĕтмен поэт шарт сиксе кăштах çухалса кайнă пек пулать. Тепĕр самантран унăн пуçне çăлăнăç кӳрекен шухăш пырса кĕрет: чăн сăмаха калама ниепле те май çук, апла тăк мĕн те пулин шухăшласа кăлармалла. Вара мăнтарăн трубадур, мĕн пулать те мĕн килет, Маргарита йăмăкĕн Агнессăн ятне асăнать. Ку вара шутсăр сеньор кăмăлне каять, тинех хăйĕн чунĕ лăш кайнине туйса илет. Вăл ĕнтĕ телейлĕ темелле, çапах та замока таврăнсанах Агнессăпа калаçса пăхма шут тытать. Пысăк чунлă Агнесса аппăшĕн чĕри камшăн хĕмленсе çуннине пĕлет тата вăл ăна çав тери юрататъ. Кунпа пĕрлех вăл Раймонд графăн хаярлăхĕпе мăн кăмăллăхĕ, унăн виçесĕр кĕвĕçӳ туйăмĕ мĕн патне çитме пултарасса та чухлать. Çавна пула вăл трубадурпа иккĕшĕ пĕр-пĕрне юратнине чăн тесе йышăнать.

Килне таврăнсан хăй чунне лăпкăлăх кӳнĕ хыпар-хăнара Раймонд граф Маргаритăна каласа парать. Кăна илтсен юрату вут-кăварĕпе çунакан хĕрарăм Кабестан сивĕннĕ, хăйне савма пăрахнă тесе шутласа илет, куçне тулса тăртаннă куççульне аран-аран чарать. Тепĕр тĕлпулура вăл Кабестан пуçĕ çине кӳлешӳпе куççуль çумăрĕ çутарать, юрăсенче пĕр хăйне çеç, чипер Маргаритăна, мухтаса юрлама хистет. Ку таранччен асăрхануллă пулма тăрăшнă трубадур тĕнчере хăйшĕн пĕртен-пĕр хаклă çынна хирĕçлеме пултараймасть. Легендăн юлашки сыпăкне, унăн кульминациллĕ саманчĕсене кĕскетсе каласа мар, чăмăрла хальлĕн куçарса сĕнесшĕн вулакана.

Вăл савнă хĕрарăмĕ ыйтнине шута илсе хывать хальхинче юррине, анчах та ăна унăн упăшкине адреслет. Кастел-Руссийон сеньор тинех ĕнтĕ хăйĕн куçа курăнакан инкекне асăрхамасăр тăма пултараймасть. Вăл мăнтарăн поэта замок тулашне чĕнсе тухать, вара ун çине сиксе ӳксе кинжалпа чиксе вĕлерет. Ун хыççăн пуçне татса илет те кăкăрне касса уçать. Вара пĕлт-пĕлт тапакан чĕрене кăларса замока илсе каять. Тĕрлĕ специсемпе, пăрăçпа ăшалать вăл поэт чĕрине.

Каç пулнă çĕре сĕтел çинче каçхи апат хатĕр; хура-хаяр кӳлешӳ туйăмĕ ларттарать ăна çак хăрушла апата сĕтел хушшинчи арăмĕ умне, лешĕ апата кăмăлтан юратса çиет. Çисе тăраннă хĕрарăмран Раймонд: «Пĕлетĕр-и эсир тин çеç мĕн çинине?» — тесе ыйтать.

— Пĕлеймерĕм, анчах та çав тери паха та тутлă çиме пек туйăнчĕ, — хуравлать арăмĕ.

— Эпĕ те çапла шутлатăп, — хаваслăн кăшкăрса хуравлать сеньор. — Вилнĕ хыççăн та кăмăла килнĕскере чĕрĕ чухне эсир, тен, ытларах та юратнă!

Вара вăл Гильемăн юнпа пĕвеннĕ пуçне Маргарита умне илсе килсе лартать. Çакна курнă тата çав сăмахсене илтнĕ хыççăн хĕрарăм самантрах тăнне çухатса ним курми-илтми пулса тăрать. Тăна кĕрсен Маргарита: «Паянтан эпĕ тек нимĕн те çимĕп», — тесе кăшкăрса ярать.

Урса кайнă Раймонд хĕрарăм çине шпагăпа талпăнать, ăна пуçĕнчен тĕллет. Анчах та замокăн картиш енне тухакан чӳречи уçă пулнине асăрханă телейсĕр чун унта ыткăнать те тикĕслесе сарнă чул çине ӳксе вилет.

Руссийон замокĕнчен тухакан çунатлă хыпар самантрах пĕтĕм Каталоние сарăлать, унта та кунта Гильем Кабестанпа унăн чунне çывăх хĕрарăм вилни, Раймонд де Руссийон хăйĕн арăмне Гильем чĕрине ăшаласа çитерни çинчен калаçаççĕ. Ку истори хальччен таврара пулман пăтăрмахлă ĕç-пуçсен шайĕнче сарăлать. Кавалерсем, уйрăмах çамрăккисем, хăйсен сюзеренĕ, Арагон королĕ, иккĕмĕш Альфанс патне тĕрĕслĕх шыраса çитеççĕ. Арагон королĕ çавăн пекех Раймонд де Кастел-Руссийонпа Гильем де Кабестанăн сюзеренĕ те шутланнă. Ун хыççăн король Руссийона çаврăнса çитет те Раймонд замокĕ умĕнче суд ларăвне ирттерет. Раймонд сеньорăн хăйĕн тискер ĕçĕшĕн явап тытса вилмелли çеç юлать.

Трубадурпа ун чун-çум хĕрарăмне король пысăк чыспа юлашки çула ăсаттарать; вĕсен ӳчĕсене Перпиньян чиркĕвне илсе пырса пĕр шăтăка, пĕр-пĕринпе юнашар пытараççĕ. Мрамор чул çине мĕнле вилĕмпе вилнине картса çырма хушать король тата малашне кавалерсемпе дамăсен пурин те çак вилтăпри çине çулсерен килсе вĕсене чыс тăвассине йăлана кĕртет. Нумай-нумай çул хушши çак вилтăпри çине пĕр-пĕрне савакан мăшăрсем килсе çӳренĕ, вĕсем икĕ мĕскĕн чун ячĕпе Турăран çăлăнăç ыйтнă.

Çапла вĕçленет легенда сюжечĕ. Юратусăр пурнăç çуккине, йăсăрланса, куçа çиекен тĕтĕм кăларса, хăрхăм урапине туртса ĕмĕре ĕмĕрличчен çын пархатарĕпе чыса уплам тени мĕн тери çывăхлатать Нарспипе Маргаритăна, вĕсене эпĕ чунпа çывăх тăвансем пек куратăп. Тата урăхла мĕнле пултăр-ха, чысшăн çине тăрса вилнĕ этем чăвашра та яланах хисепре шутланнă. Ан тив, вăл пӳкле вилĕмпе вилнĕ пултăр.

Халь те пулин Силпире
Асӑнаççӗ мӗскӗне.
Ялан, çумӑр çумасан,
Шыв сапаççӗ тӑприне.

Чӑваш виçипе виççен ку вӑл этемӗн çутӑ сӑнарӗ çынсен асӗнче пӗртте шупкаланманнине пӗлтерет.

*2010*

## ПУРНӐÇ ЧӐНЛӐХӖ Е РОМАНТИЗМ?

Тӗнче литературин аталанӑвӗ романтизм тӑвӑллӑ, революциллӗ тапхӑрсенче — этем хӑй вӑхӑтӗнчи пурнӑç йӗркипе килӗшме пултарайман условисенче çуралнине кӑтартса парать. Çакна Анӑçӑн вӑйлӑ аталаннӑ литературисен тӗслӗхӗсемпе те, вырӑссен паллӑ çыравçисен хайлавӗсемпе те çирӗплетме йывӑр мар. Сӑмахран, вырӑс литературинче романтизмӑн çӗкленӳллӗ те пӑлхавӑрлӑ тапхӑрӗ XIX ӗмӗр пуçламӑшӗпе тӳр килет пулсан, çамрӑк чӑваш çырулӑхӗнче ку туртӑм-сулӑм XX ӗмӗр пуçламӑшӗнче çеç уçӑмлӑ палӑрса тарӑн йӗр хӑварать. Ку вӑл 1905—1907 çулсенчи революци хумӗпе, ун витӗмне пула, чӑваш халӑхӗ хӑйӗн историллӗ хавалне тарӑнрах туйса илме пуçланипе тачӑ çыхӑннӑ.

К.В. Иванов пултарулӑхӗнчи романтизмӑн тепӗр çӑлкуçӗ вӑл — вырӑс литературин хӑватлӑ витӗмӗ, уйрӑмах М.Ю. Лермонтовӑн ирӗклӗхшӗн кӗрешекен геройӗсем, çын хакне-чысне упрама чӗнекен революцилле шухӑш-туйӑмӗсем.

К.В. Ивановӑн литература ӗçне пуçӑннӑ тапхӑрти пӗрремӗш произведенийӗсенче, сӑмахран, вырӑсларан ирӗклӗ куçарнӑ «Вӑранӑр, тапранӑр», «Дубинушка» юрӑсенче, поэт революцилле шухӑш-туйӑмпа хавхаланни лайӑх курӑнать. 1906 çулта поэзи ӑсталӑхне алла илес тӗллевпе хавхаланнӑ йӗкӗт вырӑссен демократилле поэзине çине тӑрсах тӗпчет, М.Ю. Лермонтов, Н.А. Некрасов, А.В. Кольцов сӑввисемпе поэмисене вулать, хӑш-пӗр сӑввисене куçарать. Поэта уйрӑмах М. Лермонтов поэзийӗн асамлӑ тӗнчи, вӑл сӑнарланӑ вӑйлӑ характерлӑ, ирӗклӗхе талпӑнакан çынсем, сахал сӑмахпах шухӑша пат татса калама май паракан экспрессилле майсем илӗртеççӗ. М. Лермонтов чӑваш поэчӗн чи юратнӑ вӗрентекенӗ пулса тӑрать. Вырӑс поэчӗн витӗмӗ К. Ивановӑн пӗтӗм пултарулӑхӗнче уççӑнах палӑрать.

К. Иванов унӑн «Калашник хуҫа ҫинчен хунӑ юррине» куҫарма пикенет. Ку вӑл уйрӑмах йывӑр ӗҫ пулнӑ, ӑнсӑртран мар пулӗ В.Г. Белинский ҫак поэмӑна нихӑш чӗлхене те куҫарма май ҫук тесе ҫирӗплетсех каланӑ. Анчах та ҫак ӗҫе пуҫӑнма хӑю ҫитерни тата ӑна ӑнӑҫлӑ пурнӑҫлани поэта хӑй вӑйне шанма, чӑваш пурнӑҫне сӑнласа эпикӑллӑ пысӑк калӑплӑ произведени ҫырма хавхалантарасси паллӑ пулнӑ. Поэмӑна куҫарнӑ чух К. Иванов хӑй умне икӗ пысӑк тӗллев лартнӑ: пӗрремӗшӗ — вырӑс поэчӗн стилӗпе хӑй евӗрлӗхне май килнӗ таран туллин упраса хӑварасси, иккӗмӗшӗ — чӑвашла вулаканшӑн оригиналлӑ произведени пекех ӑнланмалла куҫарасси. Ют чӗлхесӗр пуҫне кунта вырӑс халӑхӗн йӑли-йӗркисемпе фольклорне, унӑн историне тӗплӗн пӗлни кирлӗ пулнӑ. Тӑван халӑх сӑмахлӑхне лайӑх пӗлнӗ поэт вырӑс чӗлхинче ҫирӗпленнӗ фразеологилле сӑмах ҫаврӑнӑшӗсемпе эпитетсене килӗшӳллӗ чӑвашлатса ӑнӑҫлӑ куҫарать. К. Иванов шутланӑ тӑрӑх, М. Лермонтов поэминчи вӑйлӑ характерлӑ геройсем Хаяр Иван ӗмпӳ, Калашник хуҫа, Кирипей чура хӑйсен хастарлӑхӗпе, хӑюлӑхӗпе чӑвашла вулакана та куҫне уҫмашкӑн хавхалантарма пултарнӑ. К. Иванов, И. Яковлев традицийӗсене ӑша хывса ҫитӗннӗскер, искусствӑпа литературӑн асамлӑ вӑйӗпе пӗлтерӗшне тарӑн ӑнланнӑ. Тӗнче литературинчи нихҫан асран кайми ҫутӑ сӑнарсем кашни ӑрӑвах пурнӑҫа ҫӗнетессишӗн, ӑна илемлӗрех тӑвассишӗн кӗрешме хавхалантараççӗ. Литературӑн общество пурнӑҫӗнчи пӗлтерӗшне уйрӑмах чӑваш халӑхне ҫутта кӑларас тӗллевпе парӑнса ӗҫленӗ С. Михайлов, И. Яковлев тата ыттисем те пысӑка хунӑ. Урӑхла каласан, ҫутӑлӑх литератури этеме воспитани парса пурнӑҫри ҫитменлӗхсене пӗтерме тӑрӑшнӑ.

К. Иванов «Калашник хуҫа ҫинчен хунӑ юрра» куҫарнӑ чухне чӑваш ӗҫ ҫыннин хуйхи-суйхине, унӑн тертлӗ пурнӑҫне асра тытса тӑрать. Чӑвашла вулакана ӑнланмалла пултӑр тесе вӑл поэмӑна юрӑ умӗн каланӑ сӑмахпа пуҫлать. Умсӑмахра К. Иванов вырӑс патшалӑхӗн Хаяр Иван ӗмпӳ патшара ларнӑ вӑхӑтри хӑш-пӗр паллӑрах ӗҫӗсене ҫырса кӑтартать. Ҫакӑнпа пӗрлех вӑл уйрӑм сӑнарсен хӑй евӗрлӗхне те ӑнлантарма тӑрӑшать. Поэт Хаяр Иванӑн вырӑс патшалӑхне вӑйлатас тата пӗр ҫӗре чӑмӑртас енӗпе тунӑ усӑллӑ ӗҫӗсене уйрӑмах палӑртать. Патша сыхлавҫи Кирипей Хаяр

Ивансăр пуçне урăх никама та пăхăнмасть. Ирĕклĕ те вылянчăк пурнăçпа иртĕхсе кайнăскер, Кирипей çын арăмне урамра халăх умĕнчех намăслантарать. Калашник хуçа вара хăйĕн арăмĕпе кил-йышĕн чысне хӳтĕлес тĕллевпе Кирипее хирĕç хаяр кĕрешĕве тухать. Патшан аскăн чурипе ачашне ку таранччен никам та çĕнтерейменнине пĕле тăркачах тата куншăн хаяр ĕмпӳ пуçран шăлманнине ăнлансах пĕр шиксĕр тухать Калашник хуçа хăйĕн ырă ячĕпе чысне хӳтĕлеме. Тавăрать вăл тăшмана, анчах хăй те вилет: патша çак пăлхавçăн пуçне касма хушать. Пĕрремĕш революци кĕрлевĕпе пĕр вăхăтра çакăн пек ирĕк шухăшпа тапса тăракан поэмăна чăвашла куçарни урăх нимĕскере те мар — ирĕклĕхшĕн кĕрешĕве çĕкленме ытарлă чĕнсе каланине пĕлтерни сăмахсăрах паллă пулнă ĕнтĕ. Поэмăн тĕп шухăшне вăл вăхăтри вулакансем шăпах çапла ăнланнă та.

К. Иванов вырăс поэчĕн сăввисене те юратса, пысăк ăсталăхпа куçарать. Куçару валли яланах вăл паянхи пурнăçпа тачă çыхăннă шухăш-туйăма палăртма май паракан сăвăсене суйласа илет. Тĕслĕхрен, «Пирĕшти» (Ангел) сăвăри çĕр çинчи асаплă пурнăçа тӳсме тепĕр мĕскĕн чуна йăтса анакан пирĕшти сăнарĕ поэтшăн тĕрĕсмарлăхпа тулса ларнă патша саманине сивлеме меллĕ сăнар пулнă. Çут çанталăкпа тавралăха чĕрĕлĕх кӳрекен çил-тăвăлшăн тунсăхлакан парăс сăнарне те («Парăс») поэт кăмăлланă. Философилле тарăн шухăшлă «Хумсемпе çынсем», «Чул ту», «Тусен тăррисем», «Пурнăç курки», «Тĕрме çынни» сăвăсенче М. Лермонтов хускатнă гуманизмпа тĕрĕслĕх ыйтăвĕсем чăваш поэчĕн чун хавалĕпе пĕр кĕвĕллĕ пулнă. Çавăнпа поэт вĕсене уйрăмах пысăк тимлĕхпе, пĕтĕм чун хавалĕпе куçарать.

Çапла вара куртăмăр ĕнтĕ: чăваш поэчĕ М. Лермонтовăн илем тĕнчинче хастар çынсен, чуралăха сивлекенсен сăнарĕсене, çав типсен характерне, шалти тĕнчине уçса кăтартма пулăшакан май-мелсемпе романтизм сăррисене шырать.

Малалла К. Иванов пултарулăхĕнчи романтизмăн хăшпĕр уйрăмлăхĕсем çинче чарăнса тăрар-ха.

Юратнă поэтăмăр пултарулăхĕн тĕрлĕ енне тарăн та анлăн çутатса паракан статьясене кунта асăнма кирлех те мар пуль. Çакна çех палăртса хăвармалла: тĕпчевçĕсемпе критиксем ку таранччен К. Иванов пурнăçĕпе пултарулăхне

тĕпчесе паха та кирлĕ ĕç нумай турĕç пулин те поэтăн романтизмне халь те «уçман çерем» тесе шутлама пулать.

К. Иванов поэзийĕнче самаях палăрнă романтизм туртăмĕсем, çут çанталăкпа обществăри пулăмсене илемлĕх мелĕ-майĕпе пĕтĕмлетнĕ чух усă курнă принципĕсем поэт хăйĕн произведенийĕсене çырнă чух романтизм теорине тарăн тĕпчесе, ăша хывса ĕçленинчен килнĕ теме хĕн. Çапах та поэт пултарулăхне тĕплĕн тишкерсе тухсан унта романтизм искусствин уйрăмлăхĕсем вăйлă палăрни уççăнах курăнать. Пирĕн шухăшпа, теориллĕ ыйтусемпе интересленни мар, вырăс тата ют çĕршыв литературисен малти ретри представителĕсен пултарулăх пуянлăхне тĕпчени, вĕсенчен илемлĕх ăсталăхне вĕренни К. Ивановшăн романтизм шкулĕ пулса тăнă. Поэтăн юратнă учителĕсенчен уйрăмах Лермонтова, Пушкина, Гюгона, Гейнене палăртмалла. Пуринчен ытларах К. Иванова «Демонпа» «Мцыри» авторĕн ирĕклĕхшĕн кĕрешекен романтикăллă геройĕсем кăмăла кайнă. Лермонтовăн тарăн идейăллă, пуян эмоциллĕ, ырăпа усал кĕрешĕвне сăнлакан, этемлĕх тата вырăс халăхĕн шăпипе çыхăннă философиллĕ шухăшпа тулнă поэзийĕ К. Иванова яланах хытă пăлхантарнă, ун кăмăл-туйăмне хускатнă, поэт чĕринче çĕнĕрен те çĕнĕ пултарулăх импульсĕсем вăратнă. Сăнарсен шухăш-кăмăлне, чун-чĕре вăрттăнлăхĕсене, вĕсен психологине уçса парас ăсталăха та вăл ытларах Лермонтовран вĕреннĕ.

Пирĕн литературоведенире К. Иванов пултарулăхне икĕ тапхăра пайлани тĕп вырăн йышăнса тăрать. Тĕпчевçĕсем ун пултарулăхĕн малтанхи тапхăрне романтизмпа çыхăнтараççĕ, кайранхи тапхăрăн никĕсĕнче вара критикăллă реализм меслечĕ выртать теççĕ. Анчах та çак шухăша татăклăнах çирĕплетсе пама хĕн: фактсем çителĕксĕр. Пĕр-пĕр писатель пултарулăхĕн аталанăвĕ темиçе тапхăртан тăрать пулсан, унта яланах авторăн эстетикăллă идеалĕ улшăнса пынине, унăн тавракурăмĕ анлăланса пынине е хăш-пĕр чух ансăрланнине тата эстетика арсеналĕн пуянлăхĕ самаях улшăннине курма тивĕçлĕ. Анчах та К. Иванов пултарулăхĕн çак «икĕ тапхăрĕ» хушшинче асăннă улшăнусем пĕрре те сисĕнмеççĕ. Тата поэтăн çак «икĕ тапхăрĕ» шăп та лăп виçĕ çул рамкине çеç вырнаçать-ха. Вăл хăйĕн «Шуйттан чури» ятлă романтикăллă трагедине те «Нарспи» поэмăпа пĕр

вăхăтра çырни паллă. Эппин, К. Иванов пултарулăхне искусствăллă майпа икĕ тапхăра пайлани ун пĕрпĕтĕмĕшлĕхне пăсать. Çакна, поэтăн пултарулăхне, сăнарсен типологине тишкерсе тухсан ĕнентерӳллĕ фактсемпе çирĕплетсе пама пачах та йывăр мар. Çапла вара, чи малтанах поэт стилĕн хăш-пĕр енĕсене сăнаса, ун хăй евĕрлĕхне, вăл яланах тăтăрхаллă пулнине кăтартса пама тăрăшăпăр. Ку ыйтăва тимленĕ май эпир К. Ивановăн психологиллĕ ăсталăхне, поэт пултарулăхĕн тĕп конфликтне тата ытти тĕрлĕрен илемлĕх мелĕсене тишкерсе тухма тивĕç.

К. Ивановăн психологиллĕ ăсталăхĕ çинчен каланă чух ун пĕр уйрăмлăхне асăрхамасăр иртме май çук. Ăна Л. Толстойăн «чун-чĕре диалектикипе» (диалектика души) те, реализмлă произведенисенчи психологизм законĕсемпе те танлаштарма йывăр. К. Иванов произведенийĕсенчи психологилле кăткăслăх яланах хире-хирĕçле туйăмсем сĕртĕнсе, тавлашса аталанса пынинчен килет. Икĕ вăйăн е епле те пулин пулăмсен хирĕçĕвĕ вулакан чун-чĕринче вĕçĕмсĕр тĕрлĕ туйăм вăратать, темле асамлă вăйпа хăй тыткăнне илет. Ырăпа усал хушшинче пыракан кĕрешӳпе çыхăннă хирĕçӳ поэт произведенийĕсенче яланах пур. «Икĕ хĕр» юмахра йăпăлтатнине çеç юратакан ашшĕ тĕрĕс сăмах каланăшăн кĕçĕн хĕрне хăй килĕнчен хăваласа ярать. Сывлăм пек çутă кăмăллă, пурнăçра икĕпитлĕхе курайман поэт тĕрĕслĕхшĕн кĕрешекен хĕре тем пекех шеллет пулин те юмах усал вăй, тĕрĕсмарлăх çĕнтернипе вĕçленет. Çак хирĕçӳ «Тимĕр тылă» юмахра татах та уççăнрах палăрса тăрать. Анчах кунта та поэтăн чи таса, юратнă идеалĕпе çыхăннă Чĕкеç вилет, тимĕр тылă, хуçи вилнĕ пулсан та, яланах, мачча çинчен анса, ним айăпсăр вуншар Чĕкеçĕн кун-çулне татма пултарать.

Çакăн пек ӳкерчĕкех «Тăлăх арăм» юмахпа «Шуйттан чури» трагедире те куратпăр. Ку тĕлĕшпе «Нарспи» поэма та поэтăн ытти произведенийĕсенчен уйрăлса тăмасть. «Çак сивĕ те хаяр ирĕксĕрлĕх тĕнчинче ырă пулăм, туйăм валли ытла та вырăн сахал», — тенĕ шухăш «Нарспи» поэмăра тата та сисĕмлĕрех палăрать. Этем çут çанталăк илемне туйса, унпа киленсе пурăнма çуралнă. Анчах та пусмăр тĕнчи таврари мĕнпур илемлĕхе пĕтерет, вăхăтсăр типĕтсе шантарать. Ырăпа усал хушшинчи яланхи кĕрешӳ поэт тĕнчене

хăй евĕрлĕ — трагедиллĕ туйса сиснипе çыхăнса тăрать. Çеçпĕл çеçки пек ачаш та шăпчăк сассиллĕ юрăçа тĕрĕсмарлăхпа тулнă киревсĕр саманара ытла та пăчă, тăвăр пулнă. Çавăнпа вăл, хăйĕн идеалне çунатлă ĕмĕт-кăмăлпа пĕтĕçтерсе, шалти килĕшӳлĕхе çут çанталăк ытамĕнче шырать. Поэтăн трагедиллĕ тĕнчетуйăмне ăнланма пире ун психологийĕн хăш-пĕр уйрăмлăхĕсем тата кун-çулĕнчи чылай факт пулăшаççĕ. К. Ивановăн Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче пĕрле вĕреннĕ юлташĕсем пурте тенĕ пекех вăл ялан тарăн шухăша кайса, юлташĕсенчен уйрăларах çӳреме юратни тата çав тери сисĕмлĕ пулни çинчен каласа параççĕ. Çивĕч сисĕмлĕ те вăтанчăк поэт чылай чухне хăйĕн чун-чĕре вăрттăнлăхĕпе ĕмĕчĕ-ăнтăлăвĕ çинчен чи çывăх юлташĕсемпе те калаçма юратман. Çавна пула вилĕмсĕр «Нарспине» те вăл шкулти юлташĕсенчен вăрттăн çырнă. Ĕнтĕ, аса илерха. Вĕренекенсен революциллĕ хумханăвне хутшăннăшăн Чĕмпĕр шкулĕнчен кăларса яни, ун хыççăн Благовещенск хулинчи учительсем вĕрентсе кăларакан семинарие илменни, хавшанă сывлăх, çырнă произведенисене ниçта та пичетлеме май çукки — çаксем пурте поэтăн час аманма пултаракан ачаш та черченкĕ чун-чĕринче мĕн тери тарăн суран-асап хăварма пултарнине ăнланма пĕрре те йывăр мар. Ахальтен мар пĕчченлĕх туйăмĕн тыткăнĕнчи вун çичĕ çулхи пултаруллă çамрăк çакăн пек тарăн шухăшлă йĕркесем çырать:

Асап килсен, хĕн килсен
Шухăшласа ларатăп:
Çамрăк вăхăт, ыр вăхăт,
Ăçта эсĕ çухалтăн?
Çамрăк кунсем, ыр кунсем
Иртсе кайрĕç тĕлĕк пек.
Асап, хĕн-хур халĕ пур,
Килчĕç хура пĕлĕт пек.

Çапла вара, К. Иванов произведенийĕсенчи (уйрăмах «Нарспири») юмахри пек илемлĕ çут çанталăк, тĕлĕнмелле поэтикăллă тĕнче, хăш-пĕр тĕпчевçĕсем ĕнентерме тăрăшнă пек, поэт пусмăр тĕнчин хирĕçӳлĕхĕсене асăрхаманран килменнине эпир уççăнах куратпăр. Поэт хăй вăхăтĕнчи хуçа пулса тăракан тискер йĕркесене йышăнмасть, вĕсене хăйне евĕрлĕ, хăйĕн идеалĕпе çывхартса улăштарать. Акă мĕнрен килет поэт творчествинчи романтикăлла субъективлăх.

К.В. Ивановăн пултарулăх ĕçĕнчи психологийĕпе тавра-курăмĕн çак уйрăмлăхне шута илмесĕр «Нарспи» поэмăн никĕсĕнче выртакан конфликта та тĕрĕс ăнланма май çук. Поэт пултарулăхне тĕпчекенсенчен нумайăшĕ «Нарспи» конфликтне социаллă проблемăсем хушшинче кăна шырать, хăшĕсем поэмăра хире-хирĕçле классен кĕрешĕвĕ тĕп-ре пулнине те каланăччĕ. Поэмăна тарăнрах тишкерсе тухсан К. Иванов «Нарспире» те хăйне пĕр самантлăха та канăç паман ырăпа усал хушшинчи хирĕçĕве сăнлама тăрăшни курăнать. Поэмăн тĕп конфликчĕ йăлапа мораль ыйтăвĕ-семпе тачă çыхăнса тăрать. «Пирĕн ăшра вут çунать, çулăм тухни курăнмасть», — тенĕ чăвашсем мĕн авалтанпах. По-эмăра та çавăн майлах, хирĕçле классен кĕрешĕвĕ хĕрсе пынине автор шыв тĕпĕнчи юхăм пек палăртнă. Чăн-чăн художникăн ăсталăхĕпе пурнăç чăнлăхне ăнланни вара ça-кăнта та аван курăнать.

Паллах, поэмăра трагедиллĕ пулăмсем пурнăçри кон-трастлă фон çинче пулса иртеççĕ. Унта икĕ хире-хирĕçле классен представителĕсене уйăрса илме йывăрах мар пул-сан, вĕсен хушшинчи кĕрешĕве эпир курмастпăр, ăна тем пек шырасан та тупаймастпăр. Поэт (паллах, Нарспи те!) танмарлăх тĕнчине хирĕç хăйне майлă протестлет. Анчах та, хăш-пĕр тĕпчевçĕсем каланă тăрăх, кунта пĕр енчен Ми-хетерпе унăн арăмĕ, Тăхтаман, тепĕр енчен Сетнерпе ытти чухăнсем хушшинчи хĕрӳ класс кĕрешĕвне сăнласа панă. Çакăн пек калани тĕрĕслĕхрен пăрăнни пулать. Мĕншĕн тесессĕн поэмăра пусмăр тĕнчин тытăмне аркатассишĕн кĕрешекен герой çукки уççăнах курăнать. Пĕртен-пĕр герой Сетнер — чухăн çын — хальлĕхе хăйĕн телейне çăласси çинчен анчах ĕмĕтленет-ха. Автор Сетнерĕн пурнăç çулĕпе кĕрешӳ меслечĕсене историллĕ малашлăхĕсемпе çыхăнтар-са кăтартса памасть. Вăл унашкал тĕллев тытман та.

«Нарспи» поэмăра класлă кĕрешӳ çуккине чи малтанах 1920-мĕш çулсем вĕçĕнче вульгарлă социологсем асăрханă. Анчах та вĕсем вăл вăхăтра илемлĕ литература произведени-йĕсене тишкернĕ чух тĕрĕс мар методологипе усă курнипе (чи малтанах произведени авторĕ мĕнле социаллă сийрен тухнипе интересленни) К. Ивановпа «Нарспи» поэмăн ге-ройĕсене кулакла элементсем тесе хак панă. Вăхăт иртнĕ май истори çак критиксем К. Ивановпа ытти паллă писательсен

творчествине йӑнӑш хакланине кӑтартса пачӗ. Анчах та вӗсен йӑнӑшӗсене тӳрлетсе, поэт творчествине урӑхларах методологине тӗпе хурса тӗпченӗ чух хӑшӗсем халь тепӗр тӗрлӗ, тӳнтерле йӑнӑш тӑваççӗ. Вӗсем «Нарспи» поэмӑра хире-хирӗçле классен пӗр вӗçӗмсӗр пыракан кӗрешӗвне «тупаççӗ». Сетнертен вара общество пурнӑçне çӗнетсе улӑштарассишӗн кӗрешекен герой, революционер туса хураççӗ. Çак йӑнӑш К.В. Иванова епле те пулсан вульгарлӑ социологсем вараланинчен тасатас, поэта çӑлас тесе тӑрӑшнинчен килнӗ. Ӗç хайхи произведение тӗпченӗ чух унӑн идейӑллӑ содержанине илемлӗхрен уйӑрса хак парасси еннелле сулӑннӑ.

«Нарспи» поэмӑн идейӑллӑ тата эстетикӑллӑ содержанине тишкернӗ чух вӗсене хальхи методологин критерийӗсемпе усӑ курса тата конкретлӑ историллӗ тапхӑра шута илсе пахалас пулать. Çук çӗрте классен кӗрешӗвне шырани усӑсӑр. Илемлӗ çырулӑх произведенийӗсене уйрӑм енчен çеç хаклани хӑрах енлӗ пулать, вӗсен эстетикин сӗткенне типӗтет, хавшатать.

Поэмӑри чи вӑйлӑ конфликт Нарспипе унӑн ашшӗ-амӑшӗ хушшинчи хирӗçӳпе çыхӑнать. Вӗсем, хӗрӗпе ашшӗ-амӑшӗ, пурте эксплуататорла класс çыннисем, анчах та этем тивӗçӗпе пахалӑхне пач тӗрлӗрен ӑнланаççӗ. Михетерпе арӑмех этеме унӑн мулӗ мӗн чухлӗ нумайтарах, çавӑн чухлӗ пысӑка, хака хураççӗ, хисеплеççӗ. Вӗсен хӗрӗ Нарспи вара этеме унӑн ӑс-хакӑлӗ, чун-чӗре пуянлӑхӗ тӑрӑх хаклать. Çавӑнпа та вӑл, пуян çын хӗрӗ пулнине пӑхмасӑрах, чухӑн хресчен ывӑлне — Сетнере юратать, хӑйсен таса юратӑвне хӳтӗлесе тан мар кӗрешӗве малтан хӑюсӑр, юлашкинчен вара чӑн-чӑн паттӑр пек çӗкленет. Нарспи кивӗ саманари хуçа пулса тӑракан чуралӑх моральне сивлет, этем пахалӑхне вӑтам ӗмӗрсен тапхӑрӗнчи пек ӑнланнине хирӗç хӑюллӑн кӗрешет. Нарспин геройла характерӗ вара ӑна чӑнахах та поэмӑн тӗп геройӗ теме тивӗç парать.

Поэмӑн тӗп конфликтне çакӑн пек ӑнлансан поэт стилӗн нумай хӑйне евӗрлӗ, урӑхларах илемлӗх мелӗсем те, сӑнарӗсене калӑпланӑ чух вӑйлӑ палӑрнӑ субъективлӑх та, романтикӑлла типлассин уйрӑмлӑхӗсем те хӑйсен тупсӑмӗн вӑрттӑнлӑхне уçаççӗ. Поэмӑра вӗсем пурте пӗр тӗп тӗллеве пӑхӑнса тӑраççӗ: Нарспипе Сетнерӗн сывлӑм пӗрчи пек таса

юратӑвне, вӗсен сисӗм-туйӑмне, ӗмӗтне, хуйхи-суйхине тарӑнрах уҫса пама пулӑшаҫҫӗ.

Мӗнле илемлӗх мелӗсемпе ытларах усӑ курать-ха поэт хӑйӗн юратнӑ геройӗн сӑнарӗпе характерне ӳкерсе панӑ чух? Поэт вулакана Нарспипе е Сетнерпе паллаштарнӑ чух реализмла типизаци йӗркипе мар, пачах урӑхла, ытларах романтизм меслечӗн сӑрӗсемпе, майӗсемпе усӑ курать. Геройсен характерӗнче, портретӗнче, вӗсен ӗҫӗсенче вӑл пӗр-пӗр уйрӑм штриха ҫав тери ҫивӗчлетсе (хӑш-пӗр чухне пурнӑҫринчен те ытларах ӳстерсе) тата гротеск мелӗпе сӑрлать. Тӗслӗхшӗн, Сетнере илсен, унӑн тӑшмана пӗтермелли икӗ вӑйлӑ алли те, ҫунатлӑ урхамахӗ те, кӑвар чӗри те пур. Ҫавна пула вӑл тӗлӗнмелле вӑйлӑ та маттур, кӑштах чӑвашсен авалхи юмахӗсенчи паттӑр Улӑпа аса илтерет. Сетнер сӑнсӑпатне автор ик-виҫӗ йӗркепе ҫеҫ, сӑррисене вара ҫав тери «хӗрхенсе» ӳкерет пулин те ҫак ҫӑратнӑ сӑрӑсемпе палӑртнӑ штрихсем реализм меслечӗпе ҫырса, сарлакан уҫса панӑ сӑнарсенчен пӗрре те кая тӑмаҫҫӗ. Ҫакӑ пулать те ӗнтӗ поэт пултарулӑхӗнчи романтизмӑн типлӑ енӗ, унӑн пахалӑхӗ. Нарспи сӑнарӗпе характерне те поэт ҫакӑн евӗрлӗ меслетсемпех уҫса парать. Нарспи те, Сетнер те ӑна ытларах хӑйсен психологийӗпе, туйӑм-сисӗмӗпе, ӑс-хакӑлӗн шалти вӑрттӑнлӑхӗсемпе интереслентереҫҫӗ. Мӗн пӗчӗкрен чухӑн та йывӑр пурнӑҫпа пиҫсе ҫитӗннӗ хресчен ывӑлӗ нимле хура ӗҫрен те хӑраманнине вулакан лайӑх ӑнланать. Апла пулин те поэт хӑйӗн геройне — Сетнере — ҫӗре тарпа шӑварса ака-суха тӑвакан чӑваш хресченӗсен хушшинче (ӗҫре) пӗрре те кӑтартмасть. Анчах ӑна романтизм искусствин произведенийӗсенчи геройсен шайӗпе виҫсен унта тӗлӗнмелли ним те ҫук. Икӗ геройӑн хӗрӳллӗ юрату туйӑмӗ поэмӑра пӗр вӗҫӗмсӗр аталанса пырать. Ҫавӑнпа та Сетнере пурнӑҫӑн прозӑлла енӗсемпе кӑшт сӗртӗнтерни те поэмӑри юратӑвӑн пафосӗпе унӑн ыткӑнуллӑ аталанӑвне кансӗрлеме пултарнӑ. Ҫакна ӑста К. Иванов психолог лайӑх ӑнланнӑ. Ҫавӑнпа та вӑл Сетнере час-часах темле кӗтмен-туман лару-тӑрура (Нарспипе вӑрмана тарни, Михетере пулӑшма кайсан ӑна вӑрӑ-хурах вӗлерни т.ыт.те) е савнӑ Нарспипе валак пуҫӗнче ӑшшӑн калаҫнӑ вӑхӑтра кӑтартать. Ҫакӑн пек меслетпе уйрӑмах романтиксем анлӑ усӑ курнӑ тата хӑшпӗр чух халӗ те усӑ кураҫҫӗ. Вӑл геройсен чун-чӗрин хус-

канавĕсене таранрах уçса пама май парать, вĕсене романтика сĕмĕ çапать.

К. Иванов ăсталăхĕн уйрăм енĕсенчен тата çакна палăртмалла. Сăнарсене ӳкернĕ чух поэт контрастлă, çап-çутă та хăрăм пек хура сăрăсемпе усă курать. Çакă та романтизм искусствин законĕсене пăхăнса тăрать. Поэмăра пĕр-пĕрне чунтан юратакан, çап-çамрăк та маттур Нарспипе Сетнер ватă та усал кăмăллă, пит-куçĕнчен илемсĕр Тăхтамантан контрастлă уйрăлса тăраççĕ. Вĕсем ун антипочĕсем пулаççĕ. Çак меслет поэта хăйĕн идеалне май пур таран вăйлăрах та таранрах уçса пама, усал вăя вара хытăрах сивлеме пулăшать. Тĕслĕхрен, поэт вулакана çамрăк Нарспин пулас упăшки ватă икkenне пĕлтерет. Ку вара вулакан чун-чĕрине Нарспиннинчен пĕртте кая мар хускатать.

Поэмăри ĕçсемпе пулăмсем тĕлĕнмелле илемлĕ фонра пулса иртеççĕ. Вĕсене те поэт кулленхи чухăн хресчен ĕçĕсенчен «тасатнă». Вăл ытларах чăвашсен ĕмĕрхи ырă йăли-йĕркине, çут çанталăк илемне, чăваш хĕрĕсен каçхи вăййипе чаплă уявĕсене ӳкерсе кăтартать. Поэт чăваш характерĕн тĕрлĕ енĕсене, унăн çиелтен пăхнипех курăнман вăрттăнлăхĕсене çав тери тарăн та витĕр курнипе, çут çанталăка ачашшăн сăнама пĕлнипе тĕлĕнтерет. Унăн юратнă геройĕсем яланах çут çанталăк ытамне туртăнаççĕ, унпа пĕрлешсен час-часах хăйсен шалти килĕшӳлĕхне тупаççĕ. Поэтпа унăн лирикăллă геройĕсем çут çанталăкри кашни сасса питех те ачаш, кăшт кăна илтĕнекеннисенчен пуçласа çирĕп, хаяр сасăсем таранах çав тери сисĕмлĕн туяççĕ. Çут çанталăк та геройсен кăмăл-туйăмĕпе пĕрле çав тери сисĕмлĕн улшăнса пырать. Сăмахран, шăнкăртатса юхса выртакан валак патне урхамахне шăварма аннă Сетнер чун савнийĕпе тĕл пулнинех илер. Икĕ савни хăйсен телейне çичĕ ютри тăшман аркатма шутлани çинчен пĕлеççĕ пулин те пĕр-пĕринпе тĕл пулнăран чунĕсем савăнăçпа тулнă. Çав хушăрах çут çанталăк та вĕсене телей сунса, савса ăшăтать тата Сетнерпе Нарспи юратăвĕпе киленсе йăпанать. Кайăксен çепĕç юрри те, хĕвел кулли те, икĕ савнине пуçне тайса телей сунакан ватă йăмра та — çаксем пурте Нарспипе Сетнерĕн кăмăл-туйăмĕпе çыхăннă.

Тепĕр тĕслĕх илер. Тин çеç хăйĕн усал тăшманне вĕлернĕ Нарспи вăрманпа пырать. Армак-чармак йывăççем пуçĕсе-

не сулласçĕ, Нарспи çулне пӳлеççĕ, йывăçсем хушшинче вылякан арçурисем ун еннелле аллисене тăсаççĕ. Çак кĕске самант хушшинче тем те пĕр тӳссе иртттернĕ асаплă Нарспи чун-чĕринчи вăйлă пăлхану вăрманти тăвăлпа пĕр тан. Çут çанталăк хăрушлăхĕ те пикене çилленсе айăпланăн туйăнать. Ку вăл — сăнарсен шухăш-кăмăлне, сисĕм-туйăмне çут çанталăк вăйĕсемпе, психологиллĕ пейзажсем урлă кăтартса пама пулăшакан мел. Вăл XIX ĕмĕрти романтиксен пултарулăхĕнче витĕмлĕ палăрать.

К. Иванов романтизм символикипе, тĕрлĕрен условнăй формăсемпе пысăк ăсталăхпа усă курать. Ку тĕлĕшрен те «Нарспи» поэма романтикăллă произведенисене питĕ çывăх тăрать. Акă, тĕслĕхрен, поэмăн «Юмăç патĕнче» ятлă сыпăкне илер. Унта пулса иртекен ĕçсемпе паллашиччене çак сыпăкăн ячĕ вулакан чĕринче темле аран палăракан шиклĕ туйăм вăратать. Пĕртен-пĕр юратнă ывăлĕшĕн кĕтмен инкек çывхарса килнине чĕрипе туйса илсе Сетнер амăшĕ юмăç патне тухса утать. Анчах та лешĕ карчăкăн хуйхи-суйхине пушшех те вăйлатса ярать, чĕрине çурать. Сетнерĕн «Турă çырнă» вилĕмĕ инçе маррине систерет. Кун хыççăн вара вулаканăн чĕринче кăшт çеç палăрнă шик амаланать, инкек çывхарнине сиснĕн туйăнать. Çак туйăм суя пулманмĕн. Нарспипе пĕрле вăрмана тарса кайнă Сетнере тытса килсе тăнсăр пуличчен хĕнеççĕ, унтан нумаях та вăхăт иртмест, ăна вăрăсем вĕлереççĕ. Композици тума ăста пĕлнĕ К. Иванов çав сыпăка «Тарни» сыпăк умĕн вырнаçтарать. Ку вара поэма психологизмне пушшех вăйлатса ярать.

Акă тепĕр пĕчĕк деталь. Хушăлкара паçăрах тĕттĕм пулнă. Йĕп чиксен те куç курмасть. Мĕскĕн Нарспи — пӳртре хăй вĕлернĕ упăшкипе юнашар. Çак хăрушă саманта поэт чуна çӳçентермелле çырса кăтартать.

Хушăлкари чăвашсем
Çывăраççĕ харлатса.
Анкартинчи тăмана
Анчах вĕçет ухлатса.

Тăмана, çăхан пекех, — вилĕм тĕнчин символне пĕлтерекен кайăк. Кунта вăл çывăракан ял çийĕн вĕçсе, хăрушшăн ухлатса ял çыннисене Тăхтамана вĕлерни çинчен пĕлтерет тейĕн. Çакă та вулакан кăмăлне самаях хускатать.

Романтизм поэтикин уйрăмлăхĕсем поэмăн композицине хăйне евĕрлĕ йĕркелениnче те палăраççĕ. Драмăлла ситуацисемпе геройсен шăписем, ыткăнса аталанакан сюжет поэмăн сыпăкĕсене çакăн пек вырнаçтарнинчен нумай килеççĕ. Поэмăн «Тарни», «Вăрманта», «Тăвату виле» сыпăкĕсенче К. Иванов тĕнчене романтикăлла ăнланни, туйни-сисни палăрса тăрать.

Пирĕн шухăшпа, çӳлте асăннă романтизм искусствин типологиллĕ уйрăмлăхĕсемпе поэт хăйĕн пултарулăхĕнче ирĕклĕн те пысăк ăсталăхпа усă курни уççăн тухса тăрать. Вĕсем пурнăç чăнлăхне хирĕçлемеççĕ, ăна татах та ытларах ĕненмелле те тарăнрах сăнласа кăтартма май параççĕ. К. Иванов произведенийĕсенчи идея тарăнлăхĕпе эмоци пуянлăхĕ пĕр-пĕринпе тачă çыхăннă. Чаплă поэтăмăр тăван литературăри романтизмăн туртăм-сулăмĕсене пуçласа туллин палăртакансенчен пĕри пулнă.

*1970, 2010*

Паян вăл Çеçпĕл сăвви пек
Кăшт хурлă, тарăн, тап-таса.

*Петĕр Хусанкай*



## ÇĔН ÇĔРЕ ЧĔНЕН ЧĔРЕ

Çеçпĕл Мишшин çĕр те вунă çулне кĕтсе илтĕмĕр çеç, вилĕмсĕр «Нарспи» авторĕ çуралнăранпа çĕр те çирĕм çул çитрĕ те. Çакăн чухлĕ пурăнса эпĕ нумай хутчен асăрханă: чăн-чăн ăслăлăх открытийĕсем, çӳлтен палăртнă графика пăхăнса, уйрăм культура ĕçченĕн черетлĕ юбилейне иртгернĕ чух тăвакан докладсенче палăрсах каймаççĕ. Кунта жанр (протокол) хиствевне пăхăнас пулать: вăхăт тĕрĕсленĕ «чăнлăха», пухăннă аудиторие çырлахтармалла, яка та тикĕслесе çитернĕ тезиссемпе хыпарламалла! Ку йĕрке ĕнтĕ совет саманинчех йăлана кĕрсе çирĕпленнĕ. Паллах, кун пек калани юбилейпе тӳр килекен конференцисен пĕлтерĕшне тивĕçлĕ хакламаннине пĕлтермест. Сăмахран, Çеçпĕлĕн тăхăр вунă çулĕпе çĕр çулне паллă тунă май кун çути курнă статьясен пуххисене асăрхамасăр иртме çук. Чăн та, вĕсем пирки пичетре тĕплĕ тишкерӳллĕ калаçусем йĕр хăварсах каяймарĕç пулмалла. Калăпăр, А. Хусанкай, Ю. Яковлев сăнавĕ-пĕтĕмлетĕвĕсем Çеçпĕл эткерĕпе сăнарĕнче мĕнле çĕнĕ енсене, халиччен никам та асăрхайманнине, уçса кăтартаççĕ-ха? Кунсăр пуçне поэт пултарулăхĕ патне çитес пилĕкçуллăхсенче çывхармалли çул-йĕрсене такăрлатса пани мĕне тăрать. Ан тив, çак проект çине таянса камăн та (хăçан та) пулсан вăл ĕçе пурпĕр тума тивет, апла пулин те хальлĕхе мал ум сукмакĕсене пунктирлесе тухнинче хавхалану пурри паха. Тепĕр тесен ку совет саманинчи традицисемпе те çыхăннă. Мĕн чухлĕ вăй-хал пĕтетчĕ çав плансене

пухусенче сӳтсе явса, уйрăм сас паллисемпе кăлтăксем пирки тута хĕррине кăпăк кăларса тавлашса. Планне пурнăçа кĕртесси ун пекех пĕлтерĕшлĕ пулман, ăна партком шкапне хуратчĕç. Епле пулсан та литература тĕпчевçисен çак сборниксене ятарласа тĕпчесе тивĕçлĕ хак памалла, тем тĕрлĕ пуян шухăш та, шалт тĕлĕнтерсе пăрахакан танлаштарусем те тĕл пулаççĕ вĕсенче. Эпĕ кунта тĕп тĕллеврен пăрăнмасăр чылайранпа палăрнă пĕр туртăм-сулăм сулнăкĕ пирки çеç каласа хăварасшăн.

2001 çулта тухнă «XX ĕмĕр пуçламăшĕнчи илемлĕ шухăшлаври пăлхавăр тата Çеçпĕл Мишши поэзийĕ» сборникра А. Хусанкайăн Çеçпĕлпе Айхи пултарулăхне танлаштару урлă «çывăхлатакан» статйи пичетленнĕ. Ман шутпа, Çеçпĕлпе Айхи пек пĕр-пĕринчен уйрăлса (инçетре) тăракан сăвăçсене шухăшласа кăларма та çăмăл пулас çук (е ăсталаса пултарма, Пигмалион пек). Апла пулин те, пăхăсăн, Атнер Петрович пултарнă. Паллах, çине тăрсах шырасан тупма пулать пулĕ Çеçпĕлпе Айхи пурнăçĕпе пултарулăхĕнче пĕр евĕрлĕ пулăмсем, анчах та вĕсем иккĕмĕшле пĕлтерĕшлĕскерсем кăна мар-ши? Курăр-ха, калăпăр, статья авторĕ мĕне тимлеме хистет вулакана. Çеçпĕлпе Айхи иккĕш те ик чĕлхеллĕ поэтсем тет вăл. Ытти çынсем пекех, вĕсем çывăрнă чухне тĕлĕк те курнă. Татах та палăртать статья авторĕ çавăн йышши пĕрпеклĕхсене. Тĕлĕке вара вăл пĕрре те ăнсăртран асăрхамасть, шел, никĕсленмен пĕтĕмлетӳ еннелле сулăнать. Çак «пĕрпеклĕхе» асăнмалла пулман иçмасса. Мĕншĕн тетĕр-и? Мĕншĕн тесен Çеçпĕлĕн пĕтĕм поэзийĕн шăнăр тĕллевĕ, кирек хăш енчен пăхсан та (социалла е экзистенциалла), пĕрре — чăваш çыннине вăраха кайнă «ыйхăран вăратасси», тутлă тĕлĕкне сиресси. Сюрреализма кăмăллакан Айхишĕн вара пурнăçпа тĕлĕк (ыйхă) хушшинчи «чикĕ» пĕлтерĕшсĕр (условнăй) япала çеç. «Анаслă ыйхă» тесе Çеçпĕл «сурăх кĕтĕвĕн» психологине калать. Вăл чăвашăн обществăлла-политикăлла, социалла тата кил-тĕрĕшри пурнăçне, пăнтăх сывлăша уçăлтарнă пек, чĕрĕ варкăш вĕрсе кĕртесшĕн, тĕпрен çĕнетсе улăштарас тĕллевлисен чи малти ретĕнче. Айхишĕн вара хăйĕн тĕнчи те çителĕклĕ, Хусанкай кун пирки тĕрĕс калать: «он как бы говорил «для себя», погружаясь в «самость», глубину «есмь». Сăмахсене темле кăтралатса-тĕтрелентерсе каласан та кунта çакă ик-

кӗлентермест: пирӗн умра икӗ хире-хирӗçле полюс паллисем. Çакна палăртнă хыççăн текех «пӗрпеклӗх» шырани усăсăр.

Тӗплӗ чăваш çыннин кил хуçалăхӗнче кашни япала хăй вырăнӗнче, çавнашкал тирпейлӗх статьясен ăш-чикне те илем кӳнӗ пулӗччӗ. Терминсемпе ăнлавсен пӗлтерӗшне уяманни чылай статьяра куçа тирӗнет. Калăпăр, Çеçпӗле те, Айхине те çине-çинех шаманпа танлаштараççӗ, юнашарах «чăн Турăпа» тачă çыхăну тытнине палăртаççӗ. Ку вăл, паллах, пуçра шухăшсем тăрăлса çитейменнине кăтартать, тен, çав уйрăмлăха тавçăрайманнине?

Асăннă статья вӗçӗнче А. Хусанкай хӗрхӳ кăмăл-туйăмпа пӗтӗмлетӳ тăвать: Çеçпӗл сассине тăван халăхӗ вилнӗ хыççăн тепӗр вăтăр çултан çеç илтнӗ, Айхине хăйӗн тăван çӗрӗнче, Чăваш Енре, XX ӗмӗр вӗçӗнче халӗ те ăнланса пӗтерейменççӗ-ха. Мӗншӗнне статья авторӗ кăшт çӳлерех хăех палăртнăччӗ: Айхи хӗрӗх çула яхăн чăваш поэзине «европăлатас» тӗллевпе çине тăрса ӗçленӗ иккен. Апла тăк хăйӗн поэзине май килнӗ таран «европăлатнă» ӗнтӗ вăл, анчах вулаканӗсем (халăх) «европăланайман» (тен, ку вӗсене кирлех те мар), çавна пула пӗр-пӗрне ăнланасси ăçтан пултăрха кунта? Пур-ха ăнланаканӗсем темиçе çын, анчах вӗсем урăх хаклăх-пахалăх тытăмӗнче ӗçлеççӗ. Ку ансат арифметика çке-ха. Грибоедов камичӗ те ассоциациленет кунта.

Сборникри статьясемпе паллашнă май çакна асăрхатăн: конференцине Çеçпӗл çӗр çулне палăртнă май ирттернӗ темелле, анчах чылай тӗпчевçӗ юбиляра «манса кайса» тенӗ пек Айхи çинчен çине-çинех калаçать. Вуласа пăхăр, çакă уйрăмах Мускаври е чикӗ леш енчи тӗпчевçӗсемшӗн çывăх туртăм. Паллах, ку çав авторсем Çеçпӗл пултарулăхне тарăна кӗрсе тӗпчейменнинчен çеç килмест. Кунта урăх тӗллев те варăнса тăрать. Çавна пула ирӗксӗрех çапла шутласа илетӗн: тен, «Литература хаçатӗнче» пичетленнӗ «Айгитация» статья авторӗ Куприяновский тӗрӗсех асăрханă çак тахçанхи хăрах енлӗ сулăма?!

Çакăн пек чăрсăрлăхпа эпир хăй вăхăтӗнче Надежда Павловăна, чăн-чăн (Турă чун тунă) ташă ăстине (Терпсихора пикине!), татах та çӗкленме пулăшакан хавхалантару сăмахӗпе «тӗревленӗ» пулсан чăваш идейи ячӗпе пурсăмăра та сăвап тивнӗ пулӗччӗ. Çук çав, «çӗклекенӗ» ытларах чухне

(е юри курмăш пулса таланта сӳнтерекенĕ) хамăр мар. Е Атнер Петрович каларăш, «Европа пурне те вăрласшăн» мар, унта «тĕнче гражданинĕсене», «космополитсемпе» «аташса кайнă ывăлсене» çеç вăхăтра «палласа илеççĕ», хапăллаççĕ.

Кунсăр пуçне вĕсемех пире «европăлатас» тĕллевпе илемлĕ литературăна юратакансен, сăмах гурманĕсен тĕрлĕрен обществисене (бельманистсен, жульманистсен) йĕркелесе параççĕ. Вĕсем пуртан кичем мар, пурнăç та телейлĕн туйăнать, юрла та юрла: пурăнмашкăн пурнăç лайăх чăвашсен çĕршывĕнче! Вĕсем пулман пулсан ирĕксĕрех Константин Иванов, Çеçпĕл Мишши, Мĕтри Юман, Хветĕр Павлов тата ытти пысăк ятсен обществисемпе ушкăнĕсем йĕркелесси пирки шухăшласа чăрманма тиветчĕ. Шухăш пуça шуратать-çке вăл.

Тепĕр хут калатăп, Çеçпĕл юбилейĕпе тĕл килнĕ сборниксене туллин тата ятарласа пăхса тухмалла. Эпĕ вулаканран каçару ыйтатăп, мĕншĕн тесен поэт сăввисене тишкерсе тухас умĕн уйрăм статьясем çинче чарăнса тăма тиврĕ. Кунашкал меслет вăл пур чухнех те вырăнлă мар-çке-ха.

Паллах, тăван çырулăхăн Константин Ивановпа Çеçпĕл Мишши пек символĕсене юбилейрен юбилее çеç «аса илсе» чыслани эпир вĕсен эткерне паян кунчченех тĕнче культурин контекстĕнче курма вăй çитерейменнине пĕлтерет. Эпĕ вĕсем çырнисене туллин пичетлесе кăларни е вĕсене ют чĕлхене куçарассипе пичетлесси пирки каламастăп-ха кунта, куçару ĕçĕ хăй еккипе, япăх-и, лайăх-и, пырать-ха вăл. Пурне те ăнланмалларах чĕлхепе çырнă популярлă хайлавсене ытти халăхсем хушшинче пропагандăлассине кам сивлетĕр-ха. Анчах та ку культурăсем хушшинчи диалогăн пĕр енĕ çеç-ха. Сăмахран, Итали, Венгри, Франци тата ытти поэзисен антологийĕсем чылайăн кун çути курчĕç пирĕн. Асăннă халăхсен чĕлхине пĕлмеллипех пĕлекен чăвашсенчен пĕри те пулсан çак тарана çити çав куçарусене профессионал куçĕпе тишкерсе хак панă-и? Вĕтĕ ала витĕр кăларса пахаличчен, вĕсем тавра тем чухлĕ тусан вĕçтерсен те, вĕсем культура пропагандин факчĕсем, кулленлĕх утăмĕсем пулса юлаççĕ-ха. Унсăрăн куçару ăсталăхĕн шедеврĕ тени айвансене минретни çеç пулса тăрать. Гипноза вăйлă парăнакан халăх эпир; кам та пулсан, пĕр-пĕр паллă ят (уйрăмах чикĕ леш енче), «А» тесе kаларĕ тĕк, эпир ун

хыççăн пĕтĕм алфавита (попугайла) каласа тухма хатĕр. Анăç çыннисем пирĕн культурăра экзотика шыраççĕ, калăпăр, вĕсем чăваш тыткаларăшĕнче «шаман» еккине палăртаççĕ, туземецсен йăла-йĕрки пурнăçĕн тĕп символне е эмблемине. Пирĕн вара хамăрăн тутăх тивмен тымар хаклăх-пахалăхсене тарăнрах ăнкарса тĕпчес пулать-çке-ха, айккинчи куç унта кĕреймест. Этикетка шайĕнчи комбинацисем хăвăрт чапа кăларма пултараççĕ, каярахпа вăхăт пурпĕр вĕсен тĕшшине катса тĕрĕслет. Çеçпĕл Мишшин геройĕ, сăмахран, пĕтĕм чун хавалĕпе йăлтăркка пуласлăха ăнтăлать, вăл — çĕнĕ самана йыхравçи. Анчах та сăвапла ятăн чапне ним чухлĕ пытармасăр калас пулать: поэт çырнисем хушшинче хăш-пĕр шухăшĕсемпе сăнавĕсем, уйрăмах сăнарламасăр каланă политика лозунгĕсем йышшисем («хаçат саманинче» хăртанисем), хăйсен пĕлтерĕшне çухатнă ĕнтĕ. Телее, унашкаллисем поэт пĕрчĕн-пĕрчĕн пуçтарнă ылтăн çӳпçене сăрхăнса кĕмен. Çеçпĕл ăрăвĕн тĕнчекурăмĕ классен кĕрешĕвĕн хаяр вут-çулăмĕнче туптанса никĕсленнĕ. Çавăнпа та унăн пултарулăх çулĕ çине тăнă тапхăрти сăввисем авалхи йывăр пурнăçа ӳкерчĕклеççĕ; асаттесем тӳснĕ асап-хуйха автор ылханса питлет, кунпа пĕрлех çутă та илемлĕ, хĕвеллĕ малашлăха чун-чĕрипе хавхаланса, чĕрĕ сăрăсемпе курăмлатса ӳкерет. 1917 çулхи сентябрьте Çеçпĕл Теччĕри учительсен семинарийĕнче вĕренме пуçлать; анлă тавракурăмлă, хăй тĕллĕн нумай вĕреннĕ çамрăк часах революци шухăшлă çамрăксен юхăмĕн чĕри пулса тăрать. Çак юхăма пуçĕпех чăмнă Çеçпĕл кăштах вăхăт тупăннă самантсенче сăвăсем çырать, вĕсене чăваш тата вырăс хаçачĕсенче пичетлет. Сăвăсен тĕп шухăшĕ революципе Граждан вăрçин событийĕсене сăнлассипе çыхăннă, вĕсене «тематикăллă» сăвăсем темелле. 1916 çулпа палăртнă «Салтак шăпи» сăввăн ячех, сăмахран, тĕп шухăша тӳррĕн калать: империализм вăрçинче аманнă салтак хăйĕн инкеклĕ кун-çулĕ пирки шухăшлать. Вăл, хăрах аллине çапăçу хирĕнче хăварнăскер, тăван еншĕн тунсăхлать, камшăн çак инкеке тӳсме тивнине уçăмлă ăнланса илнĕ. Çак анлă пĕтĕмлетӳ вăрçă вутĕнче çунса кайнă е сусăрланнă пин-пин салтак шăпине палăртать.

«Час» сăввăн (1916, вырăсла) тĕп шухăшĕ революци умĕнхи самана сăн-сăпатне лирика геройĕн куçĕпе ӳкерчĕклет, патша йĕркисене хăюллăн питлет. Çеçпĕл геройĕ

ҫӗннишӗн, пуласлӑхшӑн, ирӗклӗхшӗн пурнӑҫне шеллемесӗр класс тӑшманӗсемпе ҫапӑҫакансен ретӗнче («Чухӑнсен кӗрешӳ тертӗнчи кун ҫути...», 1918, вырӑсла; «Пуласси», 1918, 1921; «Пурнӑҫпа вилӗм», 1918, 1920; «Иртнӗ самана», 1918; «Вӑхӑт ҫитӗ», 1918 т.ыт.те). Чӗнӳллӗ сӑвӑсен ярӑмӗ ку; вӗсенчен кашнинчех автор иртнӗ саманапа «ҫутӑ малашлӑха» контрастласа, хире-хирӗҫ тӑратса сӑнлать, авалхи — ылханлӑ, тӗссӗр е хура сӑрсемпе куҫ умне тухать, пуласси — йӑлтӑркка та куҫа шартарасла илемлӗ. Паянхи, хальхи вӑхӑт, сӑнчӑрӑн тухса ӳкнӗ сыпӑкӗ пек, уҫӑмлӑ сӑнланмасть. Уйрӑм ӳкерчӗксенче сисӗнкелет-ха унӑн пӗҫертекен сывлӑшӗ (ҫырантан тухса кайнӑ пӑтранчӑк, кӑпӑклӑ юхӑм пек), анчах та вӑл ҫылӑх пичечӗ ҫапнӑ иртнӗ саманан уйрӑлми пайӗ пек, унпа кӑвапаран ҫыхӑннӑ. Ҫавӑнпа та лирика геройӗн чун-кӑмӑлӗнчи вӗресе тӑракан темперамент, иртнӗ самана паллисене хӗртнӗ тимӗрпе «ҫунтарма» хыпӑнни, тӳсӗмсӗррӗн пуласлӑха ӑнтӑлни характер хысакӗ пулса тӑрать. Ку тӗлӗшрен «Хӗрлӗ тинӗсре» сӑвӑ (1919, вырӑсла) уйрӑмах кӑтартуллӑ. Коммуна ҫӗрнелле ишекен карапа вӑйлӑ хумсем силлеҫҫӗ: карапӗ хӑй те, хыҫа тӑрса юлнӑ «асап ҫыранӗ» те, «тӑххӑрмӗш хум» та, ҫывхарса килекен «телейлӗ ҫӗршыв» та тата ыттисем те пӗтӗмпех кунта символланӑ сӑнарӳкерчӗксем. Революци вучахӗнче шӑранса, ҫӗнӗрен никӗсленекен танлӑ, илемлӗ, пур ӗҫ ҫыннине пӗрлештерекен «ҫӗнӗ тӗнче» проектне социал-утопистсемех ӳкерсе кӑтартнӑ пулнӑ, ҫавӑнпа та кунта Ҫеҫпӗл социализм теорийӗн тӗп тезисӗсене (контурӗсене) чӑваш куҫ курӑмӗпе сӑнарлать. Хӑй асӗнче вӑл чӑвашӑн иртнӗ йывӑр пурнӑҫне те (асап сӑнчӑрӗ), ҫитес вӑхӑтра тӗпрен ҫӗнелсе улшӑнма тивӗҫлӗ, анчах та хальлӗхе куҫа курӑнман инҫетри тӗнчене те асра тытать, унпа хавхаланать.

Сӗм тӗттӗм ҫыранпа пӗрле
Иртни те ӗмӗрлӗх пытанчӗ.
Хӗн-хурлӑ, мӑшкӑллӑ, хура
Чуралӑх ӗмӗрӗ путланчӗ...

Хӑюлӑх — чӗресем тулли!
Карап вӗҫет, чунсем ҫӗкленчӗҫ.
Телей ҫыранӗ инҫе мар,
Мал енӗ шуҫӑмпа хӗрелчӗ.

«Телей ҫыранӗ инҫе мар» тени вӑл пин-пин чӑвашӑн шанӑҫӗ, «ӗмӗрсем хушши» ирӗклӗ те танлӑ пурнӑҫа «тӗмсӗлсе кӗтни».

Ҫак сӑвва тишкерӳллӗ куҫпа вуласассӑн Ҫеҫпӗл вырӑссен паллӑ поэтӗнчен Сергей Есенинран шухӑш-туйӑма ка-

лăплас, сăнарсене ӳкерес ăсталăха вĕренсе пынине асăрхатăн. Тĕрĕссипе, чăваш поэчĕн ытти хăш-пĕр сăввисенче те ҫиелтенех курăнать ҫак туртăм. Есенин сăвви-поэмисем унăн хавхалану ҫăлкуҫĕ пулнă, ҫавна пула вăл унăн тухнă кашни сăввине ҫийĕнчех асăрхаса пынă. Тӳрех куҫа тирĕнекен тĕслĕхсенчен хăшне-пĕрне илсе пăхар. «Верьте, победа за нами! Новый берег не далек», «Скоро, скоро вал последний» («Небесный барабанщик», 1918—1919); «Под плугом бури ревет земля. Рушит скалы златоклыкий омеж. Новый сеятель бредет по полям, новые зерна бросает в борозды... Шлея на кобыле — синь. Бубенцы на шлее — звезды» («Преображение», 1917); «Мы радугу тебе — дугой, полярный круг — на сбрую» («Пантократор», 1919, нарăс); «Видно, в смех над самим собой пел я песни о чудесной гостье» («Кобыльи корабли», 1919). «Пĕрпеклĕхсем» татах та пур, анчах та вĕсем Ҫеҫпĕл пултарулăхĕн уйрăм тапхăрĕпе ҫыхăннă. Тĕлĕнмелле витĕм ку: пĕр поэт лирикин уҫă варкăшĕ теприн чунĕн хĕлĕхĕсене хускатать.

Шăхасанта пуҫланнă тапхăр, тĕпрен илсен, 1921 ҫулхи нарăсчен тăсăлать теме пулать. Мĕншĕн тесен «Йывăр шухăшсем» сăвăчченхи (1921, нарăс) лирика геройĕ сăн-сăпатĕнче сисĕмлĕ улшăнусем палăрмаҫҫĕ. Паллах, унăн тавракурăмĕ, самана витĕмне пула, анлăланса пырать, политикăлла шухăшĕ ҫивĕчленет, «ҫутă малашлăха» ĕненесси ним чухлĕ те чакмасть-ха. Герой сăн-сăпатĕнче тепĕр курăмлă йĕрĕм палăрса тăрать, хальлĕхе вăл «тулаш тĕнче» сăн-сăпачĕпе палăрăмĕсене, улшăнăвĕсене ытларах тимлетха е аваллăхран юлнă пурнăҫ йĕркисене, киввине тымартан кăклама йыхăрать. Кунсăр пуҫне лирика геройĕ хăйне танлăхшăн юнлă ҫапăҫăва ҫĕкленнĕ чухăнсен уйрăлми пинпин ҫынран чăмăртаннă юхăмĕ, пĕр пĕчĕк пайĕ пек туять: «эпир асап тӳснĕ», «тăшмансем умĕнче пуҫ усмастпăр», «ĕмĕрлĕх никĕс ҫине ҫĕнĕ ҫурт лартар», «халăх тусĕ нумай пирĕнпе» т.ыт.те. Ку уйрăм ҫын «чăнлăхĕ» мар, Ҫеҫпĕл ăна Раҫҫейри пин-пин ĕҫ ҫынни пек, большевизм идеологийĕ урлă (гипноза парăннă пек) ăша илнĕ. Пайăрлăх ушкăнлăхăн уйрăлми пайĕ пек сăнланать. 1921 ҫулхи нарăсран пуҫласа вара поэт лирикин геройĕ хурҫă шанчăкĕн ҫăлкуҫĕ типсе ларма пуҫланине, ун сăлтавне тишкерме пуҫлать, сăввисенче пĕр вăхăт трагизмла кĕвĕ-ҫемĕ вăйланать.

Тӳррипе каласан, синкерлӗ ӗҫ-пулӑмсем 1921 ҫулхи раштавран пуҫланаҫҫӗ: суя ҫӑхавпа усӑ курса поэта арестлеҫҫӗ, хупса лартаҫҫӗ. Ҫеҫпӗл ҫак тарана ҫитсе хӑй пурнӑҫӗнче кунашкал каварлӑ ӗҫ-пуҫпа, хура-хаяр элекпе ҫыхӑннӑ лару-тӑрӑва лексе курман. Партипе совет влаҫӗ шанса панӑ ӗҫе пысӑк яваплӑх туйӑмӗпе, шалти ӗненӳпе пултарса пынӑ вӑл, «хурҫӑ шанчӑк» ҫӑлтӑрне куҫран вӗҫертмен. Идеалӗ те унӑн, хӑй калашле, пин-пин чӑваш чухӑнӗн ӗмӗчӗ-ӑнтӑлӑвӗпе уйрӑлми тачӑ ҫыхӑннӑ. Ним айӑпсӑрах уйӑх ытла тӗрмере ларса тухнӑ Ҫеҫпӗл ҫав идеал никӗсне шӗкӗ ҫиме пуҫланине туйса илет.

Тӑван ҫӗршыв, сана ӗненеттӗм,
Пулас мухтавлӑхна сисеттӗм...
Халиччен шанчӑкпа чӗре ҫунчӗ...
Паян теме сиссе ӗмӗт сӳнчӗ.
Шанчӑксӑр чунӑма сивӗ ҫапрӗ,
Сивӗннӗ чӗрере вӑйӑм чакрӗ.

Автор пурнӑҫӗнче кӗтмен ҫӗртен сиксе тухнӑ хӑрушӑ инкек лирика геройӗн шухӑш-туйӑмӗ урлӑ палӑрать. Поэт идеалӗ пӗрремӗш хут тенӗ пек ҫылӑхлӑ ҫӗр ҫине анса ҫуначӗсене ӗнтет. Чӑнах та, гений идеалӗ сывлӑш пӳлӗнмелле ҫӳллӗше ҫӗкленсе, кулленхи «хура» пурнӑҫ прозинчен уйрӑлса, тутӑх тивми таса ӗненӳпе пурӑнман-ши малтанхи тапхӑрта?! Ҫутӑ малашлӑха ӑнтӑлни, романтизмла юрату телей кӳреймерӗҫ пулсан та, чылай вӑхӑт хушши чун апачӗ пулса хавхалантарса тӑчӗҫ. Тепӗр тесен гений «телей» пӗлтерӗшне те обыватель пек курмасть, уншӑн асап кӳрекен юрату туйӑмӗ те сывлӑш пек усӑллӑ — ҫунакан чӗрене тӗлкӗшекен сурансем канӑҫ памаҫҫӗ, шанӑҫсӑрлӑх авӑрне чӑмтараҫҫӗ, тепӗр самантран вӑл каллех тӳпене ҫӗкленет, шанчӑкпа тулать, ҫак вӗҫӗмсӗр улшӑнура чун ҫӳллӗшӗ шайлашӑнать, шалти килӗшӳлӗхне упрать.

Пӗр сӑмахпа каласан, «Йывӑр шухӑшсем» сӑвӑра ҫакна асӑрхатӑн: лирика геройӗн тӗнче туйӑмӗнче малашлӑха ӑнтӑлакан ҫунатлӑ ӗмӗт чакса ларать, унта иккӗленӳ йӑл илет, уйрӑмах «чӑваш чӗлхин хӑвачӗ чакни», «чӑваш поэчӗсем сас паманни» «хуйхӑллӑ чӗрери вӑя чакарать». Чӑн та, татӑклӑ хурав памасть-ха лирика геройӗ хӑй лартнӑ риторикӑллӑ ыйтусем ҫине, анчах та чунне сивӗ ҫапнине туять вӑл. Енчен те ҫак иккӗленӳ сӑлтавсӑр мар пулсан?

Чăваш чĕлхи пĕтес тĕк е чăваш çыннине сарлака çĕр çинче çухалма пӳрнĕ пулсан?

Ват асатте çиллĕ тăвăл витĕр
Мана масар çине кайса чиктĕр.
Тăпрам çинче ĕмĕр çил улатăр,
Ватă йывăççене суллатăр.
Вилтăпри вĕлтĕрен тăхăнтăр,
Пуçăм çинче çĕлен шăхăртăр.

Авалтан килекен йăла, çут çанталăк килтерĕшлĕх вăл — ватăлса вилнĕ аслашшĕне мăнукĕ пытарни, кунта вара?

«Йывăр шухăшсем» сăвă — Çеçпĕлĕн пултарулăх шыравĕнчи çĕнĕ тапхăрăн пуçламăшĕ. Самана урапин кустăрмисем хăйсен еккипех кусаççĕ-ха, вăхăт летопиçне çыракансем те сахал мар. Çеçпĕл вара çак сăвăран пуçласа тулашри тĕнчене мар, ытларах чун-чĕрин хусканăвĕсене тишкерсе уçса пама пуçлать, ку вăл — философилле туртăм таранланнин палли. Лирика геройĕ пурнăçпа вилĕм тупсăмне, ырăпа усалăн шалти сăн-сăпатне уçăмлăнрах ăнкарса илме тăрăшать, мĕншĕн тесен чылай чухне вĕсем чăн-чăн питкуçне маскăпа пытарнине ăнланса илет. Çеçпĕл хăйне арестленĕ кунсенче хăйпе пĕр партире тăракан ĕçтешĕсем хушшинче икĕ питсемпе карьеристсене те, вăрттăн çыртакансемпе элек-челекпе сапăрланакан пуçлăхсене те, хăмпăланма юратакан бюрократсене те тата ыттисене те курса тăранать, вĕсен йĕрĕнтермĕш тыткаларăшĕ пирки Червякова патне пĕрре çеç мар çырать. Ăманла шуса пурăнма çуралнă, çав вăхăтрах çунатсăр вĕçме хăтланаканскерсем тĕрлĕ ирсĕр мелсемпе,ултавпа, пĕр-пĕрне чавсапа хирсе, карьерăшăн тапаçланаççĕ, сутаççĕ, асав шăлĕсемпе хăмсараççĕ. Тӳрĕ чунлă Çеçпĕл, халиччен вĕсемпе «çамкапа çапăнса» курманскер, çынсене ытлашши шаннишĕн, нумай вăхăт хушши çӳл тӳпере йăва çавăрнă ĕмĕтсемпе хавхаланса пурăннишĕн ӳкĕнет, «идеалист» тет хăйне.

1920 çул вĕçĕнче кун çути курнă сăвăсенче («Чăваш чĕлхи», «Чăваш ачине», «Чăваш арăмне») поэт чăвашлăх темине нихçанхинчен тарăнрах та сулмаклăрах хускатать, Октябрьти революци чăваш пурнăçне тĕпрен çĕнетсе улăштарасса çирĕп шанать тата «хастарлă, хыт утăмлă» пулма чĕнет «çĕршывăн хастар ачисене». Анчах та ку вăхăталла ĕнтĕ Çеçпĕл пуçĕ тăрринче хура-хаяр пĕлĕтсем капланма тытăннă пулнă.

Тĕнчекурăм чикки çын ӳссе, аталанса, çулланса пынăçемĕн сарăлать, пурнăç опычĕ, тĕве курпунĕ пек, ăс-хакăл çӳпçине пуçтарăнса кĕрет. Çеçпĕлĕн ытла та кĕске кун-çулĕпе синкерлĕ шăпи пире çĕнĕрен те çĕнĕрен XX ĕмĕр пуçламăшĕнче тĕнчене кисретнĕ юнлă лару-тăрусемпе пăлхавăрлă самана патне тавăраççĕ, вăл шутрах революцилле сăвăç шыранă (уншăн пуçне хунă) чăнлăх пирки шухăшлаттараççĕ. Чи малтисен ретĕнчи Çеçпĕл çеç мар, миллионшар çын (чухăн халăх) революци çуратнă шанчăкпа хавхаланса çĕнĕ пурнăç тума ĕмĕтленеççĕ. Анчах та «Ирĕклĕх», «Танлăх», «Тăванлăх» текен ăнлавсем хальлĕхе телей йывăççин çимĕçĕсем мар, çеçкисем çеç-ха (вĕсене шартлама сивĕ те, ĕнтсе яракан шăрăх та пĕтерме пултарнă), апла пулин те вĕсем çынсен чĕрисенче историре пулманла ынатлă кăмăл-туйăмпа шанчăк, хавхалану çуратнă. Пулма пултарать-и çынсен хутшăнăвĕнче е çут çанталăкра пĕртанлăх? Кун пирки иккĕленекенсен чунĕ, поэт калашле, чăлах е вĕсем суккăр. Тĕнчери пролетариат лозунгĕсен чăнлăхне тăрăлнă ăспа тишкерме, пур енлĕ хак пама Вăхăт çеç пултармалла, анчах та революцилле улшăнусен ӳсĕртсе яракан, çаврăна тăран юхăмĕпе сывлăшĕ ыткăнуллă утăмпа малаш ĕмĕте кăна тĕллевлеççĕ, чарăнса тăрса сывлăш çавăрса илме те парасшăн мар. Ирĕклĕхĕн илĕртӳллĕ лозунгĕсем Анăçра, классем хушшинчи юнлă çапăçура шăранса-туптанса, пролетариат ялавĕ çине «ылтăн» сас паллисемпе çырăннă. Социалла-экономикăлла çирĕп никĕссĕр «çĕршыв пит-куçĕ çĕнелмесĕр», вĕсем хăйсен вăйне-чăнлăхне витĕмлĕ ĕнентерейменççĕ. Паллах, пире паян, революци пулнăранпа çĕр çула яхăн иртнĕ хыççăн, унран тымарланнă «телей йывăçĕ» мĕнлемĕнле çимĕç çитĕнтерни витĕр курăнать. Çакă вăл аслă чăваш поэчĕн трагизмне тарăнрах ăнкарса илме май памасть-и вара. Çеçпĕл хăйĕн кĕске ĕмĕрне утса тухиччен маларахах идеалĕпе пурнăç юхăмĕ-сулăмĕ пĕр çулпа пыманнине, кăшт каярахпа вĕсем пачах хире-хирĕç сулăмпа кайнине сывалми аманнă чун-чĕрипе туйса илет. Акă мĕне пула кăшлама пуçлаççĕ ăна «йывăр шухăшсем». Нумай-нумай иллюзипе сывпуллашма ĕлкĕрнĕ ĕнтĕ поэт, анчах та, иккĕленет пулин те, чăвашăн пуласлăхĕ çук тесе татса каламасть-ха: «Е ют чĕлхесем ӳснĕ майĕ чăваш чĕлхи çĕтсе, пĕтсе кайĕ?». Çак чуна çиекен ыйтăва вăл 1921 çулхи авăнăн 20-мĕшĕнче çырнă «Хурçă

шанчăк» сăввинче те тарăн ĕненӳпе хуравлама вăй çитерет-ха. Апла пулин те, хăй калашле, «паянтан» («Йывăр шухăшсенчен» пуçласа эппин) лирика геройĕн чун-чĕринче тăнăçлăхпа килĕшӳлĕх, йăваран писнĕ кайăк пек, ĕмĕрлĕхех çухалать тейĕн.

Çурхи кунсем çывхарнă май тин çеç хăрушла инкек танатинчен çăлăнса тухнă поэт шалти суранĕсем кăштах пирченине, тĕлкĕшме чарăннине туять, çине-çинех «Эп вилсен», «Чăваш поэтне Ахаха асăнса» (1921, пуш); «Чăн чĕрĕлнĕ» (1921, ака); «Или! Или! Лима савахвани!..» (1921, çуркунне) сăвăсем çырать. Çак хайлавсене шăнăрлакан тĕп шухăш вăл — пурнăçпа вилĕм, çав икĕ вăй-пулăмăн ĕмĕрхи кĕрешĕвĕ тата çут çанталăк панă талант тивĕçĕ. Лирика геройĕн куç курăмĕнче философилле тарăнлăх палăрать, сăвăсен кĕвви-çемминче мажорлă сăрсем çиеле тухаççĕ, вĕсем вилĕмпе çыхăннă хура тĕсе хуплаççĕ. «Эп вилсен» сăвăри лирика геройĕ вилĕмĕн шелсĕр витĕмне халăхшăн, килес ăрусемшĕн пултарнă пархатарлă ĕçпе çĕнтерме май пуррине ĕненет. Ирĕке тухнă культура аталанăвĕ пулăхлă та малашлăхлă çул çине тăни ăна тĕрек парать, вăл халăх ăс-хакăлĕпе пуянлăхĕн тутăх тивми çӳпçине ятран çĕнĕ пахалăхсем хывнине, хăйĕн тӳпи те пуррине туймасть мар. Çакна тарăн ăнланни лирика геройне наци культурин калăпăшпе шухăш çавăрма, унăн малашне шанчăка хывма май парать. Пурнăç кĕске самант çеç, ӳнер çулĕ-ĕмĕрĕ вăрăм тенĕ латинянсем. Çеçпĕл лирикин геройĕ элчелĕ çитсен хăйне Шупашкарăн çӳллĕ тăвĕ тăрне тирпейлесе пытарма ыйтать, «ман çинчен пĕтĕм çĕршывăм курăнтăр вара» тет. Вăхăт иртнĕçемĕн чăваш чĕлхине хăват кĕресси, вăл ыттисемпе тан пуласси ăна пĕрре те иккĕлентермест.

| | |
|---|---|
| Пулĕç ĕмĕрлĕх илемлĕ<br>Сăвă-юрăсем.<br>Пулĕç аслă, çивĕч ăслă<br>Кĕнекеçĕсем.<br>Савнă çĕршывăмăн пулĕç<br>Чаплă сăвăççем, | Чаплă та илемлĕ çырĕç<br>Ун чухне вĕсем.<br>— Чăваш сыннин чĕлхи чухăн, —<br>Теме хăякан<br>Пулĕ-ши ун чух, пĕлесчĕ,<br>Кураясчĕ ман! |

Çеçпĕл тăван культура астăвăмне вăхăт тусанĕ хуплаймасса шанса тăрать. Лирика геройĕн хурçă пек пиçĕ те çырлахуллă кăмăлĕ сăвва витерекен тĕп шăнăр кунта. Тăван халăха суйласа илместпĕр, Çеçпĕл вара чи синкерлĕ кунсенче те, уяр самантсенче те унпа пĕрле пулнă. Вăл пĕрре

те ӳпкелешмест, тӗрӗсмарлӑха тӳссе ирттерме тивнӗ пулсан та, нӑйкӑшмасть. Ахальтен мар унӑн юратнӑ литература геройӗсенчен пӗри Войничӑн Пӑванӗ пулнӑ. Чи юлашки сӑввисенчен пӗринче ҫеҫ («Кун тӗпӗнче», 1922, ҫу, вырӑсла) поэт кун пирки кӑшт систерсе тенӗ пек асӑнать: манӑн «яшлӑха такамсем таптанӑ» тет. Чӗрери хӗрхӳ туйӑмсем лирика геройне шухӑша яраҫҫӗ: пурнӑҫӑм, пурнӑҫ, хӑш вӑхӑтра сан пылна эрӗм тути ҫапрӗ-ши?! Анчах та ку йӗркесем Ҫеҫпӗл пурнӑҫӗнчи чи юлашки тапхӑрта, Остерта пурӑннӑ кунсенче, «пӗрех хут пурнӑҫа пӑвас мар-и» тесе канӑҫсӑррӑн шухӑшласа асапланнӑ вӑхӑтра ҫуралнӑ. Хура элчелӗн ӗмӗлкине ҫывӑхра туйнӑ вӑл ҫав самантсенче.

«Чӑваш поэтне Ахаха асӑнса» сӑввӑн тӗп шухӑшӗ — «Тӑван ҫӗршыв чӗлхин малашнехи ҫинчен шухӑшлани». 1921 ҫулхи пуш уйӑхӗнче Ҫеҫпӗл Наркомнацӑн Чӑваш облаҫӗнчи кӗнеке куҫарса кӑларакансен комиссинче ӗҫлеме тытӑнать. Кун умӗнхи ӗҫри (ревтрибуналпа юстици пайӗ) ҫыхӑнусем тӗпренех татӑлнӑ хыҫҫӑн поэт чӗрине шанчӑк кӗртсе ӑна пурнӑҫ патне тавӑраканӗ Червякова пулать; ҫулталӑка яхӑн ҫыру ҫӳретмесӗр, пӗр-пӗринчен нимле хыпар та илмесӗр пурӑннӑ хыҫҫӑн вӗсем каллех пӗрне-пӗри «тупаҫҫӗ». Хавхалану хавалӗпе ҫунатланнӑ Ҫеҫпӗл пуш уйӑхӗнче кашни кун Чӗмпӗре ҫыру ӑсатать, тӳсӗмсӗррӗн хурав кӗтет, хӑйне пӗчченлӗх туйӑмӗ пусмӑрлани пирки ҫырать. Акӑ мӗне пула куҫару комиссине ӗҫе вырнаҫнӑ сӑвӑҫ чӗрӗлсе пыракан чӑваш ҫырулӑхӗн ӗҫне тарӑнрах та сулмаклӑнрах кӳлӗнет. Вӑл илемлӗ литература анинче палӑрмалла ӗҫ тунӑ е шанчӑк паракан кашни ята асра тытнӑ, ҫанӑ тавӑрса вӑй хума хавхалантарнӑ, вӗсемпе ҫыру урлӑ ҫыхӑннӑ. Литература «хуҫалӑхне» тирпейлӗ те витӗр куҫпа пӑхса ҫаврӑнакан тӗплӗ хуҫа пек, вӑл кашнинченех чи пысӑк виҫепе ыйтать, чӑваш совет поэзийӗн антологине пичетлес тӗллевпе уйрӑм авторсен сӑввисене пухма пикенет.

«Эпӗ «Сӑвӑсен пуххине» кӑларма тытӑннӑ», — ҫырать вӑл Ваҫанкка патне. «Сан сӑвӑсенчен пуҫне хастарлӑ сӑвӑсем ҫукпа пӗрех. Ваҫанкка юлташӑм, хӑвӑн мӗнпур сӑвва ярччӗ эс «Сборник» валли». Ҫак ҫырурах Ҫеҫпӗл хӑйне чылайранпа канӑҫ паман ыйтӑва хускатать: «Чӑваш халӑхӗн пуласси шӗн Чӑваш чӗлхи ячӗпе Чӑваша юратса тапакан чӗ-

реллӗ ҫынсене пухса ушкӑн тума кирлӗ пек туйӑнмасть-и?». Ҫак йӗркесенче тӑван халӑхӑмӑр ятне мӗншӗн виҫӗ хутчен пысӑк сас паллипе ҫырнине ӑнлантарма кирлӗ мар: чӑваш идейине шыракансен чӗрисенче хӗлхем чӗртесшӗн вӑл. Ҫавӑн пекех пултаруллӑ сӑвӑҫ тата трагик Георгий Тал-Мӑрса патне хайлавӗсене ыйтса ҫыру ярать вӑл.

Ҫав ҫӳллӗ шайри талантсен йышӗнче Иван Ахах та пулнӑ, анчах та вӑл ытла ир ҫӗре кӗнӗ. Ҫеҫпӗл сӑввинче талантлӑ поэтӑн шӑпи синкерлӗ пулнине асра тытса, вӑл ҫырнисем халӑх асӗнче упраннине, вӗсем чӑваш ҫырулӑхне пархатарлӑ витӗм кӳнине палӑртать. «Пытарчӗҫ ҫӗр айне чӑвашӑн ӗмӗтне», апла пулин те сӑввӑн лейтмотивӗпе тӗп шухӑшӗ оптимизмла туйӑм ҫуратаҫҫӗ.

Ҫурхи кунсем каллех ҫутатрӗҫ тӗнчене,
Тӗнче симӗсленет... Хӗвел йӑлтӑр... Уяр.
Анчах сана пӗрех: сана — вилнӗскерне —
Ҫуркуннехи тӗнчен илемӗ кирлӗ мар...

Ҫыврах, тӑван поэт!.. Сӑвву кӗввисене,
Сан сӑмахусене никам та манас ҫук.
Чӑваш чӗлхи пур чух тӑван поэт ятне
Вӗри, кӑвар чунсем савма пӑрахас ҫук.

«Эп вилсен» сӑвӑри пекех, кунта та тӗпре пӗр тарӑн шухӑш: чӑваш халӑхӗ иртнӗ ӗмӗрсенче ҫыруллӑ культура ҫӳпҫине ӑс-хакӑл пахалӑхӗсемпе тултарма пултарайман; паян вара, цивилизаци ҫулӗпе утакан ытти нумай-нумай халӑх пекех, хӑй ҫырулӑхне аталантарма пултарать, Ахах Иванӗ пек кӑвар чӗреллӗ сӑмах ӑстисене ҫитӗнтерет, халӑх вӗсен пархатарлӑ ӗҫне хаклать, сӑваплӑ ячӗсене упрать. Ҫӗнелекен культура хӑйӗн ҫитӗнӗвӗсемпе (ҫыруллӑ ӑс тӑвӑмӗпе) пурне те манӑҫа кӑларассишӗн пӗр самант та канмасӑр ӗҫлекен вилӗмӗн хура чатӑрне сирет, ӗмӗрлӗх ҫутипе ҫутатать. Паллах, Ҫеҫпӗл хӑй пурнӑҫӗн вӑрӑм мар ҫулӗ пирки те шухӑша кайнӑ, ҫавна май ҫак таранччен мӗн пултарнине вӗтӗ ала витӗр кӑларнӑ, енчен те паян вилес тӗк (суицид ун чунӗнче пирчеми суран пулнӑ) мӗнле кивелми кӗвӗ-юрӑ тӑрса юлӗ?! Хӑйӗнчен хӑй ҫав тери нумай ыйтакан генилле сӑвӑҫ пурнӑҫ ҫулӗ ҫинчи чӑрмавсене Прометей чӑтӑмлӑхӗпе ҫӗнтерсе пынӑ, анчах та лару-тӑрусемпе ҫынсен чунсӑрлӑхӗ ун ҫуначӗсене ҫыхса тӑраҫҫӗ, талант сассине хупласҫӗ. Ӗнтӗркенӗ тӗнчене чӗрери кӑварпа ӑшӑта-

кан Çеçпĕл тăван культурăмăрти вырăнĕпе миссине шалтан туйса тăнă, Турри çапла çырнă тейĕн. «Или! Или! Лима савахвани!..» сăвăра автор христиан тĕнĕн çирĕпленнĕ сăнарлăх тытăмĕ-стилистикипе усă курать. Ку халăхăн авалхи йывăр кун-çулне витĕмлĕ те курăмлă ӳкерсе кăтартма май парать. Хĕрес çумне пăталанă чăваш çĕршывĕн сăнарлă ӳкерчĕкĕ Христос сăнарĕпе тачă çыхăннă ассоциацисем çуратать. Кунашкал сăнарлăх мелĕпе поэт «Катаран каç килсен...» сăввинче те меллĕ усă курать.

Пăталарĕç тăван çĕршыва.
Эп, ăна виличчен саваканĕ,
Çăлăнăç патнелле йĕр хывап.

Асап хĕресĕ кунта аллегорилле ӳкерчĕк: тĕпрен илсен, вăл тӳсмелле мар йывăр пусмăр витĕр ĕмĕрсем тăршшĕпе утса тухнă чăваш çĕршывĕн шăпи; çав вăхăтрах «çăлăнăç патнелле йĕр хывакан» лирика геройĕ хăйĕн сăваплă тивĕçне Христос кун-çулĕпе çывăх курать: вăл хăй те çĕршыв ирĕклĕхĕшĕн пурнăçне пама хатĕр. Вăл иртнĕ саманара та пурăнса курнă çын: «Таврара хурахсем ахăраççĕ, тӳресем кăмăллăн кулкалаç». Çăлăнăç çулне лирика геройĕ революцире курать:

Ман çĕршыв хĕресне аçа çапрĕ,
Куçне уçрĕ çĕршывăм, пăхать:
Хăй пекех мĕскĕнсен йышлă çарĕ
Ун патне юрласа çывхарать.
Çитмĕл çич чĕлхепе саламлаççĕ,
Ыталаç, чуптăваç пĕр-пĕрне.
Сӳтĕл, татăл, асап саламачĕ,
Чура мар эпир тек ĕмĕрне.

Çак пысăк мар аллегорилле сюжетпа усă курса автор историлле масштаблă лару-тăрусене сăнласа кăтартма пултарнă. Поэт шухăшлавĕн сулмаклăхĕ — чăн малтан куçа курăнакан ӳкерчĕксен градацийĕнче, динамикăлла хусканура, каласа панинчен ытларах — улшăнсах тăран ĕç пулăмсенче. Ĕмĕрхи пусмăртан хăтăлса ирĕке тухнă чăваш çĕршывĕн чĕрĕлекен сăн-сăпачĕ «Чăн чĕрĕлнĕ!» сăвăра тата та анлăрах куç умне тухать. «Çĕршыв хĕресне аçа çапнă» революци сăвăра пулса иртнĕ факт пек палăрать, анчах та çынсен чун-кăмăлне çĕнетекен, пусмăр ĕмĕрĕсен юшкăнне тасатакан улшăнусем ун пек хăвăрт пулса иртеймеççĕçке-ха. Лирика геройĕ пурнăç хăй тĕллĕн çĕнелмессине,

уншӑн кашни чӑвашӑн — ваттисен те, яшшисен те — кар тӑрса чӑрсӑррӑн тӑрӑшма кирлине аса илтерет. «Эй, ват ҫынсем! Авал чӑваш асаплӑ пулнине ҫамрӑксене каласа парӑр: тӑван ҫӗршывӑн капӑр чӗлхине ялан савма хушса хӑварӑр». Лирика геройӗ романтикӑлла ҫӗкленӳпе пӗтӗм тавралӑха, «уйсемпе варсене», «тӑван ҫӗршыв вӑрманӗсене», «чечек ҫеҫки тӑхӑннӑ улӑхсене» чӑваш чӗлхи вилӗмрен чӗрӗлни ҫинчен хыпарлать. Иртнӗ саманара вӑл тӗкӗнсех ҫитнӗ пулнӑ, паян вара ун хӑватне, янравлӑхне, илемне уҫса тӗнче умне кӑлармалли майсем ҫителӗклех. Ӑнсӑртран мар ку сӑвва «Чӑн чӗрӗлнӗ!» ят панӑ, вӑл ҫуркунне килекен Мӑнкун уявӗпе ҫыхӑнни иккӗлентермест. Авторӑн генилле ӑсталӑхӗпе тарӑнлӑхӗ ҫакӑнта та палӑрать: вӑл тӗн уявӗпе (Христос чӗрӗлнӗ!) культура идейине (чӗлхе чӗрӗлӗвӗ) пӗр тӗвве ҫыхма пултарнӑ, ҫавна пула сӑввӑн тӗп шухӑшӗ ансат та уҫӑмлӑ.

Юлашки икӗ сӑвӑра хавас та ҫӗкленӳллӗ кӑмӑл, чӗнӳллӗ пафос, социалла тата нацилле пусмӑр сӑнчӑрне татса ывӑтнишӗн хавхаланни малти планра палӑраҫҫӗ. Кунпа пӗрлех лирика геройӗ хӑй вӗҫӗ-хӗррисӗр анлӑ каҫалӑк умӗнче тӑнине туять, кашни чӑваш ҫыннине ҫакна чӗрепе те, ӑс-тӑнпа та тӗплӗнрех ӑнкарса илме йыхӑрать. Унсӑрӑн ҫывӑрса юлма пулать, ыран кая юлать, культура анинче паян, ҫак самантра тар юхтарса ӗҫлес пулать: нумай вӗренмелле, чӑваш ҫӗрӗ ҫинче хамӑра хамӑр хуҫа пек туйма-тыткалама хӑнӑхмалла, иртнӗ саманаран юлнӑ чуралӑх каяшӗсенчен хӑвӑртрах хӑтӑлмалла т.ыт.те. Пӗр самантра туса пӑрахмалли ӗҫсем мар кусем, апла пулин те Ҫеҫпӗл ҫав тӗллевсене пурнӑҫа кӗртесшӗн пуҫне хума та хатӗр. Тӳсӗмсӗрлӗх кӑшлать поэта шалтан, хӑйне патшалӑхпа культура йӗркелӗвӗн явалӑ ӗҫ вырӑнӗсенчен ирӗксӗр пӑрни, сӑлтавсӑрах шанчӑкран кӑларни иккӗленӳллӗ те пусӑрӑнчӑк туйӑмсем ҫуратать, ӗмӗтсене хуплать.

Анне чӗлхине, чӑваш ҫӗршывне чун-чӗрипе ӗмӗрлӗхе парӑннӑ сӑвӑҫ ҫак шалтан ҫунтаракан юратӑва Крыма хӑйпе пӗрле илсе тухса каять. Каялла, ватӑ Шупашкара, таврӑнма пӳрменнине пӗлмест вӑл, паллах. Червякова патне янӑ юлашки ҫырӑвӗсенчен пӗринче (1921, ҫу уйӑхӗн 19-мӗшӗ) вӑл «ыран Крыма тухса каятӑп» тесе ҫырать. Инҫетри Евпатори, Хура тинӗс, кӑнтӑр хӗвелӗпе чечеклӗ ҫӗрӗ чирлӗ сӑвӑҫ чунне пурнӑҫ хӑвачӗ вӗрсе кӗртеҫҫӗ, сиплеҫҫӗ, ҫӗнӗ

туйӑмсем ҫӗртеҫҫӗ. Евпаторире ҫырнӑ сӑвӑсен ярӑмӗ — Ҫеҫпӗл поэзийӗн шӑранса, тӗнче литературин ылтӑн ҫӳпҫине ӗмӗрлӗх кӗрсе юлмалли тӗслӗхсем.

Суя оптимизма нихҫан та йышӑнман сӑвӑҫ ҫӗринче хурҫӑ шанчӑк ҫӗнӗрен арасланать. Тинӗс, хӑй каларӑш, «сӑвӑҫӑн юнне-чунне вӑйлӑ хумлӑ юхӑмпа, кӗрешме чӗнен саспа нишлӗхлӗхсенчен тасатать». Кунсерен тинӗсӗн вӑйхӑватне курса киленсе, ӑша илсе, хавхаланса Ҫеҫпӗл чун тӗпӗнчен тухакан сӑвӑсем шӑратса кӑларать: «Катаран каҫ килсен...», «Шӑршлӑ каҫ йӑвӑрри...» (1921, ҫӗртме), «Чӑваш! Чӑваш!..», «Ҫӗн Кун аки», «Тинӗсе», «Инҫе ҫинҫе уйра уяр...» (1921, утӑ). Чи юлашкинчен тинӗспе сывпуллашса ӑна «Экспромт» сӑвӑ (1921, ҫурла) халаллать. Чуна ыраттаракан шухӑшсем ку сӑвӑсенче те чӑваш пурнӑҫӗпе, чӑваш чӗлхипе культурин пуласлӑхӗпе, иртсе кайнӑ ылханлӑ вӑхӑт сӑнарӗпе ҫыхӑннӑ. Тӗслӗхрен, «Катаран каҫ килсен...» сӑввӑн тӗп шухӑшӗ ҫеҫ мар, уйрӑм сӑнарӗсен тытӑмӗ те маларах ҫырнӑ «Или! Или! Лима савахвани!..» сӑвӑпа тӳрремӗнех ҫыхӑннӑ. Кунсӑр пуҫне «хӗрлӗ юнлӑ хӗрес ҫумне» пӑталанӑ чӑваш ҫӗршывӗн кун-ҫулӗ (асап сӑнчӑрӗ — ирӗклӗх) пӗрешкел сюжет урлӑ сӑнарланать.

Маларах ҫырнӑ сӑвви ҫырлахтарсах ҫитереймен тейӗн автора, вӑл тимӗртен (малтанхи сӑвӑран!) чӗр кӗмӗл пек таса металл шӑратса кӑларать, унтан чеканка мелӗпе вилӗмсӗр йӗркесем ҫӗнӗрен ӑсталать. Кунхинче автор социализм идейисем ҫине тӳррӗмӗн таянмасӑрах (сӑнарлӑ ӳкерчӗксемпе) философилле тарӑн пӗтӗмлетӳсем тума пултарнӑ. Чӗлхе вӑйхӑватне туйни поэта сӑмах картине пӗрсе (кӗскен) ҫырма май парать, ҫавна пула «Катаран каҫ килсен...» сӑвӑ, шухӑшӗпе нумай тарӑнрах пулин те, калӑпӑшӗпе икӗ хут кӗскерех пултарӑннӑ. Кунсӑр пуҫне сӑввӑн мӑнаҫлӑ ритмӗпе тӳлек кӗвви-ҫеммине лӑпкӑ ҫанталӑкра ҫырана пӗр тикӗссӗн ҫупӑрлакан «ачаш» хумсен сасси-хусканӑвӗ сӑрхӑнса кӗнӗ тейӗн. (Шторм вӑхӑтӗнчи тинӗс хавалӗ вара «Тинӗсе» сӑввӑн ӑшчикӗпе янравлӑхне витӗрех ҫапнӑ.) Поэт сӑнланӑ ӳкерчӗксем скульптура кӗлеткине ҫывӑх, ку вӑл — сайра тӗл пулакан курӑмлӑ шухӑшлав палӑрӑмӗ. Пулса иртнӗ ӗҫ-пулӑмсене сӑмахпа каласа парас вырӑнне автор, сцена ҫинчи декорацие улӑштарнӑ пек, чӗрӗ сӑн-пулӑмсем куҫ умне кӑларса кӑтартать. Пӗр ӳкерчӗк хыҫҫӑн тепри чӗрӗлсе тӑрать. «Ӗлӗкхи

ĕмĕрсен ĕмĕлки-кĕлетки» хушшинче «чăваш çĕрĕн» сăнарĕ курăнса каять; «ман çĕршыв хĕрлĕ юнлă хĕрес çумĕнче çакăнса, çыхăнса тăраять»; «кăмрăкланнă асаплă чăваш чĕринчен юн тумлать»; «чăваш пуçĕ çинче хуп-хура сивĕ кун шăхăрса ахăрать пур енчен». Акă вăл тулли ӳкерчĕк, пур енчен те пулса çитнĕ скульптура композицийĕ, поэзи майĕ-мелĕсем скульптор кăтартайманнине те палăртма вăй çитереççĕ, сăмахран, «сивĕ кун шăхăрса ахăрнине». Е тата историк ĕçне илес пулсан, вăл çак сăнарланă ӳкерчĕке пĕрсе-хĕссе кĕртсе вырнаçтарнă истори материалне темиçе томлă кĕнекесĕр çырса кăтартайман пулĕччĕ-и тен? Акă гений ултă сăвă йĕркине мĕнле тарăн шухăш, историлле хускану-улшăнусен мешехине «хăртаса» хывать:

Çĕр иртсен — ирхи кун хĕвел тухăç енчен
Тĕнчене уяртса, сывлăма
Шăрçапа шăратса кĕмĕл саслăн килсен —
Ман юратнă çĕршыв вилĕмрен чĕрĕлни,
Вăл асаплă хĕрес çумĕнчен çăлăнни
Пур енчен те савать куçăма.

Пин çул хушши шуса иртнĕ, вăхăтăн çăра тĕтрипе хупланнă событисем чĕрĕлсе тăраççĕ: революци вара Çеçпĕлшĕн «çĕршыва вилĕмрен чĕртекен», «ĕç çыннисене ирĕке кăларакан» историлле хăватлă юхăм-хускану. Апла пулин те халь ĕнтĕ поэтăн илемлĕ шухăшлавĕнче идеологи сĕрĕмĕ пачах сисĕнмест теме те пулать. Евпаторире çырнă «таса» поэзи ярăмĕ çакна çирĕплетсе парать те ĕнтĕ. Революци чăваш çĕршывне те политикăлла ирĕклĕх кӳнĕ, патшалăх тытăмне йĕркелес ĕç кунта та хĕрсех пырать. Революцилле улшăну-аталанăвăн куçăмлă тапхăрĕ çĕнĕ тĕллевсем палăртать — ирĕке тухнă çĕршывра хуçаланакан чуралăх туйăмĕпе тĕттĕмлĕхе пĕтересси, кашни чăваш чун-чĕринче хастарлăх хĕлхемĕсене хускатасси, поэт калашле, «Çĕн кун» акине кар тăрса кӳлĕнесси. Анчах та çынсенче пуçарулăх çитейменни, сӳрĕклĕх, «Çĕнĕ кун» чӳречерен шакканине нумайăшĕ илтейменни патшалăх ертӳçин шайĕ-калăпăшĕпе шухăшлакан Çеçпĕле шутсăр канăçсăрлантарать, ăна пĕтĕм Раççейре çĕкленӳ хускалнă тапхăрта (телей валеçнĕ чух) чăваш çынни ура сырса тăрса юлассăн туйăнать. Вăл романтизмла тӳсĕмсĕрлĕхпе çав хăрушлăха астутарать, шелсĕррĕн йĕплет, питлет, ыйхăран вăранма чĕнет е хĕртнĕ

тимĕрпе «çунтарса илет». Çак кăмăл-туйăм хусканăвĕ-улшăнăвне поэт романтизм сăррисемпе уçса палăртать. Сăмахран, «Шăршлă каç йăвăрри...», «Чăваш! Чăваш!..», «Çĕн Кун аки» сăвăсем ку енĕпе уйрăмах кăтартуллă. Ытларах та калама пулать. Çеçпĕл лирики романтизм поэтикипе стилистики çинче никĕсленет, романтизмла шухăшлавпа тĕнче туйăм поэта пурнăç пулăмĕсемпе тĕрлĕ енĕсене, чун хусканăвĕсене çав тери хиврен контрастласа, хире-хирĕç тăратса е танлаштарса уçса палăртма май парать. Акă епле курать вăл «киввипе çĕнни» хушшинчи кĕрешӳ процесне, иртнĕ саманаран тăрса юлни, кивĕ пурнăç сăн-сăпачĕ инçетрен вутланса килекен «çĕн сăмах» витĕмĕпе халь-халь хупланма е пăчланма тивĕçлĕ, унăн пуласлăхĕ çук.

Шăршлă каç йăвăрри,
Кивĕ çĕр кăкăрри
Вут хыпса, кĕл пулса вĕçтĕр-и?

Çĕр çунса çĕнелсен
Çĕр çине мал енчен
Çĕнĕ сăн çиçĕмле çиттĕр-и?

Мĕнле «çĕнĕ сăн» пирки калать-ха поэт тата мĕнле çунтарса тасатакан хăват çинчен сăмах пырать ку йĕркесенче? Паллах, ку хальлĕхе Проект е ĕмĕтре тĕрĕленекен символла сăнар, пĕр илемлĕ, хăватлă, персонификациленĕ революцин улăпла сăн-сăпачĕ, вăл хăйĕн ĕçне тин пикеннĕ-ха. Романтизмла символласа ӳкернĕ лирика геройĕ çав «чĕрере Вут Сăмах чĕртекен» Çĕн сăна тӳсĕмсĕррĕн кĕтет, ку вăл уншăн — Пурнăçпа Вилĕм ыйтăвĕ. Лирика геройĕн шалти мăнаç тĕнчине Çеçпĕл хăйне канăç паман шухăшсемпе чун ыратăвне, хăватлă ĕмĕчĕсемпе хурçă шанчăкне хывать. Пирĕн умра калама çук пысăк масштаблă пĕтĕмлетӳ, халăхăмăр асĕнче ĕмĕрсем тĕпĕнчех ӳтленсе тĕвĕленнĕ, калăпланнă Улăп сăнарĕ каллех куç умне тухать. Абстрактлă Чăнлăха шырассинчен пăрăнса философие «çĕр çине» антарнă, пурнăç ыйтăвĕсемпе тачă çыхăнтарнă Ницшен вĕрентĕвне те манма юрамасть. «Сверхчеловек» тенĕ ăна нимĕç ăсчахĕ, XX ĕмĕр пуçламăшĕнче унăн идейисем Раççейре те çав тери актуаллă пулса тăнă. Сăмахран, М. Горький калăпланă Данко сăнарĕнче ун витĕмĕ куç кĕрет. Революци чĕртсе тăратнă çĕнĕ чăвашăн улăпла сăнарĕнче Çеçпĕл халиччен пулман вăй-хăват çăлкуçĕ, чун пиçĕлĕхĕ, хăюллă

талпăну курасшăн (поэт идеалĕ!), çав пахалăхсене мала лартать. Анчах, шел те, унашкаллисем пурнăçра йышлă марçке-ха. Хăюсăррисемпе халсăррисем, пурнăç тĕллевне ăнкарайманнисемпе çутта тухайманнисем те миллионĕпех-çкеха, вĕсен психологийĕпе тĕнчекурăмне, тимĕре шăратса тасатнă пек, пĕр самантрах «çĕнетме» май килмест.

Çĕн тĕнчен кăварне,
Çĕнĕ сăн çуттине
Тĕллесе пăхайман куçсене —

Çĕнĕ сăн кăварри,
Çĕн хĕвелĕн ури
Пĕр чиксе шăтарса илтĕр-и?

Камăн нишлĕ чĕри,
Пур нишли, халсăрри —
Ленчĕрти шапасем пулччăр-и?

Çеçпĕл лирикин геройĕшĕн куç умĕнчи (кулленлĕх) çĕнелӳ-аталанусăр вăхăт шăвăмĕ пăнтăхнă кӳлленчĕкпе тан («шăршлă каç йăвăрри»), чăваш çĕрĕн сăн-сăпатне («кивĕ çĕр кăкăрне») шурăмпуç çути пек палăракан Çĕн Кун çеç килсе вутпа çунтарса тасатма пултарать. «Эй, вĕре, вутлă юн! Эй, Çĕн Кун, йăлтăр Кун, кив çĕре çунтарса çун! çун! çун!». Лирика геройĕн мăнаçлă чĕринче романтизмла таса ĕненӳ-шанчăкпа сайра тĕл пулакан тӳсĕмсĕрлĕх пĕр хуранти пек вĕресе çĕкленнĕ. Гражданла туйăмсен таппи «Чăваш! Чăваш!..» сăвăра çĕнĕ хĕлĕхсен янравĕпе вăйланать; чунра йăва çавăрнă тарăху, улшăнусене кĕтсе ывăнни, тӳсĕм пĕтсе пыни, чăваш çыннине вăранма чĕнни, намăслантарни — пурте пĕрле, хускалнă пăр пек, капланса тухнă кунта.

Чăваш! Чăваш!..
                    Чăваш! Чăваш!..
Сан ыйăхлă уюсене,
Сан лăпкă, кăмăллă, ачаш,
Йăваш-айван ялусене
Савмашкăн манăн халăм çук.
Чăваш тĕнчи çывхарнă чух
Чăвашăн чунĕ йăваш-ши?
Анаслă ыйăхăн ăшши —
Вырăнлă-ши?.. Вырăнлă-ши!

Тен, ку сăнава парадокс теме те пулĕ, анчах та поэт калас тени кунта — куçа курăнакан чăваш тĕнчине масш-

таблăн ӳкерес тени мар. Лирика геройĕн ăшри вутланакан тĕнчи кунта чи кирли, кăмăл-туйăм хусканăвĕсем, пурне те хак паракан куç, чун ыратăвне чăтаймасăр, тен, калас темен çĕртенех каласа уçни. «Савмашкăн манăн халăм çук» тени вăл чи çӳллĕ шайри, ним юлмиччен юратнин палли! Пиетет, хăйне тĕпĕ-йĕрĕпе ăнланса илеймен, пуçĕнчен çупăрлакан тăван çĕршыв анне умĕнче чĕркуçленни, айăп çук çĕртенех каçару ыйтни. Тен, хăçан та пулсан (çĕре кĕрсен) тивĕçлипе хакласса шантаракан пытарăнчăк туйăм. Çеçпĕл хăй пирки И. Северянин сăмахĕсемпе те калама пултарĕччĕ: «Как хороши, как свежи были розы, моей страной мне брошенные в гроб».

Хальхи пурнăç ӳкерчĕкĕ Çеçпĕл сăввисенче суринче те тенĕ пек пĕрешкелрех, унта куçа илĕртекен, ăшăтакан илем палăрăмĕсем çук. Çав ылханлă пурнăçа тĕпрен çĕнетесси, ăна Çĕн Кун акапуçĕпе, арлан тăпри тарăнăшне кĕрсе сухаласа варса хăварасси (е «кив çĕре çунтарса»!), асаттен тайăлнă пӳртне йăвантарса ушкăнпа çĕнĕ çурт лартасси, киввине çĕннипе улăштарасси — çакă вăл пĕтĕмпех романтизмла гиперболăпа монументланса сăнарланă улăпла геройăн («сверхчеловек» тенине аса илтерет терĕмĕр) шухăшĕ-ĕмĕтĕнчи проект, çунатлă фантази çуратнă шанчăк. Вăл пурнăçланмасан та пултарать, анчах та Çеçпĕл кирĕк ларман таса ĕненӳпе кĕтет ăна. Кĕтет çеç мар, май пур таран хăвăртрах пурнăçа кĕртесшĕн. «Çĕршывăн пит-куçне çĕнетес», «кун-çул уттинчен юлас мар» тесен («Хурçă шанчăк») «хастарлă, хыт утăмлă пулмалла». Анчах та сăвăран сăвва «анаслă ыйăхăн ăшши», «çĕршывăм хăюллăн вăранĕ», «унччен-ха — чăваш ыйăхлать» тенисем куçса пыраççĕ. Е тата «Курап: чĕрĕлет чăваш ячĕ таçта аслатиллĕ саспа, юратнă çĕршывăн хăвачĕ часрах вăранасшăн тапать».

Романтизмла пĕтĕмлетӳ принципĕ-масштабĕ кулленхи пурнăç прозипе çураçаймасть. Çеçпĕлĕн илемлĕ шухăшлавĕ романтизмла пуласлăх проектне масштаблă курать, ун ĕмĕчĕсем çунатлă, тĕнче икĕ тĕспе сăрланать — «хура» тата «шурă». Кунсăр пуçне çак икĕ тĕс хаклăх виçи (ырăпа усал) пулса тăраççĕ, ытти тĕссемпе сăрсем хушма е виççĕмĕшле пĕлтерĕшлĕ çеç. Сăмахран, романтизм али витĕр тасалса тухнă тĕссем (кăвак, кăвар, сенкер, кĕрен) — пурте вĕсем шурра е тасалăха (пуласлăхлине) символлакан тĕссем. «Çĕн

Кун аки» сăвăра Çеçпĕл палитрин пуянлăхĕ уйрăмах курăмлă. Ака-суха ĕçĕ пĕрре пăхсан ырхан лашине кӳлсе акапуçпе çĕр кăкăрне чĕрекен, вăрлăх акакан, ани çинче ĕмĕр тар юхтаракан, çĕр пиçсе çитнипе çитменнине ани çине ларса çара купарчапа чухлакан чăваш хресченĕн кулленлĕхĕ темелле. Апла пулин те Çеçпĕл проекчĕн масштабĕ харпăр хуçалăх анипе мар, вăл пĕтĕм чăваш çĕршывне сухаласа акассипе, ăна тĕпрен çĕнĕ сăн кĕртессипе çыхăннă. Ку çĕр кăкăрĕнчен тăранса пурнакан чăвашăн ĕмĕрхи аки-сухи мар, сухалаканĕ-акаканĕ те яланхи çĕр ĕçченĕ мар. Кунта акана «Çĕнĕ Кун» тухнă.

Кăвак çутăран шăратнă акапуç
Туртиййĕ хушшинче хĕвел ташлать.
Çĕн Кун — шевле сарриллĕ ылтăн пуç —
Чăваш уйне ака тума тухать.

Çĕн Кун акипуçĕн хĕп-хĕрлĕ тимĕрри
Касса-касса уй урлă кас тăвать.
Кас-кас айне чăвашăн иртнĕ ĕмĕрри
Вилсе выртса пытарăнса пырать.

«Кас-кас айне чăвашăн иртнĕ ĕмĕрне» пусĕпех, ĕмĕрпе каялла таврăнми варса-пытарса хăварасси — акă вăл çак тĕлĕнтермĕш акаçăн тĕп тĕллевĕсенчен пĕри. Тепĕр пысăк тĕллевĕ ун — космос вăрлăхне (ку пачах та кив кĕлетри пӳлмере упранни мар!) акасси. «Çĕн Кун пин-пин кăварлă хурçă аллипе сар-хĕрлĕ кунтăкран уйсем çине кăварлă ывăçпа пин, çĕр пин çăлтăр акрĕ». Хуратнă уйсене çиййĕнчех ирхи шевле ылтăн сӳрипе сӳрелесе пăрахать. Çав сăввăн чĕри пулса тăракан тепĕр çаврана вуласа пăхарха эппин:

Çĕн Кун акин шăтма вăхăт çитсен
Çĕн Кун умне хура çĕр айĕнчен
Хĕвел калчи пулса, хĕвеллĕн сарăлса хăюллăн
Чăваш çыннин кун-çулĕ тухĕ.

Ваттисем калашле, мĕн акан — çав шăтать. Эпир куртăмăр çӳлерех: Çĕн Кун «кăварлă ывăçпа пин, çĕр пин çăлтăр акрĕ». Паллах ĕнтĕ, çак тĕлĕнтермĕш вăрлăхран шăтакан çимĕçе те хăнăхнă виçепе виçме май килмест. Вăл революцичченхи асап ĕмĕрĕнче хуçăлнă, трахомлă куçĕпе хĕвел çине пăхайман чăваш мар, ку çĕнĕ популяци: «Хăватлă, çĕн чĕреллĕ çĕн ĕмĕр чăвашĕ, хулпуççипе кăвак пĕлĕте перĕнсе,

кун-çул умне тухса (шăтса? — *Ю.А.*) хĕвел тумтир тумланĕ, Çĕн Кун ăна ыталĕ савăнса, ачашшăн».

Çак символла проектăн тĕпри идейин çăлкуçĕ пирки эпир хăй вăхăтĕнче кĕскен сăмах хускатнăччĕ, кунта тепĕр хут çакна каласшăн. «Çĕн Кун» сăнарĕ Çеçпĕлĕн сăввинчен сăввине куçса пырать, çĕнĕ самана, чечекленнĕ, тулăх та юмахри пек çĕршыв пурне те савăнтаракан, пин çул хушши чăваш çынни кĕтнĕ-ĕмĕтленнĕ пархатарлă «çимĕçĕсем» çĕр çинче мар, поэт фантазийĕнче (е космосра тейĕпĕр) контурланаççĕ-ха. Тата кивĕ çĕр сăн-питне те унăн çитес вăхăтрах килсе палламалла мар çĕнетсе улăштармалла. Ку ĕнтĕ хăйне майлă «çăлакана» (мессия) кĕтни пекех. Çав хушăра пин-пин чăваш çĕр ĕçченĕ, паллах, вăл часах килессе кĕтсе акапуç туртисене пĕрсе çыхса маччаналла сурса лараймĕç улшăну-çĕнелӳ хăй тĕллĕнех пулĕ-ха тесе, анчах романтизмăн çунатлă эстетики «çылăхлă», хура тăпрапа вараланнă пулăмсемпе вак-тĕвексене кăмăлламасть, вăл пĕтĕм тасамарлăхпа хура-марана, Çеçпĕл хăй калашле, «ылтăн шăратан хуран» витĕр кăларать.

Тӳррипе каласан, çĕр питне çĕнетекен улăпла сăнарăн «аслă пиччĕшĕ» революци саманинчи вырăс литературипе публицистикинчи тĕп вырăнта пулнă ĕнтĕ. Революцилле «çĕнĕ эстетикăн» никĕсĕнчи сăнар пулнă вăл. Çав сăнара Раççейри нумай халăх çыравçисем хăйсен чĕлхипе, хăйсене майлă ӳкерсе кăтартнă. «Калăпĕ» пĕрре пулнă тейĕпĕр, анчах та Çеçпĕлĕн генилле таланчĕ çав улăпла сăнара чăн чăвашла калăплать. Вĕрентекенĕсенчен пĕри пултаруллă литератор, «Основы позитивной эстетики» (1904) ятлă ĕçĕн авторĕ А.В. Луначарский пулнă. Ăна «социализм тĕнĕн» хăйне майлă теорийĕ теме пулать. Акă мĕнлерех сĕнӳсем парать вăл калчаланакан социализмăн пулăмĕсене ӳкерекен çыравçăсене: «Содействовать росту веры народа в свои силы, в лучшее будущее, искать рациональных путей к этому будущему... украсить посильно жизнь народа, рисовать сияющие счастьем и совершенством картины будущего, а рядом — все отвратительное зло настоящего, развивать чувство трагического, радость борьбы и побед, прометеевских стремлений, упорной гордости, непримиримого мужества, объединить сердца в общем чувстве порыва к сверхчеловеку — вот задача художника». А.В. Луначарский

çырнă ĕç совет саманинче çĕнĕрен пичетленмен, çавăнпа та вăл куллен куç тĕлне пулакан япала мар. Ун шухăшĕсем пирки А. Гангнус «На руинах позитивной эстетики» статйинче (Новый мир, 1988, 9 №) сăмах хускатнă. Паллах, Турă талант паман пулсан поэзире нимле «рецепт» та, тем тери ăслă шухăшсем те пулăшаймаççĕ. Анчах та Çеçпĕл пирки кăна калама çук. Çав вăхăтрах «позитивлă эстетика» кăларса тăратнă задачăсем Çеçпĕл поэзине вăйлă витĕм панине те асăрхамасăр тăма май килмест.

Чăн малтан «объединить сердца в общем чувстве порыва к сверхчеловеку» текен тезиса илер-ха. Çеçпĕл сăввисенче çак прометейла герой сăн-сăпачĕ уçăмлă палăрать, уйрăмах, сăмахран, «Çĕн Кун акинче» терĕмĕр. Е «Инçе çинçе уйра уяр...» сăввăн лирикăлла геройне илер.

Кăвар чĕрем — пин çын чĕри.
Эп пĕр çын мар — эп хам пин-пин,
Эп пин чăваш, эп пин-пин çын!
Чĕрем юрри — пин çын юрри.

Асап сăнчăрне хăватлă хул-çурăмĕпе туртăнса татнă çак паттăр çутă пуласлăха ăнтăлать, ăна «телей çыранĕ» илĕртет: «Унта — чăнлăх, сăваплă ĕç, унта илемлĕ, çутă пурнăç. Коммуна калчисем унта ытарайми ем-ешĕл курнĕç» («Хĕрлĕ тинĕсре»). Пуласси нихçан курман телейĕпе илĕртет пулсан, «çĕнĕ эстетикăн» тепĕр тĕллевĕ — иртнипе хальхине май пур таран илемсĕрлетсе, хуратса сăнласси. «Çĕн Кун акине» тепĕр хут аса илер-ха. Лирика геройĕ «кас-кас айне чăвашăн иртнĕ ĕмĕрри вилсе выртса пытарăнса пынине» çĕкленӳллĕ кăмăлпа сăнать. Ман шутпа, «чăвашăн иртнĕ ĕмĕрри» кунта — халăхăмăрăн 1917 çулхи октябрьччен пĕтĕм историйĕ, культури, йăли-йĕрки, ăс-хакăл пуянлăхĕ, сăмах вĕççĕн çӳрекен поэзийĕ, тĕрĕ ăсталăхĕ, тĕн ĕненĕвĕ т.ыт.те. Паллах, тӳссе ирттернĕ асап-мăшкăлĕ те. Çеçпĕл пин çул хушшинче тăван халăх хăй ăс-хакăлĕн пуянлăхпахалăхне ӳстерсе-аталантарсах пынине пĕлмесĕр тăман паллах. И.Я. Яковлев, Н.В. Никольский, Н.И. Ашмарин тата ыттисем ку тĕлĕшпе пултарнă пархатарлă ĕçсене те асрах тытнă вăл. 1905—1907 çулсенчи пирвайхи революци çулĕсенче хамăрăн творчество интеллигенцийĕ — çыравçăсемпе ӳнерçĕсем, музыкçăсемпе çутлăх ĕçченĕсем — чăваш культури аталанăвне хăйне майлă Чĕрĕлӳ (Ренессанс) тапхăрĕ

шайне ҫити ҫӗклет. К. Иванов генилле «Нарспи» поэмине ҫырса пичетлет, илемлӗ ҫырулӑх аталанать. Анчах та «позитивлӑ эстетикӑшӑн» Раҫҫей халӑхӗсен 1917 ҫулхи революцийчченхи пӗтӗм пурнӑҫӗ, историйӗ, культури асап-пусмӑр символӗ ҫеҫ, «халӑхсен тӗрминче» нушаланнӑ аваллӑх. Халӑха ҫутта кӑларакансен ӗҫӗ — тӗн-тӗшмӗше сарни е буржуаллӑ культура палӑрӑмӗ. Ҫакнашкал установка Ҫеҫпӗл поэзийӗн шалти тӗнчине хӑйне майлӑ витӗм кӳнине хирӗҫлеме йывӑр, революцилле тӳрӗлӗх салтакӗ чылай чухне хӑй музин сассинче ҫепӗҫлӗхпе трагизм кӗввине ҫураҫтарма тӑрӑшать, ҫавна пула хурҫӑ сас «оркестрӑн» ытти партийӗсене хуплать. «Тинӗс, тинӗс, эс хаяррӑн сӑвӑҫӑн юннечунне... нишлӗхлӗхсенчен тасат» («Тинӗсе»).

«Позитивлӑ эстетикӑн» тепӗр принципӗ вӑл — классен юнлӑ кӗрешӗвӗ, «радость борьбы и побед» тенӗ А. Луначарский. Ҫеҫпӗл лирикин геройӗшӗн кӗрешӳ — пурнӑҫ тӗллевӗпе тан: «Пурӑннӑ тарӑхса, ҫапӑҫӑр савӑнса» («Атӑл юрри»); «Ман ҫунатлӑ вутлӑ чунӑм, ҫӗн ҫӗре чӗнен чӗре кӗрешӳ вӑйне анчах кӑмӑллать ҫак тӗнчере»; «кӗрешӳ сассипеле»; «кӗрешме чӗнен саспа»; «кӗрешӳ ӗҫне-вӑйне»; «савтӑр паттӑрлӑх вӑйне» («Тинӗсе»); «хӑюллӑн тӑшмана ҫапар» («На помощь братьям»); «вӑрҫма хатӗрленер патваррӑн» («Хӗрлӗ тинӗсре»). Кӗрешӳ тӗллевӗ — пролетариат тӑшманӗсене тӗп тӑвасси, «пӗтӗм тӗнчипе ҫурт» («дом всемирный») никӗслесси. Ӑнсӑртран мар ӗнтӗ поэт лирикин геройӗ «Иртнӗ самана» сӑвӑра: «Ватӑ аслаҫу пӳртне йӑвантарса яр, ӗмӗрлӗх никӗс ҫине ҫӗнӗ пӳрт лартар!» — тет. Тен, ҫӗннине лартиччен йӑвантарма тӑхтамалла?! Ҫук, поэт урӑххи пирки калать: паянтан ӗнтӗ революци чухӑнсене мӗн кирлине йӑлт парать, унччченхи — пӗтӗмпех пӑрахӑҫ. Ку ӗнтӗ Ҫеҫпӗл ӑсласа кӑларнӑ шухӑш мар — самана «чӑнлӑхӗ» е ҫӗнӗ власть идеологийӗн хистевӗ. Е «позитивлӑ эстетика» принципӗ терӗмӗр.

Юн юхтарса класс тӑшманӗсемпе ҫапӑҫакан герой — хӑюллӑ та хастар, вӑл хӑй пек вӑйлисемпе иккӗленӳсӗр пуласлӑха талпӑнакан ҫынсене ҫӗнтерӳллӗ кӗвӗпе саламлать. Ыттисем?.. Пин-пин ҫын хушшинче самана уттипе ӗлкӗрсе пырайманнисем питӗ нумай, анчах та «кӑвак пӗлӗте хулпуҫҫипе перӗнекен» геройӑн вӗсемпе утма ҫул май мар, вӗсем чӑрмав ҫеҫ. Лирика геройӗн идеалӗ — хӑюллӑ та хӑватлӑ, ҫунатлӑ та «вутлӑ чунлӑ» «ҫӗн ӗмӗр чӑвашӗ». Ан тив,

«çĕн ĕмĕрĕ» вăя кĕрсех, пурнăç хуçи пулсах çитеймен пултăр, анчах çакăн пирки иккĕленекенсем — нишлĕ чунсем.

Çеçпĕле чи кăткăс та пăлхавăрлă çулсенче, революципе Граждан вăрçи тапхăрĕнче пурăнма пӳрнĕ, хăйĕн вилĕмсĕр поэзи тĕслĕхĕсене те çавăн чух çырнă вăл. Вăрçă вĕçленнĕ хыççăнхи тăнăç пурнăç анинче вăй хума май килмен унăн. Ку ĕнтĕ чĕнӳпе йыхравсем хыççăнхи çĕнĕ тапхăр. «Чăвашăн ăсĕ! Вут-кăвар, хĕртсе хĕретнĕ хурçă пул!» — тет поэт. Халь ĕнтĕ çак тĕллеве мĕнле пурнăçа кĕртме май пуррине ăнкармалла, çав енĕпе татăклă ĕçе пикенмелле. «Лăпкă халăх пултăр паттăр, вăл йăваш — йăвашлăх çĕттĕр» («Тинĕсе»). Халăх менталитетне улăштарма çăмăл мар, кунсăр пуçне, тен, тăнăç пурнăç каçалăкĕнче вăй хунă чух ку енсене çитменлĕх шутне кĕртме те кирлĕ мар. Ытларах вĕсем кĕрешӳ-тытăçу вăхăтĕнче куçа тирĕнеççĕ. Халь ĕнтĕ чăтăмлăх-тӳсĕмлĕх темрен те хаклă: суккăррисемпе чапрассисене сиплес пулать, вĕсем те общество членĕсем, «йăваш-айван ялсене» ăнланулла кăмăлпа ăш пиллĕ хӳтлĕх, пулăшу сĕнмелле; нимене кăлармалла; айван та чирлĕ ачисене амăшĕ юратупа, чун ăшшипе сиплет. Çĕнĕ тапхăрта намăслантарнипе питленинчен, тарăхса йĕпленинчен «савма хал çитерни» нумай усăллăрах та вырăнлăрах. Кашни самантра чăтăмлăх-тӳсĕмлĕх кирлĕ. Çичшер аршăнлă утăмпа утма та, самана сиккине хăвăртлатма та май килмест ĕнтĕ. «Çĕнĕ Кунĕ» çырнă пулин те юхăннă хуçалăха пурпĕрех пин-пин çыннăн çĕклемелле, чăваш ăспа чул касса вут кăлартăр тесен ăсхакăл культурине çӳллĕ шая çĕклес пулать. Çак васкамасăр куллен-кун тумалли ĕçсем Çеçпĕл «проектĕнче» çук, апла пулин те йăлтах курса тăнă малаш çулăн кукрашкисене чăвашăн генилле таланчĕ. Сăлтавĕ паллă — «позитивлă эстетика» кăтартăвĕ-сĕнĕвĕсем чăн малтан инçетри çиçсе тăракан пурнăçа куçпа тĕллеме, ăна мухтаса аслăлама хистенĕ, нумай-нумай çыравçă (вăл шутрах чи пултаруллисем те) çав илĕртӳллĕ «шерпет» пылакĕпе хăйсен пуçĕсене çавăрттарнă. Кунта уйрăм çыравçăсен е культура ĕçченĕсен «вăйсăрлăхĕ» е ăнланулăхĕ çитейменни пирки сăмах пымасть, революцин ӳсĕртекен сывлăшĕ хăйне майлă эпидеми е куç пăвнă пек çавăрса илсе тыткăнланă çынсене.

Çеçпĕл хăй пурнăçĕн анлă программине, поэт тивĕçĕн ăнланăвне «Тинĕсе» сăввинче нихçанхинчен тарăнрах уçса

кăтартать. Инçетри чăваш çĕрĕнчен килнĕ сăвăçшăн Хура тинĕс — вĕçĕ-хĕррисĕр анлă, урăх нимĕнле вăй-хăвата та парăнман стихия. Тинĕс лăпкă та лĕм çилсĕр çанталăкра та хăйĕн сенкеррĕн-симĕссĕн çуталса тăракан куç кĕски пек тикĕс пичĕпе, тӳлек мăнаçлăхĕпе куçа илĕртет. Анчах та лирика геройĕн идеалĕ — тăвăл вăйĕпе хаярланса урса кайнă тинĕс, вăл ăнланнă тăрăх, лăпкăлăх, йăвашлăх — вăйсăррисен шăпи, çĕнĕ самана сăвăçĕ вара «кĕрешӳ ĕçне-вăйне хăй чĕрин хĕвелĕ тунă». Революцилле кĕрешӳре те тинĕсĕнни пек чарусăр хăват, хар-хаярлăх, хулăн чулсене ташлатан хумсен вăй-хавалĕ кирлĕ, мĕншĕн тесен революци — перманентлă пулăм. Лирика геройĕ никама пăхăнман кĕрешӳçĕ-тинĕс умĕнче пуç таять, унран хăйне майлă пехил ыйтать.

Тинĕс, тинĕс, вăл санран
(Вăхăт çитĕ) уйрăлсан,
Савнă çĕршывне кайсассăн
Йывăр тимĕр сăнчăртан
Хăтăлнă чăвашсене
Паттăр та хăватлă саслăн,
Чĕрипе çунса, хавассăн
Çĕн тĕнчен çĕн пурнăçне,
Çĕн кунне, çĕн кун-çулне,
Çĕнĕ пурнăç хĕвелне
Юратса тăма калатăр.

Кунсăр пуçне, тинĕсе пуç тайса, унпа калаçса-хутшăнса лирика геройĕ чунне тасатать, унран хастарлăх вăйне хушма ыйтать: «Вăйлă паттăрлăх, хăват вырнаçтар ун чĕрине. Чунĕ ун хăюллă пултăр, тинĕс вăйĕпеле тултăр». Вăл хăйне «çĕн чăвашăн çĕн поэчĕ» тет, апла пулсан унăн кивĕ саманара чун-чĕре тĕпне ларса юлнă хурлăхлă кĕвĕсене манăçа кăларса «çĕн куна, çĕн тĕнчене юратса çĕн юрă хумалла». Вăл пин-пин чăваш хресченĕ пекех, кирек мĕнле хура ĕçе те тиркеме тивĕçлĕ мар:

Çĕн поэт ака та тутăр,
Утă çултăр,
Вутă çуртăр,
Ĕçлесе çĕн юрă хутăр,
Туй пулсан —
　　ташлатăр, култăр...

Хăйĕн юррипе çынсен чун-чĕрине çĕклет, çĕнĕ куна аслăлать, пуласлăха йыхăрать, вăл хăй — халăх сасси. Çавăнпа «мĕкĕрсе ахăрса кар-карлан» тинĕс ритмĕпе хăй чĕрин таппине ĕнерет, ун хăватне ăша илесшĕн. Лирика геройĕ ыран-паян тинĕспе сывпуллашма хатĕрленет, ун асĕнче инçетри тăван ен тĕрĕленет. Крымра çырнă юлашки сăввисенчен пĕринче («Инçе çинçе уйра уяр...») Çеçпĕл çывхарса килекен «Çĕн Кун» сăн-сăпатне хăйне çеç тивĕçлĕ сăрăсемпе ӳкерет.

Çук, çук...
        Çĕршывăм чĕрĕлет!
Пĕчик пӳртсемлĕ ялсенче,
Тăван çĕр урлă уйсенче
Çĕн Сывлăш чун уçса вĕрет.
Çĕн Çул! Кун-çул! Çĕн Кун килет...

Лирика геройĕн чун-чĕри хавхалану хавалĕпе тулнă, унта кĕсле кĕвви янăрать:

Ман чĕрере уяр ури,
Хĕвел ури, хĕвел юрри,
Тăри юрри! Шевле сарри!

Сăввăн шалти тытăмĕ ĕнерӳллĕ те çĕкленӳллĕ, çĕн сывлăш варкăшĕ унта та сисĕнет. Çеçпĕл сасăсен вылявĕпе тĕссен илемне виçеллĕ шайлаштарса сăмах шăрçи тирет:

Инçе çинçе уйра уяр
Карталанса чăлтăртатать,
Енчен енне çупса чупать...

Ку сăвăпа поэт чăваш чĕлхин, тăван сăмахăмăрăн вĕçĕ-хĕррисĕр хевти-пуянлăхне яр çутă çине кăларать, хăй вара тĕлĕнмелле ăсталăхпа сăмахсене «çапăнтарса» хĕлхем кăлармалли тĕслĕх кăтартса парать. Ку сăввăн пĕлтерĕшĕ — таса илемре, чĕлхе кĕввине чун çемми тума пултарнинче.

«Экспромт» сăвăра поэт тинĕсĕн манăçми сăнарĕпе сывпуллашать: «сăнчăр пĕлмен стихия — хăватлă тинĕс, сывă пул!». Крымран вăл кунта паллашса çывăхланнă тусĕпе Ф. Пакрышеньпе пĕрле Украинăна çул тытать. Мăнаçлă ирĕклĕх хуçи Хура тинĕс чăннипех те поэт чунне хавхалану хавалĕпе чĕрĕ вăй хушать, вăл Кейӳ хулине çитсен «Хурçă шанчăк» сăввине (1921, авăн) çырать. Çеçпĕл пултарулăхĕн чи çӳлти шайне палăртакан темиçе сăвăран пĕри теме пулать ăна. Е гражданла лирикăн сайра тĕл пулакан тĕслĕхĕ. Лирика геройĕн сăнарĕ, шалти тĕнчи, шухăш-туйăмĕ пĕтĕмпех кăварланса тăракан шанчăк çутипе çуталнă. Кунпа пĕрлех çак «хурçă шанчăк» поэт чĕринче чылай вăхăт хушши хĕмленсе çунни, апла пулин те вăл «çĕршывăн пит-куçĕ çĕнелессине» кĕтсе ывăнма пуçлани сăвă ăш-чикĕнче кăштах палăрать те-и, тен? Ку вăл — ăс-хакăл ертӳçин инçет курăмĕ, пуласси пирки иккĕленмен пророк сасси те. Вăл ыттисем курманнине чунпа туять. Çав вăхăтрах хăй мĕн тума пултарнине тунă вăл, çавăнпа халал сăмахĕ калама тивĕçĕ пур:

Хастарлă, хыт утăмлă пулăр,
Çĕршывăн хастар ачисем,
Вут кайăклăн вĕçĕр, ан юлăр,
Ан юлăр кун-çул уттинчен.

Лирика геройĕ çĕршыв пуласлăхне шанать çеç мар, уншăн пуç хума хатĕр. Иккĕленекенсем сахал мар, вĕсем, ун шухăшĕпе —ултавçăсем, «суеç чĕлхеллĕскерсем». Чăваш ене тунсăхлани, Украина çĕрĕнче татах та вăйланать. Питех те шел, çак сăвă хыççăн Çеçпĕл шанчăкĕн хĕвелĕ тавра хура пĕлĕтсем капланма пуçлаççĕ, малашнехи сăввисенче синкерлĕх туйăмĕ тарăнланса, арасланса пырать. Ку сăвăсем вулакан чĕри тĕпĕнчи чуна ыраттаракан хĕлĕхсене сĕртĕнсе, Çеçпĕл кун-çулĕн трагедилле юлашки тапхăрĕ пирки шухăша яраççĕ, ун сăлтавне тарăнрах ăнкарса илме пулăшаççĕ.

«Хурçă шанчăк» хыççăн тепĕр уйăхран поэт «Выç псалом» сăвă çырать. Кунта ĕнтĕ çав ĕненӳпе çĕкленӳллĕ кăмăл-туйăмăн палли те юлман, шанчăк сӳннĕ. Татăклă сăлтавĕ паллă:

Шăм выçлăхăн аллинче çĕршывăмăн чĕри.
Пăрпа пăрланчĕ уяр чечеклĕ шанчăк.
Чĕресенче талса çухалчĕ, ах, пытанчĕ
Анчах пуçланнă чĕрĕлĕх юрри.

1921 çулхи кĕркунне, Атăл тăрăхĕнче хăрушă выçлăх алхаснă тапхăр. Çеçпĕл куллен-кун инçетри чăваш çĕрĕнчен выçăпа аптраса килнĕ çынсене курнă, вĕсен шăпине кăшт та пулин çăмăллатас, пулăшас тесе кунне-çĕрне уямасăр ĕçленĕ, пулăшу ĕçне йĕркелесе, ертсе пынă, тĕрлĕ инстанцисене апат-çимĕç ыйтса хут ăсатнă. Выçлăх — «Юлашки чĕл алра...», «Кĕпер хывăр» (1921, юпа), «Хĕрлĕ-хĕрлĕ, хĕрлĕ мăкăньсем...» (1922, пуш), «Паянтан» (1922, ака), «Кун тĕпĕнче» (1922, çу, вырăсла) сăвăсен никĕсĕнчи тема. Тырă пулманни, анасем типсе-хытса ларни — çут çанталăкпа çыхăннă хăрушă инкек. Пуласлăха тишкерӳллĕ куçĕпе тинкернĕ май вăл, Çĕн кун, Çĕнĕ чăваш тĕнчи хупланса ларас хăрушлăха та туйма пикенет. Çав шанчăк сӳнни уншăн чĕре тапма чарăннипе пĕрех.

...Чĕлхе çухалчĕ... Çĕршыв вилет пулсассăн
Кама эс кирлĕ, юррăм...
Кама? Кала!

Ытла та кĕтмен çĕртен килсе çапать çак хура инкек, «хĕрес çумне çĕршыва пăталакан» «кивĕ кунăн шăм алли». Çеçпĕл

иккĕленӳллĕ шухăш-туйăмпа асапланать: выçлăхпа пĕрле «кив кун» (тĕрĕсмарлăхпа социалла танмарлăх символĕ) каялла таврăнассăн туйăнать ăна, «анчах пуçланнă чĕрĕлĕх юрри» пачах хупланасшăн. Чăваш çĕршывĕн инкеклĕ шăпи ăна мĕн çĕре кĕричченех канăç памасть, уншăн чун ыратăвĕ пулса тăрать. «Кĕпер хывăр» сăвăра та вăл чăн малтан чăваша çăлăнăç кӳме тивĕçлĕ символла кĕпер пирки калать: «Çулсем çинче вилесем, укăлчасем панче вил шăмăсем». Çак хăрушă ӳкерчĕке курса тăракан лирика геройĕ чун тĕпĕнчи шанчăкне те сӳнме памасть-ха, епле пулсан та çак пысăк çухатусем витĕр чăваш çĕршывĕ çăлăнса тухма тивĕçлĕ, çĕнĕ пурнăç аталанăвĕн тымарĕсене выçлăх тăпăлтарса кăлараймастех.

Эсир,
Чĕррисем,
Вилесем урлă, шăм куписем çинче
Хĕвеллĕ ыран енне
Кĕпер чĕнтĕрлĕр.
Ах!
Кĕпер чĕнтĕрлĕр.
Эпĕ
Халран кайса ӳксессĕн
Ман урлă таптаса каçса кайăр,
Тимĕр урăрсемпе чĕрем çине
Хăюллăн таптăр.

Куратпăр ĕнтĕ, лирика геройĕ «хĕвеллĕ ыраншăн» кар тăнă пин-пин çынпа юнашар, çак «ниме йышĕнче» хăйне валли тĕрек тупать вăл, юлашки шанчăкне упрать. Ан тив, ним юлми вăй-хал пĕтсе çитсессĕн хăйне кĕпер айне ывăтма, «ĕнсине хуçма» ыйтать. Вăл çакăншăн пĕтĕм пурнăçне пурăнса ирттернĕ, чи юлашкинчен материал пулса кĕпер никĕсне выртма хирĕç мар. Пирĕн умра — оптимизмла трагеди геройĕ, революцин малаш утăмĕсемшĕн вăл алтарь умне хăйне парне кӳме хатĕр. «Вăхăт — ачашлăх вăхăч мар». «Ку вăхăт — вилĕм вăхăчĕ». Çеçпĕл тĕп шухăшне ытарлă, варса калать: революци ялавĕ юн тĕслĕ, çав хаяр тытăçура «кам куçĕ куççуль кăлармĕ, кам чунĕ чул» — çавсем çеç тăшмана çĕнтерме пултарĕç.

Ик ушкăн:
Паттăррисем — çав кĕпер урлă,
Халсăррисене
Кĕпер айне перĕç.

Социализмла гуманизм «паттăррисене» аслăласа чыслать, ку тапхăрта вăл пĕтĕм этемлĕх гуманизмне хирĕçлет-ха, унпа пĕр кĕвве килтерейместь. «Хĕвеллĕ ыран» патне утнă чух шăнăрсене лăнчă яма, ачашлăх е хĕрхенӳ туйăмĕпе чĕрене хавшатма юрамасть: класс тăшманне пуçĕпех тĕп тумасăр «çĕнĕ пурнăç» тума çук.

Çурхи кунсенче, çут çанталăк ешернĕ тапхăрта, выçлăх вилĕмĕн çăварĕнчен хăтăлса юлма пултарнă, анчах та «вăйсăрланнă, асаплă» чăваш çĕршывĕнче те сертепе вĕлтрен шăтса тухать, ăшă енчен хура кураксем вĕçсе килсе йăва çавăраççĕ, пурнăçăн черченкĕ калчисем йăл илме пуçлаççĕ. Çеçпĕл вара Атăл асаплăн ахлатнине чунĕпе туйса тăван ен шăпишĕн чĕрине кăмрăклантарать. Ăнсăртран килекен хыпарсем е хаçатсем пĕлтернисем чуна вĕркетеççĕ. «Хĕрлĕ-хĕрлĕ, хĕрлĕ мăкăньсем...» сăвăра поэт романтизмла символланă сăнарпа усă курать. Чĕрене пĕр ыйту касать — тăван ен шăпи. «Виçĕм çул чечеклĕн чĕрĕлнĕ» хĕрлĕ мăкăньсем вĕсем — 1920 çулта йĕркеленĕ Чăваш автономи облаçĕн «шалкăм çапнă» кун-çулĕ пирки систерсе калаççĕ. Хуçи, вĕсене акса çитĕнтерекенĕ, «инçетре выçăхса сĕтĕрĕнсе çӳрет», вĕсен ăраскалсăрлăхĕшĕн хуйхăрать. Ытарлăхсăр пуçне кунта тӳрĕ пĕлтерĕш те çук мар — Çеçпĕл хăй те Чăваш автономийĕн никĕсне хывас, ăна йĕркелесе ярас ĕçе вăй-халне, талантне шеллемесĕр панă. Çав мăкăньсем типсе хăрчĕç-ши?

Йĕлпер хĕрлĕ тăрлă мăкăньсем,
Виçĕм çул чечеклĕн чĕрлнисем
Çут хĕвеллĕ кăнтăрла ăшши
Каллех çавăрăнса килĕ-ши?
Симĕс çитлĕ çимĕç пахчара
Кĕтсе илейĕр-ши хуçăра?

Лирика геройĕн шанчăкĕ юлашки тумлам юлмичченех сӳнмен-ха, вăл «кăнтăрла ăшши каллех çаврăнса килессе» кĕтет, иккĕленсе те пулин. Анчах та поэт чĕрин пирчеми суранĕсем тĕлкĕшеççĕ, çине-çине лартнă ыйтусем (вĕсем хуравсăр), çанталăк (çил çилленчĕ, хăйăр хĕртрĕ) мăкăньсене шеллеменнине темиçе хут калани синкерлĕх çывхарнине систерет. Кунта ĕнтĕ кулленхи ĕç-пуçсемпе хĕсметри (делопроизводитель) чун туртман ĕç те, выçлăхран тарса килнĕ чăвашсемшĕн чĕрре кĕрсех çине тăнă май пуçлăхра

ларакан чиновниксемпе хиврен хутшӑнма тивни те — пурте пӗр тӗвӗпе ҫыхӑнса поэт психикине вӑйлӑрах та вӑйлӑрах пусмӑрлама пуҫлаҫҫӗ. Текех ӗнтӗ ҫурхи тавралӑх та куҫа савмасть, тӗнче илемӗ те илӗртмест. Лирика ҫепӗҫлӗхне трагизмла кӗвӗ хупласа пыни — «Ӗнер йывӑҫ пахчи кӑмӑлне...» (1922, ака) сӑвӑра тӗп мотив. Ӗнер ҫеҫ улма пахчине илем кӳрсе «чӗрӗлсе ҫӗкленчӗ сар чечек», ҫамрӑк хурӑн туратти ҫинче сар кайӑк юррине шӑрантаратчӗ, ав пӑхӑсӑн: «юр айӗнче хӗрлӗ сар чечек», «сар кайӑкӑм шур юр айӗнче». Ҫеҫпӗл тӗнчетуйӑмӗ хура пӗлӗтлӗ ҫанталӑк тӗсӗ-палӑрӑмӗпе ӑмӑрланать. Тен, ҫав ҫывхарнӑ тӑвӑлӑн аслатилле кӗрлевӗпе ахрӑмӗ «Паянтан» (1922, ака) сӑвӑра юлашки хут Ҫеҫпӗлӗн шалти тӗнчине юншӑхлаттарса, кӗрешӗве ҫеҫ савакан чӗрере шанчӑка ӗмӗрлӗхе сӳнтереҫҫӗ. Ячӗ те «паянтан» тесе, тем пулса иртессе е инкек сиксе тухасса систерет. Сӑввӑн хушма ячӗ — «Юлашки юн тумламӗсем», апла пулсан ку чӗре пушанса юлнине туйтарать. Тӳррипе каласан, туйтарать ҫеҫ мар, лирика геройӗ пурнӑҫ тӗллевӗ сӳннине тӳрӗ пӗлтерӗшлӗ сӑмахпах калать.

Паянтан чулланса, мӑклашкан,<br>Ӑш сӑмах пӑрланса пыра ларчӗ,<br>Вӑрмансем тӑрӗнчен шевле тарчӗ,<br>Вилӗм витрӗ ҫӗре паянтан.

Асап тӑвӗ ҫине ҫаруран<br>Ҫӗршыва ҫавӑтса илсе кайрӗҫ.<br>Шупашкар хӳмисен юнлӑ тарӗ<br>Ҫӗмӗр(ӗ)лнӗ чӗремре паянтан.

Чӗп-чӗр юнлӑ — мӗн вӑл аллӑмри?<br>Ҫуркалап, мамӑклап, какайлатӑп,<br>Юн тымарӗсене татӑклатӑп,<br>Ман вӑл — Ҫеҫпӗл Мишшин — юн чӗри.

Яланхи пекех тӑван ҫӗршывӑн йывӑр шӑпи кулянтарать поэта. Ку таранччен вӑл пӗрре ҫеҫ мар ҫӗршыв, ҫав асап хӗресӗ ҫумӗнчен хӑтӑлса ирӗке тухни пирки хавхаланса гимн хайлатчӗ, халь ав каллех ӑна асап тӑвӗ ҫине ҫаруран илсе кайрӗҫ. Мӗн пулса иртнӗ-ха юлашки кунсенче? Паллах, выҫлӑхӑн хӑрушӑ ҫави ҫынсене шеллемен, паккус хыҫҫӑн паккус ҫулнӑ вӑл. Анчах та кӗр ҫитиччен, ҫӗнӗ тырӑ пиҫиччен виҫӗ-тӑватӑ уйӑх ҫеҫ юлнӑччӗ-ҫке-ха ӗнтӗ, сывӑ юлнисен чунӗсенче шанчӑк ҫурта ҫути пек мӗлтлетнӗ. Тен, поэтӑн

кулленхи ĕçĕнчи чăлханчăксем е сывлăх ним юлмиччен хавшаса çитни сусăрланнă чĕре çине тăвар сапнă? Ывăç тупанĕ çинчи юнлă чĕре вăл — трагедилле хуçăлу-аману ытарлăхĕ. Паянтан тек нимĕн кĕтмелли те çук, ыррине те, усаллине те — ку вĕçне çитни.

Тирне сӳнĕ çара анчăкла
Ют çатан хушшинче çыртăк шырăп,
Пĕр йĕпе-сапара кăнса выртăп.

Тарăн суха касси пек уйăрать сăвă Çеçпĕл пултарулăхĕн маларахри тапхăрĕсемпе çакăн хыççăн çырнă тăватă-пилĕк сăввине. Юлашки сăвăсенче поэт пурнăç çиппи çывăх вăхăтра татăласса сисет çеç мар, ăна хăвăртлатасшăн кĕтет тейĕн: «На дне дня», «Жизнь моя, за какими холмами...», «Выдуманным глазам», «В солнечную Мань синевы...». Тăваттăшне те вĕсене вырăсла ăсталанă, пысăкрах трагедиллĕ тата вăйлăрах аталаннă вырăс литературин стилистикипе сăнарлăх-илемлĕх тытăмĕ философилле «таса» лирикăшăн ал майраххине, ун майĕ-мелĕсем тĕрлĕ енлĕрех те çинçерех хĕлĕхлĕ пулнине яш чухнех асăрханă талантлă сăвăç. Хăй пурнăçĕн утса тухнă вăрăм мар çулне чун куçĕпе тинкерет вăл, романтизмла çунатлă, пысăк ĕмĕтсем сӳннине ӳпкевсĕр йышăнать. Сăвă ăш-чикĕ çырлахуллă кăмăл еккипе ĕнерĕннĕ, лирика геройĕ хăй тума пултарнине тунă, анчах та çӳлтен çырни те пур-çке-ха, унтан иртеймĕн. Халь ĕнтĕ кăвар чĕре ăшăнкисĕр, вăл кайăкĕ риснĕ йăвана аса илтерет. Лирика геройĕ тĕнчепе яланлăха сывпуллашма хатĕрленнĕн, ешерекен çурхи каçран, кăвак тӳперен, юррине шăрантаракан шăпчăкран каçару ыйтать. Вăл çут çанталăкăн палăри-палăрми хусканвĕсене сисĕмлĕн туять, чĕрине çутă тунсăх çутатать, пурнăç илĕртмест пулсан таврари илем пĕлтерĕшсĕр. Çук, тинех ĕнтĕ чун та макăрмасть, вăл куççульне юлашки тумлам юлми пăчăртаса кăларнă. Шупка та кичем кулленлĕх пăркăчĕнчен хăтăлас тесен «пĕрех хут пурнăçа пăвас мар-и». Чĕлхе çине килнĕ синкерлĕ сăмах сăввăн шалти кĕввипе çураçуллă, çавăнпа та каçхи кăвалăха «каçар» тени кунта шалтан, чун тĕпĕнчен «сыв пул» тенĕн илтĕнет. Шанчăк, таврари чуна çупăрлакан лăпкăлăх, çăлтăрсен çунакан çутисем, çурхи каç ешĕллĕхĕ — çаксем пурте Çеçпĕл поэзине таса лирика сăнсăпачĕ, хĕрхӳ сывлăш кӳреççĕ. Юлашки сăвăсен ăш-чикĕн-

че яланхи хӗрӳлӗхӗн палли те ҫук, кусем ӗнтӗ гражданла, чӗнӳллӗ-йыхравлӑ поэзи тӗслӗхӗсем мар.

«Пурнӑҫӑм, хӑш сӑрт урлӑ каҫсассӑн...» сӑвӑ та ҫав кӗвӗпех ӗнерӗннӗ. Сӑввӑн тытӑмӗ пӗтӗмпех символла сӑнарлӑх мелӗпе ҫивӗтленнӗ. Психоанализ лирика геройӗн ӑнайӗнче (подсознани) пӗр хӑйне евӗрлӗхе асӑрхама май парать: субъект хӑй пурнӑҫӗн таппийӗ ҫине айккинчи инҫеленнӗ куҫпа пӑхать, ҫав сӑнарланса «ӳтленнӗ чӗмпе» вӑл диалога кӗрет. «Пурнӑҫӑм, миҫе сӑрт леш енче пытаннӑ-ши санӑн хӳхӗм ҫи виттиллӗ пӳртӳ, чулпа хӗненӗ ӗмӗлке пек ҫул кукринче тӑратӑн эсӗ ҫара уран». Каллех кунта пурнӑҫ илӗртӳлӗхӗ сӳнни, чун пушанса юлни, хӑнӑхнӑ йӑлапа пурнӑҫ урапине сӗтӗрни — сӑввӑн ытарлӑ хывнӑ шухӑшӗ. Кӑвак инҫет тӗтрелӗхӗнче яш чухнехи пурнӑҫӑн ытарайми илемлӗ сӑнӗ тӗрленет, унӑн хыҫа юлнӑ тапхӑрӗ ҫунатлӑ пирӗшти пек лирика геройӗн асӗнче ҫеҫ пурӑнать ӗнтӗ. Ӑҫта кайса кӗнӗ ун сӑпса кӗлетки, ҫаврака хулпуҫҫийӗсемпе чӑмӑр кӑкӑрӗ? Тахҫан кӑвар пек вӗри тутине кӗл тӗсӗ ҫапнӑ. Самана ҫилӗсем пӗр шелсӗр туллана ӑна. Апла пулин те лирика геройне ҫав ытарайми ынатлӑ яшлӑх сӑнарӗнчен мӗн тӑрса юлни (шупка ӗмӗлке) ӑнланмалла мар вӑйпа хӑй ҫумне ҫыхса тӑрать. Пурнӑҫ туртӑмӗ ку, унӑн куҫа курӑнман ҫипписем. Ҫавна пула этем вилӗме парӑнмасть те.

Ҫеҫпӗл революци хыҫҫӑнхи вырӑс поэзийӗн аталанӑвне тимлесе сӑнаса пынӑ. Ҫакна ҫирӗплетекен тӗслӗхсем сахал мар. Сӑмахран, «Шухӑшласа кӑларнӑ куҫсене» (1922, ҫу) сӑввине вӑл эпиграфланӑ: «...ман ытараймие — имажинизм поэзине...». Мӗншӗн пусӑм тусах ҫапла палӑртнине ӑнланса илме йывӑр мар. Пӗр енчен ку хӑйне Есенин (имажинизм юхӑмӗн чи ҫутӑ ҫӑлтӑрӗ) ҫывӑх пулни ҫинчен калать (кун пирки эпир ҫӳлерех асӑнса хӑварнӑччӗ). Ҫав вӑхӑтрах Остерчченхи сӑввисенче Ҫеҫпӗл имажинизмла экспериментсем тума шутламан, мӗншӗн тесен вӑл гражданла лирика тӗслӗхӗсемпе тӳррӗн, чӗнӳллӗн те витерӳллӗн революци идейисене вулакан ӑс-тӑнне хывас тӗллеве пӑхӑнать. Ҫавӑнпа ӗнтӗ вут-кӑвар чӗре хӗрӳлӗхӗ сӑвӑ йӗркисен хушшинче те талккишпех пӗҫертсе тӑрать. Тӗрӗллӗ сӑмахсемпе чӗлхен тӗтреллӗ вылянӑвӗпе вара сӑвӑ ӑш-чикне (ҫав вӑхӑтрах вулакан чун-чӗрине те) ҫунтармалла хӗртме май килмест. Шӑп та лӑп ҫав градус поэтӑн юлашки сӑввинче шыв хӑйӑр ӑшне

сăрхăннă пек чакса кайни пирки сăмах пырать те ĕнтĕ. Имажинизм поэтикин ытарлăхĕ, символла сăнарлас туртăм поэта чун-чĕре хусканăвĕсене, ностальгие çывăх çутă тунсăха уçса палăртма май параççĕ. «Шухăшласа кăларнă куççем» вĕсем — кулленлĕх танатинчен хăтăлса çунатланнă, пурнăçа кĕме пултарайман, пытарса усранă çутă ĕмĕтсемпе ăнтăлусем, идеала çывăх вĕсем. Çак сăнарăн ассоциациллĕ ретĕнче — Червяковăн «пăрлă чунне» ирĕлтерсе пĕтереймен таса та вĕри туйăмсем те, поэтăн кăвар чĕри хĕл кунне ăшăтма вăй çитерейменни те, кун тĕпĕнче ăнланса илни те, тĕрлĕ чăрмава пула сӳннĕ хавхалану хавалĕ те, кăнтăр кунĕнчех поэтăн шалти куçне курăнакан тӳпери çăлтăрсем те.

Эй, эп савнă, юратнă куççем —
Сĕм кăваклăхра ик хура çăлтăр,
Хама хам мăшкăллас тесе
Юррăмпа сире çутрăм-ши йăлтăр?

Поэт, вĕлле хурчĕ пек, «чечеке чуптуса-сăхса çĕнĕ шухăш ĕçме вĕреннĕ», таса туйăмпа хавхаланса хăйне майлă йĕрĕлче-тĕнче тĕрлет, унăн пытарăнчăк шалашĕнче кăвак чечексем çитĕнтерет. Поэт чунне уçнă самантра хăшĕсем унта кĕрсе сураççĕ, тислĕк куписем те хăвараççĕ. Çынсен чунне илемпе сыватма ĕмĕтленекен сăвăç çакна çырлахуллă кăмăлпа йышăнать: ăна Турă чуптунă, вăл мĕн чухлĕ ытларах парать çынсене, унăн çавăн чухлĕ ытларах хушăнать. Паллах, чун суранĕсĕр те пулмасть кун пек чух:

Тухса лартăм çатан хыçне,
Кӳтнĕ чунпа макăртăм хытă.
...Çил лăскатчĕ тӳпен кăвакне.
Инçетре шав улатчĕ йытă.

Ан тив, шухăшласа кăларнă куççен илемне çынсем курмасăр тăччăр, поэт миссийĕпе тивĕçĕ çавнашкал, кама нумай панă — унран ытларах ыйтаççĕ. Çав ытарйми куççен вăрттăнлăхне вăл çĕнĕрен те çĕнĕрен çынсене уçса кăтартма хатĕр. Тĕнчепе сывпуллашас шухăш тыткăнĕнче пурăннă Çеçпĕл (вăл çак сăвва çырнă хыççăн икĕ эрнерен çакăнса вилнĕ) хăй идеалĕн чăнлăхне юлашки кунччен ĕненме пăрахман. Чунне сутман çынна пысăк Тĕрĕслĕх пурпĕр çиеле тухасси иккĕлентермест. «Такăна-такăна хир енне утрăм эп, çил хыçран хăваларĕ». Ку вăл вăхăтлăх çил çеç, çанталăкăн вылянчăк кăмăлĕ (е тискер çынсен кăра çилĕ). Истори çи-

лĕсем çеç (Вăхăт) ырра та, усала та писеврен е самана кирĕкĕнчен тасатнă сăн-питне курма май параççĕ.

Çеçпĕлре юсанми-сипленми романтикăн хăватлă чĕри тапнă. Тăван çĕршĕн, халăхшăн, чăваш чĕлхишĕн çунса вăхăтсăр çĕре кĕнĕ сăвăç чăн малтан хăйĕнчен хăй çав тери нумай ыйтнă. Хăйĕн вилĕмсĕр ĕçĕшĕн вара вăл нимĕн те (тивĕçлине) илмен те, ыйтман та, çырлахуллă кăмăлăн шалти хистевĕ ку. Паян вăл «Кĕпер хывăр» сăввинчи символла кĕперĕн никĕсĕнче вăта çĕрти юпа пулса Константин Ивановпа юнашар тăрать. Тан мар кĕрешӳре çак атлант хăйĕн тăшманĕсене ниепле те çĕнтерме пултарайман, кĕрешме те вăл вĕсемпе кăштах донкихотларах майпа кĕрешет. Кунта характер хысаки чăн чăваш ментальнăçĕ пулни пысăк пĕлтерĕшлĕ (тĕрĕслĕх çиеле тухатех тени!) — çавна пула вăл допросра, вăйăран вăкăр сиксе тухасран асăрханмасăр, юстици пайĕн çуртне те, пĕтĕм Шупашкар хулине те вут чĕртсе çунтарма эп хĕтĕртрĕм тет. Çак меллĕ самантра влаçпа карьерăшăн чавсапа хирсе сĕкĕнекенсем нимĕнле ирсĕр мелсенчен те йĕрĕнмеççĕ, хаярлăх-чеелĕх тĕтри карса илнĕ куçĕ вĕсене чăнлăха шăналăкпа витсе хума май парать. Çеçпĕл вара карьерăшăн мар, пур чăваш та чăваш чĕлхи ячĕпе пĕр пуласса ĕмĕтленет. Чиновниксемпе бюрократсен пуçне нихăçан та пырса кĕме пултарайман шухăшĕмĕт. 1921 çулхи раштавра çак трагедие ним çукран шухăшласа кăларман пулсан Çеçпĕл шăпи пачах тепĕр майлă çаврăннă пулĕччĕ, унăн генийĕ тăван культурăна татах та нумай вилĕмсĕр ĕçпе пуянлатнă пулĕччĕ. Паян пурте пĕлетпĕр: пулман унашкал преступлени çут çанталăкра. Хăравçă чунсемпе икĕпитсен, карьеристсемпе ăçтиçуксен пуçĕнче тĕвĕленсе тухнă революци поэчĕн трагедилле ĕçĕ, ăна вĕсен таса мар аллисемпе пурнăçа кĕртнĕ. Кивĕ чăнлăх: истори урокĕсем нимĕскере та вĕрентмеççĕ çынсене.

Çеçпĕл поэзине çĕнĕрен вуласа тухнă май пуçра çуралнă шухăшсем чылай чухне иртнĕ тапхăрти тĕпчев-хаксемпе çураççах пĕтесшĕн мар, кам мĕн шырать — çавна тупать тени те тĕрĕсех. Совет саманинче пире (ваттисемпе аслăрах ăрăва) пурне те пĕр пек шухăшлама хăнăхтарнă, çавна пула нумайăшĕн пуçĕнче идеологи савăлĕпе çапса хĕссе кĕртнĕ клишесемпе хатĕр калăпсем мĕн виличченех тăрса юлĕç. Эпĕ Çеçпĕл сăнарĕнчен турăш туса хуни пирки калатăп. Çын

шухăшĕпе пурăнма хăнăхнă Вулакан та сахал мар. Академилле тĕпчевсен тивĕçĕ уйрăмах пысăк — чăн-чăн Çеçпĕлĕн эткерне, ун сăн-сăпатне турапа якатса хачăпа тикĕслесе калăплас вăхăтсем хыçа юлнă. Тытсан таса алăпа тытас пулать ку яваплă ĕçе, авăнчăк çурăм шăммипе те ан пыр — атлант кĕлетки пусарса лапчăтас хăрушлăх пур.

Таса алă вараланмасть, таса маррине çуса та тасатаймăн.

*2010*

## ЧУН-ЧĔРЕ СĂЛПĂРАНĔ

Çеçпĕл Мишши çуралнăранпа 110 çул çитрĕ. Сăвăç эткерĕ калăпăшпе пысăк мар. Хĕрĕхе яхăн сăвă упранса юлнă унăн, прозăпа драматургин темиçе тĕслĕхĕ, çырма палăртнисем, тĕрленчĕксем. Çав хĕрĕх ытларах сăвăран кашнинчех сăвăç чĕрин таппи паян та картлатать, унăн вĕресе тăракан чун хавалĕ, «хурçă шанчăкĕ» пĕрре те тамалман тейĕн. Çеçпĕл хыççăн килнĕ темиçе чăваш ăрăвĕн чĕрине çак йĕркесем сăхă çĕмрен пек тиреççĕ:

Чăваш! Чăваш!..
Чăваш! Чăваш!..
Сан ыйăхлă уюсене,
Сан лăпкă кăмăллă, ачаш,
Йăваш-айван ялусене
Савмашкăн манăн халăм çук.
Чăваш тĕнчи çывхарнă чух
Чăвашăн чунĕ йăваш-ши?
Анаслă ыйăхăн ăшши —
Вырăнлă-ши?.. Вырăнлă-ши!..
Тăван чăваш хăюллине,
Вăл вăйлине курасчĕ ман.

Çак йĕркесене çырнăранпа тăхăр вунă çула яхăн иртнĕ: мĕн каланă пулĕччĕ-ши Çеçпĕл ĕмĕрлĕх ыйхинчен вăранса чăваш тĕнчи çине куç ывăтас пулсан?! «Чăваш чĕлхи, çĕлен сăххи, хаяр аçа çапнин уххи пулса кĕр çĕнĕ ĕмĕре» тенĕ шанчăкĕ пирки мĕн калĕччĕ-ши вăл тинех? Тепĕр тесен, çак йĕркесене çырнă хыççăн тăватă уйăха яхăн иртсенех вăл «чĕлхе çухалнишĕн» «хура тум» тăхăнать:

Шăм выçлăхăн аллинче çĕршывăмăн чĕри.
Пăрпа пăрланчĕ уяр чечеклĕ шанчăк.
Чĕресенче талса çухалчĕ, ах, пытанчĕ
Анчах пуçланнă чĕрĕлĕх юрри.

«Выç псалом» сăвва Кейӳре 1921 çулхи юпан 26-мĕшĕнче çырнă. Çак сăвăран пуçласа вара Çеçпĕл сăввисенче чĕрĕлĕх кĕвви янрама пăрахать, ытларах та калама пулать: шанчăк сӳнет, ытти пĕтĕмпех — «юлашки юн тумламĕпе» çырни. Уйăх çеç маларах çырнă «Хурçă шанчăк» сăвăра (Кейӳ, 1921, авăнăн 20-мĕшĕ) çĕмрен пек ăнтăлатчĕ-ха сăвăç ĕненĕвĕ-шанчăкĕ: «Çĕршывăм хăюллăн вăранĕ, тапранĕ кăвар кайăк-ла». «Хурçă шанчăкпа» «Выç псалом» хушшинче хура чикĕ, лирика геройĕн çурăм шăмми хуçăлнă, уяр чеченлĕ шанчăкĕ пăрпа пăрланнă, иртнипе пуласлăха çыхăнтаракан кĕпер ишĕлсе аннă. Текех ĕнтĕ çав шанчăк çунат сараймасть. Поэт хĕрĕхе яхăн сăввине речĕпе çĕр хут вуласан та çав хĕвел мĕншĕн сӳннин тарăнăшри сăлтавне ăнланса илме йывăр: «Хĕвел, хĕвел! Эс пур чух чунăма çĕн юр(ă) кĕвви саватчĕ çивчĕ саслăн». Сăввисене хăйсене уйрăммăн çеç вуланипе тесен тĕрĕсрех пулĕ. Пултарулăх ĕçĕн лаççинче, вăрттăн тĕнчере (унта ют куç кĕреймест) — поэзи тупсăмĕ. Сăвăсем вара вĕсем — чун кăварĕпе шăраннă шухăш-туйăм çимĕçĕ çеç, «çункăç-турпас» тейĕпĕр эппин. Çеçпĕлĕн çавнашкал вăрттăн тĕнчи, ман шутпа, Анастасия Червякова патне çырнă çырăвĕсенче. Гений пултарнă сăвăсен пĕлтерĕшне асрах тытса çирĕплетсех каласшăн: çав çырусене тарăнрах тишкерсе тухмасăр эпир Çеçпĕлĕн пултарулăх тĕнчине кĕрейместпĕр. Хальлĕхе вĕсем вар-хырăмра ирĕлмесĕр выр-такан шăмма аса илтереççĕ-ха.

Сăвăç çырнисене ку таранччен нумай-нумай тĕпчев ĕçĕн-че тишкернĕ, хак панă. Ăна çывăх пĕлнĕ е тус-юлташлă пулнă çынсем умĕнче эпир, чăваш культурипе чĕлхине сума сăвакансем, ĕмĕр-ĕмĕр парăмлă. Ваçанкка Микихверĕ, Хветĕр Пакрышень, Анастасия Червякова, Наталия Рубис, Павел Бекшанский, Гурий Кузьмин... çавсен сăваплă ĕçĕсĕр сăвăç çырнисен пысăк пайĕ çухалса пĕтнĕ пулĕччĕ. Кирек хăш поэт та икĕ тĕрлĕ вăхăт сулăмĕ хушшинче: пĕрисем (ытларахăшĕ) çаксамантлăх туртăмĕн вăйне çĕнтереймесĕр (Турă пани çителĕксĕр) «лăпкă пурнăç» юхăмĕнче ишеççĕ, вĕсене çĕршыв «чечекленни», социализмăн улăпла утăмĕ-сем хавхалантараççĕ, çынсем «çĕнелни» т.ыт.те. Çеçпĕл сăввисенче те куратпăр эпир çĕнелӳ-чечекленӳ калчисене. Çав вăхăтрах сăвăçăн витĕр куçĕ ĕмĕрлĕхе тинкерет, шухăш-туйăмĕ инçет пуласлăха вĕçет, çав тĕнчене капăр та илемлĕ

ӳкерет. Çеçпӗл кӑткӑс та хирӗçӳллӗ самана вучахӗнче тупtаннӑ. Эсӗ сӑвӑç пулсан сан тӗп тивӗçӳ — Революцишӗн ӗçлесси, санӑн парӑм пур (хырçӑ тӳленӗ пек), кашни сӑввунта классен кӗрешӗвне сӑнла, çӗнелӳ процесне мала ларт. Ку вӑл парти хушӑвӗ, çавӑнпа унтан никам та пӑрӑнса иртеймен. Çеçпӗл çырнисене те пӗрешкел хак пама йывӑр пулнӑ. Çирӗммӗш çулсенче çеç мар, каярахри тапхӑрсенче те сӑвӑсенче революцин актуаллӑ ыйтӑвӗсемпе палӑрӑмӗсене шыранӑ. Ытларах чухне çавнашкал сӑвӑсенче поэзи илемӗ çителӗксӗр (ют текст витӗмӗ яр уçӑ), вӗсем «Çеçпӗл шайӗнче» мар. Апла пулин те пӗлтерӗшӗ пысӑкрах шутланнӑ. Акӑ темиçе тӗслӗх илсе пӑхар. Поэт «çырнисен пуххине» икӗ сӑвӑ — «Салтак шӑпи» тата «Час» ятлисене кӗртнӗ. Вӗсене Çеçпӗлпе пӗрле Шӑхасанти иккӗмӗш класлӑ шкулта вӗреннӗ А.Г. Григорьев астуса юлнӑ тӑрӑх 1950-мӗш çулсенче çеç пирвайхи хут пичетленӗ. Актуаллӑхӗ те пур сӑвӑсен, империализмла вӑрçӑпа революци тапхӑрӗнчи пурнӑç сывлӑшӗ те çителӗклех. Рифмӑпа сӑвӑ форми тӗлӗшӗнчен те аптрамаççӗ пек вӗсем. Апла пулин те çакӑ иккӗлентерет: Çеçпӗл шкулташӗ ӗнентернӗ тӑрӑх, сӑвва автор 1916 çул вӗçӗнче çырма пултарнӑ. Публикаторсем тӳрех шутласа илчӗç-тӗр: революцичченех поэт епле ним шикленмесӗр çырма пултарнӑ! «Питӗрте патша тронне сырса илнӗ вӑрӑ»; «Ах, хӑçан ку патшана аслати тӗл курӗ?»; «Таса мар патша йӑхне час юхтарса ярӗ» т.ыт.те. Ан тив, сӑвӑсене 1917 çулхи нарӑсри революци хыççӑн хайланӑ пултӑр. Хальхи куçпа пӑхсан вӗсен актуаллӑхӗ «сӗвӗрӗлнӗ». Совет саманинче вара вӗсем, патша йӗркисене тӳррӗн сивлекенскерсем, критика пафосӗпе пӗлтерӗшлӗ шутланнӑ. Публикаторсен çӳллӗ шайри текстологсем пулмалла тесшӗн эпӗ. Çак икӗ сӑвӑ Çеçпӗл поэзийӗн тӗнчине килтерӗшлӗ кӗреймеççӗ; поэт шайӗнче те мар вӗсем. Тата тепӗр япала та куçа тирӗнет: «таса мар патша йӑхӗ» йышши сӑмахсем Çеçпӗл пултарулӑхӗн лабораторийӗнче çуралман, вӗсем революци хумӗпе капланнӑ саманара сывлӑша çурса унта та кунта янраса-илтӗнсе тӑнӑ. Хаçат чӗлхи, вӗренчӗкле çырнӑ йӗркесем... Патша кил-йышӗ, хӗр-ывӑлӗсем мораль тӗлӗшӗнчен идеалла воспитани илни пирӗншӗн паллӑ, анчах та большевизм террорӗ тахçанах ӗнтӗ трон хуçине вараланипе çырлахмасӑр ӑна вӗлерессине те сӑваплӑ ӗç вырӑнне картнӑ.

Çавăнпа та çак икĕ сăвăра самана штампĕн паллисем куç кĕрет. Тĕлĕнме кирлĕ мар: Çеçпĕлĕн поэзири шырав çулĕ çинче (пирвайхи тапхăрта) классен юнлă тытăçăвне гипер-болăлатса ӳкересси тĕпре-ха, çавна пула уйрăм лексикăпа фразеологи тĕслĕхĕсем çине-çинех тĕл пулаççĕ. Çав тĕс-лĕхсем вăл тапхăрти самана витĕмĕ-вăйăмĕпе тӳрремĕнех çыхăннă, чăн малтанах — большевизм пичечĕ урлă килнĕ. Çеçпĕл нумай вуланă, ăша илнĕ, уйрăмах çакă Теччĕри учительсен семинарине вĕренме кĕнĕ хыççăн вăйлă палă-рать. Вăл класс кĕрешĕвне çивĕчлетме, тăшмана пуçĕпех тĕп тума йыхăракан сăвăсем вырăсла та, чăвашла та çырса пичетлет. Вĕсен йышĕнче: «Обездоленных свет в непосиль-ной борьбе...», «Пуласси», «Пурнăçпа вилĕм», «Иртнĕ са-мана», «Вăхăт çитĕ...», «Тухăр тĕттĕмрен...». Кусене 1918 çулта çырнă. «Пурăннă тарăхса, çапăçар савăнса» тесе йы-хăрни 1919 çулта пичетленĕ сăвăсенче те («В Красном море»; «Атăл юрри») тĕпре-ха. «На помощь братьям» (1920) сăвă пирки те çавнах калас пулать.

Чун юрри, тен, пирвайхи хут «Паня Бекшанский тусă-ма» (вырăсла, 1920) сăвăра ирĕккĕн шăранса тухать, кун-па сăвăç хăйĕн тӳпине палăртать. Ун хыççăн вара вăл çав шайран анмасть темелле. Сăвăсен кĕвви-çемминче минор та, мажор та черетленсе илни курăнать, анчах та поэзи шайĕ сывлăш пӳлĕнмелле çӳллĕшре.

Каярахпа Петĕр Хусанкай «Çеçпĕл шкулĕ» ăнлавăн анлă пĕлтерĕшне татăклăн уçса кăтартать. Чăваш сăввин тытăм-не теорилле никĕсленисĕр пуçне аслă поэт ăсталанă поэзи тĕслĕхĕсем малашлăха уçса палăртни, вăл пĕтĕм чăваш поэ-зийĕн тĕп çулĕ пулса тăни ку. П. Хусанкай «Пĕри сӳнсен — тепри йăлкăшар» тенĕ шухăшĕпе хăй Çеçпĕл эстафетине малалла тăснине те палăртать. Тен, вăл çак пысăк çухату пĕлтерĕшне ыттисенчен маларах тата тарăнрах туйса-ăнкар-са илет. «Çеçпĕл Мишшин чун хавалне» сăвăра вăл шăпах çавна палăртать:

Анчах лăплан, Çеçпĕлĕмĕр,
Сан ĕмĕтӳ çитĕ,
Чĕнен сассуна илтрĕмĕр,
Вăл пурне те витĕ.

Икĕ поэт хушшинчи пултарулăх диалогĕ мĕн Хусанкай çĕре кĕричченех тăсăлать. «Çил шăхăрать» сăвăра, сăмахран,

çамрăк талант Çеçпĕлĕн инкеклĕ кун-çулĕ нумай-нумай чăваш çыравçин шăпипе тӳр килнине палăртать, çавăншăн чĕререн кулянать: е яланах вăл мĕскĕн чăвашăн çав шăпара-ши талан. Сăвă кĕввине автор Çеçпĕлĕн «Чăваш поэтне Ахаха асăнса» сăввипе ĕнернĕ. Константин Ивановпа Çеçпĕл Мишшин кĕске ĕмĕрĕ, вĕсен ир татăлнă ĕмĕчĕ-ăнтăлăвĕ çинчен шухăшланă май пĕр «мистикăлла» датăна ирĕксĕрех пуçра тытатăн: виçĕ яр çутă çăлтăр тӳпере пĕрешкел вăхăт ритмĕпе пĕрин хыççăн тепри çуталса кайни çут çанталăк саккунĕпе çыхăнман-ши тетĕн. Курăр-ха акă: Константин Иванов çĕре кĕнĕ вăхăтра Çеçпĕл Мишши вун пиллĕкре пулнă. Хусанкай вун пилĕк çул тултарсан Çеçпĕл вилет. «Шанатăп хамăн çăлтăра» тенĕ Хусанкай çакăн пирки шухăшланах ĕнтĕ, унсăр пулман. Пĕтĕмлетсе каласан, çут çанталăк çуратакан чăваш генийĕ ытла та кĕске ĕмĕрлĕ. Çĕре кĕнĕ хыççăнхи вăрăм ĕмĕрĕ ăна шайлаштарма пултарасси çеç кăштах чĕрене шанчăк кӳрет.

Иртнĕ ĕмĕрти 20-мĕш çулсен вĕçĕнче Çеçпĕлĕн сăвă техникипе метрики пирки пичетре пулса иртнĕ тавлашусен пĕлтерĕшĕ пысăк. Кун пирки Митта Ваçлейĕ, Стихван Шавли тата ыттисем те уçăмлă татса каланă пичетре. М. Сироткин Çеçпĕл пурнăçĕпе ĕç-хĕлне тĕпчесе ятарлă кĕнеке кăларнине те хăйне майлă пĕр тапхăр темелле. Ун хыççăн пирĕн сăвă техникине тăпчекенсем сахал мар ĕçлерĕç. Çеçпĕл поэзине тĕпчемен тесе калама май çук. Уйрăмах поэт пурнăçĕн географипе хронологине тарăна кĕрсе тĕпченĕ, тĕрлĕ тапхăрсене пайласа тухнă. Апла пулин те самай тарăн тĕпчев ĕçĕсенче те поэтăн А. Червякова патне янă çĕре яхăн çырăвĕпе пачах усă курман тесен те ытлашши пулмĕ. Ытларах çула май хускатнă йĕркесем, татса илсе харпăр хăйĕн концепцине тĕревлеме усă курнă фразăсем. Çав çырусене туллин ятарласа тĕпчемелле-çке-ха. Енчен те тăхăр вунă çул хушши тем чарса тăнă пулсан, сăлтавĕ пурах пуль çав ĕнтĕ. Ăçта-ши, мĕн-ши вăл? Сăввисенче Çеçпĕл хăйне канăç паман шухăш-туйăмĕсене халăх çине кăларнă, вĕсенче лирика геройĕн сăн-сăпачĕ уçăмлă ӳкерĕннĕ, анчах вăл улшăнми сăн ӳкерчĕк мар. Тăвăллă самана витĕмвăйăмĕнчен пăрăнаймасть, çул шырать, классен кĕрешĕвĕн малти ретĕнче çапăçать. Çавăнпа та çав юрату-туслăх çырăвĕсене тĕпĕ-йĕрĕпе тишкерсе тухмасăр авторпа лирика ге-

ройĕн уйрăлми тымар çыхăнăвĕсене те, харпăр евĕрлĕхне те тĕплĕн уçса ăнлантарса пама йывăр. Çеçпĕлĕн интимлă (çав тери вăрттăн) пурнăçĕн нумай-нумай енĕсем лирика геройĕн сăпатĕнче палăрмаççĕ. Çакăн пирки шухăшласа кĕрсе кайсан вĕрилентерсе пăрахнăн туятăн хăвна тепĕр чухне: чăнах та çавăн пек юратма-асапланма пултарнă-ши поэт?! Иккĕленӳ кунта вырăнсăр. Анчах та литература тĕпчевçисем хушшинче иккĕленсе е пачах вырăнсăр сăмахсемпе перкелешсе калаçнисене те илтме тӳр килнĕ мана. Çеçпĕл вăхăта ирттермелле е «калемне çивĕчлетмелле» (ал хăнăхăвĕ) çеç çырнă пулать Червякова патне.

Мĕн хистенĕ-ха паян кунччченех чăнлăха куçран пăхма хăраса пурăнма, ăна курмăш пулса тăма? Кунта çăмăлттайсен çăмăл сăмахĕ пирки çеç мар каламалла. П. Хусанкай та çав хăрушла контрастсене, чун кукринче чакаланса асапланнисене, поэт хăйне хăй çинине вулакансене ăнланмалла уçса пама май килмест-ха (иртерех!) тесе шутланă пулмалла. Суя ĕмкĕчпе ăша сăрхăнса кĕнĕ наркăмăш ман ăрăвăн пуçне (пирĕн умĕнхисенне те) хытă минретнĕ паллах. Эпир Çеçпĕлĕн парти цензурин али витĕр тухма пултарнă çырăвĕсене вуласа çитĕннĕ. Вĕсем пуçласа поэтăн 1959 çулта тухнă «Çырнисен пуххинче» кун çути курнăччĕ. Паллах, вĕсенчи шухăш-туйăма пичете хатĕрлекенсем, тĕрлĕ маймелпе усă курса, улăштарса, йăвашлатса «хăйсен шайне» (идеологи хистевĕ!) антарса лартнă. Апла пулин те кунашкал хальлĕн кун çути кăтартни те çав вăхăтшăн пĕлтерĕшлĕ пулнă. Унашкал операцисем 60—70-мĕш çулсенче те çитеĕклех пулнă-ха, вĕсем çинче чарăнса тăмăпăр. Çав ăста сăрăçсем хăйсен пĕтĕм пултарулăхне пĕр тĕллеве пурнăçлас ĕçе хывнă: тахçан пĕрре турăш е идол пек хытарса лартнă поэт сăн-сăпатне (официаллă хак) епле те пулсан упраса хăварасси ĕнтĕ ку; унта чĕрĕ сăр-йĕрсем хушма юраман. Поэт-революционер ăнлавра вара иккĕмĕш пайĕ тĕп пĕлтерĕшлĕ шутланнă, урăхла каласан, сăвăçа хăйне те хулпуççипе кăвак пĕлĕте перĕнекен сăвă геройĕ пек курма тытăннă. Çеçпĕл вара революци тăшманĕсемпе хаяррăн çапăçнисĕр пуçне Илем тĕнчишĕн тунсăхлать, юратнă хĕрарăмĕпе çывăх пулма ĕмĕтленет, чĕрине çунтарать. Поэзи уншăн чун уççи, хаяр самана кĕрлевĕнчен самантлăха та пулин пытанмалли хӳтлĕх. Унпа пĕрлех революци шăпипе ун

пуласлăхĕ пирки чуна çунтарса шухăшлани те. Çавăнпа та пуçĕпех пытанма ниепле те май килмест. Чун-чĕрере хирĕçӳллĕ шухăш-туйăмсем пăтратнă сăпса йăви пек пăтранаççĕ, канăç памаççĕ. Енчен те сăвăçăн А. Червякова патне çырнă çырăвĕсем упранса юлман пулсан ун сăн-сăпачĕ, чун-чĕри, пурнăçĕ темиçе хут «чухăнрах» курăннă пулĕччĕ пире паян. Тен, вăл чăннипе мĕнле этем пулнине ăнланса та илеймен пулăттăмăр.

Çеçпĕл Червяковăпа 1919 çулхи çулла Теччĕ хулинче паллашнă. Çакăн хыççăн вăл ун патне 1921 çулхи çу уйăхĕччненех çырса тăнă. Чĕмпĕртен Теччĕри тăванĕсем патне хăнана килнĕ хĕрарăм библиотекăна ĕçе вырнаçать, вара ун хăналăх тапхăрĕ те 1920 çулхи нарăсченех тăсăлать. Шел те, Червяковăн Çеçпĕл патне янă хуравĕсем упранса юлман, вĕсем поэтăмăра тарăнрах ăнланса илме май панă пулĕччĕç. Уйрăмах Çеçпĕл çырăвĕсенчи хăш-пĕр «тĕксĕм» вырăнсем çине çутă ӳкерме пулăшĕччĕç; шел, çав вăрттăнлăхсене иккĕш те ĕмĕрлĕхе хăйсемпе илсе кайнă. Эпир вара мĕн упранса юлнишĕн те тавах турра теме тивĕçлĕ.

Çырусене вуланă май поэт чунĕ çунатланса, шухăшкăмăлĕ çĕкленсе пынине асăрхамасăр тăма май çук. Юрату туйăмĕ поэтшăн пурнăçри йывăрлăхсене çĕнтермелли тĕрек пулса тăрать, каярахпа унăн чун-хăватне хавшатакан (наркăмăш пек) пулăма куçса пырать. 1920 çулхи хĕл пуçламăшĕнче вара, Червякова Чĕмпĕре каялла таврăнма хатĕрленнĕ кунсенче, вăл хăйне тĕнче пĕтес, хĕвел çути пач сӳнес тапхăрти пек туять. «Паян... чăннипех те юлашки кун пулать-ши ĕнтĕ. Эсир кунтан каялла каяс кун, мĕн тери хăратать те вăл мана, çывхарнă та, эпĕ ниепле те çав куна чĕрепе йышăнаймастăп». «И кунсем иртет, шăналăкпа карса та чарас çук», — тесе юрланă асаттесем. Акă Червякова Чĕмпĕре ăсаннă хыççăн пушăн 19-мĕшĕнче çырнă йĕркесем. «Эпĕ Сире çуркунне пуçласа тĕл пулнăччĕ, хĕлле вара телейĕм вĕçленчĕ». Çеçпĕл хăйне хĕл кунĕсенче çеç телейлĕ пулнă тесе шутлать. «Нуся, Эсир — манăн яшлăхăм, Эсир — манăн пирвайхи телейĕм, Эсир — манăн пирвайхи юратăвăм. Эпĕ Сире кĕлтăватăп. Сирĕнсĕр манăн пурнăçăм тĕллевсĕрленчĕ». Поэт çунни, асапланни, пĕчченлĕх туйăмĕпе кĕрешни кашни йĕркере сисĕнсе тăрать. Пушкина, сăмахран, Анна Керна юратса пурăннă кунсем хавхалану

кӳреҫҫӗ. Кунсӑр пуҫне ҫак ҫӗкленӳллӗ те таса туйӑмпа ҫуралнӑ юрату прозӑлла вӗҫленет. Тӗпчевҫӗсем кун пирки асӑнсах каймаҫҫӗ.

Ҫеҫпӗл юратӑвӗнче, кунсем иртнӗ май, трагеди нотисем сисӗнме пуҫлаҫҫӗ. Ҫавӑнпа та кунта Ҫеҫпӗл юратӑвӗн хӑйне евӗрлӗхне, ҫав туйӑм генилӗхпе ҫураҫуллӑ пулнине манма юрамасть. Тен, темиҫе мӗльюн ҫынран пӗрне ҫеҫ пӳрнӗ ҫакӑн пек туйӑмпа ҫунатланса-асапланса пурӑнма. Ҫеҫпӗл туйӑмӗсенче, обыватель куҫӗпе пӑхсан, айванлӑх та, пурнӑҫа пӗлменни те курӑнма пултарӗ. Хальхи самана-ра арҫынпа хӗрарӑм хутшӑнӑвне ансатлатса, выльӑх шайӗнче кӑтартасси пурнӑҫ йӗрки е норма пулса тӑчӗ. Юрату сӑмаха словарьсенче «секс» ӑнлавпа улӑштарма ӗлкӗреймерӗҫ пулас-ха. Отто Вейнингер «Пол и характер» кӗнекинче акӑ мӗн калать: «Сӑхланулла туйӑм, ӳтпе ӳте сӗрӗнтерсе, юратӑва вӗлерет». Ҫеҫпӗлӗн ҫунатлӑ (платоникӑлла) юратӑвӗ ку тӗлӗшрен хӑйӗн чӗр кӗмӗл пек тасалӑхне мӗн вӗҫне ҫитиччenех упраса хӑварать. Ҫичӗ-сакӑр уйӑх хушши поэт хӑйӗн савнӑ хӗрарӑмӗпе кашни кун тенӗ пек куҫа-куҫӑн тӗл пулсах тӑрать, анчах та вӗсем ар-хӗрарӑм ҫывӑхланӑвӗ патне ҫитмеҫҫӗ. Ку ҫеҫ те мар, ҫырӑвӗсенче Ҫеҫпӗл хӑйӗн туйӑмӗсене пытарма тӑрӑшать, мӗншӗн тесен вӑл хӑйне ҫавӑн пек илемлӗ хӗрарӑма тивӗҫсӗр тет, хӑйӗн сӑн-пичӗ илемлӗ маррине час-часах асӑнать, чӑваш йӑхӗнчен тухнишӗн намӑсланать, хӑйне ҫавӑншӑн айӑплать. Ҫавӑнпа та Ҫеҫпӗл характерӗпе психикине, шалти тӗнчине, ҫав тери сисӗмлӗ те аманчӑк чунне курмасӑр хӑватлӑ поэзи ҫӑлкуҫӗн таппине туйса илме, ун хӑйне евӗрлӗхне ӑнлантарса пама йывӑр. Кирек мӗн каласан та, Червякова илемлӗ хӗрарӑм ҫеҫ мар, ӑс-тӑн тӗлӗшӗнчен те аталаннӑ ҫын пулнӑ, ҫынсене пӗлни те, пурнӑҫ опычӗ те ҫителӗклех ун. Кунсӑр пуҫне ку вырӑс характерӗ пулнине те манма юрамасть. Паллах, поэт юратнӑ хӗрарӑмне кӑштах идеализацилет те пулӗ. «Эсир ман йышши мар», «илемлисен тӗнчинчен» тет ӑна вӑл. «Эсир, хитрисем тата вырӑссем, илемсӗр чӑваш шӑпи синкерлӗ пулнине нихӑҫан та ӑнкарса илеймӗр». Ҫеҫпӗл кунта хӑйне ҫав тери пӗчӗклетет те мӗскӗнлетет пек курӑнать. Анчах та вӑл ҫавӑнтах, ҫыру вӗҫӗнче, ҫапла хушса хурать: «Эпӗ нихӑҫан та мӗнле-тӗр хӗрарӑма хама юраттарасшӑн тӑрӑшман». Юратнӑ-ши Червякова поэта? Поэт чӗри кӑвак ҫулӑмпа

çуннă хушăра вăл пĕрре те хăйĕн туйăмĕсене тулаша кăлармасть, сайра хутра сивлек маска тăхăнать. Анчах та çакă иккĕлентерместь: Çеçпĕл тем пек юрату туйăмне пытарасшăн тăрăшсан та хĕрарăм чĕри çакна витĕр туйса тăнă. Ăçтан пытарăн-ха чун суранĕсене? Хĕрарăм çакна йăлтах сиссе тăни, анчах та палăртасшăн пулманни çырусенче куç кĕрет. Поэт калас тенĕ сăмахне чун тĕпĕнче усранине, вăтаннине, иккĕленнине, хирĕçӳллĕ туйăмсемпе кĕрешсе асапланнине витĕр курса тăнă çеç мар, кĕрлесе çунакан вут-кăвара типĕ вут-шанкă пăрахса чун асапне вăйлатать вăл; пĕрре чĕрене бальзам тумлатса çунат хушать, ун хыççăн наркăмăш тумламĕпе тĕнче илемне кăмрăклатать, шанчăка сӳнтерет, Çывăрайми туса асаплантарать. Самантăн-самантăн Çеçпĕл «тĕнчи» Червякова тавралăхĕ-чикки таран ансăрланать, вăл урăх ним (никам) çинчен те шухăшлайми пулать. Курăрха, çакăн пек йывăр самантра поэта Червякова мĕнле сăмахсемпе «ачашлать»: «енчен те Эсир йăлтах, библиотекăна та, мĕн пуррине пурне те манăçа кăларсан мĕн тери лайăх пулнă пулĕччĕ». Поэтăн телейĕ-хĕвелĕ библиотекăра кăна иккенне, урăх ниçта та пулма пултарайманнине вăл никамран та лайăх пĕлет-çке-ха — ку вăл вĕсен иккĕшĕн вăрттăнлăхĕ. Çакă вăл поэт чĕрине вăйлăрах вут хыптарас тени ĕнтĕ, мăнкăмăллăх палăрăмĕ. Юрату вăййин йĕркисене опытлă хĕрарăм нумай лайăхрах та тарăнрах пĕлни витĕр курăнать кунта.

Хăй ĕнентернĕ тăрăх, Çеçпĕле телейлĕ пулма нумай кирлĕ мар, вăл сахалпа çырлахма та пултарать: ку йăлтах кăмăл çаврăнăшĕнчен, шалти килĕшӳлĕхрен килет. Савнă хĕрарăмăн йăл кулли ăна такамран та телейлĕрех тума пултарать. Червякова çырăвĕнчи ăшă сăмах уншăн темрен те хаклă, çак хĕрарăмпа юнашар чух унран телейлĕ çын та çук. Çеçпĕл хăйĕн ĕмĕчĕсемпе телейлĕ, анчах вĕсене хăй юратакан хĕрарăмăн ăнсăртран е калас тесех каланă хăшпĕр сăмахĕсем лап сӳнтерсе лартма пултараççĕ. Апла пулин те вăл вĕçĕ-хĕррисĕр чун асапĕпе асапланма хатĕр. Телей çăлкуçĕ уншăн асапра тейĕн. «Ман шупка, пĕчĕк, телейсĕр кĕлеткеме курсан шалти улăпла асапăма кам сисме пултартăр». Чун пурнăçĕн масштабĕ пирки калать кунта поэт. Ку вара чăннипех те гени шăпи — асап чулĕпе хăйраса чуна çутатасси, ăна çунатлантарасси. Мăшăр çунатсăр тĕнче

поэзийĕн шайне çĕкленме çук. Ăнсăртран мар Çеçпĕл хăй шăпинче Икар трагедине курать: кăвак сенкерлĕхре ирĕклĕн вĕçесси ку. Анчах Икар хĕвел çывăхне ытлашширех хăпарать, çуначĕсен ăвăсне вĕрипе ирĕлтерсе çĕре персе анса вилет. Ку сăвва («В солнечную Мань синевы...», 1922) поэт вилес умĕн кăшт маларах çеç çырать. Çавăнпа вăл пĕтĕм кун-çул пĕтĕмлетĕвĕ пек курăнать. Хырăмпа шуса карьера тăвакансем, çемçе пукана çатăрласа тытнисем, кĕвĕç чунлисем пĕр-пĕччен тенĕ пек вĕçеве çĕкленнĕ «Чăваш Икарĕн» çуначĕсене персе амантаççĕ. Мĕнле-ха пĕччен пултăр тейĕç теприсем. Паллах, пулма пултарнă Çеçпĕл айăпсăррине ăнланакансем, сăмахран, Василий Дмитриев. «Юлашки юлташăм-тусăм — Дмитриев В. паян Мускава тухса кайрĕ. Мĕн чухлĕ ăшталанчĕ вăл маншăн хам тĕрмере ларнă кунсенче. Акă ĕнтĕ тинех тăр пĕччен тăрса юлтăм». Ку йĕркесене Червякова патне çырса янă, 1921 çулхи акан 14-мĕшпе палăртнă. Поэт суд пуласса кĕтет-ха. «Хам тавралăхри «коммунизм» чиновникĕсем хăсас килтермеллех йăлăхтарса çитерчĕç», — тет поэт тепĕр кунхине çырнă çырăвĕнче. Çак хăрушла йывăр тапхăрта поэта шалти ĕненĕвĕ тĕрек парса тăрать, çавна пула бюрократи машини ăна таптаса лапчăтаймасть-ха, анчах та чунне йывăр суранлатать. «Чăнлăхпа Ирĕклĕхĕн чи хăрушă тăшманĕ — пĕр йыша чăмăртаннă пысăк ушкăн», — тенĕ Г. Ибсен. Мĕнле хăйтăр-ха кунашкал ларутăрура тăр пĕччен çын пысăк ушкăна (е пурне те!) хирĕç кайма! Кунта системăна çĕнтересси пирки сăмах пымасть, пĕртен-пĕр тĕллев — çав хĕсĕрлеве чăтăмлăн тӳссе ирттересси. Паллах, пурин те хăват çитеймест çакна валли, нумайăшĕ хуçăлать, сутăнать е хăй çине алă хурать. Чăнлăхĕ вăл каярахпа пурпĕр çиеле тухать, анчах та шел, айăпсăр инкек курнă çынни куçне хупса ĕлкĕрнĕ ĕнтĕ е чĕрине çунтарса кăмрăклантарнă. Текех ĕнтĕ вăл кĕрешӳçĕ мар. Тӳррипе, теветкелленсе, вилĕмрен те хăрамасăр пысăк тĕрĕслĕхе хӳтĕлекенсен шăпи ялан тенĕ пек инкеклĕ.

Пĕр сăмахпа каласан, Çеçпĕлĕн чи хăрушă тăшманĕсем, кĕвĕç хура чунсем, сурăх тирĕпе витĕннĕ кашкăрсем куллен-кун юнашар пулнă, унăн кашни утăмне сăнаса тăнă, компромат пуçтарнă. Тӳррипе, вăл хăйĕн принциплăхĕпе, хăй калашле, «нишлĕ чунсене» витĕр курма пултарнипе вĕсене шиклентернĕ. Шутласан, ку урăхла пулма та пулта-

райман. Çирĕмри йĕкĕте Чăваш автономи облаçĕнчи ревтрибунал председательне, кăшт каярахпа юстици пайĕн пуçлăхне лартаççĕ. Турă панă нумай енлĕх, поэтăн хăватлă таланчĕ, революцилле ĕмĕтпе вĕресе тăракан чун-чĕре — ыттисем хушшинче ытла та курăмлă сăн-сăпатпа уйрăлса тăнă паллах. Çавна пула ытлашширех те тиеннĕ вăл, темиçе çын валли çителĕклĕ ĕçе пĕччен кӳлĕннĕ. Çав вăхăтрах пĕчĕк чунсемпе карьеристсем Çеçпĕл çакăн пек «çăмăллăн» çӳле хăпарнинче тĕрĕсмарлăх кураççĕ — вĕсене темшĕн асăрхамаççĕ-çке-ха, ӳсме чарса тăраççĕ. Шел те, Çеçпĕл вĕсен хăрушлăхне малтанхи вăхăтра хакласа çитереймен туйăнать, хăйне суя айăппа хупса лартсан çеç тишкерме тытăнать вăл вĕсен психологине. Тĕпрен илсен, Моцартпа Сальери хушшинчи ĕмĕрхи хирĕçӳлĕх пысăк вырăн йышăнать кунта. Теччĕре, Чăваш автономи тулашĕнче ĕçлесе пурăннă чух çак сывă мар пулăма асăрхасах кайман вăл. Ун историри тымарĕсем тарăнра пулни пирки те пуç ватсах кайман. «Мĕн тума килмелле пулчĕ кунта? Мĕншĕн-ха пĕрех хут Теччĕрен тӳрех художество шкулне каймарăм?» Чавса çывăх та, çыртма çук. Çеçпĕл, ĕçтешĕсен каварлăхне пула инкеке лекнĕскер, чăваш психологийĕн уйрăмлăхĕсем пирки шухăшлать. Ăçтан килет вăл пĕрлĕх çукки, пĕр-пĕрне ура хурасси, сутасси? Çыннăн ăнăçăвĕ-çитĕнĕвĕшĕн мар, инкекхуйхишĕн ывăç тупанĕсене сăтăркаласа савăнасси?! Çапла кирлĕ-ха сана, пуçна каçăртса ан çӳре... Митта Ваçлейĕ каларăш, «вăл аслати, гроза, ун патне кĕр эсĕ хăраса». Кун йышши пуçлăха чăваш пăхăнать, упаленме хушсан — упаленет. Хисеплесе е хакласа мар — хăранăран. Тен, ун сĕтелĕ çинчен çăвара тĕпренчĕк кĕрсе ӳкĕ. Çеçпĕлĕн ертсе пырас ĕçĕнчи стилĕ пачах урăхла: вăл чуралăх туйăмне сивлет, ылханать, чăваш хăйне танлă тыткалама хăнăхасса ĕмĕтленет. Анчах та пурнăçри улшăнусем хăвăрт пулса иртеççĕ, тăватă уйăха яхăн ертсе пырать вăл республикăри ревтрибунала, унтан ăна арестлесе хупса лартаççĕ. Çеçпĕлĕн трагизмла урокĕ паян кунччен мĕне те пулин вĕрентнĕ-ши пире? Иккĕлентерет, темĕн.

Тĕрмере ларнă хушăра Çеçпĕл пурнăçри нумай япала çине урăх куçпа пăхма тытăнать. Тӳррипе каласан, вăл ĕнтĕ халь пачах урăх çын темелле. Хăйĕнпе мĕн пулса иртнине тӳрех ăнланса илме те йывăр ăна. Тăватă уйăх вăл хăйне

ним чухлĕ те шеллемесĕр, тăраниччен çимесĕр, çывăрса тăранмасăр, пур пек вăй-халне революци саккунлăхне çирĕплетес ĕçе пана. Хурапа шурра пурте пĕр пек курасса ĕненсе тăни, хăйне хӳтĕлес тесе çине тăманни ăна хăрушă инкеке кĕртсе ӳкерет. Уйăх ытларах тĕрмере ларнă Çеçпĕл унтан сывлăхне тĕпĕ-йĕрĕпе хавшатса тухать. Ватă çын тесе çырать вăл халь хăй пирки. «Нуся, эпĕ çав тери япăх çыратăп. Ан кӳренĕр. Эпĕ вырăнпах выртатăп, çавăнпа та çыпăçуллă çырма вăй çитерейместĕп. Çырнă хушăра ручка час-часах алăран тухса ӳкет. Ан кӳренĕр! Ку тирпейсĕрлĕх мар. Пĕр чĕптĕм те хал çук» (1921, акан 14-мĕшĕ). Кунтан та хăрушăраххи, тен, пĕчченлĕх туйăмĕ. Парти пухăвĕсене çӳреме чараççĕ, общество ĕçне хутшăнтармаççĕ, тус-юлташ юлман, ĕçтешсем тĕл пулсан куçа тартаççĕ, суд туса айăплăва татăклăн сирме те васкамаççĕ, çав хушăрах çын айăпсăрри пуриншĕн те паллă темелле ĕнтĕ. Акă мĕншĕн çак йывăр самантра Çеçпĕл юратнă хĕрарăмăн хыпарне тӳсĕмсĕррĕн кĕтет, ӳпкелешет, йăлăнса ыйтать, тилмĕрет. Пĕр енчен, асап сăнчăрĕпе сăнчăрланнă улăп ӳчĕпе чунĕн суранĕсем, ун (хăй калашле) какайланнă чĕринчен тумлакан юн тумламĕсем чуна çӳçентереççĕ; вăл çырусене çырма та чернилпа мар, юнпа çырнă тейĕн. Юратнă çынран хыпар килменни чĕрене йывăр чул катрамĕ пек хĕсет, поэт çав хушăра çыру хыççăн çыру ăсатать: «Сирĕнтен пĕр сăмах та кĕтсе илеймерĕм». Акă ĕнтĕ шанчăк çути те сӳнчĕ тейĕн: «Енчен те Эсир, тус пулса, мана наркăмăш илсе килсе парсан мĕн тери тав тунă пулăттăм Сире...» Юрату вутçулăмĕпе çунакан яш чĕрешĕн кунашкал пурнăç хăйĕн пĕлтерĕшне çухатнă ĕнтĕ.

Вилĕм теми, хăй ирĕкĕпе пурнăçран уйрăлса каясси пирки шухăшлани çыруран çырăва куçать, тĕрмере ларнă хушăра е унтан сывлăхне хытă амантса тухнă хыççăн поэта вилĕмĕн çывхарнă ĕмĕлки хура çунат пек хупласа тăрать пĕр вĕçĕмсĕр. Виçесĕр тарăн юрату кăварĕ Çеçпĕле шалтан çунтарать, тĕллĕн-тĕллĕн вăл хăйне ăсран тайăлма пуçланăн туять. Теччĕре пурăннă чухне çырнă çырурах (1920, пушăн 16-мĕшĕ) сисĕнет çак: «Эпĕ паян хама хам туйни пирки çынсем хăçан та пулсан «вăл ухмаха ернĕ пулнă» теессĕн туйăнать». Шăпах çавнашкал самантсенче Çеçпĕл «тĕпсĕр шырлан хĕрринче» унăн çӳçентерекен тĕпсĕрлĕхне шухă-

шĕпе виçет. Тен, çавăнта чăмсан çăлăнăç килĕ?! «Эсир кунтан пăрахса каясси мана вилĕм пирки шухăшлама хăнăхтарчĕ»; «Эпĕ ку шухăша нихăçан та пăрахăçлас çук»; «Тĕрмере наркăмăш ĕçме хăтланса пăхрăм, анчах пулăшмарĕ, усăсăр асапланни çеç пулчĕ»; «Халь мана кам та пулин çакăнма пулăшсан мĕн тери телейлĕ пулнă пулăттăмччĕ»; «çакăнасчĕ, ах, çакăнасчĕ». Хурçă характер хаяр кĕрешӳре чи юлашки пĕртен-пĕр хатĕр вырăнне суйласа илет çак синкерлĕ утăма. Нумай хутчен пырса тухать Çеçпĕл вăл трагизмла шухăш патне. Çак çырусене тарăн тĕпчесе, ман шутпа, опытлă психоаналитик поэт пурнăçĕ синкерлĕ вĕçленнин тĕп сăлтавне пур енлĕн тишкерсе, ăнлантарса пама пултарĕччĕ. Паллах, кунта ытти сăлтавсемпе лару-тăрусене те асра тытас пулать.

Çеçпĕл шухăш-туйăмĕсене, вăл тунă кашни татăклă утăма, мĕне те пулин хакланине, чун сăмахĕсене обыватель аршăнĕпе виçме май çук. Гени чун шайлашăвне çухатнă хушăра та, вăйсăрлăх саманчĕсенче те гениех. Пушкин çакăн пирки калать те шăпах: «Врете, подлецы. Он подл и низок не так, как вы». Ухмаха ериччен юратма пултарни те çут çанталăкăн ынатлă парни вăл е Турă пӳрни. Пин-пин çыншăн вара ку путĕш е вăхăта ирттерни çеç. Çеçпĕл вăрттăнлăхĕпе тупсăмне Червякова патне янă çырусенче тĕплĕнрех шырас пулать. Поэт хăй чунне тишкерни, хăйне çав тери тиркевлĕ хаклани тăршшĕпех куç тĕлне пулать унта. «Тахçан çирĕплетнĕ нормăсене, çын ирĕкне тăлласа тăракан чикĕсене тӳсме пултараймастăп», — тет поэт.

Гени кĕтӳ çӳрекен сукмакпа çӳремест, хăй çул хывать. Ун характерĕпе чун хавалĕн вăйлă енĕсем те, хӳтсĕрлĕхĕ те никамăнни пек мар, йăлтах хăйне çеç тивĕçлĕ майлă. Çеçпĕлĕн вĕçĕмсĕр асап кӳрекен юратăвне курма-ăнланма догмăлла шухăшлама хăнăхни хăй вăхăтĕнче шутсăр сарăпланă пулнă. Ревтрибуналпа юстици пайне ертсе пыракан Çеçпĕлре хурçă пек («Железный Феликс») çирĕп те шăнăрлă характер, хура халăх тăшманĕсене пĕр шелсĕр революци саккунĕпе суд тăвакан, юнлă хĕçе алран вĕçертмен «класс чăнлăхĕн» салтакне, тĕрĕсрех каласан, ун шухăшласа кăларнă сăнарне ялав пек çӳле çĕкленĕ. Тӳррипе, ку Çеçпĕл сăн-сăпачĕн хăрах енĕ çеç. Червякова патне янă çырăвĕсенче унăн аманчăк чунĕ, хӳтсĕрлĕхĕ, хăйне çав тери

пĕчĕке хурса хаклани, хăй чунне пĕр шелсĕр кăшлани, юратнă хĕрарăмĕн сăнарне романтизмла ореолпа çупăрлани çиелтенех курăнса тăрать. Çеçпĕл хăйне идеалист тет, шупка та пĕр енлĕ пурнăç юхăмĕнче ăна тăвăр, чун çуначĕсем уçă варкăша тунсăхлаççĕ. Карьера пусми тăрах хырăмпа шуса хăпаракансене вăл ăмăрт кайăк куçĕпе тӳперен тинкерет; куçа курăнакан ӳкерчĕк ăна йĕрĕнтерет. Мĕншĕн тесен вăл хăй пысăк ĕç вырăнĕшĕн хыпăнмасть. Акă курăрха, чăвашра элек-çăхав çăлкуçне типме паманнине Çеçпĕлĕн инкеклĕ кун-çулĕ епле витĕмлĕ кăтартса парать.

Один донес, якобы он слышал, что я нанял прислугу сжечь здание отдела юстиции, когда я уеду в Казань. Словом, у меня много было недоброжелателей, готовых столкнуть меня в каждую минуту... Когда мне предъявили обвинение, я сказал, что не дорожу должностью, как они — бюрократы, и для фурора признал себя виновным, сказал, что нанимал прислугу сжечь отдел юстиции и все Чебоксары... Все располагало меня к разным чудачествам.

Тахçанах такам каланă чăн сăмахăн пĕлтерĕшĕ пысăк: çын кам иккенне пĕлес тесен вăл мĕнле шухăш-туйăмпа кун кунланине ăнланса илмелле. Çеçпĕл çырăвĕсенче унăн аслă та пуян шалти тĕнчи, чун пурнăçĕн палăри-палăрми хусканăвĕ таранах тĕрлĕ енчен сăнланнă, çавăнпа ăна урăхла тĕрĕллĕ тĕнче темелле, вăл Çеçпĕле çеç тивĕçлĕ тĕрĕпе тĕрленнĕ. Çирĕм çул тĕлне вăл этемлĕх культурин чи паха тĕслĕхĕсене ăша илнĕ, çав вĕçĕ-хĕррисĕр пуянлăха тишкерсе тавракурăмне анлăлатнă. Çав эрудиципе вăл, тĕлĕнмелле тарăн психолог пулнă май, Червякова чун-чĕрине вĕçĕмсĕр чĕрĕ сĕткен парса тăнă, ăна хăй вăйне шанма пулăшнă, унра Илем туйăмне çивĕчлентернĕ. Акă мĕншĕн Çеçпĕл хăйĕн «çитменлĕхĕсене», шалти пурнăçĕн вăрттăнлăхĕсене çине-çинех юратнă çыннине уççăн пĕлтерет. Хăватлă чĕри хистет ăна çапла тума, хăй вăйне шанни. «Енчен те пысăк пĕлӳллĕ çын хăй пĕлнине сăпайлăн пытарма тăрăшать пулсан вăл çӳллĕ шайра. Теприн пĕлĕвĕ çук, анчах хăйне пĕлнĕ пек кăтартма тăрăшать пулсан вăл чирлĕ», — тенĕ Лао-Цзы.

Çеçпĕл чĕрине кăвак çулăмпа çунтарнă, тем чухлĕ асап, чун ыратăвĕ кӳнĕ юрату туйăмне ăссăрлăхпа çыхăнтарма хатĕр обывателе Демокрит сăмахĕсене аса илтерни вырăнлă пулĕ: «Никто не может быть великим поэтом, не впадая в

безумие». Ман шутпа, çак хăрушла тарăн шухăша ăнланма пултаракан Çеçпĕл трагизмне те ăнкарса, чĕрине илме тивĕçлĕ. Философ шухăшĕн тĕшшине катма вăй çитерейменсене вара нимле комментари те, чăмласа ăнлантарни те пулăшу кӳрес çук. Мĕншĕн тесен çут çанталăк саккунĕ çынсене «тĕрĕллĕ» çуратать терĕмĕр. Çавна пула «пархатарли ытларах этем тивĕçĕ пирки шухăшлать, пархатарсăр çын пайта-тупăша пуринчен мала лартать» (Конфуций).

Çырăвĕсенче Çеçпĕл хăйĕн чи вăрттăн туйăмĕсене уçать, хăй идеалне çывăх хĕрарăм ăнланасса шанать, унпа калаçса, çылăх каçарттарнă пек, чунне тавăрса çарамаслантарать. Чĕре тĕпĕнчен тухса вĕçекен «кайăк ĕмĕтсем» чылай чухне Çеçпĕле хăтлă йăвасăр тăлăхсем пек туйăнаççĕ; вĕсене вăл кунĕн-çĕрĕн вĕçтерме хатĕр, анчах та савнинчен çунатлă хыпарçăсем сайрарах вĕçсе килеççĕ; апла пулин те килекенĕ пĕри тепĕр çыру киличчен темиçе кун пурăнмалăх тĕрек хушать, шанчăк чĕртет. Çапла кун хыççăн кун.

Эпир поэтăн уйрăм çырăвĕсем çинче çеç кĕскен чарăнса тăтăмăр. Çĕре яхăн çырăва тарăнрах та туллинрех тишкерсе тухсан Çеçпĕл тĕнчи сулмаклăрах та калăплăрах куç умне тухать, ун шалти чун-чĕрин пурнăçĕ поэзири лирика геройĕннинчен чылай пуянрах та тĕрлĕ енлĕрех пулни яр уççăн палăрать.

Çырусене вуланă май Çеçпĕле çуратма пултарнă халăхăн менталитечĕ, чун-кăмăлĕн хăйне евĕрлĕхĕпе пахалăхĕсем пирки те çине-çинех шухăша ӳкетĕн. Тем тесен те халăхăн уйрăлми пĕр пайĕнче чăваш космосĕ хăйĕн чи пысăк пĕлтерĕшлĕ пахалăхĕсемпе тата шалти илемĕпе çеç палăрса тăмасть; Çеçпĕлĕн «вăйсăртарах» енĕсем те, вĕсем пирки çӳлерех асăнтăмăр, халăх хевтипе чунне шалтан ăнкарса илме май параççĕ. Тен, эпир çав çитменлĕхсене хамăрта (чылай вăхăт хушши Çеçпĕлре те!) асăрхасшăн мар, пытарасшăн, тен, вĕсене тĕнче умне кăларсан хамăр ытла мĕскĕннĕн курăнасран шикленетпĕр?! Чăн та, чăваш чунĕнчи çав ирĕлми тăвар катăкне асăрхас темен çынсем те пур пирĕн: ун йышшисем хăмпăланнине ĕненес пулсан, чăваш пĕтсен — тĕнче пĕтет, чăваш чĕлхи — тĕнчери мĕнпур чĕлхесен амăшĕ, чăваш мĕн авалтан ытти халăхсем хушшинче хастарлăхĕпе, хăюлăхĕпе, пуçарулăхĕпе, никама пăхăнманлăхĕпе, чăрсăрлăхĕпе (шакурлăхĕпе) уйрăлса тăнă

т.ыт.те. Ман шутпа, шухăшсăр «патриотизмăн» уссинчен сиенĕ ытларах, паллах, тепĕр чухне пуçа пылаккăн минретсе, кăвапана сăтăрса, мăччаналла суркаласа ларасси тем пек илĕртӳллĕн туйăнсан та. Шел те, çав «никама пăхăнманлăх» çитеймен çав чăваша нумай-нумай ĕмĕр тăршшĕ истори çулĕпе утнă май, ытларах хĕн-хур айĕнче пурăннă вăл. Кун пирки Çеçпĕл сăввисене (сăмахран, «Катаран каç килсен...») тепĕр хут вулăр. Пулнине пулман, пулманнине пулнă тенипе нихăçан та малалла каяймăн. Тутар ханлăхĕн пусмăрĕнче пурăннă тапхăра çеç илес пулсан та, мĕн кăна тӳссе ирттермен-ши халăхăмăр! «Пирĕн ăшра вут çунать, çулăм тухни курăнмасть». Хĕртнĕ тимĕре туптанă пек пиçĕхтернĕ чăваш хăй чун-кăмăлне çавнашкал тӳсмелле мар йывăр та хăрушă лару-тăрусенче, вĕçне çитсен тип шарта «çăлăнăç» курни те пулнă. Çавăнпа та Çеçпĕл характерĕн хирĕçӳллĕ енĕсене хăйне çуратнă халăхран уйăрса хакламасан ăнланма йывăр мар. Тĕрĕсрех каласан, вĕсене пытарма е курмăш пулма кирлĕ мар. Çынра пурте виçеллĕ пулмалла тенине асра тытсан ытлашши сăпайлăх е вăтанни те пысăк çитменлĕх пек курăнма пултарать. Хамăртан хамăр виçесĕр нумай ыйтасси (тепĕр чух мазохизм енне сулăнакансkер), хамăра çиесси чăвашра çук тесе кам çирĕплетсе калама пултарать?! Этем психологине тĕпчекен специалистсем ĕнентернĕ тăрăх, чире пытарса е асăрхамăш пулса мар, тăрă ăс али витĕр кăларса, вăхăтра сиплесе çеç çĕнтерме пулать. Тахçанах шала кайнă чиртен сыватма йывăртарах, анчах та пурпĕр малтан пациент çакна хăй ăнланса илме тивĕçлĕ.

Калас пулать, Çеçпĕл лирикине те синкерлĕх тĕввипе туртăм-сулăмĕ тĕпренех витернĕ. Çавăнпа та юрату çырăвĕсен пĕлтерĕшĕ калама çук пысăк, вĕсем лирика геройĕн шалти тĕнчин, чун-чĕрин «тĕксĕмрех» енĕсене «çутă пайăркипе» çутатса тĕпчеме пулăшаççĕ. Чăн пурнăçри фактсемпе пулăмсем, поэзи лаççинче шăранса, лирика геройĕн чунчĕрине епле сăрхăнса кĕнине, калăпланни-ӳкерĕннине танлаштарса тĕпчесси пирки пырать сăмах.

Эппин, çак логикăлла саккуна тепĕр утăм туса пăхарха.

*2009*

Ачаранпа ял хӳттинче ӳснĕччĕ,
Чĕрем паттăр — хура уйра тĕрмешме.
Хула енне ухсан чĕре улшăнчĕ —
Ахăр, хула сĕткен юна çапрĕ пуль.

*Федор Павлов*



## ВĔÇЕВРЕ ХУÇĂЛНĂ ÇУНАТ

Чи пысăк виçепе виçес пулсан чăваш культури ĕçченĕсен капмар йышĕнче Федор Павлов талантне камăннипе танлаштарма май килетши? Тен, самани çавăн пек тĕрлĕ енлĕ пултаруллă çынсене туптаса çитĕнтернĕ XX ĕмĕр пуçламăшĕнче? Анчах та Ф. Павлов «тĕрлĕ енлисем» хушшинче те хăйĕн никамăнни пек мар сăн-сăпачĕпе, кĕрнеклĕ анĕпе уйрăммăн тăрать. Чăваш музыка культурин чăн пирвайхи классикĕсенчен пĕри, вăл илемлĕ çырулăхра та тарăн йĕр çеç мар, вилĕмсĕр хайлавсем пултарса хăварнă. Илемлĕ литература эткерĕ унăн самаях пуян, шел, таланчĕ мăшăр çунатне сулмаклăн сарса янă вăхăтра ытла та ир çĕре кĕрет вăл.

Федор Павлович Павлов Хусан кĕпĕрнин Етĕрне уесĕнчи Патăрьел салинче (хальхи Чăваш Республикин Çĕрпӳ районĕ) 1892 çулхи авăн уйăхĕн 13(25)-мĕшĕнче çуралнă. 1901 çулта ялти земство училищине çӳреме пуçланă. Ун хыççăн Иккассинчи (Шупашкар районĕ) икĕ класлă шкулта вĕреннĕ. Ку тапхăр çыравçă биографийĕнче революци сывлăшĕн витĕмĕпе палăрса юлнă. Ф. Павлов каярахпа çырнă асилĕвĕнче хăйĕн юратнă вĕрентекенĕсем Н.Ф. Беляевпа Ф.Н. Николаев пулни çинчен каласа парать. Вĕсем иккĕш те революцилле шухăш-кăмăллăскерсем пулнă, социалла пĕртанлăх, ирĕклĕх идейисене халăх хушшине сарнă, шкулта та çак ыйтусем тавра ачасемпе калаçусем хăюллăн хус-

катнӑ. Прокламацисем салатса таврари ялсенчи хресченсене пӑлхатнӑшӑн часах вӗсене иккӗшне те ӗҫрен кӑлараҫҫӗ, Н. Беляева полици арестлет. Ҫак ӗҫсем Ф. Павлов асӗнче ӗмӗр манӑҫмалла мар тӗрленсе юлаҫҫӗ.

1907 ҫулхи ҫуркунне Иккасси шкулӗнчен вӗренсе тухсан вӑл хӑйӗн пӗлӗвне татах ӳстерме шутлать. Ф. Павловӑн ашшӗ хӑйне вӗреннӗ ҫынна тухма тӳр килмесен те пурнӑҫ пӑрӑнӑҫӗсене ӑнкаракан, хӑй ӑсӗпе пурӑнакан хресчен пулнӑ. Вӑл ҫынсемпе хутшӑнма юратнӑ, уҫӑ кӑмӑллӑ та тарават этем, юрӑсемпе халап-юмах нумай пӗлнӗ. Сӑмахран, Чӗмпӗр шкулӗнче вӗреннӗ чухне Г. Комиссаров (хӑй те Патӑрьелӗнчен) ҫуллахи каникул вӑхӑтӗнче унран тӗрлӗ халапсем ҫыра-ҫыра илнине асӑнать. Вӗренсе ӑс-пуҫне уҫайман хресченӗн йывӑр пурнӑҫне пайтах ылханнӑскер, вӑл ывӑлне епле пулсан та малалла вӗрентме шутлать. Ҫав тӗллевпе 1907 ҫулхи кӗркунне Хӗветӗре Чӗмпӗрти чӑваш шкулне леҫет. Экзаменсене ӑнӑҫлӑ тытнӑ ачана И.Я. Яковлев иккӗмӗш класа илет. Ашшӗ укҫа-тенкӗпе пулӑшма вӑй ҫитерейменнине шута илсе Ф. Павлова Етӗрне уесӗн земстви стипенди парса тӑма йышӑнать. «Шкула хресчен ачисене ҫеҫ илнӗ, анчах та кӗнисен, вӗреннипе ҫеҫ ҫырлахмасӑр, ӗҫлеме те тивнӗ», — тет ҫитӗннӗ куҫпа аса илсе поэт. Анчах та ӗҫпе ӳснӗ ачана ку пӗртте хӑратман. Ф. Павлов вӗренме пикеннӗ чух Чӗмпӗр шкулӗн кулленхи пурнӑҫӗ таканари шыв пек хумханса-чӳхенсе тӑнӑ. К. Ивановпа Н. Шупуҫҫынни вӗреннӗ класа пӗр ача юлмиччен кӑларса янӑ. Ҫакнашкал лару-тӑру вӗренекенсен политикӑлла тавракурӑмне сарма пулӑшнӑ, вӗсене кулленхи ӗҫ-пуҫ ҫине тишкерӳллӗ куҫпа пӑхма хистенӗ.

Политика сывлӑшӗн уҫӑ варкӑшӗ Ф. Павлов шухӑш-кӑмӑлне те тӗпрен хускатнӑ, вӑл вӗрентекенсем йышӗнче те демократи идеалӗсене кӑмӑллакансем тата консерваторсем пуррине часах ӑнланса илет, Чӗмпӗрте пуҫласа чӑваш наци культури пирки тарӑн шухӑша ӳкет. Ку енӗпе И.Я. Яковлев ҫур ӗмӗр хушшинче аталантарса пырса никӗсленӗ педагогика системинче пур майсем те ҫителӗклӗ пулнӑ. «Пӗтӗм наци культурине ҫӗнӗрен чӗртсе янӑ ҫӑлкуҫ», — тенӗ А.В. Луначарский чӑваш лицейӗн ҫак хӑйне евӗрлӗхне палӑртса. Аслӑ Яковлев ячӗ вара ҫамрӑкшӑн ӗмӗрлӗхе чи сӑваплӑ ятсен шутӗнче юлать, ун пирки вӑл ялан сума суса калаҫнӑ.

Шкул программине кĕрекен предметсене тăрăшса вĕреннĕ хушăра Ф. Павлов хăйĕн пĕтĕмĕшле культурине ӳстерес тĕлĕшпе хытă çине тăрать, чун витĕр сăрхăнса чăнчăн культура никĕсне хывăнакан пуянлăха ăша илет. 1908 çулта «Чăваш халлапĕсем» кĕнекере К. Ивановпа Н. Шупуççынни хайланă сăвă-поэмăсем, унтан çавсемех Лермонтовран куçарнă хăш-пĕр хайлавсем уйрăмшар кĕнекен пичетленеççĕ. Çапла майпа икĕ поэт хывнă сукмакпа Ф. Павлов та часах Лермонтов поэзийĕн шăнкăрти çăлкуçĕ патне пырса тухать, вырăс поэчĕ унăн юратнă вĕрентекенĕ пулса тăрать.

Çакна каламалла: Ф. Павловшăн поэзи ялан тенĕ пекех чун уççи вырăнне пулнă, вăл çак ĕçе çын çине кăлармасăр, вăрттăн тума кăмăлланă. Тен, хĕври, чун патĕнчи шухăш-туйăма палăртма альбом е кун кĕнеки валли юравлă жанр форми суйласа илнĕрен килнĕ ку? Пичетлес тесе те хыпăнман курăнать автор вĕсене.

Поэзи Ф. Павловшăн мăшăр çунатлă шурă акăшăн хăрах çуначĕ пулнă, тепĕр çуначĕ вăл — музыка. Чăннипех те Турă панă таланчĕ (моцартлăх) унăн музыкăра тарăнрах, туллинрех, ирĕклĕнрех палăрнă тен. Чун-чĕререн шăранса тухакан кĕвĕ-çемĕ вара Ф. Павловăн лирикăллă сăввисене те хăйне майлă янравлăхпа çепĕçлĕх кӳрет. Музыка çапла майпа интимлă лирикăн уйрăлми пайĕ пулса тăрать, ăна çĕнĕ тĕспе пуянлатать. Каярахпа çак туртăм çыравçăн драма формипе çырнă хайлавĕсенче те уçăмлă палăрать; сăмахран, «Ялта» пьесăра юрă-кĕвĕпе илемлетнĕ сценăсем тăтăшах тĕл пулаççĕ.

Чĕмпĕр шкулĕнче Ф. Павлов кĕске вăхăт хушшинчех чăн-чăн профессилле музыкант пулса тăрать. Музыка теорипе сольфеджио çанă тавăрса вĕренет вăл, сĕрме купăс калама хăнăхать, шкулти симфони оркестрĕнче вылять, хорта юрлать. Çуллахи каникулсен вăхăтĕнче тăван ялĕнче халăх юрри-кĕввине çырса илет, унтан вĕсене хăйĕнчен хушса илемлетет.

1911 çулта Ф. Павлов Чĕмпĕр шкулĕнчен вĕренсе тухать. Музыка тĕлĕшĕнчен уйрăмах пултаруллă çамрăк валли И.Я. Яковлев шкултах ĕç тупать. Халăх юррисене пухас ĕçе инспектор сулмаклăн пуçарасшăн пулнă, шкулта музыкăна вĕрентессине чăн-чăн профессилле музыка культури

шайне çĕклеме ĕмĕтленнĕ. Çак тĕллевпе вăл пултаруллă çамрăксене, Ф. Павловпа пĕрле вĕренсе тухнăскерсене, шкулта ĕçе вырнаçтарать. Вĕсен шутĕнче — каярахпа паллă композиторсем пулса тăнă С.М. Максимовпа Г.Г. Лисков, К.Н. Эсливанова юрăç.

Шкулта ĕçленĕ çулсенче (1911—1913) Ф. Павлов музыка теорийĕпе историне тарăнрах тĕпчет, ăсталăхне туптать. Композици енĕпе те хăюллăнрах, сулăмлăнрах ĕçлет вăл халь. Чĕмпĕр шкулĕнче музыкăна вĕрентесси чылайранпа пынă пулин те Ф. Павлов, вĕрентекен ĕçне кӳлĕнсе, ку енĕпе çĕнĕ утăм тăвать. Вăл ертсе пыма пуçласан вĕренекенсен хорĕн тата шкулти симфони оркестрĕн сăн-сăпатĕнче ăсталăха туйса, якатса çитернĕ профессионализм паллисем уçăмлăн курăнса каяççĕ. Çакна Чĕмпĕр обществин культурăллă сийĕсенче те тӳрех асăрхаççĕ; чăваш чунĕ музыка тĕлĕшĕнчен çав тери сисĕмлĕ пулнине пичетре те пĕрре мар асăнаççĕ.

Наци культурине чĕртсе ăна малалла аталантарассишĕн çунса ĕçлекен Ф. Павлов шкулта вĕренекенсен тата педагогсен вăйĕпе М. Глинкăн «Иван Сусанин» оперине лартас тĕллевпе нумай вăй хурать. Хăйсем тĕллĕн вĕреннĕ сцена ăстисем 1913 çулхи нарăс уйăхĕнче оперăн уйрăм пайĕсене кăтартаççĕ. Тĕп партисене юрланă Ф. Павловпа (Сусанин, баритон) К. Эсливанова (Антонида, сопрано) ăсталăхне «Симбирянин» хаçат ырăпа асăнса хакланă. Çакă вăл шкул йышĕшĕн хăйне евĕр пысăк çитĕнӳ пулнă, вăл вĕренекенсене те, вĕрентекенсене те хăйсен пултарулăхĕн хевти кĕрнексĕр маррине çирĕплетсе панă. Паллах, çак пусăм талантлă çамрăксен чун-чĕринче çĕнĕ тĕллев çуратать, вĕсем ĕнтĕ ыран-паян чăвашсен хăйсен опери çуралас пирки пĕртте иккĕленмеççĕ.

Ф. Павлов икĕ çул хушши шкулта пысăк хавхаланупа, музыкăна пĕтĕм чунпа парăнса ĕçлет. Профессионализм ӳсĕмĕн картлашкисем вĕçĕмсĕр çӳлелле хăпараççĕ, анчах та вăл Чĕмпĕр шкулĕнче çакна валли майсем çителĕксĕррине туйса илет. Аслă шкула кĕмелли çул хупă пулни çамрăкăн чун-кăмăлне ыраттарнă. И.Я. Яковлев пулăшнипе 1913 çулхи кĕркунне Ф. Павлов Чĕмпĕрти тĕн семинарийĕн 4-мĕш класне вĕренме кĕрет. Тĕн патне чунĕ туртсах кайман пулин те пĕтĕмĕшле культурине ӳстерес тĕлĕшпе кунти

лару-тăру меллĕ пулнă. «Семинари наукипе çуммăнах пĕтĕмĕшле истори, физика, Хĕвел анăç Европа литературисен историне, вырăс общество шухăшĕн историне тата француз чĕлхине вĕрентĕм...». Кунпа пĕрлех çак йĕркесен авторĕ семинарире тĕнчипе паллă композиторсем ятарласа чиркӳ валли çырнă тĕн музыкине те ăша илнĕ, унпа чункăмăлне çĕкленĕ, хавхаланнă.

1916 çулхи çу уйăхĕнче семинарие пĕтернĕ хыççăн Ф. Павлов пĕр вăхăт Кушлавăш чиркĕвĕнче псаломщикра тăрать, унтан Палтай ялĕн шкулĕнче ачасене вĕрентет. 1917 çулхи çурла уйăхĕнче ăна халăх судĕнче ĕçлеме суйлаççĕ. Октябрьти революци хыççăн Ф. Павлов пĕтĕм пултарулăхĕпе вăй-хална чăваш наци культурине аталантарас ĕçе парать.

Чăвашсен паллă композиторĕ тата çыравçи менингит чирĕнчен сывалма кайсан Сочире 1931 çулхи çĕртме уйăхĕн 2-мĕшĕнче çĕре кĕнĕ. Ăна Сочи хулин масарне пытарнă.

Ф. Павлов биографийĕн Чĕмпĕр шкулĕнче вĕреннĕ, унтан çакăнтах ĕçлесе пурăннă тапхăрĕнче музыка культурипе çыхăннă ĕçĕ тĕп вырăн йышăнать. Поэзие илес пулсан, ăна çиелтен пăхсан курăнман, юр айĕнчи шыв юхăмĕпе танлаштарни вырăнлă пулĕ. Вĕренчĕкле çырнă сăввисене çамрăк поэт хăйĕн тус-юлташĕсене халаллать. Вăл хавхалану саманчĕпе чун екки уçăлсан экспромтла йĕркесем те çырса хурать. Чи малтанхи сăввисене поэт 1910 çулпа палăртнă, анчах та хăш-пĕрисене вăл иртерех те çырма пултарнă. Чăвашла çырнă сăвăсенче («Вĕлле хурчĕ», «Экспромт», «Савнă хĕр...») юрă кĕвви-çемми, ритмики яр уççăн палăрса тăрать. Сăмахран, «Вĕлле хурчĕ» сăвăра автор халăх юрри-кĕввин поэтикине кăмăллани, унăн майĕ-мелĕсемпе витĕмлĕ усă курма пултарни куç умĕнчех. Сăвă тытăмĕ пĕтĕмпех тенĕ пек параллельлĕх мелĕ çинче никĕсленет. Лирика геройĕ хăйĕн ăшри туйăмĕсене, сарă хĕре пула çунакан чĕрин хусканăвĕсене «сарă чечек» тăрринче вĕçекен пыл хурчĕн сăнарĕпе танлаштарса тарăн уçса палăртать. Икĕ сăнара çывăхлатса автор çапла майпа пăлхануллă та хĕрхӳ кăмăл еккине палăртать. «Ман ăшра та çавăн пек тĕрлĕ шухăш пăтранать», — тет. Шанчăк та, иккĕленӳ те, тӳсĕмсĕррĕн кĕтни те, ăш çунни те пур çав шухăш пăтраннинче. Çав шухăш авăрĕнче тепĕр туйăм та юнашар йăва çавăрнă: ку вăл — ултав.

Чечекĕн ĕмĕрĕ кĕске, вăл часах шанса кайĕ, пыл хурчĕ çавна туймасть. Тен, лирика геройĕ те юратăвăн çунтаракан вучĕ часах сӳнессе курса тăрать, çапах та чуна çепĕççĕн ачашлакан ултавлă туйăма киленӳллĕн парăнать; ăс-хакăл хăйĕн сивĕ, витĕр куракан чăнлăхĕпе чĕре сассине хуплаймасть.

Анчах та çакна палăртса хăвармасăр юрамасть: чăвашла сăвăсене (юрă тексчĕсене) лирика геройĕн чун-чĕрине туймасăр, прозăлатса куçарнă. «Вĕлле хурчĕн» пĕр-икĕ çаврине мĕнле куçарнине çеç танлаштарса пăхар.

Сарă чечек тăррине
Пыллă карас терĕн-им?
Шанса каяс илемне
Çутă сывлăм терĕн-им?

Оригиналта тĕс те, чечек форми те, шăрши те — пĕр кĕвĕре, куçаруçă вара пуклак сăмахсемпе «пыл шăрши кĕрет-им чечекрен» тесе ыйту палли лартса çеç хăварать. Куçару текстĕнче шанса кайнă чечек тенĕ; Ф. Павлов вăхăт çитсен чечек шанса каясси пирки калать-çке-ха. Тен, юрату туйăмĕ те ĕмĕрлĕхе пыманнине систерет вăл. Юлашки çаврара лирика геройĕ ăшра тĕрлĕ шухăш пăтранни, çутă тунсăх чĕрине касни пирки систерет, тăлмач вара кичемлĕх туйăмĕн тыткăнĕнче кунĕн-çĕрĕн пурăннине палăртать, текста йăвашлатса, шухăшне улăштарса куçарать.

Çакăн йышши тĕслĕхсем çине-çинех тĕл пулаççĕ. «Çырнисен пуххине» кăларнă чух (1992) хăй тĕллĕн вĕреннĕ литераторăн «ирĕклĕ» куçарăвĕпе çырлахмалла пулсан чăн-чăн профессионала куçарттарас пулнă.

В.П. Эхмере халалланă «Савнă хĕр...» сăвăра лирика геройĕ чун хусканăвĕсене купăсăн çепĕç те ачаш кĕввине хывать. Купăс хĕлĕхĕсем сăмахпа калама май çуккине те систереççĕ.

Савнă хĕр,
Хитре хĕр!
Юрататăн пулсассăн
Итле — купăс мĕн калать:
Санăн çутă илемшĕн
Манăн шухăш пăтранать.
Эпĕ сана курсассăн
Хĕвел тухнăн туйăнать...

Çутă илемĕпе, чунри ăнланмалла мар, хăй патне туртакан вăрттăнлăхне пула вĕçĕмсĕр чĕре çине наркăмăш тумлатакан, асап кӳрекен туйăм ку. Лирика геройĕ шанчăк са-

халтан, татăклăнах хирĕçлени те çукран хăйĕн кăмăл-туйăмĕн кăварĕпе çунать.

Ф. Павлов лирикăллă сăввисен текстне чылай чухне юрра хывнă, вĕсене малтанах кĕвĕллĕ ритмпа ăсталанă. Тепĕр йышши тĕслĕхсем те тĕл пулаççĕ унăн поэзийĕнче. Сăмахран, «Аслă уя тухрăм» сăвва илсен, ăна хăй тӳпине хăпарса çитнĕ Çеçпĕлпе пĕр вăхăталла (1920—1921) çырнă темелле. Анчах та Ф. Павлов чăваш поэзийĕнче халиччен никам та каламан шухăша тĕвĕлесе аталантарма пултарнă. Лирика геройĕ ялта çитĕнсе мĕн кĕçĕнрен хула пурнăçне хăнăхнă, вĕреннĕ çын, сăвă çырать, кунсăр пуçне ăшĕнчи хирĕçӳллĕ шухăш-туйăмне чунне хĕртсе тишкерет. Пĕрремĕш ӳсĕмри чăваш интеллигенцийĕн яланхи рефлексийĕ сăвă никĕсĕнче.

Ачаранпа ял хӳттинче ӳснĕччĕ,
Чĕрем паттăр — хура уйра тĕрмешме.
Хула енне ухсан чĕре улшăнчĕ —
Ахăр, хула сĕткен юна çапрĕ пуль.

Хулапа ял пурнăçне хире-хирĕçлетсе сăнлани пулнă-ха 20-мĕш çулсенчи чăваш çырулăхĕнче. Калăпăр, П. Хусанкай сăввисенче курма пулать çак шухăша. Хула йăли-йĕркине чĕрипе йышăнман Хусанкай акă епле курать унăн тискер культурине: «Вăл Сергей Есенина тĕп турĕ, вăл тĕп турĕ пирĕн Çеçпĕле». Ф. Павловпа танлаштарсан, Хусанкай кăштах ансатлатнăн туйăнать тĕп ыйтăва, мĕншĕн тесен вăл хăйĕн тымарĕсене хура тăпрара, ял тĕнчинче курать, хула вара пурне те, арман авăрнă пек, вĕтетет, пĕрешкеллетет, сăнсăрлатать. Хусанкай çеç мар, 20-мĕш çулсенче чăваш литературинче сас пама пуçланă яш сăвăçсем, ялкорсемпе рабфакçăсем, комсомолецсем пурте пĕр саслăн тенĕ пек хăйсем хура çĕр çинче ĕçлесе çитĕннипе, ял халăхĕн йышĕнчен сăмсаланса тухнипе мăнаçланаççĕ, çавна хыттăн кăшкăрса пичет урлă хыпарлаççĕ. Анчах та курăрха акă Ф. Павлов пĕр енлĕхпе ансатлăха сулăнасран мĕнле асăрханать. Вăл хулара пурăнса «чĕри улшăнни», «хула сĕткенĕ юна çапни» пирки каланипе çырлахмасть, шухăшне татах та тарăнлатать.

Хула сĕткен юна витĕр çапнăран
Манăн сăмах сана пӳлĕм пулмĕ-ши?
Эсĕ манăн сăвва тытса вуласан
Санăн ялти кăмăл кӳтсе каймĕ-ши?

Кунта çав тери сисĕмлĕ чунлă лирика геройĕ хăйĕн яланлăха ялта юлнă çĕр ĕçĕпе пурăнакан яш чухнехи савнă хĕрĕпе, ăшри шухăш-туйăмĕпе, чун сассипе калаçать тесе шутлама май килет. Хулапа ял культурин контрастне палăртнă май «ялти кăмăл» хулара пурăнса улшăннă çыннăн сăмахне тĕпĕ-йĕрĕпе ăнланса илме пултарĕ-ши тесе иккĕленет вăл. Тепĕр тесен, хулана пурăнма куçнă çын та чăнчăн интеллигент шайне ӳссе çитеймесен те пултарать, лирика геройĕ калакан чуралăх «сĕткенĕ» ун юнĕнче виличченех юлать-и тен. Ăнсăртран мар герой хăйĕн ялта иртнĕ нушаллă пурнăç тапхăрне чуралăхпа танлаштарать. Çавăнпа «тап-таса» интеллигент поэт пулма е çиçкĕнсе ташлама «ĕçпе ваннă шăм-шак» пултараймасть тет. Тӳррипе каласан, Ф. Павловăн тарăн шухăшĕнче пысăк чăнлăх варăнса тăрать, 20-мĕш çулсенче çеç мар, паян кунччених чăваш культурин тĕпелĕнче çурма интеллигент хуçаланать, иккĕмĕш ăрури интеллигенцие амăш чĕлхиллĕ те наци туйăмлă çитĕнтермелли майсем çукран.

Сăвва пĕтĕмлетекен çаврара татăклă шухăш:

> Тарпа-шурпа алăм-ура хытнăран
> Хура уйшăн сăвă хума халăм çук —
> Хура яла кĕрсен чĕрем ыратать
> Çамрăк яшă ĕмри унта путнăран.

Хăйĕнчен хăй çав тери нумай ыйтнăран, хăй культурин шайĕ çине тиркевлĕ пăхакан лирика геройĕ «пĕчикренпе» пылчăк ăшĕнче çăрăлнă ачалăхне, «çукпа нушара» иртнĕ тапхăрне пĕтĕмпех харама кайнă пек хаклать; ун идеалĕ ăс пурнăçĕн сăпкинчен тухса çитĕннĕ «тап-таса» интеллигент, лĕпĕш-галстукпа, çинçе те вăрăм пӳрнисене клавишсем тăрăх чуптаракан пианист е сĕрме купăсçă. Е унăн ĕмĕчĕ: «Виç кĕтеслĕ кĕсле тытса калăттăм, кӳттерме мар — майлă кĕвĕ шырăттăм», анчах та хурама тымарĕ пек хытса кайнă пӳрнесемшĕн ку вăй çемми мар, консерваторире те вĕренеймен. Сăмах май кунта ирĕксĕрех вăтăр саккăрти Ф. Павлов Ленинградри консерваторие кайса вĕренме кĕни аса килет.

Сăввăн юлашки çаврăмĕсенчен пĕринче класлăх идейине палăртакан йĕркесем пур: «Пуянпала куштан йытти айĕнче усалпала ырă кунсем — тăвансем». Ку ĕнтĕ идеологи штампĕ, хăй вăхăчĕшĕн вăл сыхлăх грамотипе танах шут-

ланнă, халь пăхатпăр та, тарăн шухăш-туйăмлă сăвă çав йĕркесемсĕр тикĕсрех те тăп-тăпрах пулнă пулĕччĕ.

«Аслă уя тухрăм...» сăввăн вырăсла куçарнă тексчĕ калама çук вăйсăр пулса тухнă, тăлмач автор шухăшĕн тĕшшине катса кăларайман.

Ф. Павловăн çак сăввисене юрату лирикин чи паха тĕслĕхĕсем темелле.

1913 çулта çырнă «Йăсăрка» балладăра пысăк калăплă поэзи хайлавĕн уйрăм енĕсем сисĕнеççĕ. Чăваш литература критикинче ăна М. Федоровăн «Арçурийĕпе» «çывăхлатма» пăхнă тĕслĕхсем те пулман мар. Чăн та, Ф. Павлов классикăлла балладăпа тĕплĕ паллашнă теме май килет. Вăл ун çинчен ниепле те пĕлмесĕр тăма пултарайман. Çапах та икĕ балладăна танлаштарса пăхсан вĕсен «пĕрпеклĕхĕ» никĕс, идейăпа илемлĕх концепцийĕ тарăнăшне витерейменни тӳрех курăнать. Чи малтан «Йăсăрка» балладăра социалла конкретлăх принципĕ палăрмасть. Ун вырăнне автор шыравĕ философилĕх сулăмĕпе пырать. Тен, вăл кунта ытларах самана уçăмсăрлăхĕпе уйрăм çын кун-çулĕ тикĕс пулманни çинчен шухăшлать? Çавăнпа та хайлава лирика туйăмĕ тарăн витернĕ. М. Федоров балладин текстне пĕтĕмпех тенĕ пек аллитерацисемпе ассонанссенчен, тĕрлĕ танлаштарусемпе янравлă сăмах çаврăнăшĕсенчен — пĕтĕмĕшле илсен, фольклор поэтикин майĕ-мелĕсенчен «шăрçаласа» илемлетнĕ. Кунта сăмахпа сасă вылявĕ час-часах пуплев йĕрне тӳррĕнех сулăм кӳреççĕ, тепĕр чухне хăйсемех «тĕллев» те пулса тăраççĕ.

Ф. Павлов балладинче кутсăр-пуççăр çил-тăман симфонине урăхларах мелсемпе кĕвĕленĕ. Тен, авторăн ятарлă тĕллевĕ урăх пулнă? Вăл чăвашсен илемлĕ литературин шухăшлавĕ фольклор туртăмне çĕнтерсе художествăлла пайăр ăнлану шайне аталанса çитнине, поэзи хавалĕ хушăннине çирĕплетсе парасшăн-и тен? Çакна асра тытсан Ф. Павлов балладин тытăмĕнче Пушкинăн «Бесы» сăввин витĕмĕ палăрнине (анчах вăл шутсăр тарăнра!) ăнланса илме йывăр мар. Урăхла каласан, чăваш поэчĕ халь ĕнтĕ литература традицийĕсем çине таянать.

Ф. Павлов эткерĕнче вырăсла çырнă сăвăсем чылай упранса юлнă. Чĕмпĕр шкулĕнче вĕреннĕ, ĕçленĕ тапхăрта çырнă сăввисене поэт 1913 çулта «Памятник моей юнос-

ти» ятлă поэзи тетраденче çырса хăварнă. Çак сăвă пуххи шăпи пирки «Мастер и Маргарита» роман авторĕ М. Булгаков сăмахĕсемпе калама пулать: чăннипех те ал çырусем çунмаççĕ иккен. Ф. Павлов тетраде çунтарса ямах шухăш тытнă пулнă, анчах та ăна чăваш композиторĕ Т.П. Парамонов упраса хăварма пултарнă. Ф. Павловпа Чĕмпĕр шкулĕнче пĕрле вĕреннĕскер, вăл хăйĕн асаилĕвĕнче акă мĕн каланă: «Чĕмпĕрти тĕн семинарийĕнче вĕреннĕ чух вăл вырăсла повесть çырнăччĕ. 1914 çулта мана хăй мĕн-мĕн çырнине кăтартрĕ. Вĕсене вăл çунтарса яма хатĕрленетчĕ. Унăн пысăк тетрадь çине çырса хунă повесть пурччĕ, хĕрĕх листана яхăн пĕчĕк калăплă тетрадь çинче сăвăсемччĕ. Тата вăл мана хăй çырса илнĕ халăх юррисене кăтартрĕ. Федор Павловичăн çак ал çырăвĕсене хĕрхенсе эпĕ вĕсене çунтарма памарăм, хама илтĕм». Т.П. Парамонов тетраде тепĕр пилĕк çултан Ф. Павлова каялла тавăрса панă. Ал çырура темиçе чăвашла сăвăсăр пуçне пĕтĕмпех вырăсла çырнă поэзи хайлавĕсем. Апла пулин те вĕсем Ф. Павловăн эстетикăлла идеалне, унăн музыкăпа уйрăлми тачă çыхăннă поэзи культурине, этика хаклăхĕн туртăмĕсене яр уççăн палăртаççĕ.

Шкулта вĕреннĕ чух литература урокĕнче сочинени вырăнне çырнă сăвăсенчех автор тавралăха поэт куçĕпе сăнама пултарни, унăн сăрăсен палитри пуянни курăнать.

Н.И. Колосков вĕрентекен, сăмахран, «Зима», «В сумерках юности», «Ожидание и надежда», «Весна» сăвăсене чи пысăк паллăпа пахаланă. Тĕллĕн-тĕллĕн хĕллехи çут çанталăкăн чуна çывăх сăрĕ-тĕсĕсене автор Пушкин сăввисенче тупма пултарни сисĕнкелет. Çапах та «яшлăх палăкĕсенче» çутă, чуна çупăрлакан гармонилле туйăм сахалтарах, вăхăт шунăçемĕн вăл татах та чакса, сӳнсе пыни сăнланса юлнă. Чăваш поэтне Лермонтов музи хăй патне туртать, уйрăм сăввисенче вăл çав асамлă идеал туртăмне уççăн палăртать. Ун йышши сăвăсенчен çаксене асăнма пулать: «Подражание Лермонтову», «Опять воздушное виденье...», «Мой демон». Тепĕр чухне Лермонтов поэзипе хавхаланни çиелтен (сăвă ятĕнчен) палăрса тăмасть. Ф. Павлов вырăс поэчĕн лирикинче философиллĕ шухăшсем шырать. Чунри хупланнă шанчăксемпе сӳннĕ ĕмĕтсен ирĕлми пăрĕ, таврари çынсем çине кăштах иронипе пăхакан герой сăн-сăпачĕ Ф. Павлов сăввисенче ытларах та ытларах палăрса пырать.

Апла пулин те хушăран поэт кулленхи пурнăçăн ытарайми тĕсĕсемпе хавхаланни, ун кăмăлĕ çĕкленни сисĕнет. Кунашкал туртăмлă сăввисенче вăл А. Фетран вĕренни, унăн çепĕç лирикине чунпа пахалани курăнса тăрать («После грозы», «Осенние аккорды», «Звукам залетной любви», «Ноктюрн», «Милая крошка» т.ыт.те). Фет поэзийĕн музыкипе асамлăхĕ пирки, ун тăрă çăлкуçĕнчен сахал мар чĕрĕ сĕткен ĕçсе хавхаланни çинчен автор П. Хусанкая каласа кăтартнă. «Фет-Шеншина вуласа-и? Питĕ нумай парать. Сĕнетĕп», — тенĕ вăл поэзи çинчен сăмахланă май çамрăк сăваçа.

Ф. Павлов поэзи культурин шайне ӳстерсе пынă май тĕнче литературин классикăлла тĕслĕхĕсене тарăн тĕпченĕ. Шăратса, пĕрчĕн-пĕрчĕн пухса илнĕ эстетикăпа философи пуянлăхĕнчен вăл ятран палăк лартать. Çав тери сăнавлă куçпа тишкерсе вуласан «яшлăх палăкĕсенче» хăш-пĕр классиксен уйрăм йĕркисене е шухăшĕсене асăрхатăн. Сăмахран, «Товарищу» сăввинче автор юри тенĕ пекех, куçа курăнмалла Гейне йĕркисене («Когда-то друг друга любили мы страстно...», нимĕçлерен М. Михайлов куçарнă) «цитаталать». Туслăхпа юлташлăх теми «Послание к П. Александровичу», «Друзьям» сăвăсенче те тĕпре. Ф. Павлов çавăн пекех А. Толстой, А. Майков, Я. Полонский, Л. Мей, А. Апухтин поэзине кăмăллани, вĕсен пултарулăхне лайăх пĕлни пĕрре те иккĕлентермест.

«Памятник моей юности» ал çыру революцичченхи чăваш поэзийĕнче паллă вырăн йышăнать. Унта кĕртнĕ сăвăсенчен ытларахăшне автор вырăсла çырнă пулин те вăл чăваш поэзийĕн шыравĕсене тарăнрах тишкерме пулăшать. Ф. Павлов çав сăвăсене мĕншĕн-ха пичетлес тесе хыпăнман? Мĕншĕн тесен вăл чăваш поэзийĕн хăйчченхи тата хăй вăхăтĕнчи традицийĕсемпе çырлахмасăр «тап-таса лирика» тĕсĕсене пуянлатмалли, чун тĕпĕнчи туйăмсене уçса памалли çул-йĕре хăюллăн палăртма вăй çитерне. Çавăнпа вăл хăй çул-йĕрне вырăссен «таса поэзи» юхăмне никĕсленĕ лирикĕсен асамлă та пархатарлă туртăмне парăнса ыранă. Ку вăл чăваш поэзийĕшĕн пĕтĕмпех çĕнĕ пулнăха. Ф. Павлов поэзипе музыкăн шалти çыхăнăвне ырмиканми тĕпчет, çавăнпа ăна вырăс романсĕ илĕртет, унта чăваш поэчĕ малаш çула кăтартакан тĕслĕх курать.

«Памятник моей юности» ятлă сăвă пуххине Ф. Павлов хăй çирĕм пĕр çулта чухне хатĕрленĕ. Халĕ çак пысăк мар тетрадь чăннипех те автор яшлăхĕнче ĕмĕрлĕхе ӳкерĕнсе юлнă хăйне майлă палăк пек туйăнать.

Ф. Павловăн илемлĕ литературăра палăрнă таланчĕн тепĕр енĕ — драматурги хайлавĕсем. «Ялта» драмăпа «Судра» комеди авторне совет тапхăрĕнчи чăваш драматургийĕн никĕсне хываканĕ тесе чыслани те вырăнлă. «Ялта» драмăна автор империализм вăрçи пынă тапхăрта çырма пуçланă. Çав вăхăтри чăваш драматургинче Ф. Павлов калăпланă йышши сăнарсем пачах та пулман-ха. Çапах та драмăн чи вăйлă енĕсем унăн философилле тарăнлăхĕнче, этем чунĕн чи шалти, вăрттăн хусканăвĕсене яриех уçса кăтартма вăй çитернинче темелле. Характер аталанăвĕ кунта хăй сулăмĕпе пырать, автор персонаж чунĕн еккине туйнăран ун ури çине пусмасть, вĕсене аларан çавăтса çӳрес тени те сисĕнмест. Çавăнпа та тепĕр чух этем чунĕн пăсăклăхĕ чарусăррăн арасланса каять, Шекспир пьесинчи сулăмпа куç умне тухса тăрать. Çапла майпа автор чăваш драматургинче çĕнĕ çулйĕр палăртать.

Совет саманинче Ф. Павлов музыка искусствинче те, илемлĕ литература каçалăкĕнче те «пĕр» пекех пултаруллăн ĕçлесе культура ӳсĕмĕнче тарăн йĕр хăварать. Чăваш наци культурине пур енлĕн аталантарас йывăр ĕçре вăл яланах малти ретре пынă.

Ф. Павлов ĕмĕрĕ ытла та кĕске пулнă, вăл вăтăр сакăр çултах çĕре кĕнĕ. Апла пулин те унăн хамăр халăха панă пĕтĕм пултарулăхĕпе ĕç-хĕлĕ вăхăт иртнĕçемĕн çĕнĕрен çĕнĕ енĕсемпе уçăлать, пĕлтерĕшĕ те ӳссех пырать.

*1995, 2009*

## ТУ ТĂРРИНЧЕ ÇУТ ШАНЧĂКĂН ЙĂВИ

Федор Павловăн вырăсла çырнă сăввисем хушшинче пĕр сăвă пур, «Кĕтевпе шанчăк» тесе ят панă ăна. Сăмах май каласан, çав вырăсла сăвăсен «ярăмне» хальхи куçпа тишкерсе тухса хак панине пĕрре те курман эпĕ. Пĕрре пăхсан вĕсене вĕренчĕкле çырнă сăвăсем, тепĕр чухне рифмисене якатса тулаш енчен пĕтĕмпех илемлетсе çитерменскерсем теме те пулать; е, калăпăр, темиçе хутчен «экспромт» тесе

палăртни те пур. Кунсăр пуçне вĕсенчен ытларахăшĕ вырăс литературин урокĕсенче Н.И. Колосов вĕрентекен хушнипе çырнă сочинени шутланать, тĕрĕслекенĕ вĕсене пурне те тенĕ пекех «пиллĕк» паллăпа хакланă. И.Я. Яковлев шкулĕнче вĕреннĕ, кăшт каярахпа вĕрентекен пулса ĕçленĕ çулсенче (1909—1913) çырнă вĕсене автор. Асăрхăр, ку шăп та лăп пирвайхи пăлхавăра путарнă хыççăн реакци витĕмĕ чăрсăрланса çĕкленнĕ тапхăр. Çав сăвăсене автор пичет валли çырман, унта сĕнсе пăхсан та вĕсем кун çути курайман пулĕччĕç. Шўтпе кулăш туртăмĕ «Судра» камит авторĕн çак сăввисенчех витĕр тапса тăрать («Гурко» патне», 1909—1911; «П. Александрович патне», 1909—1910; «Ал пусатăп»). Апла пулин те сăвăсенчен ытларахăшĕнче сирсе сирĕлми пĕчченлĕх туртăмĕ хуçаланать, лирика геройĕ ăшри туйăмĕсене тишкерет, чун-чĕре тасалăхĕшĕн, тўрĕлĕхшĕн максималистла çине тăрать, таса ĕмĕтпе хавхаланать. Нимĕнле класс кĕрешĕвĕн палăрăмĕсем те сăрхăнса кĕреймен çав сăвăсене, революци идейисен витĕмĕ те пачах сисĕнмест вĕсенче. Тепĕр хут палăртар: пĕрремĕш революцие путлантарнă хыççăнхи çулсенче çырнă вĕсене. Апла пулсан илемлĕ çырулăхпа ўнер аталанăвне революцин «пархатарлă витĕмĕ» çеç мар, ытти историлле вăйăм-пулăмсем те чĕртсе-хускатса пыраççĕ тени тĕрĕсех. Тата хушса калар. «Нарспи» поэмăра та ним чухлĕ те сисĕнмест политика сывлăшĕ. Тĕслĕхсем татах та нумай.

Ф. Павловăн вырăсла çырнă сăввисем, тўрех калас пулать, ХХ ĕмĕр пуçламăшĕнчи чăваш поэзине витĕм кўнĕ теме йывăр. Анчах та авторĕ пĕр вăхăтрах сăвăç та, драматург та, кĕвĕ-юрă ăсти те пулнине асра тытсан çав сăвăсене сăрхăнса кĕнĕ шухăш-туйăм талантлă художникăн пĕр пĕтĕмĕшле тĕнче туйăмне, унăн шалти ăс-хакăл пурнăçне тарăнрах ăнланса илме пулăшмалла пек туйăнать. Интеллигент шухăшлавĕ (аристократлăх!), çав тери тиркевлĕ куçпа суйласа ăша илни, вĕренни, вырăс поэзийĕн чи чаплă тĕслĕхĕсен шайĕнчи кĕвĕллĕ лирика, шалти тасалăх — çаксем Ф. Павловăн вырăсла çырнă поэзине чăваш çырулăхĕнче никамăннипе танлаштарма май çуккине çирĕплетсе параççĕ. Вăл пачах уйрăммăн тăрать. Пушкин, Лермонтов поэзийĕсĕр пуçне вырăс çырулăхĕнчи витĕмлĕ йĕр хăварнă «таса поэзи» текен юхăма шутсăр кăмăллană вăл. Фет, Полон-

ский, Михайлов, Апухтин сăвви-поэмисенче Ф. Павлов ăстăн апачĕ çеç мар, хавхалану хĕлхемĕ тупнă, килĕшӳлĕх туйăмĕпе (гармони) чун ĕнерĕвне çивĕчлетнĕ. Поэт таланчĕн çак хăйне евĕрлĕхне асра тытсан чăваш культуринчи Чĕрĕлӳ (Возрождение) тапхăрĕн çĕкленӳллĕ утăмĕсемпе яр çутă çитĕнĕвĕсене те пĕр пĕтĕмĕшле хак пама çăмăлтарах пулмалла. Тепĕр хут каласан, çав вырăсла çырнă сăвăсен «ярăмĕ»-сапаки шкатулкăра упраннă илемкĕçе (украшение) аса илтерет, тен, вĕсен «тулаш» витĕмĕ куçа курăнмаллах та мар, анчах та автор мĕнле шухăш-ĕмĕтпе хавхаланса пурăннине, ун шалти тĕнчин шалпарлăхне вĕсемсĕр туйса ăнланса илме май килмест.

Ф. Павловăн анлă тавракурăмĕпе тĕрлĕ енлĕхĕ пирки шухăшланă май П. Хусанкай хак парса каланине аса илмесĕр май килмест. «Чăваш искусствин кун-çулне тахçан малашне тĕпчес çынсем çеç мар, ăна халь тĕрĕс çул-йĕр кăтартса парас текенсем те Павăл Хветĕрĕн ятне асăнмасăр пултараяс çук. Çав тĕрлĕ енлĕ ăстана, çав аслă артиста, — тейĕттĕм эпĕ, — нумай вĕренĕç, сăнĕç. Çамрăксем нумайччен ун çине пăхса унăн хаклă çитĕнĕвĕсене йышăнма, ӳкерсе илме тăрăшĕç». Хусанкай шухăшне хирĕçлеме май çук. Анчах та Ф. Павловăн пуян эткерĕн тĕрлĕ енĕсене паян кунччен те тарăна кĕрсе тĕпчесе çитереймен-ха эпир. Кунта ĕнтĕ çӳлерех асăннă вырăсла сăвăсен ярăмĕ пирки çеç сăмах пымасть. Калăпăр, Ф. Павловăн публицистикăллă статйисем те кам та пулин хальхи куçпа пăхса тухасса кĕтеççĕ. Е унăн пултарулăхĕнчи шӳтпе питлев туртăмĕ... Совет саманинче драмăлла хайлавсене хакласси-тишкересси те хăрах енлĕ сулăмпа пыратчĕ, халь ав авторăн варса каланă шухăшĕсенче урăхларах хаклăх-пахалăхсем çиеле тухса пыраççĕ.

Октябрьти революципе унăн куçăм тапхăрĕнче чăваш публицистикин тĕп каçалăкĕ социализм çитĕнтернĕ «тырпула» вырса хаклассипе пропагандăлассинче пулнă. Ф. Павлов — çак ĕçе чи малтан кӳлĕннисенчен пĕри. Паллах, ку ĕçе тăвакансем умĕнче такăрлатнă çул пулман. Паян, пĕр пытармасăр каласан, идеологин çак шутсăр йывăр та яваплă кĕрешĕвĕн ертӳçисемпе салтакĕсен йышĕнче ним чухлĕ те вĕренмен е ăнсăртран унта пырса лекнĕ çынсем те чылай пулнине палăртмалла. Маяковский çакна шута илсе каланă

ĕнтĕ: эпир философине Гегеле вуласа мар, çапăçу шавкĕрлевĕпе хутăш ăша илнĕ. Кам хирĕçлеме хăйтăр-ха: философипе ăслăлăха университетра е пĕлӳ паракан ытти шкулсенче вĕреннине мĕн çиттĕр?! Анчах та пулман-çке вĕсем, уйрăмах вак халăхсен хĕр-ывăлĕ валли. Çавна пула кăшт каярахпа рабфаксемпе совпартшкулсем уçма тытăнсан (хĕрлĕ профессура пĕлӳ тӳпин символĕ шутланнă!) вĕсенчен вĕренсе тухакансем, пĕлĕвĕпе пăхсан, çĕлĕк ӳкмелле шайра курăннă. Кусем юрĕ-ха, ытларахăшĕн хăйсен тĕллĕн, мĕнле май килнĕ çавăн пек вĕренкелеме тивнĕ. Апла пулин те Граждан вăрçипе ун ахрăмĕ хуллен йăнса пынă тапхăрта унтан-кунтан «сăхкаласа» пухнă ăс-пурлăхлă çамрăксем революцичченех вĕренсе тухнă, халăха çутта кăларас ĕçе кӳлĕннĕ чăваш интеллигенчĕсем çине «çӳлтен» пăхнă. Çапла тума вĕсен иммунитет пулнă, пирĕн право пур тенĕ вĕсем. Вĕсем, чухăнсен комитечĕ е партипе комсомол ячейкисем тавра чăмăртаннăскерсем, Евангели листине çурса илсе чикарккӑ чĕркеççĕ е харпăр хăй этем çавăрнă çурт-йĕрпе пурлăха, хăшĕсем социализмăн çутă малашлăхне курманран çеç чухăнсен аллине парасшăн мар тесе шутлаççĕ. Çав «ăнланман çынсене» воспитани парас тĕллевпе доклад тексчĕсем хатĕрлеççĕ е урам тăрăх «пире хирĕç каякан пылчăк пулĕ таптанма» тесе юрласа утаççĕ.

Çакнашкал лару-тăрура чи пултаруллисемпе чăн-чăн тарăн пĕлӳллисене çав тери йывăр килнĕ, вĕсен «чустин» масси те шутсăр пĕчĕк пулнă. Федор Павловсăр пуçне Николай Никольские, Илле Тăхтие, Вантер Гурине, Юман Мĕтрине уйрăммăн палăртмалла. Пĕр пĕтĕмĕшле чăваш культурин тĕрлĕ шайри сийĕсем пирки сăмах пырать. Анчах та çак пăтăрмахлă пулăмăн хирĕçӳлĕхĕпе инкеклĕ енĕсене вăл вăхăтра демагогилле лозунгсемпе е илĕртӳллĕ янракан чĕнӳсемпе хупласа, пытарса пынă, çавна пула уйрăм çыннăн синкерлĕ е драмăллă шăпинче çеç (пайăррăн) палăрма пултарнă вĕсем. Тепĕр хут палăртасшăн: большевизм идеологине йышăнман е совет влаçне хавшатас тĕллевне уççăн е хĕвре чул тытса (оппозицире тăрса) кĕрешекен çынсем чăваш культурин ĕçченĕсен йышĕнче пулман пачах та. Пĕр-пĕрне ăнланманни е ăнланас теменни вара ытлашшипех пулнă. Чăн та, класс кĕрешĕвĕн вучахне вут хурсах тăракансен унашкал «тăшмансене» ытларах чухне çук çĕрте-

нех шухăшласа кăларма тивнĕ, сăмахран, Çеçпĕл Мишшине айăпсăртанах айăплакансен е Юман Мĕтрин (сайра тĕл пулакан кĕрнеклĕ талант!) творчествăлла кун-çулне ие чăмланă пек хуçса тыллакансен ячĕсем паллă мар-и вара?! Тĕрĕссипе, идеологипе кулленхи политикăлла пурнăçра та юмансемпе вантерсем массăллă ăнкару шайĕнчен нумай маларах пырса партипе патшалăх çулпуçĕсемпе творчество пĕрлешĕвĕсен ертӳçисен пуçĕсене шутсăр ыраттарнă. Лешсен кăткăс тĕвĕсене еккине тупса салтас вырăнне касса татма тивнĕ, мĕншĕн тесен интеллектпа чун пуянлăхĕ çителĕксĕр пулнă. Тата, Юманпа Павлов пек, патша саманинчи шкулсенчех вĕренсе ăс пухнисем çукпа пĕрех пулнă вĕсем хушшинче. Чи пултаруллисен инкекĕн сăлтавĕ пирки сăмах пырать.

Анчах та идеологин пĕрешкел никĕсĕ çинче тĕпленсе ĕçлекенсем культура анинче никам пек марлăхĕпе, хăйнешкеллĕхĕпе уйрăлса тăнă. Паллах, унашкаллисем сахалтарах пулнă. Ф. Павловах илер. Вăл çынна тарăн пĕлӳпе тĕрлĕ енлĕхсĕр пуçне чăн-чăн интеллигентлăх çав тери кирлине çине-çинех палăртать тĕрлĕ вăхăтра çырнă статйисемпе асаилĕвĕсенче. Çак ыйтăва вăл хăйĕн ятарласа çырнă автобиографийĕнче (1923) те хускатать. Кунта вăл И.Я. Яковлев сĕннипе Чĕмпĕр шкулĕнче юрă-кĕвĕ ăсталăхне вĕрентсе пурăннă тапхăра пархатарлă туйăмпа аса илет. Чăмăртанса, ӳссе-аталанса пыракан чăваш интеллигенцийĕн пĕтĕмĕшле сăн-сăпачĕ ула-чăларах курăннă пулин те Ф. Павлов хăйшĕн ырă тĕслĕх пулса тăнă К. Ивановпа Н. Шупуççынни ячĕсене уйăрса асăнать. Çак йышрах хăйне Иккасси шкулĕнче вĕрентнĕ Ф. Николаевпа Н. Беляев хушамачĕсем, чăваш халăхĕн демократилле ĕмĕт-тĕллевĕсене хӳтĕленĕскерсем. Çав вăхăтрах Ф. Павлов интеллигентлăхăн çиелти паллисене, япшар чĕлхеллĕ те ытлашши шукăль тумланнă «яка чăвашсене» (Хв. Уярăн Яка Иллине астăвăр!), çынсем çине чунсăр куçпа сăмса тăрăх пăхакансене сивлет. Яковлев шкулĕнче вĕрентекенсем хушшинче те пулнă ун пек типсем: «Единственно, чем я был недоволен в новом обществе, это бюрократический, блестящий, барский тон, против чего где-то в глубине души бунтовала моя мужицкая натура. Поэтому я заранее с предубеждением относился к людям хорошего тона и красивого внешнего лоска». Каярахпа тин

çеç вăя кĕнĕ совет влаçĕ хăй те çитĕнтерет çавнашкал «вилĕмсĕр» типсене. Унашкал нимĕнле çил-тăвăлра та, нихăш саманара та путман «карап» çинчи пысăк эшкер паян та романтик Çеçпĕл ĕмĕтленни çине иронилле кулса пăхни пурсăмăрăн куçĕ умĕнче. «...Я презираю всеми силами души всех своих партийных товарищей, одетых в теплые шубы, сапоги и т.д. и выглядывающих с противным буржуазно-дворянским достоинством». Шел, талантлă поэт, таса ĕмĕт-тĕллевпе кĕрешнĕскер, вĕсем карса хунă танатаран хăтăлаймасть.

Çеçпĕл, çамрăк революционер, пăлхавăрлă саманара пирвайхи сăввисене çырнă поэт, тăван халăх культурин революцичченех пултарăннă-пуçтарăннă ăс-пурлăхне тĕплĕн пĕлме пултарайман паллах, çавна пула (тата çĕнĕ власть хистевне пăхăнса!) вăл авалхипе хальхи вăхăта контрастласа, хире-хирĕç тăратса сăнлать. Культура никĕсĕ, унăн чĕрĕ тымарĕсем тата темиçе ĕмĕр тарăнăшне каякан историйĕ хисепе хумалли феноменсем пулман, вĕсен вырăнĕ, большевиксен политикин проекчĕпе, çĕтĕк-çурăкпа çӳпçап çырминче шутланнă. Ирĕклĕ, танлă, телейлĕ, чечекленекен пурнăç керменĕ пачах çĕнĕ, 1917 çулта хывнă никĕс çинче çĕкленет тенĕ большевиксем. Тĕрĕссипе, çак суя ĕнентерӳ ĕç халăхĕпе ун интеллигенцийĕн ăнĕнче ĕненӳсĕрлĕх (комплекс) туйăмĕ çуратнă, тымар туйăмне çывратнă. Çав ăс-пурлăхĕ архивсенче, фольклорта, халăхăн чи пултаруллă ывăлĕ-хĕрĕсен ăс-кăмăлĕнче упраннă. Мĕн каламалли пур, революци çулĕсенче çеç-и, каярахри тапхăрсенче те (1980-мĕш çулсемччченех!) çав пуянлăха чăн-чăн ăслăлăх меслечĕсем çине таянса тĕпчеме чарса тăнă. Тĕрлĕ юбилейсем тĕлне çеç пĕчĕк-пĕчĕк дозăпа, тюбикран пусса кăларнă пек, «çĕнĕ» публикацисем кун çути куркаланă. Акă мĕне пула Н. Ашмарин, Н. Никольский, Мĕтри Юман, Илле Тăхти, Ф. Павлов, Г. Вантер тата ыттисен эткерĕ юлашки çулсемччченех пĕтĕм туллилĕхĕпе кун çути курайсăр архивсенче тусанланса выртнă. Çав вăхăтрах совет пропаганди вун-вун çул хушши ырми-канми сывлăша чĕтретнĕ: чăваш йышши «вак халăхсем» Октябрьти революци тивлечĕпе кăна хăйсен нацилле культурин никĕсне хывма пуçлаççĕ, унччен вĕсен нимĕнле ăс-пурлăхĕ те пулман т.ыт.те. Сăмахран, Çеçпĕл сăвăсем çырнă вăхăтра тăван халăхăн авалхăхне мар, унăн

çутă малашлăхне проектласси актуаллă пулнă. Иртни вара, истори çӳпçине пухăнса пыни, айсбергăн вунă пайĕнчен пĕр пайĕ пек çеç курăнса тăнă. Паллах, нацин уйрăм патриочĕсем, çырулăхпа ăслăлăх ĕçченĕсем, ӳнерçĕсемпе ăсçутавçăсем çав пахалăхсем пуррине туйса тăнă, анчах та тĕнчери ытти халăхсем умне кăларасси пирки вĕсем ĕмĕтленме те пултарайман, большевизм идеологийĕ вĕсене авалхине ним юлми хура сăрăпа хуратса, пулассине мухтама, йăлтăртатса тăракан тĕспе ӳкерме ирĕксĕрлесех хистенĕ. Чăн та, ăс-пурлăх эткерĕпе ун тымарĕсене тимлеме хăюлăх çитеркенсем пулнă (сăмахран, Юрьевăн «Пăлхар патшалăхĕн юлашки кунĕсем» пьесине е Хусанкайăн «Юлашки пăлхар» поэмине асăнни те çителĕклĕ), шел те, унашкал авторсен хайлавĕсенче идея йăнăшĕсем, национализмла сулăнчăксем тӳрех шырама пуçлаççĕ, пичетлеме чараççĕ. Анчах та ку ĕнтĕ уйрăм тема. Кунта пин çул каяллахи (пăлхарлăх) эткерлĕх пирки сăмах пырать тейĕпĕр. Ытла тарăна кĕмесĕр, И.Я. Яковлев пуçарса никĕсленĕ çутăлăх юхăмне, вăл çитĕнтернĕ интеллигенцин темиçе ăрăвне тата вĕсем тăван культурăшăн пултарнă ăс-хакăл пурлăх-пахалăхĕсене илес пулсан вĕсем çине çĕнĕ власть шанчăксăр куçпа пăхни çинчен çӳлерех каларăмăр ĕнтĕ. Çавнашкал кăткăс лару-тăрура, Çеçпĕл каларăш, «çĕнĕ кун» акин калчисене пурте тӳсĕмсĕррĕн кĕтнĕ вăхăтра, Ф. Павлов суя хавхаланупа çуккине пур тумасăр акă мĕн çырать: «Эпир пысăк халăхах мар, пирĕн культура, пирĕн искусство пуçланса кăна пырать, çапах та пирĕн умра пурнăç сулĕ уçăлса выртать, пирĕн çине те революци хĕрлĕ çути çутатса пăхать. Эй, ан юл хыçала, пирĕн те шанчăк пур!» (1922).

«Çĕнĕ» культура никĕсне хывас ĕçе пикеннĕ ытти нумай-нумай çамрăк талант пекех, Ф. Павлов илемлĕ литературăпа тĕрлĕ ӳнерсен аталанăвĕпе пуласлăхне революци витĕмĕпе тачă çыхăнтарать. Анчах та авторăн публицистикăллă статйисенче тепĕр тĕрлĕ туртăм та уççăн палăрса тăрать: кирек мĕнле искусство çинчен калаçнă чух та вăл унăн ум историйĕпе тымарĕсене асра тытать. Ку ĕнтĕ пысăк эрудиципе анлă тавракурăм палăрăмĕ, ытларахăшĕшĕн вăл вăхăтра çакă вăй çемми пулман. Кунпа пĕрлех Ф. Павлов çивĕч, пĕр тăхтамасăр татса памалли ыйтусене тимлет, вĕсене вăл ыттисенчен витĕртерех курса-асăрхаса тăрать.

«Революци искусствăшăн мĕн турĕ?» (1919) çивĕчлетсе лартать ыйтăва статья авторĕ. Çиелтен пăхсан Ф. Павлов тавракурăмĕ Ленинăн икĕ хире-хирĕçле класс теорийĕ çинче никĕсленет пек. Пĕр енчен, вăл çине-çинех çуралса аталанса пыракан çĕнĕ искусствăна хапăллать, вăл ĕç çыннине çывăх та ăнланмалла пулнине палăртать. Çав искусствăн çĕнĕлĕхĕпе хăйне евĕрлĕхне тарăнрах ăнкарса илес тесен ăна ĕлĕкхипе танлаштарса пăхас пулать тет автор. Тĕпрен илсен, ĕлĕкхи искусствăпа хура халăх киленме пултарайман тесшĕн вăл.

Хирĕçӳллĕ самантсем пĕрре мар тĕл пулаççĕ авторăн тезисла каланă шухăшĕсенче. Сăмахран, социалла-политикăлла заказ хистевĕпе «халăх еннелле çаврăнакан» ӳнерлĕхе нихçан пулманла çӳллĕ шая çĕклесе мухтанă май Ф. Павлов çакна та палăртать: «Революци искусстви революци пуçланиччченех пулнă. Анчах ун чухне вăл тĕллĕн-тĕллĕн пулнă». Кунта статья авторĕ чăвашăн тĕрлĕрен ӳнер тĕсĕсене, пĕтĕм ăс-пурлăхне тĕнче культурин контекстĕнче курни калама çук пысăк пĕлтерĕшлĕ. Чăваш архитектури, илемлĕ литератури, сăрласа ӳкерессипе юрă-кĕвĕ ăсталăхĕ çинчен сăмах хускатнă май статья авторĕ авалхи грексемпе римлянсен, вăтам ĕмĕрсенчи Христос тĕнĕн сулхăнĕ çапнă ӳнерлĕхе тата Европăра хускалса çĕкленнĕ Чĕрĕлӳ тапхăрĕн хаклăх-пахалăхĕсене кĕскен тишкерсе тухать. Тĕрлĕ халăхсен искусствисен çав вăрăм çул-йĕрĕ, автор шухăшĕпе, XIX ĕмĕр вĕçĕнче хăйĕн пуласлăхне çухатса декадентство юхăмĕ патне çитсе чарăнать те сӳнет. Авторăн тĕп шухăшĕ: пуласлăх — революцин çĕнĕ искусствинче. Апла пулин те Ф. Павлов питĕ лайăх пĕлсе тăнă: çĕнĕ культурăна унăн никĕсĕнчен уйăрса халăхăн ĕмĕрсем хушши пуçтарăннă (анчах та хальлĕхе сапаланчăк та пытарăнчăк!) ăс-пурлăхне ĕçе кӳлмесĕр чĕртсе аталантарма май килмест. Сăмахран, чăвашсем çинчен XVIII—XIX ĕмĕрсенчех темиçе çĕр тĕпчев ĕçĕ çырса пичетленĕ пулнă тĕрлĕ халăхсен ăслăлăх çыннисемпе çул çӳревçисем тата çыравçисем. Вĕсене тĕплĕ тишкерсе тухни Ф. Павловăн 1920-мĕш çулсен варринче çырнă «Чуваши и их песенное и музыкальное творчество» очеркĕнче мĕн тери пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнă. Чăвашсен юрă-кĕвĕ ăсталăхĕн авалхи çул-йĕрне çакăн пек тарăн та тĕплĕн тĕпчене ĕç хальччен пулман. Пĕччен пулман, телее, Ф. Павлов.

Идеологипе политика влаçĕн пылак шерпечĕпе пуçĕсене минретсе тĕрлĕ енлĕ чăваш пурнăçĕпе хуçаланакан пуçлăхсен «ирĕкĕнче» чăваш чысне упракан чăн-чăн ăс-хакăл хуçисем те пулнă. Вĕсен чунĕ карьерăшăн, çемçе пуканшăн мар çунса ыратнă. Мĕншĕн-ха çӳллĕ влаçрисем социализм утăмне хăвăртлатма, ун пирвайхи имшер калчисене курса киленме йыхăрнă вăхăтра Г. Вантер «Чăваш халăх историйĕ» (1923) очеркне çырса пичетлет?! Е, калăпăр, Илле Тăхтин «Пара слов о чувашской литературе до 1917 года» (1917) статйин чăрмавлă шăпи? Н. Никольский те, Н. Ашмарин та, М. Юман та, М. Тинехпи те аваллăхра «чакаланаççĕ», чăвашăн «ĕне çинĕ» кĕнекине шыраççĕ. Вĕсем пĕр чăнлăха ăшра тытнă: авалхи тымарĕсене шыраса тупса чăвашлăхран вăтанма пăрахмасăр, наци туйăмĕпе мăнаçланма пуçламасăр чăваш нихăçан та тĕнчери культурăсен пĕрлĕхлĕ уявĕн кĕрекине танлăн, хăй хакне туйса кĕрсе лараймĕ. Акă Ф. Павлов мĕнле калать кун пирки: «Малалла тĕнче чăваша начар халăх тесе ан шутлатăр, хамăр пĕчĕк вăя мĕн пултарнă таран кăтартас пулать». Кунта автор чăваш хорне йĕркелес ыйтăва хускатать-ха.

1920-мĕш çулсенваррипе иккĕмĕш çурринче çырнă тĕпчев ĕçĕсемпе публицистика статйинче Ф. Павлов ытларах та ытларах тăван культурăн эткерĕ пирки шухăшлать, çав вăхăтрах вăл, çӳллĕ шайри чăн-чăн профессионал пулнă май, халăх ăс-пурлăх пурнăçĕн кулленлĕхне, унăн тĕрлĕ енлĕ утăмĕсене, çак самантлăхпа тĕвĕленнĕ ыйтусене те тимлесех тăрать, тата курса тăнипе çеç мар, тахатпа вăхăт çитернĕ таран пур ĕçе те харсăрланса тăвать. «Канаш» хаçатра пичетленнĕ статьясемпе пĕчĕк заметкăсене çеç илес пулсан та, мĕнпе кăна кăсăкланман-ши Ф. Павлов тата мĕнле кăна ĕçе тӳрремĕнех хутшăнса культура аталанăвĕшĕн усăллă (тата вăхăтра) ĕç туман-ши?! 1920 çулта хăй йĕркеленĕ чăваш наци хорĕн ĕçĕ çинчен çийĕнчех хыпарлать вăл «Канаш» хаçатра (1921). Чăваш чунĕ нимрен те маларах юрăра палăрать тет статья авторĕ. Ун шухăшĕпе, пулас чăваш оперин никĕсĕ хорта пулмалла. Хорăн Мускавра лартса панă концерчĕсем пирки те савăнса пĕлтерме ĕлкĕрет. 1921 çулта «Чувашский край» хаçатра пичетленнĕ хроникăра («Музыка сезонĕ вĕçленчĕ») автор Шупашкарти музыка шкулĕнче йĕркеленĕ хорăн чăн-чăн профессионализмне палăртать,

унпа пӗрлех педтехникум хорӗн палӑрӑмлӑ ҫитӗнӗвӗсене те асӑрхать: хор наци ӳнерлӗхӗн шкулне никӗслеме пултарчӗ тет. 1923 ҫулта «Канаш» хаҫатра пичетленнӗ «Тӑвас тӑк лайӑхрах тӑвас пулать», «Чӑваш искусстви тӗнчери халӑхсен хушшине тухать», «Чӑваш хорӗ пӗтӗм Раҫҫейри ял хуҫалӑх выставкинче» тата «Чӑваш пластинкисем» (1924) ятлӑ хроника хыпарӗсемпе хӑрталӑхсенче (заметка) Ф. Павлов хӑй йӗркелесе ертсе пыракан хорӑн ӑсталӑхӗпе сӑн-сӑпачӗ ҫӗршыври ҫеҫ мар, тӗнчери ытти халӑхсем умӗнче те танлӑн курӑнма пуҫланине палӑртать, ун ӳсӗмӗн ҫул-йӗрне тарӑнрах ӑнкарса илме чӗнет. Пӗрре пӑхсан чухрах хаҫатҫӑ ӗҫӗ ҫеҫ пек те курӑнма пултарать ҫакӑ. Анчах та виҫсе шутласан Ф. Павлов ҫеҫ тума пултарнӑ ӑна ҫав вӑхӑтра, ыттисемшӗн вӑй ҫемми пулман вӑл. Хор шӑпи, унӑн наци культуринчи вырӑнӗпе пӗлтерӗшӗ Ф. Павловшӑн самантлӑха та манӑҫа кӑларма юраман ыйтусен шутӗнче тӑнӑ, мӗн ҫӗре кӗриччен тимлесе пуҫарса пынӑ вӑл ӑна ертсе пырас ӗҫе. Хаҫатра пичетленнӗ кашни материала пысӑк талант чун хавалӗпе ҫырнӑ, ҫак самантра тата ҫитес вӑхӑтра пултармалли ӗҫсене уйӑрса «мӑянланӑ», вӗсене пурнӑҫа кӗртмелли май-мелсене уҫса кӑтартнӑ.

Ф. Павлов тӑван культура анинче тӗлӗнмелле анлӑ каҫалӑк вырса пырать. Васкаса тумалли ӗҫсен актуаллӑхне партипе патшалӑх ертӳҫисем те курччӑр, тарӑнрах ӑнкарччӑр тесе хыпӑнни кашни статьяра сисӗнет. Чӑваш театрӗ йывӑр лару-тӑрӑва кӗрсе ӳкнин сӑлтавӗ шухӑшлаттарать ӑна («Чӑваш тӗп театрӗ», 1922). Ҫак театра Шупашкарта шутсӑр пысӑк хӗн-йывӑрлӑхпа уҫни, унтан вӑл икӗ ҫултан пач хупӑнас патне ҫитни пирки вун-вун чӑваш куракан ячӗпе кулянса ҫырать статья авторӗ. Ҫав вӑхӑтрах ытти искусствӑсемпе танлаштарса пӑхсан, ун шухӑшӗпе, театр пуринчен те кирлӗрехчи.

«Театр ытти искусствӑсене малалла ярать. Театр искусстви ытти искусствӑсен варринче тӑрать, вӗсене пурне те хӑйпе пӗрлештерсе тӑрать. Театрта артист та, художник та, композитор та, ҫыракан та, поэт та, юрлакан та, ташлакан та пӗр ҫемье пулаҫҫӗ. Театр пулмасан вӗсем кашни расна ӗҫлемелле, хӑшӗ-хӑшӗ кӑна пӗрле пулма пултараҫҫӗ. Театрта пур искусство та пур. Илемлӗ ҫыру ҫинчен калаҫас тесен театр ҫинчен калаҫас пулать». Шухӑшне малалла ата-

лантарса автор ҫапла пӗтӗмлетет: «Ҫавӑнпа искусство малалла кайтӑр, вӑйланса пытӑр тесен ӑна театр еннелле туртас пулать, театр ӑшӗнче ыттисемпе пӗр ҫемье тӑвас пулать, вара тин чӑваш искусстви малалла кайӗ».

Тӗпрен илсен, ку статья эстетика ыйтӑвӗсене хускатса ҫырнӑ трактат шайнелле туртӑнать. Статьян «Театрӑн ӑҫта усси пур» ятлӑ ятарлӑ пайӗнче автор сцена ӳнерӗн хӑйне евӗрлӗхӗпе пӗрле унӑн пилӗк-ултӑ функцине тӗплӗн уҫса кӑтартать. Мӗн парать театр унта курма пынӑ ҫынсене, мӗн тума кирлӗ вӑл пурнӑҫра? Чи малтан, автор сцена ӳнерӗн гедонизмла (чун киленӗвӗ) функцине палӑртать. Кунӗпе йывӑр ӗҫпе шӑм-шакне е пуҫне ывӑнтарнӑ ҫын артистсем вылянине пӑхса ларнӑ хушӑра хӑйне пач урӑх тӗнчене килсе лекнӗ пек туять. Вӗсемпе пӗрле «вӑл кулать те, савӑнать те, нушине те манать, пуҫӗ те, шӑмми-шакки те кӑштах канать». Иккӗмӗшӗнчен, ҫынна килӗнче те, халӑх ҫинчи пурнӑҫра та ҫине-ҫине апла ан ту та, капла юрамасть тесе ӑс парса ҫитӗнтереҫҫӗ. Ку пур чухне те витереймест, тата этем ывӑнать мораль хистевӗсенчен. Спектакле курса ларакан «ҫын умӗнче темиҫе тӗслӗ ҫын иртет, темиҫе тӗслӗ пурнӑҫ курӑнать. Ҫавсене кура ҫын хурапа шурра паллама пуҫлать». Виҫҫӗмӗшӗнчен, куракан театрта мӗне те пулин ҫӗннине, хальччен пӗлменнине ӑша илет. «Театр тӗттӗм ҫын куҫне уҫать», ӑна шухӑшлама вӗрентет. Кунсӑр пуҫне автор театр искусствин класлӑх идейине палӑртать, куракан ӑскурӑмӗнче «революци шухӑшӗ те ҫирӗпленет» тет. Юлашкинчен автор Аристотель уйӑрса палӑртнӑ «катарсис» пирки те сӑмах хускатать. «Театр ҫын кӑмӑлне юсать, хытӑ чӗрене ҫемҫетет, сив кӑмӑла ӑшӑтать». Кунта ӗнтӗ уйрӑмах трагеди жанрӗпе ҫыхӑннӑ синкерлӗ ӗҫ-пуҫа куракан хӑй чӗри витӗр кӑларса куҫҫуль тӑкни те, чунӗпе ҫуталса тасални те т.ыт.те.

Ф. Павловӑн тӗрлӗ енлӗхӗпе анлӑ тавракурӑмӗ хӑй вӑхӑчӗшӗн (20-мӗш ҫулсем) тӗлӗнмелле феномен пулнине тинех асӑрхама йывӑр мар. Вӑл ҫырнисенче пуррине, ҫиелтенех курӑнса тӑраканнине констатациленипе ҫырлахмасӑр ҫак универсалӑн шалти тӗнчине тарӑнрах уҫса, ун ку таранччченех варӑнса тӑракан хӑш-пӗр вӑрттӑнлӑхӗсене ӑнкарса илесси, ман шутпа, шутсӑр пархатарлӑ та актуаллӑ ӗҫ. Ку вӑл уйрӑммӑн тӑракан пысӑк ӑста умӗнче каярах юлса та

пулин эпир пурсăмăр та пуç тайса каçару ыйтнипе танах пулĕччĕ. Çырнисен пуххине те тепĕр хут кăларнă чух тĕплĕн тишкерсе хак памасăр юрамĕ. Çут ĕçпе пултарулăх лаççинче çарана сарлака паккуспа вашлаттарса çулнă пек ĕçлеме тивнине, ыттисемшĕн вăй çемми пулман лава туртнине хăй те лайăх ăнланса-курса тăнă вăл. 1923 çулта çырнă автобиографийĕнче иртнĕ çул хăйне Чувашоблсовнарсуд президиумĕн членне суйланине, ку ĕç нумай вăхăт илнине палăртать. Анчах та, кама нумай панă — унран нумайрах ыйтаççĕ тенешкел, кулленхи служба ĕçĕнче хупăнмасăр, культура фронтĕнче те çанă тавăрсах ĕçлеме тивнине пĕлтерет. «По моему глубокому убеждению, сочетать служебную, научную, литературную и общественную деятельность — это не недостаток, а скорее достоинство. Конечно, об этом я заявляю с сознанием своих чрезвычайно скромных способностей». Ф. Павлов пире сăпайлăх çук çĕрте талант та пулма пултарайманнине тепĕр хут туйтарать. Пур çĕре те ĕлкĕрсе пыракан çын чылай чухне ĕçне çиелтен е ячĕшĕн çеç тăвать, тунă пек кăтартма тăрăшать. Йывăр лава туртакан Ф. Павлов «эп мар тăк, кам-ха» тесе ăнтăлать — «хальлĕхе, вăйпа сывлăх çитнĕ чухне, ĕçлетпĕр-ха» тет.

Ăста алли, ӳнерçĕн витĕр куçĕ, нумай вуласа пысăк пĕлӳпе чуна шалпарлатни чăваш художникĕсен пирвайхи куравне хак панинче мĕн тери çӳллĕ профессионализм шайĕнче курăнса тăрать. Кунта çеç-и, театрпа çыхăннă ыйтусене хускатнă чух та, чăвашăн халăх е профессилле юррикĕвви аталанăвĕн çул-йĕрĕсене тишкерсе тухнă тата хак панă чух та, тĕрлĕ музыка инструменчĕсем пирки çырнă чух та — пур ыйтăва та Ф. Павлов тымар тарăнăшĕнчен ярса илме тăрăшать, ансат та уçăмлă чĕлхепе ăнлантарать. Ăнсăртран мар автор кашни статйинчех вăл е ку ыйтăва сӳтсе явнă май искусствăпа ăслăлăха юнашар лартать. Тĕрлĕ ӳнерсемпе илемлĕ литературăн тĕсĕсене тишкерсе хак панă чух вĕсен теорине (ăслăлăх) тарăн пĕлни тĕрĕс çул кăтартать Ф. Павлова, акă ăçта ун вăйлă енĕ. Уйрăмах эстетика саккунĕсене лайăх пĕлнĕрен вăл тĕрлĕ ӳнерсен пĕрпеклĕхĕпе уйрăмлăхĕсене (хăйнешкеллĕхне) уçса кăтартать. Ф. Павлов пуçласа чăваш ăслăлăхĕнче эстетикăн тĕпри ыйтăвне («Мĕн вăл хитре») тĕпчесе статья пичетлет. Сăмахран, çӳлерех асăннă чăваш художникĕсен пирвайхи куравне пĕтĕ-

мĕшле хакласа çырнă статьяра мĕн тери туллин сăнланнă çав пĕрлĕхлĕ курăм — пĕр енчен, искусствăн пĕтĕмĕшле теорийĕпе эстетика саккунĕсене тĕплĕ пĕлни, çав вăхăтрах пысăк художник интуицийĕ, чун сисĕмлĕхĕ. Курава тăратнă вун-вун картина йышĕнчен М. Спиридонов ĕçĕсене уйăрса илсе тĕрлĕ енчен хаклать вăл. Ф. Павлов çамрăк ӳнерçĕн этнографилле туртăмне тӳрех асăрхать, анчах та йăлайĕркене, чăвашăн килти пурнăçĕпе кулленлĕхне сăнлакан картинăсенче вăл çав вăхăтшăн, халăх вăранма пуçланă тапхăршăн, çав тери кирлĕ туртăм-пулăмсем асăрхать. «Пĕр-пĕр халăх истори çулĕ çинелле тухма пуçласан» хастарлă художниксем «халăхăн сăн-сăпатне, унăн пурнăçне, йăлисене, таврашне картина çине ӳкерме тытăнаççĕ». Ахаль чухне шутсăр тиркевлĕ куçлă Ф. Павлов «этнографи художникĕн» ĕçĕсене тĕпчеме ятарлă, урăхларах мелсем шырама кирлине палăртать. Çавăнпа вăл кунта халăха çутта кăларакан (ăсçутавçă) куçĕпе пăхса та хаклать картинăсене, ку вара урăх виçе.

Статья авторĕшĕн тепĕр япала питĕ хаклă. М. Спиридонов çĕнелсе чĕрĕлекен культура ниминче халăхпа алла-аллăн тăрса вăй хурать. Чăн-чăн патриот яланах хăй халăхĕпе пĕрле. М. Спиридонов — «пирĕн художник. Вăл хăйĕн вирлĕ куçĕпе чăваш ĕç халăхĕн çĕршывĕ çине пикенсе пăхма хапăл тунă. Вăл чăвашăн пурнăçне сăн çине ӳкерме тытăннă. Вăл хăйĕн талантне, хăйĕн вĕреннĕ искусствине ют çĕрте сапаласа сая яма шутламан. Коккель художник та питĕ чаплă художник. Ăна пĕтĕм Раççейĕпех те пĕлеççĕ пулас. Анчах вăл хăй çуралса ӳснĕ çĕршыва манса ют çĕрте чапланса пурăнать. Ун картинисем çинче пĕрре те чăвашăн сăнĕ çук. Вара мĕнтен паллă унăн чăваш художникĕн уссийĕ? Нимрен те паллă мар. Коккель художник пирĕн мар».

Куратăр-и, хисеплĕ вулаканăмăр, мĕн тери çивĕчлетсе тата чĕрине ыраттарса лартать ыйтăва хăйĕн хăватлă таланчĕпе пурнăçне-сывлăхне ним юлми тăван халăха панă художник. Уншăн чи пахи те пĕлтерĕшли — «чапланса пурăннипе» ячĕ пуриншĕн те паллă пулни мар. Халăха тӳремĕн усă тунине, М. Спиридонов пек, тата «чăваш сăнĕ», характерĕ, чунĕ палăрнипе çуккине пăхать чăн малтан Ф. Павлов. Ку чăнлăх вăл 20-мĕш çулсемшĕн çеç мар, паян та питĕ актуаллă, ун пĕлтерĕшĕ чакман ним чухлĕ те. Çавăнпа

та пĕр иккĕленмесĕр çапла калама пулать: Ф. Павлов паян, нумай вăхăт иртнĕ хыççăн, пирĕн хушăра пулас пулсан шухăшне улăштармастчех — тепĕр поэта, тен, Европăра пĕлеççĕ, анчах пурпĕр вăл пирĕн мар. Çапла вара куратпăр, Ф. Павлов асăннă дилемма патне пырса тухнă тата, тен, пуçласа пичетре çав ыйтăва çивĕчлетсе лартнă: космополитлăх е патриотлăх, нацилле сăн-сăпатлă, хăйне евĕрлĕ искусство?! Хăй хăш енче пулнине эпир куртăмăр.

Ман шутпа, çак «полемика» уйрăм факт пек çеç курăннăран культура историкĕсемпе тĕпчевçисем ун çине нихăçан та пусăм туман. Революци хыççăнхи тата уйрăмах 1920-мĕш çулсен иккĕмĕш çурринчи культура утăмĕсене пичет тĕкĕрĕнче сăнасарах пăхсан çакă курăнать: Ф. Павлов пек, пултарулăхпа ăслăлăх ĕçне революцичченех пуçăннă чăваш интеллигенчĕсен (сăмахран, Г. Вантер, И. Тăхти, М. Юман) тавракурăмĕ, вĕсен ăс-пурлăх хаклăх-пахалăхĕсен шайне палăртмалли виçи-мелĕсем çĕнĕ система «шăркалантарса кăларнă» çамрăксеннипе ниепле те тĕл килсех пĕтеймен. Çамрăк ăрушăн, «рабфакçăсемшĕн» тейĕпĕр пĕтĕмлетсе, аваллăх пĕтĕмпех тенĕ пек пусмăрпа асап символĕ шутланнă, çавăнпа та «иртнипе пулассине» контрастлатса, хире-хирĕç тăратса, çунатлă эмоци витĕр сăнласси, ытларах чухне суя хавхаланупа мăнаçланасси литературăпа искусство ĕçĕнче хуçаланакан меслет пулнă. Ку вăл социализм шантаракан, пур енĕпе те илĕртӳллĕ пуласлăха шухăшĕмĕтпе вĕçни. Çавăнпа та «çĕнĕ культурăн» илемлĕ керменне никĕсренех (пирвайхи кирпĕчренех) хывма тытăнмалла текен шухăш-чĕнӳ çамрăк ăрăвăн «альфипе омеги» шутланнă. Тепĕр енчен, пуç пулса тăракан (Чăвашра ĕнтĕ, кунта хамăрăн Луначарскисем пулман!) идеологи ертӳçисемшĕн те ку пĕртен-пĕр шăнăр туртăмпа тĕп çул пулнă. Акă мĕне пула çара çĕрте никĕс хывакан «рабфакçăсем» ытларах социализм лозунгĕсемпе, чĕнӳллĕ-йыхравлă фразеологипе усă кураççĕ, пуласлăха вăй çитерне таран проектлаççĕ. Çавсен çăмăл аллине пула XX ĕмĕрти икĕ-виçĕ ăру пурнăçне пуласлăхра «пурăнса ирттернĕ». Çак хиствеврен «кивĕ» интеллигентсем те пăрăнса юлайман паллах, анчах та вĕсен тĕве курпунĕ пек пуçтарăннă ăс-пурлăх пештĕрĕнче урăхларах пахалăхсем те сахал пулман. Çавна пула вĕсем «çĕнĕлĕх е эткерлĕх» текен «кĕске турталлă» дилемма сулнăкĕнчен сых-

ланса тата çул хыттине туйса асăрхануллă утăмпа утаççĕ. Сăмахран, Ф. Павлов социализм витĕмĕпе хушăнса пыракан пурнăç пулăмĕсене сăнаса-хапăлласа пырать, çав вăхăтрах халăх культурин «рабфакçăсем» пĕлмен е хакламан ум историне те пысăк тимлĕхпе тĕпчет. Чăваш çырулăхĕн XIX ĕмĕртех кун çути курнă паха тĕслĕхĕсем пирки вăл çине-çинех пичетре сăмах хускатать, статьясемпе очерксем пичетлет. Акă, калăпăр, Ф. Павлов Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче вĕреннĕ çулсенчех унти архивра упраннă тĕлĕнмелле ал çыру, ун авторĕ Г. Тимофеев. «Паллă кĕнеке» статйинче (1922) Ф. Павлов ăна тивĕçлипех хăйне майлă энциклопеди вырăнне картса хаклать. Статьян тĕп шухăшĕсенчен пĕри — чăвашсем тĕттĕм, культурăсăр, историсĕр халăх мар. Мĕн тери ăс пурлăхĕ пытарăнса тăрать çак кĕнекере — чăвашсен пăлхар тапхăрĕнчи мăн хаваллă пурнăçĕ, йăли-йĕрки, килти тата халăх çинчи пурнăçĕ, апат-çимĕçĕ, уявĕсем, авалтан килекен тĕнĕ, тумĕ-юмĕ т.ыт.те.

Статья авторĕ ал çыру хальлĕн упранакан текстăн калăпăшне, тытăмне палăртать (сăмах май, «рабфакçăсем» иккĕленсе хакланăран е ун пĕлтерĕшне курманран çак алçыру 1972 çулта (!) тин кĕнеке хальлĕн кун çути курчĕ), ун содержанине кĕскен каласа парать.

«Çапла вара «Тăхăрьяла» çыракан питĕ пысăк, питĕ чаплă ыйтусене тапратать. Унти чăваша тӳрех палласа илмелле: мĕнле питлĕ-куçлă, кил-çурчĕ, çи-пуçĕ мĕнле, килти пурнăçĕ, ыррийĕ, усаллийĕ, тĕн, тĕшмĕш, ĕçлени, выляни, авланни, качча кайни, халăх ĕçĕ, ĕçкĕ-çикĕ — мĕнпурĕ пĕтĕмпех çырнă. Вуласа пынă çĕрте чăваш шăкăлтатса пурăнни куç умĕнче пек. Çутта тухса пынă пирки чăваш халăхĕ улшăнса пынă, чăваш юррисем, халапĕсем, юмахĕсем, кĕске юмахсем, тĕслĕрен ăслă халапсем — тем те пур». Юлашкинчен автор сĕнӳ парать: «Тăхăр ял» кĕнекене станпа çапсан пит аван пулĕччĕ». Мĕншĕн тесен ăсçутавçă куçĕпе курса пĕтĕмлетет автор, халăха кăшт та пулсан тимлеме шухăш панă пулĕччĕ.

Ф. Павлов çырнисене тишкерӳллĕ куçпа, васкамасăр вуланă май творчество ĕçĕнчи, тĕрлĕ ӳнерçĕсемпе çыравçăсен тата ăрусем хушшинчи çыхăнусене «тĕвĕлекен» уйрăм фактсем куç тĕлне пулаççех. Эпир çӳлерех П. Хусанкай асилĕвĕнче Ф. Павлов пултарăвĕпе эткерĕ çĕнĕ енĕсемпе

уçăлласси пирки пысăк шанăçпа çырнине асăннăччĕ. 1931 çулта Ф. Павлов çĕре кĕнĕ хыççăнах çырса хунă поэт вăл йĕркесене. Таса пĕрчĕсем тулăх çĕр çине ӳкнĕ темелле. Хв. Уярăн «Тăхăрьял» авторне асăнса» очеркне вуласан авторĕ Хусанкай шухăшне ăша илсе ĕçлени пĕртте иккĕлентермест. Уяр тĕплĕ паллашнă çеç мар Ф. Павлов çырнисемпе, чи пĕлтерĕшли — чăн малтан тумалли ĕçсем çине те ун куçĕпе пăхса хăшне-пĕрне пурнăçа кĕртме пикенни. Ф. Павлов шухăшĕсем çине таянса, темиçе хутчен цитатăласа Уяр «Тăхăрьял» ал çырăвне тĕплĕ тишкерсе тухать, унăн илемĕпе тарăн сăнавĕсене тепĕр хут курăмлă палăртать. «Пичетлесе кăларасчĕ», — асилтерет вăл Ф. Павлов сăмахĕсене. Тепĕр тăвата çултан «Тăхăрьяла» «станпа пусса» та кăларчĕç! Ку юрĕ-ха. Ман шутпа, Уярăн чĕпĕтсе вулакан куçĕ Ф. Павлов пĕр тăхтаса тăмасăр тумалли тепĕр пысăк ĕç пирки каланине те асăрханă. 1923 çулта «Канаш» хаçатра Ф. Павлов «Библиографине кăтартакан кĕнеке» ятлă пысăк мар заметка пичетлет. Авторĕ ку таранччен чăвашсем çинчен пичетре мĕн çырнă, çавна пĕтĕмпех йĕркене кĕртсе пĕр кĕнеке пичетлесе кăларассине чи актуаллă ĕçсен шутĕнче курать.

«Виç çĕр çул хушшинче тухнă кĕнекесене, журналсене, хаçатсене пăхса тухсан чăвашсем çинчен пĕр пин статья та тупма пулать. Анчах вĕсене шырама питĕ нумай вăхăт кирлĕ, вун çула та çитĕ. Библиографине кăтартакан кĕнеке кăларсан вăл кĕнекесене пĕр çул хушшинче пурне те шыраса тупма пулĕ. Ăçта мĕнле кĕнеке, Мускавран, Хусантан, Ĕпхӳрен тата ăçта, мĕнле журналта, хăш томра, хăш номерте тата мĕнле статьяра мĕн çинчен çырнă, мĕнле-мĕнле ыйтусем хускатнă — çавсене пурне те библиографи кĕнеки çинчен палăртнă пулать». Юлашкинчен автор çак ыйтăва «Канаш» хаçатра сӳтсе явсан аван пулĕччĕ тет. Çав «виç çĕр çул хушшинче тухнă кĕнекесене» Ф. Павлов пĕрерĕн-пĕрерĕн хăй алли витĕр кăларнă, кашнине тĕплĕн тишкерсе тухнă, кашниййĕн шухăш-сăнавне чăн-чăн наука шайĕнчен курса хакланă. Унсăрăн вăл чăваш музыкин историйĕпе аталанăвĕн çул-йĕрĕсене çав тарăнăша кĕрсе тĕпчеймен тата паян кунччен те хăйсен пĕлтерĕшне çухатман кĕнекесем çырайман пулĕччĕ.

Хв. Уяр асăннă заметкăна кĕнеке палатинче ĕçленĕ хушăра (1943—1950), тен, маларах та асăрхама пултарнă. Ан-

чах та эпĕ пĕртте иккĕленместĕп: Ф. Павлов заметки уншăн эвристикăлла системă пулнă, хĕлхем ӳкернĕ унăн ăн тарасине (подсознание). Уяр, хăй каланă тăрăх, «Русские писатели о чувашах» валли пилĕк çула яхăн материал пуçтарнă. 1946 çулта вĕсем Иван Мучипе иккĕш çав инкеклĕ шăпаллă, «ие чăмланă» кĕнекене кăларнă. Чăн та, вĕсенчен маларах, 1931 çулта, В. Егоров профессорăн «Чăваш чĕлхи çинчен кăларнă литературăн библиографилле кăтартмăшĕ» тухнă пулнă ĕнтĕ. Ку ĕç — чĕлхе материалĕсен пуххи, апла пулин те вăл Ф. Павлов ĕмĕтленнĕ ĕмĕтĕн уйрăм пайĕ пурнăçланнине çирĕплетет.

20-мĕш çулсен вĕçнелле Ф. Павлова аваллăх, наци культурин эткерĕ ытларах та ытларах хăй патне туртать, уйрăмах Чĕмпĕрти чăваш шкулĕн халăха çутта кăларас ĕçри историлле пĕлтерĕшне уçса кăтартма тăрăшать вăл, И.Я. Яковлев ĕç-хĕлне, ун сăнарне тĕрлĕ енчен курса ăнлантарать, унăн вĕренекенĕсен биографийĕпе пултарулăхне тишкерет. Чăн-чăн интеллигенцин наци культури умĕнчи тивĕçĕ, ăна халăхпа çыхăнтаракан тĕвĕсем, талант шăпи пирки шухăша ӳкнĕ май вăл И. Дмитриев, К. Иванов, С. Максимов, Г. Комиссаров, Н. Шупуççынни ячĕсене уйрăм чыса тивĕçлĕ ятсен ретне лартать. Чăваш интеллигенцийĕн сăн-сăпачĕ «рабфакçăсенче» мар, çав талантсен ĕç-хĕлĕнче, хăйсене хăйсем тыткаланинче, ĕмĕчĕ-идеалĕнче туллин палăрать тесшĕн пулни Ф. Павлов çырнисенче айăн варса каланă шухăш е кредо пек вуланать; каламасăрах паллă, вăл вĕсемпе килĕшменнине, хăш-пĕр чух вĕсем хăмпăланнине, çурма пĕлӳпе ярханахла каппайланнине пичетре уççăн каласа полемика пуçарма пултарайман. Тон, культура, шалти тасалăх, тӳрĕлĕх пирки тĕрлĕ статьясенче автор çула май пек, пĕр сăмахпа е реплика шайĕнче каласа иртет, анчах та ку уншăн чи пĕлтерĕшли пулни йĕркесен ăш-чикĕнчен хĕрӳ парса тăрать.

Халăх хушшинче И.Я. Яковлев ĕç-хĕлĕн историлле пĕлтерĕшне сахалтарах пĕлнине, нумайăшĕ ăнлансах çитерейменнине пĕле тăркач, вăл статйисемпе асилĕвĕсенче çинеçинех аслă вĕрентекенĕн хăйне евĕрлĕ вĕрентӳ системине ырлать, хăйĕн сăнарне психологи енчен уçса кăтартать. Уйрăмах ку тĕлĕшрен «Çырмари юрă» очерк кăтартуллă. Очеркăн хушма ячĕ «Чĕмпĕр шкулĕ, И.Я. Яковлев тата

чăваш ĕç халăхĕпе музыка искусстви çулĕ». Кунта варса калас мел каллех сисĕнет: тĕп ыйту очеркра Яковлев ĕçхĕлĕ мар, автор вăл темăна чăваш музыкин çул-йĕрне тĕпченĕ май çеç хускатнă имĕш. 1920—30-мĕш çулсен чиккинче И.Я. Яковлевăн историлле пĕлтерĕшне чакарса хакласси çĕнĕрен вăй илме пуçлать. Чăн та, ку вăхăт тĕлнелле М. Юман та «Сунтал» журналта (1928) хăйĕн «Хăватлă ĕмĕрĕпе» «Çул хыççăн çулне» пичетлеме ĕлкĕрет, ури çине ĕне пуснăран талантлă художник халь ĕнтĕ пач урăхла шухăшлать: «Каярахпа, революци пусăрăнсан, вырăс реакционерĕсем ялан эпир çырнă япаласене асăнса Иван Яккăлча хурлаççĕ. Вара эпĕ хам йăнăшнă пулĕ, ахалех Иван Яккăлча туларăм пулĕ тесе шухăшлама тытăнтăм! Çав шухăшсем çинчен Иван Яккăлча халĕ те çырупа пĕлтертĕм. 1908 çулта Лев Толстой манран чăвашсем çинчен ыйтса çыру çырсан эпĕ ăна Иван Яккăлчă сумсăр пысăк усă тăвакан çын тесе пĕлтертĕм. Кевĕрле те каярахпа, 1918-мĕш çулсенче, Иван Яккăлчăпа эпир хаçатсем урлă кĕрешни йăнăш пулчĕ, сиенлĕ пулчĕ ахăр теме пуçларĕ». Кунпа пĕрлех М. Юман халăх ăсçутавçин çутлăх ĕçĕнчи стратегийĕпе тактикине, обществăлла хутшăну стереотипĕн майĕмелĕсене тӳрре кăларса пĕр сăмахпа ăнлантарать: «Кашкăр хушшине пурăнма кайсан кашкăр пек улама вĕренмелле пулать... Кашкăр пек уламасан кашкăрсем туртса çурса пăрахаççĕ».

Çапах та епле пулсан та Ф. Павловпа М. Юман та, культурăн ытти хăш-пĕр ĕçченĕсем те И.Я. Яковлев ячĕпе сăнарне çĕнĕрен символ сĕмĕ кӳреççĕ. Анчах 30-мĕш çулсен кăра çилĕсем хускаласси пăхса курăнмалла çывăхра пулнă ĕнтĕ. 1931 çулта парти обкомĕн ертӳçи С.П. Петров идеологи фрончĕн кĕрешĕвĕнчи пысăк çĕнтерӳ тесе акă мĕнле ĕçе хаклать: çав вăхăтрах эпир Яковлевран наци геройĕ туса хума хăтланакансене тăрă шыв çине кăлартăмăр тет. Тепĕр хут калама кирлĕ-и: çав списокра чăн малтан Ф. Павловпа М. Юман ячĕсем пулмалла пулнă паллах. Çулпуç кĕнекин ячĕ хăех кăштах чуна шиклентерет: «Наци ыйтăвĕнчи сулăнчăксемпе икĕ фронтпа та кĕрешессишĕн?» Кунта чĕнсе те кăтарту парса калани тĕпре, çавна пула кĕрешӳ хаярланса пырасси, малашне вăл юн тăкасси патне те çитсе тухма пултарасси сисĕнет. Тепĕр пилĕк-ултă çул тĕлне ку-

нашкал статьясен фразеологийĕ çĕнĕ тум тăхăнать. «Националист писательсем Юман, Шупуççынни, Хусанкай, Митта, Рсай пулхăр-чăвашсем çĕнĕрен çураласси çинчен ĕмĕтленсе сĕлекисене юхтараççĕ...»; «Чуваши-болгары ятлă контрреволюцилле кĕнеке авторне Ашмарина...»; «Авантюрист-националист М. Юрьев «Пулхăр патшалăхĕн юлашки кунĕсем» ятлă пьеса çырать»... Ку йĕркесем Уйăп Мишши стайинчен, статья ячĕ «Халăх тăшманĕсене — буржуаллă националистсене тĕпĕ-йĕрĕпе кăкласа çĕмĕрсе тăкар» (Сунтал. 1937. 9 №). Кам вуламан çак статьяна — вулăр. Тен, ун хыççăн Шупашкарти Çĕнĕ кăнтăр районĕнчи пĕр урама Уйăп Мишши ятне вăл мĕнле «паттăрла ĕçсем» тунишĕн панине те чухласа илĕр, мĕнле органсем çине тăрсах тăрăшнине те (çапла, вĕсем халăх çывăрнă чух, тĕттĕмре хăйсен хура ĕçне тума ĕлкĕреççĕ). Çак актăн цинизмĕ — ăна, пĕлсе тăрсах, демонстративлă тунинче, вырăссем калашле, ку вăл «издевательство над здравым смыслом» тени. «Хăрушлăхпа хăрушсăрлăх» ăнлавсене хăйсене майлă пĕлтерĕш хывнăран вĕсемшĕн чи хăрушши çывăракан çынсен ăн-пуçне вăратакансем пулнă. Ку та пырĕччĕ, енчен те Уйăп Мишши статйи нумай-нумай айăпсăр таланта арестлесе персе пăрахма тĕплесе çитернĕ сăлтав пулса тăман пулсан. Синкерлĕ вилнисен ячĕпе панă урам Шупашкарта е Чăвашра çукпа пĕрех.

Ку вăхăтчен Ф. Павлов çĕре кĕнĕ пулнă ĕнтĕ. Пурăнса çитнĕ пулсан ун шăпи те пачах урăхла вĕçленнĕ пулĕччĕ.

Ф. Павлов статйисен витерӳлĕхĕ ун сăнарлă шухăшлавĕнчен, тури диалект пуянлăхне виçеллĕ туйса ĕçе кӳлнинчен нумай килет. Хăш-пĕр йĕркесемпе сăмах çаврăнăшĕсем, тепĕр чухне тураса-якатса çитермен пулин те, афоризм валли хăртаса хăварнă пек курăнаççĕ: чĕлхи авăк, шухăшĕ тарăн вĕсен. Статйисене çырнă чух нумай шухăшласа ларма, вĕçне çитиччен якатса çитерме унăн вăхăчĕ те пулман пулас, пур ĕçе те ĕлкĕресшĕн пулнă автор.

«Пĕр калама пуçласан чуна çунтарать, итлесе тăранаймăн»; «Юрри пулмасан чăвашсен поэзипе литературри те пулман пулĕччĕç»; «Юрăра вилĕмсĕр вăй пур»; «Çĕршыв мĕнле — халăхĕ те çавнашкал»; «Рубенс картинисенче «вĕри юн, тачка çемçе ӳт пурнăç сĕткенне ĕçсе тăранассине кĕтсе тăрать»; «Юрланă чух ăна (чĕлхене! — *Ю.А.*)

юратма хапăл хушăнса пырать»; «Юрăра чĕрĕ энерги (чĕм) пур, вилĕмсĕр вăй пур»; «Ĕçлекен çынсен кăкăрĕсем тимĕр пек, шăнăрĕсем чĕн пек, сăнчăр пек, куçĕсем хурчка куçĕ пек çивĕч»; «Пур аслă чăваш поэчĕсем юрă сăввисенчен хакăл йышăнса хастарланаççĕ»; «Тĕпри лаша тикĕс юртсан пичеврисене (кучăмри) те пыма аван».

Ярăмăн-ярăмăн ярăмласа, сĕвемĕн-сĕвемĕн сĕвемлесе, тирпейлĕн тураса риторика кĕнекине чăваш чĕлхипе хатĕрленĕ чух ай мĕнле тухăçлă усă курма пулĕччĕ пысăк ăста чĕлхин пуянлăхĕпе.

Эпир çӳлерех каларăмăр ĕнтĕ, Ф. Павлов пек тĕрлĕ енлĕ те тарăн пĕлӳллĕ интеллигентсем йывăр вăхăтра халăхăн историйĕпе аваллăхне тĕпчесе май килнĕ таран ĕçĕсене пичетлеççĕ. Майĕсем вара йĕп çăрти пек тăвăр та хĕсĕк пулнă. Халĕ, çĕр çула яхăн иртсен, эпир чылай туллинрех куратпăр халăх ăс-пурлăхне. Çав «айсбергăн» шыв айĕнчен çĕкленсе тухнă кĕрнеклĕ пайĕ паян ĕлĕкхи пек çичĕ çăра хыçĕнче мар, вăл витĕр куççемпе сывă ăн-пуççен аллинче пулмалла пĕтĕмпех. Шел, литература тĕпчевçисем хушшинче «рабфакçăсен» тăхăмĕсем нихăçан та тĕпĕ-йĕрĕпе кăкланса тухмаççĕ, кашни ăру çитĕнтерет вĕсене. Алли çиелтенех палăрса тăрать вĕсен: карьерăпа тĕрлĕрен чаплă ят валли кĕнекесен шучĕ кирлĕ, тиек çаврăнăçулăхĕпе ĕçлекенскерсен ĕçĕ тарăнлăхпа е чăн-чăн ăсталăхпа палăрмасть, ун йĕрĕсем хăвăртлăхра тата пур япалана та кăшт-кашт тĕкĕнсе иртнинче. Çакă вăл хаклăх критерийĕсен планкине айван шаялла туртать. Вĕсенчен хăшĕсем чăвашлăха та кăнттам та йăваш е виççĕмĕшле пĕлтерĕшлĕ пулăмсем çине таянса ăнлантарма пăхаççĕ. Çак туртăм вăл влаçри çын ĕç-хĕлĕ урлă татах та пысăкрах сиен кӳме пултарать. Çиелтен шăйăрттарнă чух шухăшлама вăхăт çук. Турă панă виçерен иртме май çуккине те манма юрамĕ. Хăйне тыткаланине курсан вара çăлтăр тейĕн. Сăлтавĕ пĕтĕмпе çурăм шăмми çирĕпленмесĕр çынна хăш-пĕр пуçлăхсем тивĕççĕр мухтаса, «çĕклесе» янинче. Эпир мĕн ачаран, выляса çитĕннĕ май, асăрхатпăр: хăмпă шăпи пĕрре — вăл çурăлатех.

Юлашки вăхăтра Константин Иванов, Çеçпĕл Мишши, Федор Павлов, Илле Тăхти эткерне васкамасăр (Библие вуланă пек), тĕпчевлĕ кăмăл еккипе вуласа, хăш-пĕр «тĕксĕм» вырăнсене çĕнĕ куçпа курса ăнлантарма пикенсе

пăхмалăх телейлĕ самантсем пулчĕç. Тĕпчевçĕсем ку таранччен ĕçленин пĕлтерĕшне ним чухлĕ те чакармасăр каласшăн: çав улăпсен пĕртте кивелмен ĕнчĕ-пуянлăхĕ чăмса çитме йывăр тарăнăшра; вула та вула вĕсене, кăшт сывлăш çавăрса илсен каллех тепĕр хут пикен — çавăн пек ĕмĕр тăршшĕпе, çул ертӳçисем пек, вĕсем пире (килес ăмăрт тĕллевлĕ чăвашсене те) ăс-пурлăх шыравĕнче çула-йĕре çутатса пырĕç: илемĕ те, чăвашлăх шăнăрĕ те, философиййĕ те, тасалăхпа чăнлăх урокĕсем те вĕсенче туллиех. Паллах, чун-чĕремĕрпе ăс-хакăлăмăра тĕлĕрме памасан, вĕсем çырнисенче кашни харпăр хăйне тата халăхăмăра сывлăш пек кирлине шыраса тупма ăс çитерсен. Тăван культурăн малашĕ пирки нумай шухăшланă Ф. Павлов: «Тĕнчере мĕн тĕлсĕр пурнать, мĕнĕн пурри-çукки никама та кирлĕ мар, çав пĕтмелле, хăçан та пулсан куçран çухалмалла теççĕ хăшхăш ăслăлăх çыннисем». Ку шухăша Ф. Павлов чăваш пурнăçĕ çĕнĕ вăй пухса, çĕкленсе пынă тапхăрта ун пуласлăхне шанчăка хывса çырнă. Наци культурипе тăван чĕлхемĕрĕн паянхи йывăр та инкеклĕ кун-çулне курса тăракан хĕрхӳ кăмăл-туйăмпа вулать çав йĕркесене.

Хамăршăн хамăр çине тăма кирлине астутараççĕ вĕсем пире.

*2010*

Ун çӳллĕ çут çамки ăспа çиçетчĕ,
Вылятчĕ шӳт ун типĕ куçĕнче.

*Петĕр Хусанкай*



## ИЛЬЯ ЕФИМОВИЧ ЕФИМОВ (ТĂХТИ)

*(1979 çулта кун çути курнă кĕнеке ум сăмахĕ)*

Илле Тăхти çырнă «Колчак» поэма чăваш хушшинче çур ĕмĕр ытла ĕнтĕ килтен киле çӳрет. Писателĕн чылай калавĕпе сăввине вулакансем лайăх пĕлеççĕ. Хĕрĕх тăхăр çул çеç пурăннă пулин те, Тăхти тăван культурăшăн çунса ĕçлесе ырă та хисеплĕ ята тивĕçлĕ пулчĕ. Унăн эткерĕ пуян. Çак пуянлăхăн пысăк пайĕ, тĕрлĕ сăлтава пула, паянхи кунччененех архивра упраннă. Ку кĕнекере пирвайхи хут кун çути куракан сăвăсемпе поэмăсем, калавсемпе статьясем Тăхти талантне юп куракансемшĕн хаклă парне пуласси иккĕлентермест. Вĕсем çыравçăн литературăри сăн-сăпатне вулакана туллинрех кăтартма пулăшаççĕ.

Писатель мĕн çĕре кĕрicченех халăх ĕмĕчĕпе савăнăçне, унăн хуйхи-суйхине чĕри патне илсе пурăннă. Ку енчен пăхсан вăл чăн-чăн халăх писателĕ çеç мар, халăх учителĕ те пулнă. Халăха çутта кăларас пархатарлă ĕçе Тăхти Константин Ивановпа пĕр вăхăтрах кӳлĕннĕ. Чухăнлăхпа тĕттĕмлĕхре асапланнă чăваш ĕç халăхĕн Октябрь хыççăнхи çĕкленӳллĕ аталанăвĕ ăна кивелнĕ пурнăçа хастаррăн сивлеме, ирĕклĕхе мухтаса çĕнĕ сăвă-юрă çырма хавхалантарнă. Самана сассипе сăн-сăпачĕ унăн пĕтĕм пултарулăхне витернĕ.

Илья Ефимович Ефимов (Тăхти) 1889 çулхи сентябрĕн 4-мĕшĕнче чухăн хресчен кил-йышĕнче çуралнă. Унăн тăван ялĕ, Нӳшкасси (Хусан кĕпĕрнинчи Çĕрпӳ уесне кĕнĕ пулнă, халĕ Чăваш Республикин Тăвай районне кĕрет), сайра тĕл

пулакан хӑтлӑ тавралӑхра вырнаҫнӑ: илемне кура асамлӑ ят илнӗ Элкӳл, аслӑ улӑх-ҫаран, вӑрман... Вырмара, сӗлӗ кӗлтисем хушшинче ҫуралнӑ ачана амӑшӗ Тӑхти тесе ят панӑ: «Васкаса ҫуралчӗ пулсан та унӑн ӗмӗрӗнче хыпаланмалла ан пултӑр». Автобиографире палӑртнӑ тӑрӑх, вӑл ултӑ уйӑхра чухнех йывӑр чирлесе тӑватӑ уйӑхран тин сывалнӑ[1].

Тӑхти ачалӑхӗ ҫинчен каласа паракан материалсем нумаях мар. Хӑй вӑл, сӑпайлӑскер, саманапа унӑн ҫыннисем ҫинчен ытларах ҫырса хӑварас тесе хыпӑннӑ. Халь асӑннӑ автобиографире (ӑна 1908 ҫулта ҫырнӑ) хӑй пирки калакан фактсене писатель телеграф чӗлхипе кӑна палӑртса пынӑ: саккӑрта Элпуҫӗнчи чиркӳ прихучӗн шкулне кайнӑ, унта пӗр хӗл вӗреннӗ хыҫҫӑн Нӳшкассинчи тин ҫеҫ уҫӑлнӑ шкула куҫнӑ. Кӗҫех ашшӗ ӑна Сӗве хулинчи мӑнастир шкулне вырнаҫтарать. Ун хыҫҫӑн, 1903 ҫулта, Илле Хусанти учительсен семинарийӗнче пӗлӳ пухать, унтан 1908 ҫулта вӗренсе тухать.

Пултарулӑх ӗҫне вӑл Хусанти семинарире вӗреннӗ чух пуҫӑнать. Малтанхи калавӗсене семинари вӗренекенӗсем ал ҫыру вӗҫҫӗн кӑларса тӑнӑ «Шурӑмпуҫ» тата «Мыслитель» журналсенче пичетленӗ. Ку вӑхӑтра семинарире вӑй хунӑ Н.И. Ашмарин «чӑваш ачисене хӑйӗн хваттерне чӗнсе илсе калаҫнӑ, ӗҫтернӗ-ҫитернӗ, кӗнекесем панӑ»[2]. Тӑхти те вӑл хавхалантарнипех тӑван чӗлхен пуянлӑхӗпе янравлӑхне тарӑнрах чухлама пуҫлать, халӑх сӑмахлӑхне пухать. Ҫамрӑк вӗренекен тӑван тавралӑхра ҫырса илнӗ сӑвӑ-юрӑсемпе халап-юмахсем «Чӑваш сӑмахӗсен кӗнекине» пухса хатӗрлекен ученӑйшӑн паха материал пулнӑ. Н. Ашмарин словарӗнче И. Тӑхти ҫырса панӑ вырӑнти калаҫу тӗслӗхӗсемпе сайра тӗл пулакан сӑмахсем пилӗк ҫӗр ытла.

Ҫырма пуҫланӑ тапхӑра писатель хӑй ҫапла аса илет: «1905 ҫулта эпӗ хам валли чӑвашла тата вырӑсла сӑвӑсем ҫырма пуҫларӑм. Ҫав сӑвӑсене хӑш-пӗр юлташсене кӑтартрӑм та, манран тӑрӑхласа кулма тытӑнчӗҫ, чылаях кӳрентерчӗҫ. Пӗри икӗ хутчен патакпа пуҫран ҫапрӗ. Эпӗ ҫакӑн ҫинчен семинари пуҫлӑхне кайса каланӑ пулсан мана вӗлерес пе-

---

[1] ЧПГӐИ ӐА, I уйр., 228 упр. ед., 96—97 л.

[2] *Романов Н.И.* Ефимов-Тӑхтине асӑнса // Тӑван Атӑл. — 1958. — 2 №.

кех хěненě е семинарире вěренме пăрахтарнă пулěччěç...»[1]. «Хам валли», — тет писатель вěренмелле çырнă малтанхи сăввисене. Пěрре кăтартма хăюлăх çитернě хыççăн, тен, çамрăк сăвăç вěсене никамах та вулаттарман пулě. Вěсем упранса та юлман.

Семинарире вěреннě чух çырнă «Эпě çуралнă çěршыв» ятлă сочиненире çамрăк авторăн сасси уçăлса пыни, вăл чěлхе тěлěшěнчен çивěч туйăмлă пулни тӳрех сисěнет. Çуралнă кěтеспе тăван тавралăха тунсăхласа ӳкернě тěрленчěк çеç темелле вун çичě çулхи вěренекенěн çыру ěçне. Çапах та унта художник куçě те, поэт чунě те палăрать. Чи кирли — пурнăç çине автор ěç çынни куçěпе пăхни. Акă ăнсăртран çеç тенě пек пěр-ик йěрпе палăртнă сăнар: «Пуп ун патне пырсан пупа çăмарта пěçерсе парас пулать, мěншěн тесен унăн хырăмě çăмах яшкине юратмасть, пултран шӳрпине ун таса тути сыпаймě». Тимлě вулакан çак йěркесенче «Колчак» авторěн «аллине» çăмăллăнах уйăрса илет.

Тăхти атеизмě пирки калас пулсан, вăл Сěвери мăнастир шкулěнче вěреннě чухнех вăй илме пуçланă пулмалла. Каярахпа пупсене тăрă шыв çине кăларса çырнă сăввисем унăн çивěч хěçпе танлашаççě.

1908 çулта Тăхти Хусанта пуçламăш классенче вěренекен чăваш ачисем валли арифметика вěренмелли кěнеке кăларать. Ăна вăл И.С. Михеев тата ытти хăш-пěр авторсен задачникěсенчен тěслěх илсе кăшкарланă. Çапах та кěнекене вуласа пăхатăн та ку оригиналлă кěнекех пулса тухнине куратăн. Кил-çурт тавраш ěнчи япаласем, çын ячěсем тата ыттисем те, выльăх-чěрлěх ячěсем таранах, пурте — чăвашăн кулленхи пурнăçěпе çыхăннăскерсем. Кěнекери ӳкерчěксем йăлтах куç умне чěррěн тухса тăраççě, хăйсен сăнарлăхěпе конкретлăхне пула асра юлаççě. Мěн чухлě çěнě термин шыраса тупнă тата автор çак кěнекене çырнă май!

Çак çулах Илья Ефимович семинарирен вěренсе тухать, 1908—1914 çулсенче хальхи Элěк районěнчи Тавăт ялěнчи земство шкулěнче вěрентет. 1914/15 вěренӳ çулěнче Перевозное ялěнче (хальхи Удмурт Республики, Сарапул районě) икě класлă училищěре ěçлет. 1915 çулхи сентябрь уйă-

[1] *Долгов В.А.* Чăваш литературин сăн-сăпачě. — Шупашкар, 1963. — 109 с.

хĕнче ăна империализм вăрçине илсе каяççĕ. 1916 çулхи август уйăхĕн вĕçĕнче Ĕпхӳри тĕн семинарине вĕренме кĕрет, кунтан та ăна каллех патша çарне илсе каяççĕ.

Октябрь революцийĕпе хавхаланнă Тăхти халăха вĕрентес ĕçе çĕнĕ вăйпа пикенет. 1918—1919 çулсенче вăл Шăхранти (хальхи Канаш хули) учительсен семинарийĕ çумĕнчи кăтартуллă шкулта вĕрентет, 1919—1922 çулсенче Мускавра Çутĕç комиссариачĕн инспекторĕ пулать, 1922—1924 çулсенче Мускавра Чăвашран выçлăх вăхăтĕнче илсе пынă ачасене вĕрентсе пурăнать. 1928 çулта Мускаври Пĕрремĕш патшалăх университетĕнчи этнологи факультечĕн литература уйрăмĕнчен вĕренсе тухать. Шупашкарти педтехникумра чăваш чĕлхипе литературине вĕрентет. Кунта 1931 çулччен, сывлăхĕ хавшаса çитичченех, ĕçлет.

Илле Тăхти 1938 çулхи февралĕн 22-мĕшĕнче Шупашкарти больницăра вилсе кайнă.

Университетран вĕренсе тухас умĕн çырнă заявленире Тăхти хăйĕн пурнăç тĕллевне çапла палăртнă: «Занятие чувашской литературой, теоретическое и практическое изучение русского языка, литературно-переводческое дело для меня не случайность, а вопрос всей моей прошлой жизни и будущей моей работы. Вся моя сознательная деятельность с 1905 г. по настоящее время была посвящена родному народу. По окончании университета я должен ехать в Чувашскую республику»[1]. Писатель хăйĕн иртнĕ кун-çулне те, пуласси не те халăх пурнăçĕпе çыхăнтарать. Çак пархатарлă та çутă тĕллев витĕр пăхсан çеç Тăхтин ĕçĕ-хĕлне тивĕçлипе хаклама май килет.

Писатель хăйне 1905 çултанпа халăх ĕçне кӳлĕннĕ тесе шутлани ăнсăртран пулман. Поэзире малтанхи утăмсем тунă вăхăталлах вăл халăх пултарулăхне тĕпчеме пикенет. Чăваш тĕрринче аваллăх йĕрĕсем упраннине ăнкарса илет. Тавăт шкулĕнче вĕрентнĕ чухне вирьял чăвашĕсен тум-юм тĕррипе интересленет, чăваш тĕррин тĕслĕхĕсене тĕрлĕ çĕрти музейсене ярса парать.

Тăхти пултарулăхĕ халăх поэзийĕнчен вăй илсе аталанма пуçланă. 1911 çулта вăл Хусанта «Тавăт, Мĕлĕш, Шураç юррисем» ятлă кĕнеке пичетлесе кăларать. Кĕнекери туй

---

[1] ЧПГĂИ ĂА, V уйр., 214 упр. ед., 1412 инв. №.

юррисене Етĕрне уесĕнчи (хальхи Чăваш Республики, Элĕк районĕ) чăвашсем хушшинче пухнă.

Тăхти творчестви анлă. Вăл тĕрлĕ жанрлă, тĕрлĕ формăллă произведенисемпе пуян. Тăхтин революциччен çырнисем пурте тенĕ пекех çухалса пĕтнĕ пулин те çакă иккĕлентермест: çамрăк çыравçă ун чухне поэзие ытларах кăмăлланă, ăна çивĕчрех туйнă. Кун пек калани, паллах, çак пысăк туртăм писатель пултарулăхĕн çунатне анлăрах сарма чарса тăнă тенине пĕлтермест. Тăхти прозăпа та ăнăçлă ĕçленĕ. Кунсăр пуçне унăн эпикăллă поэзийĕнче (сăмахран, «Элихун» поэмăра) драма элеменчĕсем пурри те сисĕнет. Пурнăçăн тӳнтер енĕсене питлекен публицистикăллă хастар статйисене автор çунтаракан сăмахсемпе çырать. Самана уттинчен тухса пыракан çивĕч ыйтусене хускатма хăш жанр вырăнлăрах, çавна суйласа илнĕ вăл. Паянхи, халь тумалли ĕçсем писатель пултарулăхĕнче яланах малти вырăнта тăнă. Ку вăл Тăхти халăх пурнăçĕпе уйрăлми çыхăннине, писатель гражданла тивĕçлĕхне самантлăха та манманнине пĕлтерет.

Çакна та татсах каламалла. Патша çарĕнче алла пăшал тытса çапăçакан çамрăк Тăхтин политикăллă тавракурăмĕ анлăлансах пынă. Тăван халăха юратакан, унăн пурнăçне çăмăллатассишĕн çунакан писателĕн класла ăнкарулăхĕ малтанхи вăхăтра уçăмсăртарах пулнă-ха. Çавна пула Тăхти социаллă сийсемсĕр пĕр пĕтĕмĕшле чăваш нацийĕ пирки те сăмах хускаткалать. Çитменнине, ку вăл патша саманинчи революцилле кĕрешĕве çĕкленнĕ чăваш интеллигенцийĕн хăш-пĕр пайĕшĕн характерлă туртăм пулнă. Кăткăс лару-тăрура малашлăха витĕрех курса çитерейменнисем ун чухне буржуалла националистсен серепине çакланнă.

Илле Тăхтин Февральти революци хыççăнах çырнă «Самана» ятлă сăвви поэт тавракурăмĕн çавнашкал хирĕçӳлĕхне чылай енчен палăртать. Поэт «кивĕ, йывăр самана» «çур шывпе» юхса кайнăшăн, «хальхи йĕрке лайăххишĕн» хĕпĕртет. Ун шухăшĕпе, малашне:

Пуяннипе чухăнни
Пĕр хисепе кĕреççĕ,
Куштаннипе мĕскĕнни
Пĕр сак çине лараççĕ.

Патшана вырӑнтан сирпӗтнипех халӑх ирӗке ҫӗнтерсе илейменнине, буржуалла революци ӗҫ ҫыннине ырлӑх пама пултарайманнине «Самана» авторӗ ӑнланайман-ха. «Ялти куштан чӑвашсене» автор класлӑх енчен хакламасть, «мӑн кӑмӑла пӑрахма» кӑна чӗнет вӑл вӗсене. Ку вӑл — куштан-кулак твравшне ӑс парса, вӗрентсе юсама пӑхни. Автор пусмӑрҫӑсене мораль енчен питлет, чӑвашсене ӗҫе йыхӑрать. Юлашкинчен ҫапла пӗтӗмлетсе калать:

Атӑл шывӗ аслӑ вӑл
Кама шывпе хутшӑнсан;
Чӑваш халӑх вӑйлӑ вӑл
Пӗр канашпа пурӑнсан.

Революципе халӑх телейӗшӗн пынӑ Граждан вӑрҫи вӑхӑтӗнче Тӑхтин класла туйӑм-ӑнкарӑвӗ ҫивӗчленет. Ҫакна «Колчак» поэмӑра (1919) уҫҫӑнах курма пулать.

«Колчак» поэма — Тӑхти пултарулӑхӗн тӳпинчи произведенисенчен пӗри. Ҫӗршывра лару-тӑру питӗ те кӑткӑсланса ҫитнине тарӑннӑн ӑнланса илнӗ поэт хӑйӗн сӑмахне хӗртнӗ тимӗр пек ҫунтаракан тӑвать. Поэмӑри тӗп фигура — Колчак.

Чӗрӗ юна ӗҫмешкӗн
Тискер кайӑк-кашкӑрӗ
Пӑрахаймасть тееҫҫӗ.
Ҫавӑн пекех Колчак та
Халӑх юнне ӗҫесшӗн,

Ӗлӗкхине астуса
Ҫӳрет халӗ хӗрӗнсе,
Колчак ӗнтӗ ҫавӑнпа
Пӗтӗм улпут пуххине
Пухнӑ Ҫӗпӗр ҫӗр ҫине.

Ӗҫ халӑхӗн сывӑ ӳчӗ ҫинчи пӗтӗм ҫӑпан-кӗсенпе сӑвӑсюн ӗҫен тавраш Колчак тавра пухӑнать.

Жанр тӗлӗшӗнчен пӑхсан поэмӑна памфлет темелле. Кунта Тӑхтин нумай енлӗ таланчӗ куҫ кӗретех: публицист хӗрӳлӗхӗ, чӗлхе ҫивӗчлӗхӗ, сӑнарлӑх, шӳтпе питлев туртӑмӗсем — пурте пур. Кунсӑр пуҫне памфлетӑн плакатлӑрах стильне те палӑртмалла. Автор абстрактлӑ типлӑх мелӗпе ӑсталать сӑнарсене.

Кулӑшпа питлев жанрӗ, вырӑссен пӗрремӗш революцийӗ хыҫҫӑнхи реакци тапхӑрӗнче кӑштах тамалнӑскер, ҫак памфлета пула тӑван поэзире ҫӗнӗрен амаланса каять. Ку вичкӗн хӗҫ-пӑшалпа Тӑхти уйрӑмах ӑста усӑ курать. Акӑ курӑр-ха унӑн геройӗсене. Чи асли, сӑмах тытаканни кунта — Колчак.

Шӗвӗр сӑмса, хурчка куҫ,
Типшӗм питлӗ Колчакӗ
Ларать сӗтел умӗнче
Бархат ҫапнӑ пуканпа.

Вăрă-хурахпа тĕрлĕрен юн ĕçен тавраш̆ Колчакпа юнашар ретрен ларса тухнă. «Сылтăм енчен ыраш çĕмел пысăкăш тулли питлĕ мăн хырăм». Вăл, «хура риза тăхăнса, ылтăн хĕрес çакнăскер», «машлаттарса сывласа» ларать. Сулахай енче — «яка çӳçлĕ» те хĕсĕк куçлă хуçа-усламçă. Юнашарах — Дутов атаман. «Пуçне асла хывакан çăлтăр-çăлтăр генералран» пуçласа артиллерист-офицер таранах сĕтел хушшине «кашта çинчи чăхсем пек» ларса тухнă.

Мĕн çинчен каварлашать çак эшкер?

Çак улпутсем шут тăваç
Пролеттара пĕтерме,
Чухăнсене тĕп тума,
Ирĕклĕхе хĕстерме,
Пуянсене пулăшма.

Колчакăн Микулай патша вырăнне хăйĕн ларас шухăш пур-мĕн. Вăл патша саманин йĕркисене каялла тавăрасшăн. Çак ĕмĕтленнĕ ĕмĕчĕ çитсен адмирал хăйĕн тарçи-тĕрçисене ырлăхра чăпăл тутарĕччĕ. «Рай алăкĕн уççипе» «тамăк хапхи питĕркĕчне» çветтуй аттен аллине парасшăн вăл. Улпут тавраш̆не Раççейĕн анлă уй-хирĕсемлĕ улăх-çаранĕсене тавăрса парасшăн Колчак. Усламçăсемпе купсасемшĕн те адмирал сăмахĕнче савăнмалли сахал мар: вĕсем тĕрлĕ тавар сутса каллех пуйма ĕмĕтленеççĕ.

Ĕçме-çиме япала,
Мĕнпур тавар тавраш̆не
Хамăр алла илетпĕр,
Кирлĕ хакпа сутатпăр,
Усламсăрах памăпăр,
Пире пулать парищĕ.
Тит Титтăча — хуçана
Çитет вара ырă кун
Ылтăн-кĕмĕл пуçтарма,
Ĕçсе-çисе савăнма.

Вată генералпа полковника хыттăн кăшкăрса «командовать тумашкăн» çар кирлĕ-мĕн. Ват шăм-шакне кăштах хускатас тесен вĕсем театра çӳреме, унта балеринăсемпе йăпанма пултарĕç:

Пăркаланса, авăнса,
Хуçкаланса, сарăлса,
Каркаланса, тăсăлса
Йăлтти-ялтти сикекен,
Кула-кула ташлакан
Балерина хĕрĕсем
Сирĕн алла лекеççĕ
Тесе калать адмирал.

Çамрăк офицерсем те пайсăр юлмĕç: вĕсене «очко» картла выляма шалу хушса парассипе савăнтарать Колчак.

Капитализмла çĕршывсенчи фабрикантсемпе çĕр хуçисем те — совет влаçĕн тăшманĕсем — адмирала пулăшаççĕ. Сăмахран, Япони, Франци, Англи, Америка укçа-тенкĕпе ылтăн, хĕç-пăшал тата ыттине те хĕрхенмеççĕ. Вĕсене

уншăн Колчак «Çĕпĕр çĕрĕпе вăрманне те», «савăтсемпе чугун çул» таврашне те пама хатĕр.

Тăхти хутран-ситрен çеç хăй шухăш-кăмăлне тӳрремĕн палăртать. Акă тĕслĕх:

Çакă намăс ушкăна
Ашшĕ, ывăль ячĕпе,
Çветтуй сывлăш хвачĕпе
«Аминь, аминь» каласа
Ларать пупĕ, пиллесе.

Кунта автор вăрă-хурахла ушкăна шăпах хăй ятĕнчен «намăс ушкăн» тесе питлет. Ытларах чухне вара вăл геройсене хăйсене калаçтарса вĕсен шухăш-кăмăлне, ăш-чикне, сăн-питне шалтан кăтартса парать. Çапла чăн малтанах каппайчăк та çăткăн адмиралăн хăтланăвĕсене гротеск мелĕпе çивĕчлетсе ӳкернĕ. Адмирал виçерен тухса кайсах сӳпĕлтетет: «сире çарă паратăп», «сире ирĕк паратăп», «сире вырăн паратăп», «сире шалу хушатăп» т.ыт.те. Анчах та çаксем вĕсем пĕтĕмпех хăмпăланса каланă пушă сăмахсем çеç пулнине вулакан питĕ лайăх сисет. Юлашкинчен ĕçсе ӳсĕрĕлнĕ ушкăн Колчака ур-ра! кăшкăрса çӳлелле ывăтма пуçлать:

Колчак пĕрре маччана
Хырăмĕпе сĕртĕнет,
Тепре çакă адмирал
Çурăмĕпе маччана
Çитсе лексе перĕнет.

Ирони мелĕпе сăвăçă анлă усă курать. Тăхти ытти сăнарсене те асра юлмалла детальсемпе ӳкерет, кашниййĕн — хăйĕн чĕлхи, хăтланăвĕ, социалла-профессилле уйрăмлăхсем. «Вăрăм çӳçлĕ пуп тете» «атте турă ячĕпе» Колчака несĕпсĕр ĕмĕчĕсене пурнăçлама сывлăх сунса пехиллет. Е акă артиллерист-офицер. Ун шучĕпе, офицерсен «шурă юнлă» касти юн тăкма тивĕçлĕ мар, вĕсен штабсенче лармалла е хăрушă вырăнсенчен аякра пулмалла.

Юлашкинчен шурă кашкăр ушкăнĕ пĕр саспа юрă юрлать:

Тарăхса та хурланса
Хура халăх ĕçлетĕр.
Ырă курса, савăнса,
Ĕçсе-çисе, юрласа
Ĕмĕр эпир пурнăпăр.

Чăн та, Тăхти фактсене ытлашширех ӳстерсе кăтартас енне сулăнать, сăмахран, кам кăна çук пуль Колчак пухăвĕнче: ĕç халăх юнне ĕçсе пурăннă классемпе социалла сийсен представителĕсем пурте пур кунта. Анчах та памфлетра пурнăç чăнлăхĕпе искусство чăнлăхĕ пĕртте хирĕçмеççĕ. Тăхти публицист карикатурăлла стильпе ӳкерет Колчак ушкăнне. Ку вăл реализмла ытарлăх. Кунсăр пуçне çамрăк совет

влаçĕн пропагандинче Колчакăн типлă портречĕ сăнланнă пулнă ĕнтĕ... Революцичченхи чăваш литературинче çак мелпе Тайăр Тимкки анлă усă курнă, анчах вăл романтизм ытарлăхне ытларах кăмăлланă.

И. Тăхти революцичченех амаланма пуçланă питлевпе кулăш лаççине тепĕр хут йăлкăшса та хĕм сирпĕтсе çунмалла чĕртсе ярать. Çапла вара, Çеçпĕл Мишшин сăввисем пичетленме пуçланă вăхăтрах Тăхти пысăк калăплă формăна алла илет.

«Колчак» памфлет, 1919 çулта Хусанта пысăк тиражпа уйрăм кĕнекен пичетленсе тухнăскер, Хĕвел тухăç фронтĕнче шуррисемпе çапăçакан чăваш салтакĕсем хушшинче çиçĕм пек хăвăрт саланать. Вăхăтлăха сухапуçĕнчен уйрăлса пăшал тытнă салтаксене вăл вăрçă тĕллевĕсене лайăхрах ăнланса илме пулăшать; унта тăшмана тӳрех тĕллесе кăтартнă. Ялпа хулари чăваш çыннисем те памфлета юратса вуланă, пăхмасăр каланă, клубра сценăсем çинче ун тăрăх инсценировкăсем лартнă.

20-мĕш çулсен малтанхи çурринче И. Тăхти ытларах поэзи жанрĕпе ĕçлет-ха. Çакна писатель таланчĕ поэзие çывăхрах тенипе çеç ăнлантарни çителĕксĕр. Кунта В.В. Маяковский сăмахĕсене аса илни вырăнлă. «Революци литератури сăвăран пуçланнă»[1], — тенĕ вăл.

Илле Тăхти çеç мар, Çеçпĕл Мишши те, Çемен Элкер те, Хумма Çеменĕ те — пурте тенĕ пекех сассисене малтан поэзире тĕрĕслесе пăхаççĕ, пултарулăх ĕçне сăвăран пикенеççĕ. Совет саманинчи çĕнĕ поэзи халăх сăмахлăхĕн хӳттинче вăй илсе аталанать. Малтанхи тапхăрта халăх юрри-сăввин виçипе форми тата эстетикипе поэтики чăваш сăвăçисен пултарулăхне вăйлă витĕм кӳрсе тăраççĕ-ха. Тăхти сăввисемпе поэмисем пирки те çакнах каламалла.

Тăхтин пĕтĕм поэзине тенденциллĕ поэзи теме юрать. Ку вăл писатель пĕтĕм вăй-халĕпе талантне пурнăçа çĕнетсе улăштарас ĕçе парасшăн çуннине лайăх кăтартать. Тăхтипе юнашар тăрса социализм çуртне купалама пикеннĕ сăвăçсем хушшинче «таса поэзие» кăмăллаканнисем те пулман мар-ха. 20-мĕш çулсен çурринче хăш-пĕр поэтсем, интимлă лирика картине хупăнса, шăпчăкпа савнин хĕсĕк тĕнчинчен тухайман.

---

[1] *Маяковский Владимир.* Полн. собр. соч. Т. 12. — М., 1959. — С. 142.

Çĕнĕ чăваш поэзийĕн нумай саслă хорĕнче Тăхти сасси хăйне майлă кĕвĕпе илтĕннĕ. Поэта социализмла пурнăç пуçламăшĕн кашни палăрăмĕ, кашни хунавĕ савăнтарать. «Ĕçлекенсен сасси» журнал тухма пуçланă кăна — Тăхти çийĕнчех çавăн пĕлтерĕшне уçса пама васкать. Хут вĕреннипе кĕнеке усси çинчен те чылай çырать поэт. Акă «Хальхи çĕнĕ пурнăçра...» сăвăра (1924) чăваш ĕç çыннисене кĕнеке, хаçат-журнал çырăнса илме çапла чĕнсе калать:

Ним пĕлмесĕр тĕттĕмре
Хупăрланса пурăнса
Çĕнĕ пурнăç хĕвелĕ
Сирĕн çине пăхаймĕ.
Ăслăлăхăн чăнлăхне,
Вĕренĕвĕн мухтавне
Сăра курки вĕрентмест —
Кнеке-хаçат вĕрентет.
Хальхи пурнăç хăватне
Чĕлĕм тĕтĕм кăтартмасть,
Çĕпре курка палăртмасть —
Хаçат-журнал пĕлтерет.

Шутласан сăввăн содержанийĕ хаçатсенче куллен пичетленекен пĕр-пĕр усăллă сĕнӳ паракан статья валли вырăнлăрах пек курăнать. Çапах та кун йышши сăвăсенче те Тăхти художник ăсталăхĕ сисĕнет: витĕмлĕ чĕлхепе, сăнарлă та ансат каласа парать автор хăй шухăшне.

Куллен-кунах ураланса пыракан ял пурнăçĕнче кивелнине, çĕнĕ хунава ӳсме чăрмантараканнине те витĕрех курса тăнă писатель. Ĕç халăхĕн ăс-тăнне ĕмĕрсем тăршшĕпех минретсе, тамăкпа хăратса, улталаса пурăннă пуп тавраşне пĕр хĕрхенӳсĕр сатира çулăмĕпе çунтарнă Тăхти. Унăн тĕне хирĕçле çырнă сăввисем хăйсене майлă пĕр ярăм пулса тăраççĕ.

Тăхти чиркӳ тавраşĕнчи çынсен сăн-сăпатне уçса кăтартнипех çырлахмасть, вăл тĕн-тĕшмĕшĕн социалла тымарĕсене кăклама та хăюллăн чĕнсе калать. «Патшасен, улпутсен, пуянсен, пупсен вăхăтĕнчен юлнă пăсăклăхсем те çав тилпĕрен тымарĕ пек», — тет писатель. Хăш чух тарăхса питлет, вăхăчĕпе шахвăртса йĕплет е тăрăхласа кулать.

Тăхти кулли адрессăр, тĕлсĕр йăваш кулă мар. Акă епле кăтартать пире поэт Мункун эрнинче ял тăрăх хĕреспе килтен киле çӳрекен кăтра пупа. Турра ĕненекенсене çылăхпа хăратаканскер, вăл хăй те çылăхсăр мар иккен: «Христус турă чĕрĕлнĕ, чăн-чăнах та чĕрĕлнĕ!» текелесе, сăра куркисене пушаткаланă пуп «çынсен куçĕ умĕнчех таçта кайса çухалнă».

Шемертенри Юс Митюк
Арлан Иван патĕнче,
Вите хӳми çумĕнче,
Çинчĕк улăм хыçĕнче,
Иван кинĕ Плакипе
Кăтра пупа картара
Сисмен хутран курнă тет.
(«*Пуп тавраşĕн мункунĕ*»)

Кулӑшпа питлевӗн ҫивӗч хӗҫ-пӑшалӗпе Тӑхти халӑх пурнӑҫӗнчи, йӑла-йӗркери тӗрлӗ ҫитменлӗхсене часрах пӗтерес тӗллевпе меллӗ усӑ курать. Совет влаҫӗ халӑх культурин шайне ҫӗклеме пур майсем те туса панӑ пулин те нумайӑшӗ хут вӗреннин пӗлтерӗшне ӑнланса ҫитеймен-ха. Хӑйне нихҫан та халӑх шӑпинчен уйӑрман поэта ҫакӑ, паллах, савӑнтарман:

Сӗм вӑрманта тунката
Кӑмпаланса, мӑкланса,
Ҫӗрсе ларать теҫҫӗ-ҫке.
Эпир ӗнтӗ ҫавӑн пек —
Мӗн ватӑлса виличчен
Пурӑнатпӑр ҫавнашкал,
Кӑххӑм-кӑххӑм ӳсӗрсе,
Чире-чӗре йыхӑрса,
Кӗсен-ҫӑпан юхтарса.

Поэт чунӗнчи нихҫан тӳрленми сурансене курман сисӗмсӗр критиксем Тӑхтие айӑплама пӑхнӑ: художник пурнӑҫӑн тӳнтер енӗсенче чакаланать имӗш, социализм ӳсӗмӗсене курмасть-мӗн. Паллах, халь ҫакӑ пирӗншӗн кулӑшларах туйӑнать, анчах та кирлӗ-кирлӗ мар ҫӗртенех турткалани Тӑхтине нумай чӑрмав кӳнӗ. Эпир пӗлетпӗр: Тӑхти ҫӗнӗ пурнӑҫӑн кашни хунавӗшӗн савӑннӑ, хӑрса ларнисене пӗр шеллемесӗр кӑкланӑ.

Тӑхти пултарулӑхӗн анлӑлӑхӗпе сулмаклӑхне ҫакӑ та кӑтартать: поэт истори темипе ҫырнӑ чи малтанхи чӑваш писателӗсем хушшинче тӑрать. Истори тематики литературӑна сюжетсемпе пуянлатнӑ, паллӑ ҫынсен ӗҫӗ-хӗлӗпе пурнӑҫӗ ҫинчен калакан материалсем тӑратнӑ. Кунсӑр пуҫне халӑхӑн иртнӗ пурнӑҫӗпе кун-ҫулне ӳкерсе кӑтартас ӗҫӗн политикӑлла тепӗр пысӑк пӗлтерӗшӗ те пур. Вырӑс мар халӑхсем пирки патша чиновникӗсем аваллӑхсӑр та пуласлӑхсӑр халӑхсем, вилсе пӗтме тивӗҫлӗскерсем тесе павранӑ.

Октябрь тивлечӗпе ҫӗкленнӗ халӑхсен наци туйӑмӗ мӑнаҫланать. Ҫакна чӑваш писателӗсем харӑссӑнах истори темипе темиҫе произведени ҫырма пуҫлани те лайӑх кӑтартать. 1918 ҫулта Тӑхти «Элихун» поэма хайлама пикенет. 1918—1921 ҫулсенче Г. Тал-Мӑрса «Силпи» трагеди ҫырать. Кӗҫех Н. Шупуҫҫыннин «Еркӗнӗпе» Ҫ. Элкерӗн «Хӗн-хур айӗнче» поэмисем пичетленеҫҫӗ. Н. Шелепи халӑхра илтнӗ тӑрӑх сӑвӑланӑ «Уксах Тимӗр Пӳлере илни» тата «Эссепе» халапсене те асӑнмалла. Истори тематики пысӑк формӑллӑ произведенисем ҫуратать: поэма, роман т.ыт.те. Ҫапла вара поэзи жанрӗн чиккисем анлӑлансах пыраҫҫӗ.

«Элихун» поэмăна Тăхти пĕтĕмпех çырса пĕтереймен. Унта чăваш халăхĕ хăй ирĕкĕпе Вырăс патшалăхĕпе пĕрлешнĕ тата вырăссем Хусан ханлăхне çĕнтерсе илнĕ тапхăра çырса кăтартас тĕллев лартнă. Анчах автор уйрăм сыпăксене пĕр пĕтĕмлетӳллĕ шухăшпа çыхса тĕвĕлеймен. Андрей Курбский, Туксар, Элихун, Селиме сăнарĕсем асра юлаççĕ пулин те вĕсем реализмла типизаци йĕркипе ăсталанăскерсем мар-ха. Тăхти хăй геройĕсене идеализацилесе кăтартать. Поэмăн пысăк çитменлĕхĕ вăл — халăх сăнарне, унăн пурнăçне калăплăн кăтартайманни.

Тăхти историлле документсемпе те паллашманни сисĕнет, çавăнпа та поэма пĕтĕмпех тенĕ пек халăхра сарăлнă юмах-халап çинче никĕсленет. Ку вăл историксем чăваш халăх историне тарăн тĕпчеме ĕлкĕрейменнинчен нумай килнĕ. Çавна пула илемлĕ сăмах ăстисем е халăхра упраннă легендăсене тĕпе хывса, е «хыпашласа» утса истори вăрттăнлăхĕсене уçма тăрăшаççĕ. Апла пулин те çак малтанхи произведенисем реализмла искусствăра наука историзмĕн принципĕсене аталантарма пулăшнă.

1935—1937 çулсенче Тăхти «Самана сăвви» ятлă лиро-эпикăллă произведени çырать. Поэт çĕнĕ пурнăçăн, саманапа вăхăтăн сăн-сăпатне ӳкерсе кăтартас тĕллевпе хĕрсе ĕçлет. Кунта хальхи эпос паллисем сисĕнеççĕ, сăвăçăн ăсталăхĕ ӳсни те, шухăш анлăхĕ те, гражданла туйăм таппи те уççăнах палăрса тăраççĕ. Пурнăç юхăмне айккинчен сăнаса çырман автор хăй произведенине; вăл яланах ĕç вĕресе тăракан çĕрте; халăхпа пĕрле. Халăх культури ӳссе пыни те, çамрăк ăру сывă çитĕнни те, нумай нациллĕ çĕршыври халăхсем хушшинчи туслăх çирĕпленсе пыни те, наукăпа техника çитĕнĕвĕсем те — пурте савăнтараççĕ Тăхтие, пурин çинчен те каласа пама васкать вăл. Хальхипе ĕлĕкхине контрастлă танлаштарса: «Ачам, эсĕ курас çук эпир тӳснĕ хурлăха», — тет пусмăр-тĕсмĕре пайтах тутанса çитĕннĕ икĕ самана çынни.

Вичкĕн перолла публицист тĕнчери фашизм ертӳçисене — Гитлера, Муссолиние, Франкона питлет, çак юн ĕçенсен карикатурăлла сăн-сăпатне ӳкерсе кăтартать. Сывлăхĕ начарланса пынă пулин те Тăхти вутпа ашкăнакан фашистсенчен сыхă тăмаллине вăхăтра асăрхаттарать.

20-мĕш çулсен çурри тĕлнелле Тăхти ытларах калавсем-

пе очерксем çырнă. Ку тапхăрта шăпах пĕтĕм чăваш литературинче проза вăй илме пикеннĕ. Публицистла чун хавallă Тăхти поэзи чиккин ансăрлăхне пула тăвăрланма пуçлать. Вĕресе тăракан шухăш-туйăма вулакан чун-чĕри патне ирĕклĕн çитерме кĕске калав жанрĕ питĕ меллĕ. Тăхти калавĕсенче кăткăс характерсемпе авкаланчăк сюжет çук темелле. Ытларах чухне кунта тĕпри сăнар — калавçă. Тĕрĕссипе каласан, писатель калавĕсенчен нумайăшне очеркран уйăрса илме те йывăр. Тăхти унта-кунта е çулçӳревре тĕл пулнă çынсен ĕçĕ-хĕлĕпе шухăш-кăмăлне çырса кăтартать, пурнăçри таса, сывлăхлă пулăмсене асăрхасан савăнать, йăла-йĕркере культура çитейменни писателе пăшăрхантарать. «Çанталăк» калавра (1925), сăмахран, Тĕрлемес станцинче паллашнă çынсен хуйхи-суйхи çинчен каласа парать вулакана автор. Кам кăна çук пуль кунта, кашнин хăйĕн тĕнчи, пурнăç опычĕ: пĕри Çĕпĕре кайса юра ерсе килнĕ, халь çул çинчи пăтăрмахсене кулянса пĕлтерет; тепри ав типтерлĕрех пурăнма вĕренейменнине пулах суккăр пулса юлнă. Виççĕмĕшĕ, чылай вăхăт хушши тĕнче каснăскер, тĕрлĕ халăхсен пурнăçне сăнанă. Финсем, сăмахран, ăратлă лашасемпе ĕнесем усраççĕ иккен, çĕр ĕçне машинăпа туса пыраççĕ. Чăвашсен те пурнăçа ăслăлăх вĕрентнĕ пек йĕркелесе пымалла тет автор.

Писатель калавĕсенче яланах вĕрентсе калани, варса хывнă систерӳ туртăмĕ пур. Ятарласа сăнамасан ăна асăрхама та хĕн. Тăхти пурнăçри пулăмсене шур сухаллă çын куçĕпе те кăтартма пултарать, тепĕр чух ача чĕлхипе шăкăлшакăл пуплесе каласа парать. Чун кукринче чакаланса, тĕтреллĕ туйăмсемпе йăпаннине вăл хăйшĕн ют тесе шухăшланă. Ун калавĕсене вулама пикеннĕ-пикенменех автор еккине ӳкетĕн те вара çав асамлă туртăмран вĕçне çитмесĕр те хăтăлаймастăн. «Ураскасси» калавах илер. Çак ялти пĕр çын патне илсе кĕрсе кăтартать пире автор. Пӳрт-çурчĕн тулашĕпе ăш-чикне, кил картишĕпе пахчине тата ыттине те кăтартса çаврăнать. 20-мĕш çулсенче йăла-йĕркери тирпейлĕхшĕн, хутпĕлменлĕхе пĕтерессишĕн кĕрешнĕ тапхăрта ку калав вулакана уйрăмах шухăшлаттарнă. Юлашкинчен автор хăй курнине çапла пĕтĕмлетсе калать: «Çав Ураскассинчи хресчен пек пурте тăрăшсан, тирпейлĕх режимне пур çын ăнланса, ĕçе тирпейлĕ, тăрăшса ĕçлесен пирĕн

пурнăç çак вăрман пек пуян пулĕ». Калав вĕçленнине вулакан сиссе те юлаймарĕ, автор ăна чĕрĕ ӳкерчĕксемпе мĕн чухлĕ çĕнни, хальчен илтменни пĕлтерчĕ, усăллă сĕнӳсем пачĕ. Купăста лартса ӳстересси («Купăста», 1927), электричество вăрттăнлăхĕ («Çиçĕм çăмахĕ», 1927), витаминсен усси («Витаминсем», 1927), стена хаçачĕн пĕлтерĕшĕ («Мĕн ку? — Япала ку», 1927), пурнăçри тата ытти нумай-нумай çĕнĕлĕх çинчен каласа парать вулакана автор. Писатель витĕр куçлă, час-часах авалхи пурнăçа асилет, ăна хальхипе танлаштарса кăтартать. Çĕннине яланах публицистла хастаррăн хӳтĕлет.

Социализмла пуçарулăх, çĕнĕ йăла-йĕркесем çĕнтерсе, çирĕпленсе пынă май этем психологийĕ те улшăнать. Витĕр куçлă писатель çак процеса вак-тĕвек çинчен калаçнă хушăрах тенĕ пек куçа курăнмалла сăнласа парать. Ĕмĕрне кĕтӳре çӳресе ирттернĕ Шерхулланах илер («Шерхулла», 1925). Çиелтен пăхсан камитлерех курăнать çак этем. Анчах унăн шалти тĕнчи вĕçĕ-хĕррисĕр анлă, чунĕ сисĕмлĕ. Çавна пула ĕнтĕ ялта хăна-вĕрле пухса сăйланă чух нихçан та Шерхуллана чĕнмесĕр хăвармаççĕ. Выльăх-чĕрлĕхпе çут çанталăка та çынна юратнă пекех юрататъ вăл, вĕсен «чĕлхине» ăнланать.

Шерхулла (ун аслашшĕ те кĕтӳрех ĕмĕрне ĕмĕрленĕ пулмалла) нумай çӳренĕ, хурапа шурра сахал мар курнă. Кивĕ саманара çитĕннĕ çын характерĕн паллисем те сисĕнеççĕ унра. Апла пулин те Шерхулла — социализм тивлечĕпе ура çине тăнă, хăй тивĕçне тарăн ăнланса илнĕ этем. Класс туйăмĕ çивĕчленнĕ Шерхулла хăйĕн пурнăç çулĕ Юс Митюкĕ пек ял куштанĕсеннипе (пусмăрçăсен юлашкийĕсеннипе) пĕрле маррине нихçанхинчен те уççăн кура пуçлать.

Е Ярмуша илсе пăхсан («Ярмуш», 1926), ун психологийĕнче те çĕнĕлĕхсем асăрхама пулать. Акă хăй пирки аса илет Ярмуш. Ĕлĕк вăл ял куштанĕ пулнă:

Эпĕ вулăснăй суда çвитетле çӳреттĕмччĕ.
Курни-курман-и — эпĕ курнă пулаттăм.
Çвитетле кайнăшăн ĕçтеретчĕç, укçине те чикеттĕм.
Пĕрре çавăн пек кантурта стришна[1] суйларăмăр.
Çавна суйласшăн хам та хытă кĕрлерĕм пухура.
Суйласан хисепсĕр ĕçкĕ, закуска лартрĕ стришна.

---

[1] Старшина.

Ҫӗнӗ йӗркесем килӗшсех каймаҫҫӗ-ха Ярмуша. Хӑй ачисемпе те килӗштерейместь вӑл. Халӗ те-ха, ӗлӗкхи пек, ҫын шучӗпе ӗҫес шухӑша пӑрахаймасть. Ҫапах та ял пурнӑҫӗнчи улшӑнусем Ярмуш ӑнланӑвӗсемпе тавракурӑмне ҫӗнетсех пыраҫҫӗ. Ҫур ӗмӗрне хусахӑн ирттернӗскер, вӑл арлӑ-арӑмлӑ, ача-пӑчаллӑ пурӑнма пуҫлать. Пухусене ҫӳрет, халӑх ирӗкӗнчен текех иртеймест. Хулленех йӗркене кӗрсе пырать.

Этемӗн кӑткӑс психологийӗнче тымар янӑ кивӗ самана юлашкисене кӑкласа тасатасси — йывӑр ӗҫ.

Тӑхти, патша саманинчи наци пусмӑрӗн ирсӗрлӗхӗпе тискерлӗхне мӗн ачаран тӳссе ҫитӗннӗскер, социализмлӑ ҫӗршыври пӗр тан халӑхсен туслӑхне хавхаланullӑ мухтать. «Ваҫкӑ, Ванькка, Ахмет» калавра (1926) писатель пӗр ӗмӗтпе тата пӗр туйӑм-кӑмӑлпа ҫунатланнӑ виҫӗ каччӑн — вырӑс, чӑваш тата тутар ҫыннисен савӑнӑҫӗпе хуйхи-суйхине уҫса кӑтартать:

> Халӗ Сормово заводӗнче, вырӑс рабочисемпе юнашар тӑрса, пилӗк ҫӗр ҫын ытла чӑваш рабочи ӗҫлет; вырӑс хресченӗ — вырӑс рабочи, чӑваш рабочи — чӑваш хресченӗ алла-аллӑн ҫавтӑннӑ — Сормово заводӗнче вӗсем, пурте тӑван пек, юнашар тӑрса ӗҫлеҫҫӗ.
>
> Вырӑс, тутар, чӑваш, мари, мӑкшӑ, Союзри тата ытти ӗҫлекен халӑх халӗ пӗртӑван, пӗр хисепре.

Паллах, кунта Тӑхти Совет Союзӗнчи халӑхсен хутшӑнӑвӗсен ҫиелти паллисене, малтанхи утӑмӗсене кӑна кӑтартса парать. Социализм ҫирӗпленнӗҫем ҫак туслӑх тӗрекленсе ҫӗнӗ интернационалла пӗрлӗхе куҫать.

Тӑхтин прозӑлла япалисем пахалӑх тӗлӗшпе пурте пӗр шайра мар. Чылайӑшне писатель пӗрре ларсах ҫырса пӗтернӗ хыҫҫӑн якатса та аппаланман. Очерклӑрах е ахаль калаҫу формипе ҫырнӑ калавсем те чылай унӑн. «Крымран таврӑннӑ ҫынпа эпӗ калаҫни» (1927) ятлӑ калава пӗтӗмпех диалог мелӗпе йӗркеленӗ. Крымран таврӑннӑ этем ҫӗр чӗтренни ҫинчен каласа парать. Автор ҫак ҫыннӑн ятне-шывне те, характерне те палӑртмасть. Калав геройӗ хаҫатра вуласа пӗлме май пур хыпарсене ҫеҫ пӗлтерет. «Ҫыру» калавра та герой характерӗн хӑй евӗрлӗхне кӑтартайман. Автор пахча ҫимӗҫ ӗрчетес тӗлӗшпе усӑллӑ канашсем панипех ҫырлахать. Сӑмах май каласан, Тӑхти ҫыру формипе час-часах усӑ курнӑ. Пӗр герой теприн патне ҫыру ҫырать, курни-

илтнине каласа парать. «Йысна» (1928), «Салам» (1928), «Чипер Альтюк» (1935) калавсем шăпах çавăн йышшисен шутне кĕреççĕ.

Этемĕн пĕтĕм хуйхи-суйхипе усрав ĕмĕчĕсене, кулленхи ĕçне-хĕлне куç умне кăларса тăрататать писатель «Йысна» калавра. Ача Çĕпĕре куçса кайнă аппăшĕпе йыснăшĕ патне çыру çырать. Ун хăйĕн тавракурăмĕ, психологийĕ, шалти тĕнчи. Çырма та йĕркеллĕ вĕренеймен-ха вăл: «Пуквăсем, сас паллисем хам пек туратлăрах пулаççĕ пулас та, йысна уншăн ятламĕ-ха», — тет. Çапах та кӳршĕри куштан Хĕветĕр ывăлне çыру çырса пама йăлăнмасть вăл, мĕскĕнленмест. Пĕчĕк хресчен психологийĕ çирĕпленет ачара. Тăлăх турата пурнăç ачаранах хăй тĕллĕн пурăнма вĕрентет. Чееленесси те пур унăн. Акă инçетри тăванĕсемсĕр тунсăхланăскер, епле майпа чĕнет вăл хăнана: «Йытă çăвăрласан çыру ярса пĕлтерĕпĕр сире. Çул укçи, расхут, чылай тухĕ те, çав йытă чĕпписене те пулин илме килсе каймăн-ши, йысна!» Пурнăçпа вилĕм çинчен те хурапа шурра пайтах активнĕ çын пек шухăшлать вăл. Ашшĕпе амăшне пытарни çинчен пĕлтерсе: «Йысна, аппа! Çапла ĕнтĕ вăл пурăнăç, пĕри вилет, тепри чĕрĕлет, ӳсет, çӳрет», — тет. «Вăтамсемпе чухăнсем пĕрлешсен куштан Хĕветĕр пеккисене пĕтерме май килмĕ-ши?» — тесе шухăшлать ача. Иккĕленӳрен ытларах пуласлăха ĕненни вăй илсе пырать ĕнтĕ ачан чĕринче. Пурнăç çĕнелĕвне сăнаса хăй ăсĕпе ерипен çывхарать хресчен ачи «кĕрешӳре — вăй» текен шухăш патне.

Тăхтин пĕчĕк формăллă прозинче калавçă сăнарĕ уйрăмах палăрса тăрать терĕмĕр. Чылай чухне писатель пĕрремĕш сăпатран, хăй ятĕнчен каласа парать. Шӳтлесерех те юптарса тата иронилле куларах ӳкерет Тăхти хăй портретне. «Самана сăвви», «Тăхти тени çавнашкал...» тата ытти сăвăпоэмăра та куратпăр эпир поэт хăйне хăй йĕпленине. «Иптеш» калава пĕтĕмпех ирони çумне ирони тирсе çырнă. Вырăнĕ-вырăнĕпе ăнланма та çăмăл мар: те чăнласа калать писатель, те шӳтлет. Тăхти сăн-сăпачĕ курнăçлану мар. Вăл, алă кăнтарса хăлаçланакансене е менторла тонпа вĕрентекенсене тӳсме пултарайманскер, хăйне те шеллемест: «Çавах куратăп эпĕ: çынсем пурнан пурнăçрах уçăлса, çивĕчленсе вĕренсе пыраççĕ. Эпĕ ун пек мар çав. Хам мăштăрккине хам та сисетĕп те, анчах çынсем пек çивĕчленме пулта-

раймастăп-çке-ха», — тет. Паллах, пĕртте иккĕленме кирлĕ мар: чавсапа шăтарса «çĕкленекен», «халăх кукăльне» (М.Е. Салтыков-Щедрин сăмахĕ) пайланă çĕре чăн малтан сăмсине чикекен çивĕч çынсем пирки калать кунта автор. Ăмсанмасть те вăл çавсен шăпине. Хăй вара, Тăхти, пурнăç хистенĕ самантсенче калама çук çивĕч пулса та сахал мар тĕлĕнтернĕ самантсемпе шĕсене. Поэта астăвакансем кун пирки пĕрре çеç мар çырнă. Хветĕр Уяр каланине çеç илсе кăтартам: «Вăл çулсенчи Шупашкар пек пĕчĕк хулара пурин çинчен те пурте пĕлеççĕ. Тепĕр чухне çуккине те пур тăваççĕ. Тăхти пирки те темĕн те илтнĕ эп. Ыррине те, усаллине те. Вăл çунатсăр вĕçекенсене юратмасть тетчĕç. Пĕр хĕрсе кайсан пухура-мĕнте тепĕр артистран ирттерет, чăнчăн импровизатор, çырса пырас пулсан статья е калав хатĕр тетчĕç».

Çав импровизатор пултарулăхĕ пирки хамăрăн ватă писательсем пуç тайса калаçнине эп хам та темиçе те илтнĕ. Вăл легендăсене пĕтĕмпех чăн теме май килмест паллах. Анчах та писатель характерĕн уйрăм енĕсем çине ӳкекен çутă пайăркисем теме пулать-тĕр вĕсене. Акă, сăмахран, чăваш çыравçисен пĕр шавлă пухăвĕнче (1920-мĕш çулсен вĕçнелле) Тăхти тăрса сăмах каланине илер-ха. «Эп пултарусăр, сахал вĕреннĕ, сахал пĕлекен çын, — терĕ тет поэт хăй пирки. — Гомер ятне илтмен те, Шекспира пĕлместĕп, Толстоя нихçан та вуламан...» Çапла юптарса-шахвăртса калаçнине çăвар карса итлекен çамрăксенчен чылайăшĕ ĕнер çеç суха кассипе утнă пулнă-ха, паян вĕсем литературăпа пуçласа паллашма пикеннĕ. Тĕлĕнтермĕш оратор хăйсене мистификациленине чылайăшĕ ăнкарайман та пулĕ. «Пĕлместĕп», «вуламан» текенĕ, Мускав университетĕнче ăс пухнăскер, паллах, тĕнче литературине лайăх пĕлнĕ, тарăн тишкерсе тĕпченĕ. Апла пулсан мĕн тума кирлĕ пулнă-ха поэта çавнашкал хăтланса тĕлĕнтерни? Çакăн тупсăмĕ пирки шухăшланă май 20-мĕш çулсенчи вырăс литературинче палăрнă хăш-пĕр туртăм-сулăмсене аса илни вырăнлă пулĕ. Вĕсен варкăшĕ хамăр чăваш литературин çав тапхăрти аталанăвĕнче те аванах сисĕннĕ. Сăмахран, пролеткульт лозунгĕсемпе перкелешни, традицисене кăкласа çĕнĕ культура никĕсĕ хывма йыхăрни, «попутчик» текен писательсене саманапа пĕрле аталанакан литературăн анлă çулĕн-

чен «уйăрма» хăтланни т.ыт.те. Тăхтие те пирĕн критиксем тĕрлĕрен хакласа пăхнă. «Хастарлă, хыт утăмлă» çамрăксенчен нумайăшĕ тин пĕлӳ керменне килсе кĕнĕ, вĕренмелли, ăс пухмалли вĕçĕ-хĕррисĕр-ха вĕсен. Теприсем сахал пĕлнĕ çĕртенех тем те пĕлнĕн тыткаланă хăйсене. Çавăнпа мар-ши пысăк культурăллă интеллигент Тăхти, энциклопедилле ăс-хакăл хуçи, пĕлмĕше персе хăш-пĕр «шакла пуçсенчен» (ашшĕ пек) ăшшăн тăрăхлать, кулса та илет. Чăвашра авалтан сарăлнă йăлапа, шахвăртать, шӳтлесе чĕпĕтет.

Писатель палитрине те ку таранччен те тĕплĕн сăнаса пăхман-ха. Тăхти произведенийĕсен сăнарлăхĕпе курăмлăхне вăйлатма сăрсен пуянлăхĕ нумай пулăшать. Чĕр чун е пĕр-пĕр япала таврашне писатель кисточкăпа пир çине ӳкернĕ пек ӳкерсе хурать: ула сысна, хура лаша, сар пĕсехе кăсăя, хура çăхан, чăлтăр-чăлтăр çăлтăрсем, шурă сурăх т. ыт. те. «Уйăх тухать пĕлĕте хаяр çыннăн куçĕ пек», — тесе калама Тăхти çеç пултарнă ахăр.

Çут çанталăкри тĕрлĕрен сас-чĕве писатель евĕрлев сăмахĕсемпе уçăмлатать: мăррăк-мăррăк кушакки, шăри-шари ачи-пăчи, лăнки-ланки вĕркелекен йытăсем т. ыт. те. «Кранки-кранки Франко пур», — тет поэт Испанири фашистсен пуçлăхне çăханпа танлаштарса. «Çил ачийĕ пӳрт çумне, кантăк айне, пытанса хашăлтатать, шăхăрать», — тесен кам асĕнче чĕрĕлсе тăмасть-ши çил-тăманлă хĕл кунĕ.

Тăхти халăх сăмахлăхĕн эстетикипе поэтикине тĕплĕн сăнаса тĕпченĕ, çак иксĕлми пуянлăхпа вырăнлă усă курнă. Корреспонденци е пĕр-пĕр заметка çеç пултăр — вăл çырнисенче тăван чĕлхе хевти тапса тăрать. «Колчак» авторĕн чăн чăваш чĕлхи, сăвă ăсталăхĕ, сăмах пуянлăхĕ, халăх пурнăçне тĕплесе пĕлни тĕлĕнтерчĕ мана», — тет Петĕр Хусанкай «Чăваш поэтсене» сăвă пирки каланă май. Чăннипе илес тĕк, халь те шалт тĕлĕнтерет вулакана çак сăвă. Мĕнле ăсталама мехел çитернĕ ăна автор? Камран та пулсан тĕслĕх илнĕ-ши вăл? Мĕн хистенĕ ăна чун ĕсĕклевне шур хут çине ӳкерме? Тăхтин юлашки кĕнекине хатĕрленĕ чух хăшĕ-пĕрисем çак сăвă пирки унталла-кунталла пăхкаласа илсе пăшăлтатса калаçнине астăватăп. «Сыхăраххисем» сĕннипе сăвва кĕнекен çум пайне те пулин (хыçала) кĕртнĕччĕ. Паянхи шайпа пăхсан, 20-мĕш çулсем варринче çырнă япалана тĕрĕс хаклама та, ăнланма та тивĕç эпир. Авторĕ калашле,

«сăвва ĕлĕк тӳссе курнă çыннăн тарăхăвĕ, варне витнĕ ăш хыппи, тумхахлă çул-йĕрĕ темелле». Тепĕр тесен, халĕ çав вăхăтри литература çул-йĕрне çип çапнă пек тӳрĕ ӳкерсе кăтартма хăтланни те истори чăнлăхне пăснине пĕлтерĕччĕ. Йывăрлăхĕсем ун чух сахал мар пулнă, тӳсейменнисем тӳсеймен те вĕсене. Çакна Тăхти пултарулăхĕн кăткăс çулĕ те çирĕплетсе парать. Лермонтов пĕр сăввинче «питне çуман Раççейпе», «чурасемпе господасен» çĕршывĕпе сывпуллашнине асилетĕн сăвва вуланă чух:

Чăваш поэт пуличчен<br>
Хура çĕлен пулас-мĕн:<br>
Вĕчĕх-кĕвĕç чăвашсем<br>
Харлаттарса ыйхăпа<br>
Çварне карса выртнă чух<br>
Вĕсен вĕчĕх çăварне<br>
Шуса кĕрес майĕпе...

П. Хусанкайăн «Тилли юррисенчи» е Митта Ваçлейĕн сăввисенчи евĕрлĕ шалтан тапса тăракан хăват пур Тăхти йĕркисенче.

Публицистикăлла статьясемпе очерксем Тăхти пултарулăхĕнче пĕртте уйрăммăн тăмаççĕ. Сăвă е проза чĕлхипе калайман сăмахне писатель вĕресе тăракан темпераментлă статья урлă вулакан патне çитерме тăрăшнă. Кирек мĕнле жанрпа çырсан та, Тăхти киввине йывăр кĕрешӳре çĕнтерсе пырса утăм хыççăн утăм тăвакан социализм ӳсĕмĕсене кăтартса пама васкать. «Шкул, кĕнеке, хаçат», «Тырă-пулă уявĕ», «Учительсем», «Шăнкăл-шăнкăл шыв юхать...», «Атăл та куна халиччен курман» тата ытти статьясенче çакна лайăх курма пулать. Тăхти хаçат-журнала тăтăшах статьясемпе фельетонсем, тĕрлĕрен заметкăсем çырса тăнă.

Тăхти эткерĕнче вырăсларан куçарнă произведенисем те пур: В. Бианкин «Кайăк çурчĕсем» калавĕ, Е. Полонскаян «Часси» кĕнекинчи калавпа сăвăсем т. ыт. те. Вĕсене илемлĕхе тарăн туйса куçарни сисĕнет. Куçаруçăн чĕлхи таса та уçăмлă. Вырăс чĕлхин пуянлăхне поэт Мускаври университетра вĕреннĕ вăхăтра нумай тĕпченĕ. Вулакан писателĕн вырăсла çырнă хăш-пĕр произведенийĕсемпе те паллашма пултарать.

Тăван халăх хăйĕн таланчĕсене хăçан та пулин тивĕçлипе чыслатех. Акă Илле Тăхти çырнисен туллирех пуххи те вулакансем патне çитет, вăл тăван культурăна сума сăвакансемшĕн паха парне пулĕ.

Тăхти пултарулăхĕ, унăн пĕтĕм ĕçĕ-хĕлĕ 20—30-мĕш çул-

сенчи чăваш литературин аталанăвĕпе уйрăлми тачă çыхăннă. Чăвашсен илемлĕ çырулăхĕнчи тĕрлĕрен жанрсемпе формăсен аталанăвне тĕпченĕ чухне Тăхти çырнисем çине анлăрах таянни питĕ усăллă пулĕччĕ.

«Колчак» авторĕпе юнашар тăрса ĕçленĕ хăш-пĕр писательсен ĕçĕ-хĕлĕ ытларах литература историйĕн материалĕ çеç пулса юлчĕ ĕнтĕ. Тăхти хайлавĕсене вара эпир паян та киленсех вулатпăр, унпа пĕрлех вĕсем çамрăк çыравçăсемшĕн пултарулăх шкулĕ пулса тăраççĕ. Тăван сăмах ăстин, таса чунлă гражданинăн — Илле Тăхтин çутă ячĕ чăваш чĕлхи хăвачĕн символĕ пулса ĕмĕр-ĕмĕрех халăх чĕринче пурăнĕ.

*1979*

## ИЛЛЕ ТĂХТИН «СУЙЛАСА ИЛНИСЕМ» АЛ ÇЫРĂВĔ ПИРКИ СĂНАНИ-СĔННИ

Кунашкал хулăн кĕнеке Тăхтин кун çути курманччĕ-ха. Пултарулла çыравçă ятне кĕçĕнлетсе кăтартасси, унăн тăван литературăри вырăнĕпе пĕлтерĕшне чакарса хакласси юлашки çулсемччен çирĕпленнĕ йăла пулса тăчĕ. Çавна пула 1979 çулта тухнă кĕнекене те авторăн чылай хайлавĕ кĕреймерĕ, тухнă пеккисене те пысăк хирĕç тăру урлă çеç кун çути кăтартма май килтернĕччĕ. Паянхи саманара, Тăхтилле каласан, çанталăк нумай улшăнчĕ; паллах, уяр çанталăкăн та майсăр енĕсем çук мар: сăмахран, унччен хура-хаярланса капланнă пĕлĕтсем самантрах сирĕлейме́ççĕ. Тен, çавăн пиркиех пулас кĕнеке калăпăшне çителĕксĕр планланă, хăюллăн, сулмаклăн, çыравçă таланчĕ чи çӳллисен шайĕнче пулнине шута илсе картайман. Апла пулин те çак калăппа та пулсан Тăхтие пичетлемеллех.

Ал çырăва тĕпрен илсен жанрсене астуса тытăмланă. Сăвăсем пысăк вырăн йышăнаççĕ, унта виçĕ поэма кĕнĕ. Прозăпа çырнă калавсем тивĕçлĕ вырăнта, чи юлашкинчен статьясемпе çырусем. Ум сăмахне В.Г. Родионов профессор çырнă. Кĕнеке пуçламăшĕнче ку вырăнлă; автор Тăхти пултарулăхне урлă та, пирлĕ те тĕпченĕ, ăна тарăн ăнкарнă. Çыравçăн хăйне евĕрлĕхне, тарăнлăхне, сăмаха варса калас туртăмĕпе иронилле-сарказмла мелĕсене тĕрĕс асăрханă. Ман шутпа, ум сăмаха кăшт кĕскетсен те аптрамĕччĕ пек туйăнать:

унта кашни вариант пирки тĕплĕн ăнлантарни, анлă комментарисем тĕл пулаççĕ, вĕсене хыçала асăрхаттарусем пайне куçарсан вырăнлăрах пулассăн туйăнать. Пĕтĕмĕшле илсен вĕсем тĕрĕсех, кирлĕ информаци те çителĕклех вĕсенче.

Эп ăнланнă тăрăх, палăртнă калăпăша пур хайлав та кĕреймест, хăшне-пĕрне кăларма тивет. Паллах, кĕскетмесен шутсăр лайăх пулĕччĕ. Ку ĕнтĕ пĕр вариант. Анчах та кĕскетмех тивет пулсан (иккĕмĕш вариант) кунта тĕплĕ виççе касас пулать. Мĕншĕн тесен чи «вăйсăррисем» те çав тапхăрти литературăн çӳллĕ шайĕнче. Шел вĕсене катертме. Вулатăн та паянхи кун та шалт тĕлĕнетĕн: мĕнле пичетленĕ-ха хăй вăхăтĕнче «Ма кĕрес мар коммуна ырă пурнăç курмашкăн?» текен йĕркесене?! Тăхти кăштах шăл йĕрсе, сăмах вăййин мелĕсемпе виртуоз пек усă курать. Официаллă идеологи штампĕсене, пушă клишене куçнă формулăсене татах та ансатлатса (вĕсем чĕлхе çинчех пулнă, вĕсене пурте кашни кун илтнĕ), шухăшласа вулакана адреслет, айванраххи (маскультура çынни) хăнăхнă, уйăраймасть. Тăхти, ман шутпа, вырăс литературинчи А. Платонов, Е. Замятин пултарулăхĕпе çыхăннă туртăмсене сăнасах пынă. Паян «антиутопи» тетпĕр вăл сулăма. Айваннисене пачах ухмаха кăлараççĕ, чеереххисем ăнлансан та шарламаççĕ, камăн та пулсан вырăнлă форма тупса каламаллах пулнă. Пысăк теветкеллĕх, чăрсăрлăх — çавăнпа та ĕнтĕ Тăхти (чирлĕскер) çĕре кĕрес умĕн ун пирки çырнă статьясенче «критикăлла масса» взрыв патне çитет. Тăхти вилмен пулсан ăна пĕтеретчĕç. Чирлĕ çыравçă, тен, çакна ăнлансах тӳрĕ çул суйласа илнĕ. Унсăрăн лагерьсемпе тĕрмесем тăрăх каймалла, унтах вилмелле пулатчĕ. Тăхти «коммуна» мухтать, анчах пĕтĕм талантне ĕçе кӳлсе пурнăç пулăмĕсене (диалектикине) тарăн сăнласа мар (урăх çĕрте ай мĕнле хăватлă тăвать çакна вăл!), лозунг чĕлхипе, плакат майĕпе, çиелти пафоспа; ку — çăмăлттай (тĕпри идеологи сулăмĕпе) сăмаххак. Çавă çеç.

«Сăвăсем» пайра хăш-пĕр тăсарах кайнă вырăнсене, икĕ хут каланисене кĕскетме май килет те-и тен? Тимлĕрех пăхасчĕ. Эпĕ хăш-пĕр сыпăксене палăрткаларăм пулас. «Октябрь», «Чăвашсем», «1925 çулхи апрелĕн 21-мĕшĕ», «Çав-çав çĕрте, çав çĕрте», «Йĕре-йĕре ĕçлекен», «Çич сехетре çитсе лар», «Юрласассăн юрласчĕ», «Ĕçле-ĕçле çи» тата çавăн йышши

уйрӑм сӑвӑсене кӗскетни кӗнеке пахалӑхне ӳстернӗ ҫеҫ пулӗччӗ.

Поэмӑсене вӑхӑт тӗрӗсленӗ, вӗсем юрӑхлӑ. Тӑхти вӗсенче те («Колчакра», сӑмахран) массӑллӑ культура ҫыннипе калаҫать, вӑл унтан нумай ҫӳллӗрех, тарӑнрах, анчах «социаллӑ заказ» ҫавна ыйтать. Мӗнле мухтаса-чысласа яраҫҫӗ Тӑхтие поэма тухнӑ хыҫҫӑнах! Ҫав самантлӑх — талантӑн хӑрах енӗ ҫеҫ. «Чӑваш поэтсене мухтани» вара пичетленеймест, хамӑрӑн илемсӗрлӗхе кӑтартма юрамастьҫке.

«Выҫлӑх ҫул» поэмӑра куштан Ваҫук пирки калани мӗне тӑрать: «Тархаслатпӑр халь сана — аслатине авӑттар, ҫиҫӗмне те ҫиҫтерсем... хура пӗлӗт илсе кил...» т.ыт.те. Ку йӗркесем Сталинпа парти пирки ҫӳренӗ анекдотсене аса илтереҫҫӗ. Тӑхтине халӑх йӑваш, ытлашши тӳсӗмлӗ пулни, хастарлӑхӗ ҫитейменни кулянтарать. Вара вӑл иронипе: «Куштан тете Ваҫука ӳке-ӳке пуҫҫапӑр», — тет. Мӗн тӑвайӑн! Эппин, пурӑнӑр упаленсе ҫине тӑмастӑр пулсан тесшӗн автор, е: «Сантӑрӑн сӑмахӗпе хырӑмсене тӑрантӑр». Е тата Пысӑк театрта (Мускав) выҫӑпа аптранисене пулӑшас тӗллевпе лартнӑ спектакле илсен. Тӑхти икӗ чула перӗнтерсе хӗлхем кӑларнӑ пек, контрастласа ӳкерет пурнӑҫ сийӗ-саманчӗсене. Театра пухӑннӑ халӑх ылтӑн-кӗмӗлпе пархат ӑшӗнче, кӑкӑр тулли орден-медаль, майрисем кӑш-сӑсар тӑхӑннӑ («хаклӑ пустав тумтирсем»). «Аслӑ Мускав хускалчӗ: япалапа укҫапа пулӑшусем пухаҫҫӗ». Анчах та пӗр енче ырлӑх-пуянлӑх ӑшне путнӑ общество, тути тӑрӑх ҫу юхать; тепӗр енчен, Асламас ялӗ, шӗшкӗ кӑчкинчен ҫӑмах пӗҫереҫҫӗ. «Йӗкел ҫӑмах» ҫинӗрен пуҫ ҫаврӑнать, хӑстарать.

Тӑхти мелӗ: икӗ пулӑма хирӗҫ тӑратса, танлаштарса виҫҫӗмӗш пулӑм-шухӑша куҫ умне кӑларасси (сӑмахпа каламанни), шухӑшласа вулакан ҫакна хӑй тавҫӑрма тивӗҫлӗ. Ку ҫав тери ҫӳллӗ шайри ӑсталӑх, тарӑнлӑх. Иронилле сӑмах: «Революци тӑшманӗ — Атӑл ҫинчи выҫлӑх пур». Тӑхти темиҫе те асӑнать: иртнӗ хӗл продразверстка вӑрлӑх хӑвармасӑр шӑлса тухса кайнӑ — ҫуркунне выҫлӑх. Чи пысӑк чӗлхе ӑстисенчен пӗри, Тӑхти, вырӑс сӑмахӗсене хутӑштарни те ирони мелӗ: «девицасем, дамӑсем» т.ыт.те.

Тӑхти самоирони мелӗпе (хӑйпе хӑй йӗкӗлтешни) тӑршшӗпех усӑ курать. Элихунӑн 6-мӗш пайӗнче, сӑмахран

(«çынсем тыpă выpнă чух кĕлтесене тăpатса кĕpсе выpтап сулхăна» т.ыт.те).

Кун пирки ум сăмахра тĕплĕнрех чаpăнса тăpсан та пăсман пулĕччĕ. Кунашкал мел вăл виçесĕр пысăк талант палли. Вакланса каймасăр, пушă хăмпă пек каçăpăлмасăр Тăхти хăйне кашни утăмрах ура хуракан вĕтĕ чунсене, вăрттăн çыртакан е чукмарпа хăмсаракан ăçтиçуксене «тайма пуçа хĕç витмест» текен чăнлăхпа хĕç-пăшалланса хирĕç тăрать. Ку вăл, шел пулин те, хĕрхӳ кăмăлпа шăла çыртса констатацилемелли пулăм çеç ĕнтĕ паянхи куншăн: мĕн тери тӳсĕмлĕ пулнă этем! «Рабфакçăсен» йышĕ пысăк пулнă, Тăхти пек интеллигентсем — пӳрне хуçса шутламалăх. Енчен те вĕсене хирĕç уççăн, тӳрĕ сăмаха тӳрĕрен пичетре калас пулсан Тăхтин пултарулăх лаççине сӳнтерме тивнĕ пулĕччĕ. Пултарусăр, Турă панă хавалсăр çын хăйне мухтанине, ун умĕнче «пĕчĕкленекене» юратнине пĕлсе тăракан Тăхти, хăй калашле, «ăслă, аслă, чаплă, сумлă паттăрсем» умĕнче вĕçĕмсĕр пуçне пĕксе, пĕшкĕнсе тăнă пек курăнать хăй çырнисенче.

Чăн та, сывлăхĕ те кăшт çирĕпрех чух, 20-мĕш çулсенчи çамрăкрах вăй-халĕпе хăйшĕн хастарланса çине тăнисем те пулнă ун. Акă, калăпăр, 1928 çулта Мускавран Шупашкара, патшалăх издательствине хăйĕн 1926 çултах тăратнă калавĕсемпе сăввисен ал çырăвĕ пирки çырнă çырăва илер. Тӳссентӳссен лăпкă та йăваш çыннăн та чăтăмлăхĕ пĕтме пултарать, акă курăр: «Я один не в силах бороться с чувашским литературным конокрадством (шакурлăх. — *Ю.А.*) и литературным бандитизмом...» «Чăваш кĕнекине ĕне çинĕ теççĕ — ман рукопиçсене те сысна çинĕ вара. Возникает вопрос — неужели чăваш редакцисене сысна иленнĕ? Апла пулсан плохо вара». Кунта ĕнтĕ куратпăр: талантăн темпераменчĕ татса кайнă пĕве юхăмĕ пек вирхĕнсе тухать. Анчах та кунта та вăл ăста аллин йĕрĕсене палăртать, вырăсла-чăвашла çырни чĕлхе пĕлменнинчен килмест, мăшкăллать «сыснасене» тарăхса çитнĕ чун, чăн та вĕсене вăл тӳрĕрен çав выльăх ячĕпе ятран каламасть, çав тери меллĕн çавăрса хурса вĕсен шайне хак парать. Пĕччен кĕрешни çителĕксĕррине лайăх пĕлекен Тăхти çав илемсĕр япаласене халăхра сӳтсе явса тивĕçлĕ хак пама тата патшалăх ертӳçисен культура ĕçĕшĕн хыпăнма кирлине пусăмлатса палăртать. 1937 çулăн синкер-

лĕ кунĕсем çывхарнине сиссе тăнă пек çырать вăл малалла: «к больным вопросам чувашской литературы нужно относиться серьезно. А иначе отсюда могут истекать нездоровые явления в нашу общественную жизнь, что чревато очень плачевными результатами и предвещает разложение литературы, а отсюда разложение общественной мысли и общественной жизни». Шел те, Тăхти асăрхаттарса çырни тепĕр çич-сакăр çултан тискер те хăрушă тăвăл пек килсе литературăри ĕç-пуçсене çеç мар, пĕтĕм общество пурнăçне хаяррăн тыллама пикенет. Тăхти 1926 çулта «Чăваш хресченĕ» хаçатра «Лаша вăрри. Шакур» статья пичетлет, вăл кунта та литературăри шакурлăха кукăр пăшалпа тĕллесе пени пĕртте иккĕлентермест.

Апла пулин те çĕнĕ кĕнекене пухса хатĕрлекенсен пĕр япалана асра тытсан аванччĕ: Тăхти чылай хайлавĕнче хăйне «пĕчĕклетсе», ним пĕлмен-ăнланман çын пек кăтартма тăрăшни вăл «чееленни» кăна мар. Чăн та ĕнтĕ, йĕкĕлтесе кулни те пур-ха унта, хăй çӳллĕшĕнчен курса тăрса нумай-нумай илемсĕрлĕхпе çынсен хутшăнăвĕнчи тасамарлăха, клеме çапнă пек, сăмахпа çунтарнă вăл. Вольтер чĕлхи... Философ Франци академийĕн членĕсене «вилĕмсĕррисем» тесе «чыслать». Пирĕн Тăхти хамăр чăваш поэтсене халалланă «Мухтав юррин» хушма ятне илсе пăхсан: «Хвалебный гимн великой плеяде чувашских поэтов и писателей всех времен и веков». Кӳтнĕ чун, вĕçĕмсĕр туласах тăнăран, суранĕсене сиплесе сывлăш çавăрса илме те ĕлкĕреймест, каллех çĕнĕ сурансем... Çапла пурнăç тăршшĕпех. Анчах та хăйне канăç паман тăшманĕсене тавăрмалли хĕç-пăшал арсеналĕ пуян пулнă ун. Сăмахран, «Чăваш писателĕсем мĕн çыраççĕ» («Сунтал» рубрики) интервьюна кĕнекене кĕртмесен ку пысăк çухату пулĕччĕ. Асăрхăр, Тăхти кунта хăйне хăй «хаклать», илемлĕ сăнара калаçтарса мар.

«Ман çырни ним çукран нимĕр чухлĕ çук пулин те çырас ĕçре мана тĕрлĕ организацисем, пит хаклă, паха, тӳрĕ, хисеплĕ, тăнлă юлташсем, ĕçе, пурнăçа пĕлсе, чухласа пыракан ырă кăмăллă çынсем халиччен те нумай пулăшнă, пулăшаççĕ мана, тăн парса пыраççĕ. Ку ĕçре вĕсем малашне те мана питĕ нумай пулăшасса, вĕрентессе шанса тăратăп та ĕнтĕ эпĕ». Вĕрентсе, тăн парса пыма çеç ан пăрахчăр (ку чи кирли имĕш!), ытти вăл вак-тĕвек кăна! Кам пĕлмест,

çынра хăйĕнче талант, Турă хĕлхемĕ пулмасан «тăн парса» пыни усăсăр пулнине?! Çак интервьюна пичете çул пани вăл журнал аппарачĕн ĕçченĕсен хĕсĕк тавракурăмне те, литература пурнăçĕнчи сывă мар лару-тăрупа ун пĕтĕмĕшле шайне те шал енчен тавăрса кăтартать. Çав çынсемпе кĕрешме тивнĕ Тăхтин, тĕрĕсрех каласан, çав вĕтĕ чунсем ăна канăç паман.

Анчах та кунта тепĕр япалана асра тытас пулать. Тăхти хăйнешкеллĕхĕ, тыткаларăшĕ ун психологийĕпе тӳрремĕн çыхăннă. Шалти импульс хистевĕ пирки сăмах пырать, çын стереотиплă утăмсем тăвать, ăс çăварлăхĕнчен вĕçерĕнет. Тен, вăл хăй те сисмест: сăн ӳкерттернĕ чух чи хыçалти рете тăрать, мала тăни ăна каçăрăлнă пек, парад еккине кăмăллакан çынла курăнассăн туйăнать. Ĕç лаши «тăн паракансен» малти ретĕнче хăйне хăтлă, ирĕклĕ туймасть. Пушă çын хăй пирки пушă пичке пек янратса аса илтерет. Турри нумай пани пуррине пытарма тăрăшать. Ах, ытла та тĕлĕнмелле сăнав пур-çке Плутархăн, вăл Тăхти тыткаларăшне тымар тарăнăшĕнчен çутатса кăтартнăн туйăнать. Акă курăр-ха, чăвашла куçарсан шухăш пĕрчисем çухаласран асăрханни шутсăр вырăнлă кунта. «Дамон был, по-видимому, замечательным софистом, но музыкой пользовался лишь как предлогом, чтобы скрывать от народа свои способности». Мĕншĕн «пытармалла» пулнă Тăхтин таврари çынсенчен хăйĕн талантне? Мĕншĕн вăл хăй çырнине «ним çукран нимĕр» тет? Ку вăл универсаллă пулăм, хăватлă талантсене, хăйсене хӳтĕлеччĕр тесе, çут çанталăк паракан маска. Çын хăй тăвас тенипе мар, çӳлти хăват хистенĕрен, çут çанталăк пӳрнипе. Вĕчĕх чунсене кĕвĕç пыйти канăç памасть. Такам тем каласан та Тăхти хăй вăйне пĕлет; çав вăхăтрах хăй ыттисенчен пăхсан çĕлĕк ӳкмелле çӳллĕ шайра тăнине тĕпĕйĕрĕпе ăнланмасан та пултарать — çакăнта ун телейĕ, Турă паллиллĕ таланчĕ. Хăй шайне вăл тепĕр чухне, хайхи интервьюри мелпе, çырăвĕсемпе пĕчĕк репликăсенче те палăртать; ку вăл курнăçланас тени мар, тулли савăт тăкăнса тăнă пекрех япала. Акă хаçат редакцине «Колчак» поэма тухнă хыççăн ярса панă çыру. Çырăвĕн тĕллевĕ — унти çитменлĕхсем çинчен хаçатра çырса вĕсене йышăнасси теме те пулать çиелтен курсан. Анчах та каллех вăл хăйне вĕçĕмсĕр «вĕрентекен»-тиркекенсемпе диалог çипписене карать.

«Кĕнеке çырас ĕçе çыраканни витĕр чухлайман пирки, тĕрлĕ çĕрте авторăн тăн çитеймен майпа унта-кунта йăнăшсем пулнă вăл кĕнекере»; «Точка, тире, зяпятой таврашсене кирлĕ-кирлĕ мар çĕре лартни-лартманни чылай пуль вăл пĕчĕк кĕнекере»; «Витĕр курса вулакансем çыракан йăнăшĕсене тата чылай курăççĕ пуль унта».

Çыру текстне вăйă сĕмĕ, шахвăрту екки витĕрех çапнă. Автор хăй çырнă йĕркесенчи уйрăм кăлтăксене е иккĕллĕ ăнланма май пур вырăнсене илсе кăтартать те, хăйне тиркесе, пĕтĕмлетсе хурать: «Унашкал «чаплă сăмах-юмаха» ăнланма хамăн та тăн çитеймест-çке те». Çав «витĕр курса вулакансене» мистификацилет Тăхти чăн-чăн пысăк артиста çеç пӳрнĕ ăсталăхпа, чун çуначĕсен ирĕклĕхĕпе киленет вăл, паллах, çĕнĕ тăшмансем те тупать. Пĕчĕк чунлă, пултарусăр этеме йышăнтарса пăхăр-ха эсир хăйĕн çитменлĕхĕсемпе йăнăшĕсене. Вăл чĕвен тăрать, тапкалашать, çавăнтах çыртса илме те хатĕр. Талант пуррипе çукки çакăнта лакмус пек палăрать. Чунĕ хĕрнĕ самантра Тăхти сăмахне çиçтерсе Шерхулла ташшине ташласа кăтартма пултарассăн туйăнать.

Кĕнекере прозăлла хайлавсем те тивĕçлĕ вырăн йышăнмалла пек.

Калавсем вырăнлă, анчах хăшне-пĕрне кĕскетме май пур пулĕ. Вăйлисене вырăсла куçарасчĕ: «Аслă, ăслă, чаплă, сумлă паттăрсем» (кунта Ф. Кафкăпа çыхăннă ассоциаци çуралать!), «Кайăк патши», «Çиçĕм çăмахĕ» т. ыт. те. Пуртех те калав та мар ку пайра. Тен, публицистика пайне уйăрса кĕртмелле хăш-пĕр «калавсене». Унта очерк та, статья та кĕрет.

«Статьясем» пайĕнче «Пара слов о чувашской литературе...» текеннине памаллах-ши? Парсан анлă комментари кирлĕ пулĕ. Пупсемпе тĕн теминчен кăштах асăрханмалла пуль. Тăхти, пĕр енчен, хăй те Ĕпхӳри тĕн семинарийĕнче вĕреннĕ. Тепĕр енчен, чиркĕве ытлашширех хĕрсе вăрçать. Паян ку темăн актуаллăхĕ çук. Тен, пупсене тиркенисене кĕртес пулмасть?

Агитка йышши татăк-кĕсĕксене кĕскетсен аванччĕ. Текста тимлĕ вуласа тухса çĕр-çĕр техника йăнăшне тӳрлетмелле.

Ман шутпа, ал çыру пичете хатĕр. Вак-тĕвек сĕнӳсем, тен, ĕçре пулăшĕç.

*2009*

Хумхан, Хура тинĕс! Хускат чунăма,
Ан парччĕ ăна сивĕнме, чулланма.

*Петĕр Хусанкай*



## ЧĔРЕПЕ СУЙЛАНĂ САВĂСЕМ

Петĕр Хусанкай куçарнă сăвăсен кĕнеки пичетленсе тухнин пĕлтерĕшĕ пысăк (Туслăх ытамĕ. Шупашкар: Чăваш кĕнеке издательстви, 1985). Ăна А. Хусанкай критик пухса хатĕрленĕ. Тӳрех калас пулать, хамăр чăваш культуришĕн пысăк пĕлтерĕшлĕ, савăнтаракан событи пулчĕ çак кĕнеке кун çути курни. Ку таранччен поэт куçарăвĕсен çакнашкал «тулли» пуххи пичетленменччĕ-ха.

П. Хусанкай тăлмач ĕçне яланах хисеплĕ те яваплă тенĕ. Хăйĕн пĕр статйинче кун пирки вăл акă мĕн калать: «...куçару ыт ахальтен тумалли çăмăл ĕç мар, чылай çыншăн вăл — пĕтĕм пурнăç шăпи. Мĕншĕн тесен тата вăл — пысăк культура ĕçĕ, патшалăх ĕçĕ, политика ĕçĕ». Чаплă сăвăç куçарнă произведенисем çак сăмахсен чăнлăхне тӳрре кăлараççĕ.

«Туслăх ытамĕ» кĕнекене хамăр çĕршыври тата чикĕ леш енчи халăхсен вуншар поэчĕн сăвви-поэмисем кĕнĕ.

«Пысăк культура» тенĕрен, ку кĕнекене ăнсăртран кĕрсе кайнă сăвăсем çук. Поэт куçару урлă та калама пултаратьçке-ха хăйĕн шухăшĕсене. Акă, сăмахран, карело-финсен эпосне «Калевалăна» илер. Вĕсене П. Хусанкай Юман Мĕтрипе пĕрле куçарнă. Ку ĕçе тăлмачсем чăваш эпосĕ (Улăп) çинчен пичетре хĕрсе калаçнă вăхăталла пикеннĕ пулас. Çав калаçăва Ç. Элкер, Ф. Павлов, С. Лашман тата ыттисем те хутшăнаççĕ, чăваш эпосне çырас ĕмĕтпе хĕмленеççĕ. Çак енчен пăхсан вăл вăхăтра «Калевала» чăваш эпосне йĕркелесе çырмалли тĕслĕх пулма пултарнă ĕнтĕ.

Хусанкай вырӑс классикин тӗнче культуринчи тӳпипе пӗлтерӗшне витӗр курса тӑнӑ. Акӑ вӗсем поэзи тӳпинчи ҫӑлтӑрсем — А. Пушкин, М. Лермонтов, А. Блок, А. Ахматова. Поэзин йӑлттам тӗслӗхӗсене куҫарнӑ хушӑра Хусанкай хӑй пултарулӑхӗн хӑват-мехелне тӗрӗслет. Пушкинӑн «таса» лирикине вӑл авторӗпе ӑмӑртса тенӗ пек куҫарать, чӑваш чӗлхин пиҫӗлӗхӗпе ҫепӗҫлӗхӗ, ун ытарайми кӗвви-ҫемми нимле чӗлхене те парӑнманнине ҫӗнӗрен ҫирӗплетсе парать. Тӗслӗхӗсем — чӑн-чӑн шедеврсем: «Чаадаева», «А.П. Керн патне», «Сӑрт-туллӑ Грузире каҫхи тӗтре выртать...», «Арион», «Тӑван ҫӗре ытараймасӑр...».

А. Пушкин хыҫҫӑн М. Лермонтов сӑввисен таса кӗмӗл сасси пек кӗввипе киленетпӗр. Икӗ ӑмӑрт ҫунатлӑ поэт, расна поэзи тӗнчи, стиль туртӑмӗсемпе тӗсӗсем... Анчах та хӑшӗ вӗсенчен Хусанкая ҫывӑхрах? Пушкин сӑввисен гармониллӗ тӗнчетуйӑмӗ, киленӗҫлӗ ҫутӑ вылявӗ, ырра шанса ун патне туртӑнни тыткӑнлать. Лермонтов сӑввисене вара чӗрене касакан тунсӑх витернӗ, кӑнтӑрлахи хӗвел ҫути мар, чӗр кӗмӗл сапакан уйӑх ҫутиллӗ каҫ хуҫаланать тейӗн кунта; поэт пурте йышӑннӑ чӑнлӑха чун витӗр кӑларса тепӗр хут тӗрӗслет, иккӗленет е пӑрахӑҫлать. Уйрӑмах туслӑхпа юрату лирикин йӗркисенче сисӗнеҫҫӗ ҫав хӗрӳ кӑмӑл-туйӑм палӑрӑмӗсем. Этемӗн чи сӑваплӑ тивӗҫӗ — Гражданин пуласси, тӑван халӑхӑн кун-ҫулӗпе пӗрлешесси, ун ирӗкӗшӗн кӗрешесси.

Хусанкай оригинал кӗввипе ритмне тӗп-тӗрӗс, вырӑслинчен пӗртте чакармасӑр куҫарма мехел ҫитерет. Чӑваш поэчӗн творчествӑлла тавракурӑмӗ анлӑ, уншӑн Пушкин поэзийӗн илем тӗнчи те, Лермонтовӑн кӑткӑс стилӗ те пӗр пекех ҫывӑх.

А. Блокӑн «Вун иккӗ» поэмине куҫарнӑ май Хусанкай хӑй пултарулӑхӗн эпикӑлла сулӑмне туллин палӑртать. Кунта В. Маяковский шкулӗ ҫеҫ мар, пӗтӗм тӗнче поэзийӗн опытне ӑша хывни сисӗнсе тӑрать. Калама ҫук пысӑк поэзи культурине чӑваш чӗлхипе, чӑваш сӑввин тытӑмӗпе пӗр кӗвве килтерет, кивӗ тӗнчене тӗпрен кисрентернӗ революци тӑвӑлне, ун чӗрӗ сывлӑшне туйтарать вулакана.

Эпика пирки калас пулсан, Грузи поэчӗн Шота Руставелин «Тигр тирӗ тӑхӑннӑскер» поэмин сыпӑкӗсене куҫарнинче лайӑх палӑрать поэт хевти.

Хусанкая чăннипех те хамăр чăваш культурин элчи темелле. Тăван çĕршывăн кашни кĕтесĕнчех унăн çывăх тусĕсем пулнă, вăл вĕсемпе çыру çӳретнĕ, кайса-килсе çӳренĕ, çырнисене куçарнă. Çавăнпа та ĕнтĕ кĕнекери куçарусен географийĕ тĕлĕнмелле анлă. Çак пĕр пысăк ушкăн çăлтăр çутинче украинпа белорус, Кавказпа Балтика тăрăхĕнчи халăхсен поэчĕсен сăввисем хăйне май илемлĕ тĕспе çиçесçĕ. Хусанкай али витĕр пулса çитнĕ поэзи тĕслĕхĕсем çеç сăрхăнса тухнă темелле — шутсăр тиркевлĕ куçпа пахаланă вĕсене Европа культури шайĕнчи поэт. Çав вăхăтрах Çеçпĕлĕнни пек мăнаç интернационализмла шухăш-туйăм вуншар поэта пĕр-пĕринпе çывăхлатать.

Поэзи вăл — халăх чунне упракан сӳнми вучах. Паллах, тăван чĕлхене çĕршер çул хушши шăрантарса пиçĕхтерекен, туптакан ăстасем те чăн малтанах поэтсем. Ăнсăртран мар пулĕ тăван сăмах, тăван чĕлхе теми кĕнекере пĕр пысăк темăсенчен пĕри пулса тăрать. Украина поэчĕ Павло Тычина калашле, «чĕлхе вăл — ĕç, çын терчĕ, тарĕ, вăл — пирĕн пĕртăванлăх туйăмĕ». Мĕн тери тарăн шухăш хывнă çак сăмахсене. Çав «пĕртăванлăх туйăмĕ» тăван сăмаха, анне чĕлхине хисепленинче лайăх палăрать. Акă епле калать кун пирки чăн-чăн интернационалист Расул Гамзатов «Тăван чĕлхе» сăввинче. Ытарлă майпа, тĕлĕкĕнче курнăн, çавăрса калать вăл шухăшне. Вилме выртнă поэт — тăр пĕччен, хĕвел çути те, шанчăк та лапах сӳннĕ уншăн. Акă кĕтмен çĕртен вăл çывăхрах çынсем «шăкăлтатса иртнине» илтет, аварла пуплеççĕ иккен:

> Тăван чĕлхемĕн çеммине илтсессĕн
> Эп чĕрĕле пуçларăм çавăнтах.
> Ăнлантăм: тухтăр кирлĕ мар чĕртмешкĕн.
> Асамçă мар чĕртет, — тăван сăмах.
> Такамшăн сиплĕ ют чĕлхех, пăхсассăн,
> Мана унпа пӳрмен кĕвĕлеме.
> Тăван чĕлхем ыран пĕтес пулсассăн
> Эп хатĕр паянах çĕре кĕме.

Пĕрре пăхсассăн, темле трагедилле кĕвĕ янравĕ пур пек çак йĕркесенче. Çапах та авторăн тарăнрах сийри шухăшĕ шанчăкпа тапса тăрать: пĕтмест-ха тăван чĕлхе. Ма пĕттĕр вăл тус-тăванла йышра килĕштерсе пурăнакан авар е чăваш халăхĕсен чĕлхи! Хальхи вăхăтра вĕсене аталанмалли пур

майсем те çителĕклĕ. Ахальтен мар пулĕ Хусанкай хăйне çывăх поэтсен Тăван çĕршывпа тăван халăхне, тăван чĕлхине аслăлатса мухтакан сăввисене чылай куçарнă. Белорус поэчĕ Янка Купала «Тăван çĕршыв» сăввинче хăйне майлă хускатать çак пысăк пĕлтерĕшлĕ темăна. «Эп хам — çĕршывăмăн пĕр пĕчĕкçеççĕ пайĕ, усратăп чĕремре ун çăлтăр çутине», — тет вăл. Тутар поэчĕ Ахмед Ерикей та çак шухăшах тупа тунă евĕрлĕ калать:

Пĕр нимĕскер те кирлĕ мар,
Кермен, ман ятшăн ан хăпар.
Шăпам, çуралнă çĕрĕмрен
Уйăрăлма кăна ан пар!

Кашни поэт кун-çулĕ мĕн ачаран çывăх тăван ене, харпăр хăйĕн пĕчĕк çĕршывĕпе тачă çыхăннă. Çав çĕрсемпе шывсем чăмăртанса аслантараççĕ те ĕнтĕ чи пысăк та мăнаçлă Тăван çĕршывăмăра.

Кĕнекен ăш-чикне ют çĕршыв классикĕсен сăввисем те пуянлатаççĕ, çĕнĕ тĕс кӳреççĕ. Авторĕсем — тĕнчипе паллă ятсем: Виктор Гюго, Адам Мицкевич, Юлиан Тувим, Иржи Волькер, Назым Хикмет, Николас Гильен т.ыт.те.

«Туслăх ытамĕнчи» тепĕр хитре ярăма авалхи тус-тăванăмăрсен — пăлхар поэчĕсен — сăввисем кĕнĕ. Вĕсенчен чылайăшĕпе Хусанкай туслă пулнă, пĕрре çеç мар хамăрпа (чăвашсемпе) пĕр тымартан тухнă пăлхарсем патне кайса çӳренĕ. Пăлхар чĕлхине те çине тăрсах вĕреннĕ. Çавна пула ĕнтĕ вăл Христо Ботев, Пейо Яворов, Димитр Осинин, Элисавета Багряна, Ламар, Ангел Тодоров, Младен Исаев, Никола Вапцаров сăввисене тӳрех чăвашла куçарма пултарнă. Димитр Осининăн «Кĕреке сăмахĕ», Ламарăн «Атăл», Младен Исаевăн «Асаттесем» сăввисене вулатăн та тăванлăх туртăмне пысăка хурса хакланине, çав туйăм мăн асаттесен юнĕнче пулнине тепĕр хут ăнланса илетĕн. Акă епле ăшшăн пуç таять Ламар авалхи пăлхарсен чĕлхипе культурине упраса хăварма пултарнă чăваш çĕрне-шывне, халăхне:

Пăлхар аслашшĕсем çак Атăл урлă
Каçса сиктернĕ йышлă урхамах,
Хула туса хăварнă, — тет юмах, —
Пăлхар хули, ун ячĕ Болград пулнă.
Ун пек хула кунта та пулнă теççĕ,
Вăл тĕлĕкри пек тĕрленет асра.

Чăваш юрри ун тӳсĕмне усрать,
Пинçуллăх кĕввисем халь илтĕнеççĕ...
Легенда пĕлтерет: чăваш — пăлхар вăл,
Эпир пĕр халăх пулнă ĕлĕкрен;
Хаваслăх, хурлăх, юрă — пĕр тĕпрен.
Салам сана, Тăван çĕршывăм — Атăл!

(*«Атăл»*)

Куçару ăсталăхĕ, пысăк культурăллă поэт алли «Туслăх ытамне» кĕнĕ кашни сăвăрах сисĕнсе тăрать. Кĕнекене вуласа тухсан кулленхи куçару практикипе çыхăннă çивĕч ыйтусем тавра шухăша каятăн. Илемлĕ литература журналĕсем, «Тăван Атăлпа» «Ялав», тăтăшах куçарса пичетлеççĕ ытти халăхсен поэчĕсене. Чылай чухне пĕр-пĕр юбилей е культура кунĕсемпе тĕл килет çак ĕç. Анчах та темшĕн-çке çав куçарусем, подшивкăра упранмалли черетлĕ материал пек, йĕрсĕр çухалаççĕ, хамăр çырулăх аталанăвне витĕм парайманççĕ. Хусанкай тăван культура шайне, халăх кăмăл-туйăмне шута илсе, вăл ыйтнине чĕрипе ăнланса, суйласа куçарнă тăванла литературăсен тĕслĕхĕсене. Халь пăхатăн та, поэт куçарнисем чăваш культурин ылтăн çӳпçине кĕме тивĕçлĕ. Вĕсем чăваш чĕлхи хевтипе, ун хавалĕпе çуралнă тейĕн малтанах. Хальхи хаçат-журналта куçарса пичетлекен кашни произведени пиркиех çапла калама май килсен епле аван пулĕччĕ!

*1995*

## ШАНАТĂП ХАМĂН ÇĂЛТĂРА

Петĕр Хусанкай çырнисене ултă томпа кăларас ĕç хускалнă. Кĕнеке хыççăн кĕнеке кун çути курать. Вăхăчĕ таххçанах алăкран шаккать темелле, анчах, Тилли каларăшле, мехел çитмесĕр нимĕн те пулаймасть иккен. Пуçламăш тома сăвăсем, тĕрлĕ вăхăтра тухнă кĕнекесенчен илнĕ ярăмсем кĕнĕ. 1922—1945 çулсенче çырнă вĕсене автор. Тĕпрен илсен, лирика сăввисем. Поэт хăй пурăннă чухне те, çĕре кĕнĕ хыççăн та кун пек туллин кун çути курайман вĕсем. Чылайăшĕ пуçласа çапăнать. Паян ĕнтĕ пирĕншĕн сăвăç çырнă кашни йĕрке пĕлтерĕшлĕ, акă мĕншĕн «Çырнисен пуххинче» вĕренчĕклерех хайланă сăвăсем те,васкавар тĕрлесе е хăртаса çеç хунисем те вырăн тупма тивĕçлĕ. Поэт

хăй ĕçне вĕçленĕ, тинех вăл пĕр сăмахне те улăштараймĕ, якатаймĕ. Эпир вара, вулакансем, çакна асра тытса поэтăмăр сăввисене çырлахуллă-ăш пиллĕ кăмăлпа йышăнатпăр.

Хусанкай шайне унăн пĕтĕм пултарулăхĕ палăртатьçке-ха. Эпир, пурăнакансем, вĕсем пирки шухăшланиçырни те Хусанкайшăн мар, пĕртен-пĕр хамăршăн пĕлтерĕшлĕ пулма тивĕçлĕ. Çавăнпа поэт пурнăçĕ, ĕçĕ-хĕлĕ тата пĕтĕм эткерĕ çутă тĕнчере пурăнакан чăвашсемшĕн тата килес ăрусемшĕн те ăша илмелли уроксем пулмалла. Анчах, шел те, эпир çав тери ўркевлĕ, вĕренме хыпăнмастпăр.

50—60 çул каяллах çырнă сăвăсене рецензилесе е вĕсене сивĕ кăмăлпа хакласа ларас, кăлтăк-сăлтăк шыраса чаканас тĕллев пулмалла мар пирĕн умра. Самана али вĕсене алланă ĕнтĕ. Тĕрлĕ çулсенче çырнă сăвăсенче хронологи еккипе вуласа пынă май Хусанкай чăваш поэзине яр уçă сасăпа килсе кĕнине тўрех асăрхатăн. 20-мĕш çулсенчех поэт сăн-сăпачĕ хăйне евĕрлĕхпе палăрать. Ун сăвви-поэмисем пирки çине-çинех статьясемпе рецензисем çапăнаççĕ, вĕсене тĕрлĕрен хак параççĕ, час-часах тавлашусенче таканари шывĕпе пĕрле ачине кăларса пăрахни те пулмасть мар. Хусанкай пултарулăхне тĕрлĕ тапхăрсене пайлас ыйтăва тĕкĕнмесĕр эпĕ кунта сăмахăма поэтăн 20-мĕш çулсенче çырнă сăввисенчен пуçласшăн.

Поэт çырнине хак памаллах ĕнтĕ, кун пирки иккĕленме кирлĕ мар. Анчах тиркевçĕ сисĕмлĕ чунлă пулмалла тата поэзи вăрттăнлăхне ăнкарма тивĕçлĕ. Шел те, Хусанкай пурăннă тата ĕçленĕ чух ун шайĕнчи критик пулман пирĕн. Ку тĕлĕшпе халь те питĕ чухăн эпир. Хăй вăхăтĕнче (1920—30-мĕш çç.) Хусанкай çырнисене ăнланса илмесĕрех тиркешсе, ытларах чухне ним çукран нимĕр çăрса, кам ўркенмест çав пичетре сăмах калама май тупнă. Поэт хăй каларăшле, идеологи ертўçисемпе тиркевçисем унран «самана пăртакулçи» тăвасшăн пулнă. Çын кăмăлне тўррĕн витĕм парса, улăштарса çĕнетес ĕçре поэзи вăйне ытлашши тўртен те кăнттамраххăн ăнланни пулнă ĕнтĕ ку. Хусанкай вара 20-мĕш çулсенчех, Хусанти техникумра вĕреннĕ вăхăтра, çакна лайăх пĕлнĕ: талантсăр чăн поэзи нихăçан та пулмасть; воспитани тесен, вăл вара педагогсен ĕçĕ: «Манран

ача пăхса пулаймĕ: пĕлӳ вăл — тĕнĕл... сăвă çавăрма», — тет вăл. Çавăнпа та вун-вун сăвăç «воспитани паракан», социализм утăмне «хăвăртлатакан» сăвă йĕркисем çырнă чух вăл шалти сассине тăнлать:

Шанатăп хамăн çăлтăра,
Шалти çутта кăна шанатăп.
Ахальлĕн мар вăл ялтăрать
Çĕрле те, ир те, кăнтăрла та.

20-мĕш çулсенчи Хусанкай хăй «чунĕн тӳрĕ кĕпçине авма» парас мар, вĕренпе кăкарăнас мар тесе ирĕклĕ те «таса» поэзишĕн харсăрланса кĕрешнĕ. Кунта ĕнтĕ уйрăм тема пирки сăмах пырать, влаçпа литература теми ку. Идеологи витĕмĕ е унăн сасси-пархатарĕ литератор (поэт) ĕçĕнче еплерех палăрмалла-ха вăл? Пуслăхласа тăни, тилхепене кăрт-карт турткалани е пушăпа шартлаттарни мар-çкеха власть вăйĕ. Пĕремĕкпе илĕртсе (хисеплĕ ятпа е наградăпа) читлĕхе хупни те мар вăл. Хусанкай «Пушкин патĕнче» сăвăра акă епле калать кун пирки:

Тӳре-шара тӳнет те хăпарать,
Çар пуçĕсем килеççĕ те каяççĕ.
Пĕр сирĕн çивчĕ хĕç-пăшалăра
Мăкатаймасть çак çут çанталăк влаçĕ.

Пушкин — акă кам вăл Хусанкайшăн чăн-чăн ăс-хакăл хуçи. Е ун пекех çӳллĕ шайри поэт, ӳнерçĕ, музыкçă. Паллах, вăл хăйĕн творчествине философилле тарăнлатса тата гуманизм идейисемпе пуянлатса сулмаклă шая çĕклеме пултарнă этем. Сăвва 1933 çулпа палăртнă. Ку вăхăтра Хусанкай лайăх ăнланнă ĕнтĕ: влаçпа искусство хушшинче ĕмĕрхи хирĕçӳ пырать, идеологи ертӳçисем художника пăхăнтармалли тĕрлĕ майсемпе усă кураççĕ, пысăк художник авторитечĕ вĕсене сывлăш пек кирлĕ: хăйсем тытса пыракан политикăна илĕртӳллĕ сăн парасшăн вĕсем, халăх сассипе калаçакан поэт сасси çине таянасшăн. Чăн-чăн художник халăх умĕнчи тивĕçне, искусствăн сăваплă та пархатарлă миссине пурнăçлас тĕллевпе тамăкра çунма та хатĕр. Таланчĕ унăн влаçри чиновниксем пани мар-çке-ха, вăл — Турă, çут çанталăк парни. Шăпчăк пек, вăл юррине юрламасăр пултараймасть, çут çанталăк хистевĕ ку, чун тĕпĕнчи çăлкуç тапни. Суялăхшăн, чуна сутнишĕн, талант-

не кирлӗ-кирлӗ марпа вакланишӗн поэта ҫут ҫанталӑк яланах хӑрушла тавӑрать. Пӗрре мар пырса тухать Хусанкай пултарулӑхӗнче ҫак тема патне. Темиҫе сӑвӑ йӗрки ҫеҫ ҫырма ӗлкӗрнӗ «сар сӑмсасем» авӑ хӑйсем хушшинче чап валеҫеҫҫӗ: «Ак ку пирӗн Лермонтов, ку пирӗн — Пушкин», — текелеҫҫӗ («Микул турӑпа Кӑмиссар Курийӗ»). Паллах, ку кулӑшла хӑтлану. Е тепӗр чух Хусанкай ҫакӑн пек ыйту та лартать: «Тусӑм, кам-ши пирӗн Пушкин? Кам ятне сума сӑвас?» Чӑн та, пур-ши пирӗн хамӑрӑн Пушкин?

Сӑввӑмӑр пит чухӑн-халӗ,
Сӑвӑсем ҫукпа пӗрех.
Пӗр Кӗҫтукӑн чун хавалӗ
Ялтӑртатрӗ ӗмӗрех.

Чӑваш поэзийӗн пӗр генине уйӑрса асӑнать кунта Хусанкай. Таса поэзи картне лартма хӑват ҫитерекен тек ҫук. Ҫеҫпӗл те Нарспи юрӑҫин шайне ҫӗкленеймен. К. Иванов ӗмӗр пурӑнӗ, анчах та кашни самана хӑйӗн Пушкинӗпе Ивановне ҫитӗнтересшӗн. Чӑваш литературинче те ҫав куна кӗтни сисӗнет, шӑв-шав та ҫӗкленсе илет. Прозӑри ӑста Е. Еллиев чӑваш ҫыравҫисем патне янӑ «Уҫӑ ҫырӑвӗнче» ҫав вӑхӑтри чӑваш литератури шайӗ Пушкин саманипе пӗр килет тесе ӗнентерет. Есенинпа Маяковский вӑхӑчӗ пирӗншӗн пуласлӑхра-ха тет, малтан Пушкин тапхӑрне «пурӑнса ирттерес» пулать тесе ҫырать. Апла тӑк, «ваканси» пур пулсан, Хусанкайӑн мӗншӗн-ха вырӑс генийӗпе юнашар тӑрса виҫӗнсе пӑхас мар! Хусанкая юратакансем, тус-юлташӗсем хӑйне те куҫран каланӑ кун пирки. Хусанкай хӑй те риторикӑлла ыйту ҫеҫ лартнӑн туйӑнать «кам-ши пирӗн Пушкин» тенӗ чух. Хӑй хӑватне туйнӑ вӑл. Апла пулин те Хусанкая сӳтсе явнӑ чух ҫыравҫӑсенчен пӗри ҫапла хушса хурать: «Писатели не могут забыть, как Сергей Порфирьевич учил создавать образы» («Лик Чувашии». 1994. 5 №). Ҫапла, ҫӗнӗрен ҫуратнӑ мифсем саккун вӑйне илччӗр тесен культ туса хумалла пулнӑ, ҫак ӗҫре ҫыракансем хӑйсем те нумай пулӑшнӑ. Паллах, талантсӑррисем. Чӑннипе, тин ҫеҫ асӑннӑ лару-тӑрура ӑс-хакӑл хуҫи Хусанкай пулнӑ, обком секретарӗ, влаҫпа витӗнсе, таланта мӗнле ҫырмаллине «вӗрентнӗ». Плотин калани аса килет: «Деятель всегда ограничен, сущность деятельности — самоограничение:

кому не под силу думать, тот действует». Философ шухăшĕ паян та чăнра тăрать.

Тĕпрен илсен, 20-мĕш çулсенчи Хусанкай Çеçпĕл Мишши халалне асра тытса ĕçлет. Аслă поэт чĕри ĕнер çеç тапма чарăннă, çапах та вăл тĕп çула палăртса хăварнă. Самани ытла та хăвăрт улшăнса пынă. Революци поэчĕ хăй те ертӳçĕ идеолог пулнă, пурнăçа тĕпрен çĕнетсе улăштарма йыхăрнă. Çĕнелӳсем куç умĕнчех пулнă. Анчах Çеçпĕл çĕре кĕнĕ хыççăн тата вичĕ çултан Хусанкай хайхи революцин çĕнĕ çимĕçĕсене акă епле сăнлать: «куç умĕнче кăмиссарсем-мĕнсем тăванлашаççĕ «хĕрлĕ купсапа». Çак сулнăксем поэта хытă шухăшлаттараççĕ.

Шăла йĕрсе артист пуласшăн çеç
Кулаймăп эп, кулаймĕ теп никам та.
Ял хушшинче вилес пекех ĕçес,
Хуласенче халь банда çине банда.
Çакна курса чăтайĕ-ши чĕрем
Тăван малашлăх умĕнче чĕнмесĕр?
Ан тив, вилем, ан тив, çĕрте çĕрем,
Тĕрĕссине çырма ан чарăр эсĕр.
Тĕрĕссипе — путса ларма пултарĕ
Чĕн тирлĕ Хусанкайăр та ку чух.
Ăна халь хӳтĕлет хула бульварĕ,
Таланчĕсĕр пуçне ун ним те çук.
Ăна та кирлĕ пуль пăртак укçа:
Çăпатапа та сăхманпа, мăнтарăн...
Чăваш тӳре-шари, куçна уçах!
ПĔРТЕН-ПĔР ПОЭТНА эс, тен, хăтарăн.

Çитмĕл çул каярах çырнă йĕркесем. Апла пулин те вĕсем паянхи пурнăçа сăнă пек килсе тивеççĕ. Литературăпа искусство çыннисен пурнăçĕ паян та çавăн пекех йывăр, инкеклĕ. Асăрхăр-ха: Хусанкай талант таппине туять, ытлашши сăпай е мĕскĕнленме тăрăшманни ăна килĕшет те. Чăн та ĕнтĕ, поэт хăй таланчĕ пирки иккĕленменни, хăйне «пĕртен-пĕр поэт» тени нумайăшне вĕчĕрхентернĕ, чĕрисенче кĕвĕçӳ вучахне чĕртнĕ, тĕрлĕ элек сарма сăлтав панă. Кун пирки поэт юлташĕсем патне янă çырăвĕсенче пĕрре мар асăнать: пичетре тухман сăвăсене критика статйисенче чăмлаççĕ, тапăнаççĕ тата çавăн пек хăтланни этика виçипе пăхсан чыссăр ĕç тет.

Çеçпĕл эстафетине малалла тăсма тӳр килнине, çав яваплă та сăваплă тивĕçе Хусанкай ытла та ир туйса илет: «пĕри

сӳнсен тепри ялкăшар» тет вăл. Шăнăрсене карăнтарса, сывлăш çавăрса илмелĕх те чарăнмасăр (Çеçпĕл хускатса янă ритмпа самана хистевĕ!) малалла талпăнса, поэт чи кĕске вăхăт хушшинче хамăр поэзи тӳпине вирхĕнсе çĕкленет. Тап-таса та янкăс лирика çăлкуçĕн таппи Хусанкай сăвви-поэмисенче гражданлăхăн хăватлă юхăмĕпе пĕрлешсе чăваш поэзийĕнче хальччен пулман илем тĕнчи çуратать. Чăн та, гражданлăх тенине çамрăк поэт конкретлă пулăмсемпе çыхăнтарать: чикĕсĕр анлă та ним пĕлтерĕшĕсĕр урра-патриотла лозунгсемпе витĕнмест вăл. Тĕпрен илсен, поэт гражданлăхĕ патриотизмпа, чăваш идейипе пĕр тĕвĕре. Тăван культура аталанăвĕ-чĕрĕлĕвĕ савăнтарать те, кулянтарать те ăна. Ăçта çӳренĕ чух та Хусанкай шухăш-кăмăлĕпе чăваш çĕрне, шурă Шупашкара асра тытать, тăван ялне Сиктĕрмене ĕмĕт çуначĕпе вĕçсе çитет. Поэт тăван халăха кăштах çĕклесчĕ-ха тет.

Шупашкар, Шупашкар, Шупашкар!
Тыткăна эс илетĕн мана.
Хусанкай сан чуру пулса мар —
Юрласа пурăнасшăн çунать.

Тупа тунăн илтĕнеççĕ поэтăн чунран тухакан сăмахĕсем: «Çĕр çинче юратнă эп пĕр халăх, уншăн çеç пурăнассăм ман килет». Çав хушăрах чылайăшĕ поэзи гражданлăхне риторикăлла пушă йĕркесенче, чунран мар, пыр тĕпĕнчен тухакан кăшкăруллă сăмахсенче çеç курнă. Пĕр амаран çуралнă сысна çурисем пек кĕшĕлтетнĕ вĕсем хаçат-журналта, унашкал сăвăсем поэзи хакне йӳнетни, ун миссине манса кайни ĕнтĕ ку. Çак туртăм çулсерен татах та тарăнрах тымар ярать. Поэт тивĕçне маннисене Хусанкайпа юнашар утакан Митта Ваçлейĕ вырăнлă асăрхаттарнăччĕ: «Ан ут, поэт, уксах-чăлаххăн, сан аллăнта шакăртма мар». Хусанкайăн хăйĕн те сахал мар унашкал йĕркесем: е вăл çунтарса илет сăмахпа, е йĕплет. Сăвăç ырми-канми ĕçлеттернĕ чунне, вĕреннĕ, самана сассине тăнланă.

Çирĕмри Хусанкай сăввисенче талант пиçсе çитни яр уççăн курăнать. Культурăпа интеллект тĕлĕшĕнчен те вăл ыттисенчен çӳлерех шая хăпарнă ĕнтĕ. Час-часах поэт сăввисенче творчествăн пылак та асамлă шерпетне асăнать, хăй пурнăçĕн тĕп тĕллевне те çавăнта курать. Хавхалану хавалĕ

ăна хăлат çуначĕпе ярăнтарать, сывлăша пӳлĕнтерекен çӳллĕше çĕклет, кунашкал самантра поэт хăй шайне татах та витĕртерех курать:

Ĕлĕкрех эп çĕртишĕн çунаттăм,
Паян кун хӳрӳне ак тӳле:
Сăвăра ӳссе çитнĕ çунатăм
Хăпарасшăн çӳлтен те çӳле.

Поэзи тӳпин вĕçĕ-хĕрри çук. Тăрă ăспа вĕри туйăм шайлашсан Хусанкай юратупа философи лирикин шедеврĕсем çуратать; талант Парнас çинче хăйне пĕччен туйни те пулкалать ĕнтĕ. «Шелепи шерепи» поэмăра каланă евĕр, çыракан çынсен йышĕ пысăк пулин те «Турă чуптунисем» (чăн талантсем) пӳрне хуçса шутламалăх та çук. Хусанкай хăйĕнчен те, тантăшĕсенчен те питĕ нумай ыйтать, ытларахăшĕ çав виçене тивĕçтереймест. Пĕр шухăш-кăмăллă тусcем те çук мар поэтăн, анчах сахал. Тунсăх туйăмĕ каснă самантра Ваçанккапа сăвăласа пуплет вăл: «Санпа ялан ман чунăм урăх, пĕлместĕп хам та мĕншĕнне». Тус-юлташа чун суйлать-çке-ха: теприн, тен, талант çукрах, апла пулин те сывăх вăл сана. Элкере чĕрипе шанать Хусанкай, çывăх картать, çырупа сас парайманшăн ӳкĕнсе каçару ыйтать вăл хăйĕнчен аслăрах сăвăçран:

Юрататăн эс тăван уя.
Атăла чунна памашкăн хатĕр.
Пуклак пуçлă тупăлха туя
Час-часах сана ертсе тухать-тĕр.
Эс çӳретĕн пулĕ пĕр-пĕччен, —
Тăнăçра ӳсет çав пысăк шухăш.
Каçпала, пĕр авăк тĕттĕмччен,
Пур юмах та, пурăнăç та хутăш.
Вак ĕшнеллĕ лăпкă вăрмана
Эс кĕретĕн уйăх хăпарсассăн.
Вăрман урлă алă пар мана, —
Уçăрах янратăр манăн сассăм!

Ăнсăртран мар Хусанкай каярахпа «элкер» — ушкăн çăлтăрăн асли пулать тесе ăнлантарнăччĕ. Элкер уншăн яланах асли шутланнă. Çавăн пекех Митта Ваçлейне пĕрре мар сума суса асăнать Хусанкай: тусĕн хулпуççине туйса тăнă вăл поэзин тумхахлă çулĕ çинче. Тăрăлса тасалнă пысăк культура шайĕнчи хутшăнăва тунсăхлакан-тĕмсĕлекен Хусанкай Илле Тăхтие пуç тайса хисепленĕ, каярахпа хитре

те тарăн шухăшлă сăвăсем халаллană. Кун-çулĕ кĕске пулнă Тăхтин, анчах та акă епле яр çутă, скульптура кĕлетки пек курăмлă ун сăнарĕ Хусанкай асĕнче:

Ун çӳллĕ çут çамки ăспа çиçетчĕ,
Вылятчĕ шӳт ун типĕ куçĕнче,
Анчах туяттăм: çын çав тер пĕччен!
Алла ик аллипе тытса силлетчĕ.

Е тата асаилӳре Тăхти ăсталăхне мĕн тери çӳллĕ шайпа картать вăл: «Тепĕр хут вуларăм та сăввине («Чăваш поэтсене». Мухтав юрри. — *Ю.А.*) — вутăн-хĕмĕн çиçсе тăракан тăван чĕлхене сăвăç мĕн тери авкалама пĕлни, сăмах хуçи пулни çĕнĕрен тĕлĕнтерсе ячĕ». Шутсăр тиркевлĕ Хусанкайăн кунашкал хакне пысăк ăста çеç тивĕçме пултарнă.

Пĕчченлĕх туйăмĕ яланах вăл ыттисенчен çӳлерех çĕкленнĕ кĕрнеклĕ талант шăпи. Тепĕр тесен, кунта сăмах çырас ăсталăх пирки çеç пымасть, тен, ытларах — культура, чун çӳллĕшĕ пирки. Культура тени вара универсаллă пĕлтерĕшлĕ япала, поэзи культури те, йăла-йĕркери тасалăх-тирпейлĕх те тата ытти те пĕр кĕвĕпе тĕвĕленнĕ унта. Çак енчен пăхсан та Хусанкайран вĕренмелли çав тери нумай пирĕн. Чăн та, Митта Ваçлейĕ каларăшле, «шухă пулнă, шухăшсăр çӳренĕ» евĕрлĕ ӳсĕм чирĕ те лекмен мар Хусанкая. Туссемпе кĕрекере пухăнса шăкăл-шăкăл пупленĕ чух çирĕмри Хусанкай пурнăç çине поэт куçĕпе пăхать, чунне йӳле яма та, хавасланма та пĕлет.

Тултар-ха, тусăмçăм, тултар,
Тултар, Шаланкăм, янкăс лирик!
Тĕнче илемсĕрех те мар, —
Сăвву кăна шăрантăр ирĕк.

Сăмах май, Шаланкă сăвăç (Ваçанкка Микихверĕ) çинчен хамăрăн ватă çыравçăсем пуç тайса калаçнисем манăн асăмра юлнă. Пулнă-и, пулман-и ун пекки, Мускаври площадьре Маяковскипе ура тапса ăмăртса сăвă-такмак каланă тетчĕç. Тен, çавăнпах Хусанкай та Шаланкă таланчĕн çуначĕсем сарăласса шансах тăнă.

Çапах та богемăлла кăмăл-туйăмне Хусанкай часах çăварлăхлама пултарнă. Ку темăпа Омар Хайям тата ытти Тухăç поэчĕсен витĕмĕпе ăнлантарни çителĕксĕр пулĕччĕ. Чăн та, Тухăç поэзийĕн культурине Хусанкай мĕн виличченех

тĕпченĕ, ăша илнĕ. Иçĕм çырли эрехĕ, сăра, сим пыл — хамăр пурнăçăн кулленхи шалти, килти енĕсемпе çыхăннă. Хăна-вĕрле пухса хăналасси, тус-тăванпа хутшăнасси йăлара пулнă. Хусанкай ĕçкĕ-çикĕпе кĕреке культурине мĕн çĕре кĕричченех шутсăр чыслă шайра тытса пынă. Шел пулин те, ку вăл — хамăр литература кулленлĕхĕнче (анлăрах илсен, ял-хула пурнăçĕнче те) юлашки вун-вун çул хушши хирĕçле туртăм-пулăмсемпе палăрса тăчĕ. Хăйне майлă «философие» тӳрре кăларма пăхакансем асамлă шĕвекпе творчество лаççине хĕмлĕнрех çунтарма пулать тесе ĕнентеретчĕç. Мĕн пытармалли, пысăк ят илнĕ поэтсем çине тĕллесе кăтартатчĕç ун пек чух. Литературăмăр таврашĕнчи çак тӳнтерлĕхсем çинчен вара халăхра тем тĕрлĕ сас-хура та сарăлнăччĕ. Шӳтле сăмах, анекдотсем çӳретчĕç. «Упăшка кашни кун ĕçрен ӳсĕр таврăнма пуçларĕ, часах писателе тухать-ши ĕнтĕ». Ку — урамра, подъездра пухăнса ларнă хĕрарăмсем хушшинче çуралнă сăмах. Апла мар çав, творчество ĕçĕнче уйрăмах урă пуçпа тăрă ăс кирлĕ. Çакна Хусанкай хăй çырнисенче астутаратчĕ, хăйне тыткаланипе, çынпа хутшăннă чух вăл чыс кодексне тирпейлĕ упранă, тĕслĕх пулнă.

Тепĕр йышшисем вара «вăкăр сĕчĕн» диети çине куçса писатель миссине манса кайрĕç. Союз членĕсем пулса юлчĕç. Кунашкал чир ытти халăхсен литературинче те тымар янă пулнă-мĕн. Акă Тимур Зульфикаров мĕн çырать кун пирки: «Арăмусене пĕрин хыççăн тепĕрне пăрах, ют çĕршывсем тăрăх ярăнса çӳре, эрехе пехле, халăх çинче скандалсем ту — вара пурте сан çине пуç тайса пăхĕç. «Ах, мĕн тери пысăк художник! Пысăк поэт!» (Литературная газета. 1989. Чӳкĕн 20-мĕшĕ). Куратăр-и, кунта пач тепĕр тĕслĕ кодекс.

Çирĕмри Хусанкай Есенин чирĕпе чирлесе ирттерет. Анчах та критиксем çак пулăма тĕрĕс ăнланса илме те, хаклама та пултарайман. «Хусанкай Есенин поэзине ĕмет» тенинчен иртеймеççĕ. Есенин, Маяковский, Блок, Фет, Полонский — кашни хăйне майлă чăваш сăвăçне хăй сассине тупма, çулне шырама пулăшаççĕ. Сăввисенче те Хусанкай пытармасăр «ухмаха еретĕп пулĕ Есенинпала» тет. Вырăс поэчĕн ритмикипе интонацийĕ Хусанкай урлă чăваш лирикине сăрхăнса кĕрсе ăна сĕткенлĕрех, çепĕç туйăмлăрах, ачашрах та тунсăхлăрах çемĕпе пуянлатнă. Ан тив, хăш-пĕр

сăвăсем («Анне çырăвĕ», «Ответ», «Çĕрме пуянăн йыттине», хăш-пĕр ярăмсем таранах) тематикипе те, кĕвви-çеммипе те уççăнах вырăс поэчĕн витĕмне пăхăнса çырăннă пулччăр. Анчах та вăл сăвăсем Хусанкая çулне шырама, хăй аллине çирĕплетме пулăшнă. Уйрăмах интимлă, «таса» лирика кĕвви-çемми тыткăнланă Хусанкая Есенин поэзийĕнче. Унра вăл чун кăткăслăхне уçса палăртмалли майсем шырать. Калас пулать, Есенин орбити таран çĕкленме пултарнă тăк, чăваш поэчĕн хăвачĕ хăйĕн те пысăк пулнă эппин. Çапла Хусанкай поэзи тӳпине çĕкленсе пынă.

«Çырнисен пуххине» пухса хатĕрлекен В. Чекушкин I томăн тытăмне вырнаçуллă йĕркеленĕ темелле, тухса пынă кĕнекесен хронологине тытса пынă. «Çурхи октавăсем» (вунă çавра) 20-мĕш çулсенче çырнă сăвăсене тăрăлаççĕ. Вĕсенче Хусанкай чăваш поэзийĕн тĕп çулĕ — Çеçпĕл çулĕ тет, совет саманинчи поэтсене илес пулсан унран пысăкки çук тет. Çавăнпа та пирвайхи куркине вăл революци юрăçишĕн çĕклет. Иккĕмĕш курка — Элкере. Хăй ятне Хусанкай виççĕмĕш вырăна картать. Октавăсенче хамăр поэзин малаш çулне палăртнă. «Çурхи октавăсене» вуланă май эпир Ухсайăн «Кĕрхи октависене» аса илмесĕр пултараймастпăрах. Чăн та, кĕр мăнтăрне мухтакан сăвăсем тулли тĕшĕллĕрех: Слакпуç чăвашĕ Сиктĕрме чăвашĕпе пуçа ухса, ура тапса «ăмăртнăн» туйăнать. Тинтерех çеç чăваш çĕрне килнĕскер, вăл хăй çинчен вирлĕн те витĕмлĕн пĕлтересшĕн пек; çав вăхăтрах «октависене» 1928 çултах çырнă Хусанкай унашкал поэт çĕр çинче пуррине пĕлмен те-ха. Вĕсен чăн-чăн «ăмăртăвĕ» каярахпа пуçланать: икĕ поэт пĕр-пĕрне туйса тăни (юнашар сукмакпа чупакана ĕмĕлки е сывлăш чĕтренни тăрăх сиссе пынăн) шырав çулĕ çинче харпăр хăй сассине тупма, çапла майпа тăван поэзие çӳлтен çӳле çĕклесе пыма май панă. «Кĕрхи октавăсенче» Ухсай хура тăпра философийĕн тутă тĕшшисене ывçи-ывçипе сапать, вĕсем çул пуçламăшĕ шанчăклă пулнине ĕнентернĕ. Хусанкай вара хăй поэзийĕн философилле сĕткенне ытларах культурăран сăрăхтарса илнĕ, интеллигентлăх çинче никĕсленĕ. Энциклопедилле анлăх, Анăçпа Тухăç поэзине шĕкĕлчесе ăша илни, тĕнче касни, кунсăр пуçне вышкайсăр пысăк талант çăлкуçĕ — çаксем пурте поэзин пĕрпĕтĕмĕшлĕх тĕнчине шăранса кĕреççĕ. Тен, Ницше шухăшĕпе усă курса каласан,

пирĕн поэзире Аполлонпа Дионисăн икĕ тĕрлĕ çул-йĕрĕ çине туртăннă пулăмсем вĕсем — пирĕн сăвăçсем иккĕш те. Ницше авалхи грексен культурине пĕтĕм аталану çак икĕ турă тытăçăвĕ-кĕрешĕвĕ урлă пулса пынă тет. Аполлон хĕвел шевли пек çĕмренĕсемпе чĕресене тивретнĕ, пластикăлла формăна, гармоние кăмăлланă пулсан, Дионис туррăн çамки юнпа пĕвеннĕ, творчествăлла экстаз самантĕнче вăл чарусăр хăтланать, орги, эрех ун пурнăçне тĕректĕллев парса тăраççĕ. Ницше ĕнентернĕ тăрăх, гармони поэчĕ Гомер (аполлонçă) трагеди сцени тăрăх вирхĕнсе çӳрекен ӳсĕр Архилох (дионисçă) çине тĕлĕннипе хытса кайса пăхса тăрать. Паллах, ку манăн субъективлă ассоциаци те пулма пултарать. Хусанкайçăсемпе ухсайçăсенчен кашниех паян та, малашне те харпăр хăй «кумирне» пуç тайĕç, тавлашусăр та пулмĕ, анчах та поэзи асамĕ çавнашкал вăл: кам чунне мĕнле туртăм тыткăнлать, кам кама кăмăллать. Тата вăхăт алин чарăнми ĕçне те манма юрамĕ — юлашки татăклă сăмах унра.

30-мĕш çулсенче Хусанкай кĕнекисем çине-çинех тухаççĕ. Вăл шутра: «Сăвăсемпе поэмăсем» (1931), «Сулмак» (1934 тата 1935 çç.). Çак кĕнекесенчен илсе «Суйласа илнисене» кĕртнĕ ярăмсем Хусанкай поэзийĕн чи çӳлти шайне палăртаймаççĕ тесшĕн эп. Кунта ĕнтĕ чăн малтан вĕсене хăш çулсенче çырнине асран вĕçертме юрамастех. Чылай чухне сăвăсен ятĕнченех вĕсен тĕшши палăрать: «Автономи маршĕ», «Итле, Германи», «Пул примерлă ленинçă», «Канаш» колхоз» т. ыт. те. «Сулмак» кĕнекерен илнĕ ярăмсем пирки те çавнах каламалла. Вĕсем ытларах çак самантлăх хистевĕпе çуралнă. Хусанкай çĕршыври тата чикĕ леш енчи лару-тăрăва сăнасах пынă, вĕсем пирки çийĕнчех сас панă, халăх патне çитернĕ. Очерк туртăмĕ уççăнах палăрать вĕсенче.

«Çулсем-йĕрсем» ярăмра — 1930—1940 çулсенче çырнă сăвăсем. Кунта пулса çитнĕ поэзи тĕслĕхĕсемпе юнашар тематикăлла сăвăсем те сахал мар. Юлашки ушкăнрисем хăйсен актуаллăхĕпе палăрса тăраççĕ. Анчах та талант çăлкуçĕ пурпĕр тапать, Хусанкай тус-юлташĕсем патне «Уçă çырусем» сăвăласа яма кăмăллать, вĕсемшĕн чун ăшши те, кăмăла çĕклекен сăмахсем те тупать. «Çыру» сăвăра Хусанкай лирикин геройĕ юлташне хуравлать. Лешĕн чунĕ «ук-

сахлама» пуçланă иккен. «Епле намăс мар-ха, амаçури пек, писме пуçилех сарлака Атăлтан?» Этем таçти хулара ăшă вырăн тупса тĕпленнĕ курăнать. Тахçан чăвашлăх туйăмĕ те пулнă унăн, анчах ăна халь Шупашкар та, тăван халăхĕ те, тус-юлташĕсем те кирлĕ мар: уншăн тĕнче тикĕс. Паллах, Хусанкайăн та чунĕ ыратнă: шĕкĕр хуламăр сăн-сăпачĕ çăпа-тапа чăпталăхран ерипен тасалса пырать, халăхăмăр ытлашши чăтăмлă, такамран та йăвашрах. Пĕр сăмахпа, çĕрĕмĕршывăмăр Çеçпĕл чанĕпе те вăранса çитеймест.

Мĕн чухлĕ тискерлĕх, мĕн чухлĕ суялăх,
Мĕк чухлĕ айванлăх
(Ан ил йывăра)
Паян тата манăн сана, чăтăм халăх,
«Ыйху тутлă пултăр» теес-ши вара?

Çук пулĕ, халăх куçне уçасси — поэт тивĕçĕ. «Сана эпĕ сиплĕ вĕлтрен пек вĕтелĕп», — тет лирика геройĕ.

1933 çулта çырнă «Пушкин патĕнче» сăвă пичетленнĕ хыççăн нумай калаçтарнă. Кели Кĕркурийĕ ку темăпа Хусанкая пародилесе те илнĕччĕ маларах. Чăваш сăвăçи вырăс генийĕ умĕнче пуç таять, çав вăхăтрах — кăшт дистанци тытам пекки те тăвать (класлăх туйăмĕ): Переверзев теорийĕн витĕмĕ. Пушкин урăх класран (дворянин) тухнă-çкеха, Хусанкай «камин», «пунш» йышши улпут пурнăçĕн паллисене сивлет. Вăл — пролетари, çавăнпа та сахалпа çырлахать. Кунта ĕнтĕ идеологи амакĕ Хусанкай шухăш-кăмăлне, тĕрĕсрех тавракурăмне, хĕсĕрлени тӳрех курăнать. Ку чир те поэтăн вăраха пымасть. «Çулсем-йĕрсем» ярăмри хитре сăвăсен шутне «Кĕрхи кĕреке», «Аннене», «Çыру», «Нарспи çĕршывĕнче» (пĕчĕк ярăм), «Савăш курки», «Тăхти», «Элек» тата чылай сăвва кĕртме пулать. Çак ярăмрах тепĕр сăвăлла очерк — Юман Мĕтрийĕ патне янă «Уççыру» пур. Литература тавращĕнчи пурнăçа, пĕтĕмĕшле сывлăша палăртакан сăнав-ӳкерчĕксенчен йĕркеленĕ очерк тытăмĕ. Икĕ литератор хушшинчи калаçу ĕнтĕ ку. Ман шутпа, кăна хамăр поэзин Хусанкай пуçласа кĕртнĕ жанр форми темелле. Çамрăк сăвăç Юман камне витĕр пĕлет, çавăнпа та тайма пуçа тивĕçлĕ, пысăк культурăллă чăваш интеллигенчĕ патне çырать «çырăвне». Ăна та канлĕх паман-çке вĕтĕ чунлă чăваш «паттăрĕсем» тата идеологи «тасалăхне» упракансем. «Вак буржуалла поэт», «националист» тенĕ ярлăксене ик-

кĕшĕн çумне те çакма ĕлкĕрнĕ пулнă-çке. Апла тăк пĕрешкел идея платформи çинче вĕсем. Поэзире хăйне хуçа пек туякан Хусанкай, вăйне ниçта хурайманран, кăштах выляса илес кăмăллă, критикĕсем те ав «чăр-р-чăр-р та шимпшимп», «мĕнле ăман паран çавна хыпаççĕ». Вăйăран вăкăр тухать тенине пăхмасăрах Хусанкай харсăрланса илет. Ку вара вăкăра хĕрлĕ пусма татăкĕ кăтартниех пулнă: хайхи сыхлавçăсем каллех сыхă пулма йыхăраççĕ — класс тăшманĕсем чăмăртанаççĕ имĕш.

«Савни» ярăмра та шăранса тухнă таса лирика тĕслĕхĕсем нумай. 20-мĕш çулсенче çырнă сăвăсем ачалăх, яшлăх, туслăхпа юрату темине тарăн уçса кăтартма пултарнипе пĕлтерĕшлĕ. Тăван ялне кăштахлăха курма килнĕ лирика геройĕ тавралăх илемĕпе киленет. Пĕчĕк çырма урлă хывнă йывăç кĕпере, Сиктĕрмен шерпет пек çăлкуçĕсене тунсăхланă вăл. Ачалăх сăпки, çĕр сĕткенĕ, илемлĕн ешерекен йывăç-курăк, вată йăмра — пурте вăй-хал параççĕ ăна, чунне сиплеççĕ.

Кĕпер урлă каçрăм та — çаран,
Ĕрĕхессĕм килчĕ ман çарран.

«Савни» ярăм пĕтĕмпех çамрăк сывлăшпа сывлать. Яш çыннăн кăмăл хусканăвĕсем, ун чĕрине тунсăх каснă е вĕри туйăм капланнă самантра куратпăр эпир героя. Чун тĕпĕнчен шăранса тухнă сăвăсенче ирхи сывлăм уçăлăхĕпе тасалăхĕ пур. Лирика çăлкуçĕ тăрăлса çитнĕ, тӳлеккĕн те лăпкăн шăнкăртатса юхать. Лирика геройĕ хĕрхӳ кăмăлпа ачалăхне аса илет, пурнăç çулĕн пуçламăшĕнче «кашни пăртак Сетнерччĕ, кашни пăртак Нарспиччĕ эпĕр» тет. Акă пĕрремĕш юрату асапĕпе телейĕ:

Эп — чухăн çын ачи, юратнă
Хăюсăр, вăрттăн та салхуллăн.
Мĕн чухлĕ шанчăк эп çухатнă,
Мĕнле кăмăлăмсем ман юлнă!
Мĕн чухлĕ мĕскĕнленнĕ ахăр
Хавхаланан вĕри чунпа эп,
Ăшра хыпăнтарсан пăлхавăр
Поэзин çăп-çăмăл çункавĕ!
Тасаччĕ ĕмĕт, шухăш çӳллĕ...
Кун-çул пурне те ӳпĕнтерчĕ:
Юратуран асилĕм юлĕ,
Чĕр сисĕмрен — шупка ӳкерчĕк...

Кунта ёнтӗ пурте пӗрле: иккӗленни те, чӗрене «тӑвар» ларса юлни те, тепри хӑйне ӑнланасса шанни т.ыт.те. Ҫапах та творчество вучахӗнче пурте шӑранать: тӳсни те, ҫухату та, тӗлпулусемпе ҫулсем те. Сӑвӑ йӗркисене вӗсем ылтӑн хакпа кӗреҫҫӗ.

Паллах, кӗнекери «Тилли юррисем» ярӑм ҫинче чарӑнса тӑмасӑр юрамасть. Ку вӑл — Хусанкай поэзийӗн тӳпи, чи ҫӳлти шайӗ. Поэт хӑй палӑртнӑ тӑрӑх, ҫак ярӑма 1933—1940 ҫулсенче ҫырнӑ. «Тилли юррисене» халӑх юррисемпе усӑ курса ҫырнине хӑй вӑхӑтӗнче М. Сироткинах палӑртнӑччӗ. Сӑмахӗ ку чӑнах та тӗрӗс. Калӑпӑр, ҫакна ҫирӗплетсе паракан материалсем Чӑваш патшалӑх гуманитари ӑслӑлӑхӗсен институчӗн архивӗнче те сахал мар. Унта Н. Шелепи пуҫтарнӑ юрӑсен тетрачӗ пур, «Эп юрланӑ юрӑсем» ят панӑ ӑна ватӑ сӑвӑҫ. Ҫак тетрадьри чылай юрӑ чӑнах та «Тилли юррисемпе» пӗр кӗвӗ-ҫемӗллӗ. Лирика геройӗ те Тилли евӗрлӗскерех. Анчах ку ҫапах та тулашри пӗрпеклӗх. «Тилли юррисенче» Хусанкай чӑваш пурнӑҫне энциклопедилле куҫкурӑмпа сӑнланӑ, халӑх ӑс-хакӑлӗн вӗҫӗ-хӗррисӗрлӗхӗпе мӑнаҫланса ӑсталанӑ. Ҫак анлӑх вӑл халӑх характерне тарӑн уҫса паракан Тилли чун-кӑмӑлӗнче палӑрать. Ҫавӑнпа та ярӑмра чи пӗлтерӗшли пайӑрлӑхпа конкретлӑх мар, Тилли биографине тӗпчени те пире нимӗнех те параймӗ. Автор хӑш-пӗр «анкета паллисене» асӑнкалать пулин те. Кунта пӗтӗмлетӳ сулмаклӑхӗпе тарӑнӑшне пула конкретлӑ вӑхӑт паллисем (социаллӑх) тӗтреленсе хӑйсен уҫӑмлӑхне ҫухатаҫҫӗ тейӗн. Тилли шухӑшлавӗнче, вӑл пурнӑҫра, тӗнчепе ҫут ҫанталӑк йӗркисене мӗнле хакланинче пӗтӗмпех халӑхӑн пин ҫулхи ӑсӗ, философийӗ. Халӑх юрри-сӑввисенчен шӗкӗлчесе илнӗ культура пуянлӑхӗ ҫине таянса Хусанкай тата тепӗр ҫӳллӗшри шая ҫӗкленме мехел ҫитернӗ. Тилли вӑл Сократ йышши шухӑшлавҫӑ, тарӑн философ, анчах — чӑн чӑваш. Кирек кам пекех яшлӑхра яш пулнӑ вӑл — хӗрсен пуҫне ҫавӑрнӑ («кӑчӑк туртмассерен пӗр хӗрччӗ!»), ватӑсемпе те сӑмах тупма пултарнӑ. Анчах та шухӑ та сатур каччӑ чысне куҫ пек упрать, тӑван-пӗтене сума сӑвать, ял-йыша хисеплет. Пурнӑҫ ҫине ҫырлахуллӑ куҫпа пӑхаканшӑн уйӑх ҫутипе хӗвел ӑшши, ҫӗр ҫаврӑннӑ май кунпа ҫӗр улшӑнни, тар юхтарса ӗҫленӗ хыҫҫӑн кӗр мӑнтӑрӗн ырлӑхне кӗтсе илесси, туй туса мӑшӑрланасси, сӑпкари ачана сиктересси —

пĕтĕмпех аслă çут çанталăк (е Турă) пӳрнĕ телей парнисем вĕсем. Мĕнле классем хуçаланнă вăхăтра пурăннă-ши Тилли, феодализмра е капитализм саманинче-ши? Çапла шухăшлама хăнăхтарнă пире шкулта историе вĕрентекенсем. Тилли кун-çулне пăхсан, яш ĕмĕр, чун-чĕре чечек пек çурăлнă тапхăр ăна ытарайми илемĕпе илĕртет, çупăрлать (вăл иккĕ килмест-çке-ха), чунĕ сисĕмлĕ, хевти те çителĕклĕ этемĕн. Ар çулĕнче, мăшăрланса ача-пăчаллă пулсан, ура çине ĕне пуссан каллех пурнăçăн хăйĕн илемĕ-астарăвĕ çук мар. Ватлăхра Тилли тĕнче тути-масине пĕлсе çитнĕ çын, мĕскĕн мар, тĕнче тытма ĕмĕтленмест. Ăслă та чее ватă, хăйне мăнна хумасть вăл. Сократ эп хам нимĕн те пĕлменнине çеç пĕлетĕп тенешкел, Тилли çапла калать сăпайлăн:

Ку тарана çитсе, ватта супса,
Ним пиллеме, туссем, ман çук сире.

Пурнăç йĕркисене уççăн тиркеме хăрамалла, Тилли тĕрĕсмарлăха та нумай тутаннă хăй кун-çулĕнче:

Ан хуйхăрсамччĕ, пуçăм, ан йĕр, куçăм,
Çуралнисем те кăлăх-çке тесе.

Ахальтен мар Библире пысăк чăнлăха пĕлекен этем пысăк хуйхăпа туслашать тенĕ.

Пĕр Турă çеç йăнăшмасть нихçан та теççĕ. Кăткăс та хивре пурнăçăн кăра çилĕсем Хусанкая та шеллемен, кун-çул утти йăнăшсăр та, çухатусемсĕр те пулман паллах. Нимĕн те тумасăр ларакан этем кăна йăнăшмасть-тĕр теççĕ тата. Анчах та творчество шыравĕнче йăнăш та усăллă пулма тивĕçлĕ. Ман шутпа, каярахпа, 60-мĕш çулсенче, Хусанкай ак çак йĕркесене утса тухнă çула тишкерсе, пĕтĕмлетӳллĕ хак парса çырнă:

Çапах та купăсăм кун-çулĕ
Итлекене ахаль пухман.
Тен, йăнăш сас та тухнă пулĕ,
Анчах та урмăш сас — тухман!

Поэтăн пирвайхи томĕпе тĕплĕ паллашсан çакна асăрхатăн. 20-мĕш çулсенче Хусанкай поэзи тĕшшине тата поэт пĕлтерĕшĕпе пурнăçри вырăнне чунри чĕрĕ туйăмсен еккипе шыранă, ăнланнă. Поэт ытларах таса лирика енне туртăнни вăл чăн та малтан яшлăхран килнĕ-ха, вăл ӳсĕмре

пурте чĕре хĕлĕхĕсене юрату кĕввипе ĕнереççĕ. Юрату вăл — чунпа чун калаçăвĕ, çутă тунсăх, тĕмсĕлсе кĕтни... Поэт юррине муза пăшăлтатнине тăнласа кĕвĕлет. Ăс-тăн вара çулланнăçемĕн хăйне пăхăнтарма, туйма, çăварлăхлама пуçлать. Сăмахран, вăрçă вăхăтĕнче е ун хыççăнхи çулсенче Хусанкайăн илемлĕ литература аталанăвĕнчи тата общество пурнăçĕнчи ĕçĕ-хĕлĕн пĕлтерĕшĕпе тӳпи нумай ӳсет. Анчах та акă мĕн куçа курăнать: вăл ытларах гражданла тема енне туртăнать, поэзи вăйĕпе пурнăç юхăмне витĕм пама тăрăшать, чăваш çыннин ăс-кăмăлĕпе шайне ӳстерме хыпăнать, чăвашпа ытти культурăсем хушшинчи çыхăнăва аталантарать. Куçару ĕçĕпе ĕçлени те нумай вăхăт илет. Хусанкай ют çĕршывсем тăрăх чăваш «элчи» пулса час-час çӳрет. Тĕпрен илсен, халь ĕнтĕ эпир ăна просветитель пек куратпăр. «Уçă çырусен» каялла таврăнми тапхăрĕ çине, тен, халь вăл хĕрхӳ кăмăл-туйăмпа пăхать, кăштах шеллесе аса илет. Кун пек калани Хусанкай пĕлтерĕшне ним чухлĕ те чакармасть. Ăсталăхĕ те ун ĕлĕкхиллех тĕлĕнтерет. Юлашки çулсенчи Хусанкай пултарулăхĕ çырана кĕрсе вырнаçнă, мăнаçлăн та лăпкăн сарăлса юхакан юхан шыва аса илтерет. Кулленхи хутшăнусенче те, çырас ĕçре те поэт «праснана пăсма» пăрахнă ĕнтĕ — йăрана тӳрĕ тытса пырать.

Чăваш чĕлхипе культурин пуласлăхĕ эпир паян Хусанкай халалĕпе урокĕсене мĕн тери ăша илме ăс, вăй-хал çитерниНчен нумай килет, çавăнпа та поэт çырнисен ултă томлăхĕ вулакансемшĕн паха парне пуласси иккĕлентермест. Кашни чăваш Хусанкай пĕлтерĕшне чунĕпе те, ăсхакăлĕпе те ăнланса илтĕр. Хамăр наци идейине уçăмлă пĕлтерĕшпе çĕнĕ хăват вĕрсе кĕртсе çунат хушнă сăвăç гражданин умĕнче эпир ĕмĕр пуç тайма тивĕçлĕ.

*1997, 2009*

## «МАН ТĔЛТЕН ÇАНТАЛĂК ÇУРМА ÇУТĂ»

1937 çулăн кăра çилĕсем вĕрме тытăнман-ха, çирĕмри Хусанкай çакăн пек йĕркесем çырать:

Малалла-ха пурнăç, малалла,
Ман тĕлтен çанталăк çурма çутă.
Ман пурне те, ахăр, курмалла:
Кӳлешӳ те пулĕ, çураçу та...

Малалла-ха, пурнăç, малалла,
Ман тĕлтен çанталăк çурма çутă,
Илĕм-тилĕм ир пек çамрăк эп.
Шуррине хурисĕр курма çук-тăр,
Пылакки йӳççисĕр çук, пĕлеп.
Ман тĕлтен çанталăк çурма çутă.

Хăй çине калама çук йывăр çĕклем тиенĕ талант кунçулĕ çăмăл пулмассине чĕрипе сиснĕ тейĕн. Чăннипех те инкеклĕ, хăрушă кунĕсем поэтăн 1938 çулта çитеççĕ: ăна контрреволюцилле ушкăнра тăрать тесе тытса хупаççĕ. Аса илер-ха, калăпăр, Н. Гумилевăн трагедиллĕ шăпине: поэт нимĕнле контрреволюцилле кавара та хутшăнман, ăна çавăн çинчен пĕлнĕ, анчах та влаçсене систермен тесе айăпласа персе пăрахаççĕ.

Унтанпа ĕнтĕ чылай вăхăт иртрĕ, самана та палламалла мар улшăнчĕ. Эпир вара тин-халĕ пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕн çав хăрушă кунсем витĕннĕ чаршава сирсе ним айăпсăр шар курнă çынсен шăпипе кун-çулне тарăнрах ăнланса илме тăрăшатпăр. Анчах пысăк чăнлăх пайĕ паян та пире айсберг тăрри пек çеç курăнать-ха, вунă пайĕнчен тăххăрăшĕ вара ку таранччен çын куçĕнчен пытарса усракан документсемпе архив материалĕсенче. НКВДăн суккăр путвалĕсенче тискер ĕçсем тунă çынсен «мăнукĕсем» паян çавсен йĕрĕсене йĕрлесе тупма, çутă çине илсе тухма парасшăн мар. Плащпа кинжал рыцарĕсем хăйсен юнлă аллисене шывпа чӳхенипех тасалаççĕ тесе шутлама хăнăхнă.

Пирĕн публицистсене, литература ĕçченĕсене илес пулсан вĕсен тивĕçĕ çак ĕçре калама çук пысăк; эпĕ ним айăп çукранах чыс-хисепрен кăларнă, ячĕсене хуратнă çынсен шăпи пирки калатăп. Тен, чăнах та çырма кирлĕ мар çав тапхăрти чуна çӳçентерекен ĕçсем çинчен?! Çыннисем те ĕнтĕ пурнăçран кайса пĕтнĕпе пĕрех — Турри хăй пултăр вĕсем тĕлĕшпе тӳре. Çук çав, трагеди тăвăлĕсем, Аристотель каларăшле, этем чунне тĕпĕ-йĕрĕпе хускатса тасатма (катарсис) тивĕçлĕ. Çапла пултăр тесен çав пăшаллă хуралсем сыхлакан материалсене, архив тусанне сирсе çутă çине илсе тухас пулать.

Чаршав уçăлать, анчах спектаклĕ куракан валли мар.

Акă пирĕн алăра çавнашкал документсенчен пĕри. Чăваш халăх поэтне Петр Петрович Хусанкая 1938 çулта тытса хупнă терĕмĕр çӳлерех. Тепĕр çулхине çурла уйăхĕнче ун

ĕçне Чăваш АССР Аслă сучĕн ларăвĕнче пăхса тухаççĕ. Вырăсла япăх пĕлекен секретарь типĕ чĕлхепе çырса пынă протоколра тĕлĕнмелле пуян драматургин чĕрĕ сывлăшпа сывлакан материалĕ сыхланса юлнă. Пирĕн умра хатĕр «пьеса», трагедилле лару-тăру (чăн малтан Хусанкайшăн, паллах) куçа курăнман режиссерсем йĕркеленĕ фарсăн никĕсĕ пулса тăрать темелле. «Вылякан актерĕсем» те, «пьеса» интриги те халь тесен халь сцена çине кăларма меллĕ те вырăнлăскерсем. Персонажсен «прототипĕсем» пурте хамăр культура историне çырăнса юлнă ятсем. Сартр е Брехт кирлĕччĕ кунта.

Мĕнле преступлени тунă-ха Хусанкай çав териех РСФСР Уголовлă кодексăн 1-мĕш пайĕнчи 58-мĕш статьян 10-мĕш пункчĕ тăрăх айăпланма тивĕçлĕ пулсан? Нимле уголовлă преступлени те туман сăвăç. «Айăпĕ» ун, чăн малтан, ытти сенчен талантлăрах, çӳллĕрех пулнинче; вăл хăйĕн хăватлă поэзийĕпе пултарусăрсен чĕрисенче кĕвĕçӳ туйăмне чĕртсе янă. Ку пĕрре. Иккĕмĕшĕнчен, çамрăк Хусанкай хăйне пăхăнтарма, «кĕтӳ такăрлатнă» çул çине çавăрма пăхакан идеологсемпе парти ертӳçисене хисеплесе вĕсен умĕнче пуç тайман. Поэтшăн чăн-чăн ăс-хакăл хуçи е, хăй каларăшле, «чăваш ăс-пуçне çĕнĕлле çĕклекенĕ» — Константин Иванов. Çавăн пек хăватлă талант умĕнче пуç тайма хавас та, хатĕр те вăл. Çапла вара çакнашкал чарусăр пăхăнманлăх, ирĕклĕх туйăмĕ пултарулăх пурнăçĕн тавралăхне-чиккине хĕсме пуçлать. Поэт-гражданин, поэт-патриот ячĕ тавра вунă çула яхăн çине тăрсах элек танати карнă пулнă ĕнтĕ. Установка парса çыракан И. Кузнецов «тишкерӳçе, историка, культпропа» поэт литература кĕтӳçипе танлаштарать. Хăй вара вăл — кĕтӳçĕсĕр («аташнă») сурăх, официаллă кĕтӳçĕ кĕтĕвĕнче мар! Сăмах май, 1936 çулта çырнă «Шелепи шерепи» поэмăра, шӳтлесе те йĕплесе тенĕ пек, Хусанкай пĕтĕм чăваш литературинчи лару-тăрăва кĕскен, çав вăхăтрах тĕлĕнмелле тарăннăн та пур енлĕн хак парать. Ăна хăйне майлă критика жанрĕн тĕсĕ теме пулать.

1930-мĕш çулсенче идеологи хĕсĕрлевне пула çыракан çынсем хушшинче тĕрлĕ ушкăнсемпе юхăмсем «пайăрланаççĕ». Чăмăртанса пĕр аслă йыша пĕрлештерес вырăнне официозла критиксем вĕсем хушшинче кĕрешӳ-тытăçу вучахне чĕртсе яма, хĕмлентерсе çунтарма ĕмĕтленеççĕ тата

çине тăрсах вăй хураççĕ. Хусанкай вара пĕртен-пĕр хĕç-пăшалĕпе — сăмах вăй-хăвачĕпе — тухнă пулнă çав кĕрешӳ уйхирне: «чăвашпа пĕрле эп хĕпĕртетĕп, хурлансан та — чăвашпа пĕрле». Çамрăк сăвăç пурнăç пăрăнăçĕсемпе чăрмавĕсене ирĕклĕ ăмăртура çĕнтерессе шаннă. Дон Кихотăнни пек таса та хӳтлĕхсĕр ĕненĕве упранă вăл чун-чĕринче. Мĕнле тăшман е хура чунлă этем пулма пултартăр-ха сăмах ăстисен, поэзи ăрăмçисен йышĕ-ушкăнĕнче?! Куçа-куçăн тăрса вăй виçме е талант хăвачĕпе ăмăртма тесен — тархасшăн! Анчах та кĕвĕç чунсем те, хĕвре чул тытакансем те, вăрттăн ура хуракансем те, карьерăшăн çунакансем те сахалах пулман перопа тăрмашакансен йышĕнче.

Сăввăма тытса илес пулсассăн
Çын та мар эп çакă тĕнчере;
Уншăн çеç янрать ман уçă сассăм,
Уншăн çеç çунать вĕри чĕре.

Çирĕмри поэт хăйĕн «сăввине тытса илес» вăхăтсем инçе маррине шута хума та пултарайман-ха. Вăл çеç-и, ыттисем те малаш ĕмĕтпе ĕçленĕ. Культура чĕрĕлĕвĕн пирвайхи чечекĕсемпе хавхаланнă, малашлăха куçпа тĕлленĕ наци интеллигенцийĕ вăй çитернĕ таран çанă тавăрса ĕçленĕ. Анчах та кăра çилсем вĕрме тытăннине, хура пĕлĕтсем туртма пуçланине нумайăшĕ сиссе те юлайман ахăр. Вăтăр çиччĕмĕш çул тĕлне социализмла нимере ăмăртакансем кĕтмен çĕртен кулленхи пурнăçра фашизм йĕркисем хĕсĕрлеме пуçланине, çавсен йӳçенкĕ тăварне харпăр хăй кунçулĕ урлă тутанса кураççĕ. Тоталитаризм режимĕ илемлĕ литературăра, ун ăстисен ĕçĕ-хĕлĕнче хăйшĕн пысăк хăрушлăх пуррине ăнланнă, витĕр курнă. Акă пĕр тĕслĕх çеç. Патша саманинче либераллă саккунпа суд туса Тайăр Тимккине, «ырлăха вăрçса илме», «сăнчăра татма» чĕнекен поэта, виçĕ çуллăха Нарыма яраççĕ. Унтан революционер сывă таврăнать. Петĕр Хусанкай çырнисенче, Тайăрănни пек, политика влаçне хирĕçле шухăш шăрши те çук! Апла пулин те ăна чăваш эсерне, Хурине, поэма халалланăшăн персе вĕлермелли статьяпа суд тăваççĕ. Асăрхăр: Хури биографийĕ илемлĕ литература хайлавне (поэмăна) пурнăç е истори материалĕ пулса кĕрет, çав çеç! Чăн та, «Хури» поэмăсăр пуçне айăплу заключенийĕнчи списока Хусанкайăн чылай сăвви-поэмине кĕртнĕ. Анчах та кĕвĕç чунсемпе элекçĕсен

ĕçĕ пулнă ку. Критикăлла масса пĕр вун-вун пилĕк çул хушши капланса йӳçсе пынă. И. Кузнецовăн пирвайхи статйисенчен пĕринчех, «Тăвăлпа çунатланнă поэтсем, е авалхипе çуначĕсене амантакансем» ятлинче (1928), Хусанкая «шовинизм лачакине кĕрсе ӳкнĕ» тесе айăпланă. 1935 çулта çамрăк çыравçăсен пухăвĕнче каланă сăмахра çав тиркевçех Хусанкая «класс тăшманĕсен» йышĕнче курать, вăл Юманпа, Рсайпа пĕрле национализм шухăшĕсемпе пурăннине тата вĕсем çамрăксене çав чире ертме пултарасса асăрхаттарса палăртать. Куратпăр ĕнтĕ: бульдог пек, ним тусан та вĕçертми çыртса лартаслă критик-идеолог вăтăр çиччĕмĕш çулшăн характерлă лексикăпа хĕç-пăшалланма ĕлкĕрнĕ те. Анчах çынсене темле хаярланса туласан та, вăл хăй те арестран хăтăлса юлайман. Вырăссен сăнарлă сăмахĕнчи пек: мĕн тĕллевпе кĕрешнĕ, çав тĕллев сăннине тирĕннĕ тени ĕнтĕ ку.

Хусанкай судĕнче çак тиркевçĕ, унта кӳнтелен шучĕпе конвойласа илсе пынăскер, Хусанкая хӳтĕлесе калаçать. Вăл хăй те ĕнтĕ ун чух тĕрмере ларнă, шухăшламалăх, мĕн пулса иртнине тăрă ăспа виçме-тишкерме вăхăчĕ те пулнă тинех. Шел те, сăмах çерçи мар, И. Кузнецовăн (ун çеç те мар) 1920—1930 çулсенче пичетленнĕ статйисем хăйсен хурахаяр ĕçне туса хума ĕлкĕрнĕ: вĕсем Чăвашра националистсен совет влаçне хирĕçле ушкăнĕсем чăмăртаннă текен шухăша общество ăс-тăнне савăл çапнă пек хĕссе кĕртнĕ. Курăр акă, суд вĕçĕнче Хусанкая тӳрре кăларса йышăннă приговорта та çаплах каланă: «Чăвашра пĕр çул хушши çеç мар контрреволюцилле буржуалла-националистла организаци пур, анчах Хусанкай унпа çыхăннине çирĕплетекен фактсем пурри палăрмарĕ».

Суд ларăвĕн процесне протокол тăрăх тимлесен çĕршывра 1937 çул тĕлне фашизм йĕркисем вăя кĕнине тепĕр хут туйса илетĕн, ĕненетĕн. Лару пуçламăшĕнчех айăпланакан Хусанкай хăй çырнисене ăнланакан тата тăван литературăри лару-тăрăва тĕплĕ пĕлекен çыравçăсене — Я. Ухсая, Ç. Элкере, А. Золотова, Н. Ваçанккана тата ытти хăш-пĕр çыравçăсене кӳнтелен шучĕпе чĕнтерме ыйтать. Вĕсемсĕр ĕçе пăхса тухма пач та май килмест тет. Анчах та демократи принципне уямаççĕ. Хусанкайăн ваккачĕ Шевле куçару валли тăлмач кирлĕ пулать тесен каллех: «Кирлĕ мар, суд

составĕ чăвашла çителĕклĕ пĕлет», — теççĕ. Кузьмин прокурор шухăшĕпе, ĕçе пăхса тухма тăлмачсăр та май килнĕ, мĕншĕн тесен Хусанкай çырнисене идейăпа пахалăх енчен хак паракан икĕ «экспертăн» (çăхав шайĕнче) хулăн паппкисем патшалăх айăпланаканĕн сĕтелĕ çинче выртнă пулнă-мĕн, хатĕрлесе параканĕсем В.А. Долгов критикпа Уйăп Мишши сăвăç. Иккĕмĕш пирки, суда мĕншĕн пыманнине сăлтавласа, «Шумилов Михаил командировкăра» тенĕ. Ку çеç те мар, Уйăп Мишши сăвăç çав вăхăтра Чăваш писателĕсен союзĕн председателĕ пулнă, хăй тăратнă официаллă характеристикăра Хусанкай сăввисене пăсса элеклесе хакланă. Хусанкай вăл хакланине татăклăн сивлет. Уйăп официаллă характеристикăпа çеç çырлахман, профессиналсексот пулнă май вăл Хусанкай çумне тĕрлĕ элек-челекпе суя сăмаха та çыпăçтарма хăтланнă пулнă-мĕн. Тахăш калани е «тет» çине йăвантарса Хусанкая вăл икĕ питлĕ этем пек сăнласа кăтартма пăхнă: поэт хăш-пĕр сăввисене большевиксене вулама, теприсене чун валли çырать имĕш. Паллах, Хусанкай кунашкал элеке тӳрех сирсе ывăтать — татăклă çирĕплетсе калакан фактсем çук-çке-ха! Элекçĕ хăй «командировкăра» — унашкал этем яланах хăравçă, тилĕ пек пытанать.

Хусанкай допросра каланă сăмахĕнче, ыйтусене хуравланинче çирĕп логика пурри, вăл хуравĕсене тĕплĕ шухăшласа хатĕрлени, çав хушăрах ăнсăртран персе янă сăмахпа кама-тăр инкек кăтартасран асăрханни те сисĕнет. Пĕр тĕслĕх çеç. 1939 çулхи нарăсрах çĕре кĕнĕ (хыпарĕ Чăваша çитеймен пулас) Юман Мĕтрийĕ ячĕ суд материалĕсенче тăршшĕпех «эсер-националист», «буржуалла националист», «контрреволюционер» евĕрлĕ ярлăксемпе тĕл пулать. Унпа çывăх пулни, хутшăнни Хусанкая айăпламалли сăлтавсенчен пĕри шутланать. Анчах Хусанкай чăн сăмаха калама судра хăюлăх çитерет: Юмана чăваш чĕлхин чи пысăк ăстисенчен пĕри тесе шутлатăп; кунсăр пуçне эпĕ ăна хамран аслă юлташ вырăнне хурса хисепленĕ тет. Çак çыхăну пирки приговорта та каласа хăварнă: Хусанкайăн Юман патне янă çырăвĕсене илес пулсан, вĕсенче чăваш чĕлхин пысăк пĕлӳçи умĕнче пуç тайнисĕр пуçне иккĕшне çыхса тăраканни урăх ним те çук тенĕ.

Поэт çырнисенче контрреволюцилле шухăшсемпе йă-

нăшсем шырани кăлăх та усăсăр пулни ултă куна тăсăлнă суд процесĕнче утăм хыççăн утăм палăрса, уçăмланса пырать. Акă поэтăн хăйне айăпланине сирекен хăш-пĕр тезисĕсем:

Хама арестличчен эпĕ Чăвашра контрреволюцилле буржуалла-национализмла организаци пуррине пĕлмен. Çавăнпа та манăн унпа нимĕнле çыхăну та пулма пултарайман.

«Анне патне» сăвва эпĕ вун ултă çулта чух совет влаçĕн политикине ăнланса илме ĕлкĕреймен ўсĕмре çырнă. Унта контрреволюцилле шухăшсем пач та çук, аннен чухăн пурнăçне асăнни çеç.

«Кĕслеçĕ» сăвăра совет саманине хуратса сăнлакан йĕркесем çук, унта Хусан урамĕнче (1924) хурлăхлăн юрласа тăракан суккăр чăваш кĕслеçин сăнарне ўкернĕччĕ. Ку вăл ман Есенинран курса çырма тăрăшнă тапхăр пулнă. Хресчен поэчĕ ман чуна çывăхчĕ ун чухне.

Çавăн пекех автор ытти хайлавĕсем пирки те витĕмлĕ, ĕнентерўллĕ çыпăçтарса евитлет. Тĕпрен илсен, контрреволюцилле е политика йăнăшĕсемлĕ сăвă-поэмăсем шутне çаксене кĕртсе айăпланă автора: «Çирĕм ултта», «Улмуççиллĕ Тĕрлемес», «Хури», «Çĕр йĕркелў» поэмăсем, «Рот фронт», «Кавказра», «Тĕлĕнмелле тĕлĕк» тата ытти сăвăсем те.

«Çирĕм ултта» поэмăра совет влаçне хирĕçле шухăшсем çукки çиелтенех курăнать, çавăнпа та чăкăлташмалли тупăнмасть. «Хури» поэма пирки хиврен айăпласа каланă сăмах вăраха тăсăлать. Т. Николаев-Хурине, чăваш эсерне, Хусанкай поэминче ытлашши мухтаса паттăрла сăнар пек ўкерсе кăтартнă пулать. Кунсăр пуçне поэмăра А.Ф. Керенский сăнарне калăпланă май автор хура сăррисене шелленĕ имĕш. Капла хальлĕн вара Хурине судра хўтĕлекен ваккат сăнарĕ çителĕклĕ таран илемсĕр курăнмасть. Хусанкай, хăй ĕнентернĕ тăрăх, Хури эсер пулнине пĕлмен. Çырма та поэмине 1925 çулта пирвайхи революци çирĕм çул тултарнине республика анлăн паллă тунă шăв-шав витĕмне пула çырнă иккен. Чăнах та, поэт айăпĕ пулмалла та мар пек çакăнта. Акă курăр-ха, приговорта мĕнле каланă: юбилее буржуалла националистсем, çав çулсенче партипе республика пуçĕнче (!) тăнăскерсем, ытла пысăк шайра йĕркеленĕ. Урамсемпе вĕренў заведенийĕсен ячĕсене Хури ячĕпе панă. Кунсăр пуçне Хури революционер пурнăçĕпе ĕçĕхĕлĕ çинчен кино та ўкернĕ пулнă.

Поэмăн пĕрремĕш сыпăкĕнче поэт революциччен хи йывăр пурнăçа сăнланă, анчах та «экспертсем», çакна шута илмесĕр (тен, тĕллевлĕн), автор совет саманинчи пурнăçа хуратса сăнлать тесе ĕнентернĕ. Çавăн пекех Хусанкай «Çĕр йĕркелӳ» поэма тытăмĕнчен туртса кăларнă уйрăм йĕркесемпе уçăмсăр сăмахсем пирки те витĕмлĕ аргументсем тăратать. Сăмах май, судра тĕплĕ, лупăпа вуласа пăхса тухнă сăвă-поэмăсене каярахпа, çанталăк «уяртсан», тепĕр хут пичетре кăларас умĕн Хусанкай вĕсенчи иккĕлентерекен е «тĕксĕм» вырăнсене йăлтах тасатнă — çылăхран аяккарах пулам тенĕ ĕнтĕ сăвăç. «Тута пиççен» кунашкал япалапа шӳтлес килмĕ нихăçан та.

Тĕпрен илсен, Хусанкай хăйне айăпсăр çĕртенех суд умне тăратнине ĕнентерсе çитерет темелле. Çурла уйăхĕн 7-мĕшĕнче, ыран приговор кăлармалла тенĕ чух, суд ларăвĕ ирпе 9 сехетрен пуçласа каçпа 23 сехетчен тăсăлать. Уйрăмах прокурор «Кавказра» сăвăпа «Улмуççиллĕ Тĕрлемес» поэма çине «шурă куçпа» пăхать, вĕсенче темĕнле тăшманла шухăшсем варăнса тăнăн туйăнать ăна. Çак икĕ хайлава Кузьмин прокурор хушнипе ятарласа тишкернĕ Хрусталев эксперт (Главлит пуçлăхĕ) питех те тĕплĕн хак парать. Тĕллĕн-тĕллĕн вăл иккĕлентерекен вырăнсене палăртать, ун хыççăн авторĕ хăй поэмăпа сăввăн тĕшшине катса кăтартать.

Пренисем пуçлансан прокурор каллех тин çеç асăннă икĕ хайлав çине тапăнса Хусанкая РСФСР Уголовлă кодексăн 1-мĕш пайĕнчи 58-мĕш статьян 10-мĕш пункчĕ тăрăх айăплать. Тӳрĕ тĕллевпех е ăнсăртран Хусанкай контрреволюцилле ĕç тунă тет тата автора çавăншăн хупса хума сĕнет. Хыççăнах тăрса калаçнă Шевле ваккат прокурор айăпласа каланине ĕнентерӳсĕр тет, автора тӳрре кăларакан приговор йышăнма ыйтать. Епле пулсан та суд вĕçленсе пынă тĕлелле Хусанкайăн шанчăк çуралать, вăл ĕнтĕ хăйне танлă тытать, сăмахĕ те ун витĕмлĕрех илтĕнет. Кунсăр пуçне, хăйне суд тăвакан тӳресен интеллекчĕ, культура шайĕ айванрах, эрудицийĕ ытла та кăйттă пулнине ăнкарса илмелли май-самантсем пĕрре çеç мар пулнă «Евгений Онегина» чăвашлатнă поэтăн. Сăмахран, суд ларăвĕн тăршшĕпех Есенин пессимизмĕ, «есенинщина» (хăшĕсем «эссеновщина» теççĕ!) евĕрлĕ сăмах-ăнлавсем илтĕнсе тăраççĕ, вĕсем вăрçса каламалли е хăратмалли сăмах сино-

нимĕсем пулса тăнă. Хусанкай юлашки сăмахĕнче, Есенинăн чăн хакĕпе шайне туйтарса, пĕр япала çинчен пĕлтерет. Вăл каланă тăрăх, Есенин 29 поэтран тăракан списокра чи чаплисенчен пĕри, çитес вăхăтра вĕсем çырнисем Мускаври издательствăра пичетленсе тухмалла. Психологилле тытăçура Хусанкая хăйĕн анлă эрудицийĕ витĕмлĕ пулăшнă.

### Кӳнтеленсем кăтартнинчен (А. Миллипе И. Кузнецов)

Паллах, свидетельсем тухса каланин пысăк пĕлтерĕшне те асăнмасăр юрамасть. Вĕсенчен хăшĕсем Хусанкая хирĕçлерех те калаçма хăтланаççĕ. Теприсем поэта хӳтĕлес кăмăллă пулни е чăнлăхран пăрăнманни курăнать. Чи малтан Алексей Миллипе Иван Кузнецов пĕр-пĕринпе идеологи ыйтăвĕсем тавра тытăçни-çапăçни ывăç тупанĕ çинчи пек курăнать. Çак драмăн интриги психологилле кăткăс самантсемпе тата харпăр хăйĕн çиелтен курăнман хĕври тĕллевĕсемпе çыхăннă. Сăмахран, А. Милли Хусанкая приговор йышăнса ирĕке кăларсан тепĕр кун Аслă суд ĕçе пăхса тухнипе килĕшмесĕр заявлени тăратать. Ун шухăшĕпе, Хусанкай юлашки çулсенче (1930—1936) çырнă хайлавсене тĕплĕнрех тишкерсе тухсан вĕсенче националистсемпе (эльменистсемпе) Юман-Петров витĕмне тата Кузнецов вĕсемпе пĕр ушкăнра тăнине уçса палăртма май килĕччĕ. «Кузнецов-эльменист çак хăрушлăха самантрах туйса илсе мана чăн пирваях суд умĕнче хăрушла айăплама тăчĕ, манран хаяр националист тата фашист туса хума хăтланчĕ, эльменизм çинчен шарламарĕ». Чăнах та, мĕнлерех характеристика парать-ха Миллине унăн идеологилле тăшманĕ? Акă протоколти темиçе йĕрке. «Кунта (Чăвашра. — *Ю.А.*) 1924—1926 çулсенче буржуалла националистсем хуçаланнă, вĕсем авалхи пăлхарсен ылтăн ĕмĕрĕ нихăçан каялла таврăнмасла хыçа юлнă, чăваш çĕршывне колонилле пусмăрласси совет саманинче те пырать тесе ĕнентернĕ. Буржуалла националистсен çак ушкăнне Юман, Прокопьев-Милли, Краснов, Эльмень тата ыттисем кĕреççĕ. Вĕсем вырăс культури чăваш культурине хĕсĕрлет текен шухăша сарнă, çав вырăс культурин витĕмĕнчен хăтăлмалла та Кай ен культурине, урăхла ка-

ласан капитализмла-фашистла культурăна, йышăнмалла тенĕ».

«Чăваш республикине туса хурсан 1928 çулчченех çак буржуалла национализмпа никам та кĕрешмен. Прокопьев-Милли, Михаил Петров, Петров-Юман çырнă контрреволюцилле, пăлхарсен ылтăн ĕмĕрне пропагандăлакан произведенисем ирĕклĕ пичетленнĕ. Çакнашкал лару-тăрура пирĕн çамрăк вăйсем çитĕннĕ, çамрăк поэтсем ӳснĕ. Çĕнĕ чăваш çыравçисем историне çав контрреволюцилле литературăна вуласа çеç вĕреннĕ. Хусанкай та малтанхи çулсенче çакнашкал буржуалла национализм литературин сулăмне лекнĕ».

Анчах та хĕври тĕп шухăшĕсене (козырь) кăларас умĕн çак кӳнтелен суд залĕнчен Миллине илсе тухма ыйтать, хăй тăшманĕн хăлхи илтмелле мар сведенисем пĕлтересшĕн вăл. Лешне илсе тухсан акă мĕн калать: «Красновпа Миллин контрреволюцилле ушкăнне эпĕ уçса палăртрăм. Ку ушкăн йышĕнче çаксем пулнă: Юман, Элле, Тихонов-Микул, Краснов-Асли, Ялавин т.ыт.те. Çак ушкăн юлашки вăхăтра чăннипех те контрреволюцилле ĕç туса пынă, вĕсем пурте эсерсем пулнă, ӳссе пыракан чăваш литературине ура хурасшăн тăрăшнă, çамрăк çыравçăсене хăйсем енне çавăрма хăтланнă, пире çамрăк поэтсемпе ĕçленĕ çĕрте ура хурса пынă. Юманпа Милли уйрăлми тачă çыхăнса ĕçленĕ. Вĕсем хăйсен ушкăнне Янкаса авăçтарасшăн пулнă. Прокопьев (Милли. — *Ю.А.*) ĕлĕкхиллех национализма пропагандăланă. Юман Совет çыравçисен партилле союзне аркатма кăтартусем парать. Юман Митта Ваçлейĕ патне çыру ярать, унта Кузнецов патне çитсе ăна аркатма хушать. Митта Ваçлейĕ «Сĕрĕмре» сăвă çырнăччĕ те, эпир ăна хыттăн сивлерĕмĕр».

Чăваш культурин ĕçченĕсене тăршшĕпех çапла хаяррăн айăпласа калаçать кӳнтелен. Кам та пулин, иçмасса, ыйтинччĕ унран: Хусанкай ĕçĕ-хĕлĕ çинчен каласа пама илсе кĕнĕ-çке ăна суда, мĕн тума кирлĕччĕ ĕнтĕ «темăран» пăрăнса нумай-нумай çын ячĕ çумне хастарлансах хăратакан, çӳçентерекен ярлăксем çакма?!

А. Милли кӳнтелен сăмахĕнчен уйрăм вырăнсене илсе кăтартсан çак ыйтăва хуравлама йывăр та мар. Чăн малтан Милли хăйне тӳрременех «националист» тесе пĕлтерет.

«Эпир буржуалла-националистла организацире 1923 çултанпа тăнă». Хусанкай сăвви-поэминче те, Милли шухăшĕпе, çавнашкал туртăм пур. «Поэт чăваш национальноçĕ çинчен çырать, чăваш нацине мухтать пулсан пĕр иккĕленмесĕрех калама пулать: ку вăл — буржуалла-националистла сулăм; çак енчен пăхсан Шелепи те буржуалла националист пулса тăрать».

Куратпăр ĕнтĕ, Милли шухăшĕпе, национализм тени хăй халăхне юратни, ун культурине пропагандăлани пулать. Суд çакна ăнланасса шаннă, суд çак хăрушлăха хакласа çитерейменсĕр йăнăш тунă.

Тĕпрен илсен, Милли Хусанкайăн «Хури» поэмине идеологилле тата политика тĕлĕшĕнчен сиенлĕ хайлав тесе хаклать. Чăн та, ун лексикинче «контрреволюци», «фашизм» йышши сăмахсем çук, çапах та поэмăра вăл «хура» енсем курать. Мĕне пула-ха çапах та? Çакăн сăлтавĕ Милли суд вĕçленсен тăратнă заявленире лайăх палăрать. Милли кукăр пăшалпа Хусанкая тĕллесе Кузнецова лектересшĕн пулнăмĕн. Тĕрĕссипе, «Хури» поэма авторĕ, хăй тĕллĕн илсен, нимшĕн те айăплă мар, чăваш эсерне чаплăн чысланă кунсенче ун пуçĕ çаврăнса кайнă, вара вăл та пысăк йыш ĕçне хăй тӳпине хывнă. 1925 çулта юбилее йĕркелесе ăна анлăн ирттерекенсем (кĕреке пуçĕсем!) — партипе патшалăх ертӳçисем, вĕсен малти ретĕнче И. Кузнецов пулнă. Акă ăçта пытанса тăрать Милли поэмăна сивленин сăлтавĕ. Вăл Кузнецов-идеолог йăнăшĕсене тӳрремĕнех «Хури» поэмăра курать, çавăнпа вĕсене тăрă шыв çине кăларасшăн тупăшать. Кун пирки заявленире уççăнах калать: «Кузнецов И.Д. Хусанкая çине тăрсах хӳтĕленин сăлтавĕ вăл Чăваш обкомĕн пĕтĕм иртнĕ тапхăрти линине тӳрре кăларма пăхнинче...» Паллă-çке-ха, енчен те Хусанкай айăпсăрри судра палăрсан ăна хӳтĕлекен Кузнецов та тĕрĕслĕхшĕн тăнă пек курăнса кайнă пулĕччĕ. Çавăнпа ĕнтĕ Милли «Хури» поэмăран оппонентне путасран çăлăнма пулăшакан «улăм пĕрчи» тума парасшăн мар.

«Заявленине» пĕтĕмĕшле хаклас пулсан ăна шутсăр тĕплĕ те тарăн тишкерӳллĕ документ темелле. Милли «национализм» сăмаха хăйле ăнлантарать терĕмĕр çӳлерех, судра мар, пичетре е пĕр-пĕр дискуссире татса памалли ыйту ку уншăн. Вăл çырнă тăрăх, Чăвашра национализмла икĕ юхăм

1917 çулчченех палăрнă. Вĕсем Яковлев шкулĕнчен папкаланса тухнă пулнă. Илемлĕ литературăра вара пĕр юхăмĕн пуçĕ В.И. Краснов, тепĕрин М. Юман пулса тăраççĕ. Хăй вăл Краснов-Асли ушкăнĕнче иккен, Хусанкая Юман вăйлă витĕм панă тесе ĕнентерет. Тепĕр тĕлте Милли хăйсен ушкăнне троцкистсен ушкăнĕ тесе пĕлтерет.

А. Милли 1929 çулта аспирантура пĕтерн̆ĕ хыççăн Тухăç халăхĕсен университетĕнче чăваш литератури вĕрентнĕ. Хăй пĕлтернĕ тăрăх, Марр академик вĕренекенĕ пулнă. Суд материалĕсенче Милли анлă эрудициллĕ ученăй тата литератор пулни çиелтенех палăрать. Вăл хăйне политикăлла ĕненӳпе идейăсемшĕн арестленĕ тесшĕн тата суд процесĕнче те политикăлла сулăмпа пĕлтерĕше тĕпе хывать. Вăл уголовлă преступлени туман-çке-ха, çавăнпа та хăй шăпипе патша саманинчи политзаключенăйсен шăпи хушшинче пĕрешкеллĕх пур тесе шутлать. Чăвашра национализм чирĕ сарăлнишĕн парти обкомĕ, уйрăмах идеологи фронтне ертсе пыракансем С.П. Петровпа И.Д. Кузнецов айăплă. Хăй вара вăл 1923 çултанпа (мĕн арестличченех) Мускавра пурăннă, çавăнпа та чăваш пурнăçне нимĕнле витĕм те пама пултарайман тесе евитлет. В.И. Краснов-Асли те нихăçан та влаçра-мĕнре ларман, ертӳçĕ пулман, вĕсем — ахаль литераторсем çеç.

Тата çакна та каласа хăвармалла: Хусанкай сучĕ пулнă тĕлелле Чăваш парти обкомĕн ертӳçисен пĕтĕм йышне тенĕ пекех арестлесе хупса хунă пулнă. Пуçлăх-идеологсене допрос тунă, вĕсен ĕçĕсене судра пăхса тухма хатĕрленнĕ. Çавăнпа та Кузнецов Хусанкай процесĕнче кӳнтелен шучĕпе калаçнисене Милли пĕтĕмпех парти ертӳçисен ушкăнĕ ячĕпе хӳтĕленни хăйне майлă чее тактика тесе хаклать. Вĕсем пĕрпĕринпе канашласа план тăваççĕ имĕш, айăпĕсене сирме хатĕрленеççĕ. Кунта ĕнтĕ икĕ енне те ăнланма пулать: вĕсем хушшинче идеологи вăрçи пырать, çавăнпа та, французсем калашле, хăйсене вăрçăри пек тыткалаççĕ. Çакăн пек хивре, пуранса лармалла тĕвĕсем тĕвĕлеççĕ И. Кузнецовпа А. Милли хăйсен мăйне тăхăнтартнă пăявран. Çапăçăвĕ вĕсен ирĕкре чухне, çирĕммĕш çулсенчех, пуçланнă, çапла вара вĕсем халĕ те, ниме пăхмасăр, нимле компромисса та йышăнмасăр, принципшăн çапăçаççĕ. Ман шутпа, çак кĕрешӳ паян та вĕçленмен-ха, çыннисем кайнă, анчах

вёсен теорилле шухăшёсем пёр-пёринпе çураçаймёç. Чăваш хушшинчен вара малашне те Милли пеккисем те, Кузнецов йышшисем те çуралсах, çитёнсех тăрасси те иккёлентермест. Историлле чăнлăхё вара пёрин енче çеç: тăван халăхшăн, чёлхешён, культурăшăн çунман, вёсене хӳтёлесе çёре кёме хатёр пулман çын интернационалист пулаймастех.

## Ытти кӳнтеленсем

Ытти кӳнтеленсем хушшинче чăн малтан «Красная Чувашия» хаçатăн пропаганда пайне ертсе пынă Дмитрий Данилович Данилов Хусанкая элеклемесёр калаçнине, вăл тӳрё кăмăллă çын пулнине палăртмалла. Пёр тёлте çеç чăваш поэчё Есенинăн вăйсăр енёсене йышăннине асăнать. Вăл çавăн пекех çыравçăсем хушшинче Хусанкай талантне кёвёçекенсем пуррине пёлтерет. Данилов пăркаланмасăр, сăмаха татăклă калать, ку вара Хусанкайшăн усăллă пулать. Хăй вăл паллă критик пулнă, литературăри лару-тăрăва тёплё пёлсе тăнă. Д. Данилов калаçнинчен вăл анлă тавракурăмлă, тарăн шухăшлама пултаракан интеллигент пулни курăнать. Анчах та литература процесё çине идеолог куçёпе пăхать. Вăл Мускавра хёрлё профессура институтёнче вёреннё, каярахпа ГИТИСра ёçленё.

М. Данилов-Чалтун суда Писательсен союзён ёçёшён явапллă пулса пынă, вăл председатель çумё пулнă.

Хусанкай сăввисене эпё вуланă, вёсем Маяковский хайлавёсене çывăхчё. Вăл литературăра хăйне ыттисенчен çӳллёрех тытнă. Юлашки вăхăтра эпё Хусанкай сăввисене ытларах тиркенё. Хусанкай патшалăх укçине ним тумасăр илсе тăнă... «Çёр йёркелӳ» хайлавра национализмла сăмах çаврăнăшсем пур, анчах мёнлерехскерсем — ун пирки калаймастăп. Хусанкай сăввисене хăйшён тата советшăн çырнă, анчах вăл сăвăсен содержанийё мёнлине эпё пёлместёп. Кун пирки мана Ухсайпа Ёçхёл çамрăк çыравçăсем пёлтернё; хăшёсем çамрăк çыравçăсен Хусанкайран вёренмелле тетчёç, теприсем — кирлё мар тетчёç... Писательсен союзёнче ăна чи паллă поэт-шедевр тесе хаклатчёç.

Эпё пухусенче Хусанкая критикленё, анчах вăл критикăна çав тери йывăра илсе йышăнатчё... Хусанкайăн национализмла сулăм унчченех пулнă — вăл чăваш нацине мухтанă... Хусанкай интернационализмла сăмахсене пурне те чăвашла куçарасшăн пулнă. Вăл чăвашсем çинчен калаçма юратнă... Хусанкай Мускава командировкăна кайсан Юман патёнче пурăннă, анчах эпё хам кун çинчен пёлместёп, çынсенчен çеç илтнё.

Вулакан курать: кунта нимĕнле комментари те кирлĕ мар. Çакна çеç каламалла: çак шайри çын критикленине Хусанкай ăçтан-ха кăмăлсăрланмасăр йышăнма пултарнă?! Чалтун совпартшкул пĕтеркеленĕскер, Писательсен союзĕн ертӳçин çумĕнче ĕçленĕ. Унăн графоманла хайлавĕсем пирки «Шелепи шерепинче» Хусанкай хăй те кулсарах çеç калать: «Анчах пур вĕт вăл, пур вĕт Чалтун, кам хăтарĕ унран «Чăвгиза»?

Мускавра тухса тăнă «Коммунар» ятлă чăваш хаçачĕн редакторĕ Гаврил Молостовкин та поэт çырнисем пирки усал сăмах каламасть.

«Хусанкай хайлавĕсенче совет влаçне хирĕçле шухăшсем асăрхаман, вĕсем партипе правительствăн линийĕпе килĕшсе тăнă». Тӳрĕ сăмаха тӳрĕрен калани, уçăмлăх, Хусанкай пĕлтерĕшпе литературăри вырăнне ăнланни — çаксем Молостовкин кăтартăвĕсен хакне палăртаççĕ.

Суд ларăвĕ Хусанкая тӳрре кăларать. Трагедипе фарсăн хире-хирĕçле туртăмĕсенчен тĕвĕленнĕ-ӳтленнĕ спектакль çакăнпа вĕçленет. Ним иккĕленмесĕр калама пулать, поэт биографине урăхларах, хăрушă та инкеклĕ сюжет та хушма пултарнă вăл. Эпир юнлă финалсем те сахал мар пĕлетпĕр ĕнтĕ халь — вун-вун чăваш интеллигенчĕн кун-çулĕ тĕрмесемпе лагерьсенче сӳннĕ, вĕсен вил тăприйĕсем ăçта пулни те паллă мар.

## Хусанкай урокĕсем тавра шухăшласа

Хусанкай биографийĕнчи трагедилле страница мана чăваш характерĕ пирки шухăшлаттарать. Вилĕм танатинчен çăлăнса тухнă поэт пурнăçĕ тата вăтăр çул ытларах та тăсăлать, тăван культурăна нумай пуянлатать. Анчах акă мĕн: Хусанкай çав инкеклĕ ĕç-пуçсене аса илсе кулянса е «нăйкăшуллă» кăмăл-туйăмпа çырнине тĕл пулман эпĕ. Чăннипех те авса та хуçăлми, шалта капланнине тулаша кăлармиии, пиçĕ те чăтăмлă чăваш характерĕ. Пĕр шутласан, камăн камăн та, Хусанкайăн çавсем çинчен каласа хăвармаллах пулнă пек туйăнать. Пăхăсăн — алли çĕкленмен, тем чарса тăнă. Çав вăхăтрах Брежнев саманинчи диссидентсем хăйсем тӳсни, шар курни çинчен мĕн кăна çырмаççĕ-ши? А. Марченко пек, тĕрмере ларнисем е унтах вилнисем пирки мар-ха сăмах. Хĕсĕрленĕ те чылайăшне, пичетленме те ирĕк паман, ĕçлемесĕр пурăннишĕн туне-

ядец тесе айăплана, вĕренӳ заведенийĕнчен кăларса янă т.ыт.те. Чăннисен хӳттипе сăсăл вĕçтерекенсем пирки пырать кунта сăмах. Яланхи пекех, чакак хӳри çине ларса вĕçекен журналистсем те вĕсем пирки нумай сас-хура сарчĕç. Анчах та кунашкал капитал вăл йӳнĕ — йăлтăртатать пулин те, ылтăн мар. Талант çук чух тĕрев яни ĕнтĕ ку. Хусанкайăн чăн чăваш характерĕ пирки шухăша кайнă май аса илтĕм эпĕ унашкал «самаритянсене». Сакăр вуннăмĕш çулсенче ирĕк парсан шалти оппозицире (окопра) тăнисем пурте тенĕ пекех ют çĕршывсене тухса вĕçрĕç. Çав йывăр вăхăтра В. Астафьев, В. Белов, В. Распутин, Ч. Айтматов пек çыравçăсем халăхпа кăвапаран çыхăнса ĕçлерĕç, çырчĕç, кĕрешрĕç.

«Хусанкай интернационализмла сăмахсене пурне те чăвашлатасшăн пулнă». М. Данилов-Чалтунăн çак сăмахĕсем те хытă шухăшлаттараççĕ. Тен, çамрăк Хусанкайăн çакнашкал романтизмла ĕмĕт пулма та пултарнă. Яш ĕмĕтсем çунатлă та вышкайсăр. Çапах çакăнта та Хусанкай тăван чĕлхемĕр вăй-хăватне шанни-ĕненни витĕр курăнать. Çавнашкал хурçă шанчăк пулмасан наци культурин хевти чакма пуçлать. Утă çулма пикеннĕ чух çавана лапаткаланă пек, эпĕ час-часах Хусанкай тĕрленчĕкĕсемпе асаилĕвĕсене кĕнеке çӳлĕкĕ çинчен илетĕп, вĕсене киленсе вулатăп, шухăша кайса ларатăп. Уйрăмах вăл кăткăс та тарăн шухăшсене ытла та меллĕ, ансат, тӳрех ăса вырнаçмалла çавăрса калама пултарни чуна хускатать, çĕнĕрен шанчăк çуратать. Чăн та ĕнтĕ, икчĕлхелĕх паянхи кун пирĕн кулленлĕхĕн хиствелĕ палăрăмĕ пулнине тунма çук, çавăнпа та унран пăрăнаймăн.

Çапах та çакна асăрхатăп час-часах: культурăпа ăс-хакăллăх ĕçченĕсем чăвашла çырма май пур çĕртех вырăс чĕлхипе усă кураççĕ. Юрĕччĕ-ха, анчах та ку тумтир е пĕрпĕр ĕç хатĕрĕ улăштарнă пек курăнать: ăслăрах курăнас (уйрăмах пысăк авторитетсене цитатăласа), Мускавра пичетленес е Европăна тухас ĕмĕтпе хĕмленнĕ чух вырăс чĕлхине нимĕн те çитеймест имĕш; чăвашла çырни вара пысăк культура е ăс-хакăллăх элити валли мар, «хура халăх» апачĕ çеç шутланать. Вырăс культурипе, политикипе, чĕлхипе кăмăлсăрланса калаçнă е вĕсене тиркенĕ чух вырăсла çырма тăрăшни хытă сисĕнет тата. Техника ăс-хакăллăхĕн кăткăслăхĕ, терминĕсемпе ăнлавĕсен чăтлăхĕ чăнах та тӳрех

тата ҫӑмӑллӑнах парӑнмӗҫ. Апла пулин те кунта та ӗҫлес-шырас пулать; куҫару ӗҫне тимлеме тивет. Куҫ хӑрать те ал тӑвать теҫҫӗ, Илле Тӑхти ӗмӗр каяллах арифметика вӗренмелли кӗнекене чӑвашла куҫарса, хӑйӗнчен тӗплесе хушса кӑларнӑ пулнӑ. Уйрӑмах гуманитари ӑс-хакӑллӑхӗн ку енӗпе чӑрмав ҫук. Калӑпӑр, чӗлхе тӗпчевҫисене чӑвашла ҫырма, шырама, чӗлхене пуянлатма Турри хӑй пилленӗ. Вӗсем тӑван чӗлхе кӑкӑрӗнчен тӑранса пурӑнаҫҫӗ. Анчах та чӗлхе тӗпчевӗнчи паянхи лару-тӑрӑва вулакан эпӗ каламасӑрах курать.

Юлашкинчен тепӗр япала ҫинчен каласа хӑварасшӑн. Аттесен ҫӗршывӗнче пророк пулма памаҫҫӗ тени Хусанкай кун-ҫулӗн тӗкӗрӗнче пысӑк сас паллисемпе ҫапӑннӑ. Пуҫне касайман поэтӑнне ӑна суд тӑвакансем, ҫапах та ун чунне «чӗрӗп тирри» тавӑрса тӑхӑнтартнӑ. Мӗн ҫӗре кӗричченех туйса тӑнӑ вӑл ҫав йӗплӗ «кӗрӗк» тирсе пӑчӑртанине (Ҫеҫпӗле аса илер-ха: «юн тумлать, юн тумлать, хӗрлӗ юн»). Калас сӑмахне ирӗккӗн каласа пӗтерме паман сӑвӑҫа. Ҫапах та поэт, хӑй каларӑшле, «мӗскер тума пултарнине вӑл тунӑ».

Митта Ваҫлейӗ тӑван чӗлхемӗре сулмаклӑ хӑват панӑ темиҫе ҫынна уйрӑм кӗрекене «лартать». «Чӑваш ҫырулӑхӗн аталанӑвӗнче эпӗ пилӗк вӑта юпа куратӑп: Яковлев — Иванов — Ашмарин — Ҫеҫпӗл — Хусанкай». Чӑннипех тивӗҫлӗ йышӑнать Хусанкай ҫак чыслӑ вырӑна.

Хусанкай культуринче Анӑҫпа Тухӑҫ культурисен тата ӑс-хакӑллӑхӗн пуянлӑхӗ шӑранса пӗр аслӑ илемлӗх тӗнчине пӗтӗҫнӗ. Апла пулин те ун поэзийӗ тымар чӑвашлӑх ҫинче никӗсленет; ку вӑл кивҫен илнӗ е экзотикӑлла чӑвашлӑх мар.

Пророк пулас шухӑшӑм ҫук, ҫапах та пирӗн хамӑр наци идейи пирки шухӑшланӑ, ӑна шыранӑ май ытларах та ытларах Тухӑҫ горизонтне тинкермелле пулӗ тетӗп. Мал ен тенӗ ӑна асаттесен аслашшӗсем. Хамӑрӑн тымарсене те ҫавӑнтах шырама тивет. Тухӑҫ ҫулсерен тӗлӗнтерет тӗнчене хӑйӗн пин-пин ҫулхи культурипе, ун пуянлӑхӗпе. Мал ен малашлӑх тениех ӗнтӗ вӑл. Пирӗн 20-мӗш ҫулсенчи патриотсем Кай еннелле туртӑннинче кӑштах пӗр енлӗх те пулнӑ. Эпир ҫакна халь ӑнланса илтӗмӗр ӗнтӗ: мӑн кӑмӑллӑ Анӑҫ хӳттипе ҫӗкленекен суя пророксен кирек хӑш вӑхӑтра

та çав тымар-нацилĕх сăн-сăпачĕ — çук. Пирĕн менталитет «вар-хырăмĕ» Кай енрен килекен модельсене (экономика-и, культура-и) шăратаймасть. Паянхи европоцентристсем тата вĕсен пророкĕсем пирĕн пата миссипе килеççĕ, вĕсен хăйсен культурине пропагандăламалла. Йĕритавра сăнаса пăхсан вулакан паян мĕнле пĕчĕк ушкăнсем кам творчествине пропагандăланине хăех курать.

Пирĕн вара, тымар чăвашлăха шыракансен, унашкал вăййа (шоу) выляма кирлĕ мар — хамăр ăс-хакăл пуянлăхне архивсенчен кăларас пулать! Тата çанă тавăрса ĕçлекенсен пултарăвне культура диалогне хутшăнтарма тăрăшмалла.

Çавăнпа та Петĕр Хусанкайăн философилле тарăнлăхĕпе çепĕç лирики, Митта Ваçлей калашле, таса металл пек уçăмлă янракан чĕлхи тата чăн чăвашла тĕнчекурăмĕ хăйсен хакĕпе хевтине ним чухлĕ те çухатмаççĕ, вăхăт шунăçемĕн аслă сăвăçăмăрăн сăн-сăпачĕ туллинрех те курăмлăнрах палăрса пырать.

*1997*

Çанталăк пĕр килмест çав.
Уяр та пулать çанталăк, йĕпе-сапа та пулать.

*Илле Тăхти*



## ТĂВАН ХАЛĂХА ЮРАТСА

(*Хветĕр Уяр 70 çул тултарнă май çырнă статья*)

Чăвашсен паллă писателĕн Хветĕр Уярăн сасси тăван литературăра 1930-мĕш çулсен пуçламăшĕнче илтĕнме тытăнать. Аслă çул пуçламăшне писатель хăй акă епле аса илет: «Капкăн» журналта ик-виçĕ калав пекки пичетлесе кăларнă хыççăн 1931 çулхи çулла эпĕ «писателе кĕме» Шупашкара килтĕм. Писателе кĕресси те, тухасси те пулмарĕ манăн, унта кĕме хăтланса та пĕр утăм тумарăм, Шупашкарти Садвинтрест совхозне ут пăхма кĕтĕм».

Тин çеç çырма пикенекен аворăн пирвайхи калавĕсемпе фельетонĕсем паллă сатирик Иван Мучи кăларса тăнă «Капкăн» журналта кун çути кураççĕ. Çакăн умĕн кăшт çеç маларах вăл Самар хулинчи икĕ сыпăклă текен чăваш шкулĕнче вĕренет-ха. Çураласса вара пулас писатель 1914 çулхи апрелĕн 19-мĕшĕнче халĕ Самар облаçне кĕрекен Исаклă районĕнчи Сухари-Матак ялĕнче хресчен кил-йышĕнче çуралнă. Унăн авалхи несĕлĕсем кунтан, Чăваш çĕршывĕнчен, куçса кайнă пулнă.

Çапла вара, 1930-мĕш çулсен пуçламăшĕнче Хветĕр Уяр тĕп чăваш çĕрне таврăнать. Хăй калашле, «писателе тухиччен» нумай тар юхтарма тивет ун кунта, тĕрлĕ ĕçре ĕçлет вăл: кăмака та купалать, ут кĕтĕвĕ те кĕтет. Канăçсăр чунлă çамрăка çул йыхравĕ илĕртет, часах вăл Инçет Хĕвел тухăçне тухса каять. 1933 çулта Хабаровскри педагогика техникумĕнче вĕренме пуçлать, каярахпа Благовещенскри педаго-

гика институтне вĕренме кĕрет. Хăйшĕн пачах çĕнĕ тĕнче уçать яш каччă Инçет Хĕвел тухăçĕнче. Хăнăхиччен йăлтах урăхла кунта: çут çанталăкĕ те, çыннисем те, чĕр чунĕсем те. Анчах та пĕр хăнăхсан пурте чуна çывăх иккен, илĕртӳллĕ, асамлă. Малтанхи вăхăтра «тĕнче хĕрри» пек туйăнакан çĕршывпа ĕмĕрлĕхех туслашать писатель. Çак çĕрсене халалласа темиçе кĕнеке те çырать вăл каярахпа. Кунтах чăвашран тухнă чаплă художникпа паллашса туслашать.

1936 çулта Чăвашьене каялла куçса килсен Хветĕр Уяр Шупашкарти педагогика институтне вĕренме кĕрет, вăтам шкулта ĕçлет, каярахпа вăл — Чăваш радиокомитет сотрудникĕ. Çакăнта ĕçленĕ вăхăтра Уяр «Колчак» поэма авторĕпе Илле Тăхтипе паллашать. Кун çинчен писатель каярахпа «Тăхтипе паллашни» очеркĕнче асра юлмалла çырса кăтартать. Хисепе хурса, ун чăннипех те пысăк талантне картса аса илет Уяр пултарулăх ĕçĕнчи аслă юлташне. Çамрăк çын чĕринче Тăхти тарăн та пархатарлă йĕр хăварнă. Унран Уяр çыру ăсталăхне нумай вĕреннĕ. Çакă Уяр çырнисенче лайăх палăрать.

1941 çулта Хветĕр Уяр çырнă калавсен пуçламăш пуххи пичетленет. Çав çулах вăрçа тухса каять. Тăван çĕршыва хӳтĕленĕшĕн вăл III степеньлĕ Мухтав орденне тата медальсене тивĕçлĕ пулать.

Вăрçă хыççăнхи çулсенче Хветĕр Уяр пысăк калăплă произведенисем çырма тытăнать. Пĕрремĕш романĕн малтанхи варианчĕ «Шурча таврашĕнче» ятпа уйрăм кĕнекен 1952 çулта пичетленет. Каярахпа ăна автор çĕнетсе «Таната» ятпа кăларать. Уяр — нумай кĕнеке авторĕ. Çавах та писатель таланчĕн пĕтĕм сулмакĕпе хăватне «Таната» роман лайăххах кăтартса пачĕ. Кĕнекери тĕп ĕç-пулăмсем XIX ĕмĕр варринче чăваш тăрăхĕнче пулса иртнĕ Шурча вăрçипе çыхăннă. Тĕттĕм, хавшаса çитнĕ чăваш ялĕ, ĕмĕрсем тăршшĕпех пусмăрта асапланнăскер, ерипен куçне уçма пикенет. Вуншар çул хушши капланнă чăваш хресченĕн çилли. Чухăнăн çичĕ тирне сӳнĕ Яка Иллесемпе Салакайăк пупсем, Шахрун йышши тара кĕрĕшсе пуç касакансемпе Ивуксем — унăн ĕмĕрхи тăшманĕсем. Социалла хирĕçӳсем хĕрсе пынине, класс кĕрешĕвĕ амаланса, хĕç-пăшаллă çапăçăва куçса кайнине автор чăнлăха пăсмасăр ӳкерсе кăтартнă. Чăваш халăхĕ нихçан та чухăн пулман иккен патвар та хăюллă,

Улăп пек яш-кĕрĕм тĕлĕшĕнчен. Салтакра чĕрĕк ĕмĕрне ирттернĕ Григорьев, чухăнсен шанчăкĕпе тĕрекĕ, кĕрнеклĕ те сăпай каччă Ухтиван, Касьян тимĕрçĕ хăйсен класс тăшманĕсене витĕр кураççĕ ĕнтĕ, кĕрешӳре çул кăтартса пыраççĕ. Хивре явнă автор роман сюжетне, сăнарĕсем вара ĕненмелле, чĕрĕ те кĕрнеклĕ.

«Таната» романа хамăр хутлăхра çеç мар, вырăссен паллă писателĕсем те, Мускав литературовечĕсем те тӳрех асăрхарĕç, пахаларĕç. Вĕсен йышĕнче — Георгий Ломидзе, Евгений Федоров, Валентин Оскоцкий т.ыт.те. Паллă прозаик Николай Евдокимов каланă тăрăх, роман пирĕн вăхăтри совет литературин чи паха тĕслĕхĕсемпе юнашар тăрать. «Роман геройĕсем хăйсене чăн чăвашла тыткаланине, чăвашла тĕнчетуйăмлă пулнине эпир тӳрех туйса илетпĕр», — тет вăлах. Вырăс писательне Уярăн психологизмла ăсталăхĕпе тарăнлăхĕ тĕлĕнтернĕ. Кунашкал сумлă хака пирĕн прозаиксен кĕнекисем час-часах тивĕçеймеççĕ-ха.

Автор чылай çул хушши романăн иккĕмĕш кĕнекипе ĕçлерĕ. Прозаик çак пысăк ĕçе ăнăçлă вĕçлерĕ.

1950—60-мĕш çулсенче Хветĕр Уяр сахал мар повесть тата калавпа очерк çырчĕ. Ялпа хула пурнăçĕ, творчество интеллигенцийĕн ĕçĕ-хĕлĕ е çамрăксене воспитани парас ыйтусем шухăшлаттараççĕ писателе. Кашни çĕнĕ хайлавĕнчех вăл çак çивĕч ыйтусене хăй пултарнă пек, çĕнĕлле çĕклеме тăрăшать. Яланах ăна пурнăçăн шалти, çиелтен курăнса тăман енĕсене кăтартса парасси илĕртет. Этем чункăмăлĕн тĕнчине кĕме шутсăр йывăр. «Шахтер пек тăрмашать вăл, кирлĕ мар сăмахсене, суя эрешсене аяккалла ывăтать... Пĕтĕм вăя хурса чакалансан çеç тахçан пĕрре ылтăн пĕрчисем тухакан сие чавса çитетĕн». Çапла калать Уярăн пĕр геройĕ писателĕн йывăр та тертлĕ ĕçне палăртса. Тан лаштарăвĕ вара чăнахах та витĕмлĕ, сăнарлă.

Сăмах май каласан, писатель ĕç-хĕлĕ патне чылай хайлавĕнче Уяр çĕнĕрен те çĕнĕрен таврăнать. Писатель сăнарĕ уйрăмах ун повеçĕсенче час-час тĕл пулать. Акă, сăмахран, «Пиччĕшĕпе шăллĕ» повеçе илер. Ун тĕп геройĕ Александр Яковлевич, темиçе кĕнеке авторĕ, кăштах ял сывлăшĕпе сывласа кăмăл-туйăмне çĕнетем тесе тăван ене таврăнать. Пиччĕшĕпе инкĕшĕ патĕнче хăнара темиçе талăк пурăнать вăл. Тӳрех калас пулать, автор паянхи ялăн социал-

ла пурнăçне, культурăлла сăн-сăпатне пĕтĕм анлăшпех илсе сăнлас çулпа каймасть. Уйрăм çынсен психологине, вĕсен шухăш-туйăмне тарăнрах уçса парас тĕллев лартнă пулас вăл хăй умне. Çакнашкал сăнав валли килти пурнăç, йăла-йĕрке кулленлĕхĕ уйрăмах меллĕ. Акă Александр Яковлевичăн пиччĕшне Уçăпах илер. Мĕн кĕçĕнрен пĕрле выляса, йывăр кунсене çума-çумăн тӳссе ирттернĕ пулин те, шăллĕ пиччĕшне тĕпĕ-йĕрĕпе ăнланса çитеймен-ха. Чун-кăмăлĕ темле хупăнчăк та чăлханчăкрах унăн. Яш чухне Турра ĕненнĕ Уçăп. Пĕрлешӳллĕ хуçалăха чи кайран çырăннă. Авланма та ыттисем пек мар, çынна култарсарах авланнă. Халь акă «колхозра ĕçлеме чирлĕ, хăйшĕн çывăрмасăр ĕçлеме те хатĕр».

Уяр стилĕн тахçанах паларнă вăйлă енĕсенчен пĕри вăл — этемĕн шалти, чун тĕпĕнчи туйăм хусканăвĕсене витĕмлĕ пайрăмсемпе (детальсемпе) яр уççăн палăртас туртăм. Пĕрикĕ йĕр сăнара чĕртсе тăратать е пурнăçри пулăмсене витĕртерех курма май парать. Акă темиçе тĕслĕх.

«Уçăп кушака нихçан та апат памасть-мĕн. Ун шухăшĕпе, кушак та, йытă та хăйсене хăйсем тăрантарма пĕлмелле».

«Вăхăт-вăхăт çеç куçĕ патĕнчи пĕчĕк тымар чăлт-чăлт сиксе илет» (Нина портретĕнчен).

«Лав умĕнчен туй çĕленĕ сĕтĕрнĕ хура кушак каçса кайрĕ» т.ыт.те. Уяр пултарулăхĕн çак енне асăннă чухне унăн çырас ăсталăхĕнче Л. Толстой, А. Чехов, И. Бунин витĕмĕ пуррине палăртса хăвармалла.

Тĕлĕнет Александр Яковлевич пиччĕшĕнчен: мĕнле-ха вăл паян кунчченех харпăрлăх психологийĕн каяшĕсенчен хăтăлаймасть? Кашни самантрах пурлăх пухма тăрăшать Уçăп. Пĕр алă тĕп кĕреш юман касса киле турттарса хурсан пăсмĕччĕ тесе хурать вăл шăллĕпе сăмахланă хушăра. Вара мĕн тăвăттăн вĕсемпе тесе ыйтсан çăкăр ыйтмаççĕ вĕт тет. Умри пахчине те çур урама яхăн ярса илсе тытать.

«А тен, пурнăç инстинкчĕ çавнашкал? — тесе шухăшласа пырать Александр. — Çын юлашки сывлăшĕ тухиччен малаллине ĕмĕтленет. Чирли эп вилмелле тесе, ватти пурăнса çитрĕ тесе ĕçлеме пăрахсан е ĕçке ярăнсан мĕн пулса тухĕ? Пурнăç чарăнса ларĕ». Çакăн йышши шалти монологсемпе çын чун-чĕрине, ăшри туйăмĕсене тарăннăн уçса парать автор. Пĕр-пĕр персонажăн илемлех мар енĕсене кăтартнă чух та ытарлăнрах е систерсе калама тăрăшать

вăл. Примитив мелĕсенчен, ытлашши тӳртĕн е ярлăк çакса этеме хак парассинчен асăрханать чăн-чăн ăста.

Уçăпа илсен, унăн çав пурнăç инстинкчĕ текенни вактĕвек чеелĕхпе суя-ултавра курăнать. Шупашкара таврăнсан Александр Яковлевич харăсах темиçе çыру илет. Колхоз председателĕ Басовпа вăрман хуралçи çырăвĕсене вуласан вăл пиччĕшĕ ун ячĕпе, писатель ячĕпе, хӳтĕленсе илемсĕр ĕçсем тума та вăтанса тăманнине пĕлет. Çак тепĕр хут тарăн шухăша ярать ăна, пăшăрхантарать те.

«Виçĕ кун, виçĕ каç» повеçре те темле пысăк ĕç-пулăмсемех курмастпăр эпир. Кунта пĕтĕмпех Роман Петров писатель асилĕвĕсем, каласа панисем, курни-илтнисем. Калавçă вăтăр çул ĕлĕкрех хăйпе пĕрле институтра вĕреннĕ Якур патне çитсе курма шухăш тытать. Лешĕ хăй йыхравлать-ха ăна. Мĕн тери хитре пулнă иккен вăл, Якур, тахçан яш чух! Талант тенĕ ун пирки пурте. Художник пулма ĕмĕтленнĕ çамрăк. Тантăшĕсем ăна ăмсаннă, хĕрсем Якур куç хĕссен ун хыççăн таçта кайма та хатĕр пулнă. Анчах та кĕтмен çĕртен ун чухне Якур, пурне те тĕлĕнтерсе пăрахса, çулланнă хĕрарăма, Катерина Ивановнăна, качча илнĕ. Тĕрĕссипе, ун патне киле кĕнĕ. Апла пулсан темиçе пӳлĕмлĕ хваттер те, ĕçлемелли условисем те çителĕклех пулнă унăн. Мĕнле-ши, çак вăхăт хушшинче пысăк художник пулайнă-ши вăл? Çак шухăшсемпе персе çитет Петров яшлăхри пĕлĕшĕ патне. Çук, пĕрре те шутламанччĕ вăл хăйĕн юлташне капла курăп тесе. Юхăннă-мĕн Якур, мĕскĕнленнĕ, хавшанă. Вăтăр çула яхăн пурăннă вăл çума-çумăн çак мещенленсе кайнă, ултавлă та сăхă чунлă хĕрарăмпа! Акă мĕне пула пĕтернĕ вăл талантне, лешĕ ĕмсе илнĕ ăна пĕтĕмпех, эрешмен пек. Творчество валли чун ирĕклĕхĕпе çути кирлĕ. Çакă Якурăн юлман, сӳннĕ. Анчах та тинех кама айăплăн? Чуна сутма, совеçе çывратма юрамасть иккен. Пурнăçра йĕри-тавра ултав серемисем, асăрханаймарăн тăк — самантрах çакланан. Акă епле уçăмлă каланă кун пирки Петровăн шалти монологĕнче: «Хăвна ирĕк парсан кахалу сана çут тĕнче илемĕсемпе астарма тытăнать. Мĕн кăна çук пулĕ çынна илĕртмелли! Хитре хĕрсем, ĕçкĕ-çикĕ, пуш сăмах çаптарса ларни... Хăвна ху алла илеймерĕн иккен, ĕçлеме хистеймерĕн — куллен-кунах кăмăлу сивĕнсе пырать, ĕçлес хевтӳ пĕтет. Ун пек чухне çын тĕрлĕ сăлтавсем шыраса ла-

рать — хваттер пĕчĕккĕ-мĕн, çемье пысăк... Чунĕ пĕчĕкки çинчен çеç вăл никама та шарламасть. Художник сӳнет çапла». Шăпах çавнашкал пулса тухман-и вара Якурпа та. Автор художникăн, искусство çыннин, халăх умĕнчи сăваплă та пысăк тивĕçĕ пирки вырăнлă сăмах хускатнă.

Писатель сăнарĕ «Кĕрхи çумăр» повеçре те тĕпре. Анчах та автор унччен каланă сăмаха тепĕр хут каласран асăрханни, çĕнĕ çулпа утма тăрăшни лайăх курăнать кунта. Пирĕн прозăра çыракан çыннăн сăнарне çакăн евĕрлĕ сăнлани пулманччĕ-ха. Сахал курнă-и эпир ятлă-сумлă, яланах малта пыракан, пурнăçри йывăрлăхсене туххăмрах çĕнтерсе тухакан писательсен сăнарĕсене. «Кĕрхи çумăр» повесть геройĕ Эрне Хĕлипĕ чылай енчен çак калăпа ларман, урăхларах этем. Чăн малтан ун сăнарĕнче хирĕçӳллĕ енсем нумаййи тӳрех куçа тирĕнет. Ĕç каймасăр чăлханса ларнă самантсенче вăл таврари çынсемпе те, килти çывăх мăшăрĕпе те, хăйпе хăй те пĕр чĕлхе тупаймасть иккен, çĕтĕлме пикенет, вырăн тупаймасăр хăшкăлать. Çапла чылайччен асапланать этем сăмах тĕшши шыраса, чун-кăмăл чăлханчăкĕпе кĕрешсе.

Уяр ытти писательсенчен малтан илсе кĕрсе кăтартрĕ пире çыракан çыннăн лабораторине, унăн «хура ĕçне» те пытармарĕ. Уйрăмах пултарулăх ĕçĕнче пӳлĕнсе ларнă самантсенче йывăр туять Хĕлип хăйне. Çавнашкал «пӳлĕнсе ларнă» тапхăрта вăл Атăл леш енне кану çуртне каять. Акă Хĕлип хăйĕн вулаканĕсемпе пĕрле пĕр вăхăт канма тытăнать. Паллать иккен ăна кунта чылайăшĕ. Ав пĕр хĕрарăм ăна сăнаса, паллакан çынна курнă пек пăхса иртет. Чĕрĕ писатель тет-ши? Тен, çынсем хушшинче ăнсăртран килсе лекнĕ Турă вырăнне хурать? Мĕнпур япалана витĕр курса, пурне те пĕлсе, çынсене ăçта килчĕ унта тăн парса çӳрекен этем вырăнне картмасть-ши писателе? Тен, ытти çынсенче пур вăйсăр енсене, кăлтăксемпе çитменлĕхсене тупасшăн? Вара калĕччĕ: эс те пирĕн пек çынах, ытлашши пуçна ан каçăрт. Çук иккен, ку писательре хăйне пысăка хума тăрăшни, хăйне мăнаçланса тыткалани пачах та çук. Хрестоматилле сăнар картне лармасть темшĕн ку писатель сăн-сăпачĕ, хăйне хăй тыткалани. Пĕр сăмахпа каласан, пур енчен пăхсан та ахаль çынах Хĕлип. Унăн «сивĕ кăмăлĕ хӳтĕленмелли маска иккенне Рина килнĕ кунах сисрĕ-ха.

Хуппи кăна вăл. Аялта (шалта) çав вĕри юнах юхать пулмалла. Хăй сисмен хушăра сăнакаларĕ те ăна Рина — аптрамалла унпа. Иккĕленсе утать, сăнĕ мĕскĕн». Апла пулсан вăл та пирĕн пек çынах тесе шутлать хĕр.

Эрне Хĕлипĕ икĕ туртăм хушшинче асапланать. Пĕр енчен, пĕччен, çынсенчен уйрăм, хăйпе хăй çеç куçа-куçăн юлас туртăм ку. Çав вăхăтрах çынсем те илĕртеççĕ ăна, пурнăç таппи унта çке-ха. Вăрманти пушара сӳнтернĕ самантра кĕтмен çĕртен хăй çынсемпе уйрăлми пĕрле пулнине çĕнĕрен туйса илет Хĕлип. «Йышпа пĕрле вилме те çăмăлрах». Мĕн тери хитре чунлă вĕсем — инкекпе кĕрешме кар тăнă çынсем! Харпăр хăйшĕн ăшталанса мар, çут çанталăк илемне, ун пуянлăхне çăлассишĕн тухнă вĕсем пĕр ĕмĕттĕллевпе. Пирĕн прозăри хăш-пĕр произведенисенче чылай чухне пушарсăр ниепле те сюжет йĕрĕ малалла тăсăлмастчĕ. Çак тахçанах кивелнĕ, хытса ларнă схемăран хăпайман авторсем сисмесĕрех хăйсене хăйсем пародилесси патне çитсе тухни те, ытти кулăшла самантсем те сахал мар пулнăччĕ пирĕн прозăра. Пушарĕ хăй вара персонажа «паттăра» кăлармалли меслет, унăн хастарлăхне пит ансаттăн, яр тӳрремĕн кăтартма май паратчĕ. Уяр геройĕ вара çакнашкал хăрушла лару-тăрура çынсемпе пĕрлешсе, пĕрпĕр ирĕлекен япала пек, куçа «курăнми пулать» тейĕн. Нимле чап та, хăй тавра шăв-шав кăларни те кирлĕ мар иккен ăна: пушар сӳнтерес ĕçе йĕркелесе хастар ертсе пынăшăн ăна вăрман хуçалăхĕ укça пама йышăнать. Укçине илмест сăпай çын, ыттисенчен нимпе те уйрăммăн палăрман вăл хăй шухăшĕпе. Теприншĕн çакнашкал лару-тăрура шăв-шав кăларса тусан вĕçтермешкĕн мĕн чухлĕ май тупăннă пулĕччĕ!

Уяр хăйĕн геройне юратура та тĕрĕслесе пăхать. Ашкăнчăк е çăмăлттай туйăмсен сукмакĕпе çӳреме кăмăллакан этем мар Хĕлип. Ринăна саваканскер, вăл канăçа çухатса, çывăрайми пулать. Хĕрӳ туйăмсен вутĕнче çунакан Хĕлип ниме те пăхмасăрах Рина хыççăн Атăл урлă каялла каçать — мĕнле пулсан та унпа тĕл пулмаллах ун. Унтан пĕр тăхтамасăр Ишлее вĕçтерет, Ринăсен килне. Анчах та тепре тĕл пулма пӳрмен иккен Хĕлиппе Ринăна.

Акă ĕнтĕ тинех юратупа пĕрле Хĕлип патне хавхалану та таврăнчĕ, çырас кăмăлĕ хĕрсе çитрĕ ун. «Чунĕ тулли ун. Пĕве татса кайнă». Анчах та кану çуртне каялла, ĕç сĕтелĕ

хушшине, талпӑнакан Хӗлип ӑнсӑртран шыва кайса вилет. Ҫакнашкал вилӗм повеҫре характер логикипе ҫыхӑннӑ теме йывӑр. Автор этем шӑпин пӗтӗм кӑткӑслӑхне кӑтартас тӗллевпе ҫапла вӗҫленӗ ӗнтӗ хайлавне. Анчах та манӑн, вулаканӑн, кунпа килӗшес килмест.

1970-мӗш ҫулсен пуҫламӑшӗнче Уяр хӑйӗн чи лайӑх повеҫӗсенчен пӗрне («Ӑҫта эс, тинӗс?») пичетлерӗ. Унта кӑтартнӑ ӗҫ-пуҫсем тайгара пулса иртеҫҫӗ. Икӗ ача — пӗри чӑваш, тепри эвенк, Амикан, тайгана ним хӑрамасӑр ҫулҫӳреве тухаҫҫӗ. Тен, шӑпах ҫакӑ вӑл «хастаррисен ӑссӑрлӑхӗ» (Горький калашле)? Ан тив, пултӑр, анчах та илӗртӳллипе хавхалантараканни те, шанчӑк кӳрсе кӗрешӗве йыхӑраканни те тем чухлех ҫакнашкал утӑмра. Тем те пӗр тӳссе ирттерме тивет ачасен, темле кӗтмен инкекпе те куҫа-куҫӑн тӑраҫҫӗ вӗсем, анчах парӑнмаҫҫӗ. Пурнӑҫа юратни, тӗнче ҫине тӑп-тӑрӑ куҫпа, шанчӑкпа пӑхни тӗрек парать вӗсене, ҫавах вилӗмрен те ҫӑлать. Яланхи пекех, автор критика асӑрхаттарнисене шута илсе повеҫе юсарӗ. Ун хыҫҫӑн «Дружба народов» журналта вырӑсла та пичетленнӗччӗ вӑл.

Юлашки ҫулсенче ҫырнӑ хайлавӗсенче Уяр психологизмла ҫӗнӗлӗхсем шырани, ӑсталӑхне туптани уҫҫӑнах курӑнчӗ. Пысӑк темӑсем, ял хуҫалӑх е производство аталанӑвӗнчи ак халь татса памалли кӑткӑс ыйтусем курӑнсах каймаҫҫӗ пек писатель ҫырнисенче. Вӑл этем чун-чӗрин таппине тӑнлать, ырӑпа усалӑн шалти кӗрешӗвне сӑнлама тӑрӑшать, философилле ыйтусем тавра ытларах шухӑшлать. Ҫавӑнпа Уяр хайлавӗсенчен чылайӑшӗ актуаллӑ тема шыракан критиксен куҫӗ тӗлне пулмасӑрах юлчӗ пулмалла хӑй вӑхӑтӗнче. Сӑмах май Юрий Скворцов пултарулӑхӗ пирки те ҫаплах калама тивет.

Уяра тивӗҫлипех калав ӑсти теҫҫӗ. Тарӑн шухӑшлӑ калавсенче автор сӑнарсен психологине шалтан уҫса кӑтартать. Сӑмаха ытлашши вакламасӑр, кӗскен калать. «Ҫыру», «Пӗр сӑмах», «Мӑйӑр хуппи» тата ыттисене те асӑнма пулать. Пӗчӗк хуранӑн пӑтти тутлӑ текен шухӑш пуҫа пырса кӗрет вӗсене вуланӑ хыҫҫӑн.

Е тата писатель ҫырнӑ очерксене илер. Вӗсенче те хӑйне евӗрлӗ илем тӗнчи тыткӑнлать вулакана. Ыттисем асӑрхаманнине, тӳрех куҫа курӑнманнине кӑтартма тӑрӑшать очеркист. Очерксен чӗлхи илемлӗ те сӑнарлӑ. Ӑҫта-ӑҫта кӑна ҫитсе

курман-ши Хветĕр Уяр? Индире, Шри-Ланкара, Венгрире пулса таврăнчĕ. Кашнинчех хитре очерксем парнелерĕ вулакансене. Акă хăш-пĕр кĕнекесен ячĕсем: «Яланах çул çинче», «Çулсем-йĕрсем», «Тăван çĕршыв тăрăх», «Чăваш ялĕсем тăрăх», «Çĕпĕрти чăвашсем», «Шушăра, Саян тăвĕсем патĕнче», «Çул кĕнеки» т.ыт.те.

Пысăк писатель яланах чăн-чăн интернационалист. Хăйĕн тăван халăхне хисепе хуман, ун хуйхи-суйхине туйман çын ытти халăхсене те сума сумасть. Хветĕр Уяр çырнисенче, Украина поэчĕ Павло Тычина сăмахĕсемпе каласан, «пĕрлĕхлĕ йыш туйăмĕ» туллин тапса тăрать. Максим Горький, Александр Фадеев, Демьян Бедный, Гарин-Михайловский тата ытти вырăс писателĕсем пирки вăл хитре очерксем сахал мар çырчĕ. Асăннă çыравçăсенчен хăш-пĕрисем патша саманинчех пусмăрти чăвашсен хутне кĕрсе пичетре çырнă, патша тарçисен элеклĕ сăмах-юмахне тăрă шыв çине кăларнă. Тăван халăхăмăр ячĕпе тав тăвать вĕсене халь чăваш писателĕ çав пархатарлă ĕçшĕн.

«Шушăра, Саян тăвĕсем патĕнче» очеркне писатель Владимир Ильич Ленин ссылкăра пурăннă вырăна çитсе курсан, аслă çулпуçăмăр утса çӳренĕ сукмаксене йĕрлесен, унти сывлăшпа сывланă хыççăн хавхаланса çырнă. «Пĕр кĕнеке çырассишĕн кăна миçе пин километр тумарăм пуль эп», — тет писатель «Çул йыхравĕ» очеркĕнче. Çав асамлă çул йыхравĕ памасть те ĕнтĕ ăна мăкланса, пĕр вырăнта хытса ларма.

Юлашки кунсемччененех çанă тавăрса, хавхаланса ĕçлерĕ Уяр писатель, кунсем иртнине пăхмасăр. Çĕнĕ калавсемпе очерксем хайларĕ. Ĕçлеме вăл чăн та васкамасăр ĕçлетчĕ, чун хĕрмесĕр (гонораршăн çеç) пĕр йĕрке те çырмастчĕ. Ĕçне яланах тиркевлĕ хакласа, хăйĕнчен хăй çав тери нумай ыйтатчĕ. Ĕçтешĕсенчен те — çаплах.

Уяр творчество ĕçĕ пирки çырнисене те вулама кăмăллă, вĕсенче тимлĕ куç паллисем, çĕнĕ сăнавсем сахал мар. «Çакна асăрханă эп. Хăш-пĕр писателĕн кĕнекине вулатăн та автор хăйĕн чи çӳлти «тӳпипе» пынине сиссе тăратăн. Унтан çӳлерех, унтан тарăнрах нимĕн те юлман писателĕн. Вăл ку кĕнекене хăйĕн пĕтĕм пултарулăхне панă. Паллах ĕнтĕ, пур енчен те мар пуль, пĕр енчен çеç пуль. Çав кĕнекене кирлĕ енчен тата пăртак çӳлерех хăпармалла пулас

пулсан, авторӑн сывлӑшӗ пӳлӗнӗччӗ, аяларах анма та пӗвӗ ҫитмӗччӗ». Тӗрӗс калать писатель, сахал мар унашкаллисем те. Уяр кӗнекисем вара пирӗн проза тӳпине палӑртаҫҫӗ тенӗ пулӑттӑм эп. «Чӗлхе ӑсти», «психолог», «стилист» теҫҫӗ час-часах Федор Ермиловича хӑйӗн ӗҫтешӗсем. Ку чӑнах та ҫапла. Ҫамрӑк ҫыравҫӑсене пулӑшас енӗпе те сахал мар ӗҫлерӗ писатель, вӗсен ал ҫырӑвӗсене вуласа усӑллӑ сӗнӳсем паратчӗ яланах. Вӗрентекене час-часах тӗрлӗрен творчество семинарӗсенче курма пулатчӗ, проза секцийӗн ӗҫне те хутшӑнатчӗ вӑл. Унӑн вырӑнлӑ сӑмахне, ырӑ суннине ӑша хыватчӗҫ ҫамрӑксем. «Федор Ермилович мӗн калӗ», «Уяра вулаттарса пӑхсан лайӑхчӗ» тенисене тӗрлӗ ӳсӗмри ҫыравҫӑсенчен илтме пулатчӗ.

Польша писателӗ Ян Парандовский писатель ӗҫне вӑтам ӗмӗрсенчи алхимиксем нимрен ылтӑн тума хӑтланса асапланнипе танлаштарать. Ҫак сӑнарлӑ та витӗмлӗ танлаштару сӑпай та ӗҫчен, пысӑк культурӑллӑ писатель-коммунист Федор Ермилович Уяр ҫинчен шухӑшлана май асӑма килчӗ. Кун-ҫулӗ те, шӑпи те, кӗнекисем те, хӑй ӳкернӗ сӑнарсем те, килӗнчи пуян библиотеки те — пурте унӑн хӑйне ҫеҫ тивӗҫлӗ майлӑ. Пысӑк ӑстана нихҫан та ремесленникпа арпаштармастӑн. Ремесленник килопа, пӑтпа виҫет таварне е лавпа турттарать. Ӑста вара пӗрчӗн-пӗрчӗн, тӗпренчӗкӗн ырать. Вӑл чунра шӑрататать-ҫке-ха ылтӑнне.

Кун-ҫул пӳрнинчен иртеймӗн — кама мӗн панӑ!

*1984*

## СӐМАХ МЕХЕЛӖ

Ку кӗнекен ячӗ[1] хӑлхана килентермелле илтӗнмест те-и, тен, мӗншӗн тесен «мехел» сӑмахпа кулленхи калаҫура часчасах усӑ курмастпӑр эпир. Анчах та автор калас тенӗ шухӑша тӗп-тӗрӗс палӑртать вӑл. Мӗн-ха вӑл мехел?

> Мехел ҫитсессӗн ҫумӑр ярӑнать,
> Ҫунатлӑ чун ҫӳлтен ҫӗре анать,
> Чечек папки илемлӗн ҫурӑлать,
> Йӗркипелен юрри те юрланать.
>
> «Мехел ҫитсен» (*П. Хусанкай*)

---

[1] *Хветӗр Уяр.* Сӑмах мехелӗ. — Шупашкар: Чӑваш кӗнеке издательстви, 1980. — 224 с.

Урăхла каласан, мехел — философилле ăнлав, вăл хисеп пахалăха куçнин шалти процесне палăртать. Сăмахран, тăпрапа варнă сарă пĕрчĕ пĕр вăхăт хушши çĕр сĕткенĕпе тутлăхланса пиçнĕ хыççăн калчаланса шăтать, анчах мехел çитсен çеç. Çавăн пекех сăмах тĕшши те творчествăлла ĕçре мехел çитмесĕр шăтсан паха çимĕç кӳреймест. Ун пек чух кĕнеке вилĕ çуралать.

Хветĕр Уяр хăйĕн кĕнекинче литературăри тус-юлташĕсен ĕçне вуласа тишкерет-и е вырăс çыравçисен пултарулăхне сăнать-и, тĕпрен илсен, кунта сăмах творчество терчĕ-асапĕпе савăнăçĕ, ăсталăхпа стиль шыравĕсем çинчен пырать.

Илемлĕ литературăна юратакансем Хветĕр Уяр кĕнекисене лайăх пĕлеççĕ. Вăл чи тиркевлĕ ăстасенчен пĕри, стилист. Çав ăсталăх паллисем — хăйĕнчен хăй нумайтарах ыйтни, пĕртен-пĕр вырăнлă сăмаха шыраса асапланни, канăçсăрланни-иккĕленни çĕнĕ кĕнекене витĕрех çапнă.

Акă епле çырать автор хăйĕн ĕçĕ çине айккинчи куçпа пăхса: «Ман пирки калама та кирлĕ мар пуль. Эпĕ ытла та мĕшĕлти. Чакаланса ларма юрататăп. Çынсем: «Эпир малтан шухăшласа хуратпăр та вара шăкăр-шăкăр çеç çырса пăрахатпăр», — теççĕ. Эпĕ ав чылай чухне... хут çинче шухăшласа ларатăп».

Хăйне кăштах йĕплесе илес тени те сисĕнет-тĕр кунта авторăн, анчах та чăнни ытларах çак сăмахсенче. Паллах, кашни писателех çакăн пек асапланса çырмасть. Акă хăшĕпĕрисем мĕнле ĕçлеççĕ: «Çынсем пĕр-пĕр произведени çырнă чух малтан хăртаса кăна каятпăр теççĕ. Шухăшне часрах хут çине ӳкерме. Кайран вĕсем, çав писательсем, ал çырăвне якатса тухаççĕ». Ку ĕнтĕ пачах тепĕр тĕрлĕ стиль палли.

Хветĕр Уяр писатель лабораторине кĕрсе ăна шалтан, тӳрех куçа тирĕнмен енчен, кăтартма кăмăллать. Сăмах май каласан, пирĕн критиксен вăйсăрлăхĕ шăпах çакна тума вăй çитерейменнинче нимрен те лайăх сисĕнет. Пĕр-пĕр произведение тишкернĕ чух ытларахăшĕ содержание, пулса иртекен ĕçсене йĕркипе каласа панипех çырлахать. Ăсталăх, стиль хăйне евĕрлĕхĕ, сăнарлăхпа илемлĕх хыçалти вырăнта тăракан япаласем çеç, чи кирли — идея теççĕ те, çапла майпа эстетика туйăмĕ çуккине, чăн илеме ăнкар-

са илме, хаклама вăй çитерейменнине тӳрре кăларма пăхаççĕ. Ай-хай ытларах пултăрччĕç вĕсем Уяр кĕнекинчи пек, писатель лабораторине уçса кăтартакан тишкерӳсем. Сăмахран, «Тăхăрьял» авторне асăнса», «Тăхтипе паллашни» йышшисем. Творчество ĕçне кӳлĕнекен çамрăксемшĕн вĕсем питех те усăллă пулмалла. Тăван чĕлхемĕр хăват-мехелне ăнкарса илме, ăна юратма, уншăн çине тăма вĕрентчĕр.

Вырăсла çыракан çамрăксем писатель ĕçĕпе ăсталăх ыйтăвĕсем çинчен М. Горький, К. Паустовский, Л. Леонов, К. Федин, М. Шолохов калани-çырнисене тупса вулама, тĕпчесе вĕренме пултараççĕ. Чăваш çырулăхĕпе чĕлхи çинчен вара халиччен сахалтарах çырнă-ха. Ку ĕнтĕ чăваш çыравçисемпе литература тĕпчевçисен тивĕçĕ, вĕсен тăван культура умĕнчи парăмĕ те.

Кĕнеке авторĕ литературăри хăйĕнчен аслăрах юлташĕсене асилсе çырнисем те вулакана шухăша яраççĕ. Николай Шелепи, Иван Мучи, Влас Паймен, Стихван Шавли писательсен чĕрĕ сăнарĕсем тухаççĕ пирĕн куç умне. Кунта автор сăнани-курнине, асĕнче юлнине хăй сăрĕсемпе ӳкерсе кăтартать. Нумай çул хушши алла-аллăн ĕçлесе, куллен-кунах хутшăнса пурăннă çыравçăсем çинчен ăшă кăмăлпа, вĕсене хисепе хурса асилет вăл. Халь те чĕп-чĕрех пек акă Стихван Шавли. Кулли те, кăрнатир пек каçăр утти те, йĕплĕ куç харшисем те — йăлтах унăн. Ман асăмра та çаплах тăрса юлнă вăл.

«Эпĕ ун пирки ырă шухăшланисĕр пуçне ăна ним енчен те усă кӳреймен пуль. Шавли мана темиçе те пулăшнă. Инкеке лексен хӳтĕлеме тăрăшнă. Ĕçлеме хавхалантарнă». Çапла вĕçлет автор хăйĕн тав сăмахне.

«Сăмах мехелĕ» кĕнекери «Вырăс çыравçисем» ятлă сыпăкра Хв. Уяр А.М. Горький чăваш тата ытти вырăс мар халăхсене пулăшас енĕпе тунă пархатарлă ĕçсем çинчен çырать. Аслă писатель чăвашсене лайăх пĕлнĕ, вĕсем çинчен яланах ырăпа асăннă, таса та тӳрĕ кăмăлне, ĕçченлĕхпе ăш пиллĕхне палăртнă. Чăваш писателĕсенчен чылайăшĕ Горькипе çыхăну тытнă, тăван халăхăн экономикăпа культурăри çитĕнĕвĕсем çинчен тăтăшах çырса пĕлтерсе тăнă.

Автор 1934 çулта Хабаровск хулинче А.А. Фадеевпа тĕл пулни çинчен каласа парать. Вырăс писателĕн çивĕч ăс-

кăмăлĕпе пысăк эрудицийĕ, вăл кашни çын тĕлĕшĕпех тимлĕ пулни тин çеç çырма пуçланă чăваш çамрăкĕн шухăш-туйăмне тĕпрен хускатать, ăна малашнехи ĕçре хавхалантарать тата хăй вăйне шантарать. Аслă вĕрентекен сăмахĕсем, пил пек, ĕмĕрлĕхе автор асĕнче юлаççĕ.

Революциччененех е совет саманинче чăвашсем çинчен çырнă вырăс писателĕсен — Н.Г. Гарин-Михайловскин, Н.Д. Телешовăн, Демьян Бедныйăн, С.В. Диковскин портречĕсене те çĕнĕ йĕрсем хушать автор.

Кĕнекере чăваш писателĕсен произведенийĕсене тишкерсе çырнă рецензисем валли те вырăн тупăннă. Сăмахран, Çемен Элкерĕн «Ешĕл хунавĕпе» Уйăп Мишшин «Инçе çулсем тăрăхне» тарăн тишкернĕ. Е тата çамрăкрах, тинтерех çырма пикеннĕ авторсен кĕнекисене вуласа шухăша каять Уяр, вĕсен ăсталăхĕ ӳссе, пултарулăхĕ çĕкленсе пынишĕн савăнать. Ман шутпа, Л. Таллеров, Е. Лисина, П. Афанасьев тата ытти çамрăксен ĕçĕ-хĕлĕ çинчен каланă хавхалантаракан ăшă сăмах вăхăтлă та вырăнлă. Тата çак паха, кунта пĕртте вĕрентекенле мăнаçланса е çурăмран лăпкаса калаçни сисĕнмест. Опытлă писатель çамрăксен сăнарлă шухăшлавне, чĕлхе тирпейлĕхне палăртать, витĕмлĕ детальсене асăрхать. Тиркевлĕ куçпа хакласа усăллă сĕнӳсем те парать вăл.

Юлашкинчен кĕнекери калавсем çинче кĕскен чарăнса тăрасшăн. «Хупахри тытăçу» калавăн тĕп геройĕсен Спиридон Михайловпа Янтул ячĕсем историре паллă. Ку калава автор драма саккунĕсене тĕпе хурса çырнă тейĕн. Хупахра кĕске вăхăтра пулса иртекен эпизодра психологилле хĕрӳлĕх тапса тăрать. Калава пĕтĕмпех тенĕ пек диалогран йĕркеленĕ. Калаçу-тавлашуран геройсен шухăш-кăмăлĕ, психологийĕ яр уççăн куç умне тухать. Спиридон Михайлов чăваш халăхĕн ăс-тăнне мухтать, ун пуласлăхне çирĕп шанать. Янтул вара ăна хирĕçлет, патша чиновникĕсемпе улпутсем тăрăшсах сарнă элекле сăмаха ĕненет. Тен, пĕтĕмпех ĕненмест те пуль-ха вăл чăваш халăхĕ хевтесĕр те пуласлăхсăр тенине. Тен, вăл хăй шухăшĕсен чăнлăхне тĕрĕслемелле тавлашать Михайловпа? Иккĕленет? Е курсах та кайман вăл хăй пурнăçĕнче Михайлов пек тăван халăхне хӳтĕлекен,уншăн вута та кĕме хатĕр çынсене. Кунта Янтул кун-çулĕн драматизмла енĕсене витĕмлĕ уçса кăтартнă. Çапах та чăн

малтан Спиридон Михайлов сӑнарӗн чӗрӗлӗхӗ, ун психологилле ӗнентерӳлӗхӗ тыткӑнлать пире. Историзм принципӗнчен ним чухлӗ те пӑрӑнмасӑр документла чӑнлӑхпа тӗрӗслесе палӑртнӑ геройӑн идейӑлла позицине. Эпир пӗлетпӗр-ҫке: Михайлов тӑван халӑх шӑпине ҫӑмӑллатас тесе пӗтӗм кӗске ӗмӗрне панӑ, чӑвашӑн шалти пытарӑнчӑк генине фанатикла шанса тӑнӑ, ӗҫленӗ, кӗрешнӗ. Калавӑн чи пысӑк идейи шӑпах ҫакӑнта. Уяр таланчӗ ҫак пӗчӗк калаврах хӑй пуррине систерет вулакана.

Калава вуласа тухсан тата акӑ мӗн пирки шухӑша каятӑн. Пӗчӗк калӑплӑ произведенире пысӑк шухӑш калама ҫӑмӑл мар. Тен, ҫавна пулах хӑш-пӗр авторсем епле пулсан та роман ҫырма хыпӑнаҫҫӗ, тепӗр чух ним ҫукран нимӗр ҫӑраҫҫӗ.

«Сӑпай Ваҫук» калавра — иртнӗ ӗмӗрте Атӑлҫи халӑхӗсен культурипе йӑли-йӗркине нумай тӗпченӗ Василий Афанасьевич Сбоевӑн ҫамрӑк чухнехи кун-ҫулӗ. Паллӑ тӗпчевҫӗ хӑй вӑхӑтӗнче чӑвашсем ҫинчен сарӑлнӑ килӗшӳсӗр сӑмах-юмаха сивлесе тарӑн та ӑслӑ шухӑшсем чылай ҫырса хӑварнӑ. Вӑл чӑвашӑн йӑла-йӗркери пысӑк культурине, халӑх сӑмахлӑхӗн пуянлӑхне тивӗҫлипе хаклать. Историре паллӑ ҫыннӑн сӑнарне автор туллин те ӗнентерӳллӗн сӑнласа кӑтартнӑ.

Хальхи пурнӑҫпа тачӑ ҫыхӑннӑ ыйтусене «Пиччӗшӗпе шӑллӗ» калавра хускатнӑ. Ман шутпа, ку хайлава повесть тесен тӗрӗсрех пулӗччӗ. Автор ял пурнӑҫӗнчи улшӑнусене, ҫынсем ӑс-тӑнпа шухӑш-туйӑм тӗлӗшӗнчен пуянрах та культурӑллӑрах пурӑнма пикеннине сӑнласа пани витӗмлӗ.

«Сӑмах мехелӗ» кӗнекере пурте тип-тикӗс те кӑлтӑксӑлтӑксӑр тесшӗн мар эп. Сӑмахран, унӑн ӑш-чикӗ сапаланчӑкрах пек туйӑнать. Чӑнах та, мӗнле формӑллӑ хайлав кӑна ҫук пуль кӗнекере: калав, пӗчӗк портрет, очерк, тӗпчев статйи, эссе (ҫапла, кун пекки те пур), асаилӳ т.ыт.те. Кӗнекен пӗтӗмӗшле сӑн-сӑпачӗ тирпейлӗ те шӑнӑрлӑ тесе калама йывӑр.

Уяр хӑйне канӑҫ паман, нумай хутчен пуҫ тавра ҫавӑрнӑ шухӑшсене тӗрлӗ ҫӗрте тӗрлӗ сӑлтава пула калать. Хамӑр критика шӑлсӑрри пӑшӑрхантарать ӑна. Ку чун ыратни тейӗпӗр. Анчах та пӗр факта икӗ хут ҫырса кӑтартни кирлех те мар пуль. Шелепипе пӗрле Куйбышев облаҫӗнчи чӑваш-

сем патне кайсан куççăр этеме ял советне чĕнтерсе калаçни «Тăхăрьял» авторне асăнса» хайлавра та, «Шелепи пурнăçĕнчи виçĕ самантра» та тĕл пулать. Кунта редактор куçĕ тимсĕртерех пулнă курăнать.

Çине тăрсах шырасан вак-тĕвек çитменлĕхсем, тен, тата та тупăнĕç. Кĕнеке пахалăхĕ вĕсене пула чакмĕ те-и, анчах вĕсемсĕр вăл ӳснĕ çеç пулĕччĕ.

*1981*

## УЯР ÇĔРШЫВĔНЧЕ

Атăл тăрăх анаталла вирхĕнекен «Комета», темле васкасан та, пире Куйбышева кăнтăр çутипе илсе çитереймерĕ. Каçхи хула урамĕпе тăвалла хăпарнă май эпĕ хама ниçталла мар таçталларах туятăп: ывăннă, пĕртен-пĕр ĕмĕтĕм те часрах пĕр-пĕр хăлтăрккарах хăна килне те пулин çитсе вырнаçасчĕ тени кăна. Манăн çулташăм Федор Ермилович Уяр ывăнман та тейĕн (çапах та эпир вун виçĕ сехет пĕр хускалмасăр ларса пынă-çке!), пăхатăп та — вăл хăйне таçта инçетре çӳренĕ хыççăн тăван енне таврăннă çынла туять мар-и? Пĕлетĕп-ха, Куйбышев (унччен Самар) та уншăн тăван енех. Вăл 30-мĕш çулсенче çак хулара вĕреннĕ.

Акă утнă май Уяр хăй астăвакан урамсемпе çуртсене тĕсесе сăнать, хăшин ячĕсене улăштарнă иккен. Алă çул иртнĕ унтанпа, шутласан... çур ĕмĕр. Хветĕр пичче вара ĕнер çеç çӳренĕ тейĕн Самарăн шавлă урамĕсемпе: кунта акă вĕсен общежитийĕ пулнă, леререхри хĕсĕк тăкăрлăк урлă вăл икĕ сыпăклă чăваш шкулне çӳренĕ. Унта Влас Паймен вĕрентнĕ ăна, вăлах литература енне туртăнакан чăваш çамрăкĕсене пĕр ушкăна чăмăртаса ертсе пынă. Каçсенче яш-кĕрĕм пĕрле пухăнса сăвă каланă, концертсем кăтартнă... Асилӳ... Асилӳ... Шавлă та хаваслă, каялла таврăнми вăхăтсем.

Хăна килĕ Кавказран килнĕ халăхпа лăках тулса ларнă пулин те, турра шĕкĕр, пире валли те пĕр каçлăх вырăн тупăнчех. Эпир улпутсем мар — пуррипе çырлахар. Çывăхри кафене кĕрсе апатлантăмăр та тӳрех каялла хăна килне: çывăрар выртса, ыран кăвак çутлах тăмалла.

Исаклă районне каякан автобус ирпеултă сехетре хускалса çула тухрĕ. Ларнă-ларманах эпир чăвашсене тĕл

пултăмăр. Исаклă районĕнче çуралса ӳснĕ Индиряков Мишшапа унăн мăшăрĕ пулчĕç кусем. Куйбышевра пурăнаççĕ, каçхи сменăна ĕçе кĕриччен кăмпана кайса килесшĕн иккен. Мишша пире кунти чăвашсен пурнăçĕ çинчен каласа парать, вырăнти хыпарсене пĕлтерет. Юлашкинчен инçе çула кĕскетме пулăшнă чăвашсене Федор Ермилович Г. Комиссаровăн «Чăваш халăхĕн историйĕ» кĕнекине парнелерĕ. Мишша ыйтнипе эпĕ те кĕнеке хуплашки çине хушаматăма çырса хуратăп.

Исаклă хула пуль тенĕччĕ эпĕ. Нимле хула та мар, ял иккен. Чăн та, пысăк ял темелле. Лаша кӳлнĕ урапа та хисеплĕ транспортах шутланать-ха кунта. Кăштах тĕлĕрсе илемха тенĕн тăсăлса выртнă урамсенче лăпкăлăх хуçаланать, ютран килнĕ çынна курсан чарăнса тăрсах пăхас йăла та пур-ха исаклăсен.

Федор Ермилович лăкăрлă çулпа (пылчăка кунта çапла калаççĕ) хăна килĕ тĕлне куç хупса тенĕ пек илсе тухрĕ. Вăтам çулалла çывхаракан хĕрарăм, туллирехскер, командировка хучĕсене тĕсесерех пăхсан кăштах çухалса кайнă пекрех те пулчĕ: райком пуçлăхĕсемпе çыхăнса илме ĕлкĕрейменскер, вăл пирĕн «статуса» чухлаймарĕ пулас, «пĕртен-пĕр люкса тивĕçеççĕ-ши кусем!» терĕ-тĕр. Майра Федор Ермиловича пуç тӳпинчен ура тупанĕ таранах шăтарасла тĕсерĕ... Тавах çулташăн Индире туяннă сăран пальтине (унра темле асамлă вăй пуррине эпĕ каярахпа та пĕрре мар асăрхарăм) — тепĕр самантран эпир люксра.

Парти райкомĕн пуçлăхĕсем пире уçă кăмăлпа кĕтсе илчĕç. Пĕрремĕш вырăнне юлнă (вăл чирлĕ терĕç) иккĕмĕш секретарь Абузяр Гатаевич Галимуллин йышăнчĕ. Идеологи секретарĕ Александр Александрович Морозов та пирĕнпе пĕрлех ларчĕ. Пĕр-пĕринпе паллашнă хушăра эпир хамăр мĕн тĕллевпе çӳренине каларăмăр, пуçлăхсем район пурнăçĕпе паллаштарчĕç. Хĕрӳ вăхăтра уйра пуçтарман тыр-пул нумай выртнăран вĕсен хуйхи-суйхине епле ăнланмăн. Паллашу тенĕрен, капла калани тĕрĕсех те мар-тăр. Федор Ермиловича ентешĕсем лайăх пĕлеççĕ: чăвашла чухламан пуçлăхсем те тупса вуланă-мĕн унăн вырăсла тухнă кĕнекисене. Писатель творчествипе кăсăклансах тăраççĕ имĕш. Хăй вара, Федор Ермилович, тăван енне килнĕ е кайнă хушăра парти райкомне пит кĕрсех çӳремен иккен. Ун сăмахĕсе-

не ёненес тĕк, мăнкăмăллăх мар ку, чăрмантарма ырă мар тени.

Районти халăхăн социалла-экономикăлла тата культура пурнăçĕ çинчен самай тĕплĕ информаци пачĕç пире. Чи пысăк йышпа пурăнакан халăх районта чăвашсем иккен. Хĕрĕх пилĕк процент тивет вĕсен тӳпине. Унтан вара вырăссем. Мăкшăпа тутар ялĕсем те пур. Чăн-чăн интернационал темелле Исаклă районне унăн наци географине кура. Унтан вара ак çак факт та шухăшлаттарать: вырăс ялĕсем пĕрин хыççăн тепри пĕтсе пыраççĕ иккен. Халĕ районĕпе те вырăссем пурăнакан ултă хуçалăх çеç тăрса юлнă. Нумайăшĕ ашшĕ-амăш килне, тăван кĕтесе пăрахса Куйбышева тухса каять е çĕршыв тăрăх саланать. Чăвашсем хушшинче ку туртăм пит палăрсах каймасть иккенха, вĕсем ĕлĕкхиллех, йышпа, чăмăртанса пурăнаççĕ, авалтанах упраннă йăла-йĕркесене те пăрахасшăнах мар.

А. Морозов Исаклă районĕн пурнăçĕнчи демографипе этнос процесĕсене партин аслă шкулĕнче (Саратов) вĕреннĕ чух ятарласа тĕпченĕ, диплом ĕçĕ çырса хӳтĕленнĕ. Çавăнпа та ку темăпа калаçнă чух вăл дилетант пулманни уççăнах курăнать. Нацисен хутшăнăвĕсем, тĕрлĕ чĕлхесен пуласлăхĕ çинчен эпир уççăн калаçатпăр. Эпĕ çакна асăрхатăп: парти райкомĕн икĕ секретарĕ те функционерсем мар, вĕсем пирĕн вăхăтри интеллигентсем. Тен, интеллектуалсем тесен те ытлашши пулмĕ, Владимир Соловьев, Павел Флоренский, Николай Бердяев ĕçĕсемпе те паллашма ĕлкĕрнĕ вĕсем, çавăнпа «вырăс идейи» тавра шухăш çавăрнинчен тĕлĕнместĕп. Анчах та халăхсен пĕртанлăхĕ çинчен калаçатпăр пулсан мĕнлерех-ши ку енĕпе районти ĕç-пуçсем?

Эпир Федор Ермиловичпа калаçăва «чăваш идейи» еннелле çавăратпăр. Хăрушла начар иккен ку енĕпе лару-тăру. Чăваш чĕлхипе литературине пĕр шкулта та вĕрентмеççĕ. Ачасем пĕрремĕш класранах вырăс шкулĕсен программипе вĕренме тытăнаççĕ. Шутлăр-ха: Сирирен е пĕр-пĕр Малирен аслă шкула вĕренме килекенсене малтан ятарлă курсра вырăс чĕлхи вĕрентеççĕ, унтан тин ятарлă предметсене вĕрентме пикенеççĕ. Исаклă районĕнчи чăваш ялĕсенче вара пĕрремĕш хут парта хушшине ларнă ачана ют чĕлхепе пĕлӳ пама тытăнаççĕ. Ачасем çулталăка яхăн (сахалтан та) ним

ăнланмасăр учитель куçĕнчен пăхса лараççĕ. Каярахпа, ялти шкулсенче тĕлпулусем ирттернĕ вăхăтра, эпир учительсен шухăшĕсене те пĕлме тăрăшрăмăр. Вĕсем хушшинче ытларах чăвашсем. Çук, тĕпрен илсен, вĕсем те ырламаççĕ пуçламăш класранах вырăс чĕлхипе (программипе) вĕрентме пикеннине. Канккел шкулĕн завучĕ Илья Афанасьевич Петров кăна урăхларах шухăшлать-мĕн: ку процеса чарма çук ĕнтĕ, вырăс чĕлхисĕр ним те тăваймăпăр терĕ вăл. Чăн та, кĕске калаçурах çакă палăрчĕ: пирĕн оппонент иртнĕ тапхăрсемшĕн «чăнлăх» шутланнă хăш-пĕр догмăсене хӳтĕлетмĕн. Астăватăр-и, ун чухне пурпĕрех вырăс чĕлхи çине куçатпăр тесе ытти чĕлхесене хисепрен кăларса пăрахнăччĕ. Шупашкарта та пурччĕ унашкал пит инçетрине куракан «марксистсем». Сăмах май, И.А. Петрова та шутсăр хисеплеççĕ райком пуçлăхĕсем (шухăшлакан çын, лайăх педагог теççĕ).

Райкома ертсе пыракансем хăйсем те туймаççĕ мар чăвашсене тăван чĕлхипе культуринчен ютшăнтарни сиенлĕ пулнине. Анчах та çав пăрахăç традицисене сивлесе чăвашла вĕрентме тытăнас тĕлĕшпе татăклă утăмсем тăваймаççĕ. Камăн айăпне пула çавнашкалах япăхса кайнă-ха кунта ĕçпуççем? Ман шутпа, пĕр-пĕр пайăр çыннăн айăпне шырани тĕрĕсех пулмасть. Пирĕн идеологи системи мăн хавallă тĕнчен чи хаяр та кăра çилĕсен хевтипе ĕçлекен капашсăр пысăк армана (Библири молох пек) асилтерет. Чĕлхесемпе культурăсене, халăхсемпе нацисене шапа хырăмне чыхса авăртать вăл, унăн çиме юрăхсăр çăнăхĕ те, кĕрпи те общевăна сывмарлатса хавшатсах çитернĕ ĕнтĕ. Тата çитмĕл виçĕ çул каялла пĕрре хускалса кайнăскер, вăл никамсăрах пĕр чарăнми авăрать те авăрать ĕнтĕ. Çакна ăнланмасăр е курмăш пулса пурăнни те вăл паян айванлăх.

Ку çаплах тейĕпĕр. Анчах та пире тараватт йышăннă хуçасем кăмăла пăсакан япаласенчен пĕрне, «десерт» вырăнне, калаçу вĕçне хăварнă-мĕн. Район тăрăх çӳремелли пирĕн маршрута палăртнă май вĕсем çапла каларĕç: «Сире ăнăçу сунатпăр, анчах та çакна та пытармастпăр. Çулла Чăваш Республикинчен килсе кайнă «гастролерсем» хыççăн йывăр пулать сире тĕлпулусем ирттерме», — терĕç. Эпир Федор Ермиловичпа Крылов юптарăвĕнче чӳлмексене çĕмĕрсе пĕтернĕ тихалла (астăватăр-и, çăмăлттай та мăн кăмăллă-

скер, вăл сăртран лавпа аннă чух ĕрĕхсе каять) хăтлантăмăр мар-и: хуçасем каланине хăлхана чиксе пĕтермесĕрех çула тухма васкарăмăр курăнĕ унта тесе. Кайран тин, киле кайма пуçтараннăскерсем, райкома пуçлăхсемпе сывпуллашма тепре кĕтĕмĕр те пире çав гастролерсен мыскарисем çинчен тĕплĕн каласа пачĕç.

Ыр сунансем ахальтен мар иккен малтанах систерчĕç пире, унсăрăн ырă мар терĕç пуль. Йĕкĕр-Çăл ялĕнчи вăтам шкулта шутсăр ăшă та кăмăллă тĕл пулу ирттертĕмĕр эпир. Ун хыççăн ял халăхĕпе клубра тĕл пулса калаçма шутланăччĕ. Анчах та правлени таврашĕнчи икĕ-виçĕ çын колхоз председателĕпе бухгалтерне шыраса çур куна яхăн ирттерчĕç. Пĕри каланă тăрăх, вĕсене тин çеç фермăра курнă, тепри Исакла кайнă пулмалла тет... Каç енне сулăнсан çеç пĕлтĕмĕр пуçлăхсем хамăртан пытанса çӳренин сăлтавне. Эпир тĕлпулу ирттерес шанчăка та çухатнăччĕ ĕнтĕ (çитменнине, кăнтăрла иртсен лавккара шурă эрех сутма пикенчĕç!). Епле те пулин каялла Исакла çитсе ӳкесчĕ тесе шутласа ларнă чух пирĕн пата хĕвел ăшшинче те çĕлĕкпе çӳрекен вăтам çулсенчи арçын пырса тăчĕ. Эрехне вăл чăн малтан туяннă-мĕн те, епле те пулсан тепĕр тӳпе илесчĕ тесе шутлать. Çавăнпа хăрах куçне магазин çинчен илмесĕр калаçрĕ пирĕнпе. Чее çын вăлтнинчен эпир çакна пĕлтĕмĕр: писательсем çур сехетлĕх тĕлпулу ирттереççĕ те çĕр тенкĕ кĕсьене кăпăлт! çеç персе чикеççĕ иккен. Ял ĕçченĕ вара кунĕпе чĕкĕнтĕр кăларса та виçĕ-тăватă тенкĕрен ытла ӳкереймест... Акă ăçта вăл пуç ватмăш тупсăмĕ! Эпир çулуçавçăсем мар, çынсен йĕрĕпе çӳретпĕр иккен. Вĕсен чапĕ пире тиврĕ ав. Кунта пире те коммерци тĕллевĕпе хĕртĕнсе çӳрекен гастролерсем вырăнне йышăннă-мĕн. Чăваш тăванăмăрсем, эпир сире çаратма мар, парас, мĕнпе те пулсан пулăшас тесе килнĕччĕ (кĕмĕлпе мар тăк, кăмăлпа та пулин). Вăхăта сая ятăмăр иккен паян: мĕн тума кирлĕччĕ пире колхоз председателĕ (уйрăмах — бухгалтер!) кăна пĕлес пур?! Пухма каламаллаччĕ те халăха, килес пекки килсен çитнĕччĕ те. Анчах та халь тин ним тума та çукчĕ ĕнтĕ, кая юлнăччĕ. Акă колхоз председателĕ те таçтан тупăнчĕ эпир кайма пуçтарăнсан: унăн ĕçĕ чăнах та мăй таран иккен, уйсем тăрăх çӳреме çăмăл машина çук, ĕçлекен çынсем сахал т.ыт.те.

Тепӗр кунне эпир хамӑр «йӑнӑша» тӳрлетессинчен ӗҫе пикентӗмӗр. Пире район тӑрӑх ертсе ҫӳрекен ӑш пиллӗ чӑваша Владимир Михайлович Маслова (идеологи пайӗн пуҫлӑхӗ) эпир ял пуҫлӑхӗсене телефонпа пӗлтерме ыйтрӑмӑр: пӗртте ан шикленччӗр, хальхинче коммерсантсем[1] мар, чӑваш культурине пӗр пуссӑрах пропагандӑлакансем килнӗ.

Кунта ҫакна каласа хӑвармалла. Юлашки ҫулсенче Самар, Ульяновск облаҫӗсенче, Тутар, Пушкӑрт республикисенче пурӑнакан чӑвашсем патне культура ӗҫченӗсем часчасах тухса ҫӳреме пуҫларӗҫ. Инҫетри тӑванӑмӑрсем, культура тымарӗсенчен татӑлса кайнӑскерсем, чӑнах та кӗтеҫҫӗ республика хыпарӗсене, унтан пыракан элчӗсене. Анчах та ҫак ӗҫӗн калама ҫук пысӑк пӗлтерӗшне кура ӑна йӗркелесе пыракансен яваплӑха туйса вӑй хумалла. Чӑн-чӑн профессионализмсӑр пуҫне наци туйӑмӗ те ҫивӗч пулмалла культура миссийӗпе ҫӳрекен элчӗсен. Хальлӗхе ку енӗпе ӗҫ-пуҫсем япӑхрах пыраҫҫӗ-ха. Кам ӳркенмест (шабашниксен бригади пек!), ҫав тухса каять.

Хӑш-пӗр «бригадӑсен» нимӗнле программа та ҫук, шайӗ те примитивран ӳсеймен. Унашкал балаганҫӑсем чӑваш ӗҫне калама ҫук пысӑк сиен кӳрсе, чӑваш чысне ӳкерсе кӑна ҫӳреҫҫӗ. Эп ҫапла шутлатӑп: малашне ҫавнашкал «артистсем» хӑйсем те пӗрре ҫӳренӗ ялсене тепре кӗрес ҫук. Мӗншӗн тесен хӑйсем валли хӑйсемех лартса ҫӳреҫҫӗ вӗсем ял ҫывӑхӗсене «хура юпасем». Эпӗ ку йӗркесене ҫырман та пулӑттӑмччӗ ҫавсем акса хӑварнӑ вӑрлӑхран ӳссе ҫитӗннӗ ҫимӗҫсене хам тутанса пӑхман пулсан.

Иккӗмӗш кунне Канккелте пултӑмӑр эпир. Ҫӑмӑл машина тӗлӗшӗнчен чӑрмав туймарӑмӑр пӗртте — тавах райкомпа райӗҫтӑвком пуҫлӑхӗсене. Бензин дефицит иккенне пӑхмасӑр хӗрӗхшер ҫухрӑмри ялсене иле-иле ҫитерчӗҫ пире. Аслӑ Микушкелпе Кӗҫӗн Микушкел, Ҫӗнӗ Якаль, Сеперел, Ӳштел ялӗсене ҫитсе куртӑмӑр. Шкулта вӗренекенсемпе кашнинчех

---

[1] В.М. Маслов тӗлӗнсе те аванмарланса пире ҫакна каласа пачӗ: чӑвашран килнӗ ҫыравҫӑсен ушкӑнне ертсе ҫӳрекенӗ хӑйӗн сутӑнман романӗсене машинӑпах тиесе пынӑ пулнӑ-мӗн. «Ну, кама автограф парас?» — текенскере укҫасӑр валеҫет тесе шутланӑ вулакансем. Анчах лешӗ кӗнекене тыттарса: «Санран вунӑ тенкӗ», — тенӗ пулать куҫне мӑчлаттармасӑр.

тĕл пултăмăр, унсăр пуçне — ял клубĕсенче, уйра чĕкĕнтĕр кăларакансемпе, выльăх-чĕрлĕх пăхакансемпе...

Культурăна аталантармалли майсем, социалла условисем çителĕксĕр пулнăран çамрăксенчен чылайăшĕ хулана тарать. Ялсем ватăлса пыраççĕ, пурăнмалли çуртсем те унта-кунта хупăнкаланă. Сăмахран, Ӳшӳткел ялне илсен унта çĕр çирĕм килрен çитмĕл анчах тăрса юлнă. Исаклă районĕн чиккинчех вырнаçнă ку ял. Чиркӳллĕ хăй. Чиркӳсем районĕпе те тек çук иккен. Эпир ун хуçипе Владимир аттепе курса калаçасшăнччĕ, анчах вăл килĕнче пулмарĕ. Ял урамĕпе утса тухнă май хапха умĕнче ларакан ватăсемпе чарăнса тăрса калаçатпăр. «Тăван Атăлпа» ытти хаçат-журнала çырăнма кирлине асилтеретпĕр вĕсене, çитес çул ăçта мĕн-мĕн пичетленессине пĕлтеретпĕр. Ваттисем, ял «хуралçисем» чăвашла тухакан журналсене çырăнса илеççĕ, вулама та кăмăлласçĕ. Анчах та Ӳшӳткел ялĕ пуласлăхсăр ĕнтĕ. Çитмĕл килте пурĕ те хуçалăхра ĕçлекенсем хĕрĕх çиччĕн. Пĕтĕм хуçалăхне вара Тольятти хулинчи «Азот» завод сутăн илнĕ иккен. Çĕнĕ хуçасем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетсе тупăш илеççĕ, хуçалăхри ĕçсене тăвакансене хăйсен штатне илнĕ, укçине те аван тӳлеççĕ. Ĕне витисен шалти стенисем кафельтен пĕтĕмпех. Ку ĕнтĕ çĕнĕлле хуçаланни, хальлĕхе Самар облаçĕнче кунашкал хуçалăхсем пурĕ пиллĕк терĕç. Калама йывăр: мĕнле пулĕ Ӳшӳткел ялĕн малашĕ, анчах та çĕнĕ хуçасем экономикăпа пурлăх никĕсне ытларах тимленĕ май культурăна куçран вĕçертес хăрушлăх пур-ха кунта.

Çĕрсем аслă Самар тăрăхĕнче, ялпа ял хушши вун-вун пиллĕк çухрăм, хăш чух ытларах та. Хăш-пĕр ялсем пĕр çурт юлмиех çĕр питĕнчен çухалнă ĕнтĕ. Федор Ермилович астăвасса, Сук шывĕнчен инçе те мар Куршухка ялĕ ларнăмĕн те, халь ун вырăнĕнче çырмаллă-уйлă çара вырăн çеç тăрса юлнă. Пирĕн «гидăн» Владимир Михайловичăн тăван ялĕ пулнă ку. Вăл пире хăйсен пӳрчĕ ларнă вырăна кăтартать. Унта халь те чип-чипер хурăн ӳсет. Ун çинче Владимир Михайлович тахçан хăпарса çакнă шăнкăрч йăви. Ялăн телейсĕр шăпине пĕлнĕрен-тĕр, ун çумĕпе иртсе çӳренĕ чух кашнинчех темскер чуна хĕсет пек. Саланнă ял çумĕнче масар, унта Владимир Михайлович ашшĕпе амăшĕ, тăванĕпĕтенĕ. Кунашкал ăраскалсăр ялсем пĕрре çеç мар районта.

Пирĕн маршрут вĕçленсе пырать. Юлашки кунсенче пирĕнпе идеологи пайĕн инструкторĕ Вера Ивановна Моторина çӳрерĕ. Вăл Çĕнĕ Якальте çуралса ӳснĕ, чăваш чĕлхине шкулта вĕренмен пулин те, пирĕнпе таса пуплет. Эпир Вера Ивановнăна ытти ĕçĕсене пăрахсах пире ялсем тăрăх ертсе çӳренĕшĕн тав тăватпăр. Малалла ĕнтĕ эпир Сухари-Матака çул тытатпăр. Федор Ермилович кунти çулсене çеç мар, çынсене те лайăх пĕлет, çавăнпа та хамăр тĕллĕн те аташса каймăпăр. Текех пире гид кирлĕ мар ĕнтĕ.

Сухари-Матакра ик çĕр ала киле яхăн. Тахçан Ӳштел тата Çĕнĕ Якаль ялĕсемпе пĕрле пĕр хуçалăхра тăнă вăл. Халь ĕнтĕ уйрăлнă вĕсем пĕр-пĕринчен. Ĕлĕкрех колхозăн тĕп центрĕ Ӳштелĕнче пулнă, çавăнпа та социалла условисем тĕлĕшĕнчен вăл вăйлăрах аталаннă. Сухари-Матака вара мансах кайнă е кăшт каярахпа ĕлкĕрĕ-ха тенĕ-тĕр — тимлемен ял ыйтăвĕсемпе нушисене. Пуçламăш шкулăн класĕсем халь те революциччененех лартнă йывăç çуртра вырнаçнă. Ĕненес килмест: Федор Ермилович та çак çуртрах вĕреннĕ пулнă-мĕн. Акă вăл пĕрремĕшпе иккĕмĕш класенче вĕренекен ачасене хăй çара уран чупнă вăхăтсене асилсе каласа кăтартать. Пĕчĕк чăвашсем ашшĕ-амăш чĕлхин кĕввине тăнлаççĕ, куçĕсем çуталнăран вĕсен юнĕнче чĕлхе чĕнĕвĕ вăраннăн туйăнать мана. Хăйсене мĕншĕн ирĕксĕрлесех ют чĕлхепе калаçтарнин, вĕрентнин сăлтавне чухлаймаççĕ-ха хальлĕхе вĕсем. Чăваш ăс çутавçи И.Я. Яковлев Самар, Хусан, Чĕмпĕр кĕпĕрнисемпе ытти çĕрсенче тӳсме çук йывăр вăхăтра вун-вун чăваш шкулĕ уçма мехел çитернĕ. Совет саманинче вара çав шкулсене хупса пĕтерме çеç пултарнă. Авăрнă та авăрнă хайхи хăрушă арман.

Тахçантанпах шухăш тĕвĕленĕччĕ эп Уяр çĕршывне çитсе курма. Ун повеçĕсемпе калавĕсенче пĕр-пĕр топонимика ячĕ тĕл пулсан ăна автор хăйсен тăрăхĕнчи вырăнсенчен илсе панăн туйăнатчĕ. Сухари-Матак ялĕ таврах тусем-сăртсем. Вĕсен ячĕсене манасран çырса хуратăп. Хуралту, Кĕслету, Ишету, Капанту, Çӳлту, Вăрăмту, Тĕмету... Ял варрипе пĕчĕк çеç Сухари (типет-тĕр?) шывĕ юхса иртет, ун икĕ айккинче те шурлăх-хăвалăх. Çав шурлăх тавра вырнаçнă Сухари-Матак.

Пĕр сехетре эпир ял курса, ун тавра çаврăнса çитрĕмĕр. Тăвалла урампа хăпарса укăлча патне çитсен Федор Ерми-

ловичсен çурчĕ ларнă вырăнта чарăнса тăтăмăр. Кунта ĕнтĕ урăх çынсем пурăнаççĕ, çурчĕ те урăх. Çапах та çурт никĕсĕнчи тăпра та хаклă этемшĕн. Пӳрт умĕнче тарăн пусă пулнă-мĕн те, çур ял шыв ăсма унта çӳренĕ. Шывĕ таса, шăла тивмелле сивĕччĕ имĕш. Тараса та çук ĕнтĕ халь. Федор Ермилович пĕр самант шухăша кайса тăрать. Эп те чĕнместĕп, чăрмантарас теместĕп. Тепĕр самантран вăл асаилӳ çиппине сыпăнтарать те ашшĕ çинчен каласа пама пикенет. Айăпсăртан айăпласа, кил-çуртне конфискацилесе ăна Çĕпĕре ăсатнă... Унта вăл часах суккăрланнă. Тепĕр çур çултан вăхăтсăрах çĕре кĕнĕ.

Паллах, нимле халăх тăшманĕ те пулман вăл. Анчах та ывăлĕ çумне «тăшман ачин» репутацийĕ сухăр пек çыпçăнса ларать. Эп астăвасса та усă куркалатчĕç-ха çав ярлăкпа вăхăтран вăхăт «Уяр кампанине» ирттерекенсем. Халĕ вара Федор Ермилович прокуратурăран ашшĕне реабилитацилекен официаллă хут илнĕ.

Эпир ял курса таврăннă тĕле пирĕн кил хуçи Александр Васильевич хăйĕн тимĕр утне («Жигули») кӳлсе те тăратнă ав — вăл пире Сухари-Матак тавралăхне кăтартса çаврăнасшăн. Александр Васильевич — Федор Ермилович пиччĕшĕн мăнукĕ, Çĕнĕ Якаль шкулĕнче ачасене вĕрентет. Сунара çӳресси вара ун хоббийĕ пулас.

Уя тухсан «Жигули» пĕр авăк ешĕл калча анипе пычĕ, унтан эпир Капанту тăрне хăпарма пуçларăмăр. Темле илемлĕ ирĕклĕх тухса тăчĕ пирĕн куç умне ту тӳпинчен, Чăвашра эп кун пеккине курман. Ту айккине лаппипех кăлкан пусса илнĕ, ун «чăтлăхĕнче», Александр Васильевич калана тăрăх, тилĕ-мулкач ырă курать. Кăнтăр енĕпе пысăк вăрман лаптăкĕ тăсăлать, хулăнăш те самай ун: сунарçăсем унта лицензипе пăши, хир сысни персе тытаççĕ иккен. Пăши какайне патшалăха парас пулать. Сунарçă хăй те пайтасăр юлмасть: ăна мăйраки, тирĕ, ăш-чикĕ лекет.

Сăртран ансан, шурлăх урлă каçнă чух, пирĕн ут кăштах чăхăмласа илет. Унтан эпир Пишпӳлек вăрманне пырса кĕретпĕр. Вăрман ячĕ мана «Нарспи» авторĕн çĕршывне асилтерет. Ăçтан-ши вăл, пĕрешкел ят? Александр Васильевич пире антарса хăварса Çĕнĕ Киремет çăлĕ патне вĕçтерет, унта кĕтсе тăма шантарать. Эпир Федор Ермиловичпа вăрмана кĕрсе кăмпа пăхкалас тетпĕр. Хутăш вăрман хĕррин-

че усрав хырлăх çитĕнме пуçланă. Тӳп-тӳрĕ лартса тухнă ретсем хушшипе икĕ-виçĕ утăм тусанах масла кăмписем курăнса кайрĕç. Тата икĕ утăмран куç умне кăмпа кĕтĕвĕ тухса тăрать, анчах та ватăлса кайнă иккен вĕсем. Тен, çимеççĕ кунти чăвашсем масла кăмпине? Ыйтам-ха Федор Ермиловичран тесе çăвар уçма çеç тăнăччĕ, çав самантра курăк ăшĕнчен мулкач ялт! сикрĕ те чăтлăх еннелле вĕçтерчĕ. Пĕчĕк савăнăç кӳчĕ вăл чуна, туйăмсене те çĕнетрĕ. Мулкач йĕрĕпе кăшт шаларах кĕрсе пăхар мар-и. Акă патвар хурăнсем шап-шуррăн курăнса кайрĕç — унта хура кăрăç пулма тивĕç. Кăмпаçă туйăмĕ улталамарĕ иккен мана. Анчах та кăрăçсем те ватăлнă. Шутсăр нумай, çавапа çулмалăх та пур. Çапах та тиркевлĕрех суйласан тупăнкалать тăварлама юрăхли те.

Унтан эпир вăрмантан тухатпăр та Киремет çăлĕ патне утатпăр. Çăлне кăна тирпейлĕн пăхсах тăраççĕ-мĕн. Пĕлтĕрсем тасатса пура янă. Сăрт айĕнчен тапакан çăл шывне пĕчĕк сыпкăмпа киленсе ĕçетĕп: чĕрĕлĕх шывĕ тейĕн. Çăл патĕнчен тăвалла хăпаракан çулпа колхоз утарĕн уçланкине çитетпĕр. Эпĕ çитмĕл çичĕ вĕлле шутласа кăларатăп. Хуçи килне кайнă пулас. Çăмламас йытти пире «ятламасть» — куçран пăхсах чухлать-тĕр эпир усал шухăшпа çӳременнине. Пыл хурчĕсем те хĕле хатĕрленеççĕ ав — аранçă çеç кĕркелесе тухаççĕ йăвине, ĕçлĕ хĕрӳ вăхăчĕ иртнĕ вĕсен. Кунтан инçех мар Федор Ермилович ашшĕ те утар тытнă пулнă-мĕн. Эпĕ «Танатари» Ярилене, Ухтиван ашшĕне, асилетĕп самантрах. Пĕлместĕп, тен, ăнсăртран çуралнă ассоциаци çеç ку!

Чылай вăхăт иртрĕ ĕнтĕ эпир тухнăранпа, ав хĕвел те ту хыçне (эпĕ ту ятне тӳрех чухлаймастăп) пытаннă, анчах та Федор Ермилович пĕр тухнă пек чухне çитмен вырăн хăварас мар тет-тĕр: тепре килесси хăçан-ха! Ăçта васкас пирĕн чăнах та. Уйранлă шывĕ хĕрринче те пĕчĕк тăхтав тумасăр иртер мар. Эпĕ хальччен кунашкал тăрă юхан шыв курман. Ĕçме те юрăхлă иккен ун шывĕ. Хальхинче те тутанса пăхмасăр иртсе каяс мар — дегустатор репутацине упрамаллах. Юмахри асамлă çăл шывĕ тейĕн!

Çăмăл машина сăрт çумĕнчи айлăмпа питĕ ерипен кусать. Митта пусси (çăлĕ) патĕнче мĕн те пулсан курмалли пурах пек туйăнать. Чарăнатпăр. Тĕне кĕмен чăваш ячĕпе

çыхăннă ĕнтĕ ку çăл историйĕ. Митта ята эпĕ мĕн кĕçĕнренех пĕлнĕ — хамăр ялта, Сиккассинче, вĕсен йăхĕ-шывĕ хунавлă. Чаплă художник Анатолий Миттов ял çывăхĕнче пейзажсем ÿкернине астăватăп. Халь ун выставкисенче çав ĕçсене сăнаса пăхатăп та, вĕсем ман чунра калама çук нумай асилÿ çуратаççĕ. Митта Ваçлейне тата кам пĕлмест.

Çăлĕ валак тăрăх юхать. Кăнтăр апачĕ вăхăтĕнче кĕтÿ анать иккен кунта тапăра. Пирĕн патра кунашкал кĕтÿ çÿретмелли ирĕк вырăнсем юлман та. Кунта вара тĕнче ынатлă.

Пишпÿлек вăрманĕ аслă-мĕн, вăл сăрт çине тавăрса пăрахнă пĕр-пĕр Улăп кĕрĕкне асилтерет мана. Кăмпа вырăнĕсем çакăнта пулма тивĕçлĕ. Эпĕ уплюнккана сăнасарах пăхсан уйăрса илме пултартăм-ха. Анчах пеленкке текеннине пуçласа куратăп. Вăл кăштах пирĕн вăрмансенчи хыр кăмпине асилтерет, апла пулин те хĕрлĕ кĕрен тĕсĕ унăнни пекех витĕр палăрмасть, шупкарах. Кăмпа чăнах та нумай кунта, сумкăсене самантрах тултартăмăр.

Килелле май хускалсан эпир тепĕр тĕлте самай вăхăт хушши чарăнса тăтăмăр. Хуралту тăрне хăпарса курмасăр кайсан çылăх пулассăнах туйăнчĕ. Таврари тусенчен чи çÿлли иккен вăл. Тен, ятне кура, чăнах та ун тăрринче тахçан хурал тăнă, тăшманран сыхланнă. Федор Ермилович хир качаки пек тăн-тăн утăмпа утнине куратăп та, хама ленчешкеленме памастăп: тапалан, тăрне çитсен канса илĕн! Çав хушăра ватти пире кĕтсе тăмалла тенĕн чарăнать те, икерчĕ пек лаптак чул шыраса тупать. Унтан хĕррисене катса çавракалатать... вара аялалла кустарса ярать. Çытма йĕмпе чупнă чухнехине асилет паллах. Чулĕ, кăлтăрмач пек кусса, хăвăртлăхне ÿстерсех пырать. Ту çинчен анса çитсен те уй тăрăх кусать-ха вăл тепĕр авăк. Манăн ун пекех пулмасть — ăслай-хăнăху çук. Çавна кура Хветĕр пиччен куçĕсем чеен çуталса илеççĕ. «Куртăн-и?» тесшĕн пек вăл яланхилле шÿтлесе.

Хуралтуран инçех мар Вăрăмту. Килелле çул пирĕн ун çумĕпе тăсăлать. Федор Ермилович пире хăйĕн ашшĕ арбуз, тын (дыньăна çапла калаççĕ) лартса çитĕнтернĕ вырăнсене кăтартать. Хĕвел пичĕ, меллĕ вырăн пахча çимĕç валли. Халь ĕнтĕ ку лаптăксенче унашкал ачаш çимĕç ÿстерсе аппаланмаççĕ. Шел, ырри час манăçать.

Кĕрхи кунсем кĕскелнĕ. Каç пуласси инçе мар. Питĕ вăхăтлă çитрĕмĕр иккен яла. Пире Александр Васильевич мăшăрĕ Ирина тата ывăлĕсем Кольăпа Ваççа хапха умĕнчех кĕтсе илчĕç. Эпир пĕр харăс виçĕ сумка кăмпа пырса лартатпăр — кусем ним усăсăр йыт кутне кĕл сапса çӳренĕ иккен тесе ан калаччăр.

Ăшаланă кăмпа хыççăн матрӳшке чейĕ калама çук техĕмлĕ. Пылпа — уйрăмах. Каçхи апат туса эпир васкамасăр ял клубне утатпăр. Федор Ермилович нихçанхинчен те шухăшлăрах пек туйăнать мана тĕттĕм урампа утнă май. Хăйĕн ентешĕсен чунĕ патне тӳрĕ çул тупакан сăмахсем шырать пулас. Мунча кунĕ паян, шăмат кун. Ку йăлана ялĕпех çирĕп тытса пыни сисĕнчĕ. Нумайăшĕ тасалса тухса клуба çитсе ларма та ĕлкĕрнĕ ав.

Кунта калаçу пĕртте лекци еккипе каймарĕ. Ентешĕсем Федор Ермиловича тӳрех ыйтусем пама пикенчĕç. Мĕншĕнни те паллă: вăл çырнă кĕнекесене вуланă, журналсенче те сăнасах тăраççĕ. Хальхи вăхăтра мĕн çырать-ши тата писатель? «Таната» романăн иккĕмĕш кĕнеки вĕçленет-и? Шăпах çавăнпа ĕçлет халь автор, Хусан архивĕсенче материал пухрĕ çулла. Федор Ермилович творчество лабораторийĕпе те пăртак паллаштарать. Маншăн та шутсăр кăсăклă туйăнать вăл каласа пани. Çичĕ-сакăр ялта та итлерĕм эпĕ Уяр чăваш культури çинчен, хăйĕн творчествăлла ĕçĕсем пирки калаçнине, çапах та кашнинчех урăхларах йĕркелет вăл калавĕн сюжетне, çĕнĕ фактсем хушать. Апла пулин те пĕр шухăша пусăм тусах калать Федор Ермилович кашнинчех.

Тăван чĕлхерен, культурăран писни хăрушă. Амăш чĕлхине, халăхне маннă çын ытти халăхсене те хисеплемест. Ăна хăйне те ним вырăнне те картмаççĕ. Кирек епле халăх та хайне евĕрлĕхĕпе илемлĕ, çав пулăшать ăна ытти халăхсемпе танлăн хутшăнма, этемлĕх культурине пуянлатма.

Сисетĕп: çак сăмахсене Федор Ермилович чунне ыраттарса калать. Мĕншĕн тесен пĕтĕм творчестви унăн çавна çирĕплетсе парать. Паян писательсем хушшинче хăйсене хăйсем çĕнетӳ пуçаруçисем е прорабĕсем тесе кăшкăрашса çӳрекенсем те курăнса кайрĕç. Вĕсем чапшăн ăшталанаççĕ, хисеплĕ ятсемпе премисем тăпăлтарса илесшĕн. Мĕн

пытармалли: пурте эпир 1985 çулта (ирĕк парсан), кĕрхи шăнасем чĕрĕлнĕ пек, йăшăлтатма пуçларăмăр, хăюлантăмăр. Хветĕр Уяр вара çирĕм-вăтăр çул каяллах чăн патриот тата Гражданин пулса кĕрешнĕ. Çавăншăн кураймастчĕ те ăна партипе администраци бюрократийĕ, кĕнекисене çунтарсах тăратчĕ, съездсемпе пухусенче тăлпалатчĕ, выговорсемпе хăрататчĕ («КЛИП», 5 № вулăр). Çук, темле хаярланса тапăнсан та хăй çулĕнчен пăраймарĕç çыравçа. Акă паян та, ентешĕсем умĕнче, тӳрĕ сăмаха тӳрĕрен калать вăл, мĕншĕн тесен сахал мар ĕçленĕ. Каярахпа пулин те, чăваш халăх писателĕн хисеплĕ ятне тивĕçнĕ Хветĕр Уяр.

Тĕлпулу чылая тăсăлчĕ. Сывпуллашса уйрăлма та вăхăт. Ирех тăрса Шупашкара çул тытмалла-çке пирĕн.

Сывă пул, Уяр çĕршывĕ. Чипер юл, Сухари-Матак. Тепре тĕл пуличчен!

*1990*

Пурнăç Ю. Скворцова нумай çирĕплетсе хăварнă. Тата ĕçлеме вĕрентнĕ. Çут çанталăк ăна сăпайлăх та пысăк ăс панă-мĕн.

*Хв. Уяр*



## ЙЫХĂРСАН ИНÇЕТЕ КĔРЕН ПАРĂС

Хальхи вăхăтра, шкул реформине анлăн пурнăçа кĕртсе пынă тапхăрта, тăван чĕлхепе тăван литературăна вĕрентес ĕçĕн пĕлтерĕшĕ нихçанхинчен те пысăк. Апла пулсан илемлĕ литература ăстисен умне самана пысăк задачăсем çине-çинех кăларса тăратать. Мĕншĕн тесен чуна парса пысăк ăсталăхпа вĕрентмелли литература хăй те пуç таймалла пысăк пулмалла. Шкулпа литература хушшинчи çыхăнусене тачăлатасси — хальхи пурнăç хистевĕ. Мĕнле сывлать паянхи шкул? Çĕнĕ варкăш сывлăшĕ хуçаланма пуçланă-и унта? Вĕренӳ ĕçне çĕнĕлле йĕркелесси мĕнлерех пырать? Тăван чĕлхепе литературăна вĕрентесси кирлĕ пек пулса пырать-и? Ытти нумай-нумай ыйту шухăшлаттарма тивĕçлĕ çыравçăсене. Майĕ-мелĕсем те сахал мар вĕсен: сăнарласа ӳкерсе те, публицистикăлла çивĕч статьясемпе очерксенче те калама пултараççĕ хăйсене мĕн савăнтарнипе пăшăрхантарнине, чуна ыраттарнине. Тӳрех калас пулать, хальлĕхе пирĕн чăваш çыравçисем çителĕклĕ таран тимлемеççĕ-ха шкул темине. Ку ĕç малашне те çаплах пулса пырсан, инерципе кайсан нацилле чăваш литературин хевти чакма тытăнмĕ-ши? Кунта чăн малтан мана ак мĕн шухăшлаттарать. Инженерсемпе тухтăрсем те, экономистсемпе космонавтсем те тата ытти нумай-нумай специалист та кирлĕ çĕршыва. Анчах та кунпа пĕрлех чĕлхепе кĕвĕ-юрă ăстисем те, художниксемпе сăвăçсем те малашне те тухсах

пыччăр тӳсĕмлĕ те ĕçчен чăваш халăхĕ хушшинчен. Нумайăшĕ вĕсенчен паян шкул парти хушшинче ларать, пĕлӳ пухать. Культурăпа экономика аталанăвĕ вĕсенчен килĕ малашне. Илемлĕ, сăнарлă, янравлă чăваш сăмахне куç пек упрама, çине тăрса аталантарма кирлине асра тытма халалланăччĕ Петĕр Хусанкай. Хамăр çĕршыври тăванла культурăсем аталанса, кулленех илемленсе пынă чух Çеçпĕлпе Хусанкай шанчăкне факел пек йăтса пуласлăха талпăнассн — пурсăмăрăн тивĕçĕ те.

Писатель кĕнекине вуласа эпир пурнăç пирки шухăшлатпăр, автор пире мĕнпе те пулин пулăшасса кĕтетпĕр. Çавăнпа та кĕнекери сăнарсен чăнлăхне пурнăç чăнлăхĕпе тĕрĕслетпĕр. Çав чăнлăхсăр кĕнеке авторĕн ĕçĕ ним тума та кирлĕ мар. Пирĕн общество умĕнчи чи пысăк задачăсенчен пĕри вăл — ăс-тăнĕпе те, ӳт-кĕлеткипе те килĕшӳллĕ, лайăх аталаннă граждансене пăхса çитĕнтересси. Паян яслие е ача садне çӳрекен ачасенчен кашниех пысăк сас паллипе çырăнма тивĕçлĕ Гражданин пултăр. Пулас ăрусен «тĕкĕрне» пăхса эпир пулас литература шăпине курма тивĕç. Сăмахран, ача сачĕсенче чăвашла калаçма хăнăхтарасси мĕнле йĕркеленсе пырать-ха пирĕн? Уйрăмах — хуласенче? Çакăн пирки шухăшланă май Чингиз Айтматов «Литературная газета» хаçатра пăшăрханса каланă шухăшсене тепĕр хут асилтересшĕн. «Фрунзере кăркăс шкулĕсен шучĕ пĕртте ӳсмест, çав вăхăтрах çĕршер çĕнни лартаççĕ. Республикăн тĕп хулинче кăркăс чĕлхиллĕ ача сачĕсем уçма тахçанах вăхăт çитнĕ. Çакна пурнăçлама никам та чармасть ĕнтĕ, анчах кам та пулин ĕçшĕн хыпăнни те сисĕнмест. Хальхи лару-тăрура çак ыйтусене татса пани халăхшăн питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ пулни каламасăрах паллă-çке. «Харкам хăйĕн базисĕр мĕнле наци культури пулма пултартăр-ха», — тет çыравçă. Чăн-чăн интернационалист, тĕнчипе паллă литератор Ч. Айтматов ленинла наци политикипе Конституци гарантилекен танлă та ирĕклĕ правасем пирки çеç калать-çке-ха кунта. Хамăра илсен пире валли те тем чухлех çакăнта шухăшласа пăхмалли.

Саманипе пĕрлех этемĕн ăс кăмăлĕ те, чунĕ те кăткăслансах пыраççĕ. Илемлĕ литература, самана тĕкĕрĕ пулнă май, çĕнĕрен те çĕнĕ задачăсем умне пырса тухать. Чи йывăр çĕклем чи талантлисем çине тиенет. Теприсем вара тахçа-

нах кивелнĕ сăнарĕсене кĕнекинчен кĕнекине сĕтĕреççĕ, çĕр хут та каланă шухăшсене «чăмлаççĕ». Хăш-пĕр чухне писатель çырни вăхăтăн вĕтĕ али витĕр тухса çĕнĕрен çуралнă пек, тăван культурăн ылтăн çӳпçине кĕрсе вырнаçать. Вăхăтсăр çĕре кĕнĕ Юрий Скворцов шăпах çавнашкал çыравçăсенчен пĕриччĕ. Вăл ытларах çитĕннисем валли çыратчĕ пулин те ăна ача-пăчан юратнă писателĕ теме май килет. Ун калавĕсемпе повеçĕсенче чылай чухне шкул пурнăçĕ тарăн сăнланатчĕ, ачасен шалти туйăмĕсене, вăрттăн пурнăçне уçса пама пултаратчĕ автор. Çакнашкаллисенчен пĕри — «Славик» калав. Вăтам тата аслă классенче вĕренекенсем валли çырнă «Хĕрлĕ мăкăнь» повеçре те кăмăла тыткăнлакан асамлă илем сахал мар. Вăл нумаях пулмасть Мускавра вырăсла пичетленсе тухрĕ.

«Славик» калав чăваш литературинче çеç мар, авторăн хăйĕн пултарулăхĕнче те кăшт уйрăлса тăрать. Çапла калани тĕрĕс пулнине мĕнпе çирĕплетсе пама пулĕ-ши? Акă, эппин, чăн малтан калав геройĕн, Славикĕн, сăнарне тимлĕнрех сăнаса пăхăпăр. Вун тăватă çулхи Славик, хулари музыка училищин иккĕмĕш курсне тин çеç пĕтернĕскер, консерваторие вĕренме кĕме хатĕрленет. Композитор пулас ĕмĕт хавхалантарать ачана, музыкăн универсаллă хăватлă чĕлхине туять те, шанать те вăл. Сăмахпа калайманнине фортепьянăпа е сĕрме купăспа ĕнерсе асапланать, чун кĕввине куçарма хăтланать. Вĕçĕ-хĕррисĕр, çырлаху кӳмен асап ĕнтĕ ку. Чăваш прозинче Ю. Скворцовчен çакнашкал психологизмла «эксперимент» тума кам та пулсан мехел çитернине астумастăп эпĕ. Çавăнпа та ĕнтĕ писатель пултарулăхĕнче музыка мĕнле вырăн йышăннине ятарлă тема лартса тĕпчени те вырăнлă пулĕччĕ. Славик чун-чĕринче кĕвĕ çуралнине, вăл кăмăл çуначĕсемпе çĕкленсе пĕр пысăк илем тĕнчи пулса тăнине психологизмла тарăнлăхпа, витĕмлĕ сăнласа кăтартать автор. Пирвайхи çĕнĕ юрăн шап-шурă тасалăхĕ пур çав çепĕç кĕвĕре, анчах та ăçта-ши ун пуçламăшĕ, ăçтан килсе ӳкрĕ вăл ача чунне пăлхатса та тухатса? Хальлĕхе уçăмлă мар-ха вăл, тин çеç чун тĕпĕнчен сăрхăнма пуçланă. Славик аса илет: ирхине çенĕке тухнăччĕ... Юнашар шурă кĕпеллĕ хĕр иртсе кайнăччĕ, çавăнтан варкăшса юлнăччĕ иккен хир фиалки шăрши. Чечек шăршипе музыка хушшинче мĕнле

çыхăну пурри Славике шухăшлаттармарĕ ытлашши, халь вăл пĕтĕмпех асамлă кĕвĕ тыткăнĕнче. Автор калаври музыка темине юрату темипе пĕтĕçтерсе тарăнлатать, Славик чĕринче кĕвĕпе пĕрлех пирвайхи таса юрату та çуралать. Тĕрĕсрех каласан, тен, кĕвви хăй те юрату туйăмĕнчен хĕлхем илсе амаланса каять. Ан тив, çитĕннисен куçĕпе пăхсан кăшт айванлăх та пур пек туйăнĕ ача çавăн пек хăтланнинче. Вăл чăн-чăн романтик, хăйĕн ĕмĕтне кăвар кайăка хăвалană пек хăвалать. Пурăнса курнисен ав хăйсен хуйхи-суйхи, тĕллевĕ-ăнтăлăвĕ, вак-тĕвек кулленлĕх «серепинчен» хăтăлайманни те пур, Славик, курăсăн, çав «ваклăхран» инçетре, вăл çутă ĕмĕтсен çутă тĕнчинче, кĕрен парăссем еннелле туртăнать. Çĕр çинчи кулленхи пурнăç урапин кустăрмисем вара яланхи йĕрпех чупаççĕ: Эльвирăпа Георги акă мăшăрланма хатĕрленеççĕ. Вĕсен хутшăнăвĕнче темле вăрттăнлăх пурах Славикшĕн: чăн-чăн таса юратăвах-ши ку е çынран катăк пулас мар тесе ĕмĕрхи йăлана пăхăнса тунă утăм çеç-ши?

Кунта каллех эпир Ю. Скворцов психологизмĕн тарăнлăхне туйса илетпĕр. Акă курăр-ха, çывăхланнă Эльвирăпа Георги хутшăнăвĕсене мĕнле сисĕмлĕн, шалтан çутатса кăтартать вăл. Хĕрпе каччă, хăйсене тĕллĕн çеç илсессĕн, кăсăклантармаççĕ те тейĕн автора: Славикĕн барометр пек сисĕмлĕ чунĕ туйтарать пире, вулакансене, кашнийĕн кăмăл-туйăм пахалăхне, хăйне майлă еккине те. Эльвирăшăн Славик — тасалăх символĕ, юмахри принц. Ача куçне тинкерсе пăхас тăк, хĕр хăй Георгие чун-чĕрипех парăнса савманнине те, хăй чĕрине качча тухма ирĕксĕрленине те ăнланса илме пултарĕччĕ — йăлтах çырнă унта. Чăннипех пĕрешкел çывăх чунсем мар Эльвирăпа Георги. Хĕр кăмăлĕ уçăрах та ăш пиллĕрех пулас. Акă пĕчĕк çеç деталь. Сăмах май каласан, Ю. Скворцов витĕмлĕ детальсемпе усă курма пĕлет. Çакна тин çеç çӳлерех асăннă хир фиалкин шăрши те çирĕплетсе парать. Е акă вăрманта Славикпе Эльвира кăпчанкă тĕми айĕнче кайăк йăвине асăрханине илер. Тĕлĕнмелле ӳкерчĕк ку. «Славике пуринчен ытларах чĕпĕсене кăтартнă чух хĕр епле çуталса-кăмăлланса кайни, ун пичĕ-куçĕ епле хĕм сапни тĕлĕнтерчĕ». Акă вăл Славик уçайман вăрттăнлăх. Эльвира, хĕртен хĕрарăм пулса, хăй те ача çуратма хатĕрленет (çут çанталăк панă инстинкт), тен, çак

сар сăмсаллă чĕпĕсенче хăйĕн пулас пепкине курать вăл. Акă чĕпĕсемпе йăпанакан Эльвира çывăхра ура сасси илтĕнсен: «Георги килет... Ăна ан кăтарт. Илемсĕр халь вĕсем... Вăл кулма пултарать», — тет. Мĕншĕн-ха хĕр хăйĕн каччине шанмасть? Тен, Георги чунĕ кăнттамрах савниййĕ унран çак пĕчĕк вăрттăнлăха та пытарать пулсан.

Ю. Скворцов пурнăç пулăмĕсене çиелтен ӳкерсе кăтартнипех çырлахмасть, вĕсене тымартан тĕпчет, шала кĕме тăрăшать яланах. Çавна пула ĕнтĕ вăл ӳкерекен сăнарсен характерĕсем кăткăс, чĕрĕ çынсенни пекех ĕнентерӳллĕ. Скворцов художник этемĕн шалти е тулашри сăн-сăпатне схемăлатасран асăрханни паха, чылай кĕнекере тĕл пулакан хура тата шап-шурă сăрсемпе çеç сăрланă кĕлетке-портретсене вăл, паллах, сивленĕ. Калав кульминациййĕ хĕрсе çитнĕ саманта сăнланинче те сисĕнет, сăмахран, ăста психолог аллин йĕрри. Акă вăл хайхи кĕтнĕ туй. Пĕчĕк йĕрсемпех драматизмла саманта чĕртсе тăрататъ автор. Эльвира чунĕ ĕсĕкленине фортепьяно каласа туй халăхне ташлаттаракан Славик сисĕмлĕн туять, анчах мĕншĕн-ха, мĕншĕн хĕр куççуль витĕр кулать, хавассăн курăнма тăрăшать? Кĕрсе пăхаймасть-çке-ха Славик хĕр чунне, пĕлеймест унта мĕн пулса иртнине. Пурах-тăр çав сăлтавĕ йĕме, унсăрăн ма-ха качча тухакан мĕн авалтанах хĕр ĕмĕрĕпе, чĕре чечек пек çурăлнă тапхăрпа хӳхлесе сывпуллашнă? Славикшĕн пулсан, Эльвира çеçкери çĕмĕрт вулли пек, шап-шурă пĕркенчĕк тăхăннăскер — хăй ĕмĕчĕсемпе лăпкаса, ачашласа çуратнă сăнар. Пӳрнепе сĕртĕнме те хăю çитермелле мар пек ăна. Анчах та, кур-халĕ, «Георги ташланă хушăрах аяккалла тинкернĕ хĕре питĕнчен чуптуса илчĕ. Эльвира карт! сиксе хирĕç пăхрĕ». Славикĕн çакăншăн кĕвĕçме сăлтав çук та темелле, анчах та...

Ĕмĕт тӳпинче ярăнса вĕçекен кайăка персе ӳкернипе пĕрех ку уншăн. Çапла çав, чыспа тасалăх ăнланăвне те çĕр çинчи пурнăçран илмен-тĕр вăл. Çуначĕсене те ĕнтсе курман-ха чечек çинчен чечек çине вĕлтĕртетсе вĕçекен лĕпĕш. Тинех ĕнтĕ калавăн сӳтрĕмĕ патне илсе çитерчĕ автор. Çумăр пĕлĕчĕсем капланса, тавралăх хуралса килчĕ тейĕн тăруках. Акă аслати кĕрслеттерчĕ мар-и, çиçĕм йăр ярлатрĕ. Унтан пĕр тикĕс ăшă çумăр чашлаттарма пуçланăн туйăнчĕ. Ташлакан, савăнăçлă, хуйха маннă халăх ăнланса иличчен Сла-

вик картишне тухса вирхĕнчĕ. Мĕн пулса иртрĕ-ха? Акă мĕн курать вăйăçа шырама пахчана тухнă Эльвира.

«Славик пахча хыçĕнчи пысăк хурăн вуллине хăрах аллипе ыталанă та тепĕр алă туни çине пуçне хурса пĕтĕм кĕлеткипе чĕтренсе тăрать». Вăл пичĕ тăрăх йăрлатса кусса анакан куççульрен те вăтанмасть ĕнтĕ тинех. Хăйĕн туйăмĕсенчен мăшкăлланă пек, вĕсене таса мар урапа таптанă пек йышăнчĕ арçын ача юлашки самантра пулса иртнине пĕтĕмпех. Тата хăйшĕн çеç те мар, Эльвирăшăн пăшăрханса намăсланчĕ пулас вăл.

«Мĕн тери хаяр эсир! — терĕ вăл сасартăк... — Эсĕ те çавсен хушшинче! Мĕн тупрăн эсĕ çавăн пек пушă этемре»? Айăплу сăмахĕсем кусем, хăйне тивĕççĕр шайри Георгие качча тухнишĕн те, чун-кăмăл тасалăхне, шăнкăрти çăлкуçне пăтратнă пек, упраса çитерейменшĕн те тивеççĕ Эльвирăна çак сăмахсем. Сисет хĕр вĕсенче тĕрĕслĕх пуррине. «Мана çапах та хĕрхен эс... Ан вăрç ытлашши...» — кусем Эльвирăн юлашки сăмахĕсем. Чăнлăх турри кашнин хăйĕн. Анчах та курманнин курас, курнин сурас килет тенешкел, малаллах туртать пурнăç юхăмĕ, тĕрлĕ майпа илĕртет, кăсăклантарать. Тен, Эльвира та йăнăш утăм туса хучĕ, çакна часах ăнланса илĕ. Çапах та этем йăнăшсăр та пурăнаймасть пулĕ çав. Вăл та кирлех пуль ăна çăкăр, сывлăш, юрату пек. Пурнăç тупсăмне шыракан, малалла утакан йăнăшатех. Славик те ав хăй пурнăçĕн пуçламăшĕнчех юратăвăн йӳçенкĕ эрĕмне тутанса пăхрĕ, ĕмĕтпе пиелесе капăрлатнă кермене аркатрĕ, çухату тӳсрĕ. Чăн-чăн пысăк юратăвĕ те, çухату тӳсесси те тата ытти те пĕтĕмпех малашра-ха унăн. Тӳрĕ чунне, сăпайлăхне, таса ĕненĕвне çеç упраса хăвартăрччĕ. Чун суранĕсем пирчеме пултарĕç.

Çак пысăк мар калававаскамасăр вуласа тухсан эпир Ю. Скворцов пултарулăхĕн уйрăм енĕсене çывăхрах курма пуçлатпăр, апла пулин те ун сăррисен вăрттăнлăхĕ тĕлĕнтерет. Хальхинче пĕчĕк Славикĕн пысăк чунне шалтан сăнласа кăтартрĕ вăл пире. Ман шутпа, çак калава литература теорийĕн урокĕсенче тишкерме пит меллĕ, уйрăмах композици тытăмне пайăн-пайăн (явăм, кульминаци, сӳтрĕм) илсе пăхса тухнă чух.

Ю. Скворцовăн «Хĕрлĕ мăкăнь», «Сурăм хĕрĕ», «Укăх хурăнĕ» повеçĕсемпе нумай-нумай калавĕ ачасене тӳрĕ чун-

лă та хастар пулма, пурнăçа юратма вĕрентеççĕ. Автор ырăпа усал кĕрешĕвне нихçан та сивĕ кăмăлпа айккинчен сăнаса тăман. Çав кĕрешӳре вăл яланах пархатарлă, çутă, шанчăк паракан пулăмсем енче.

*1991, 2009*

## СĔТКЕНПЕ ТУЛНĂ КĔРХИ ÇИМĔÇ

Ĕмĕр сакки сарлака. Çапах та кашниех пурнăç çулне хăй суйласа илет. Теприсен çав çул тумхахсăр та пăрăнăçсăр пулма пултарать. Епле пулсан та пурнăç нушине курман этем — çурма çын çеç. Çавăн евĕрлĕ шухăш тĕл пулнăччĕ эпĕ Ф. Достоевский çырнисенчен пĕринче. Юрий Скворцовăн «Кĕрхи кунсем» кĕнекине вуланă самантра аса килчĕ-ха ырăс классикĕ калани. Скворцов çĕре кĕнĕренпе самай вăхăт иртрĕ. Апла пулин те кĕнекери виçĕ повеçĕ те чĕрĕ пурнăç сывлăшĕпе сывлаççĕ, Хветĕр Уяр каларăш, «классика шайĕнчи произведенисем» вĕсем. «Сăваплă вут» повесть, сăмахран, ĕлĕкхи чăваш пурнăçне, татăклăнрах каласан, Пугачев пăлхавĕ çĕкленнĕ тапхăра сăнлать. Çапах та, ман шутпа, автор хăй умне историлле ĕç пулăмсен йĕр-сулăмне тĕпчес тĕллев лартман, ăна чун пурнăçĕ, çынсен шалти кăмăл-туйăм хусканăвĕсем ытларах кăсăклантарнă. Кусем ĕнтĕ ĕмĕрхи туртăм-пулăмсем — ырăпа усал, юрату, пурнăç, вилĕм, çутă ĕмĕт вĕçевĕ, хура хаярлăх...

«Повеçĕн тыткăна илекен вăйĕ мĕнре-ши?» — тетĕн вуланă май. Паллах, вăл сăнарлă, пуян, çăлкуç таппи пек шăнкăрти чĕлхере те.

«Тулли витресене хĕвел пĕрер ылтăн çĕрĕ пăрахрĕ».

«Тавралăх ешĕлĕн-пĕр ешĕлĕн курăнать. Çумăрсем хыççăн кĕр-р кайнă калча иленет. Ыраш шăркара. Улăх чечекпе тулнă».

«Чечеклĕ улăх çамрăк хĕрарăм пек. Вăл амаланать, киленет. Сайите те — унăн пĕр пайĕ. Ун кĕпи арки çеçкесене тивет, чечеке пĕтĕçтерет».

Çут çанталăк илемĕ кунта Сайитен шалти чун илемĕпе килĕшӳллĕ: этем хăй мĕн тери илемлĕ чунлă, çав тери курма-туйма пултарать тавралăх илемне. Çапла иккен, çут çанталăк хăй еккипе, хăй саккунĕпе пурăнать, аталанать, улшăнать... Вун улттăри Сайите улăх тăрăх утнă май тĕнче

илемĕпе киленет: «Пăхасчĕ çут тĕнче çине ĕмĕрех çак уяр кайăксен куçĕ витĕр! Сывлăм тумламĕ хăех — тĕлĕнтермĕш. Унта — çав çеçкерен çакăнса тăраканскерĕнче — ишсе çӳреме те, пĕр енчен чăмса тепĕр енне тухма та пулать. Сар чечек чашки ăшĕнче пӳртри пек утса çӳреме те пулать. Мĕн тери тирпейлĕ те таса унта!» Ю. Скворцов тĕнче литературин генийĕсем — О. Хайям, Руссо, Л. Толстой канăçсăррăн шыранă шухăшсен тупсăмнех шырать. Акă вăл Руссо йыхравĕ: цивилизаци туртăмне парăннă этем, чарăн, эс йăнăш çул çине ӳкнĕ, çут çанталăк килтерĕшлĕхрен ютшăннă! Сайите те туять: этем çут çанталăкра çеç «çын тивĕçĕн мăнаçлăхĕпе тăрса юлма» пултарать. Анчах та мĕн тăвăн, этем хăйĕн тепĕр урипе общество, социаллă пурнăç турти хушшине тăнă-çке-ха. Пысăк чунлă хĕр çулне кура мар тарăн шухăшлать: пĕртте таврăнмĕччĕ вăл нушаллă ял пурнăçĕн кулленлĕхне. «Пĕлет: çынсемпе пĕрле килет тӳрĕмарлăх, кăнттамлăх, йăлтах виçепе те усăлăхпа шайлашакан ăс, çын тивĕçне путаракан «йĕркелĕх», илеме палламан, çыннăн чун, туйăм-сисĕмĕсем пуррине пачах пĕлмен саккун, чун тасалăхне варалакан ирĕксĕр ĕç...» Повесть вĕçĕнче çавăн пек хăрушă ĕç пулса иртнине, ăна пула Евленпе Сайите кун-çулĕ трагедилле çаврăнса килнине кăтартать автор.

Этемĕн шалти тата тулаш илемне уçса палăртмалли сăнарлăх мелĕсем авторăн пачах çĕнĕ — кăштах идеализаци туртăмĕпе пырать вăл. Акă Евленпе Сайитен пирвайхи тĕлпулăвĕ. Мĕскĕнлĕхпе социалла танмарлăх (традицие — Сетнере — аса илер!) шалкăмĕ çапман иккен икĕ çамрăка. Вĕсенче танлăх, йăлана пăхăнса вăтанаслăх палăрманни, Ницше сăнарланă пуласлăхри мăнаçлă этем сăн-сăпатĕнчи уйрăм йĕрсем куçа тирĕнеççĕ. Ман шутпа, Ю. Скворцов фольклор типлăхĕ çине таянать, çав вăхăтрах çак тарăнри тымар çăлкуçĕ тухăç поэзийĕнчи эпикăллă поэмăсен стилистикипе поэтикине çывăх. Акă хĕрпе йĕкĕт, темле сăмах ăстисен ăмăртăвĕнчи пек, тĕлĕнсе те хумханса пĕр-пĕрне сăнаççĕ, тĕпчеççĕ, ыйтаççĕ, танлă хуравлаççĕ.

— Эй, таса тур амăш, хăш ялсем эсĕ? Мĕн ятлă? Сăмах хушма юрĕ-ши сана? — тет вăл.

— Сайите ятлă, — тавăрать хĕр. — Мĕншĕн эс ята ыйтатăн? Пире ятпа шырас çук. Шырасан шырĕç атте-анне ячĕпе.

— Пуян тавраш҄ӗ пулӗ? Катан пирпе тытнӑскер-тӗр? Сехетсӗр, тӗкӗрсӗр килте чухӑн арки ҫинче кун пек пӗр айӑпсӑр хӗр ӳсес ҫук.

— Ҫапла, пуян ҫын хӗрӗ эпӗ. Шурӑ пӳртре пурӑнатӑп. Чӑлан ҫумӗнче тӗкӗр пур — сӑн пӗтнине пӑхмашкӑн, стена ҫумӗнче сехет пур — ӗмӗр иртнине пӑхмашкӑн.

— Чӑн та, сӑну сарӑ. Кӗлеткӳ вӑрӑм. Ҫийӳ ҫутӑ. Пит ҫумасӑр пӑхаймӑн сан ҫине... Хирӗҫ пӑхма та именмелле.

Диалог татах та чылай тӑсӑлать; автор шухӑшӗ уҫӑмлӑ, вӑл пирӗн умра яланхи шайран ҫӳлерех аталанса хӑпарнӑ, чун пурнӑҫӗпе (хырӑм хуйхипе ҫеҫ мар!) пурӑнма пуҫланӑ «ҫӗнӗ ҫынсем» пулнипе палӑрать. Паллах, критиксем ҫакӑнта автор истори чӑнлӑхне пӑснине курнӑ. Ю. Скворцов вара пулма пултарнӑ ӗҫ-пулӑмсенчи ҫынсен типне сӑнласа ӗнентерет. Акӑ ӑҫта ҫунатланать талант хӑвачӗ.

Повеҫе вулама пикенсенех ҫакна асӑрхатӑн: автор «Нарспи» поэмӑри трагедилӗх сулӑмӗпе тӗрӗслет хӑй геройӗсем кӗрешӳ вутӗнче шыракан чӑнлӑха. Паян ӗнтӗ ҫакӑ пире икӗ классикӑлла хайлав хушшинчи диалог пек курӑнать. Анчах та ку — ятарласа тӗпчемелли тема. Диалог ҫӑлкуҫӗ — философилле тарӑнлӑх, тӑван культурӑн тӗп тымарӗ — шӑнӑрӗсене уйласа-ӑнкарса илме паракан мифологемӑсемпе универсалла сӑнарсем. Ҫавнашкал культура формисемпе модельсем («паттерн» тет вӗсене Альфред Кребер) кашни наци культурин хӑйнешкел. Ҫавӑн йышши пулӑмсенчен пӗри вӑл «Нарспи» поэмӑпа «Сӑваплӑ вут» повесть никӗсӗнчи тӗп хирӗҫӳлӗх (конфликт) сӑлтавӗ, ун арасланӑвӗ, тӗрлӗ варианчӗсем. Класс кӗрешӗвӗ ҫеҫ мар унта. «Этемӗн куҫӗ выҫӑ та пырӗ тутӑ» (И. Юркин), «Варуҫҫи» (Я. Турхан), «Айтар» (П. Осипов), «Хура ҫӑкӑр» (Илпек Микулайӗ)... Татах та чылай хайлава асӑнма пулӗччӗ. Этем пахалӑхӗсене чун куҫӗпе шӗкӗлчени-тишкерни тӗпре кунта.

Кунсӑр пуҫне Ю. Скворцов чӗлхинче архаика сӗмӗ самана колоритне тарӑнлатать. Мӗн чухлӗ кивелнӗ сӑмах шыраса-тӗпчесе тупнӑ автор халӑхра! Е тата хӑй мӗн чухлӗ ӑсланӑ! Йӑла-йӗрке, авалхи чӑвашӑн килти тата халӑх ҫинчи пурнӑҫӗ, кӗпе-тумтир, тӗн-тӗшмӗш палӑрӑмӗсем, этикет — ҫаксем пурте виҫ ҫӗр ҫул каяллахи чӑваш тӗнчин тулли ӳкерчӗкне чӗрӗлӗх кӳреҫҫӗ.

Кӗнекере «Уках хурӑнӗпе» пӗрле тепӗр автобиографилле повесть «Кӗрхи кунсем» ятпа пичетленнӗ. Юлашки по-

веçне автор хăй çĕре кĕнĕ çулпа палăртнă, çавăнпа та ун пĕлтерĕшĕ уйрăмах пысăк. Чылайранпа канăçсăрлантарнă пулмалла ăна çак хистевлĕ ĕмĕт-тĕллев. Телее, тĕве курпунĕ пек пуçтарăннă ăс-хакăл пуянлăхĕпе сăнани-тĕпченин пĕр пайне те пулин çырса хăварма ĕлкĕрнĕ вăл. Шухăшласа кăларнă суя ятсем хыçне пытанас тени те çук кунта. Пурнăç чăнлăхне «çара алпа» тытса ӳкерет автор, тепĕр чух пĕçерттерет те, анчах та нихăш тĕлте те, нимле самантра та Петя илемлĕрех, ыттисенчен маттуртарах, ăслăрах курăнам-ха тесе ăшталанни сисĕнмест. Сăпайлă, анчах тӳрĕлĕхшĕн çине тăма пултаракан, пурнăçа сăнакан таса чунлă ача сăнарĕ чĕрĕ, яланлăха асра юлакан сăнар. Мĕн тери таса туйăмпа савать вăл Зойăна, ку хăех чăн-чăн драма материалĕ. Ашшĕпе амăшĕн, Аркадипе Леньăн сăнарĕсенче те пурнăç чăнлăхĕ палăрса тăрать. Вăхăт шăвăм-юхăмне эскизларах ӳкернĕ пулин те самана сывлăшĕ витĕмлĕ палăрнă.

«Кĕрхи кунсем» кĕнеке Хв. Уяр тĕрленчĕкĕпе вĕçленет, хыççăмахпа темелле. Хăйпе хăй анкета ирттернĕ иккен çыравçă. Анкетăра виçĕ ыйту: 1. Чăваш çыравçисен темиçе хут вуламалли кĕнекесем пур-и? 2. Илемлĕ литература теекен ăнлану шутне кĕрекен чăн-чăн произведенисем нумай-и пирĕн? 3. Çĕр чăмăрĕ çинчен юлашки чăваш çухаличчен вуламалăх çырнă произведенисене асăнма пултаратăр-и?

Ансат та шутсăр кăсăк хăтлану ку чăн та. Ытла та вĕтĕ алапа алласа Уяр пĕрремĕш ушкăнра акă камсене курать: «Нарспи», Çеçпĕл, И. Тăхти, П. Хусанкайăн «Тилли юррисем», Игнатий Ивановăн «Чăваш халăх ывăлĕ» (пов.), Хумма Çеменĕ, Юман Мĕтриййĕ, В. Рсай, Митта Ваçлейĕ, Е. Еллиев, Илпек Микулайĕ, Ю. Скворцов хайлавĕсем. Тиркевлĕ куç иккĕмĕш ыйту хуравĕнче темиçе ята туртса пăрахнă, виççĕмĕшĕнче вара «Нарспи», «Тилли юррисем», «Чăваш халăх ывăлĕ» тата Юрий Скворцов çырнисем тăрса юлнă.

Уяр эксперименчĕ хăш енчен пĕлтерĕшлĕ-ха? Тен, вăл пирвайхи хут чи пысăк критерипе хаклать пĕтĕм чăваш литературине тĕнче литературин контекстне лартса. Чăн та, кунта калаçу Ю. Скворцов пултарулăхĕн (илемлĕх тĕнчин) чиккинчен тухать, анкета вара хăй шутсăр пысăк пĕлтерĕшлĕ, пĕртен-пĕр хăйнешкел хаклав. Асăрхарăр пулĕ: Уяр пĕр хайлава та тишкермест (анализ), ăш-чикне те, тулаш илемне те «тĕллесе» кăтартмасть. Вăл литература «хуçалă-

хӗнчи» пахаланхсенчен кашниӗн хӑйне тивӗçлӗ вырӑнне па-лӑртса-лартса тухать. Çапах та кунашкал оригиналлӑ мелпе хальччен никам та усӑ курманччӗ-ха. Мӗне пула ӗненте-рет-ха Уяр хаклани-пахалани? Нумай вӗреннӗ литература тӗпчевçи пек, çав тӗрлӗ кӑткӑс меслетпе шӗкӗлчесе, ӑнлав-семпе терминсем çине таянас вырӑнне Уяр талантлӑ ху-дожник интуицине (илем туйӑмӗ) шанать. Уяр критерине тӗпе хурсан иккӗмӗш е вун иккӗмӗш хут (йӑлӑхмасӑр) ву-ламалли авторсен йышӗ темиçе çынтан çеç тӑрать иккен. Паллах, эпир паян Уяр ятне те çав ушкӑнрах куратпӑр, сӑпай этем хӑй çырнисене хаклас темен ӗнтӗ. Олимп çин-че, чи пысӑк шайпа виçсен, виçӗ-тӑватӑ ят, нумайӑшӗ çак сӑрт тайлӑмӗнче, ытларахӑшӗ, тен, айлӑмӗнче.

Тепри çапла çырас тӑк, эпир, тен, иккӗленсе те илӗ-ттӗмӗр, анчах Уяр — сӑмах ӑсти, илемлӗх тӗнчине хӑйле курма-ӳкерме хӑват çитерекен çын. Ку çеç те мар, вӑл хӑй пурнӑçӗпе, пӗтӗм пултарӑвӗпе çирӗплетсе пачӗ тӳрӗлӗх сал-такӗ пулнине.

Мӗншӗн-ха Уяр хамӑр культурӑн ылтӑн çӳпçине Ю. Сквор-цов çырнисене кӗртет? Паллах, Уяр чӑнлӑхӗ — уйрӑм çын чӑнлӑхӗ теме те пулӗ. Апла пулсан кам аллинче вӑл çав асӑннӑ çӳпçене ӗмӗрлӗхе кӗртсе вырнаçтарас умӗн ларт-малли ылтӑн пичет? Кам ун хуçи? Влаçра ларакансем, тӗрлӗ хисеплӗ ятсемпе çутӑ медаль валеçекенсем? Шел пулин те, чӑваш менталитечӗн пӗр паллӑ енӗ çакӑнта палӑрать: кӑкӑр тулли орден-медаль çакса тултарнисемпе темиçе теçетке хи-сеплӗ ят туяннисем мар пирӗн наци совеçӗ теме тивӗçлӗ çынсем. Вӗсем сӗмсӗр мар, чавсапа хирмеççӗ, чап-мухтава пасарта туянмаççӗ. Ятсене асӑнмӑпӑр Уяр тӗслӗхӗпе. Каласа çеç хӑварар, пирӗн наци менталитечӗн чирӗ — дальтонизм, хурапа шурӑ тӗссене уйӑрайманни (е усала усал тесе куç-ран калама хӑяйманни).

Çук, кирек мӗн калӑр та, чӑн-чӑн ятлӑ-сумлӑ тӳресен-чен пӗри — Уярах вӑл. Ан тив, тишкермесӗр хаклатӑр. Капла вӑл «эп асӑрхарӑм çав Илеме, эсир те ман куçпа тӗсесе пӑхӑр-ха, асӑрхӑр» тесе çеç каласшӑн. Çапла, Ю. Скворцов илемлӗ (йӑлтӑркка) форма калӑплас тесе хыпӑнмасть, «кӑтралатнӑ» стиль те, сӑмах вӑййи те кӑсӑклантармасть ӑна. Кирек епле форма та илемлӗ. Чи кирли — япала (содержа-ни), пурнӑç пулӑмӗ хӑй картне (калӑпне) лартӑр, килӗ-

шӳллĕ те килпетлĕ пултăр. Автор чĕм кĕртмесĕр ниепле сăн-пулăм та чăнлăх сывлăшĕпе сывлама пуҫлаймасть. Скворцовăнни пек асамлă хур тĕкĕ перĕнсен ҫеҫ илемлĕх тĕнчи чĕрĕлет, вара кил-ҫурт таврашĕнчи ăпăр-тапăрпа ним мар ахаль япаласемех пурнăҫ еккине парăнса шал енĕпе вулакан куҫĕ умне тухаҫҫĕ. Шел, «сăнарлă куҫ», «пуян чĕлхе», «сăмах ăсти» тенисем пирĕн тахҫанах штампа куҫнă, такам пирки те калаҫҫĕ вĕсене.

Скворцов ӳкерчĕкĕсенче хытă пусса йĕрленĕ йĕрсем ҫук, сăн-пулăмсене ӳкернĕ чух та ытлашши усă курмасть вăл сăрсемпе. Уншăн ӳкерчĕк — тĕллев мар, унăн тарăнлăхĕ ансатлăх урлă килет. Нумайăшĕ ҫĕнĕ стиль шыратпăр, формăна ҫĕнететпĕр тет. Скворцов вара шăв-шавсăр, тусан тĕрĕлтеттермесĕр ĕҫлесе мĕн чухлĕ тупнă, ҫĕнетнĕ.

Уяр калани ҫумне эпĕ тата тепĕр йĕр хушнă пулăттăм. Скворцов чăн та ăста пулнă, анчах ҫынсене, пурнăҫа, ҫут ҫанталăк аннемĕрпе ун арки ҫинчи чĕр чуна юратмасан ҫавăн пек пысăк ҫыравҫă пулма май ҫук. Ҫав Юрату ҫуначĕхавалĕ ҫĕкленĕ те ăна сывлăш пӳлĕнмелле ҫӳллĕше. Юлашкинчен шăпа пурнăҫпа киленсе тăранма памасăрах ĕмĕрлĕх уҫлăхне вăркăнтарнă ăна — унта вара вăл пĕр пĕтĕмĕшле «тĕнче чунĕн» яланлăх пайне шăранса кĕнĕ. Ҫавăн пирки калать те ĕнтĕ Уяр «ҫĕр чăмăрĕ ҫинчен юлашки чăваш ҫухаличчен вуламалăх ҫырнă произведенисем» тесе.

Телейлĕ эпир, чăвашсем. Мĕншĕн тесен этемлĕх классикин ылтăн ҫӳпҫинче тĕнчен пĕр пĕтĕмĕшле кӳлепи-ӳкерчĕкне чăваш ячĕпе ҫĕнĕ йĕрсем хушса пуянлатакан пахалăх пур.

Ăна Юрий Скворцов таланчĕ пултарнă.

*2006*

## ШĂПА КАРЧĔСЕМ

Художник таланчĕ, вăл пур пулсан, темиҫе йĕркерех витĕр палăрать е сĕм тĕттĕмри шăши вучĕ пек, шалтан ҫутă сапса тăрать. Калăпăр, Юрий Скворцов калавĕсем пек. Совет саманинче хăйĕн вăрăм мар ĕмĕрне пурăнса irttерне ҫыравҫă (хăйнешкелрех тейĕпĕр) куҫа тирĕнмен, сăпайлă, ҫырлахуллă та сапăр кăмăллă тата ытларах чухне хура ĕҫрен пăрăнман ҫынсен кăмăл еккине сăнама-тĕпчеме юратнă.

«Нумай вӗренмен ҫыннӑн ӗнтӗ, манашкал, мӗн ӗҫӗ — хура ӗҫ», — тет «Ултӑк» калавра амӑшӗ хӑйӗн кӗҫӗн ывӑлӗ пирки. Анчах та этеме вӑл мӗн чухлӗ вӗренни е мӗнле вырӑнта ӗҫлени тата ун пурлӑхӗ-пуянлӑхӗ тӑрӑх хаклани шутсӑр йӑнӑш пулни мӗн тери уҫӑмлӑ курӑнать ҫак калавра. Чӑн та, автор шухӑшӗ-сӑнавӗ ҫиелтех выртмасть кунта, ӑна вӑл хӑй геройӗсен чунне тӗпченӗ май кӑларса пырать. Кашни калаврах ҫын характерӗн хысакине хыпашласа тупать ҫыравҫӑ, ун кун-ҫулӗн кукрашкисене йӗрлет. Пурнӑҫ условийӗсемпе халӑх хушшинчи хутшӑнусем этем характерне туптаҫҫӗ, унаҫҫӗ, хуҫаҫҫӗ те, «шӑпа карчӗсем» чӗрсе хӑвараҫҫӗ. Ю. Скворцов калавӗсенчи тӗп геройсенчен кашниййӗн шӑпинче асӑрхама пулать ҫав карт паллисене. Кунпа пӗрлех автор хайлавӗсенчи тӗпел тема — ялпа хула ҫыннисен пурнӑҫӗ, ялтан хулана пурӑнма-ӗҫлеме куҫнӑ этем кун-ҫулӗ, ял тунсӑхӗ, ачалӑхпа яшлӑха аса илни. Ҫавӑнпа та автор идеалӗ — асаттесенченех килекен йӑла-йӗркене манман, пурнӑҫ уттине ҫут ҫанталӑк килтерӗшлӗ ӗнерекен, ҫирӗп тымарлӑ ҫӗр ӗҫченӗ теме пулать. Нумайӑшӗ вӗсенчен хӑйне тивӗҫлине те (патшалӑхран) илеймесӗр ӗмӗрне ӗмӗрлет.

Паллах, ял пурнӑҫӗн те хӑйӗн тӳнтер енӗсем пур, сывӑ мар (суккӑр) чунлӑ е пурлӑха хапсӑнакансем те ҫук мар ҫӗр ӗҫченӗсен йышӗнче. Акӑ, сӑмахран, «Парӑм» калава илер. Мӗн тери тарӑн пӗлтерӗш хывнӑ автор ун ятне. Калавра сӑнланӑ геройсенчен пурин те тенӗ пек пур кам умӗнче те пулин парӑм. Анчах та кашниех туйса тӑрать-ши хӑй парӑмлӑ иккенне. Ҫук ҫав. Ю. Скворцов укҫа-тенкӗпе е пурлӑхпа ҫыхӑннӑ парӑм пирки ҫеҫ сӑмах хускатмасть калавӗнче, уншӑн кам умӗнче те пулин айӑпа кӗнӗ е ирсӗр ӗҫ тунӑ ҫыннӑн чун-чӗри хусканӑвӗсене уҫса кӑтартасси пысӑкрах пӗлтерӗшлӗ. Калӑпӑр, тӗп геройӑн, Сашӑн, кил-йышӗн пурнӑҫӗпе пуласлӑхне ашшӗн кукӑр аллине пула сирсе сирӗлми инкек хупласа хурать. Ашшӗ лавккана ревизиленӗ чух ҫамрӑк сутӑҫӑн улт ҫӗр тенкӗ тухман (растрата) пек кӑтартать. Ҫавна пула ним айӑпсӑр Нина умӗнче тӗрмене кайса ларас хӑрушлӑх сиксе тухать. Сӑмах май, ҫакнашкал ларутӑрӑва «Юманлӑхра ҫапла пулнӑ» повесть авторӗ пачах урӑхла тӗллевпе усӑ курать; пирӗн литература тӗпчевҫисем вара вӑл сӗнекен «вӑйӑ йӗркине» пӑхӑнса мӗнле-мӗнле пахалӑхсем тупса пӗтермерӗҫ пулӗ повеҫре. Тӳррипе вара, тем те

пур хайлавра, анчах та чăн-чăн искусство çеç палăрман унта. Çавăнпа та ку пĕр чăнлăха манма юраманнине асту-тарать: беллетристика, детектив, «чтиво» текен çырулăх тĕсĕсене хакламалли ятарлă критерисем пулмалла.

Таврăнар-ха эппин Ю. Скворцов калавĕ патне. Автор конфликта çав тери хиврелетсе тĕвĕлет пулин те, сăмах тутине туйса, нумай япалана систерсе тата вулакан тавçăрулăхне шанса калама тăрăшать. Растрата тунă Нинăна ăнран каймалла юратакан Саша пăтăрмах ашшĕн айăпĕпе сиксе тухнине пĕртте тавçăраймасть-ха. Каччă чĕринчи юрату хĕвелĕ тĕнчене те ăшăтать тейĕн, ирхи тавралăх Сашăн чунĕпе пĕр кĕвĕллĕ.

Хĕвел хĕрелсе сарăлнăччĕ. Пахчара иу-у-ука! тесе сар кайăк юрлатчĕ, курăк çинче — куккук куçĕ сапса тухнă пек — мерчен сывлăмччĕ. Пĕлĕт тӳпин хăрах енчен пĕлĕт кашталанса тăсăлатчĕ. Пахча хыçĕнчи улăх тăрăх тĕтре татăкĕсем уçăлма тухнă пекех çӳретчĕç. Сывлăшра çĕмĕрт, пан улми, чие çеçкин шăршисем пăтранса кайнă та, çав тутлă сывлăш ăша сипетлĕ сим пек юхса кĕрсе ӳсĕртсе яратчĕ.

Саша çут çанталăкпа кăна мар, чĕрене малтанхи хут пырса кĕнĕ çамрăк юратупа, чĕрен чи малтанхи вĕри юн сипечĕпе ӳсĕрччĕ. Пĕтĕм тĕнче темĕнле юмахри пек туйăнса тăратчĕ. Тин çуралнă вăрман улми çеçкисем аякран пăхсан юмахри пĕчĕк пӳрнеске пу-канесем, шурă, кĕрен сарахпанлăскерсем, туратсем çине ларса чуч-чу ярăнса тăраççĕ пек туйăнатчĕ. Пĕтĕм çĕр тăрăх, курăнми элект-рохумсем евĕр, тĕнче илемĕ куçса çӳрет пек. Урасем тăрăх, сĕткен пек, сан ӳте, сăн-пите çамрăклăхпа киленекен çĕр кăмăлĕ куçать... Тĕнче илемĕ, юрри, илтĕнми кĕвви сан чунна кĕрет.

Анчах та Сашăн çак асамлă саманчĕсем «иртнĕ» пурнă-çĕнче пулнă, тĕрмере ларса тухиччен, вĕсене вăл хĕрхӳ кă-мăл-туйăмпа аса илет. Тĕрмене вара çамрăк максималист хăйĕн савнă хĕрне инкекрен çăлса хăварас тесе лекет, тӳр-рипе — ун вырăнне пулса тухать. Ю. Скворцов хайлавĕсен-че çавăн пек рыцарьсем сахал мар, вĕсем — автор идеалне сывăх геройсем. Тен, вулакансем астăваççĕ: А. Емельяновăн «Хура кăрăç» повеçĕнчи Крысловăн кĕçĕн ывăлĕ Коля çак-нашкал лару-тăрурах ашшĕн килти хĕсмет хĕсĕрлевне тӳсей-месĕр хулана пăрахса тарать. Чăннипе, ун пек туса хăтăлман пулсан çамрăк умĕнче тĕрме хăрушлăхĕ çав тери пысăкчĕ. Кунта повесть авторĕ Ю. Скворцов хайлавĕсене творчест-вăлла куçпа тишкерсе ĕçленине, тăтăшах ун çине таянма тăрăшнине палăртса хăвармалла.

Нина лайăх ăнланать: Саша уншăн ларса таврăнчĕ тĕрмерен, анчах та халь мĕнпе тӳлесе татма пултарĕ парăмне. Вăл ĕнтĕ ялти учителе качча тухма ĕлкĕрнĕ, ачине çуратнă. Совесть тени кăшлать ун чун-чĕрине, канăç памасть. Темиçе кун йĕрленĕскер, акă тĕл пулать вăл йĕкĕте улах вырăнта.

— Саша, кала... Эс мĕн ыйтнине эпĕ йăлтах тума хатĕр... Йăлтах, йăлтах!

Саша чĕнмесĕр ун çине пăхса тăчĕ.

— Упăшкуна юрататăн-и? — ыйтрĕ вăл хуллен.

— Юрататăп. Анчах.. Сана кирлĕ пулсан эпĕ ăна та пăрахма хатĕр. Ачана çеç пăрахмастăп... Саша, кала!

Юратăвĕ вĕсен çӳхе кĕл сийĕпе витĕннĕ кăвар пек упранса юлнă иккен. Çав кăвартан кĕрлесе çунакан вут-кăвар çĕнĕрен арасланса кайма пултаратчĕ... Анчах та Нина упăшки, Семенов учитель, хăй çемйине мĕнле те пулин упраса хăварас тесе ăшталанаканскер, Сашăна, боксерсен чĕлхипе каласан, кăвапаран аяларах вырăна тĕллесе «çапать»: вăл Нинăн нимĕнле растрата та пулманнине, Саша колхоз машинин моторне сутса Нинăна хăтарас тесе панă укçана каялла ашшĕне тавăрса панине, ашшĕ унпа çĕнĕ çурт лартнине пĕлет. Çак йывăр хыпар çамрăкăн чунне пăчăртаса пăвсах лартать. Урăх чустаран унаса тунă тейĕн ашшĕне, çынлăх, чыс, хисеп тенисем ним те мар иккен уншăн! Вăл хăйĕннех перет: «Аçу пуçне шуратрăн! Эпĕ саншăн кунне-çĕрне пĕлмесĕр ĕçлерĕм! Кил-çурт çавăрса патăм... Авлантăр, пурăнтăр, çын пултăр терĕм. Халĕ суртăн-и аçу пуçĕ çине?!»

Повеçе вуланă май Михетер, Нарспи, Тăхтаман сăнарĕсемпе çыхăннă ассоциацисем кăвак хуппи пек çуталса илеççĕ. Ку ăнсăртран мар пуль тетĕп.

Саша таса юратăва сӳнме парас мар тесе саккунсăр ĕç туса хунăччĕ, мĕн сиксе тухасси çинчен шухăшламасăр, самант ăнтăлăвĕпе. Çав сӳнми юрату хĕрĕвĕ ăна тĕрмере те хуçăлма памарĕ, тӳсĕмлĕх парса тăчĕ. Семенов хыпарĕ вара уншăн тӳсмелле мар хăрушă япала пулчĕ. «Эпĕ çын куççулĕпе лартнă çуртра пурăнма пултараймастăп... Хăвах пурăн. Эпĕ саншăн тăвată çул ларса тухрăм».

Саша хулана тухса каять. Ю. Скворцов примитива, чăмласа пама кăмăллакан авторсен çулне сивлет, вăл тĕвĕлемен

финалпа усӑ курать. Нинӑн пиҫӗ характерӗпе тӳрӗ чунне шута илсен вӑл пур чӑрмава сирсе Сашӑна тӗл пулма тивӗҫлех: чӗринчи «ҫылӑхӗн» йывӑрӑшӗ вӑй ҫемми мар-ҫке-ха хӗрарӑмшӑн. Сашӑн чунӗнче те шӑпа карчӗсем ӗмӗрлӗхе йӗрленсе юлӗҫ — «айӑп ҫукран» айӑплӑ этеме ҫынлӑх енчен пӑхсан ӑнланма та, каҫарма та пулать, анчах саккуншӑн — пурте пӗрех.

Темиҫе сӑмах «Пушмак йӗрӗ» калав пирки. Ҫак калава, ман шутпа, Николай Любимов пек, Марсель Пруступа Джованни Бокаччо романӗсене тӗлӗнмелле ӑсталӑхпа вырӑсла куҫарнӑ пысӑк художник ытти чӗлхесене куҫарма вӑхӑт тупас пулсан вӑл тахҫанах тӗнче литератури шедеврӗсемпе ҫума-ҫумӑн тӑнӑ пулӗччӗ. Чипер сывӑ, хӑлхаллӑ-чӗлхеллӗ ҫуралнӑ ҫынсем калаҫнине илтетӗн те тепӗр чухне кӑмӑл хуҫӑлнӑран йывӑр шухӑш авӑрне лекетӗн: мӗн чухлӗ тасамарлӑх, ҫӳп-ҫап, киревсӗр-илемсӗр сӑмах сирпӗнсе тухать вӗсен ӑшӗнчен! «Пушмак йӗрӗ» калав геройне, Паняна, ав чӗлхесӗр ҫуралма пӳрнӗ. Анчах та мӗн тери илемлӗ, тирпейлӗ, таса этемӗн шалти тӗнчи; Паня чӗлхи шӑпланнӑ музыка пек, ҫут ҫанталӑк унра хӑй сассине парать тейӗн. Акӑ вӑл вӑхӑтран вӑхӑта алла илсе вуламалли тӗлӗнтермӗш калав, ҫакнашкал хайлав пирки ҫырнӑччӗ те Хветӗр Уяр пӗррехинче.

Ю. Скворцовӑнне кирек хӑш калавне ил — классика шайӗнче. Калӑпӑр, «Хӗлӗх-хӳре кӑвакал» калава кам та пулин тарӑн та объективлӑ тишкерсе хакланине астумастӑп эп. «Чӑваш совет литератури» кӗнекере (1972) ҫакӑн пек йӗркесем пур: «Хӑш чухне Ю. Скворцовӑн кӑткӑс геройсене идея тӗлӗшӗнчен тӗрӗс катартайманни те пулкалать» (378 с.). Тӗслӗхе «Хӗлӗх-хӳре кӑвакал» калава асӑннӑ. Калавне автор 1968 ҫултах ҫырнӑ. Эпир ӑна ун чухнех вуласа тӗлӗннӗччӗ. Халь ҫӗнӗрен вуларӑмӑр акӑ, анчах хӑш героя идея тӗлӗшӗнчен тӗрӗс мар кӑтартнӑ-ши автор? Асӑрхамарӑмӑр. Тӳррипе каласан, чӑнах та пурччӗ пирӗн вӑл таппхӑрта темрен тем сиксе тухасран «шикленекен» ҫав тери «сыхӑ» критиксем. Ҫав вӑхӑтсем каялла ан таврӑнччӑр тесен вӗсене тӗрӗс хак пани кирлӗ, вӗсем литература утӑмӗсене чӑрмав кӳнине пытармалла мар. Темле тӗтреллӗ, иккӗлентерекен шухӑшсем е йӑнӑшсем шырани, подтекстра ытлашши чакаланни сисӗнетчӗ ун чух уйрӑм критиксен док-

лачĕсемпе статйисенче. Сăмахран, мĕншĕн-ха повесть геройĕ хăйне çынсем хушшинче пĕччен туять, обществăран ютшăнса тайгана «тарса каять?» Çапла пулмалла-и-ха? Çук! Е килти кăвакал ами темле ирĕк çĕршывсене ăмсанса, кайăк кăвакалсемпе пĕрле кăнтăра, ăшă та «ирĕк» çĕре çул тытать? Чикĕ леш енчи, урăх обществăри ирĕк çинчен систермен-и автор т.ыт.те. Паллах, илемлĕ литература хайлавне çакăн пек меслетпе тишкерсен унта тем те тупма пулать. Тĕллев çеç ларт.

Чĕр чунсемпе кайăк-кĕшĕк сăнарĕсем илемлĕ литературăна тахçанах кĕнĕ. Классикăлла произведенисенче те тĕл пулаççĕ вĕсем. Ю. Скворцов хăйĕн сăнарне Л. Толстойран е А. Чеховран ӳкерсе илнĕ теме нимле сăлтав та çук кунта. «Хĕлĕх-хӳре кăвакал» авторĕ кăвакалсен пурнăçне сăнланă май чăн малтан çынсен шалти тĕнчине, кăмăл-туйăм хусканăвĕсене уçса кăтартма тăрăшать. Кăвакал ами çăмарта туса чĕпсем кăларни, вĕсем çитĕнни, кайăк-кĕшĕк савăнăçĕпе хуйхи-суйхи пире чăн малтан этем пурнăçĕ пирки шухăшлаттарать. Юрату та пур калавра, вилĕм те. Çакăнта курăнать те ĕнтĕ вăл художник йăла-йĕркепе кулленлĕх шайĕнчен çӳлерех çĕкленсе философилле ыйтусем тавра шухăша кайни. Унсăрăн эпир кăвакал амин инкекне — аçипе чĕпписем çухалнине, вилнине — чĕре патне илмен пулăттăмăр.

Ю. Скворцов калавĕсен психологизмĕ композицие ăста йĕркелернинчен нумай килет. Ку ĕнтĕ автор стилĕн тĕп паллисенчен пĕри. Калав конфликчĕ ялан тенĕ пекех пĕр саккунпа аталанать: персонажсен кун-çулĕн чи çӳлти шайри драматизмĕн саманчĕ ытти хирĕçӳлĕх тĕввисене салтма пулăшать. Ку вăл аслати авăтса çиçĕм çиçнĕ евĕр пулса иртет. Кăвакал амин çухатăвĕсене пĕрин хыççăн тепĕрне асăннипе çеç çырлахмасть автор калавра. Йывăр хуйхă килсе пуссан нумайăшĕ çухалса кайма та, аптраса ӳкме те пултарĕ. Шăпах çавнашкал самантра тĕл пулать тăр пĕччен тăрса юлнă хĕлĕх-хӳре кайăк кăвакалсене. Лешсем, кӳлĕ çине канма анса ларнăскерсем, кăвакал амине хăйсемпе пыма чĕнеççĕ. Кĕтмен çĕртен ӳсĕртекен, чуна пылаккăн çупăрлакан туйăмсене парăнса хĕлĕх-хӳре сывлăша çĕкленет. Анчах ăçтан вĕçтĕр-ха вăл кайăк кăвакалсемпе тан: мăнтăрланнă, канлĕ пурнăçа хăнăхнă, ирĕклĕхе маннă ĕнтĕ халĕ хĕлĕх-хӳре!

Ман шутпа, калавĕнче Ю. Скворцов мещенлĕхе питленипе пĕрлех творчествăпа çыхăннă ыйтусене те асра тытнă. Унăн хăйĕн идеалĕ вĕçевпе, канăçсăрлăхпа, шыравпа çыхăннă. Лăпланса ларасран асăрханни, малашлăха туртăнни пĕр вĕçĕмсĕр хистенĕ те ăна творчествăра çĕнĕ çулсем шырама. Çав вăхăтрах хăш-пĕр çыравçăсем кĕнекисене хулăнлатса, такăр çула хăнăхса пынине сăнанă вăл. Çавăнпа та, ман шутпа, хĕлĕх-хӳре шăпи — чылайăшĕн шăпи тесе каласшăн автор. Çакăнта ĕнтĕ Ю. Скворцов реализмĕн тарăнлăхĕпе типланă сăнарлăхĕн витĕмĕ. Ăс-кăмăл пуянлăхĕпе илемĕ пирки шухăшлама сĕнет çыравçă вулакана. Творчество — пĕр вĕçĕмсĕр йăлкăшса çунни, терт-асап, чун ыратăвĕ. Çакăн пек çулпа утнă Ю. Скворцов мĕн çĕре кĕриччен.

*2010*

## ТУПМАЛЛИ

*Çăлтăр чунлисем* . . . . . . . . . . . . . . 3

**«Нарспи пек ватăлми поэтăн сăн-сăпачĕ»**

Аслă Силпи ялĕнче . . . . . . . . . . . . 5
Çут çанталăк килтерĕшлĕх . . . . . . . . 21
Кама шыратăн, Сократ? . . . . . . . . . 28
Юратăвăн вилĕмсĕр хăвачĕ . . . . . . . 48
Пурнăç чăнлăхĕ е романтизм? . . . . . . . 53

**Чунра шăранса юнпа çырăннă сăвăсем**

Çĕн çĕре чĕнен чĕре . . . . . . . . . . . 65
Чун-чĕре сăлпăранĕ . . . . . . . . . . . 100

**«Курăнман уйăхăн» куçа кантаракан çути**

Вĕçевре хуçăлнă çунат . . . . . . . . . . 116
Ту тăрринче çут шанчăкăн йăви . . . . . . 127

**Шалпар чунлă талант**

Илья Ефимович Ефимов (Тăхти) . . . . . . 148
Илле Тăхтин «Суйласа илнисем» ал çырăвĕ пирки сăнани-сĕнни . . . . . . . . . . . . . . 167

**Хусанкай тĕнчин сукмакĕсене йĕрлесе**

Чĕрепе суйланă сăвăсем . . . . . . . . . 174
Шанатăп хамăн çăлтăра . . . . . . . . . 178
«Ман тĕлтен çанталăк çурма çутă» . . . . . 193

**Манăçми Хветĕр Уяр кăмăлне**

Тăван халăха юратса . . . . . . . . . . . 210
Сăмах мехелĕ . . . . . . . . . . . . . . 219
Уяр çĕршывĕнче . . . . . . . . . . . . . 224

**Кĕске те пархатарлă ĕмĕр**

Йыхăрсан инçете кĕрен парăс . . . . . . . 237
Сĕткенпе тулнă кĕрхи çимĕç . . . . . . . 243
Шăпа карчĕсем . . . . . . . . . . . . . . 248

**Артемьев Юрий Михайлович**

**ЧĂН ТӲПЕРЕ ÇИЧ ÇĂЛТĂР**

**СЕМЬ ЭТЮДОВ**

**Критические статьи**

*На чувашском языке*

Редактор *А.Г. Владимирова*
Художник *В.Н. Гончаров*
Художественный редактор *И.Е. Калентьева*
Технический редактор *Л.К. Егорова*
Корректоры *З.И. Гаврилова, Н.В. Вечеркина, Н.П. Печникова, Н.Г. Орлова*
Компьютерная верстка *Е.Е. Фоминой, Е.Л. Карпеевой*

Общероссийский классификатор продукции ОК 005-93—95 3003.
Подписано к печати 26.11.10. Формат 84x108 1/32. Бумага офсетная.
Гарнитура Тип Таймс. Печать офсетная. Усл. печ. л. 13,44. Уч.-изд. л. 14,12. Тираж 1000 экз. Заказ № К-4554. Изд. № 80.

ГУП Чувашской Республики «Чувашское книжное издательство»
Минкультуры Чувашии, 428019, Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 13.
www.chuvbook.ru, e-mail: chuvbook@mail.ru, chuvbook@cap.ru
Тел./факс (8352) 28-85-51.
Отпечатано в ГУП «ИПК «Чувашия»,
428019, Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 13.

88.00

ЧĂВАШ КĔНЕКЕ ИЗДАТЕЛЬСТВИ